К 89
Ч-44000
Вурн.

Владимир Кузьмин

# ТĂВАНЛĂХ ÇĂП-КУÇĔ



Национальная библиотека ЧР
4-044000

Обязат экз.
К 63.3(-5Вч)
К

**Владимир КУЗЬМИН**



# ТӐВАНЛӐХ ÇӐЛ КУÇӖ



ШУПАШКАР
2011

63.3(2Рос.Чув-5Вур-2Хорнзор)

УДК 908
ББК 26.89(2Рос.Чув)
К 89

К63.3(-5Вур-2Хорнзор)

Кузьмин В.П.
Тăванлăх çăл куçĕ. – Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2011. – 334 с.

Чăваш Республикине кĕрекен Вăрнар районĕнчи Хурăнсур Çармăс ялĕн мухтавлă та хастар, çĕнтерӳллĕ çыннисем çинчен.

Поступило 02 МАЯ 2017

И-44000

© Кузьмин В.П., 2011



**Кӗнеке авторӗ Владимир Прокопьевич Кузьмин Раççей Федерацийӗнчи писательсен тата Раççей журналисчӗсен союзӗсен членӗ, нумай роман, повесть, вуншар калавпа илемлӗ очерк çырнӑ. Вӗсем çирӗм пилӗк кӗнекере, республикӑри илемлӗ литература, сатира журналӗсенче, хаçатсенче чӑвашла тата вырӑсла пичетленнӗ.**

# ÇĔРШЫВĂН ТУРТĂМЛĂ КĂШĂЛĔНЧЕ

**Ĕмĕрех тапать ялти çăл куç.**
**Манмасан яла – пулан çул пуç.**
**Пуçу пур тăк – çулĕ те уçах,**
**Ял хапхийĕ саншăн яр-уçах.**
**Ял ачи, эс пул ял ачиех!**

Этем пурăнакан кашни вырăнăн хăйĕн историйĕ. Пирĕн Чăваш патшалăхĕн Вăрнар тăрăхĕнчи Хурăнсур Çармăс та, тăван ял çыннисен пурнăçĕ те тăван çĕршыв, тĕнче, этемлĕх историйĕн аталанăвĕн пĕр пайĕ.

Хурăнсурта виççĕр çул ытла ĕнтĕ чăваш халăхĕн йăх тымарĕ аталанса сарăлать. Çав тымарăн сĕткенĕ аякри несĕлсен эпир пĕлсех çитереймен аваллăх кăкĕсенченех сăрхăнать. Ăруран-ăрăва куçса пырса эпир çак тарана çитнĕ. Юнпа тăсăлакан тăванлăх çăл куçĕ чĕртсе пынипе ял-йыш ўсет, сарăлать. Тăванлăх, хурăнташлăх, хăталăх, кумлăх, юлташлăх çывăхлатса, пĕрлештерсе тăрать, çуралнă çĕршывăн туртăмлă кăшăлĕпе хытарса кăшăллать пире.

Шăпа картлашкийĕнче ĕнтĕ камăн ялтах тĕпленсе юлмалла пулса тухнă, камăн аякка вĕçсе кайса çĕнĕ йăва çавăрма тўр килнĕ, Турă кама мĕн парнеленĕ çав... анчах эпир пурте хурăнсурсемех шутланатпăр, пурте тăван ял юратуçисем-хўтĕлевçисем тесе мухтанатпăр, мĕншĕн тесессĕн пирĕн кĕлеткере çак çĕр çинчи тăван йăх юнĕ тапать, чĕрене ĕçлеттерет.Таçта аякра пурнăçне ĕмĕрлекен те мĕн виличченех çуралнă ял, чи çывăх кил çинчен манаймасть. Эпир пурте çуралнă ял çĕрĕнчех, хамăр халăх ытамĕнчех юлатпăр. Пирĕн чунсем, несĕлсен чунĕсемпе çывăхланса, хăй вăхăтĕнче пурпĕрех пĕрлешеççĕ.

Хĕрў пурнăç аврăнче çын хăйĕн кун-çулĕ çинчен ытлах аса та илсех каймасть пулас. Ĕçлет вăл, тĕрмешет, çемйипе айланать,ыррипе усаллине курса савăнать-хурланать, хăй ял-йышĕнчен уйрăлса кайнине те сиссе юлаймасть. Ячĕ çеç тата çемйишĕн, халăхшăн туса

хăварнă ĕçĕ çеç юлать асра. Кашниех хăйĕн тĕнчин историне хăварать пурнан пурнăçра.

Сăмах-юмах ламран лама куçать, хут çине çырни ĕмĕр-ĕмĕр упранать. Халăх ăсĕнче сыхланса юлнă аса илӳсенчен, хут çине палăртса хăварнă документсенчен эпир халĕ хамăр ялăн вăрăм кун-çулне витĕртерех курма пуçларăмăр. Ăна хамăр пата çывхартма ялта çуралса ӳснĕ паллă ентешсем Василий Иванович Марков тата Амвросий Илларионович Овчинников нумай пулăшрĕç.

Хурăнсур Çармăспа Çĕрпел ялĕсен историне вĕсемччĕнех-ха, эпĕ астăвасса, Çĕрпел ял совет ĕçтăвкомĕн председателĕ Петр Степанович Шлыков пулăшнипе, ялти вăтам шкул историкĕ Аверкий Осипович Осипов, архивсенче тĕпчесе, халăх валли пухнăччĕ. Питĕ канăçсăррăн, çине тăрса тăрмашатчĕç вĕсем Çĕрпелте этнографи музейĕ уçмашкăн. Истори пуххисемпе пĕрлех аваллăх культурин ĕмĕрлĕхе юлнă экспоначĕсене сахал мар тупса хатĕрленĕччĕ. Ĕмĕчĕ çеç пурнăçланаймарĕ тавра пĕлӳçĕсен. Вилнĕ хыççăн, Аверкий Осиповичăн хаклă «пурлăхĕ» алран алла куçса куçран çухалчĕ. Анчах та, ман шутпа, ăна çӳп шăтăкне те пемен, макулатурăна та ăсатман. Çав материалсем Осиповсăрах майĕпен пичетре туха-туха пыраççĕ-ха. Уншăн та тав тумалла Осипов ĕçне малалла тăсакан тавра пĕлӳçĕсене. Çапла вăл истори...

Çармăссен вара... Марковпа Овчинниковăн «Хурăнсур утăмĕсем» тата Овчинниковăн «Хурăнсурсен ĕмĕре пыракан йăхĕ-несĕлĕ» кĕнекисене ял халăхĕ хапăлласа кĕтсе илчĕ, вĕсене кил кĕнекисем вырăнне йышăнчĕ.

Çапла, манăн ачаран çывăх туссем Василий Ивановичпа Амвросий Илларионович архивра тусан мăкăрлантарса тĕпченĕ тăрăх, пирĕн ял хамăртан тăватă çухрăмри Янсарина Çармăс (XIX ĕмĕртен Туçи Çармăс) ялĕнчен 330 çул каялла уйрăлса тухнă пать. Сунар юхан шывĕ тăрăхне вара Шупашкар енчи хресченсем 450 çул маларахах куçса килме пуçланă иккен. Янсарина

Шупашкар уесĕнчи Кувшин вулăсне пăхăннă. Çĕнĕ ялĕ Янсарина общинине кĕнĕ.

Çĕр çитменни тата нушаллă пурнăç хресчене тавралла пăхтарнă, вара лайăх май шыраса вăл ирĕклĕхе туртăннă, тулăхлăрах пурнăç тумалли вырăн шыранă. Тăнлă-пуçлă, хăюллă янсаринсем те сĕм вăрман витĕр Сунара çăл куç шывĕпе тăрантаракан вăрăм çырма пуçне пырса тухнă. Вырăнĕ кăмăла кайнă та, вĕсем унта йăва çавăрнă. Яланлăхах.

Хурăнсур Çармăс мĕнле аталанса пыни, çыннисем епле çĕнелсе хастар ĕç туни çинчен Тăван çĕршыв Аслă вăрçичченех хамăр ялти Антон Максимович Крислов-Яндубай, Петр Владимирович Владимиров-Ковский, Иосиф Иванович Шашков хаçатсем çине çырса республикăна сарнă. Каярахпа Анатолий Миронович Миронов, Евгений Никитич Никитин, Калистрат Алексеевич Воробьев, Анатолий Георгиевич Кузнецов ку пархатарлă ĕçе хутшăнчĕç.

Эпĕ те ачаранах явăçрăм журналистика ĕçне. Унăн хăватлă хумĕ мана тарăн авăраллах çавăрттарса илсе кĕрсе кайрĕ. Çур ĕмĕр ытла çапла хамăр ял çинчен çыратăп. Миçе çĕр çын кун-çулĕ, шăпи пуçтарăнса, аталанса, сăнарланса тухман-ши манăн пуçăмпа чĕрем витĕр? Кĕске хыпарсенче, статьясенче, калавсемпе пьесăсенче, повеçсемпе романсенче Хурăнсур, кӳршĕри Çĕрпел çыннисем хăйсен пурнăçне малалла тăсаççĕ, вилĕмсĕрлĕхе куçаççĕ. Çак кĕнекене кĕртнĕ хайлавсем те тăван ял историне, юратнă ял-йышăм кун-çулне хушса пуянлатма пулăшĕç, тесе шутлатăп.

Аталану, кĕрешӳпе çĕнтерӳ кĕнекине эпĕ пĕччен мар, халăхпа, тăванлăх туйăмĕ хĕтĕртсе пулăшнипе, çырнă: ял çăл куçĕн имлĕ шывне ĕçсе.

Пурнăç юххин-кĕрлевĕн сассине тăнлатăп та халĕ...

Мăнланса, тăн кĕрсе пынă вăхăталла, анне куççуль кăларсах каласа култаратчĕ: «Ах, – тетчĕ, – çак Вулутине ăна, сĕлĕ анине халăхпа тан вырса тухма паманшăн, халĕ

те кутран çапас килет. Таçтаваскать, хырăмрах ташлать, тепĕр талăк кĕтесчĕ хăть, аран киле çитсе ӳкрĕм... Çухăрса та ячĕ. Каçалăка хӳрене хăварнăшăн кайран колхоз хуçи ман пите самаях хĕретрĕ. Ялта, таврара нихçан усал ят илтмен çинче çак ывăл кăштах хур турĕ. Халĕ тата уншăн хĕпĕртетĕп те. Икĕ ывăлăма çĕре чикнĕ хыççăн, виççĕмĕшне сăпас кунĕнче Турă пачĕ пуль. Чунсăр пуçлăхсем вĕсем пире, çĕршыв тарçисене, çапла асаплантарнă. Халĕ хăйсене кам ырăпа асăнать-ши? Нуша кулачне çисе хĕвелпе кулсах, уйăхпа хуйхăрсах, çăлтăрпа ĕмĕтленсех, сывлăмпа пит çусах чăтса пурăннă. Кашни сăпасра ывăлпа пĕрле тырă анине тухаттăмăр, кашни çул пĕр каçалăк каçаттăмăр – çавра çăкăр пĕçереттĕмĕр, ачампăчам çумра чухне чун савăнать, юрлас килет...»

Вăрнарьенчи Хурăнсур Çармăс ялĕнче çапла 1937 çулхи çурла уйăхĕн 19-мĕшĕнче анне хăйĕн çурлине ман алла панă. Вырма çăмăлах пулмарĕ. Сĕлĕ анине эп çуралсанах аннепе «юрла-юрла» вырса пĕтернĕ хыççăн, атте мана çăпата тума, лаша кӳлме вĕрентрĕ те алла пуртăпа сава тыттарчĕ, çак киле ӳлĕм санăн тытса тăмалла, хамăрăн йăха санăн малалла тăсмалла пулать, тесе пехиллерĕ.

Хуçалăх ĕçне, ăсталăха атте-анне ури айĕнче явăнса çӳренĕ хушăрах вĕренсе хăнăхнă, ял тӳсĕм-пиçĕлĕхĕпе чир-чĕре çĕнтернĕ, Çĕрпел шкулĕнче вулама-çырма-шутлама вĕреннĕ, ял-йышпа пĕрле пулнă, чăваш халăхĕн йышне сумпах хутшăннă, çамрăклах тĕнчене тухнă... Ай, мĕн чухлĕ терт тӳснĕ, мыскара курнă пуль çав çулсенче!

Шаймăкрах пулнă çав, атте-анне куçĕнчен вĕçерĕнсе те кайкаланă, кӳршĕ ачисене салтакла камантласа вăрçăлла выляттараттăм, улаха каякан Карачăм мучине çырмари юр шăтăкне те сиктернĕ, тырă вырнă чухне Шапа Ульянне, кĕлтине вăрттăн тултарса парса, ытларах çĕмел те купалаттарнă, хула курасшăн Шупашкара Амруç Овчинниковпа вăрттăн тухса тарни те пулнă... Ĕç-пуçа, хуçалăхра усă курмалли хатĕр-хĕтĕре килте пурне

те йалтах хамăрăн алăпа тумалла пулнă пирки, кану вăхăчĕ çинчен тĕлленмен те. Хуттăр çавăрса хула ывăнтарнă хыççăн, тула тухсан, «çухалаттăмччĕ» çав, сарайĕнче пусма çине ларса Каверинăн «икĕ капитанĕсемпе» вăййа хутшăнаттăм. «Пĕччен парăс лăпкăн хумханатчĕ» те умра, анчах ман пĕччнлĕх нумаях тăсăлмастчĕ. Анне аллинчи хулă каллех алла кăшкар тыттаратчĕ, аттепе каска пăчки турттаратчĕ, тилхепе явтаратчĕ, çăпата тутаратчĕ...

Атте-аннен çирĕплĕх шкулĕ пурнăçра пулăшрĕ. Çырма та атте верстакĕ çинчех вĕрентĕм: катка-пичке хăми якатнă, сĕтел-пукан ури, пир станокĕ тума патак савалалнă хушăрах çӳхе турпас çаврăмĕнче малтанхи илем сăмахĕсем сăнарланса тухатчĕç. Сывлăшра саланса ан çухалччăр тесе эпĕ вĕсене шкул тетрачĕ ăшне хупаттăм. Пӳрт умĕнчи çырмара çăл куç нумайччĕ те, хамăн шухăш пуххине те «Çăл куç» ятлă хунăччĕ. Атте манăн журнала аннене вуласа паратчĕ, унтан вăл кӳршĕ тăрăх каятчĕ.

Çапла манăн ялти тырĕ анийĕ илем анине куçса пычĕ. Вун пиллĕке çитнĕ тĕлелле эпĕ ял пурнăçне хаçат урлă район, республика таран сарма пуçларăм.

Пĕрмай халăх хушшинче, тĕрлĕ вырăнсенче пулни-пурăнни пуç кунтăкне пуянлăхпа – сăнарпа чыхсах тултарать. Суйла кăна. Элмен Сунар – Мăн Турхан –Санарпуç– Чăрăшкас Мăрат – Кĕçĕн Кипек – Уйкас Кипек тăрăхĕнче кино кăтартса çӳренĕ чухнехи пурнăç сĕткенĕ-хуйăрĕ нихçан та пуçран тухса пĕтмест. Салтакран таврăннă хыççăн Вăрнарта хаçат ĕçне кӳлĕнсен... Куç умĕнчине илемлĕн те ытарлăн халăх умне усăллă кăларма çăмăлах марччĕ. Чĕлхене йĕкĕлтекен, пуçа канăçсăрлантаракан кулăшла пулăмсемпе сăнарсене «Капкăн страницине» кăларса яраттăм. Районти «Комсомол прожекторне» алăра тытнă май, çамрăксен çутă пайăркине лекнĕ йăхтăр-яхтăра кулăшла ӳкерчĕклĕ хаçатра çунтарнă.

«Социализм çулĕпе» (хальхи «Çĕнтерӳ çулĕ») хаçатра 1959 çулта пичетленнĕ «Çĕр улми хуйхи» ял халăхĕн асĕнче ытларах юлнăччĕ. Вăл сăвă-питлев шăпах ĕнтĕ – хурăнсурсем çинчен:

Çуркунне. Хĕвел хĕртет.
Ялта халăх хĕвĕшет.
Турттараççĕ Вăрнара
Çĕр улми, сухан, ыхра.
    Вакун илнĕ Хĕлихван
    Ташкента кайма паян.
    Пулăшать ăна Йăван,
    Вася, Жора, Çинахван...
Кăшкăраççĕ: «Ман черет!
Ак, паратăп вĕчерен!»
Кĕç тулса ларать вакун –
Çула тухрĕ эшелун.
    Уйăх иртрĕ. Хĕлихван
    Персе çитрĕ кăнтăртан.
    – Кăçалхи çур Ташкентра
    Ыр пулмарĕ ку хутра.
Черетпе укçа сайлать,
Вăрттăн хăй йăх-йăх кулать:
– Килограмĕ аллă пус,
Çакăнта ак алă пус.
    Халăх урнă пек вăрçать,
    Туллашать те ятлаçать.
    Вăрнартах кило çĕр пус
    Пулнă имĕш... Вăт тăм пуç!
Хĕлихванпала Йăван,
Вася, Жора, Çинахван
Супрĕç ĕçкĕ-çикĕпе
Çапла халăх укçипе.
    Ĕçчен халăх, асăрха:
    Харам пырсем халь пур-ха,
    Эсĕ вăйсăр-халсăр мар,
    Путсĕрсене тытса чар!

Кулăш хумĕ-сĕмĕ вăйлă çил-тăвăл кăларнине хам та сисмен, «Капкăнпа» «Тăван Атăлта» кун курнă хайлавсем пурнăç çӳп-çапне халăх хушшинчен шăлса тасатма пуçларĕç. Акă хайхи хам та Иван Мучин вутлă-хĕмлĕ лаçне лекрĕм. Ултă çул хушши «Капкăнра» вĕркĕч вĕртерсе, йывăр мăлатук çапса самаях тарлама тиврĕ. Сатирăпа кулăш сунталĕ çинчен вара «Шухăшлама вăхăт пур-ха», «Картлашка», «Сава Савви савалать» кĕнекесем туптанса тухрĕç. Вĕсем çумне «Тип мунча» та хутшăнчĕ. Каярахпа «Лапшу Çтаппанĕпе Иван Мучи курнă мыскарасем» сиксе тухрĕç мĕн пур чăвашсен обществăпа культура центрĕн издательствинчен. Вырăсла «Пучок смеха» та унтах кун çути курчĕ. Утмăл çул тултарнă тĕле хам ун чухне ĕçленĕ «Тăван Атăл» редакцийĕ «Савнисĕр савăк çук» ятпа кĕнеке-номер кăларса пачĕ. «Капкăн» журнала «Хыпар» хаçат хăй сăпкине илсен, 2006-07 çулсенче каллех кулăшпа сатира вучахне çулăмлантарма тиврĕ. Çавăнта пĕçернĕ хайлавсенчен шăпах «Тамăк хуранне вăрлани» кĕнеке пăсланса тухрĕ. «Çĕнĕ вăхăт» издательствăран унпа ăмăртмалла «Сиплĕ-йӳçĕ мунчара» кĕнеке вулакансем патне васкарĕ. Мыскарисем ĕнтĕ манăн хамран хăпма пĕлмеççĕ, пурнан пурнăç тĕкĕрĕнчен çухалмаççĕ, хăйсен вырăнне тупрĕç, халăх умне тухсах тăраççĕ.

Пурнăç тĕкĕрĕ çине пăхсан, куç алчăраса каять. Хумлă-хумлă çутлăхра, авăк кĕленче çинчи пек мĕнле кăна кулăшла сăн, мĕн тĕрлĕ мыскара курăнмасть. Эпĕ вĕсене фельетон-памфлет, калав, кулăш-шӳт картине çеç кĕртсе ямастăп, роман-повесть читлĕхне те чăмтаратăп. «Виçĕ юманри» Хĕрӳ Хĕветĕрпе Хĕрхӳ Хĕлимунĕ, «Тымарти» Карачăм мучи, «Юрату кăварĕнчи» Умма Хумми, «Савнисĕр савăк çук» хайлаври Вульвер Левенĕ кулăш хумĕнче кашни хăйне майлă сăнар кимминче ярăнаççĕ. «Тăван Атăлăн» кулăш хумне эпĕ хам та «Пакшапа» лекнĕччĕ. Çав калав маншăн журнала парнеленĕ кĕсмен пулчĕ. Каярахпа журналта «Виçĕ юман», «Шăратнă сыпă», «Юрату кăварĕ», «Çĕр пики», «Чĕркуç шывĕ – чĕрĕ шыв»

повеҫсем, «Тымар» роман тата чылай калавпа очерк пичетленчӗ. Манӑн ӗнтӗ ку таранччен ҫирӗм повесть, тӑватӑ роман, 25 кӗнеке вулакансем хушшине сарӑлчӗ. «Тӑван Атӑл» тыттарнӑ кӗсмене алӑран ямастӑп. Унта сакӑр ҫул проза пайӗн пуҫлӑхӗнче тата редактор заместителӗнче ӗҫлесе пултарулӑха ӳстертӗм. Илем кӗсменне ҫирӗп тытатӑп-ха, чӑваш литературин карапне малалла хӑваласа тус-юлташпа пӗрле сӑнарлӑх тинӗсӗнче вӑя шеллемесӗр ишетӗп.

Хӑшӗсем пек ӗҫ пуканӗ ҫинче кут ыратакан пуличчен ларса пӗр-ик йӗм кӑна ҫӗтмен эпӗ. Ку енӗпе перекетлӗ пулаймарӑм. Авӑрти ҫӑрттан пек ҫумри хӳтлӗхсӗр пулла ҫӑтса та тӑранса пурӑнмарӑм, атте-анне пилӗпе, ял ҫӑл куҫӗн хӑвачӗпе хамӑн ҫула уҫса пурнӑҫ юхан шывне хамӑн йӗрпех юхтартӑм. Кашни каҫалӑк – ҫӗр-шыв чуппинчи манӑн каҫалӑкӑм. Вӑрнар, Элӗк, Йӗпреҫ, Шупашкар, Саратов, Хабаровск крайӗнчи Ванино, Чулхула – ҫӗр-шыв картти ҫинче эпӗ хӑварнӑ пысӑк паллӑсем. Хресчен, киномеханик, салтак, журналист, писатель, ялти ҫамрӑксен ертӳҫи, парти ӗҫлевҫи, редактор... Ҫапла, пӗр вырӑнта мӑкланса ларма ҫуралман пулас эпӗ анне сӗлӗ вырнӑ кун. Ҫавӑнпа нумай йӗм ҫӗтнӗ-якатнӑ юратнӑ пурнӑҫӑм пуканӗ ҫинче. Ҫырмалли нумай-ха, пичет ӗҫне те хутшӑнатӑп, кӗнекесем те пӗрин хыҫҫӑн теприне кӑларатӑп. Пулӑшакан ырӑ ҫынсем пурришӗн хӗпӗртетӗп.

Юлашки ҫулсенче ҫырнӑ хайлавсенче пурнӑҫ аталанӑвӗн ҫӗнӗ тапхӑрӗнчи хӗрӳ те хӗрхӳллӗ пулӑмсене сӑнарларӑм.Вӗсен тӗп геройӗсемшӗн пуҫ тӑрринчи аҫа-ҫиҫӗм те, умри ҫил-тӑвӑллӑ хумсем те хӑрушӑ мар. Чӑвашӑн ӑслӑ та хастар арӗсем йывӑрлӑх чӑрмавӗсене сирсе ярса ҫӗнтермелли майсем шыраҫҫӗ, тупаҫҫӗ те, ӗҫлекен халӑха хӑйсем хыҫҫӑн тӗрӗс ҫулпа – пуянлӑх, телей ҫулӗпе уттараҫҫӗ. Вӗсен тӗп тӗллевӗ – ҫынра уҫӑмлӑ шанчӑк ҫуратасси. Ҫыннисем, ҫав шанчӑка умра курса, хӑйсен пурнӑҫне ытлӑ-ҫитлӗ, савӑнӑҫлӑ тӑвассишӗн эртеллешсе, хӑпартланса ялӗсене ҫӗнетеҫҫӗ, илемлетеҫҫӗ,

çуралнă çĕрĕ çинче малашлăх сачĕ çитĕнтереççĕ. Хăтлăхра вĕсен кĕрекере сĕтел урийĕ авăнать, ура хушшинче ачи-пăчийĕ явăнать, юрлас та, ташлас та килет. Юратăвĕ те уççăнраххăн, хăюллăраххăн, ӳт-пӳ ыйтăвне тивĕçтерӳллĕреххĕн хĕмлентерет вĕсене. Ĕçченлĕхпе илемлĕх пĕрле явăнса пырать асăннă произведенисенче, вăл шутра – хамăр ялсем çинчен çырнисенче те.

Пичетре çур ĕмĕр ирттернĕ ĕçĕмшĕн патшалăх, обществăлла организацисем панă наградăсем хушшинче маншăн чи хисепли – Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамоти. Ăна мана ял хуçалăх ыйтăвĕсене пичетре çутатас çĕре активлă хутшăннăшăн, малта пыракан опыта пропагандăланăшăн тата агропромышленность комплексĕнчи паттăрсен сăнарне илемлĕн кăтартнăшăн, 2002 çулта Вăрнар районĕнчи «Хорнзор» ял хуçалăх предприяти коллективĕн пĕрлехи пухăвĕ ыйтнине шута илсе панă.

Яла çитсен, хамăн ятпа хисепленекен тăван урампа – Кузьмин урамĕпе – хăюллăн, шухăшлавлăн утатăп.

Анне аллинчен илнĕ çивĕч çурла касать-ха, вырать пурнăç анине. Хӳрене те юласшăн мар, хыçала касăлнă пучах та хăварасшăн мар. Кĕлтине тулли, çирĕп çыхса, тĕм хыççăн тĕм туса йышлă çĕмелпе тултарасчĕ, çĕмел кĕлтипе çӳллĕ капан купаласа çитересчĕ.

Анне ура сырма, атте çăпата тума тата лаша кӳлме вĕрентни харама каймарĕ, хама çуратнă чăваш халăхĕшĕн мĕн чухлĕ те пулин ырă ĕç тума пулăшрĕ пуль тесе шутлатăп, мĕншĕн тесен эпир халăх ĕçне – пĕрлехи ĕçе – яланах чи мала хунă. Уншăн пĕртте кӳренместĕп, кулянмастăп.

Атте пилне манмарăм. Праках Куçмичăн авалхи йăхĕ малаллах тăсăлать. Çăл куçлă çырмара аттепе лартнă йăмрасем кашлаççĕ. Çав шавра эпĕ атте-анне сассине илтетĕп, хул пуççи çине çурла хурса, алла сава тытса, хамăн çĕнĕ каçалăка пуçлатăп.

2008 çул, кăрлач, 5.

# КАШКĂРСЕН ЙĂХĔНЧЕН



Тĕнчери тĕрĕк халăхĕсен ăслă ывăл-хĕрĕпе Хусанта, Шупашкарта тĕл пулса ăстāна çĕнетсе вăйлатнă хыççăн, пуçра авалхах шухăшĕсем ытларах явăнма пуçларĕç. Тĕрĕк халăхĕсен Аслă пухăвĕсенче Кашкăр пуçĕ пĕрлĕх палли мĕншĕн пулни тĕлĕнтерме пăрахрĕ. Чăвашăн пĕр ăслă пуçĕ, Шупашкар уесĕнчи Шемшер ачи Никита Яковлевич Бичурин, каярахпа Иакинф манах тата ăслăлăх çынни пиртен икĕ ĕмĕр маларах тĕпчесе несĕлсен шăршине Китайра çывăхрах туйма пултарнă. Унăн пĕр паллă ĕçĕнче çакнашкал ăнлантару пур.

Улттăмĕш ĕмĕр варринче Китай çĕрĕнче пĕр авалхи халăх йăхĕ Анăçри сарлака тинĕсрен те тата анăçарах пурăннă. Йăхсемпе халăхсем хушшинчи вĕçленме пĕлмен тытăçусемпе харкашусенче çав йăха хаяртараххисем аркатнă. Вуннăри пĕр арçын ача çеç сыхланса юлнă. Çĕнтерӳçĕсем темшĕн ăна вĕлермен, алли-урине касса татнă та, кӳлле пенĕ. Кашкăр ами çăлнă та ăна хăйĕн çурисемпе пĕрле ӳстернĕ. Унти аслă хуçа çакăн çинчен пĕлнĕ те çар çыннисене çав ачапа кашкăр амине те вĕлерме хушнă. Кашкăр ами ту хăвăлне тарса пытаннă. Унта вунă ывăл çуратнă. Ӳссен, ывăлĕсем авланнă, ача-пăча ӳстернĕ. Çапла темиçе йăх пуçланнă. Пĕр йăхĕн пултарулăраххи тата хастартараххи, Ашина ятли, патша пулса тăнă. Ашина хăйсем ăçтан тухнине, пуçланса кайнине аса илтермешкĕн хапхи çине кашкăр пуçне ӳкернĕ ялав çакса хунă. Алтай тăвĕсем варринче çапла авалхи халăх – тӳркӳт текен Алтай тĕрĕкĕсем тĕвĕленнĕ-пать. Каярахпа вĕсем анăçалла, Вăтам Ази еннелле куçса,

вӑйлӑ патшалӑх туса хунӑ. Чи вӑйлӑ аталанса, чечекленсе ҫитнӗ вӑхӑтра Тӗрӗк патшалӑхӗ Сарӑ тинӗсрен Хура тинӗс таран сарӑлса выртнӑ. Ашина-Кашкӑр йӑхӗнчи тӗрӗксем хӑвачӗпе, ӑслӑлӑхӗпе пуринчен те ытларах палӑрнӑ. Ҫав йӑхсен хастарӗсем халап-юмахра кӑна мар, чӑн-чӑн пурнӑҫрах Атӑл тӑрӑх хӑпарса, хальхи Туҫи Ҫармӑспа Хурӑнсур Ҫармӑс ялӗсем хушшинчи Турхай лапамне те тутарсемпе мари-ҫармӑссенчен маларах ҫитме пултарнӑ.

Тӗрӗк халӑхӗсен пӗрлешӳллӗ пухӑвӗсенче аваллӑх тытӑмӗн тӗп палли Кашкӑр пуҫӗ пулни хамӑр чӑвашӑн хӑватне те ӳстерни, чӑваша анлӑ тӗнчене тухма май пани ҫинчен шухӑшласа хӗпӗртемелле-хӑпартланмалла ҫеҫ. Ҫав хӗрӳ ӗмӗт ытамӗнче тӗлӗкле аташса выртнӑ эпӗ пӗр ҫурхи кас тӑван ялта – Хурӑнсурта. Тухӑҫ енчи мӑн чӳречерен хӗвел йӑл кулнипе вӑйланнӑ шухӑшӑм вара хӑйӗн пӗр илем сӑнарлӑхӗн ҫимӗҫне парнелерӗ.

## ШУҪӐМ ТӖРРИ

Вӑрман тӑрӑх пысӑк Кашкӑр чупать. Тӑвайкки тӑрринче пурӑнакан Юман ӑна хурӑнташла туйӑмпа ҫӑкӑр-тӑварпах кӗтсе илет. Ту ҫинче Юманӑн Хурӑн ятлӑ чиперкки пур. Вӑл Юмана, кашни ҫул хӑйӗн ҫивӗтне мунча кӗме каснӑшӑн, сӗткенне-юнне вӑлакпа юхтарса ӗҫнӗшӗн, юратсах каймасть. Ҫакна сиснӗ Кашкӑр Хурӑна юратса пӑрахать. Кашкӑр вара чиперука вӑрттӑн йӑтса тарать.

Юхан шыв енче Кашкӑра тӑванӗ, Асан ятлӑ пӑхаттир, вӑрман хӑтлӑхӗнче кӗтсе тӑнӑ. Вӗсем Мӑн шыв хӗрринчен Юман хыҫҫӑн пӗрле куҫса килнӗ-ҫке. Кашкӑр Хурӑнпа ҫитиччен Асан ҫырма чӑтлӑхӗнче упа тытса, ҫӑл куҫ шывӗпе имленсе пурӑннӑ.

Вӗсем тӑвалла хӑпарса ҫырма юппине тухнӑ, аҫа ҫапса ҫунтарнӑ, ҫил-тӑвӑл хуҫса-йӑвантарнӑ йывӑҫсене тасатнӑ, тунката хӑртнӑ, уҫланкӑ сарнӑ.

Кӗҫех Юман хӑйӗн юратӑвне шыраса тупать те Кашкӑртан туртса илет, Кашкӑрпа ҫуратнӑ ачине сивлемесӗрех Хурӑна арӑм туса хурать. Тапса юхакан ҫӑл куҫран шыв ӑсса Хурӑна Кашкӑр вараланчӑкӗнчен ҫӑвать, ӑш хыпнӑран шӑварать, хӑй те ҫӑвӑнать, техӗмлӗ шерпете ӗҫнӗ майӑн, калать:

– Пуҫлар ҫакӑнта пурнӑҫа, тав тӑвар Кашкӑра, хамӑрӑн авалхи йӑх чупкӑнне те, ачине те пӗрлех ӳстерер.

Хурӑн хӑйӗн ҫивӗт-милӗкӗпе Юмана ҫурӑмӗнчен ҫапса хастарлантарать, Асанран вӑтанса, вулӑ ҫурӑкне ҫулҫӑпа хуплать. Хурӑн тымар ярса ешӗрет, тавралла хунавӗ сарӑлать, ҫилпе выляса шавлать. Кашкӑрӗ вӗчӗрхенсе кӗвӗҫет. Ҫав кӗвӗҫӗве чӑтаймасӑр юман каялла тарать, Ту ҫинче Юманпине качча илет. Туйралӑх йӑхне ӳстернӗ май мухтанса юрлать.

Ҫапах та вӑл Кашкӑра тавӑрма шутлать, вӑрттӑн пырса Хурӑна ҫарамаслантарать, ҫивӗтне касса, юнне ӗҫсе, хӑртать. Асан хӑтлӑхӗнче вара Хурӑн масарӗ юлать. Кашкӑрпа Асан унта Аслӑ турра-Пӳлӗхҫе пуҫ ҫапма, кӗл тума ҫӳреме пуҫлаҫҫӗ. Хурӑн хунавӗсене-ачасене Хӗвел турри сыхласа хӑварать. Вӗсем ӳссе тахҫанччененех пурӑнаҫҫӗ.

Кашкӑрпа Асан Ту ҫинчи Юман йӗкелӗсене вӑрлаҫҫӗ те, хӑйсем ҫырма юппинче ҫаварнӑ йӑваран ҫухрӑмра ҫӗре чавса пытараҫҫӗ. Ҫав вырӑнта юманлӑх ашкӑрса ӳссе каять, вӑрман сарӑлать.

Кашкӑрсен йӑхӗнчен хунанӑ Хурӑнсар-Хурӑнсур ялӗ ешӗрет. Хӑйсем Тухӑҫран илсе килнӗ Шуҫӑмӗ ирпе те, кӑнтӑрла та, каҫалапа та ял пуҫ асамачӗн кӗперӗнче ҫичӗ тӗслӗ тӗрӗ тӗрлет.

1999, пуш уйӑхӗ, 10.

# ТĂВАНЛĂХ ÇĂЛ КУÇĔ

Хĕвел тухать, тӳпене çĕкленет, анать, уйăх тулса катăлать; анлă уçлăхра пин-пин çăлтăр йăлкăшать. Çур – çут çанталăка чĕртет, çу – çуллантарать, кĕр – пуянлăхпа кĕрлет, хĕл – шурă шупăр парнелет. Юхать, куçать, пĕрмай улшăнса çĕнелет тĕнче. Çĕр çинче этем çуралать, ӳсет, ватăлать, вилет. Ун ырăнне каллех тепри хушăнать. Пурнăç аталанать, тĕнче курăм анлăланать. Тĕнчере тĕрлĕрен кĕнчеле тенĕ пек, çав аталанура кашниех хăйĕн шăпи çиппине тĕрлĕ майлă арлать. Пĕрин çирĕп пулать вăл – телей кӳрет, теприн хавшак пулать – нушалантарать, хăшин тĕвĕленсе ларать, хăшин сыпăнмасть, анчах пурин те пĕр çăмхана чăрканать. Çав çăмхара, этем ушкăнĕн-кĕтĕвĕн çăмхинче, мĕн тĕрлĕ кăна шăпа çуккă-ши? Алăри пӳрнесем те тан мар та, çынсен те шăпи пĕрешкел мар çав. Кашнин уйрăм, кашнин – хăйне майлă. Пирĕн Хурăнсур Çармăсра та ытти ял-хулари пекех пуль. Е мана çеç çавăн пек туйăнать-ши вăл?

Çуралса ӳснĕ тăван ырăн темрен те хаклă-ши? Мĕншĕн вăл сан пуçунтан нихçан та тухма пĕлмест-ши? Аякра чухне аса киле-киле, куçа курăна-курăна тăтăшах чĕрене йăшкаттарса ыраттарать-ши? Çулсем иртсе пынă майăн мĕншĕн вăл хăй патне ытларах та ытларах туртать-ши? Кун пирки, паллах, этемлĕх ĕмĕр-ĕмĕр калаçать. Çĕр çинче кашни çын хăйне евĕр шухăшлать, ăсĕ çитнĕ таран хуравне тупать. Миллион-миллиард тĕрлĕрен шухăш-хурав тупăнсан та, вĕсенчен чи витĕмли, чи тĕрĕсси çакă пулас: çут çанталăк тытăмĕнче эпир курман-туйман, пирĕнтен килмен вăрттăн вăй туртать пире унта, пĕр-пĕринпе çыхăннă тĕнче тĕввинче, тупата, салтăну, аркану пулмалла мар иккен. Эпĕ-и е кам та пулин урăххи çавăнта çуралнă пулсан, вăл çав çĕр çинче, çав ырăнта кирлĕшĕн кун çути курнă, унăн çавăнта ĕçлесе, пурнăç туса, çемье чăмăртаса, ача-пăча ӳстерсе çавăнтах çĕре кĕмелле. Çав халăх хушшинче ырă ят хăвармалла, çав халăха малалла аталанмашкăн пулăшмалла.

Анчах та, тӗрлӗ сӑлтавсене пула, тепӗр ҫын хӑйӗн йӑвинчен уйрӑлса аякка ӑсанать. Ҫав туртӑм вӑйӗ ӑна ун чухне те ярасшӑн мар асаплантарать-ха: пӗрне йӗртет, теприне уртарать, каялла ҫаврӑнтара-ҫаврӑнтара пӑхтарса мӗн пур ыррине-усаллине аса илтерет.

Эпӗ те пурнӑҫ пӑтранӑвӗнче ҫуралнӑ ҫӗр кӗтесне, тӑван Хурӑнсур ялне, ҫырма хӗрринчи тӑван киле, вӑхӑтлӑха ҫухатрӑм. Вун ултта ҫитиччен мӗн-мӗн ытларах асра юлнӑччӗ-ха маншӑн хамӑрӑн Чӑвашьенче? Эпӗ вӗсене йӑлтах йӗркипе блокнота ҫырса пыраттӑм. Кун кӗнеки теттӗм ӑна. Блокнотне пасарта сутнӑ услам ҫу укҫипе Вӑрнарти Когиз магазинӗнче туяннӑччӗ. Налуксемпе ҫаралса, тӳлевсӗр тенӗ пек ӗҫлесе тертленсе ҫитнӗ хресчен ҫемйинче кашни пусӗ хальхи вунӑ тенкӗ вырӑнне шутланатчӗ. Ҫавӑнпа мана, пустуй хут-хӗтӗр илсе тӑкакланнӑшӑн, киле ҫитсен пит хӗрелличченех ят тивнӗччӗ. «Перекетлӗ, тимлӗ пулмалла, кашни пусне пӗлсе усӑ курма вӗренмелле» – куҫран кӑмӑллӑн пӑхса ӑс паратчӗ анне. Малтанхи перекет урокӗсем маншӑн усӑсӑр юлмарӗҫ – пурнӑҫра кирлӗ пулчӗҫ.

Кӑвак ҫутлах тырӑ уйне ҫитеттӗмӗр те курӑк ҫинчи сывлӑмпа пите ҫуса уҫӑлтараттӑмӑр. Симӗс вӑрман хыҫӗнчен шӑранса тухакан хӗвелтен ҫакӑнса тӳпене улӑхас килетчӗ. Кунӗпе ӗҫре лутӑрканнӑ шӑм-шакпа киле ҫитсен суккӑр куҫпах пӗр стакан ӑшӑ ҫӗт ӗҫнӗ те вырӑн ҫине тӳрех тӳннӗ. Хӗвел, туртса ыратакан пилӗк, ҫурла каснипе суракан алӑ, кӑпӑклӑ сӗт, мамӑк минтер, аннен хӗрхенӳллӗ ҫепӗҫ сасси... «Ытла вӑрӑма тӑсӑлчӗ-ҫке ку вӑрҫӑ, чарӑнсан та пире асаплантарма пӑрахмасть, хӑрушӑ алли-урипе ачаш чунсене амантса лӳчӗркет, вӑйӑ-кулӑра савӑнас чухне халь ачамккӑсем нушаллӑ пурнӑҫ тарҫи вырӑнне тӑрса юлчӗҫ. Эй, турӑ пулӑштӑрах вӗсене телей курма», – хӑй тӗллӗнех калаҫатчӗ анне.

Ҫиччӗмӗш класран вӗренсе тухсан Саратовра та ятарлӑ пӗлӳ илтӗм. Киномеханикре ӗҫленӗ чухне Кӗҫӗн Кипекрен таврӑнатӑп. Кӗмӗл Ямаш тӑвайккинчен пирӗн



И-44000

ял куç умне çĕр çине ӳкернĕ чечек пек тухса выртать. Асан хăтлă çырми шĕвĕрĕлсе пырать-пырать те пилĕк юпăланса каять. Варрични виççĕшĕ тăрăх кил-çурт чăмăртанса ларнă, хĕрринчисем сип-симĕс çулçă туратсем пек. Чечекĕн кашни çеçки хăйне евĕр илемлĕ, хăйне евĕр чĕрĕ. Çулталăк тăршшĕпех чечек çурăлать, вăрă ӳстерет, таврана сапалать. Çĕнĕ вăрăран çĕнĕ çимĕç ӳссе яла çĕнетет, пуянлатать, илемлетет.

Çăл куçĕсем мĕн чухлĕччĕ!

Вĕсенчен виççĕшĕ ачаранах асра юлнă. Хамăр умрах, çырма çумĕнче, хĕлĕн-çăвĕн юхатчĕ вăйлă çăл куç. Кӳрше имлĕ шывпа тăрантаратчĕ. Миçе хĕрарăм сӳс çиппи хуттăрĕ, пир тӳмен пулĕ унта. Пĕчĕк Киремет çырми пуçĕнчи çăл куç шыв типнĕ çулсенче яла çăлса хăварнă. Пиртен кăшт анатарахри, Макçăм мучисен пахчи хыçĕнчи çăл куçĕ шывĕпе, кӳршипех усă курнă. Хамăр çĕр çинче ытти çырмасенчи çăл куççем тата... Çăл куççем типмеççĕ, юхсах тăраççĕ, ялăн тĕп çырмине тулса шывĕ малалла чупать, Сунартан Çавала, Атăла, тинĕсе тухать, хăйĕн техĕмĕпе тĕнчене шăварать.

Çапла хавхаланаттăм çамрăк чун хĕрӳлĕхĕнче илемлĕ ялăмпа - чечеклĕ Хурăнсурпа. Ахальтен мар çыртăм пуль çакă сăввăма:

**Тăрă куççем**

Çĕр-аннемĕн тăрă куçĕсем –
Çăлтăртан та çутă çăл куççем.
Çăл куççем, çăл куççем, çăл куççем,
Çĕр-анненĕн çутă куçĕсем.

Тăван ялăн чĕрĕ куçĕсем –
Атăлтан та тулăх çăл куççем.
Çăл куççем, çăл куççем, çăл куççем,
Тăван ялăн тулăх куçĕсем.

Чун-савнийĕн ăшă куçĕсем –
Симпылран та тутлă çăл куççем.

Ҫăл куҫсем, ҫăл куҫсем, ҫăл куҫсем,
Чун савнийĕн тăрă куҫĕсем.

Пурнăҫ улшăнса пынă май, вăхăт иртсе пынă май, виҫĕ ĕмĕр ытла каялла хамăр ял пуҫланса кайнă вырăнта та, Кашкăрсен кил хушшинче, авалхи тĕп ҫăлкуҫ куҫне уҫрĕ, хĕвел шевлипе ҫиҫсе кулчĕ. Тутийĕ унăн питĕ сиплĕ тет. Тăрăшсан, вăл ҫăлкуҫ яла сиплеме те, пуйтарма та пултарĕ. Ĕмĕт туртăмĕн вăйĕ асамлă та хăватлă.

## ХУРĂНСУРĂМ – ҪУРАЛНĂ ҪĔР-ШЫВĂМ

Анне мана сĕлĕ вырнă ҫĕртен аран-аран киле ҫитсе ӳксе ҫуратнă, ҫурла уйăхĕнче, Сăпасра, хăйĕн ҫурлине ман алла панă. Атте ҫăпата тума, лаша кӳлме вĕрентнĕ те, алла пуртăпа сава тыттарнă.

Атте-аннен ĕҫченлĕх, ҫирĕплĕх шкулĕ пурнăҫра пулăшрĕ. Ҫырма та атте верстакĕ ҫинчех вĕрентĕм. Ҫапла манăн ялти тырă ани илем анине куҫса пычĕ.

Ҫавра ҫăкăр йăхĕнче пирĕн усал ҫын пулман, асаттесемпе асаннесем те, аттепе анне те ял ҫинче, таврара ырăпа кăна палăрнă. Ялти лайăх тĕслĕх тĕкĕрĕ вырăнĕнчехчĕ. Ҫав сулăм, юнпа пыракан пахалăх йĕрĕ, хамра та пурришĕн эпĕ тем пекех хĕпĕртетĕп. Ял ҫыннисене те тулли ырă кăмăл-туйăмпа хисеплесе юрататăп. Сиксе тапакан ҫăл куҫсем, тăрна куҫĕ пек тăрă пĕвесем, курак сассиллĕ, йăмраллă урамсем, тулли пучахлă уйсем, симĕс кавирлĕ ҫарансем, мăйăрлă, ҫырлаллă, кăмпаллă тăпăлкка вăрман, ĕҫпе, мухтавпа палăрнă тăваньялсем тĕнчен таҫти кĕтесне ҫитсен те куҫăм умĕнчен кайман. Эпĕ яланах вĕсен ытамĕнче пурăннă, халĕ те вĕсенчен уйрăлмастăп.

Таҫта та, такам умĕнче те мухтанма вăтанмастăп хурăнсурсемпе. Пур енĕпе те паттăр, хисеплĕ вăл пирĕн ял халăхĕ.

Пилĕк юплĕ ҫырма пуҫĕ варринче
Эп ҫуралнă ҫăл куҫ шывĕ сассипе.

Пиллĕх илнĕ тăван халăх хушшинче,
Ӳснĕ ялăн пыллă-çуллă тутипе.
Хурăнсур, Хурăнсур, Хурăнсур,
Эсĕ – манăн çуралнă çĕршыв.

Пĕрлешсессĕн вак хуçалăх чăмăра,
Çирĕпленнĕ те вăйланнă ушкăнра.
Чапай ячĕллĕ колхозшăн хамăра
Хĕрхенмесĕрех тар тăкнă вырмара.
Хурăнсур, Хурăнсур, Хурăнсур,
Эсĕ – манăн çуралнă çĕршыв.

Вăрманта та, авăнра та авăнман,
Чапай ячĕ пулнă пирĕншĕн ялав,
Тăшмана та, никама та парăнман,
Алăран вĕçертмĕпĕр ăна нихçан.
Хурăнсур, Хурăнсур, Хурăнсур,
Эсĕ – манăн çуралнă çĕршыв.

Хĕр кулиллĕ, яш вăййиллĕ ялăма
Ытамран вĕçертмĕп шуçăм киличчен.
Чун-чĕре шăратнă вăйлă туйăма
Сыхласа усратăп ĕмĕр виличчен.
Хурăнсур, Хурăнсур, Хурăнсур,
Эсĕ – манăн çуралнă çĕршыв.

## ЯЛ ВĔСЕМПЕ ТЫТĂНСА ТĂНĂ – ВĔСЕМПЕ АТАЛАННĂ

Ача чухне, яш çулĕсенче манăн ялти ватă çынсем хушшинче пулса, вĕсен юмах-халапне нумай илтме тӳр килнĕ. Сухаллă патвар стариксем, хăйсен чиперлĕхне чăваш сăпайлăхне упраса хăварма пултарнă карчăксем-кинемейсем, куç умĕнчех. Акă:

Хамăрпа урам урлă пурăннă Иххан мучи – Феофан Васильев – халĕ те тимĕрçĕ лаççинче тем ăсталать, сунтал тавра хĕм сирпĕтет. Кӳршĕри Мĕкĕте мучи – Никита Бардасов – граждан вăрçинче шуррисемпе çапăçнă чухнехи мыскарасене каласа култарать. Мирун

мучи – Мирон Пагонов – хăйсен Тулине тата пире, кӳршĕ ачисене, чăвашла Библи вуласа парать. Ахванеç мучи – Афанасий Тимофеев – турă çукки тата хăй турра ĕненменни çинчен райхаçата çыру çырать. Шлык мучи – Михаил Шлыков – пуç çĕклемесĕр кĕнеке вулать. Мартын Юханчпа Йăван Маркăч Масар тăвайккинчи çĕре хамăрьялсем туçиçармăссенчен мĕнле çĕнсе илсе сыхласа хăварни çинчен Марковсем патĕнче ăмăртмалла каласа лараççĕ. Хĕветут мучипе – Федот Федоровпа – карчăкки – Хветура кинемей – пирĕн умри çырма хĕрринче, хăйсен пахчинче улмуççисем, хырсем, хурăнсем лартаççĕ. Шашук Хĕлимунĕ – Филимон Шашков бригадир – уя кайма чан çапать. Арсени Михалч – Арсентий Михайлов – ял çумĕнчи çырмасем хĕррипе хĕрарăмсене махорка ларттарать, Ярадасен сарайĕ хыçĕнче арбуз, дыня ӳстерет. Çитăр мучи – Сидор Антонов – пире, çамрăк платниксене, вите тăрри тăрлама вĕрентет. Пашка Петĕрĕпе – Петр Шлыковпа – Шуç Йăванĕ – Иван Шусьев – йăрăс пӳллĕ те тăлпан кĕлеткеллĕскерсем, пирĕн ĕçкĕре «Эпĕ кавалерист пулнă», «Эпĕ артиллерист пулнă» тесе, сăра ĕçме мансах вăрçă эпизочĕсене аса илеççĕ. Хветĕр Трахвинч – Федор Трофимов – тăрăшсах кĕсле, сĕрме купăс ăсталать, пирĕн кӳршĕри Виссарун кĕрӳшне çĕн пӳрт туса параканскер, тăхлачипе çураçаймасăр, кашни каç савипе пурттине хĕстерсе, килнелле мăкăртатса утать (виличченех уринчен çăпата хывман, ялта çăпата сырса çӳрекен юлашки арçын). Уртем Раманĕ – Роман Артьемьев – арман çумĕнче çил вăйланасса кĕтсе кулянать. Талтти Çимунĕ – Семен Афанасьев – йышлă ачисене тăрантарма хăй ĕçлекен лавккаран мишукĕ-мишукĕпе макарон йăтса таврăнать, паллах, ахалех мар. Йăван Кăрăпчак – Иван Крипчаков – хăй вăрçăра чухне çуралнă ывăл ачана паллаймасăр хăшкăлать. Мăтрюш Ахванеçĕ – Афанасий Тихонов – пирĕнпе хирĕç пурăнакан пӳрт-çуртне сутса çемйипех Çĕпĕре тулăх пурнăç шырама тухса каять. Вĕсен пӳртĕнче сĕт-çу пункчĕ (маслобойка) тунăччĕ. Ухтер

Йăванĕ – Иван Ухтериков – хăйне усрава илсе пăхса ӳстернĕ Каврил Еххĕмчĕпе карчăккине юлашки çула ăсатать. Йăванкка – Иван Плеханов – лаша ашĕнчен килĕнче кăлпасси тăвать, пире те пĕрер татăк çитерсе кăтартать. Пĕрремĕш хут кăлпасси тутанса пăхатпăр. Кушак Илли – Илья Ильин – пирĕн анкарти пуçĕнче хĕрĕсемпе умма кăларать, çăмăлттайрах ывăлне тăн парать. Йăван Канрач – Иван Кондратьв – килне сутса, Волонтера куçса каять. Хулха Павăлĕ – Павел Антонов – Марья хĕрне Çĕрпелти Хрисан Васильча качча парать, шыв урлă ишсе каçнă чухне вăрçăра наградисене çухатни пирки кулянса калаçать. Кури Каврилч – Гурий Гаврилов – станокпа сӳсрен пăяв-вĕрен явать. Лаврентий Петравч – Лаврентий Петров – кунне темиçе хут алă парать, аса илсен, «вăл çынна пĕрре те сывлăх сунманни-саламламанни мар-иç» тесе йăл кулать. Путек Карачăмĕ – Герасим Тихонов – çырма урлă улаха каяканскер, эпир чавса çиелтен витсе хунă юр шăтăкне чăмать. Хĕритун Ваçли – Василий Харитонов – хăй пăхакан лаша кĕтĕвĕпе пӳрчĕ умĕнчи çула ялан картласа хурать. Тенис Маркăч – Денис Марков – ял вăрманне хуралланă вăхăтра тытнă кашкăр ашне ăш чирĕпе аптракансем валли типĕтнĕ те, сурăх ашĕ тесе мана та чышкă мăнăш татăк çитерет. Митри мучи – Димитрий Объязанов – пушар каланччи çумĕнчи кĕлетсенчи тырра пăшалпа хураллать. Качака Хĕлипĕ – Филипп Козлов – лашапа кĕлте кӳрет. Праках Куçмич – Прокопий Кузьмин – вăрçă хыççăн Авруй хыçĕнчи колхоз утарĕнче пыл пухать. Курмыш Павăлĕ – Павел Курмышев – пирĕнпе, Петюç Яковлевпа, пĕр парта хушшинче вĕренсе ларнă Тулине çемйипе пĕрле Пăкăяна илсе каять.

Акă тата Ульки акка – Ольга Александровна – атте-аннесенчен аслă пулин те ăна кӳршипех «Ульки акка» тенĕ, пĕрмай симĕс курăк яшки çисе шыçăнса кайнă Яккупа Ваççине хĕрхенсе йĕрет. Чĕлĕм кинемейĕ – Çырма Татьянĕн амăшĕ Веселиса Емильянова – сив çăл куç

çумĕнчи пĕчĕк пӳрт умĕнче йĕс пуçлă-кăмакаллă чĕлĕме мăкăрлантарать, ирхи тĕтререн сирĕлнĕ çырмана тутлă шăршлă тĕтĕмпе тултарать. Шаптак Мĕкĕтин амăшĕ, юмăç карчăк – Перасковия Ефремовна – тавраран урапа-çунапа килекен нушаллă çынсене суккăр куçпах юмăçла меслетсемпе сиплет. Аннесен кумми, Партас Мĕкĕтин карчăкки, ĕçкĕ вĕçлениччен пĕр черкке хĕрлĕ эрехе пĕчĕккĕн сыпа-сыпа халăхпа пĕрле савăнать-юрлать. Вера акка, Шахалккă Хĕветĕрĕн амăшĕ – Вера Анисимова – вăрçăра вилнĕ упăшкине Микулая ĕмĕр арçынĕ вырăнне хурса хисеплекенскер, çумри Сар Яккăва туйĕнче çамрăк арăмпа тату, юратса пурăнма, нумай ача çитĕнтерме пиллет. Унеççи акка – Анисия Ярада – юлашки хыпарсем пухма ял тăрăх уксахласа каять. Ковский йыснан амăшĕ – Вера Никитина – пахчара, анкартинче чикĕ тăрăх чечек, шултра пуçлă мăкăнь, нимĕç пăрçи, хĕвел çаврăнăш ӳстерет. Шапа Ульянĕ – Ульяна Данилова – колхоз пĕчĕк пӳрт лартса париччен Зоя ятлă хĕрĕпе йыснасем патĕнчех пурăнчĕ, уйра пирĕнпе ăмăртса тырă вырать, каçпа авăн çапнă чухне каткари шывпа шапа çăтса ятăм тесе ахăрттарать. Кульă йысна амăшĕ – Варвара Васильева – Çĕрпӳ тĕрминчен таврăннă хыççăн, савăннипе лаçра сăмакун юхтарать.Ăна, вут ними валли сăмакун тунăшăн, ялти бригадмилец Денис Маркăч милици чĕнтерсе килсе, судпа хуптарнăччĕ. Намăса-симĕсе пĕлмен Марков, савăнăçлă куççуль аншарлийĕпе мухмăр чĕртме, сивĕ куçне-пуçне чалхăртса çитет. Тĕрмешĕн «тав туса» ăна тăхлач алтăрпах ĕçтерет. Упăшкипе ывăлĕ вăрçăра вилнине чăтаймасăр куляннипе хĕне кайнă Макçăм мучи арăмĕ – Федора Александровна – пирĕн пӳрт умĕнчи йăмра тункати çине кашни иртмессерен канма ларать. Ванькăсен амăшĕ – Надежда Алексеевна – Сахар хушнипе пире, ачасене, çăмартаран «глазуницă» пĕçерсе çитерет, кăпăклă сăра ĕçтерет, упăшкине, шӳтлесе, «сана çитет!» тесе пӳрнипе юнать. Ултутти акка – Евдокия Мурзаева-Кузьмина – килти çамрăк çарпа çемье гектарĕ

çинче кăшман çитĕнтерет. Амруç Овчинников амăшĕ – Ксения Гавриловна – пӳрт-çурта таса тытакан типтерлĕ хĕрарăм, клубра юрланă Анна Казакова, Елена Пикулина, Зоя Алтын-Баш тата ытти артисткăсене çывăрма илсе кĕрет, чăваш апат-çимĕçĕпе, чей-сăрапа сăйлать. Вася Марковăн амăшĕ – Ольга Захаровна – çемçен калаçакан ăшă кăмăллă ватă, Йăван Маркăч юмахне ытлашши кукăртса кĕртсе кайма тытăнсан, «ах, ан суй-ха», тесе упăшкине лăпкăн чарать. Шлык Петĕрĕн арăмĕ, Ксения Васильевна, эпир пĕр класра вĕренекен Валентинĕпе шкултан таврăннă чух хăйсем патне кĕрсен, пăталанă вырăнĕ çинче чĕп-чĕрĕ куçсемпе пăхса выртаканскер, пирĕнпе нумайччен калаçать, ыйтса пĕлет, ăс парать, тăрăшса вĕренме хушать. Ковский йыснан аккăшĕ Анна Шашкова – Хурăнсур клубĕнчи Çĕнĕ çул умĕнхи бал-маскарадра махорка кĕлти пулса ташлать. Илюшсен амăшĕ – Акулина Ананьева – сакăр вуннăран иртнĕ маттур няня Кăтрасен ачисене, мăнукĕн кăтрисене пăхать. Тамара амăшĕ – Анна Андреева – авалхи чăваш юррисене вĕçĕмсĕр шăрантарать. Мархва акка – Марфа Бардасова – çылăхран хăраса, электричество кĕртнĕ чухне электриксене пӳрт çумне пралук картармасть, краççын лампипе йăлăхсан, турăран хăрамасăрах çутă кĕрттерет. Куçмич матки – Надежда Матвеевна – вăрçăран тăлăха юлнă кӳршĕсен анкартийĕсенче суха пуç тытса умма çырать.

Мĕн чухлĕ шăпа, мĕн чухлĕ пурнăç саманчĕ. Çак çынсем тахçанах автансăр Хурăнсурта ĕнтĕ. Анчах вĕсен ырă ячĕ, курăмлă ĕçĕ – асрах. Ял вĕсемпе тытăнса тăнă, вĕсемпе аталаннă. Нумай пурăннă Уртем мучие - Артемий Архипова та – манман. Сухалне шăла-шăла вăл çамрăксене граждан вăрçин нушаллă-вутлă çулĕсемпе чуптарать. Хăйсенчен инçех мар пурăнакан Кăнчча Петĕрĕ вара «Уртем мучи калавĕсем» çырать, ял çыравçин хайлавĕсене «Социализм çулĕпе» хаçатра ял-йыш хавасланса вулать.

# ПЕТР КОВСКИЙ – ХУРĂНСУР ЮРĂÇИ

Хурăнсурăн пĕрремĕш паллă çыравçи Кăнчча Петĕрĕ – Петр Ковский – маншăн ыттисенчен уйрăмрах, тĕлĕнмеллерех, асамлăрах асра юлчĕ пулмалла, мĕншĕн тесен манăн вăл пуçарнă ăслăлăх, сăнарлăх, ăсталăх ĕçне – питĕ йывăр та нихçан вĕçленмен ĕçе – чуна парса малалла тăсмалла пулчĕ. Уншăн та савăнатăп. Çавăнпа та хамăн çак кĕнекене унăн хайлавĕсене те ял пурнăçĕн истори страницисем выrăнне кĕртес терĕм. Малтанхи вĕрентекенĕмĕн мал шухăш-ĕмĕчĕ пирĕнпех – ял çыннисемпех – аса илӳре, ăс-пуçра вилĕмсĕр юлтăр.



Петр Владимиров-Кăнчча Петĕрĕ–1940 çулта. Ковский хушамата вăл вăрçă хыççăн йышăннă, паспорт çине те çыртарнă.

Мĕнле çын пулнă-ха вăл – Кăнчча Петĕрĕ?

Петр Владимирович Владимиров-Ковский Хурăнсур Çармăс ялĕнче 1921 çулта хресчен çемйинче çуралнă. Ашшĕсĕр ир тăрса юлнă. Амăшĕпе, Клавдия йăмăкĕпе пурăннине астăватăп. Аккăшĕ унăн Филимон Иванович Шашкова качча тухнă, йăмăкĕ – Александр Григорьева.

Маттур каччă колхозри çамрăксен ертӳçи пулнă. Хастарлăхшăн ăна 1949 çулта ВЛКСМ Чăваш обкомĕн Хисеп грамотине парса чысланă.

Вăл Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă, мотоциклистсен батальонĕнче нимĕç эшкерĕсемпе паттăррăн çапăçнă. Уншăн ăна Мухтав орденĕпе тата медальсемпе наградăланă.

Фронтран аманса таврăннă хыççăн вăл Иустиния Прокопьевна Прокопьева-Кузьминана качча илнĕ, клуб заведующийĕнче, ял Совет секретарĕнче, бригадирта ĕçленĕ.

1971 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатра манăн ун çинчен çырнă «Хурăнсур юрăçи» тĕрленчĕк пичетленнĕччĕ. Унта çапла çырнă:

«Этеме, чĕрчуна, ӳсентăрана юратакан çын яланах вилĕмсĕр. Унăн ятне халăх ĕмĕрĕпех асра тытать. Вăл юрату, ытти çынсен чун-чĕрине кĕрсе вырнаçса, малалла пурăнать, аталанса вăйланать, таврана сарăлать.Çавăн пекчĕ Петр Ковский – Хурăнсур Çармăсри культурăллă çынсенчен пĕри.

Унăн чĕри тапма чарăнман пулсан, кăçал вăл аллă тултаратчĕ. Анчах та фронтра аманнă йывăр суранĕ тата хаяр чир ăна 1958 çулта вăхăтсăр пирĕн ретрен илсе кайрĕç.



**Петр Владимирович Ковскин килĕ, юсанă хыççăн, аллăмĕш çулсенче.**

**Пӳртĕнче, сылтăм енчи стена çинче, Петр Ковскин пурнăçĕпе мухтавне сăнлакан пысăк рама çакăнса тăратчĕ.**

Петр Владимирович тĕлĕнмелле уçă кăмăллă, нумай енĕпе пултаруллă, талантлă çынччĕ. Ун патне ватти те, вĕтти те, такам та вăтанмасăрах канаш ыйтма пыратчĕ. Вăрнаралла тухса каякан урамри улăм витнĕ пысăках мар пӳртре литературăна юратакансене, радио маçтăрĕсене, купăççăсене, кăвакарчăн е кролик ӳстерекенсене, пахчаçимĕç çитĕнтерекенсене тата фото ăстисене кĕшĕлтиех курма пулатчĕ. Таврари ялсенчен пухăннă çамрăк талантсене Ковский тăрăшса, хăпартланса, пĕр

ӳпкелешмесӗр чӑтӑмлӑн вӗрентетчӗ. Ӑҫтан ҫитетчӗ унӑн хӗрӳлӗхӗ!

Вӗсен килӗ уйрӑмах хӗрӗхмӗш-аллӑмӗш ҫулсенче ялти чӑн-чӑн культура вучахӗ пулса тӑнӑ. Ҫавӑнпа ӗнтӗ ӑна халӗ те манмаҫҫӗ.

Чи юратнӑ ӗҫӗ унӑн журналистикӑпа литературӑччӗ. Ачаранпах, вӑтӑрмӗш ҫулсенчех ҫырма пуҫланӑскер, Петр Ковский республикӑри хаҫатсемпе журналсенче те, район хаҫатӗнче те нумай сӑвӑ-калав, статья пичетленӗ. Унӑн творчествинче тӑван партие, ҫулпуҫсене сума суни (вӑхӑчӗ ҫапла пулнӑ), ҫӗршыва, халӑха юратни лирикӑлла туйӑмпа тухса тӑрать. Хӑш-пӗр сӑввисем чӑннипех юрӑ пек янравлӑ, илемлӗ, ҫепӗҫ. Ахальтен мар ӗнтӗ ӑна Хурӑнсур юрӑҫи тесе мухтас килет».



**Ҫемье ӑшши (сылтӑмран сулахаялла): амӑшӗ Вера Ивановна Никитина, йӑмӑкӗ Клавдия Владимировна, арӑмӗ Иустиния Прокопьевна Кузьмина-Владимирова.**

Вӑл ҫырса хӑварнисем халӗ те ял историне пуянлатаҫҫӗ. Вун пӗрти корреспондентӑн малтанхи заметкисенчен пӗри пулас ку. Ӑна астӑвакан ялта та, Ҫӗрпелӗнче те сахал юлнӑ пуль. Акӑ вӑл:

<u>«Ҫамрӑк выльӑхсене шефа илтӗмӗр</u>

Пирӗн отряд Хорнзорти колхоз ферминчи ҫамрӑк пӑрусене, тихасене шефа илчӗ. Пионерсем выльӑхсене юратса пӑхаҫҫӗ, вӑхӑтра шӑвараҫҫӗ, ҫитереҫҫӗ, тасалӑхра тытаҫҫӗ. Вӗсем пӑхакан пӑрусемпе тихасем таса та мӑнтӑр. Илӗпӗр, Федя Николаев пӑхакан пӑрӑвах. Вӗсем иккӗшӗ чӑн-чӑн туссем пек. Федя пӑрӑвӗ ятран чӗннине те пӗлет.

Тихасене лайӑх пӑхнӑшӑн колхозӑн аслӑ конюхӗ Денис Марков юлташ пионерсене темиҫе хут та тав тунӑ. Пӗррехинче вӑл отряд сборӗнче пулчӗ. Марков юлташ кунта пионерсене:

– Колхоза çамрăк выльăхсене ÿстерме пулăшнăшăн сире, пионерсене, «Чапаев» кĕнеке паратăп. Чапаев пек пулма сывлăх сунатăп, – терĕ.

**Отряд вожатăйĕ Петр Владимиров,**
**Янгорчинăри пуçламăш шкул,**
**4-мĕш «В» класс. Вăрнар районĕ.**
**«Пионер сасси» хаçат, 1932 ç.»**

Ÿссе пынă май, унăн пултарулăхĕ те ÿснĕ. Хавхаланса çырнă вăл, хайлавĕсем пичетленсен, мĕн тери хĕпĕртенĕ-ши?

Çĕнĕ пурнăç тăвакан ял çамрăкĕсем канăвне те çĕнĕлле - культурăллă йĕркеленĕ. Петр Владимиров ун çинчен пĕтĕм халăха пĕлтерме васканă. Акă унăн тĕрленчĕкĕ хут çине тĕрленнĕ:

«<u>Хĕрлĕ улах</u>

Аран-аран кĕрешкелесе тухрĕ сар хĕвел тĕтреллĕ пĕлĕтсем айĕнчен. Хыпаланса сапса ячĕ вăл хăйĕн çуттине çĕр çине. Анчах унăн çути нумаях пымарĕ, каллех ăна пĕлĕтсем хупларĕç. Кунĕпеле пĕлĕтсемпе кĕрешсе ывăннă хĕвел каçалапа вăрман хыçнелле чăмрĕ. Уйсемпе вăрмансем, ялсем çине тĕксĕм чаршав карăнчĕ. Сывлăш та нÿрĕкпе тулчĕ. Чĕрчунсем те йăвисене таврăнчĕç пуль. Кунĕпе тыр суртланă (тасатнă-сăвăрнă) колхоз каччисемпе хĕрĕсем килĕсене утрĕç. Çул çинче вĕсем пĕрне-пĕри апат хыççăнах хĕрлĕ улаха пыма чĕнчĕç.

– Хĕрлĕ улах пуçланнăранпа унтан пĕрре те пулин юлнă-и эп, мĕскер эсĕ, Хĕлĕп, кирлĕ мара вуласа (каласа) пыратăн, уписательнă пыратăп, – терĕ те Укахви, хăйсен хыр юпаллă вырăсла хапхинчен кĕрсе кайрĕ.

Хĕлĕп, Марин, Курти – тырă суртланă çĕрте ĕçлекенсем – пылчăк çăрса килĕсене васкарĕç.

Укахви хăвăрт апатланса тухрĕ. «Ах, ма пĕрмай çăватьха ку çумăр, тепĕр чух çăвасчĕ. Кĕрхи çумăр çав... Çав уйăх та, каçхи тĕнчен хуралçи, çурла пек кăна, тулли пулсанах ун çутипе хăть йĕркеллĕ çÿреме пулатчĕ çак тĕттĕм çĕрсенче. Атту пăх-ха, урасем мĕн тĕслĕ?» – тесе ăшĕнче кĕрхи çанталăка вăрçса пынă хушăра вăл хĕрлĕ

улах пӳрчӗ патнелле ҫывхарчӗ. Ӗлӗк Сухӑр Павӑлӗн пӳрчӗ пулнӑ вӑл. Колхоз пуҫлансанах – правлениччӗ. Икӗ хутлӑ ҫӗнӗ ҫурт тусан, правлени унта куҫрӗ, пӗр-икӗ ҫул пушӑ ларнӑ ҫуртра кӑҫал, комсомол организацийӗ пуҫарнипе, хӗрлӗ улах уҫӑлчӗ.

Укахви йӗс хӑлӑплӑ алӑка уҫса кӗрсе кайрӗ. Ӗлӗк тӗттӗмлӗхре пурӑннӑ, халӗ колхозланакан ял мӗнле культурӑланса пыни пӳлӗм ӑшчиккинчен те лайӑх курӑнать. Стенасем ҫинче – чӗнӳсем, кӑтартусем, картинӑсем, Ленин,Сталин, Косарев (Комсомол Тӗп комитечӗн пуҫлӑхӗ) сӑнӗсем, пысӑк сехет. Вӑрӑм сӗтелсем, мӑн шкап. Хӗрлӗ хӑмапа (чыс хӑми) хура хӑма (кахалсем, прогульщиксем, рвачсем валли) пур.

Кунта ҫынсем пурте пуҫри тутӑрӗсене салтнӑ, карттусӗсемпе ҫӗлӗкӗсене хывнӑ, илемлӗ, шап-шурӑ, тӗрленӗ кӗпесемпе. Кашнин пит-куҫӗнче хастарлӑхпа савӑнӑҫ палли ҫиҫет. Укахви те сӑхманне хывса ҫакрӗ, тутӑрне салтса хулпуҫҫийӗсем ҫине уртса ячӗ, унтан кунӗпе пӗрле ӗҫленӗ Марин тантӑшӗ ҫумне пырса ларчӗ. Ҫамрӑксем хӑшӗ хаҫат-кӗнеке вулаҫҫӗ. Хӗрсенчен ҫӑм арлакан та, тӗрӗ тӗрлекен те, алсиш ҫыхаканӗ те пур. Укахвине курсанах Хӗлӗп унта пырса ларчӗ. Пӳртре шӑкӑл-шӑкӑл калаҫнӑ сасӑ тӑрать. Укахви сӗтел пуҫӗнче Ясенски учитель, комсомолецсен пуҫлӑхӗ Сахар тата хура куҫлӑ, илемлӗ питлӗ, майралла тумланнӑ хӗр тем ҫинчен тӑрӑшсах калаҫса ларнине курчӗ.

– Ку мӗнле майра-ши? – шӑппӑн ыйтрӗ Укахви хӑйпе ҫывӑх ларакансенчен.

– Райкомран килнӗскер, тем ӗҫпе, пӗлместӗп, – ӑнлантарчӗ Хӗлӗп.

Пӑшӑлтатакан, хуллен калаҫакан ҫамрӑксене Сахарӑн хулӑнрах сасси чарчӗ.

– Юлташсем, – терӗ вӑл, – хаҫат вулама та, ӗҫлеме те чарӑнӑр. Комсомолецсемпе ялти активлӑ ҫамрӑксем пурте кунта. Пӗр пӗчӗк пуху туса илер. Пухӑвӑн кун йӗрки: 1-мӗшӗ – коопераци урлӑ тырӑ сутасси; 2-мӗшӗ – тӗрлӗрен.

Малтанхи ыйтупа райкомолпа МТС политпайӗ янӑ представитель Краснова юлташ каласа парать.Ан шавлӑр! Митрипе Кавӗрле, пӑрахӑр шашкӑлла выляма!

Улахри ҫамрӑксен куҫӗсем район представителӗ ҫине тӑрӑнчӗҫ. Вӑл кашнин ҫине ҫивӗччӗн пӑхса илчӗ, хурахӑмӑр кӑтрарах ҫӳҫне турарӗ те ерипен калама тытӑнчӗ. Пӗр вунӑ минут каларӗ пуль вӑл. Унӑн сӑмахӗсем пурин чӗрине те чӗрӗ вӑй хушрӗҫ, комсомолла хастарлӑха ҫӗнетрӗҫ.

– Сахал калаҫса нумайрах ӗҫне тӑвар, – ҫемҫетрӗ Краснова сассине. – Ушкӑнӑн-ушкӑнӑн пулса, уйрӑм участоксем илсе, ыран ирех килрен-киле ҫӳресе ял ҫыннисене ӑнлантарма тытӑнар. Атту ку 26 процентпа ларни тырӑ пухассипе пӗтӗм района каялла туртни пулать, класс тӑшманӗсене пулӑшни пулать. Рас колхозӑн патшалӑха сутмалӑх пур, уйрӑм хуҫалӑхсен те пур вӑл тырӑ. Ӗҫе пурте тытӑнса, хамӑр алла илсен – ыранах плана тултаратпӑр. Ҫапла-и? – чӗнчӗ докладчик юлашкинчен. Татах темскер каласшӑнччӗ вӑл, анчах ҫамрӑксен ӗҫпе писӗнӗ аллисем ҫатӑлтаттарни ӑна «конешнӑ, паллӑ» тесе кӑна шухӑшлаттарчӗ пулас, урӑх вара нимӗн те каламарӗ.

– Пӗр кил юлмасть ырантан тырӑ сутманни! – илтӗнчӗ Хӗлӗп сасси.

Сахар ура ҫине тӑчӗ, кама хӑш ушкӑна уйӑрса хӑш участока ҫирӗплетнине вуласа пачӗ. «Пурнӑҫлатпӑр!» – тесе сӑмах пачӗҫ бригадир тесе ят илнисем.

«Тӗрлӗрен» ыйту ҫинче Сахар иртнӗ каҫ Павӑлпа Казанка Ваҫҫи хӗрлӗ улаха ӳсӗр пуҫпа кӗрсе хӗрсене усал сӑмахсемпе намӑслантарни ҫинчен каласа пачӗ. Хӗрсем вӗсене хытӑ ятларӗҫ.

– Колхозра та «полнокровный» кахал, тата пиртен кулма-и... Намӑссӑрсем! – татрӗ комсомолка Хӗветури каскӑнҫӑсене.

Пурте кулса ячӗҫ. Каскӑнҫӑсен пичӗсем, намӑсланнипе, пӗҫерсе кайрӗҫ пулас, сӑмах чӗнмерӗҫ вӗсем. Пуху Павӑлпа Ваҫҫана хытӑ асӑрхаттарчӗ.

– Тепре çакнашкал ашкăнсан, суда паратпăр, – сăмахне татăклăн пĕтерчĕ Сахар.

Пуху хупăнсан, яланхи пекех ташă-юрă-кулă тапранчĕ. Пӳрт кисренсе кăна ларать вара кун пек чух.

Акă купăсçă «двухрядкине» тăсса ячĕ. Пурте хăйсен юратнипе мăшăрланса шума тытăнчĕç таса урайĕнче. «Краковяк» хыççăн, «национальные!» тесе кăшкăрчĕ Митри. Чăваш çеммипе урай хăмисем авăнчĕç тепре. Унтан Марин мордва хĕрĕсене ташлама ыйтрĕ. Вĕсем кунта, Хурăнсура, аппăшĕсемпе килнĕ, тахçантанпах пурăнаççĕ. Филена, Елка, Маруся ятлисем ташласа пачĕç. Ната ятли эпĕ ташлама пĕлмес, юрласа парам, терĕ те вара вăл мордвасен туй юррине шăрантарса пачĕ.

Хĕлĕппе Укахви кантăк патĕнчи тенкел çине вулама (калаçма) ларчĕç.

– «Краковяк» кăмăла каять-и сана? – ыйтать Укахви Хĕлĕпрен.

– Какшĕ, – хĕре куçран пăхать Хĕлĕп. – «Краковякра» савнипе савни ташлатпăр, ма кăмăла каяс мар вăл.

Укахви алсиш çыхма пуçларĕ. Хĕлĕп сĕтел çинчен «Малтанхи утăмсем» илчĕ те, хăш тĕлле уçмаллине шутламасăрах уçса, 28-мĕш страницăра хăй ăшĕнче вуларĕ, унтан, Укахвие хулĕнчен кăт тĕксе, итле, терĕ:

... Кун-çул страницисем хăш чух
Кичем калавăн курăнĕç.
Яшлăх, çак калавран та вăйлă эсĕ, юрату!
... Тантăшăмсем, пĕлетĕр-и, мĕскер вăл юрату?
Пурнăç – кĕрешӳпе телейлĕ юрату.
Илтрĕн-и, чунăм, мĕскер вăл пурнăç? Пурнăç – кĕрешӳпе телейлĕ юрату, Укаш-ка-а-а... – ыталарĕ каччă хăй çумĕнчи савнине.

Хĕрĕ, кăвак куçĕсене Хĕлĕп çине тĕллесе, сĕт пек шурă шăлĕсене хитрен кăтартса, йăл-л кулчĕ.

– Хоровод! – пĕлтерчĕ улах пуçлăхĕ Митри.

Пурте çаврашкана аларан-алă тытăнса тăма пуçларĕç. Çаврăннă хушăра «Юратсах паян ĕçлерĕм» юрă шăранчĕ.

Çаврашка варринче пуканпа ларакан Митри аллисемпе çат-çат! çупрĕ те, кăвак куçĕсене хĕссе, пăру пăхакан Августа ударница умне урипе тапрĕ: – Ташлама ыйтатăп?

– Мĕнех вара вăл ташласси. Давай «Сени», – терĕ хĕр.

«Двухрядка» «сени» кĕвве янраттарма тытăнчĕ. Хĕмленсех ташларĕ Августа. Ташласа пĕтерсе пукан çине ларчĕ. Çаврашка «Малалла утар» шăрантарчĕ. Августа чăтса лараймарĕ, сиксе тăчĕ те, «Сарă çўçĕм, кăвак куçăм» тесе, Иосиф умне пырса тапрĕ. Иосиф умарах тухрĕ.

– Ну, эсĕ, кĕнеке нумай вулатăн, хаçатсем çине те çыратăн, пĕр-пĕр сăвă каласа пар пире? – ыйтрĕ Августа.

– Мĕнех, итлĕр апла тăк, Ивник сăввине, «Колхоз каччи» ятлă, «Çамрăк колхозникре» тин çеç пичетленнĕскер.

Юлашки куплета каланă чухне Иосифăн çўхе тути хĕррисем кулас пек пулчĕç, мăшăр кăвак куçĕ çаврашкара çаврăнакан савнине, Феклана, шыраса тупрĕ. Темскер пĕлтернĕ пекех туйăнчĕ Феклана Иосиф куларах пăхни.

– Ах, илемлĕ-çке сăвви, пултараççĕ çав поэчĕсем çырма, калама та маçтăр эсĕ, Иосиф, – ырларĕ тăсланкă качча Фекла.

Тепĕр вунă минутран вăйăсем пĕтрĕç. Кашниех хăйĕн мăшăрĕсемпе ларсан, тепĕр хут юрăсем янрарĕç. Тулта та юрлани илтĕнет. Ĕнтĕ вăхăт вунпĕртен иртнĕ. Хăш-пĕр мăшăрсем тухса та утрĕç.

– Ыр каç пултăр пурне те, ыран хамăр йĕркеленĕ ушкăнсемпе ял тăрăх çўресе кăнтăрла иртни икĕ сехет тĕлне правлени çуртне çĕнтерўллĕ сведенисемпе пырăр. Каçпа, канешнă, политзаняти пулать. Пурин те кунта килмелле, – ырă сунса ярать Сахар каччăсемпе хĕрсене. Вăл Праскине хăлхаран пăшăлтатса тем каларĕ те, пĕрле тухса кайрĕç.

Митрипе Анюта, улаха кая юлса, форточка уçрĕç, пўрте уçăлтарчĕç, урай шăлчĕç, хаçатсемпе кĕнекесене майларĕç, краççын лампине сўнтерчĕç те, тухса Анютасем еннелле пылчăк çăрса утрĕç.

* * *

Çамрăксен ушкăнĕсем ирех тăрса, çирĕплетнĕ участоксенчи уйрăм хуçалăхлă хресченсем патне çите-çите ларнă та, патшалăха кооператци урлă тырă сутасси çинчен ăнлантараççĕ.

Сахар хушнă вăхăта ушкăн пуçлăхĕсем правление вĕçтерсе çитрĕç. Хĕлип чи юлашкинчен пычĕ.

– Вун пĕр центнер çурă сутнă ман участокра, – терĕ вăл хыпăнса. – Кăшт пăтăрмах пулчĕ.

– Мĕн тата? – тĕпчерĕ Сахар.

– Класс тăшманне тĕл пулма лекрĕ. Кĕтĕмĕр Тапи мучи патне. Вăл пĕр пăт сутнă пулнă. Сахал, терĕмĕр эпир. Мучи, тарăхса кайса: «Кӳршĕсем ятлаçаççĕ, сан тырру пур-тăк, сут, теççĕ, мăшкăллаççĕ манран», – тесе евитлерĕ. Платун Çимунч, Кăчăм Лексантăрĕ, Латна Хĕветĕрĕ ятлаçнă пулнă ăна тырă сутнăшăн. Эпир вара мучие ăнланмалла тăнлантартăмăр. Тĕрлĕрен заготовкăсене тултарса пыманшăн Латна Хĕветĕрĕсене суйлав правинчен пăрни çинчен каласа патăмăр. «Спаççипă апла мана тăн кĕртнĕшĕн, Совет ман хута та кĕнĕччĕ, тата пилĕк пăт сутатăп, Ехрем, лаша кӳл, – терĕ. – А эсĕр, шăллăмсем, хĕрĕмсем, саявлени çырăр, матик-катиклер, колхоза кĕрес». Хăй халь тырă сутма кайрĕ. Саявленийĕ акă, – тыттарчĕ Хĕлĕп хут татăккине Сахара.

Районтан килнĕ Краснова çамрăксене тав турĕ:

– Малашне те пур ĕçре те комсомолецсемпе çакăн пек пĕрле ĕçлĕр. Сирĕн опыта ытти организацисенче те сарăпăр. Атту хăш-пĕр ялсенче ĕçсем начартарах. Сирĕн çинчен хаçат çине çыратпăр. Комсомол райкомĕпе МТС политпайĕ ячĕпе пурне те ырă сунатăп. Сирĕн мухтавлă ырă ĕçпе культура вучахĕ – хĕрлĕ улах – сывă пултăр!

Харăссăн алă çупни çамрăксем татах та ытларах тăрăшма, хĕрлĕ улаха çĕнĕлле вăйлăнрах хĕмлентерме хатĕрри çинчен пĕлтерчĕ. Тĕттĕмлĕхре нуша курнă Хурăнсурта ушкăнпа ĕçлекен пĕрлешӳллĕ хуçалăх çитĕнет. Çамрăклăхра иксĕлми хастарлăхпа культурăллăх ешерет.»

*Вĕçĕнче калани.*

*Ку ал çырăвне эпĕ Петĕр Ковский архивĕнче тĕл пултăм. Архивне утмăлмĕш çулсенче ача-пăча чĕрсе, салатса пĕтериччен кăштах сыхласа хăварнăччĕ. Чăвашстанри Вăрнар районне кĕрекен Хурăнсур Çармăс ялĕнчи çамрăксен хĕрÿ пурнăçĕн пĕр пĕчĕк пайне çырса кăтартнă «Хĕрлĕ улах» тĕрленчĕкре. Çырасса Вăрнар МТС (машина-трактор станцийĕ) политпайĕ колхозсенчи бригадĕсем валли «Колхозри ударник» ятпа кăларма хатĕрленĕ стена хаçачĕн таса бланкне вакласа çырнă. Бланкĕ 1934 çулхискер те, çавăнпа тĕрленчĕкĕ çав вăхăталла, вăрçăччен çырнăскер пулас.*

*«Хĕрлĕ улаха» вуласа пичете хатĕрлесе çитернĕ май, манăн куçăм умне тăван ялăн вăрçăчченхи сăнĕ, тăван ялăн юратнă çыннисем туха-туха пычĕç. Тĕрленчĕк геройĕсене эпĕ пурне те курман, мĕншĕн тесен хăшĕсем вĕсенчен иртнĕ вăрçăра е каярахпа вилнĕ, пурне те астумастăп та. Ячĕ, ашшĕ ячĕпе кăна çав-çав пулĕ тесе шутлатăп, хăшне-пĕрне вара лайăх пĕлетĕп.*

*Акă, комсомолецсен ертÿçи Сахар – Захар Александрович Александров. Колхозра ĕçленĕ, хамăр ял çумĕнчи Санар тăвайккинче фосфорит кăларнă, вăрçăра хастар танкист пулнă, çапăçура йывăр аманнă, нумай наградăна тивĕçнĕ. Вăйлă активистчĕ. Пенсие тухсан, чирлесе вилнĕ.*

*Сарă çÿçлĕ, кăвак куçлă Иосифа халĕ ялти çамрăксем вăл та хăй вăхăтĕнче ура хуçса ташланă, ăйăр пек чупса çÿренĕ тесе те шутламаççĕ пулĕ. Эпĕ хам та ăна икĕ хул хушшине костыль хупса хăрах уран siksе çÿренине çеç пĕчĕкрен курса пурăннă. Фронтран аманса таврăннăранпах Иосиф Иванович Шашков ял культурине çĕклессишĕн вăйне-халне шеллемерĕ.*

*Фекла текенни, эп шутланиех пулсан, вăл Фекла Васильевна Иванова пуль. Ĕçчен хĕрарăм, вун пĕр ача çуратса пăхса ÿстернĕ, пĕлтĕр çитмĕл тултарчĕ.*

*Петӗр Ковский ҫырнисем халӑхра юлчӗҫ, ырӑ кӑмӑлӗ те унӑн ӑна лайӑх пӗлекенсен чун-чӗринчех. Акӑ эпир паян та, унӑн пултарулӑхне кура, вӑтӑрмӗш ҫулсенче Хурӑнсур Ҫармӑсра хӗрлӗ улах мӗнле ларни, вӑл ҫамрӑксемшӗн, ялшӑн, ҫӗршывшӑн мӗнле усӑллӑ пулнине пӗлетпӗр.*

*Ҫак хӗрлӗ улахри ҫамрӑксен кун-ҫулӗ, шӑпи каярахпа тӗрлӗрен, хӑйсен шухӑш-ӗмӗчӗ пек те мар, урӑхларах пулса тухнӑ пуль, ҫапах та вӗсен ҫав вӑхӑтри хаваслӑх хӗлхемӗ, хастарлӑх ҫулӑмӗ халӗ те тӑван ял халӑхӗ хушшинче ялкӑшать.*

*«Вучах» хаҫат, 3.02.1993 ҫ.*

*Вӑрҫӑченхи ку ӳкерчӗке кам туни паллӑ мар. 1940 ҫулхи ҫуркунне ӳкернӗскер. Сӑн ӳкерчӗксен пуххинче Ковский йысна унта ӳкнӗ ҫамрӑксене йӗркипе ҫапла палӑртнӑ:*



«Чи ҫывӑх юлташсем (сулахайран сылтӑмалла): Тӑраҫҫӗ: Кутсӑр Хӗветӗрӗ, Кӑнавал Василийӗ, Крипчак Маринӗ, Микке Праскийӗ, Мукач Никӑнӗ, Платун Клатийӗ,

Латна Василийĕ. Варринче, лараççĕ: Мустăр Анни, Кăнчча Петĕрĕ, Кăшман Алюçĕ, Абиçян Микулайĕ. Малти ретре: Купил Никăнĕ, Хăрăм Тихăн арăмĕ Хресчен, Тихăн хăй».

Ăнлантарни пур. Вăрçă хыççăнхи: «Кутсăр Хĕветĕрĕ, Кăнавал Василийĕ, Мукач Никăнĕ, Латна Василийĕ, Абиçян Микулайĕ, Купил Никăнĕ, Хăрăм Тихăнĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуçĕсене хунă».



Хурăнсур яш-кĕрĕмĕн ушкăнĕ (сулахайран сылтăмалла): Абизян Нинкки, Кашкăр Ларинанĕ, Дюмин Кузьма Çинавийĕ, Упри Катти Маринĕ.

Ковский çырса хăварнинчен:

«Ларинанпа тата Çинавипе мĕн ачаран лайăх пурăннă. Кашкăрсем килте питĕ те начар пурăнатчĕç. Ларивана эпĕ хам темĕн чул татăкăн çăкăр парса çитернĕ. Аннесенчен вăрттăн анкартине тухаттăм та, лупаса çӳллĕ хăма тăрăх хăпарса, çăкăр чĕлли хурса хăвараттăм. Лариван вара пырса илетчĕ. Да, пурнăç пĕр килмест. ФЗОна кайрĕ, унтан – фронта. Вăрçăран таврăнаймарĕ.



Çинависен хăйсен килçурчĕ пулман. Унта кунта çапкаланса çӳренĕ. Пĕррехинче ăна никам та пурăнма яман. Вăл вăхăтра сикекен чир

алхасатчӗ. Эпӗ вара ӑна, чирлӗскере, ним хӑрамасӑр, хамӑр пата усрама илтӗм. Анне хирӗҫлемерӗ. Армине кайиччченех пӗрле пӗр сӗтел хушшинче ҫисе пурӑнтӑмӑр. Пит лайӑх ачаччӗ, маттур комсомолецчӗ. Ҫинави хамӑр патран салтака кайрӗ. Шел, Зиновий Кузьмич Кузьмин 1942 ҫулта паттӑрсен вилӗмӗпе вилнӗ».

«Чи ҫывӑх юлташсенчен пӗри – Крислов Антон Максимович (Ан.Яндубай). Районти типографире те ӗҫлерӗ. Хаҫатсем ҫине пӗрле статьясем ҫыраттӑмӑр. Вӑл «Ҫамрӑк большевик» хаҫатӑн штатра тӑман корреспонденчӗччӗ. Шел, вӑрҫӑра паттӑрсен вилӗмӗпе пуҫне хучӗ. Вӑрҫӑ пӗтнӗ хыҫҫӑн эпир питех те лайӑх пурӑнма сӑмах панӑччӗ. Пӗр хут аманса килнӗскер вӑл, тепӗр хут фронта кайсан, таврӑнаймарӗ».

## ЯЛ ЛЕТОПИҪӖНЧЕН

*Ҫултан-ҫул мӗн пулса иртнине йӗркипе ҫырса пыракансем ӗлӗк-авалтанах пулас ӑрусем валли нимпе хаклама май ҫук пуянлӑх хӑварнӑ. Ара, темле ӑслӑ ҫын та пуҫрине хӑйпе пӗрлех илсе каять. Петр Ковский кун кӗнекине ҫырман, вӑл ялти, колхозри, ял Советӗнчи мӗн пур пулӑма, улшӑнӑва, унта пурӑнакан ҫынсен ырӑлӑхне пичетре ҫутатса панӑ. Пирӗншӗн унӑн вӑтӑрмӗш-хӗрӗхмӗш-аллӑмӗш ҫулсенче тӗрлӗрен хаҫатра кун ҫути курнӑ хайлавсем халӗ ял летописӗ вырӑнӗнчех.*

*Ялти корреспондент ҫав хушӑрах районти тата республикӑри пичет органӗсен шанчӑклӑ ҫынни шутланнӑ. Хаҫатсем ӑна шаннӑ, унран яланах ҫӗнӗ хыпар кӗтнӗ, унӑн тӗрӗслӗхне ӗненнӗ.*

*Эпӗ унӑн ҫав тапхӑрти ял, колхоз мӗнле аталанса пынине ҫутатакан пултарулӑхне халӑх умне суйласа илсе кӑтартас терӗм. Унӑн Вӑрнар районӗнчи «Социализм ҫулӗпе» хаҫатра пичетленнӗ заметкисем, статйисем, сӑввисем:*

**<u>Колхоза кӗреҫҫӗ</u>**

Хорнзорти Чапаев ячӗпе тӑракан колхозӑн йышӗ ӳссех пырать. Иртнӗ кунсенче тӳрӗ кӑмӑллӑ единоличниксем 8 хуҫалӑх 26 едокпа колхоза кӗчӗҫ.

Халĕ колхоза тин çеç кĕнĕ колхозниксем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Торф хатĕрлес, уя тислĕк тăкас ĕçсенче активлă ĕçлеççĕ. 18.04.1940ç.

**Драмкружок ĕçлеме пуçланăранпа 10 çул çитрĕ**

Хорнзорти Чапаев ячĕпе тăракан колхоз çумĕнчи драма кружокне организацилени 10 çул çитрĕ, драма кружокĕ кашни çулах 10 пьеса выляса панă.

Драма кружокĕ 1939-1940 çулсенче хăйĕн ĕçне тата вăйлăрах хăпартрĕ. Иртнĕ çулта кăна 15 спектакль лартнă. 24.05.1940ç.

**Махорка калчисене лартрĕç**

Хорнзорти Чапаев ячĕпе тăракан колхозра парникре ӳстернĕ «АС» сорт махорка калчине 1,30 гектар çине куçарса лартрĕç. Халĕ калчасене кайăк-кĕшĕк тислĕкĕн шĕвекĕпе апатлантараççĕ. 3.06.1940ç.

**Вырăнти удобренисем кăлараççĕ**

Хорнзорти Чапаев ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем çĕртме сухи уйне 1820 лав тислĕк тăкса хăварчĕç. Ку ĕçре вĕсем ăмăртса ĕçлерĕç. 3.06.1940ç.

**Призыва хатĕрленетпĕр**

Иртнĕ кунсенче Хорнзор ялĕнчи призывниксем 10 кунлăх семинарта пулчĕç. Семинарта призывниксем пурте ГТО, ГСО, ПВХО значокĕсен нормисене пачĕç. Халĕ призывниксем Ворошилов пек тĕл пеме тата унăн нормисене пама вĕренеççĕ. 6.06.1940ç.

**Культурăллă канаççĕ**

Хорнзорти Чапаев ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем пушă вăхăтсенче культурăллă канса ирттереççĕ. Вĕсем яланах клуба пухăнса кĕнекесем, хаçат-журналсем вулаççĕ, доминолла, шашкăлла тата шахматла выляççĕ.

Унтах 52 çулхи колхозник А.Тимофеев скрипкăпа халăхсен савăнăçлă юррисене выляса парать. 6.06.1940ç.

**Чăх-чĕп ферми ĕçлеме пуçăнчĕ**

Хорнзорти Чапаев ячĕпе тăракан колхозри актив колхозниксене ВКП (б) Центральнăй Комитечĕ тата ССР

Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ «Ялхуçалăх продукчĕсен заготовкисене тата закупкисене ирттерес политикăри улшăнусем» çинчен йышăннă постановление лайăххăн ăнлантарса пачĕ. Çакăн хыççăн колхозниксем çĕнĕрен чăх-чĕп ферми организацилеме пулчĕç.

Халĕ колхозра чăх-чĕп ферми организациленĕ те ĕнтĕ. Унта 200 чĕпĕ пур. Вĕсене лайăх çуртсене вырнаçтарнă. Чăх-чĕп ферминче ĕçлеме чи лайăх колхозницăсене В.Ивановапа З.Крипчакова юлташсене хушнă. 6.06.1940ç.

**Условисем туса памалла**

Хорнзорти Чапаев ячĕпе тăракан колхозра Павел Курмышев ветфельдшер хăйĕн ĕçне юратса та тĕплĕн тăвать. Колхозри выльăхсене чир-чĕр ересрен яланах пăхса тăрать. Çакăнпа пĕрлех выльăхсене укол та тунă. Кĕтӳ çӳремелли çĕр участокĕсене çӳпĕ-çапăсенчен тасаттарнă.

Анчах та колхоз правленийĕ Курмышев юлташа çителĕклĕ таран услови туса паман-ха. Ăна валли ĕçлеме уйрăм комната çук. Эмелсемпе тĕрлĕ приборсене сыхламалли шкап та япăх. Çавăнпа та Курмышев юлташ хăш-пĕр эмелсене хăй килĕнче усрать.

Колхоз правленин Курмышева ĕçлеме условисем туса памалла. 6.06.1940ç.

**Телефон кĕртрĕç**

Çак кунсенче Хорнзорти Чапаев ячĕпе тăракан колхоз правленине районри çыхăну уйрăмĕ телефон кĕртрĕ. 6.06.1940ç.

**Пĕве турĕç**

Хорнзорти Чапаев ячĕпе тăракан колхозра Таловский районĕнчи «Железнодорожник» колхоз колхозникĕсен çыруне масса хушшинче тĕплĕн ăнлантарса панă. Ку ĕçре уйрăмах комсомолецсем тăрăшрĕç.

Çырăва сӳтсе явнă хыççăнах колхозра çĕнĕрен пĕр пысăк пĕве турĕç тата тепĕр пĕве юсарĕç. 27.06.1940ç.

**Махорка – пысăк тупăшлă культура**

Хорнзорти Чапаев ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулсенче пысăк тухăçлă махорка туса илсе Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулма тивĕçнĕ.

Кăçал колхоз 12 гектар çине махорка лартнă. Ăна тислĕк шĕвекĕпе тăтăшах шăварнă. Махорка çулçисем сарăлса çитиччен тăпрана 4 хутчен кăпкалатнă. Çапла тăрăшса ĕçленине пула кăçал иртнĕ çулхинчен те ытларах – кашни гектартан 23,33 центнер махорка илнĕ. Государствăна памалли обязательствăна колхоз срокра пурнăçларĕ. Кăçалхи çул колхоз махоркăран 25 пин тенкĕ тупăш илчĕ.

Махорка бригадин бригадирĕ Петр Ярушин юлташ хăйĕн ĕçне юратса туса пырать. Бригадăри колхозниксем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç.

Халĕ бригада çитес çулхи ĕçсене тума хатĕрленет. Махорка лартас вырăна 1400 лав тислĕк кăларнă, кĕрхи çĕртме тунă. 27.10.1940ç.

**Выльăхсем туяннă**

Хорнзорти Чапаев ячĕпе хисепленекен колхозра обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ. Халĕ çак кунсенче 8 пуç пăру, 16 сурăх, 6 сысна илнĕ. 5.12.1940ç.

**Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн**

Хорнзорти Чапаев ячĕпе хисепленекен колхозра кăçал пысăк тухăçлă тырпул, пахчаçимĕç туса илнĕ.

Колхоз вăрлăх, страховăй вăрлăх фончĕсене тата ытти фондсене те çителĕклĕ таран хывнă. Халĕ колхоз çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешет. Колхозри химизатор Терентьев юлташ колхозниксене тырпул тухăçлăхне мĕнле ӳстерсе пымалли çинчен пĕрмаях вĕрентсе пырать.

Колхозăн кăçал уй-хире 12 пин лав тислĕк кăлармалла. Халĕ 6600 лав кăларнă. Кайăк-кĕшĕк тислĕкĕсене 80 центнер, 180 центнер кĕл, 90 тонна тĕрлĕрен минераллă удобренисем хатĕрлет, 282 гектар çине юр тытать. Паянхи куна 10 гектар çине лартмалăх щитсем хатĕрленĕ тата вĕсене лартса тухаççĕ. Вăрлăхсене 70 центнер сортланă. 19.12.1940ç.

**Малта пыракан бригада**

Хорнзорти Чапаев ячĕпе хисепленекен колхозри пĕрремĕш бригадăн бригадирĕ Филимон Шашков çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе бригадăна лайăх ертсе

пырать. Бригада кăçал кашни гектартан 17-18 центнер тĕштырă туса илессишĕн кĕрешет. 26.01.1941ç.

**Йĕлтерпе ярăнма вĕренеççĕ**

Иртнĕ çулта Хорнзорти Чапаев ячĕпе хисепленекен колхоз çумĕнчи Осоавиахим пуçламăш организацийĕ çителĕклĕ таран ĕçлемен. Халĕ çамрăксен пухăвĕ пулчĕ. Пухура Осоавиахим членĕсемпе çамрăксем çар ĕçне вĕренессине лайăхлатасси çинчен сӳтсе яврĕç. Унтах 18 çын Осоавиахим членне кĕчĕç.

Çамрăксем валли татах 5 мăшăр йĕлтĕр туяннă. Халĕ çамрăксем йĕлтĕрпе çӳреме вĕренеççĕ, ăмăртăва хатĕрленеççĕ. 26.01.1941ç.

**Фронтри упăшки вырăнне тăрса**

Хурăнсур Çармăсри Чапаев ячĕпе хисепленекен колхоз членĕ И.Ананьев колхоз пуçланнăранпах конюхра ĕçленĕ. Вăл лашасене юратса пăхнă. 10 çул хушшинче И.Ананьев 36 тиха алла илсе пăхса ӳстернĕ. Çакăншăн ăна колхоз правленийĕ темиçе хутчен те хаклă япаласем парнеленĕ.

1941 çулта пирĕн Тăван çĕршыв çине ирсĕр тăшман килсе тапăнсан И.Ананьев фронта тухса кайрĕ. Халĕ вăл Тăван çĕршывшăн вăйне шеллемесĕр çапăçать. И.Ананьев вырăнне арăмĕ Васса Ананьева юлташ тăчĕ.

Вăл хăй упăшки пекех лашасене юратса пăхать. Конюх Васса Ананьева 12 тиха пăхса ӳстерсе пачĕ. 1941ç.

**Ирĕке кăларнă районсене пулăшма**

Хурăнсур Çармăсри Чапаев ячĕпе тăракан колхоз нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене пулăшма кăçал 13 сысна, 3 сурăх, 4 пăру, пĕр ĕне тата пĕр лаша пачĕ. Çавăн пекех колхозниксем тăлăха юлнă ачасене пулăшма 1525 тенкĕ укçа пухса пачĕç. 1944ç.

**Каникул вăхăтĕнче**

Çĕрпелти 7 çул вĕренмелли шкулта вĕренекенсем хĕллехи каникула усăллă ирттерчĕç. Хурăнсур ялĕнчи ачасем ĕç нормине колхозниксемпе танах – 150-200 процент тултарса пычĕç. Акă, 6-мĕш класра вĕренекен

Нина Козлова уя кашни кун 15-20 лав тислĕк кăларса 18 ĕçкунĕ турĕ. 3-мĕш класра вĕренекен Витя Плеханов, Иосиф Фомин пионерсем 13-шер ĕçкунĕ ĕçлесе илчĕç. Петя Филиппов, Вася Юханов пионерсем 12-15 центнер кĕл, 10 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухрĕç.

«Çуракине ăнăçлă ирттерни тăшман пуçĕ çине вутлă çумăр вăйлăн тăкма пулăшать, çĕнтерӳ ялавне Берлин çине çĕклесе лартас куна çывхартать», - тесе çырать Вася Юханов фронтри ашшĕ патне. 1945ç.

## Чапаевецсем малта пыраççĕ

Хурăнсур Çармăсри Чапаев ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулта Çĕрпелти Ленин ячĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлерĕ.

Хурăнсурсем ăмăрту договорĕн кашни пунктне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пычĕç. Çапла вара иртнĕ 1944 ялхуçалăх çулне, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăрах, ăнăçлăн вĕçлерĕç. Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокчен пурнăçланă. Украина колхозникĕсен пуçарăвĕпе Хĕрлĕ Çар фондне 250 центнер тĕштырă, 260 центнер çĕрулми pană. Халĕ тата 25 центнер тырă хушса пачĕç.

Ĕне, сурăх, сысна, хур-кăвакал, чăх-чĕп фермисене планпа пăхнă чухлех илсе çитерне. Выльăх-чĕрлĕхе ăшă та çутă витесенче усраççĕ.

Района 1944 çулхи чаплă ĕçсемшĕн Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пани çине ĕçпе ответлесе колхозниксем вăйлă тырпул туса илессишĕн ăмăртăва анлăн сарса ячĕç. Çуркунне акмалли вăрлăхсене тасатса çитерне. 670 центнер вăрлăх пур йышши культурăсем тăрăх 1-мĕш класлă кондицие ларнă. Çавăнпа ĕнтĕ районри ялхуçалăх выставкинче пирĕн вăрлăхсем хисепе тивĕçлĕ пулчĕç. 4000 лав тислĕк уя кăларнă, 70 центнер кĕл, 36 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрленĕ. Уя тислĕк кăларассипе Иван Ефимов ертсе пыракан 4-мĕш бригада малта.

Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă тĕле çуракине тĕпрен хатĕрленсе çитетпĕр, кăçал та ăмăртса ĕçлекен çĕрпелсенчен мала тухма шутлатпăр. 1945ç.

## Ватă стахановецсем

Хĕрлĕ Çарăн паттăрла çитĕнĕвĕ ватă колхозниксене те хавхалантарса ĕçлеме хистет. Утмăл урлă каçнă стахановецсем Н.Антонов, А.Андреев, С.Шусьев, М.Пагонов 350-450 ĕçкунĕ ĕçлесе илчĕç. «Пирĕн кашни ĕç утăмĕ Гитлер пуçĕ çине хаяр çиçĕм пулса антăр», – теççĕ вĕсем. 1945ç.

## Савăнăç кунĕ

Февралĕн 23-мĕшĕ. Çанталăк каç енне сулăннă ĕнтĕ. Колхозăн кăçал акса хăварма тасатса хунă ылтăн пек таса вăрлăхсемпе тулса тăракан тирпейлĕ пысăк амбарсем хушшипе хĕвел хăйĕн илемлĕ пайăркисене чалăшшăн сапалать. Сивĕ, уяр сывлăшра фермăсенчи выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк сассисем уççăн илтĕнеççĕ.

– Паянхи аслă уява вĕсем те сисеççĕ ав, епле хавасланаççĕ вĕсем, – савăнса уткаласа çӳрет витесем тăрăх ферма заведующийĕ Артемьев клуба каяс умĕн тĕрĕслӳ тума кĕнĕскер.– Ну, «Буйвăл» тус, епле-ха пурнăçсем?» – ачашлать вăл илемлĕ самăр кĕлеткеллĕ красногорбатски вăкăра çурăмĕнчен лăпкаса. Лешĕ хуçана палларĕ пулас, ăшă куçĕсемпе Роман çине пăхса илчĕ те каллех канăçлăн кавлеме пуçларĕ.

Роман çамрăк пăрусен витинчен тухнă çĕре хĕвел анса ларчĕ. Тӳпере пиншер çăлтăрсем яш-кĕрĕмсем евĕр пĕр-пĕрне куç хĕсмелле выляççĕ. Халь çеç тулса çитнĕ шупка уйăх çутипе кăпăшка çемçе юр мĕльюншар ахах пĕрчисем пулса çутă, кăвак-симĕс тĕслĕн çутăлса тăраççĕ. Çак илемлĕ тĕс çине инçех мар ларакан правлени çурчĕн иккĕмĕш хутĕнчи пысăк чӳречесенчен «Молния» лампи вичкĕн çутă пайăркисене сапалать. Вăл çутă пайăркисем, паян савăнăçпа çунан савăк кулă пулса Чапаев ячĕпе тăракан колхозăн ĕçчен колхозникĕсене ăшшăн хăйсем патне чĕнеççĕ.

– Айда, Гриша, клуба! – чӗнсе илчӗ Роман лаша витинчен тин ҫеҫ тухнӑ аслӑ конюха Галкина асӑрхаса.

– Халех! Эпӗ те тӗрӗслесе пӗтертӗм ӗнтӗ...

Икӗ тус, выльӑх-чӗрлӗхе чӗререн юратакансем, васкавлӑ утӑмсемпе колхоз клубне утрӗҫ. Уҫӑ сывлӑшра вӗсем хыҫҫӑн ҫӗнтерӳ тума хавхалантаракан ҫӗнӗ юррӑн сыпӑкӗсем илемлӗн илтӗнсе юлчӗҫ.

Клубра, ретӗн ларса тухнӑ тенкелсем ҫинче, тӗрлӗ тӗслӗ илемлӗ тум тӑхӑннӑ ял ҫыннисем туллиех ларса тухнӑ. Пурин те пичӗсем ҫинче савӑнӑҫ, хаваслӑх. Залра шӑп. Лампа шӑтӑртатса ҫунни ҫеҫ пӗр евӗр илтӗнет.

Ларӑва ҫамрӑк коммунист, фронтра ҫапӑҫса «За отвагу» медаль илнӗ Трофим Васильев юлташ уҫать. Вӑл чи малтанах Хӗрлӗ Ҫар 27 ҫул тултарнӑ ятпа хамӑрӑн паттӑр воинсене, аслӑ полководец Сталин юлташа хӗрӳллӗн саламлать! Кун хыҫҫӑн пӗтӗм зала хумхатса алӑ ҫупни, «Паттӑр воинсене, Сталина ура» кӑшкӑрнисем ҫӗнтерӳ гимнӗн музыкӗ пек янраса каяҫҫӗ.

Малалла коммунист Шлыков юлташ чаплӑ вырӑс ҫарӗн ӗмӗрхи вӑй-хӑвачӗ тата паттӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн чаплӑ ҫӗнтерӗвӗсем ҫинчен каласа парать.

– Пирӗн паттӑр воинсем Берлин патне ҫывхарса ҫитрӗҫ. Халӗ тылри колхозниксемпе колхозницӑсен татах та ытларах вӑй хурса ӗҫлемелле, ҫӗнтерӗве ҫывхартма пулӑшмалла, тет Шлыков юлташ.

Ун хыҫҫӑн колхоз председателӗ Иван Федорович Федоров юлташ сӑмах илет.

– Рахмат сире, ӗҫ паттӑрӗсем-маттурӗсем! Сирӗнпе манӑн чун савӑнать, – тет вӑл. – Иртнӗ ҫул эпир фронт хушнӑ пек ӗҫлесе пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илтӗмӗр. Ҫав шутран вара хамӑрӑн фронтри тӑванӑмӑрсем патне 1900 центнер ытла тӗштырӑ патӑмӑр. Пур енӗпе те ӳсӗм пур пирӗн. Анчах та пирӗн умра тата пысӑкрах задача тӑрать. Умра – черетлӗ ҫураки. Выльӑх-чӗрлӗхрен те ытларах тупӑш илмелле.

Колхозниксем хавхаланчӗҫ. Савӑнмалӑх ӗҫӗ паян та пур. Вӑрман хатӗрлес тӗлӗшпе сезонри плана Хӗрлӗ Ҫар кунӗ

тӗлне тултарнӑ. Халӗ те 12 ҫын ҫурран, 18 ҫын лашапа планран ирттерсе вӑрман касать, хатӗрлет.

Тухса калаҫакансем хӑйсен ҫӗнӗ ӗмӗчӗсене пӗлтерчӗҫ. Кашни ҫын ҫулпуҫ приказӗ ҫине ӗҫпе ответлесе гектартан 100 пӑтран кая мар тӗштырӑ туса илсе Хӗрлӗ Ҫара тата ытларах пулӑшассишӗн пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлеме пулчӗ. 25.02.1945ҫ.

## Тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ

Хурӑнсур Ҫармӑсри Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз ҫамрӑкӗсем кӑҫалхи ҫуракине большевикла ирттерес тӗлӗшпе тӑрӑшаҫҫӗ. 11 комсомолец 178 гектар ҫӗр сухаларӗҫ. Аркадий Николаев, Нина Воробьева сухаҫӑсем кулленхи ӗҫ нормине 150-200 процент тултарса пычӗҫ. Ҫаксемпе пӗрлех Василий Алексеев, Степан Андреев комсомолецсем ака вӑхӑтӗнче сӳрелес ӗҫре ваттисенчен те пысӑк пахалӑхпа, планпа 2 гектар сӳрелемелле пулсан, вӗсем 4-5 гектар сӳрелесе палӑрчӗҫ. Сеялкӑпа акнӑ ҫӗрте те комсомолецсем тӑрӑшрӗҫ. В.Терентьев тата А.Тихонов 6 кун хушшинче 49 гектар акрӗҫ, нормӑна икӗ хут тултарчӗҫ.

## Ҫамрӑк конюх

Хурӑнсур Ҫармӑсри Ф.Шахалов мӗн ачаранах выльӑх-чӗрлӗхе чӗререн юратнӑ. Хӑй ялти шкулта вӗреннӗ чух та вӑл колхозӑн ҫамрӑк выльӑхӗсене шева илсе пӑхса ҫитӗнтернӗ. Выльӑх-чӗрлӗх ҫамрӑкшӑн юратнӑ тусӗ.

Халӗ Федя Шахалов 17 ҫулта ҫеҫ-ха. Апла пулин те вӑл вӑрҫӑ пуҫланнӑранпах колхозӑн конюхӗ пулса ӗҫлет. Лашасене вӑхӑтра апат парать, шӑварать. Вӑл пӑхакан лашасем пурте самӑр та таса.

– Эпир туртӑм вӑйӗсӗр пурӑнма пултараймастпӑр. Кӑҫалхи ҫураки ӑнӑҫлӑхӗ те лашаран килет. Ҫавӑнпа эпӗ Май уявӗ умӗнхи социализмла ӑмӑртӑва хутшӑнса ҫуракине самӑр лашасемпе тухса кӗске вӑхӑтра вӗҫлессишӗн пӗтӗм вӑя хуратӑп, – терӗ Федя ун лашисене комиссипе пӑхнӑ чух. Районран килнӗ комисси те унӑн ӗҫне пысӑккӑн хакларӗ.

Федя Шахалов хӑй конюхра ӗҫлеме пуҫланӑранпа 12 тиха пӑхса ҫитӗнтернӗ. 1945ҫ.

**Савӑнӑҫ кунӗ**

Кӗтнӗ сехет ҫитрӗ. Праҫник тумӗ тумланнӑ суйлавҫӑсем тулли ӗмӗтпе, малашлӑх, пуласлӑх телейлӗ кун-ҫулшӑн хӑйсен сассисене коммунистсемпе партире тӑманнисен кандидачӗсемшӗн пама иртен те ир суйлав участокне пухӑнчӗҫ.

6 сехет. Суйлав комиссийӗн председателӗ. Отечественнӑй вӑрҫӑра ҫапӑҫса икӗ орден илнӗ запасра тӑракан майор Жебелевский суйлавҫӑ юлташсене ырӑ сунса ӗҫне пуҫлать. Ҫынсем унӑн сӑмахне алӑ ҫупса, Совет Союзӗн Гимнне юрланипе хапӑл туса итлеҫҫӗ.

– Сывӑ пултӑр пирӗн депутат Сталин! Сывӑ пулччӑр пирӗн депутат пулас ҫӗнтерӳҫӗ халӑхӗн ывӑл-хӗрӗсем! – янӑрать пӗр саслӑн савӑнӑҫпа тулнӑ суйлавҫӑсен кӑмӑллӑ сасси.

Суйлав участокӗн секретарӗ Нина Баюкова умне 64 ҫула ҫитнӗ ватӑ суйлавҫӑ Кураков Гаврил Андреевич пырса тӑрать. Вӑл хӑйӗн ӗҫпе пиҫнӗ ҫирӗп аллипеле Митряшов С.Т., Павлов Н.П. мухтавлӑ ячӗсене ҫырнӑ бюллетене пӗрремӗш илет.

– Спасибо Сталин сана, мухтав Аслӑ Конституцие, тавах сире, – алӑ парать вӑл Жебелевский юлташа.

Акӑ Кураков, вӑрттӑн сасӑламалли пӳлӗме кӗрсе тухнӑ хыҫҫӑн, РСФСР гербӗн урнӑ ҫумне ҫыпӑҫтарнӑ ылтӑн пучахӗсене кӑмӑллӑн пуҫ тайса суйларӗ, хавассӑн каларӗ:

– Маншӑн паян чи телейлӗ кун. Эпӗ Сталинла Конституци панӑ правапа усӑ куратӑп. Ватӑ шӑмшакӑм та ҫамрӑкланчӗ. Лайӑх сывлӑхлӑ, нумай ҫулсем пурӑнччӑр пирӗн тарҫӑсем, ватӑ ҫынсене телейлӗх тӳшекӗ ҫинче вилмелле пултӑр. Ҫамрӑксене, ачам-пӑчамсене ырӑ кунҫул хушшинче ӳстерччӗр, усраччӑр.

Урна умне 61 ҫула ҫитнӗ Кури мучи пырса тӑчӗ. Тирпейлӗн хуҫлатнӑ бюллетенне ҫӗмӗрлекен шӑрҫана сыхланса тытнӑ пек ҫемҫен тытнӑ. Икӗ ватӑ, ялти паллӑ стахановецсем, пулас телейлӗ кунҫулшӑн пиллерӗҫ. Ку пил ҫамрӑк ӑрӑва телейлӗ те аслӑ пурнӑҫ ҫулӗ ҫинчен

пăркаланмасăр, Сталинла Конституци хĕвелĕ айĕнче, Маркс-Энгельс-Ленин-Сталин никам çĕнтерейми ялавĕ айĕнче харăссăн утса пырса, пурнăçа пĕр аларан тĕреклетме чĕнекен пил пулса тăрать.

Мухтавлă та телейлĕ халĕ Кавĕрле, Кури тата Митри мучи пек ватă суйлавçă-колхозниксем. Колхозри вăрçă вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн медаль илнĕ 251 çынтан 26-шĕ – утмăл-çитмĕле çитсе иртнисем. Ырми-канми ĕçлесе, фронта пулăшнипе хисеплесе илнĕ медаль вĕт вăл.

Ватăсене хисеп парса, хăйсен темчул чи малтан суйлас килнĕ пулсан та чăтса тăнă çамрăк суйлавçăсем В.Федоров, В.Иванов, Ф.Иванова пĕрин хыççăн тепри урнă умне пыраççĕ. Телейлĕх, хаваслăх вĕсен çамрăк, тин çеç пиçсе çитнĕ анис улма пек хĕрлĕ пичĕсем çинче. 1946ç.

*Пурнăç тапхăрĕн чăнлăхне чĕрипе туйса, хавхаланса, хăй пĕлнĕ-пултарнă таран илемлетсе-сăнарласа халăха сăвăлла вулаттарас, пĕрле савăнас шухăш вăйлă пулнă Петр Ковскин. Çав шухăш аталанăвĕ яланах чĕрĕ, хĕрӳ, вилĕмсĕр унăн сăввисенче.*

**Хурăнсур хĕрĕсен юрри**

Аслă çулăн тусанне
Автобусĕ вĕçтерет,
Çĕнĕ заем çырăнсан
Пурнăç татах ӳсĕнет.
Сакăр аршăн сар ленти –
Сарă лаша тилхепи,
Çĕнĕ заем çырăнни –
Хамăр пурнăç тĕрекки.
Харăслатса касар-и
Йĕлме тенĕ йывăça,
Пĕр çын пекех пулар-и
Тĕреклетме пурнăça.
Шăпчăк кайăк юрласа,
Ян-ян ярать вăрмана.

Хӗрлӗ Ҫар ӳсӗм туса
Савӑнтарать чӗрене.
Ҫур хӗвелӗн ӑшшипе
Тӗрлӗ чечек ҫитӗнет.
Пире Сталин ҫавӑн пек
Ӑшшӑн пӑхса ӳстерет.
Ылтӑн-кӗмӗл хаклӑ теҫ,
Унран хакли ҫуках теҫ.
Ылттӑн-кӗмӗл мӗн хакли?
Сталин атте вӑл – хакли.
Ылттӑн хӗвел пайӑрки
Ярӑмлатать ҫӗр питне.
Ватти-вӗтти, ҫамрӑкки
Саламлатӗ ҫулпуҫне.
Яштак пӳллӗ шур хурӑн
Ҫил-тӑвӑла парнас ҫук.
Хӗрлӗ Ҫар маттур пирӗн,
Тӑшман айне пулас ҫук!

Май, 1944 ҫул.

## Асӑмри пейзаж

Июнь каҫчӗ ун чухне, уҫӑ сывлӑш
Кӗмӗл сывлӑм ҫакнӑн сар ҫӳҫе,
Ҫаран ҫинчен пӗччен тӑлӑх карӑш
Сассине паратчӗ ерипен.
Сар ҫивӗт пек кӑтра лӑпӑс хурӑн
Каҫма урлӑ ҫакнӑн туратне,
Шӑнкӑртатса юхан тӑрӑ шывлӑн
Янрататчӗ шӑпчӑк юррине.
Тӑрна куҫ пек тӑрӑ кӳлӗ ҫийӗн
Ирӗлетчӗ тӗтре ир ҫинче,
Ахах чулпе ялан ухлӗм ҫийӗн
Шӑрҫалатчӗ сывлӑм пӗрчине.
Ҫавӑн чух эп сана юратсаччӗ...
Юратсах ыталанӑччӗ эс мана.

* * *

Лăпкă çилĕ ăшшăн ачашлатчĕ
Сарă хĕрĕн çепĕç аллине.
Хир карапĕ унта ярăнатчĕ
Сарă тулă – тинĕс çийĕпе.
Тӳперен сар хĕвел сапалатчĕ
Йăрăм-йăрăм ылттăн шевлине,
Инçех мар путене авăтатчĕ,
Йыхăратчĕ хăйĕн чĕппине.
Ирхи сывлăм сыпнă сарă тулă
Лăпăс хунăч мăнтăр пучахне.
Юнашарах манпа колхоз хĕрĕ
Вылятатчĕ çивĕч çурлине.
Çепĕç юрă ун чух ирĕлетчĕ
Çĕнĕ, çутă ирĕн ячĕпе,
Юрăра çулпуçне асилетчĕ
Ман республикăпа пĕрле хĕр-пике.
Çавăн чух эп сана юратсаччĕ,
Юратсах куç хĕсеттĕн эс мана.

***

Шурă тĕтрелле Амур, уçă сывлăш,
Ялтăртатрĕ сывлăм ир çинче.
Анчах авăтмасть-мĕн кунта карăш,
Юрламасть-мĕн шăпчăк ир çинче.
Кĕç çитет тусăм иртнĕ вăхăт,
Çавра кӳлĕ пулĕ пирĕн умăрта.
Ун чухне эп тата хыт ыталăп
Ĕçпе пиçнĕ çирĕп кăкăра.

Август, 1945 çул.

**Юх эс, юрă!..**

Çур хĕвелĕ сар хĕр майлăн
Кулать ăшă куллипе,
Сурхи савăк çĕршыв манăн
Тулчĕ кайăк юррипе.

Тинĕс евĕр уйĕ аслă,
Ĕç тухăçĕ алăра.
Çак ĕç пирĕн пархатарлă,
Асăнаççĕ Мускавра.

Чуп эс, трактор, хытăраххăн
Вĕççĕр аслă уй-хирпе.
Ма тесессĕн ăмăртатпăр
Савнă тусăн танкĕпе.

Санпала ман тус çӳретчĕ,
Çирĕп пӳллĕ яш ача,
Анлă кăкăрĕ çиçетчĕ
Ĕçĕн чыслăх паллипе.

Санпала çӳренĕ каччă
Танкпала халь вăл çӳрет.
Ун чухне ун медаль çехчĕ,
Халь вăл орден илтĕм, тет.

Çепĕç çилĕ вăйă вылĕ
Тутă ылттăн пучахпа.
Çĕнтерӳпе тусăм килĕ,
Каллех çӳрĕ вăл санпа.

Сывлăм сыпнă таса тулă
Çӳллĕ пулĕ хамăртан.
Ял халăхĕ кăçалхи çул
Илĕ çĕр пăт гектартан.

Уйĕ аслă, çĕрĕ мамăк,
Чуп эс, трактор, хытă чуп.
«Берлина халь кĕç илетпĕр», -
Çырать тусăмçăм Петюк.

Эпир çамрăк, эпир паттăр,
Ĕçрен мар – ĕç хăй хăрать.
Çĕршыв пире хăй мухтатăр.
Ĕçре çамрăк пултарать.

Ĕçĕн чапĕ, халăх чысĕ, –
Пурçăн явлăкла Ялав,
Яланах вăл пирĕн пулĕ,
Çирĕп тытнă алран-ал.

Юх эс, юрă, уй-хир урлă,
Юх эс, юрă, инçене.
Пирĕн ĕç ялан мухтавлă,
Парне пулĕ савнине.

Апрель, 1945 çул.

**Ака çинче**

Уй-хир типрĕ, çĕр çи пиçрĕ:
Акана тух васкаса.
Усăсăр пĕр кун сан иртрĕ,
Тек килмест вăл таврăнса.

Эпир харсăр, эпир паттăр,
Пирĕнтен ĕç хăй хăрать.
Сухана ирех тухатпăр
Шуçăм килнĕ вăхăтра.

Ăмăртса пурте ĕçлетпĕр
Çĕнĕлле – мичуринла,
Шăрăхран та шикленместпĕр, –
Вăйлăн ӳс тырпул, кашла.

Апрель, 1949 çул.

## ТУСЛĂХПА ЮЛТАШЛĂХ – ЧУНА ÇЫВĂХ

Йыснан ачалăх тусĕсем – вăрçă хыççăнхи юлташĕсем – ман асра юлнă. Хамăр ялти Чакак Михали, Давыд Георгийĕ, Купăс Çинахванĕ, Руссак Клементийĕ, Курпун Çеркийĕ, Йăвăç Шашков, хăйсен тăванĕ Кăчăм Улюшки, Плешков Петĕрĕ, Упиçан Сахарĕ тата ытти çамрăкраххисем Вася Юханов, Анатолий Шашков, Николай Арсентьев, Илья Ананьев, Данил Григорьев... Пурне те асăнса та пĕтереес çук, – кĕтнĕ çывăх çынсемччĕ. Хальхи пек ĕçсе ӳсĕрĕлсе, картла çапса ларман вĕсем. Петр Владимирович патĕнче кашнин валли мĕнле те пулин интерес тупăннă. Эпир, ачасем, Левăсемпе Калистрсем, Хрисан Генисем аслисен калаçăвне-тавлашăвне хăлхана тăратсах итлеттĕмĕр. Вĕсен калаçăвĕнче эпир яланах мĕн те пулин усăллине, ыррине ăша хываттăмăр. Йыснан амăшĕн ырă кăмăлĕ ял çыннисене

тутă тыттаратчĕ. Акка, Уçтен, никама та апат хушшине лартмасăр кăларса яман.

Эпĕ пĕрмай «Правда», «Социалистическое земледелие» хаçатсен, «Большевик» журнал çыххисене йăтса çÿреттĕмччĕ те, Давыд Георгийĕ кулса калатчĕ: «Ак пирĕн «Правда» корреспонденчĕ те çитрĕ». Çынна йывăрлăхра пулăшма яланах хатĕр пулни Петĕр Ковскин ачаранах палăрнă. Сăн ÿкерчĕксен пуххинче вăл çырнисене вулар-ха:



**Василий Мартынович Юханов. Ковскисем патĕнчен вăл 300 метр тăршшĕ пăхăр пралукпа килне радио илсе пынăччĕ.**

*«Лаврентьевпа чи çывăх юлташсем пулнă. Ниçта та уйăрăлман. Çĕрĕ-çĕрĕпе пĕрле ларнă. Артист-фокусниксем те пулнă. Кульăкки-кроликки пирĕн сцена çинче фокус кăтартнă. Вăл тата питĕ чаплă слесарь пулса ĕçлетчĕ. Юлашкинчен кумлă пултăмăр. Унăн Славикне эпĕ тытнă».*

*«Галки – юмах хуçи. Кĕркури пирĕн патрах ÿснĕ. Эпĕ ăна асаттепе аннерен вăрттăн кăмака хыçĕнче çăкăр темĕн чухлĕ çитернĕ – юмах ярса панăшăн, мана çăпата туса панăшăн. Халь те ÿсĕрпе, мана курсан, хытă макăрать».*



**Бригадирта ĕçленĕ вăхăтра Петр Владимирович патне хăнана Клементий Русаков пынă.**

*«Алюçка Клементтийĕпе – уйрăлми юлташсем. Алюççем 1939 çулта Çĕпĕре куçса кайрĕç, халĕ те çыру яраççĕ-*

*ха. Климка Çĕньял Хапăсра пурăнать, Вăрнарти хими заводĕнче ĕçлет».*

*«Давыдовпа Зайцев манăн чи çывăх юлташсем, çытмаран пĕрле çÿренĕ, пĕрле ÿснĕ. Çавсемех мана ик-виç хут та «авлантарса» тăна ячĕçĕ ĕнтĕ.*



**Михаил Павлович Зайцев (сулахайри) Петр Ковский кумĕпе**

*Чакакне юратса Валерий ятлă ывăла тыттартăм, а леш Георгийĕ, пĕрле ÿснипе, юлташлăха çухатас мар тесе, хăй авланнă чух хăйматлăха илсе кайрĕ. Халь те лайăх пурăнатпăр вĕсемпе: ĕçме-çиме пĕрле, хуйхи-суйхине те пĕрлех ирттеретпĕр.*

*Иккĕшĕ те фронтра пулнă. Чакак Михалийĕ урасăр, Давыд Георгийĕ алсăр. Çапах аптрамаççĕ».*

Хĕлип Гаврилч ывăлĕ Çинахван çамрăклах фронта лекнĕ. Танкист пулнă. Вăл мана хăй Польшăна ирĕке кăларнă чухнехи хаяр çапăçусем, Кенигсберга штурмлани çинчен хăпартланса каласа паратчĕ. Фашистсемпе чăннипех куçа-куçăн, пуçа-пуçăн çапăçнă, вĕсене аркатнă, çĕнтернĕ салтаксенчен пĕр паттăрĕччĕ ĕнтĕ вăл. Купăс калама юрататчĕ. Йыснапа иккĕшĕ ăмăртса шăрантаратчĕç. Пĕр ачи çуралсан, йыснасене кумма турĕç. Пĕрлех ĕçсе-çиетчĕç. Ксенофонт Филиппович комбайнпа тăрăшса ĕçлерĕ. Кĕнеке, хаçат-журнал вулама пит юрататчĕ. Яла пырсан, манран пĕрмаях «журналсенче малашне мĕн çĕнни тухать-ха» тесе ыйтса пĕлетчĕ. Ватă салтака йывăр чир вырăн çумне пăталаса пĕтерчĕ. Çинахван пиччен ырă ячĕ халĕ хĕрÿ ĕç, хаяр кĕрешÿ, савăк вăйă кĕввинче – купăс çемминче юлчĕ.

Эпир ачаранах Улюшка тенине илтме хăнăхнă çын вăл – Алексей Александрович Александров. Петр Владимировичпа



**Галки Кӗркури – Григорий Кузьмич Галкин (варринчи) – вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче салтак-юлташӗсемпе**

вӗсем пӗр йӑхран тухнӑ. Кӑчӑм Улюшкипе Кӑнчча Петӗрӗ виличченех тӑванлӑха хисепе хурса тытса пычӗҫ. Алексей Александрович та вӑрҫӑра пулнӑ, вӗреннӗ, культурӑллӑ ҫынччӗ. Районти партипе совет органӗсенче,

Комсомольскинче сельхозтехникăра ĕçлерĕ, арăмĕ тухтăрччĕ. Ачисем Мускавра пурăнаççĕ. Вĕсен килĕ – тури униче çумĕнче, сылтăмра. Унта Ванькăпа амăшĕ пурăнаççĕ.

Курпун Çерки – Сергей Петрович Александров йыснан



**Георгий Давыдович Давыдов арăмĕпе**

фото ĕçĕнчи чи çывăх юлташĕччĕ. «Фотокор» аппаратпа виçĕ ураллă штатив çине лартса ӳкеретчĕç. Сăнĕ тăваткал кĕленче çине ӳкетчĕ. Пĕрмаях чакаланатчĕç. Ялта, Çĕрпелĕнче вĕсем ӳкермен вырăн та юлман пуль. Вĕсене пулах пирĕн ял çыннисен сăн ӳкерчĕкĕсем, пурнăç саманчĕсем, малашлăха сыхланса юлнă. Çакăншăнах вĕсене Хурăнсурăн мухтавлă çыннисем темелле.

Тĕлĕнмелле маçтăр çын Плешков Петĕрĕ. Петр Ивановичпа



**Ксенофонт Филиппович Филиппов, Купăс Çинахванĕ, салтакран таврăнсан**



**Алексей Александрович Александров арӑмӗпе**

Петр Владимирович иккӗшӗ пӗлекен-ӑсталакан ӗҫ миҫине, мӗн тӗрлине кам шутланӑ-ши? Плешков Петӗрӗ художник та, ҫӗвӗҫ те, атӑҫӑ та, парикмахер та, шофер та, тата такам та... Сталинградшӑн пынӑ ҫапӑҫура йывӑр аманнӑ хыҫҫӑн, хӑрах урапа сиккелесе пурнӑҫне малалла тӑсрӗ. Ял лавккинче нумай ҫул ӗҫлерӗ, йӑла комбинатӗнче... Пысӑк колхоз чухне эпӗ «Ҫӑмӑл кавалери» кӑлараттӑмччӗ, виҫӗ ял валли виҫӗ экземпляр, алӑпа ҫырса. Петр Иванович виҫҫӗшӗ валли те карикатурӑсем ӳкерсе паратчӗ. Сахал

мар вăхăт илетчĕ ку кăткăс ĕç. Кулкаласа, савăнса сăрлаттăмăр иксĕмĕр те. Мускав облаçне куçса кайнăранпа эпĕ ăна курман.


Сергей Петрович Александров

Çак ўкерчĕкри сулахай енчи, пит хавас ахăрса лараканни вăл Кусаркка Кули. Салтака кайса килсен Иосиф Михайловичăн йăмăкне Ольăна качча илчĕ. Хастар ывăлсем вĕсен, чипер хĕрсем. Колхозра вăй хурса ĕçлетчĕ. Çитмен пурнăç Николай Арсентьева хими заводне илсе çитерчĕ. Нумай çул ĕçлерĕ вăл унта. Коля, Курпун Çерки арăмĕ Поля, Шăмпăльч Элекçи, Апиçан Петĕрĕсен Тони, Рая йăмăкăм Вăрнар çулне такăрлататтăмăр. Эпир те Вăрнарта тăрмашатпăр. Дуст им-çамĕсем юрамарĕç-ши Кольăна, вырăнпа нумай çул выртса вăхăтсăр вилчĕ.


Сылтăмран сулахаялла: Петр Ковский, Петр Иванович Плешков, Николай Арсентьевич Арсентьев

Ерми Петĕрри механизатора вĕренсе чапа тухрĕ. МТСри комбайнерсем хушшинче те, колхозра та малта пыракансенчен пĕриччĕ. «Сталинец-6» комбайна урапаллă трактор туртатчĕ, хăйсем хуп-хураччĕ, тусан ăшĕнчеччĕ.

Михвать Ваççукĕпе Илья Федорч çамрăклах колхозра шут ĕçĕнчеччĕ. Василий Мефодьевич Мефодьев каярахпа активлă коммунист пулчĕ, пирĕн ял «Янгорчино» колхоза кĕнĕ вăхăтра, сысна фермин заведующийĕнче мухтавлă ĕçлерĕ. Ферма коллективĕ ăмăртура районта кăна мар, республикăра та малтисен ретĕнчеччĕ. Ветерансен канашне нумай çул ертсе пычĕ.

Ваççук Йăкăнат Шашковăн хĕрне, пирĕнпе пĕр класра вĕреннĕ Ґальăна, качча илчĕ. Вĕсен 5 ывăлĕ те Раççей çарĕн офицерĕсем.

Илюш сăмах-юмах çаптарма маçтăрччĕ, пурнăçри пулăмсем çине тиркевлĕ куçпа, тăнлă пуçпа пăхма пĕлетчĕ.



**Петр Еремеевич Еремеев, Ерми Петĕрри, амăшĕпе Серафима Степановна Степановапа**

Ытти çамрăксемпе пĕрлех хуçалăх ĕçне хастар вăйпах хутшăннă, пĕр вăхăт сĕт-çу ферминче осеменаторта ĕçлерĕ. Шупашкарта совпартшкултa вĕренчĕ. Хирпуçĕнче колхоз председателĕ пулчĕ. Вăрнарта типĕ сĕт завочĕ тума пуçласан унăн директорĕ пулма Илья Федорович Ананьева лартрĕç. Çав çулсенче вăл çемйипе Вăрнара куçса кайрĕ. Вăхăтсăр виличченех Мичурин урамĕнче пурăнчĕ. Унпа пирĕн пĕрмаях ĕçлĕ, туслă калаçу пулатчĕ. Çĕнĕ заводăн малашлăхĕ-пуласлăхĕ пирки питĕ пысăк хаваспа ĕмĕтленетчĕ.

Ашшă Илюшсен, Хветĕр Ананьевич, вăрçăра вилнĕ. Кулине кинемей ултă ачана пăхса ӳстернĕ, ура çине тăратнă. Аслă хĕрĕ, Марья, ялти чи чипер те чи маттур хĕрсенчен пĕри пулнă, Йăванкка Микулайне качча тухнă, ăслă ачасем туса ӳстернĕ, пĕр ывăлĕ, Геннадий, ăста хирург, Шупашкарта пурăнать, республикăри ачапча пульницинче ĕçлет. Марья шăллĕ, Йăванĕ, колхозри паллă механизатор. Анни Кăтра Яккăва качча тухрĕ те пирĕн кӳршĕ, кумма пулчĕ, шутсăр хытă ĕçлетчĕ. Анфисси çамрăклах типографине ĕлеме кайрĕ, кайран журналист пулса тăчĕ. Партин Чулхулари аслă шкулĕнчен вĕренсе тухсан, райхаçатсенче ĕçлерĕ.

Сăмах май каласан, партин аслă шкулне пирĕн ялтан эпĕ, Анфиса Федорова тата Евгений Захаров вĕренсе пĕтерне. Пурте – Чулхулара.



**Василий Мефодьевич Мефодьев (сулахайри) Илья Федорович Ананьевпа кĕлете тырă кĕртнĕ çĕрте. Аллăмĕш çулсем.**

Таччи Вулути 1932 çулта çуралнă. Вăл амăшĕпе, Роза йăмăкĕпе тата Сергей шăллĕпе Кăрăпчаксен урамĕнче, Илюшки пиччесем хыçĕнче, пурăнатчĕ. Пӳрчĕ вĕсен шаларах ларатчĕ. Володя Миронов ял хуçалăх институчĕ пĕтерчĕ. Ялта вăл пĕрремĕш аслă пĕлӳ илнĕ агроном.

Анчах та, тĕрлĕ сăлтавсене пула, унăн хамăр патра ĕçлеме май килмерĕ. Колхоз председателĕ Василий Романов хăй те ăста агрономччĕ те... икĕ упана пĕр шăтăкра вырăн пулман тенĕ пек пулса тухрĕ пулас. Эпĕ унпа нумай курса калаçнă та, яла килмешкĕн шухăшкăмăлĕ пурччĕ унăн. Пурнăç çулĕ вара Мироновăн Элĕк еннелле кайрĕ.

Ехремкассинчи «Правда» колхоз председателĕпе Сергей Шлябинпа çамрăк агроном пĕр чĕлхе тупрĕ. Владимир Миронович çĕр ĕç культурине наука шайне çĕклеме пулăшнине пула ехремкассисем вуншар çул уйран пысăк тухăçлă культурăсем туса илессипе республикăра янрарĕç. Çавна май выльăх-чĕрлĕх тупăшĕ те ӳсрĕ. Мироновăн ĕç опытне вăл вăхăтра кашни районтан пырса вĕреннĕ, ун çинчен Мускав хаçачĕсем таранах çырнă, Пĕтĕм Союзри радио передачăсем кĕрлеттеретчĕ. Хăйне те чыс турĕç, орденсем, медальсем, грамотăсем, тава тивĕçлĕ агроном ятне пачĕç.



**Владимир Миронович Миронов (сулахайри) тата Владимир Прокопьевич Кузьмин**

Çавăнтах авланса вăл çемье çавăрчĕ, кил-çуртне пуянлатрĕ. Шел, чирлесе кайса, вăхăтсăр вилчĕ.

Ку ÿкерчĕке эпĕ хам Элĕк райхаçатĕнче ĕçленĕ чухне, 1965 çулхи çуркунне, Ехремкасси уйĕнче тунă.

Сухăр Павăлĕсем ялти хисеплĕ те ĕçчен, пуян хресченсем пулнă. Платанида Ивановнипе Григорий Павловичăн виççĕмĕш ывăлĕ Данил аслисен ĕçне малалла вăйлатса пычĕ. Вăл ветеринари фельдшерне вĕренчĕ. Ялти, колхозри выльăх-чĕрлĕхе сыватса, упраса пурăнчĕ. Çитмĕле çитиччен миçе çынна, миçе киле инкекрен сыхласа хăварман-ши вăл? Сурăх-сысна-ĕне аптраса ÿкет-и, така-сысна çăмарти кастармалла-и, пурте тенĕ пекех, «ах, Данил патне чуп-ха часрах» тетчĕç. Данил Григорьевич хуть те хăш вăхăтра та часрах чупса çитетчĕ.

Курпун Çеркисемпе, Илюшсемпе пĕрле вăл та Ковский патне туртăнатчĕ. Унăн та вĕсемпе пĕрле çамрăклăх интересĕпе хавхаланса шухăш-ĕмĕтне çунатлантарас килнĕ. Пултарулăх калаçăвĕнчен пĕринче вĕсене Сергей Александров «Фотокорпа» çатлаттарса илнĕ.



Данил Григорьевич Григорьев (сылтăмри) Петр Ковскийпе

# ЁМЁРЛЁХ ВУТ–ҪУЛĂМ

Петр Ковский килӗнчи культура вучахӗн хӗмӗ ял урамӗсене кăна мар, таврари ялсене те асамлăн сиксе ÿкрӗ. Сăмахран, хамăр ялти Василий Марков, чылайччен фото ӗҫне пăрахмасть. Ҫӗрпелти Иван Иванов хаҫатсем ҫине тăтăшах ҫырса тăрать тата ытти те.

Ҫав хӗлхем ман ăша та варăнчӗ, чун-чӗрене вӗрилентерсе ҫӗнӗлле ялкăштарчӗ. Аслă йыснан темиҫе купăс, граммофон, типӗ батарейăпа ӗҫлекен «Родина» радиоприемник пурччӗ (ялта Пумпур Петӗрӗн ун пек тепӗр приемник), фотоаппаратсем темиҫеччӗ те, кӗнеке нумайччӗ. Вăл мана хăй ӗҫлекен вулав ҫуртне, изба-читальня текенскерне, илсе каятчӗ. Яла килнӗ ҫӗнӗ кӗнекесене вара эпӗ чи малтан пăхса тухаттăмччӗ, вулама илеттӗмччӗ.

Ҫамрăк ҫыравҫă патне Вăрнартан Петӗр Ялгир поэт килсе каятчӗ, хушăран вăл Шупашкарта пурăнакан писательсене те ертсе килетчӗ. Эпӗ вӗсен литература калаҫăвӗсене тăнласа итлеттӗм, Мускав, Шупашкар хаҫачӗсене нумай вулаттăм.

Шкулта вӗреннӗ чухнех ҫапла манăн шухăш-ӗмӗт сăнарлăх тӗнчинче явăнма пуҫланă. Сисмерӗм те, хам



**Вутă татаҫҫӗ (сулахайран сылтăмалла): Лева Шашков, Коля Семенов, Вася Марков, Володя Кузьмин, Калистрат Иванов.**



**Макçăм Йăванĕн ывăлĕ Калистрат йысна балалайкипе тĕнкĕлтеттерет. Илемлĕ кĕвĕпе качака савăнсах таз хĕррине çуллать.**

та сăрмаклама тытăнтăм шурă хута, пичетленнĕ май, хавасланса пытăм...

## КУН КĔНЕКИНЧЕН

**1952 çулхи мартăн 30-мĕшĕ.**

Паян, вырсарникун, эпĕ пăчкă илтĕм те Ковский йыснасем патне вутă татма кайрăм. Çитсенех яшка çирĕмĕр те йыснапа вутă татма тухрăмăр. Станок турăмăр та пĕрре ыванччен татрăмăр. Манăн ура шăнса кайрĕ, мĕншĕн тесен



**Клавдия Владимирова упăшки Александр Григорьевич Григорьев ялта ĕçпе мухтава тивĕçнĕ арçынсенчен пĕри.**

çанталăк сивĕччĕ. Вара йыснапа канма кĕтĕмĕр. Эпĕ каннă вăхăтра М.Ефетов çырнă «Поезд идет» ятлă кĕнекене вуласа тухрăм. Кÿршĕри Калистăр çитрĕ, Симун Кули каçрĕ. Вăл пырсан каллех тухрăмăр та ĕçе тытăнтăмăр. Унтан Лева Шашков пычĕ. Вăл эпир татнă вутта çурса пычĕ. Тепре ыв̆аниччен татрăмăр та каллех пÿрте канма кĕтĕмĕр. Кайăк Марков килчĕ. Вăл пырсан каллех ĕçе тытăнтăмăр. Йысна пире вутă татнине фотографировать турĕ. Кăнтăрла çитсен пÿрте кĕрсе шаркку çисе тухрăмăр та çурса пĕтернĕ вуттине шаршан турăмăр. Кайăк Марков йыснаран пĕрмаях фото пирки ыйтать.

**1952 çулхи апрелĕн 2-мĕшĕ.**

Шăл ыратнипе Вăрнара больницăна каяс терĕм. Йыснасем патне кĕтĕм. Аверкий Осипчпа Гурий Архипч йыснана лашапа лартса кайма килчĕç. Мана вĕсем лартса каймарĕç. Вĕсем хыççăнах тарăхса çурран тухса утрăм. Ялтан инçех те каймарăм, пĕр лав килни курăнчĕ. Кусем Клати акка упăшкипе Элексантăр тата Ерми Верукĕ пулчĕç.Вĕсем хаваспах лартса Вăрнара çитерчĕç.

**1952 çулхи апрелĕн 4-мĕшĕ.**

Ирхине Иван Маркович лашасем валли ыраш улăмĕ турттарма кайма килсе каларĕ. Лаша кайса илтĕм те кайрăм. Уйра лашасене кĕрте-кĕрте ӳкерсе аран улăм ури патне çитрĕмĕр. 5 лав хутларăм.

**1952 çулхи майăн 22-мĕшĕ.**

Колхозăнне улма лартма тухрăмăр. Килтисене тепĕр эрнерен тин ларттараççĕ.

**1952 çулхи июнĕн 1-мĕшĕ.**

Паян каçпала Квас Павăлĕпе Хуяс Павăлĕ салтака кайрĕç.

**1952 çулхи июнĕн 14-мĕшĕ.**

Клуб пахчинче табак калчи кăларма кайнă та тӳрех – ана çине. Кăнтăрлаччен пĕр витре лартрăм, шăвартăм. Анне куккисем патĕнчен таврăнсан, эпĕ хамăн йăрана лартса тухрăм, анне те тепĕр йăран пуçларĕ.

**1952 çулхи декабрĕн 17-мĕшĕ.**

Паян Хурамал çырми вĕçне конный молотилкăпа авăн çапма кайрăм. Кунĕпех çумăр çуса тăчĕ. Юр питĕ нумай ирĕлсе пĕтрĕ.

**1952 çулхи декабрĕн 21-мĕшĕ.**

Эпĕ паян çăпата сутма Вăрнар пасарне кайрăм. Сакăр мăшăртан тăваттăшне ултшар тенкĕпе, пĕр мăшăрне çичĕ тенкĕпе сутрăм. Аттесем 480 тенкĕпе пăру сутнă.

Раймага кĕрсе 20 пуспа икĕ перо илтĕм, тепĕр лавккинче 60 пуспа 50 грамм сахăрланă чăмăркка 8 канфет туянтăм. Пушкар çиппишĕн 1 тенкĕ те 29 пус, патефон йĕппишĕн 2 тенкĕ те 51 пус тӳлерĕм. 3 тенкĕ те 60 пуспа икĕ уйăхлăх «Çамрăк большевик» хаçат çырăнтăм. Атте 25 тенкĕпе çĕлĕк илсе пачĕ. Колхоз сысна çури килоне 15 тенкĕпе парать.

**1953 çулхи январĕн 12-мĕшĕ.**

Аннепе юр купи тума кайрăмăр. Çын нумай. 40 гектар çине юр тытрăмăр.

**1953 çулхи февралĕн 22-мĕшĕ.**

Атте ирех Йăван Маркăч бригадир патне лаша çыртарма кайрĕ. Кăштах тăрсан, таврăнчĕ, Маркăча та пĕрле илсе килчĕ, сăра ĕçтерчĕ.

Пурĕ 8 лаша çырса панă. Эпĕ çак çынсене чĕнтĕм: Володя Максимова, Сергей Степанова, Семен Афанасьева, Совхоз Ваççи арăмне Татюк инкене, Крахвине инкене, Коля йыснана. Нимепе вуттине Пруссакран турттарса килтĕмĕр, 35 çухрăмран.

**1953 çулхи мартăн 5-мĕшĕ.**

Ферма витисем тăрринчен юр хыратпăр. Иосиф Виссарионович Сталин вилни çинчен хурлăхлă хыпар илтрĕмĕр. Эпир питĕ кулянтăмăр. Мана та вăл пĕрре те вилнĕ пек туйăнмарĕ. Каçхине клуба митинга кайсассăн эпĕ Сталин юлташ портречĕ çинчен куçа та илмерĕм. Анчах та вăл çук ĕнтĕ, унăн чĕри тапма чарăннă.

**1953 çулхи апрелĕн 17-мĕшĕ.**

Ялта çуллен чуччу нумай çакаççĕ, кашни пысăк урамра тенĕ пекех. Пирĕн Карачăмкассинче Пумпурсен умĕнче, тăварах – Тимĕрçĕ Толисен çумĕнче, унтан инçех мар – Махха Кулисен умĕнче, Илюш Ананьевсем патĕнче, малти урамра – Шлык Петĕрĕсем çывăхĕнче. Ĕç хыççăн каçпа яш-кĕрĕм чуччу тавра пухăнать.Эпир те паян кӳршĕри Гена Ярушинпа Махха Кулисен умĕнчи чуччу çинче ярăнса килентĕмĕр.

## ХВЕТУТ МУЧИ – САД ĂСТИ

Ку сăна ӳкерме Ковский йыснапа çырма урлă Хĕветут мучисем патне кайрăмăр. Федот Федорович Федоров 1885 çулта çуралнă, патша çарĕнче хĕсметре тăнă. Пирĕн аттепе юмахлама та час-часах каçать. «Пракках, кăçал пыл самай пулать-и? Улмусем еплерех пиçеççĕ-ха? Çаратмарĕç-и?» – çак ыйтусем яланах пулатчĕç унран.

Пахчи ун çырма тĕпнех анать. Мĕн кăна çукчĕ пулĕ унта? Кинемейпе иккĕшĕ сад илемĕпе те тухăçĕпе киленсе пурăнатчĕç. Тулĕк ял шăймăкĕсем канăç

памастчӗҫ вӗсене, кӗркунне сада тапӑнса ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе ҫухӑртатчӗҫ. Шеллес килетчӗ ват ҫынсене. Нумай ачана чарнӑ эпӗ унта вӑрттӑн кӗме.



## Аслисемпе пӗр танах

Бригадир Йӑван пичче – Иван Федорович Федоров – пире те, ачасене, мӑн ҫынсемпе танах тырӑ ани виҫсе паратчӗ. Ай-яй хӑшкӑлтарать хӗвелпе пиҫсе, тарпа ҫӑвӑнса. Кӳршӗсенчен юлас килмест. Хӳрере намӑс. Шапа Ульянӗпе Зойи те ман ҫумрах. Кутӗрленетпӗр. Кулӑшла хӗрарӑм вӑл – Ульян акка. Йыснасем патӗнче эпӗ унпа шӳтлеме те хӑнӑхнӑччӗ ӗнтӗ. Уйра та аташас килсе кайрӗ пулас. Кӗлте пуҫласанах, хӑй сисиччен, темиҫе ывҫӑ каҫса хуратӑп. Часах ҫыхӑ тулать. Вӑл мӑшлатса кӗлтене ҫыхать, унтан татах хӑвӑрт тулать ҫыхӑ. Туйрӗ хӑйӗнчен мӑшкӑлланине. Хул айӗн каялла пӑхса, кулса ячӗ: «Пулать сана, аннӳне каласа парап». Ачан шаймӑк шухӑшех ҫав, ниепле те чарӑнас килмест. Хӑй тап-тасах, аялтан вырать. Ҫыхнӑ кӗлтине тӗм ҫине хума ҫаврӑнать те, хыҫалта тулӑ пучаххисем ларса юлнине асӑрхать. Туртса пӑхать, кӗске



туналлă пучах йăштах тухать. Зойи кăраччĕ те, тӳрех çурлапа вăркăнтаратчĕ.

Çураçатпăр та, пĕшкĕнсе каллех тулла çурлапа кăчăрт-кăчăрт касса, ана вĕçнелле талпăнатпăр.

«Курск шăпчăкĕ» калавра Шапа Ульянĕнчен илемлĕ, вилĕмсĕр сăнар тухнăччĕ. «Тăван Атăл» валли Владимир Агеев художник çак ӳкерчĕке турĕ.

## «ÇĂЛКУÇ» ЖУРНАЛРАН

*1951 çулта эпĕ Хурăнсур Çармăсăн «Çăлкуç» ятлă журналне кăларма пуçланăччĕ. Алăпа çырса. Петĕр Ковский сăн ӳкерчĕкĕсемпе илемлететтĕм. «Ял ятне çĕртер мар!» тесе чĕнетчĕ ман журнал. Журналăн 4-мĕш номерĕн материалĕсем сыхланса юлнă:*

### Карачăм мучи шпион тытайман

Кăштах кахалрах пулас вăл пирĕн Карачăм мучи. Уя ĕçе сахал тухнăран ăна пĕррехинче «Социализм çулĕпе» хаçата кăларнă. Ял-йыш кулма пуçланă. «Ах, лĕпĕртисем, – терĕ тет вăл тарăхса, – сиртен хăвăртан унашкал районĕпе чапа тухасси ĕмĕрте пулас çук».

Кинемей качака усрама юратать. Карачăм мучине вăл качака çитерме Асанхăтлăна янă. Карачăм мучи пĕлĕтрен темле пысăк шар вĕçсе аннине курнипе хăраса кайнă. Тăн кĕрсен вăл шар анса ларнă çĕрелле чупнă. Çурăлнă шара тата темĕнле парашют майлă япалана пуçтарса, качакине çавăтса, килелле васканă.

Çул çинче ăна ачасем сырăннă. Пурте кăшкăраççĕ, ыйтаççĕ: «Çурса пар пĕр татăк?!» Карачăм мучи вара сурăх касмалли хачăпа шар резинкине пурне те касса парать. Ачасем çав татăксенчен пĕчĕк хăмпăсем туса пуç тăрринче вĕçтерсе çӳрерĕç, шаплаттарса çурчĕç. Мана та пĕр татăк лекнĕччĕ.

– Америк шпионĕ вĕçсе килчĕ çав шарпа, – тет Карачăм мучи сухалне шăлса. – Анчах та хăваларăм – тытаймарăм. Санар çырминелле тарса çухалчĕ.

Пирĕн çĕршыва шарсем ярса диверси туни çинчен илтнĕччĕ. Тен, чăнах та шпион та вĕçсе килнĕ? Ма тытман-ши Карачăм мучи ăна? Шпион кураттăмăрччĕ.

Качака çине утланса хăваламаллаччĕ терĕм те, Карачăм мучи пушă çĕклесе кăтартрĕ.

**Чĕлĕм туртман урам**

Анатран Макçăм мучисемпе Мирун мучисем таран пирĕн урамра 20 кил. Вĕсенче Макçăм Вулути, Çерки, Симĕс Ваççа, Кăтра Якку, Праках Куçмич, эпĕ, Çимун пичче, Виссарун, Шаптак Мĕкĕти, Кули, Жени, Сувхус Ваççи, Веня, Миххи Ваççи, Карачăм мучи, Мĕкĕте мучи, Пумпур Петĕрĕ, Сар Якку, Шахалккă Хĕветĕрĕ, Эверкки, Мирун мучипе Тули пурăнаççĕ. Пĕри те чĕлĕм туртмасть. Вăт мĕнле лайăх арçынсем! Усал наркăмăшпа сывлăхне пĕтермеççĕ, пире те тĕтĕмпе тĕтĕрмеççĕ.

**Хисеплĕ ватăсем**

Кури мучи – Кури Каврилч – Иххан мучисемпе юнашар пурăнать. Иххан мучи – тимĕрçĕ. Вăл, Иххан мучи, малтан пирĕнпе хирĕç пурăннă, тимĕрçĕ лаççи тытнă. Пĕчĕк пĕвине халĕ те çырма шывне юхтарса кĕртсе тăратпăр. Иххан мучисем пирĕн патран тахçанах куçса кайнă. Кури мучи пăяв-вĕрен явать. Станок тунă та, мĕшĕлтетет. Иккĕшĕ те пит маçтăр.

Шкултан таврăннă чухне эпир вĕсем ĕçленине пăхса тăранаймастпăр. Хамăрăн та çаплах маçтăр пулас килет. Эпир вĕсене пулăшатпăр.

**Партизан**

Манăн пĕрремĕш учительница – шкулти анне – Нина Николаевна Баюкова. Вăл Çĕрпелтен пирĕн ялти Иосиф Михайлович Михайлова качча тухрĕ. Эпир вăл кун çав тери хĕпĕртерĕмĕр – уроксем пулманшăн.

Иосиф Михайлович салтакра чухнех вăрçа кĕнĕ. Унтан вăл яла çыру çырма пăрахнă. Вилнĕ тесе ăна ашшĕ-амăшĕ чиркÿре асăнтарнă. Паттăр салтак партизанра Белоруссире фашистсемпе çапăçнă иккен. Халĕ манăн йысна Петр Ковский ун çинчен «Партизан калавĕсем» çырать.

## ЭПĔ ТЕ – КОРРЕСПОНДЕНТ

«Кун кĕнеки» çырса пынисĕр тата «Çăлкуç» журнала кăларнисĕр пуçне эпĕ хаçатсемпе журналсене те çырма пуçланăччĕ.

**Вăрнарти «Социализм çулĕпе» хаçатра пичетленнĕ:**

**Пултаруллă свинарка**



**Анисия Фоминична Фомина. Кумĕ Петр Ковский ўкернĕ.**

Çĕрпел. Ленин ячĕпе тăракан колхозри А.Фомина колхозница ултă çул ытла сысна ферминче ĕçлет. Иртнĕ çулта кашни амаран 14 çура илсе тĕрĕс-тĕкел пăхса çитĕнтерчĕ. Кăçал А.Фомина кашни сысна аминчен 18 çура илме сăмах пачĕ.

20.02.1952ç.

**Комсомолецсем хастар**

Ленин ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем çуракине хатĕрленес ĕçе активлă хутшăнаççĕ. Вĕсем уя тислĕк кăларнă, кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă çĕрте тăрăшса ĕçлеççĕ. П.Федотовпа Г.Ефремов 23 центнер кĕл пухрĕç.

**Ял илемĕшĕн**

Ленин ячĕпе тăракан колхозри Ф.Шашков ертсе пыракан 7-мĕш бригада (Хурăнсур Çармăс) урам хушшинчи çулсемпе кĕперсене юсама тытăнчĕ. Колхозниксем яла илемлетес тĕлĕшпе йывăçсем лартса хăварчĕç. П.Иванов колхозник 24 тĕп, П.Владимиров – 16 тĕп, К.Романов – 15 тĕп урам хушшине тĕрлĕрен йывăç лартрĕç. 24.05.1953ç.

**Справка сĕтелĕ**

Хурăнсур Çармăс ялĕнчи библиотекăра справка сĕтелĕ организациленĕ. Унта агитаторсем яланах дежурить тăваççĕ, ĕç çыннисен ыйтăвĕсем çине ответсем параççĕ. Кунтах заем таблицисем те пур. Çак кунсенче колхозниксен заем облигацийĕсем тăрăх 4000 тенкĕ выляв укçи тухнине палăртнă.

28.05.1953ç.



Филимон Иванович Шашков

**<u>Сĕнĕ витесем</u>**

Ленин ячĕпе хисепленекен колхозри Захар Александров юлташ ертсе пыракан 10 çынтан тăракан строительство бригади тăмпа çапăран чăх-чĕп вити тăвать. Ăна çак кунсенчех туса пĕтереççĕ.

Кунсăр пуçне кунта саман кирпĕчрен тепĕр вите тăваççĕ. 30.05.1953ç.

*Ăнлантарни: Вите тума эпĕ те хутшăннă. Ял вăрманĕнчи çирĕп шĕшке касса масар тăвайккине турттараттăмăр, унта ĕçлеттĕмĕр.*

**<u>Ялти культура вучахĕнче</u>**





Хурăнсур Çармăс клубĕ. Вăрçă хыççăнхи çулсенче пĕчĕк залне тата алăкран кĕрсен сылтăм енчи икĕ пӳлĕмне туса кĕнĕ.

Клуб заведующийĕ Иосиф Иванович Шашков, ял интеллигенчĕ, çамрăк чух нушана пула сахал вĕреннĕ пулин те, нумай енлĕ пĕлӳллĕ, анлă тавракурăмлă, литературăпа искусствăна юратать, аккордеон, купăс ăста калать. Салтакран килсен вăл кăна американецсем пек йăрăмлă шăлаварпа çӳретчĕ.



**Пакун Мирунĕсем патĕнчен Рамансен урамнелле каҫса каякан ҫул ҫинче кĕпер юсаҫҫĕ (сулахайран сылтăмалла): Валерий Фомин, Анатолий Кузнецов, Василий Ярушин.**
**Петр Ковский сăн ӳкерчĕкĕ.**

Юлташĕсене, ял ҫыннисене ĕҫлĕ хутсем ҫырса парса, ăслă канашсем сĕнсе пулăшать.

Пушă вăхăтра ял ҫыннисем клуба радио итлеме, хаҫат-журнал вулама, кĕнеке улăштарма, канма пухăнаҫҫĕ. Шашка-шахмат, домино, бильярд вăййи нумайăшне тыткăнлать. Петр Ковский вăйă хĕрсе пынă самантра ӳкерсе илнĕ (сулахайран сылтăмалла): Кăтра Якку-Степанов, Галки Кĕркури-Кузьмин, Теренти Ваҫҫи-Терентьев, Якур Данилч Воробьев, Ҫырма Татьянĕ-Иванова, Шашук Йăвăҫĕ – Шашков, Шашук Хĕлимунĕ-Шашков, Курпун Ҫерки-Александров, Купăс Ҫинахванĕ-Филиппов, Чăккал Вали-Александров (73 стр.).

Кĕтесри пĕчĕк пӳлĕмре – телефон. Пӳлĕмне те пĕлсе илемлетнĕ. Вăрҫăра вилнĕ ентешсен сăнĕсене пысăклатса Петр Ковскийпе Иосиф Шашков пĕрле стенд туса ҫакнă.

Клуба пăт, икĕ пăт пуканĕсем пухнăччĕ. Пăхаттирсем вăй виҫетчĕҫ, хавшаккисем ăмсанса тăратчĕҫ. Шахалккă

Хĕветĕрĕ, Пăштрик Ваççипе Петти, Йăванкка Витти, Симун Йăвăççи, Павăл Андреев тата ыттисем те мала тухса чемпионсем пулатчĕç.






Бильярд хăй патне питĕ туртатчĕ. Ялшăн çĕнĕ ваййа çынсем юратса пăрахрĕç. Акă, Кăнчча Петĕрĕ Ерми Петĕрĕнчен выляса илесшĕн. Хĕветут мучи те вылясшăн (74 стр).

Библиотекăра пин çурă кĕнеке. Унта вун пилĕк экземпляр тĕрлĕрен хаçат-журнал килсе тăрать.

Вулакансен хисепĕ ӳсет. В.Шлыков кăçал А.Фадеевăн «Молодая гвардия», А.Толстойăн «Петр I», А.Пушкинăн «Евгений Онегин», М.Лермонтовăн «Герой нашего времени» кĕнекисене т.ыт.те вуласа тухнă. А.Овчинниковпа В.Филиппов И.Кожедубăн «Тăван çĕршывшăн» кĕнекине пысăк интереспа вуласа тухрĕç. Л.Шашков, А.Арсентьев, В.Ярушин тата ытти колхозниксем те кĕнекене юратса вулаççĕ. 14.05.1953ç.

**Тăрăшса ĕçлекен конюх**

Хурăнсурти Никита Бардасов чылай çул хушши конюхра ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕçне тăрăшса туса пырать. Лашасене вăхăтра апат парать, шăварать, хыркăчласа тасатать. Çавăнпа та вăл пăхакан лашасем яланах самăр.



Н.Бардасов юлташ витене те таса тытать. Унти тислӗке вăхăтра тасатать. Апата та тирпейлӗ тыткалать. Лашасене лайăх пăхнăшăн унăн ятне районти Хисеп хăми çине кӗртнӗ. 15.11.1953ç.



Петр Ковский Мӗкӗте мучине – Никита Филиппович

<u>**Стена хаçачӗ йӗркеллӗ тухать**</u>

Çӗрпел. Ленин ячӗпе хисепленекен колхоз правленийӗпе пуçламăш парторганизаци çумӗнче «Вăйлă тырпулшăн» стена хаçачӗ тухса тăрать. Унăн редакторӗ пулса Иосиф Шашков юлташ ӗçлет. Вăл хаçата вăхăтра тата йӗркеллӗ кăларса тăрать. Кăçал 33 номер стена хаçачӗпе боевой листоксем кăларнă. 3.12.1953ç.

<u>**Лаша вити тăвассӗ**</u>

Ленин ячӗпе хисепленекен колхозăн Хурăнсур Çармăс ялӗнче Мартын Юханов юлташ ертсе пыракан строительство бригади 60 лаша вырнаçмалăх çӗнӗ вите тăвать. Ăна сентябрь уйăхӗнче хута ярассӗ.

6.01.1954ç.

## Ялта сушилка пулать

Платниксем валли ӗҫ тупӑнсах пырать. Вырмана тухиччен сушилка туса пӗтермелле. Ун хыҫҫӑн патшалӑха типӗ тырӑ сутма тытӑнмалла. Ҫавӑншӑн ырми-канми ӗҫлеҫҫӗ Ленин ячӗпе тӑракан колхозри Хурӑнсур Ҫармӑс маҫтӑрӗсем. 1954ҫ.



Тырӑ типӗтмелли тӑвакансем канура. Петр Ковский ӳкерсе илнӗ.

## Пулӑшас тӗллевпе

Вӑрҫӑччен купаласа витсе лартнӑ клуб ҫурчӗ тӑлӑххӑн ларни ҫинчен эпӗ «Коммунизм ялавӗ» хаҫата ҫырнӑччӗ.

1954 ҫулхи августӑн 7-мӗшӗнче редакци мана ҫапла хуравларӗ: Сирӗн «Пуҫлӑхсем ҫывраҫҫӗ» ятлӑ ҫырӑва тӗрӗслесе тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнма Вӑрнар райисполкомне ятӑмӑр».

Ҫав ҫулхи сентябрӗн 14-мӗшӗнче редакцирен тепре хуравларӗҫ:

«Пуҫлӑхсем ҫывраҫҫӗ» ятлӑ статьяна тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн Вӑрнар райисполкомӗ Хурӑнсур Ҫармӑс ялӗнчи клуба туса пӗтерме 200 пин тенкӗ укҫа кирлӗ, ҫавӑн чухлӗ укҫа халӗ колхозӑн та, ял Совечӗн те ҫук. 1955 ҫулта клуб залне туса пӗтермелли ыйтӑва колхоз пухӑвӗнче сӳтсе явма палӑртнӑ».

Автортан: Ҫакӑн хыҫҫӑн тинех лав тапранчӗ. Вӑрнарти тата ялти пуҫлӑхсем турткаланса-турткалашсах ял клубӗн



Мартын Юханович Юханов (сылтăмри) çамрăксемпе ĕçлет.

пысăк залне майлакаласа туса пĕтерчĕç. Колхозниксемпе ял интеллигенцийĕ валли культура мероприятийĕсем ирттерме çăмăлланчĕ.

(Ял çыннисем Чăваш драма театрĕн артисчĕсем лартакан «Кай, кай Ивана» спектакле курма эртеллпех хавасланса васкаççĕ (77 стр).

Сылтăм енче – 1950 çулччен хурăнсурсен Чапаев ячĕпе тăракан колхоз правленийĕ тата культура «вучахĕ» пулнă çурт. П.Ковский ÿкернĕ.)

**150 постановка панă**

Хурăнсур Çармăс клубĕ çумĕнчи драма кружокĕ 15 çул тултарчĕ. Çав çулсем хушшинче вăл пурĕ 150 пьеса ытла выляса панă. Пĕлтĕр кăна 15 постановка лартнă. 6.01.1955ç.

**Çамрăк конюх**

Ленин ячĕпе хисепленекен колхозри çамрăк конюх Костя Романов хăйĕн ĕçне юратса тăвать. Вăл тихасем пăхать. 6.02.1955ç.

**Колхозлă ялăн пĕр кунхи почти**

Кăнтăрла Уравăш çыхăну уйрăмне Вăрнартан почта килсе çитрĕ. Çыхăну уйрăмĕн начальникĕ

Г.Федоров юлташ почтăна колхосенчи почтальонсене валеçсе пама тытăнчĕ.

– Мĕн-мĕн килчĕ-ши паян ман валли? - ыйтать Ленин ячĕпе хисепленекен колхозри Хурăнсур почтальонĕ Л.Иванов почтăна йышăнса. Яла илсе кайса адрессем тăрăх валеçсе памалли унăн почти паян та яланхи пекех пуян. Хаçатсем кăна 250 экземпляр. Вĕсемпе пĕрлех тĕрлĕрен журналсем 54 экземпляр. Кунсăр пуçне тата 52 çыру килнĕ.

– Хамăр ялтан тухнă ентешсен çырăвĕсем килсен, манăн чунăм савăнать, эпĕ вĕсене çийĕнчех валеçсе паратăп, – тет Лавун пичче. 15.05.1955ç.

## Сĕнĕ пӳртсем лартаççĕ

Хурăнсур Çармăс ял çыннисем хăйсене валли çĕнĕ пӳртсем лартаççĕ. Михаил Крипчаков, Степан Волков, Гурий Гаврилов, Сергей Александров, Иван Плеханов колхозниксем кĕçех çĕнĕ пӳртсене пурăнма куçаççĕ.

Çак юлашки çулсенче ялта 10 пӳрте яхăн çĕнĕрен лартнă. 19.06.1955ç.

## ДОСААФ пуçламăш организацийĕ

Хурăнсур Çармăс ялĕнче ку таранччен ДОСААФ пуçламăш организацийĕ пулман. Комсомолецсемпе çамрăксем ыйтнипе кунта нумаях пулмасть ДОСААФ пуçламăш организацийĕ турĕç. Унта 54 çамрăк. Ертсе пыраканĕ – И.Шашков. Халĕ ДОСААФ членĕсем пĕчĕк калибрлă винтовкăран тĕл пеме вĕренеççĕ. 1.12.1955ç.



## Совет Сарĕнчен таврăннă хыссăн

Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕ Михаил Хундяков комсомолец Совет Çарне кайиччен комбайнер пулса ĕçленĕ. Салтакран таврăннă хыççăн вăл колхозра шоферта ĕçлеме тытăнчĕ.

Çавăн пекех Василий Степанов, Яков Мефодьев, Иван Михайлов, Иван Федоров, Василий Павлов Совет Çарĕнчен таврăннă хыççăн тăван колхозра тăрăшса ĕçлеççĕ, халĕ хĕрўллĕн вăрман касаççĕ. 22.12.1955ç.



**Кашкăр Ванькките (Иван Волков) Шашук Тули (Анатолий Шашков) салтаксем Белоруссири Гродно облаçĕнчи Лида хулинчен яла янă сăн ўкерчĕк**

## Репертуар пуянланать

Хурăнсур Çармăс ялĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем пĕррехинче, вечера пухăнсан, хор кружокĕ йĕркелесси çинчен ыйту хускатрĕç. Çичĕ çул вĕренмелли шкулти Нина Николаевна Баюкова учительница вĕсен пуçарăвне ырларĕ, кружока хăй ертсе пыма килĕшрĕ. Кружока кĕске вăхăтрах 24 çын çырăнчĕ.

Занятисем вăхăтра пулаççĕ. Çамрăксем чи малтанах Ф.Лукинăн «Çуралнă çĕршыв» юррине юрлама вĕренчĕç. Халĕ репертуарта Воробьев, Лисков, Лебедев юррисем пур. Кружок членĕсем вырăссен юррисене те ăста юрлама

вёренеççĕ. Акă, çамрăк колхозник Анатолий Шашков, фельдшерица Валя Ефимова «Уральская рябинушка» юрра кăмăла каймалла шăрантараççĕ. 8.03.1956ç.

**Çĕнелет колхозлă ял**

Колхозлă Хурăнсур Çармăс ялĕ çулсеренех çĕнелсе пырать. Йывăççем лартса илемлетнĕ урамсенче унта та кунта çĕнĕ пÿртсем курма пулать. Ялта пысăк клуб пур. Ăна Шупашкар артисчĕсем те ырлаççĕ.

Халĕ ялта 1 мотоцикл, 15 велосипед, çĕвĕ çĕлемелли 42 машина, 3 колхозник килĕнче «Родина» радиоприемник, 18 килте наушникпе итлемелли детекторлă приемник пур.

Кил хуçи хĕрарăмĕсем пÿртсене таса тытма тăрăшаççĕ. Кашни икĕ эрнере колхозниксен килĕсене санитари комиссийĕ пăхса тухать. 25.06.1956ç.

**Колхозри физкультурниксем**

Ĕç кунĕ вĕçленсе пырать. Хĕвел те хăйĕн шевлине таврана юлашки хут сапаласа, Кăмаш вăрманĕ хыçĕнче курăнми пулать. Кĕçех пирĕн кÿршĕри çамрăксем те хамăр вăйпа тăрăшса тунă спорт площадкине савăнăçлăн шавласа тухаççĕ. Ăна тума эпĕ кÿршĕ ачисене хавхалантарса, йĕркелесе тăнăччĕ. Итлерĕç те мана вĕсем – савăнчĕç.

Пирĕн волейбол площадки, çÿлĕшне, тăршшĕне, чупса пырса сикмелли вырăнсем, турник, городки пур. Кашни çамрăк хăй юратакан спортпа интересленет. Акă, Гена Ярушинпа Толя Михайлов турник çинче выляма юратаççĕ, чылай йывăр упражненисем тума хăнăхрĕç. Толяпа Гена ирхине ирех спорт площадкине чупса тухаççĕ, турник çинче çаврăнаççĕ, ăмăртса чупаççĕ, сикессипе тренировкăсем тăваççĕ, Ваньки пĕвине кайса таса та уçă шывпа çăвăнаççĕ. Коля Никитин ытларах сикес енĕпе тăрăшать. Федор Шахалов икĕ пăт пуканĕсемпе тĕрлĕрен упражненисем тăвать.

Кунтах каçалапа илемлĕ те хаваслă юрăсем тăтăшах янраççĕ. Çамрăксемпе пĕрлех ваттисем те пухăнаççĕ.

Савăнăçлă, усăллă ирттереççĕ Хурăнсур Çармăс ялĕнчи çамрăксем хăйсен пушă вăхăтне. 9.05.1956ç.



Карачăмкассин çамрăк физкультурникĕсем (сулахайран сылтăмалла): Вася Ярушин, Веня Тихонов, Гена Ярушин. Петр Ковский сăн ӳкерчĕкĕ.

**Громоотводсем турĕç**

Хурăнсур Çармăсра та çуртсене аçа-çиçĕм çунтарасран хӳтĕленме витесем, амбарсем тата урамсене те громоотводсем лартнă. 1.07.1956ç.

**Пурнăç лайăхланать**

Кăçал Хурăнсур ялĕнчи колхозниксем 11 велосипед, 4 хут купăс, çавăн пекех радиоприемниксем, патефонсем, çĕвĕ çĕлемелли машинăсем нумай туянчĕç. Петр Иванов комбайнер икĕ çул каярах çемйи валли пысăк пӳрт лартрĕ. Халĕ унăн килĕнче «Родина-54» радиоприемник, патефон, велосипед, çĕвĕ çĕлемелли машина тата ытти культинвентарь те пур. 26.07.1956ç.

**Хĕрӳ ĕç пуçланчĕ**

Ленин ячĕпе тăракан колхоз уйĕсенче хĕрӳ ĕç пырать. Вăрнарти машинăпа трактор станцийĕн 10-мĕш трактор бригадинче «С-4», «Коммунар» комбайнсем ĕçлеççĕ. Июлĕн 23-мĕшĕнче сакăр бригади та ыраш вырма тухрĕç. Ăмăртура Хурăнсурти Николай Иванов коммунист ертсе пыракан выльăх апачĕ хатĕрлекен бригада малта пырать. Ку бригада яланах пур ĕçре те малта. Бригада 92 гектар

ҫинчи ыраша 5 кунта вырса пӗтерме палăртнă. Тырă вырнă ҫӗре кашни кун 100 ҫын ытла тухать. Бригадăри малта пыракан примерлă колхозницăсем Мария Максимова, Анна Трофимова, Мария Константинова, Мария Прокопьева, Нина Фомина кашни кун 0,18-0,19-шар гектар выраҫҫӗ, нормăна 120-130 процент тултараҫҫӗ. Икӗ кун хушшинче бригада 38 гектар вырчӗ.

Филимон Шашковпа Михаил Иванов бригадисем ыраш вырма тухичченех лайăх пулса ҫитнӗ «Торстаг» пăрҫана алăпа татса пуҫтараҫҫӗ. Ҫав вăхăтрах ыраш вырма та тухрӗҫ. 26.07.1956ҫ.

**Малта пыракан бригадăра**

Ҫӗрпелти Ленин ячӗпе хисепленекен колхозра уй-хир ӗҫӗсене кăтартуллă вӗҫлессипе ăмăрту сарăлсах пырать. Малта Николай Иванов бригади. Пултаруллă та ӗҫчен В.Стеклова, Ю.Шахалова, М.Казанкова, М.Максимова, О.Ярадаева 1,2-шер гектар ыраш вырчӗҫ. Бригада М.Иванов бригадине ыраш вырса пӗтерме пулăшрӗ. Ун хыҫҫăн 20 гектар ҫинчи ҫурхи тулăна вырчӗҫ, 7,5 гектар ҫинчи кантăр пусине татса шыва хутрӗҫ.

Ял ҫумӗнчи итем ҫинче хӗрӳ ӗҫ вӗрет. Кунта Н.Ивановпа Ф.Шашков бригадисем черечӗпе авăн ҫапаҫҫӗ. Н.Моисеев машиновед сменăра 180-200 центнер тырă ҫапма ӗлкӗрет. 8.08.1956ҫ.

**Комбайнер**

Хурăнсур Ҫармăсри Петр Иванович Иванов комбайнер ыраш пуссине ҫитнӗ ҫӗре хӗвелтухăҫ хӗреле пуҫларӗ. Комбайн патӗнче ҫак вăхăтра унăн помощникӗ, яланах савăнăҫлă ҫӳрекен Толя Михайлов, мотор тасатса тăрать.

– Толя, вырма пуҫлама вăхăт ҫитет, – терӗ ун патне ҫитерехпе комбайнер.

Кӗҫех Толя мотора тапратса ячӗ. Мотор пӗр тикӗс ӗҫлет. Ерипен кăна вӗрекен ҫилӗ пит-куҫа, кӗлеткене уҫăлтарать. Пӗр самантрах хир карапӗ малалла кайрӗ. Штурвал умӗнче савăнăҫлă пит-куҫлă Петр Иванович мăнаҫлăн ларса пырать. Бункера хăвăрт тулакан таса тырра виҫӗ маттур хӗр михӗсене пушатсах

пыраççĕ, тулли михĕсене çийĕнчех комбайн хыçĕнче пыракан лавсем çине хурса хăвараççĕ.

Хĕвел тухнă çĕре пултаруллă комбайнер ыраш пуссине чылай вырма ĕлкĕрчĕ. Ялалла пĕр вĕçĕмсĕр тырă миххисем тиенĕ тулли лавсем кайса тăраççĕ, вĕсене хирĕç пушă лавсем васкаса килеççĕ. Çывăхри анасем çинче колхозниксем тăрăшса тырă выраççĕ, вĕсен енчен хĕрсен çепĕç юррийĕ, мотор шавĕпе хутшăнса, хуллен илтĕнет. Çаксем çине пăхсассăн çав тери чун савăнать.

Кăнтăрла çитнĕ тĕле Лиза Афанасьева повар апат-çимĕç илсе килчĕ.

Петр Иванович вăхăтлăха комбайна чарчĕ те, моторне сӳнтермесĕрех çĕре сиксе анчĕ. Брюки кĕсйинчен алтутри кăларса тарланă çамкине, питне шăлса илчĕ, хăйĕн помощникне малалла ĕçлеме хушрĕ. Вĕсем, тухăçлă ĕçлес тесе, апатне те черечĕпе çиеççĕ.

Вĕсем пĕрле ĕçлеме пуçлани иккĕмĕш çул ĕнтĕ. Толя опытлă комбайнертан нумай вĕренме ĕлкĕрчĕ, комбайнер сăмахĕсене итлерĕ, хушнă ĕçсене яланах йĕркеллĕ туса пычĕ. Çавна пула ĕнтĕ вăл хир карапне йĕркеллĕ тытса пыма пултарать. Кăçал Толя тырпул пухса пĕтерсен Канашри ялхуçалăх механизаци училищине кайма ĕмĕтленет.

– Пултарать, маттур, маттур, – мухтаса ларчĕ ăна Петр Иванович апат çинĕ хушăра, комбайна ăста тытса пыракан каччă çине хĕпĕртесе пăхса.

Комбайн çинчи хĕрӳ ĕç шавĕ кăнтăрла та чарăнмарĕ. Черетпе апат çинĕ хыççăн вĕсем каллех иккĕшĕ те комбайн çинче.

Пĕр чарăнмасăр выраççĕ маттурсем, лавçăсем те тырра вăхăтра турттарса пыраççĕ. Хĕвел каç енне сулăнчĕ. Кĕçех вăл хăйĕн шевлисене тавралла юлашки хут сапаласа, аякра курăнми пулчĕ. Тĕттĕмленме пуçларĕ. Сывлăм ӳкрĕ. Купаланса тулнă улăма юлашки хут кăларса пăрахсан, Петр Иванч комбайна чарчĕ. Моторне сӳнтерчĕ те çăра хăмăл çине сиксе анчĕ.

– Çитет паянлăха! – терĕ вăл тулли михĕсемпе тĕрмешекен хĕрсене.

Хĕрсем пĕрин хыççăн тепри тырă юхакан площадкăран сиксе анчĕç. Тумĕсенчен кăшт тĕкĕнсенех тусан вĕçет.

– Авă, пирĕн председатель килет, – терĕ Галя текенни, ял енчен хыпаланса утса çывхаракан пĕчĕкрех çын çине аллипе тĕллесе.

Ку çăра хăмăла чăштăртаттарса çулсăр-мĕнсĕрех вĕсем патнелле Матвей Кузьмич çывхарать.

– Ну, ĕçсем мĕнле, хир карапĕн капитанĕ, – шӳтлесе илчĕ Кузьмин комбайнер çурăмĕнчен лăпкаса.

– Паян сахалтан та 12 гектар выртăмăр пулас, кулленхи нормăна ирттерсе тултаратпăр. Халĕ мĕн пурĕ 80 гектара çитертĕмĕр, – хуравларĕ савăнса комбайнер.

– Чăтаймарăм, каçалапа та пулин килсе пăхас терĕм, çĕрĕ таçта çитиех сарăлса выртать те, ниçта çитсе те ĕлкĕрмелле мар. Ну халĕ пĕрле ялалла каяр пуль, – терĕ председатель.

Çул тăршшĕпех вĕсем колхозăн çак çулсенчи ӳсĕмĕсем çинчен хĕрӳллĕн калаçса пычĕç. Çапла вĕсем Хурăнсура çитнине те сисмерĕç.

Ыраш пуссинчен килекен măн çул çинче тырă вырса таврăнакан хĕрсен хавас юррийĕ илтĕнет. Таврана çуллахи каçăн çутăрах сăнĕ хупласа илет. Хĕрӳ ĕç кунĕ вĕçленет.




**Боевой листок**

*Çĕрпелти тулли мар вăтам шкулта та эпĕ хамăр класăн стена хаçатне кăлараттăм. Унтан вĕренсе тухсассăн мана хамăрăн 8-мĕш бригадăн «боевой листокне» кăларма хушрĕç. Эпĕ хавасах пултăм. Ман хаçата бригада çыннисем эрнере пĕрре вуласа шавласа илетчĕç. Уйрăмах вĕсене «Капкăн кĕтесси»*

*ахăрттаратчĕ. «Боевой листокăн» вăйĕ боевойччĕ. Ăна çурса тăкма никам та хăяйман. Акă 1956 çулхи августăн 1-мĕшĕнче кăларнă тăваттăмĕшпе пиллĕкмĕш номерсенче çырнисем:*

**Ыраш вырса пĕтернĕ**

Бригадăри колхозниксемпе колхозницăсем кăçалхи ăнса пулнă тырпула вăхăтра пухса кĕртессишĕн ивăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Ĕнер бригада членĕсем 92,40 гектар çинчи ыраша ăнăçлăн вырса пĕтерчĕç. Ĕçченсем ыраш вырнă çĕрте хăйсен вăйне шеллемесĕр тăрăшрĕç. Кашни кунах вĕсем хĕвелпе пĕрле уя тухса, тĕттĕмленмесĕр киле кĕмерĕç. Çавна пула ĕнтĕ вĕсем хăйсен ăста аллисемпе çурлапа ыраш пуссине хăвăрт çаратрĕç.

Акă, Екатерина Стеклова 1,22, Мария Максимова 1,13, Марфа Казанкова 1,07 гектар тата ытти нумай колхозницăсем те пĕрер гектар ытла вырчĕç.

Çамрăксем те мăн çынсенчен юлсах каймаççĕ. Евгений Никитин 0,90, Раиса Кузьмина 0,92, Геннадий Ярушин 0,70 гектар вырчĕç.

Çак хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче никамăн та килте ларас килес çук. Пуян тырă-пулă пурне те уя чĕнет.

П.Ковский.

**Авăн çапаççĕ**

Ыраш вырса пĕтернĕ хыççăнах колхозниксем кĕлте турттарма тытăнчĕç. Кашни кунах çумăр пĕрĕхсе тăчĕ пулин те, вĕсем хĕвеллĕ лайăх вăхăтпа усă курса юлчĕç. Маларах вырса купаланă çĕмелсене салатса, кĕлтесене хĕвел çине сарса типĕтрĕç. Унтан вĕсене йĕтем çине турттарса капана хыврĕç.

Йĕтем çинче халĕ хĕрӳллĕ ĕç вĕрет. Колхозниксем тăрăшсах авăн çапаççĕ. Унта кашни сменăра сахалтан та 80 çынран кая мар тухать.

Кĕлте йăтакан ачасем сарлака, çӳллĕ капансене майĕпенех платформа çумне куçараççĕ. Платформа çинче кĕлте темиçе çын алли витĕр тухса малалла куçать. Молотилка барабанĕ пĕр вĕçĕмсĕр кĕлте çăтать.

С.Афанасьев.

**Пуса шыва хутнӑ**

Ҫуркунне пирӗн бригада 7,5 гектар ҫине кантӑр акса хӑварчӗ. Иртнӗ кунсенче бригада членӗсем кантӑр пусине татса ҫийӗнчех шыва хутрӗҫ.

Е.Никитин.

**Уй ҫаралса пырать**

Ыраш хыҫҫӑн 15 гектар тулӑ вырчӗҫ ял ӗҫченӗсем.

Ҫӗмелсемпе суратсенчи кӗлтесене урапасемпе йӗтем ҫине ӑмӑртсах турттараҫҫӗ. Раман арманӗ ҫумӗнчи йӗтем патне тӗрлӗ енчен кӗлте тиенӗ тулли лавсем вӗҫӗмсӗр килсе тӑраҫҫӗ. Майӗпен капансем ӳсе-ӳсе пыраҫҫӗ. Капан тума ытларах типтерлӗ ӗҫлекен Прокопий Кузьмич Кузьмина шанаҫҫӗ.

**Выльӑх-чӗрлӗхшӗн тӑрӑшаҫҫӗ**

Кӑҫал кукуруза питӗ лайӑх ҫитӗнет. Кукурузӑран сахал мар выльӑх апачӗ пулать. Ҫавна шута илсе пирӗн бригадӑри комсомолецсемпе ҫамрӑксем хӑйсен вӑйӗпе 35 тонна кӗрекен силос траншеи турӗҫ.

Виҫӗ кун хушшинче В.Федоров, В.Павлов, Е.Никитин, К.Архипов, Г.Ярушин тӑхӑршар ӗҫкунӗ ӗҫлесе илчӗҫ.

1956 ҫулхи августӑн 7-мӗшӗ,5 №.

**Капкӑн бригада тӑрӑх курса ҫӳренисем**

Ҫынсем хӗрсе кӗлте кӳнӗ вӑхӑтра В.Ярушин ҫамрӑк каччӑ урапа шиналаттарса хаклӑ вӑхӑта сая ярать.

**Кӗлте ҫырӑвӗнчен**

...Молотилка пӗр чарӑнмасӑр кӗрлет. Улӑмӗ нумай тухать, анчах йӑтакан сахал. И.Семенова улӑм йӑтма хушрӗҫ те, вӑл алӑсене саркаласах калаҫма пуҫларӗ:

– Манӑн пӗкӗ ҫук, ҫавӑнпа та йӑтма пултараймастӑп, тупса парӑр, вара йӑтатӑп.

Хӗрсем вара таҫтан пӗр чармак пӗкӗ тупса килсе пачӗҫ. Каччӑн ирӗксӗрех пилӗке авмалла пулчӗ.

**Чармак пӗкӗ**

Арпа тӗкме чӑнах та ҫӑмӑл. Паян авӑн ҫапнӑ ҫӗрте ҫавӑнпа та ӗнтӗ 7 хӗрарӑм арпа тӗксе «кӳтӗрленет».

Капкăн çак колхозницăсен ячĕсене лайăх астуса юлайман та, çакăн çинчен çеç пĕлтерет: арпа тăвакансем, астăвăр! Нормăпа унта иккĕн çеç ĕçлемелле. Арпа.

## ХĔРСЕН САВĂНĂÇĔ

Тул çутăлса çитмен-ха, кăвак çутă çеç хăпарать. Анчах та Хурăнсур ирех вăраннă. Урамсенче унта та кунта çынсем калаçни, машинăсем кĕрлени илтĕнет. Хĕрӳ ĕççи вăхăтĕнче никамăн та килте ларма вăхăт çук.

Макçăм Мани те ирех вăранчĕ, стена çумĕнчи пĕр пек тикĕс шаккакан сехечĕ çине хăраса пăхса илчĕ, виççĕ иртни пилĕк минут. Васкаса çăвăнчĕ, уммапа уйран çирĕ, кăнтăр апачĕ чĕркесе чикрĕ. Çывракан Вулути шăллĕ çине хĕрхенсе пăхса илчĕ те урамалла тухса чупрĕ. «Эпир хĕрсемпе виççĕрех уя тухатпăр тесе килĕшнĕччĕ-çке, эп пĕчченех çывăрса юлнă-ши вара?» – тесе хăйсенчен пĕр кил урлă пурăнакан Ярата Улисен чӳречинчен шаккарĕ. Оля та вăл вăхăтра амăшĕпе, Унеççи аккапа, хыпалансах апат çисе ларать.

Тури униче патне чупсах çитрĕç. Алăкран тухсанах ыраш ани пуçланать. Шăкăри çĕмел. Анасем патĕнче никамах та çук-ха, çил арманĕ патĕнче кăна пĕр хĕрарăм тăрăшсах вырать. «Ку хамăр кӳршĕри Мĕкĕте пичче арăмĕ, Шаптак матки Анна инке пулас, çав никамран та ир тухать», – калаçкаласа вырма пуçларĕç хĕрсем.

Çывăхри вăрман енчен ăшă та лăпкă çил вĕрет, çĕрелле усăннă вăрăм пучахсене хускаткалать, хĕрсен чечеклĕ тутăр вĕçĕсемпе вылять. Сывлăмпа нӳрелнĕ ыраша çурла лайăх касать. Сывлăш уçă. Хĕвел пĕçертмест. Кăçал тырри ăнса пулнă, виççĕ кассах ывăç тулать. Кĕлте хыççăн кĕлте çыхăнать. Хыçа кашни утасран тĕм ларса юлать.

Ытти хĕрсенчен маларах килнишĕн вĕсем хĕпĕртерĕç, паян та вĕсенчен ытларах выраççĕ-çке. «Кĕçĕр çывăрман пуль эсир?» – тесе мухтаса илчĕ вĕсене Петĕр Ковский бригадир, Мария Максимовапа Ольга Ярадаева тин çеç вырнă лаптăка куçĕпе виççе.

Хĕвелпе пĕрле кӳршĕ анасен хуҫисем те шавласа ҫитрĕҫ, хӑйсенчен шалалла шӑтарса кĕнĕ Маньӑпа Оля ҫине ӑмсанса пӑхрĕҫ. Лешсем пуҫа ҫĕклемесĕр выраҫҫĕ. Апатне те кӑп-кап хыпкаласа хырӑма лӑплантарчĕҫ. Ӑш хыпнинчен уйран пулӑшать. Каҫалапа Вӑрнар ҫулĕ ҫине тухрĕҫ. Ана вĕҫленчĕ. Хыҫалта шӑкӑри тĕм ларать. Вĕсене йӑтса ҫĕмелсем турĕҫ. Тин вара ҫĕмелсем ҫумне ларса канчĕҫ. Вĕсем патнелле Ковский ҫывхарать. Маня вырнӑ анасене виҫсе пӑхма ыйтрĕ.

«Ҫирĕмшер сотый!» – аякранах пĕлтерчĕ бригадир.

Петĕр пиччĕшĕ вĕсене тепрер ана виҫсе пачĕ.

Хĕвел те хӑйĕн шевлисене тавралла сапаласа аякри вӑрман хыҫĕнче курӑнми пулчĕ. Хĕвел аннӑ вырӑнта шупка-хĕрлĕ ҫутӑ нумайччен ҫуталса тӑчĕ. Ҫанталӑка каҫ сĕмĕ ҫапрĕ. Анасем пушанса пыраҫҫĕ, Мĕкĕте пичче арӑмĕ те вĕсене «атьӑр килелле» тесе чĕнсе хӑварчĕ. Тепрер тĕм тумасӑр хĕрсем лӑпланмарĕҫ, вырса, пилĕкшер кĕлте ҫыхрĕҫ. Ыраш пуссипе пуринчен кайран сывпуллашрĕҫ. Ĕшеннĕ пулин те – вĕсен чун-чĕри савӑнӑҫлӑ. 30.07.1956ҫ. Пуҫласа пичетленет.


Вася Степанов

### Ĕҫе юратакан бригадир

Виҫĕ ҫул каялла, Совет Ҫарĕнчен таврӑннӑ хыҫҫӑн, Вася Степанов колхозра аслӑ конюх пулса ĕҫленĕ. Анчах унӑн ку ĕҫре пĕр ҫулталӑк кӑна пулма тӳр килнĕ: 8-мĕш уй-хир бригадинчи колхозниксем хӑйсен пĕр пухӑвĕнче ӑна бригадира уйӑрса лартасси ҫинчен сӑмах хускатнӑ.

– Маттур каччӑ, колхоз лашисемшĕн чунтан

тăрăшать. Пирĕн бригадăна та çавăн пекех тӳрĕ кăмăлпа ертсе пырасса шанатпăр, – тенĕ вĕсем.

Чăнах та çамрăк комсомолец вĕсен сăмахне яланах асра тытма тăрăшнă. Кăçал унăн бригади кашни гектартан 15 центнер çурхи тулă, 12 центнер ыраш, 16 центнер сĕлĕ, 702 центнер кукуруза пухса кĕртнĕ, уй-хир ĕçĕсене чи малтан вĕçленĕ. «Социализм çулĕпе». 24.12.1958 ç.

## КУН КĔНЕКИ ÇЫРĂНАТЬ

**1956 çулхи август.**

Хамăр кӳршĕ ялĕсенче икĕ çул кино кăтартса пурăнтăм, çав хушăрах атте-аннене те пулăшнă, ялти уй ĕçне хутшăннă.

Августăн 19-мĕшĕнче вунтăххăр тултартăм та тӳрех Çара кайма повестка пачĕç. Районти культура пайĕнче чыс тума шутламарĕç те. Ялта салтак чупас пирки нумайăшĕ çыпçăнчĕç. Авалхи йăла-йĕркене хирĕçлекен вăхăт. Намăс пуль, тетĕп. Йыснасем, кӳршĕсем асаттесен йăлипех ăсатасшăн мана. Килĕшрĕм вара. Ман та салтак юрри юрлас килчĕ.

Хĕрсенчен парнесем пуçтартăм. Хăвакла акка Тулипе икĕ ывçă-çыхă тутăр хатĕрлерĕмĕр. Симĕс Ваççа чи маттур лаша кӳлсе килчĕ. Ваççа – хамăртан анатарах кил урлă пурăнакан Ульки аккан Çерки хыççăнхи ывăлĕ. Ашшĕ вăрçăра вилсен вĕсем пит начар пурăнатчĕç. Темле укçа пуçтаркаласа Ваççа валли симĕс тĕслĕ фуфайка туянкаланăччĕ. Кӳршĕри Йăван Федорович çавăн чухне ăна Симĕс тесе кулма пуçланă. Халь пурте Симĕс–Зеленцов теççĕ, Степанов хушаматне мансах. Çимун пичче каçрĕ, кӳршĕри Шаптак Кули, Ванька Захаров тусăм, Кульă йысна, пĕрле вĕреннĕ Куçкă Романов купăспа, Тульă ял тăрăх салтак юрри юрласа чупатпăр, тăвансем патне кĕрсе тухатпăр, йĕтем çинче юрласа ташларăмăр. Симĕс Ваççа лашисене улăштарса тăрать. Санарпуçне куккисем патне кайса килтĕмĕр. Юрри хурлантарать. Хĕрӳ ĕççи пырать пулсан та пире ятлакан-хурлакан çук, хама çеç намăс пек туйăнать. Вĕсем мана

лăплантараççĕ: халăх йăлинчен иртме хушман. Эрне чупрăмăр.

Ăсатнă каç. Пўрт тулли халăх. Аттен хăйматлăхĕсем Кавĕрле Ехĕмчпе карчăкки Матрўн кинемей – чи ваттисем. Вĕсем ывăлла пăхса ўстернĕ Ухтер Йăванĕ тата ытти нумай ватă пынă. Партас Мĕкĕти хамăр йăлапа, Турра асăнсах, хăйĕн кĕлĕ сăмахĕпе, пиллерĕ. Тури уничерен ял халăхĕ йышлăн ăсатрĕ.

Аякра. Тавар турттаракан эшелонпа хĕвелтухăçнелле 18 талăк хăлтăртатрăмăр. Тĕнче хĕрнех, Лăпкă укиянăн Тутар проливĕн çыранне, çитерчĕç. Кунта Хабаровск крайне кĕрекен Ванино порчĕ. Салтак пурнăçĕ пуçланчĕ. Тухăçра тинĕс хумханса выртать, тавраллах сопкăсем пĕлĕтелле кармашаççĕ, тайга вăрманĕ. Сывлăш кансĕртерех, 20 процента яхăн кислород çитмест, теççĕ. Ялта йăмраччĕ, кунта – пихта. Ялта хырăма уммапа уйран паклаттараттăмăрччĕ, кунта – типĕтнĕ умма çеç тата кашни кун-хĕрлĕ пулă.

**Апрелĕн 19-мĕшĕ. 1959 çул.**

Хамăн хĕрлĕ велосипедпа Вăрнара кайса килтĕм. кепка туянтăм. таврăннă чух ял вăрманне кĕрсе чылайччен уçăлса çўрерĕм. Каçалапа Çĕрпелĕнче комсомолецсен пухăвĕ пулчĕ. «Çăмăл кавалери» редколлегине, «Боевой листок» редакторĕ пулма суйларĕç. Юлашкинчен эпĕ комсомол организаци секретарĕ пулса тăтăм. Питĕ пысăк чыс. Анчах та йывăртарах. Çапах та аптăрасах ўкес мар. Ĕçе тытăнас.

Ял Совечĕн çурчĕ хыçĕнче, çулран тăварах, колхозăн çĕнĕ, çамрăк председателĕ, Василий Романов, ман умĕн çамрăксене ертсе пынă агроном, пире стадион тума çĕр уйăрса парать.

**Апрелĕн 21-мĕшĕ.**

Хамăр ялта сысна вити тунă çĕртен уйпа тўрех стадион патне чупрăм. Катаранах куратăп – ĕçлеççĕ. Вуннăн ытла пулас. Анчах та пирĕн ялтан... Амруç Овчинников кăна. Ку пăшăрхантарчĕ.

Василий Игнатьевич, кĕреçепе çĕр чаваканскер, ыран бригадирсем урлă тăрăшса пăхатпăр, терĕ.

**Апрелĕн 22-мĕшĕ.**

Паян чăн та кăмăлăм тулчĕ. Вăтăр çын ытла тухнă. Тăрăшсах ĕçлерĕмĕр. Çурăм çине тар тухрĕ. Тĕттĕм пуласпа тин пăрахрăмăр. Чупмалли дорожкăна 37 метр тăршшĕ чавса якатрăмăр.

Ун хыççăн клубра драма кружокĕн репетицине ирттертĕмĕр.

**Апрелĕн 30-мĕшĕ.**

Май уявĕ тĕлне стадион туса пĕтертĕмĕр. Футболла выляма та, волейбол çапма та, чупассипе-сикессипе ăмăртусем ирттерме те лайăх халĕ унта. Шкул ачисем те усă кураççĕ.

Хамăр клубра «Хĕллехи тĕлĕк» тата «Эх, пуçана, çур çуна» пьесăсене выляса патăмăр. Лартнă çĕре те хутшăнма, выляма та тивет.

**Майăн 1-мĕшĕ.**

Уяв ячĕпе стадионта чупса ăмăртрăмăр. Хамăр бригадăн «боевой листокне» кăлартăм. Ачасемпе клуб тавралла çамрăк çăкасем лартрăмăр. Ятран кил умне тополь лартрăм.

**Майăн 23-24-мĕшĕсем.**

Çанталăк сивĕтсе пăрахрĕ. Кайăк пуçĕ пек юр çăвать. Каçхине шăнтрĕ, 2 градус сивĕ пулчĕ. Çимĕçсем шăнса пĕтрĕç.

Çул тума Иртеменпе Санарпуç хушшине çӳретпĕр. Мĕн тери чухăн çĕршыв иккен эпир тесе вăрттăн калаçкаласа илетпĕр юлташсемпе. Çĕре çын тарĕпе хутăштарса, тăмлă тăпрана йывăç катмаксемпе тӳсе çирĕплететпĕр. Çĕр тĕкмелли пĕр трактор пулсанччĕ хăть. Миçе çĕр çын ĕçне çăмăллатмалла. Халĕ вара çул тăршшипе ял çынни кăткă пек йăшăлтататать – Некрасовăн «Чукун çул» поэминчи пекех. Ĕмĕчĕ çеç çунатлă – пулас асфальтлă çул тăрăх машинăпа чупса курасси.



Куçмич Вулутине салтака ăсатакансем (сулахайран сылтăмалла): Симĕс Ваççа, Шаптак Кули, Пумпур Тули, Талтти Çимунĕ, Сахар Ванькки, Раман Куçки Хурăнсур Çармăс вăрманĕн кĕтессинче.

Петр Ковский сăн ÿкерчĕкĕсем.



# ХАÇАТСЕНЧЕ КУН КУРНИСЕМ:

## Вĕсем çул тăваççĕ

Вăрнар – Кĕçĕн Кипек тракчĕ çинче иртен пуçласа каçчен халăх хĕвĕшет. Çынсем çул тăваççĕ. Çĕрпелти Ленин ячĕпе хисепленекен колхоз çамрăкĕсем ĕçлеççĕ кунта. Ултă бригада – ултă ушкăн хăй участокĕнче пĕр-пĕринпе ăмăртса, пысăк хастарлăхпа ĕçлет.

Юлашки кунсенче ҫанталӑк самаях сивӗтрӗ – юр ҫурӗ. Пӗрре ӑшша хӑнӑхнӑ хыҫҫӑн, ҫуллахи сивӗ питӗ кансӗрҫке. Ҫапах та ӗҫчен колхозниксем те, ҫӗр чавакансем те ывӑнма пӗлмеҫҫӗ. Хӗрӳ ӗҫ шавӗ чарӑна пӗлмесӗр, пӗр чӑрмавсӑр кӗрлет.

Хӗрсемпе каччӑсем пӗр-пӗринпе шӳтлӗн перкелешсе илеҫҫӗ, авӑ. Ӗҫленӗ чухнехи шӳт вӑл чун-чӗрене ҫӗклентерет, вӑй-хал хушать.

Вӑрнар енчен вӗрекен шухӑ ҫил хими завочӗ вӑрӑммӑн паракан гудок сассине илсе килчӗ. Никамӑн та сехет ҫуккӑ та, вӑхӑта ҫав сасӑпа палӑртаҫҫӗ.

– Кӑнтӑрла иртни пӗр сехет, апата ларма шӑпах вӑхӑт, – пӗлтерет пирӗн 5-мӗш бригада бригадирӗ Василий Степанов.

Канма ларнӑ хыҫҫӑн ҫамрӑксен хаваслӑ юрри таврана илемлӗн саланать, симӗс уй-хир тӑрӑх инҫете-инҫете каfive.

Комсомолец-агитаторсен аллинче – ҫӗнӗ хаҫат-журнал. Ҫӗнӗ хыпарсене халӑх тимлӗ итлет, кашниех ытларах пӗлесшӗн тӑрӑшать.

Кӑнтӑрлахи кану вӗҫленчӗ. Ҫул ҫинче йышлӑ кӗреҫесем, наҫилккасем каллех вылянма тытӑнчӗҫ.

– Ҫынсем тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ, хамӑр участока 7-8 кун хушшинче туса пӗтеретпӗрех, – пӗлтерет Степанов бригадир. – Ҫӑмӑлах мар ҫав, кӑҫал иртнӗ ҫулхисенчен те нумайрах ӗҫлемелле. 112 метр тӑршшӗ ҫул купаламалла пирӗн. Акӑ вӗсем, пирӗн ударниксем: Василий Юханов, Яков Степанов, Нина Ананьева, Анатолий Михайлов. Вӗсем анчах мар, нумайӑшӗ тӑрӑшса, хастарлӑн ӗҫлеҫҫӗ.

Ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлекен колхозниксем пирки ирӗксӗрех тарӑн шухӑша путатӑн: «Хальхи вӑхӑтра ӗҫчен халӑх епле пысӑк хастарлӑхпа тӑрӑшать, хӗрӳ ӗҫри умри йывӑрлӑхсене ҫӗнтерет, ялан ҫӗннишӗн, лайӑххишӗн кӗрешет».

– Степанов юлташ, тата хыпаланарах ӗҫлес пулать, Николай Ванюшин бригади иртсе каять вӗт сирӗнтен, – шӳтлерӗ колхозри ҫул-йӗр строительствин бригадирӗ Иван Киселев коммунист.

– Юлмастпăр çĕрпелсенчен, эпир колхоз тунăранпах сиртен малта пынă! – пĕр харăс ответлерĕç харсăр колхозниксем.

Çул тума тытăннă малтанхи кунсенчех пуçланнă ăмăрту çул тăвакансем хушшинче куллен вăйланса пырать. Колхозлă ял ĕçченĕсем тунă такăр çул тăрăх машинăсем кĕçех канашалла е вăрнаралла вирхĕнĕç. «Социализм çулĕпе», 1959 ç.

**Комбайнсем юсаççĕ**

Тырпул тухăçĕ ăна вăхăтра, пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнинчен нумай килет. Çакна Çĕрпелти Ленин ячĕпе хисепленекен колхоз членĕсем яланах асра тытаççĕ.

Уй-хир бригадисем тырпула пухса кĕртме тимлĕ хатĕрленеççĕ. Ялти механизаторсем тракторсемпе комбайнсене тата кăкарса ĕçлемелли машинăсене хăвăртрах юсаса пĕтерессишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Хурăнсур Çармăсри П.Еремеев комбайнер, К.Леонтьев комсомолец пулăшнипе, хăй ĕçлекен «Сталинец-6» комбайна кĕске вăхăтрах юсаса пĕтерчĕ.

Çирĕм çул ытла пĕр улшăнмасăр комбайнер пулса ĕçлекен П.Иванов коммунистпа В.Юханов комсомолец «С-4» комбайна юсаççĕ. «Ком. ялавĕ», 27.06.1959ç.

**Вăл пурнăçран юлмасть**

Ман шутпа, çыннăн хăйĕнчен: «Эпĕ коммунизмра пурăнма хатĕр-и?» – тесе ыйтиччен çакна пĕлсе тăмалла: унăн чи малтан пурнăçра хăйĕн вырăнне тупмалла, çĕнĕ обществăра ĕçлеме, кĕрешме хăнăхса пымалла, çав кĕтнĕ тапхăра куллен çывхартасшăн ырми-канми тăрăшмалла. Кăна эпĕ хам курни-илтнинчен калатăп.

Умра ачаранах пĕрле ӳснĕ юнташăн сăн ӳкерчĕкĕ тата çырăвĕ.

«... Экзаменсем тытса пĕтертĕм, иккĕмĕш курса ăнăçлă куçрăм, халĕ яла, отпуска таврăнатăп...» Çырăвĕ аякран. Ваня Захаров Краснодонри шахтăра комбайнер-забойщик пулса ĕçлет. Вăл инçетре пулин те, иксĕмĕр хушăри туслăх питĕ çирĕп. Пĕр-пĕрин патне

çырусем час-часах ярса илетпĕр. Паян та акă, почтальон парса хăварнă хулăн çырăва уçса вуласан, хĕпĕртенипе чăтаймасăр ташша ятăм.

Çав çырупа сăнӳкерчĕк манăн пата, Чăваш çĕршывне, тăванла Украина çĕрĕн сад-пахчийĕсенчи улма-çырласен тутлă шăршине тата кăнтăр хĕвелĕн ăшшине илсе килчĕç, чĕрере савăнăçпа хаваслăх, юратупа туслăх туйăмĕсем çĕклерĕç. Пуçăма пăлхавлă шухăшсем капланчĕç. Куç умĕнче пĕрле çӳренисем, ытарайми ачалăхри çунатлă ĕмĕтсем, тавлашусем, йăнăшсемшĕн юлташла асăрхаттарнисем вĕлтлетсе иртрĕç. 1956 çулта мана Совет Çарне илсен, Ваня тăтăшах çырса тăнă çырусенчи йĕркесем аса килчĕç.

«...Эх, Володя, телейлĕ эсĕ. Эпĕ чире пула тантăшсемпе çара каяйманшăн хама-хам тайлăк çын пек туятăп. Салтак ретĕнче пĕрле пулнă пулсассăн, епле савăнăçлă пулнă пулăттăмăр эпир...»

Кашни çырурах асăнатчĕ Ваня çак сăмахсене.

Темле йывăррăн вăркатчĕ ман чĕрем çав сăмахсене вуланă май. Шутлаттăм: тупайĕ-ши юратнă юлташăм хăйĕн пурнăç тĕллевне, вăйĕ çитĕ-ши унăн хăйĕн телей çулне тупма?.. Анчах вăхăт нумай та иртмерĕ, Ваня çав çулхи ноябрь уйăхĕнчех комсомол путевкипе Донбаса ĕçлеме тухса кайни çинчен пĕлтерчĕ.

Çĕнĕ вырăнти малтанхи йывăрлăхсемпе ĕçри кăлтăксем çинчен те, юлташĕсемпе ватă шахтерсен пулăшăвĕ çинчен те çырусем урлă мана Инçет Хĕвелтухăçне пĕлтерсех тăратчĕ. Каярахпа вăл ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемпе шахтерсен пурнăçĕ çинчен тăтăшах çыратчĕ.

Иртнĕ çулхи кĕркунне, çартан таврăнсан, тусăма ялта тĕл пултăм. Вăл отпуска килнĕ иккен.

– Телейлĕ-çке эпир, Володя. Акă халь каллех тăван ялта пĕрле. Кун çулăмăр савăк, – тет мана Ваня хаваслăн. Вăл хăйĕн пурнăçĕ çинчен тĕпĕ-йĕрĕпех каласа кăтартрĕ.

...Укçа çителĕклĕ илет, пурнăç условийĕсем лайăх. Ĕçре пысăк çитĕнӳсем тăвать, нормăна яланах 120-150

процентран кая мар тултарса пырать, КПСС членĕн кандидачĕ, Харьковри сăрт-ту институтĕнче заочно вĕренет, ирĕклĕ вăхăтра спортпа интересленет.

Ваньăна эпĕ кăна кĕтмен. Çамрăк шахтера Кĕçĕн Кипекри вăтам шкулта пĕрле вĕреннĕ юратнă хĕрĕ Антонина Александрова кĕтсе пурăннă.

Çакă вăл телей мар-и? Чăн-чăн телей!

Ваня Захаров, пысăк йывăрлăхсене çĕнтерсе, хăйĕн тивлетне, пурнăç тĕллевне тупрĕ-тупрех. Вăл малалла та çутă, телейлĕ коммунизм çулĕпе çирĕппĕн утса пырĕ. «Çамрăк коммунист», 1959, ноябрь.

## КИВĔ БЛОКНОТРАН

Павел Антонович Антонов (ватти) çемйи унччен пирĕн урамра, халĕ Тихăн арăмĕсен, Вениамин Тихоновсен кил вырăнĕнче пурăннă. Вĕсем унтан каярахпа Симун пĕви хӳринчен тăвараха куçнă. Вăрçă хыççăн Карачăмкасси теме пуçланă пирĕн урамра Антоновсен Марья, Ваçĕли, Михала çуралнă. Мария Павловна ачасене вĕрентсе ĕмĕрне ирттерчĕ. Ваçĕли тракторпа ĕçлесе чапланчĕ. Михала Чăваш ял хуçалăх институтĕнче агроном дипломне илнĕ хыççăн Çĕрпелти сортсем тĕрĕслекен участокра тăрăшса ĕçлесе пенсие тухрĕ. Çамрăк чухнех вăл ял пурнăçне курăмлă хутшăнатчĕ. 1959 çулта ун çинчен райхаçат валли çырнă çакă корреспонденци манăн блокнотра ку таранччен сыхланса юлнă.

### <u>Михала кролик пăхать</u>

Çĕлен пек авкаланса выртакан Çармăс вăрманĕн çулĕ, ĕшне витĕр тухса, анаталла анса каять. Йывăç çулçисем тин çеç сарăлса çитеççĕ-ха. Кайăксен савăк юрри чуна çĕклентерет. Пĕр кукăртан пăрăнсан, пирĕн ума хĕç тимĕр витнĕ, шалтан туса пĕтермен çурт тухса тăрать. Платниксем хĕрсех ĕçлеççĕ кунта. Кач! кач! кач! илтĕнет пуртă сасси. Пĕри хăма савалать. Теприсем пăчкăпа пĕрене татаççĕ. Çуртран инçех мар чалăш çӳллĕш юпасем çине лартнă читлĕхсем речĕпе тăсăлса каяççĕ. Тавралла

пралук сетка карнă. Пĕр читлĕхĕ умĕнче çамрăк çын тăрмашать. Ку Михала, Павăл Антонович ывăлĕ пулчĕ.

Акă, Михала кроликсене апат хурса пачĕ те, тепĕр читлĕхĕ патне куçрĕ. Пĕр ама ĕнер çеç çăвăрланă-мĕн. Йăвара вун пĕр çура.

– Çитмĕл пĕре çитрĕ-ха, йышлансах пыратпăр, – куларах, кăмăллăн та çемçен калаçать вăл.

Çуркунне пилĕк ама анчах пулнă кунта, халĕ авă – кĕтӳ. Кĕркуннеччен çĕр амана çитерсе хĕле кĕме шутлать иккен Михаил Павлов. Çак кунсенчех Ямашран тата çирĕм пилĕк ама илсе килмелле.

Кроликсем чăннипех ăста алăра. Михала ачаранпах кăмăллать çак ĕçе. Килĕнче нумайранпа кролик усраканскер, çак чĕр чунсене вăл тахçанах хăнăхнă. Хĕлле колхоз шучĕпе пĕр уйăх Мускавра вĕреннĕ. Кроликсене мĕнле пăхмаллине халĕ Михала тата ăстарах пĕлет.

Михаил Павлов вăрманти ĕçпе кăна вăхăта ирттермест. Вăл – активлă общественник, Хурăнсур Çармăсри комсомол организацийĕн секретарĕ.

Паянхи ĕç-пуç пирки калаçнă май, кроликсем патĕнче халлĕхе чылай çитменлĕхсем пурри палăрчĕ. Таврара таса шыв çук. Кроликсем валли ăна ялтан кӳрсе килеççĕ. Çăл чавассине вăраха янă. Çĕнĕ читлĕхсем тума хăма, тимĕр сеткăсем çитмеççĕ. Апат çителĕксĕр, уйрăмах – çурасем валли. Вĕсене вĕтĕрех, çемçе апат кирлĕ. Çурасем шултра сетка ăшне урисене антарса ярса аманса пĕтеççĕ.

– Çак çитменлĕхсене пĕтерсенех малтанлăха ĕç каять-ха, – хуравлать кроликсен хуçи.

Симĕс йывăçсем айĕнче вырнаçнă читлĕхсем патĕнчен уйрăлас та килмест. Епле илемлĕ вырăн. Çавăнпа ĕнтĕ кунта, ялтан пĕр çухрăмри хамăр вăрмана, çынсем курма, канма килсех тăраççĕ. Ачасем тата канăç памаççĕ иккен Михалана. Кролик кунта халлĕхе çĕнĕ чĕр чун-çке.

ВЛКСМ Тĕп комитечĕн чĕнĕвне ырласа пурнăçа кĕртме пуçланă май, Ленин ячĕпе хисепленекен колхоз çамрăкĕсен çĕнĕ ферма – кролик ферми çуралчĕ. Çитес

çултан пуçласа вăл пĕрлешӳллĕ хуçалăха тупăш пама пуçлать. Михаил Павлов комсомолец çакăншăн, паллах, чунне парса ĕçлĕ.

## Çармăс хĕрĕсем

Пусыпка çиекен самăр сыснасем çине Татьяна Сергеева чылайччен пăхса тăчĕ. «Халĕ ĕнтĕ шыв ĕçтеретĕп те, ĕнер çулса килнĕ клевера паратăп, кăнтăрлаччен пурăнаççĕ вара», – шухăшласа пычĕ вăл икĕ витре йăтса пĕве патнелле утнă май. Татьяна хăйне çирĕплетсе панă сыснасене юратса пăхать, лайăхрах самăртма тăрăшать.

Кăçалхи 7 уйăхра вăл 74 сысна самăртса 56 центнер аш илчĕ, ăмăртура малти вырăна тухрĕ. Раиса Волковапа Маруся Тимофеева комсомолкăсем 46-шар центнер сысна ашĕ илме пултарчĕç.

Çĕрпелти Ленин ячĕпе хисепленекен колхоз августăн 1-мĕшĕ тĕлне сухалакан кашни 100 гектар çĕр пуçне 13,8 центнер сысна ашĕ туса илнĕ.

Хурăнсур Çармăсри сысна ферминче ĕçлекенсем декабрь уйăхĕ тĕлне кашни 100 центнертан кая мар сысна ашĕ туса илме сăмах пачĕç. Фермăра паянхи куна самăртма хупнă сыснасем 300 пуç шутланаççĕ. «Социализм çулĕпе», 1959ç.

## Каçхи шкулта

1959 çулта Çĕрпелте ялти çамрăксен каçхи вăтам шкулĕн саккăрмĕш класĕ ĕçлеме пуçланă. Феодосия Ананьевăна, Лев Шашковпа Алексей Иванова лайăх вĕреннĕшĕн учительсем ырлаççĕ. Класра пурĕ 28 çын. «Социализм çулĕпе».

## Çимĕс çăнăх

Тулта шартлама сивĕ. Пит-куçа самаях чĕпĕтет. Ферма картишĕнче мотор сасси илтĕнет. Трактор шкивĕнчен çаклатнă привод юнашар пӳрте кĕрсе çаврăнать. Машинăпа çăнăх авăртаççĕ иккен кунта. Машина транспортерĕ çинче тырă мар-мĕн, лайăх типĕтнĕ люцернаути.

– Эй, унта, лавҫӑсене систерӗр, васкаччӑр! – аллипе тулалла тӗллерӗ Анна Сидорова алӑк патӗнче тӑрмашакан хӗрсене.

Иустиния Архипова утӑ лавӗпе персе те ҫитрӗ. Нина Ананьевӑпа Полина Сергеева люцерна утине пӗр самантрах сенӗксемпе пушатса хучӗҫ. Ӗҫ ӑнӑҫлӑ пырать. Акӑ, Анна Сидорова юлашки валеме майлаштарса барабан ӑшне чӑмтарнӑ хыҫҫӑн машина та часах чарӑнчӗ.

Ҫӑнӑх авӑртнӑ ҫӗре ферма заведующийӗ Трофим Васильев ҫитрӗ. Ещӗкри сарӑрах тӗслӗ ҫӑнӑха алӑ тупанӗ ҫинче йӑваласа пӑхрӗ.

– Лайӑх авӑртнӑ, – мухтаса илчӗ вӑл хӗрсене.

Лешсем тӑрӑшмаллипех тӑрӑшнӑ ҫав. Пӗр кунта 30 центнер утӑ ҫӑнӑхӗ хатӗрлесе панӑ.

– Кӑҫалччен ҫакӑ ҫӗнӗ ҫӑнӑха сыснасене ҫитерсе пӑхманччӗ, иккӗленсе тӑнӑ, – терӗ ферма заведующийӗ. – Пӗлтӗрхи декабрь уйӑхӗнче чи малтан ҫамрӑк ҫурасене ҫитерме тытӑнтӑмӑр. Усӑ пачӗ. Тырӑ ҫӑнӑхӗнчен пӗртте начар мар. 160 центнер люцерна ути, ҫакӑн пек ҫӑнӑх туса ҫитерсен, пӗтӗм сыснасене март уйӑхӗччен ҫитет. Ҫапла майпа перекетленӗ тырӑпа эпир тата нумайрах сысна самӑртма пултаратпӑр.

Питӗ лайӑх. Тырӑпа танлаштарсан, утӑ ҫӑнӑхӗнче белоклӑ япаласем 25-30 процент ытларах. Ҫавӑн пекех минераллӑ япаласем те, витаминсем те темиҫе хут нумайрах.

Ферма коллективӗ кӑҫал пысӑк обязательствӑсем йышӑнчӗ. Усӑ куракан кашни 100 гектар ҫӗр пуҫне 42 центнер сысна ашӗ туса илмелле. «Социализм ҫулӗпе. 17.02.1960ҫ».

## Юратнӑ ӗҫ

Юлашки вӑхӑтра районти тата республикӑри хаҫатсен страницисем ҫинче манӑн статьясемпе корреспонденцисем чылай пичетленчӗҫ. Халӗ эпӗ хамӑн вӑя туйсах ӗҫлетӗп.

Акӑ, умра темиҫе ҫул хушшинче пичетленнӗ материалсем. Малтанхи пӗчӗк заметка 1952 ҫулта

пичетленнӗччӗ. Ферма ӗҫченӗсен ӑмӑртӑвӗ ҫинчен ҫырнӑ эпӗ унта. Шутсӑр савӑнтарчӗ вӑл мана ун чухне. Ҫав хаклӑ йӗркесене миҫе хутчен вуласа тухмарӑм пулӗ эпӗ! Хӗпӗртенипе татах тем те пӗр ҫинчен ҫырас килетчӗ. Анчах та хаҫат валли витӗмлӗ материалсем параймастӑмччӗ ҫав. Малтанхи вӑхӑтра статьясем ҫырма йывӑрччӗ ӗнтӗ. Пуҫра тем тӗрлӗ шухӑш вылянатчӗ. Ҫырма тытӑнсан вара ҫав шухӑшсем пурте кун кураймастчӗҫ.

Мана хамӑр ялти Петр Ковский корреспондент хытӑ пулӑшрӗ, сахал мар вӗрентрӗ вӑл, паха консультацисем пачӗ. Эпӗ ун патне кашни кун ҫӳреттӗм. Хам мӗн ҫырнине иккӗн пӗрле сӳтсе яваттӑмӑр.

– Чӑн-чӑн корреспондент пулма нумай вулас пулать, вӗренмелле, яланах халӑх хушшинче пулни кирлӗ, вӑйран ӳкиччен ӗҫлемелле, – тетчӗ вӑл.

Тишкерӳллӗ корреспондент каланӑ сӑмахсем манӑн чӗрене тарӑн кӗрсе вырнаҫрӗҫ. Чӗлхене якатассишӗн сахал мар кӗнеке вуларӑм, хаҫатсем ҫинче пичетленнӗ статьясене уйрӑмшарӑн вӗрентӗм.

Совет Ҫарӗнче те эпӗ салтаксен кулленхи вӗренӗвӗпе пурнӑҫӗ ҫинчен нумай ҫыртӑм. Халӗ, Ҫӗрпелти Ленин ячӗпе хисепленекен колхозра ӗҫленӗ хушӑра, ял ӗҫченӗсен ҫитӗнӗвӗсемпе ӗҫри кӑлтӑксем пирки те хаҫат страницисем ҫинче тӑтӑшах ҫутатма тӑрӑшатӑп. Хаҫат ӗҫне эпӗ чунтан юратрӑм. Ҫырма мана чӗре хушать.

Малашне хальхинчен те лайӑхрах, витӗмлӗрех, халӑха интереслентерекен корреспонденцисемпе тӗрленчӗксем, очерксем ҫырас килет. Шантаратӑп, ҫыратӑпах. «Социализм ҫулӗпе», 3.06.1959ҫ.

## <u>Кӗрхи кун</u>

Ирпе ҫумӑр лӳшкеме тытӑнчӗ. Чылайран тӳперен пӗлӗтсем сирӗлме пуҫларӗҫ. Хӗвел вӑтанчӑклӑн йӑлкӑшса илчӗ.

Ҫармӑс вӑрманӗн уҫланкисенче е тӗмсем айӗнче нӳрӗкпе кӑшӑли шӑтнӑ кӑрӑҫсем, уплюнккасем карти-картипе сапӑнса лараҫҫӗ.

Сидор Антонович Антоновпа, утмăлалла çывхаракан кӳршипе, Толя Романов, шкул ачи, кĕске вăхăтрах кунтăксене паха кăмпасемпе тултарчĕç.

Мăн çул çине тухсан, Çитăр мучи калаçăвне тăруках тĕнчери лару-тăру çине куçарчĕ.

– Ну-и сентябрь. Ĕмĕрлĕхе историне кĕрсе юлчĕ вĕт. Кăçалхи пек кĕр телейлĕ те чаплă пуçланнине çуралнăранпа та курман эпĕ. Уйăх çине ракета вĕçтерсе ячĕç те-ха, атомлă пăрçĕмрен тинĕсре ишет, Хрущев юлташ Америкăра çӳрет...

– Вĕсем анчах-и, Çитăр мучи. Тĕнчипе хĕçпăшалсăрланмалли Деклараци, хамăр çĕршывра ĕç кунне кĕскетмелли çинчен йышăннă постановлени...

– Çапла, ватлăхра вăй хушăннă пекех туйăнчĕ, – савăнăçлă хуравларĕ Çитăр мучи.

Сывлăшра çулçăсем парашютистсен десанчĕ пек вĕлтĕртетеççĕ, хушăран юман йĕкелĕсем шаплатса ӳкеççĕ. Кĕр ытамĕ тăван вăрмана та пĕтĕмпех çавăрса илчĕ. «Соц. çулĕпе», 27.09.1959ç.

## Кашни киле – хаçат-журнал

Хурăнсурта кашни киле 2-3 экземплялртан кая мар хаçат-журнал çырăнтарассишĕн кĕрешеççĕ. И.Шашковпа И.Козлов тăрăшнипе «Коммунизм ялавĕ», «Çамрăк коммунист», «Социализм çулĕпе» хаçатсене, «Капкăн», «Ялав», «Сельский механизтор» журналсене нумай çырăнтарнă.

– Йăтса çӳреме йывăрринчен хăраса шикленместпĕр. Ял çыннисем хăйсем çырăнса илекен хаçат-журнала яланхи пекех йĕркеллĕ, вăхăтра илсе тăрĕç, – тет письмоносец Иван Евдокимович Козлов.

«Соц. çулĕпе», 30.10.1959ç.

## Тырă уйĕнчи ĕç юрри

Анлă уй çак вăхăтра кĕрешӳ хирĕ пекех туйăнать. Нумаях та пулмасть кунта ыраш лăпкă çилпе мăнаçлăн хумханса ларатчĕ. Халĕ вара...

4-мĕш бригадăн уйĕ.

– Жаткăпа ĕçлекенсем-и? – пуçне çĕклемесĕрех сăмах хушрĕ тырă выракан вăтам çулхи хĕрарăм. – Кунта çулса пĕтерчĕç те, лере, вăрман хĕррине куçрĕç вĕсем.

Катаранах илтĕнет «Беларусь» кĕрлени. Пĕрремĕш хут çеç çаврăнать-ха вăл ыраш уйĕ тавра, хыçалта пĕр паккус кăна.

– Лайăх ĕçлерĕмĕр ĕнер, – пĕлтерет пире Виктор Плеханов механизатор. – 20 гектар çулнă. Çак лаптăка та хĕвел аниччен пĕтересчĕ тесе тăрăшатăп-ха.

Çывăхрах юрă сасси илтĕнет. Сысна ферми патĕнче махорка ӳстерекен хĕрсем-хĕрарăмсем юрлаççĕ ăна. Плеханов комсомолец аллинчи «Беларусь» сасси те вĕсен çепĕç сассипе хушăнса катана-катана кайса çухалать. Епле хаваслă янăрать ĕç юрри, пĕтĕм уй-хир юрлать тейĕн!

Агрегат пĕр чарăнмасăр малалла куçать. Паккус хыççăн паккус хушăнать. Виктор хыçалалла пăхса илет те йăлл кулать. Савăнăçлă вăл, питĕ савăнăçлă.

«Çакăн пек хастар, пултаруллă çынсемпе чăнах та тырпула хăвăрт, пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме пулать», – шухăшласа утрăм Виктор Плехановпа сывпуллашнă май. «Соц. çулĕпе», 23.07.1961ç.

## Иван Козлов – почтальон

Иосиф Михайлович Михайловпа эпир кăнтăрла çитеспе тĕл пултăмăр. Вăл халăха çутта кăларас тĕлĕшпе тахçантанпах ĕçлет. Ялти мĕн чухлĕ çамрăка вĕрентсе анлă пурнăç çулĕ çине тăратман пулĕ вата учитель. Эпĕ пӳрте кĕнĕ чухне Иосиф Михайлович аллине хыçалалла тытнă та такама кĕтнĕ пек каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрет.

– Кама кĕтетĕр эсир? – ыйтрăм унран.

– Почтальона кĕтетĕп, – евитлерĕ вăл.

Иосиф Михайловичăн килсе тăракан хаçат-журналсене çийĕнчех вуласа пырасси çирĕп йăлана кĕнĕ. Вăл паянхи хаçатсене вуламасан каçхи апат та çиеймест.



Кашни çулах вăл Мускаври, Шупашкарти тата районти хаçатсене çырăнса илет.

Кăшт тăхтасан, тулта çилтăман вĕçтерме пуçларĕ.

– Иртенпех çанталăк пăсăлма хăтланать-ха, халĕ, акă, вăйлах вĕçтерме тытăнчĕ. Ку вара почтăна та чарса тăма пултарать. Апла сан валли каçхи апат пĕçерес те мар пуль, – терĕ мăшăрĕ, Нина Николаевна, шӳтлерех. Вăл та çамрăкранах ачасене вĕрентет.

– Ку вара тĕрĕс мар, Нина. Пирĕн почтальона хăçан çанталăк чарса тăма пултарнă? Шарккăва лартсах яран пуль...

Сăмах çинех пӳрте хулпуççи урлă пысăк сумка çакнă Иван Козлов почтальон кĕрсе тăчĕ.

– Мĕнле çылăхсăр вăл, халĕ кăна сирĕн пирки калаçу пыратчĕ, – кăмăллăн кулса кĕтсе илчĕ почтальона кил хуçи.

– Ырăпа пулсан юрĕ те-ха, – сăмах хушрĕ Иван Евдокимович.

– Ырăпах, – сумкине хывма пулăшрĕ Иосиф Михайлович.

Фронтра хăрах алăсăр тăрса юлнă Козлова ĕçлеме çăмăл маррине туйса кил хуçи хăй кĕтекен виçĕ хаçата тата икĕ журнал илчĕ. Белоруссире партизанра пĕрле çапăçнă юлташĕ çыру янă. Савăнăç!

Çакăн пек ăшшăн, хисеплесе кĕтсе илеççĕ Хурăнсурта кашни килтех почтальона.

Халĕ вăл çĕнĕ çулшăн илсе тăма хаçат-журнал 600 тенкĕлĕх çырăнтарнă. «Çĕнтерӳ ялавĕ» (1961 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа «Социализм çулĕпе» çак ятпа тухать), 1.12.1961ç.

## ПУРНĂÇ СТРАНИЦИСЕМ

*Район хаçачĕн редакцийĕнче ĕçленĕ чухне комсомолецсемпе çамрăксен пурнăçне вулакансем патне*




*çитерессишĕн эпĕ хуравлăччĕ. Халăх хушшинче яланах мĕн те пулин çĕннине, ыррине шыраттăм.*

*Пĕррехинче, яла таврăнсан, Тимĕрç Тулипе калаçса кайрăм. Унăн килĕнче Кун кĕнеки пур иккен. Вăл унпа мана паллаштарма хавасах пулчĕ. Манăн вара унти страницăсене хаçата юрăхлă чĕлхепе майлаштарасси çеç юлчĕ.*

**Кĕрешӳ çулĕн çулталăкĕ**

Хурăнсур Çармăсри ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ А.Кузнецов «Пурнăç страницисем» ятлă дневник çырса пырать. Кунта вăл çырнă паллăрах йĕркесене пичетлетпĕр.

**«Сăвăç пулас тесен...»**

Кирек кам та хăй чĕрипе сăвăç, теççĕ. Эпĕ те çапла шутлатăп. Анчах паян ман пуçа урăх шухăш пырса кĕчĕ. Ырă ят илтес тесен, ан çывăр. Ку уйрăмах пĕр-пĕр йывăр ĕç тунă чухне çапла шутлаттарать. Ара, хăйĕн ĕмĕрĕнче кашни çыннăн асăнмалăх ырă ят хăвармалла; сан çинчен тарăн йĕр юлтăр çĕр çинче. Çак сăмахăн пысăк пĕлтерĕшĕ пирки паянччен эпĕ ыррăн шутласа та пăхман. Чăнах та, хăй ĕмĕрĕнче йывăç лартса ӳстермен çын – çын-и вăл? Ман шухăшпа, вăл пурнăç утăмне уксахласа ирттерсе ракан кăна. Эпĕ те паянтан çапла калатăп: «Эсĕ кирек ăçта та, кирек хăçан та, ĕмĕр тăршшĕпех çынсем валли ырă ĕçсемпе шухăшсем хăварсан, санăн пурнăçу çавăн чухне кăна телейлĕ те илемлĕ пулĕ».

**Мĕн вăл совеç?**

Паян клубра пуху. Комсомолецсем хăйсен çулталăкри ĕçĕсене пăхса тухаççĕ. Тӳрех каламалла, хĕрӳллĕ иртрĕ

çамрăксен пухăвĕ. Тухса калакансем ытларах çитменлĕхсем пирки чарăнса тăчĕç.

– Ăçта сан коллектив, ăçта ĕçÿ? – куçран калаççĕ ВЛКСМ комитечĕн секретарьне вĕсем. «Вожакăн» пиçнĕ палан пек хĕрелсе ларма тиврĕ. Мăк-мак тукаларĕ те, шăпланчĕ. Чăнах та, хут çинче Хурăнсурта 30 комсомолец шутланса тăрать. Чун-чĕрепе парăнса ĕçлекеннисем вара çиччĕн-саккăрăн кăна. Акă вĕсем: А.Емельянова, Т.Петрова, Г.Волков, В.Воробьев, Г.Петров, Н.Иванова тата ыт.те. Вĕсен ырă ĕçĕ, пуçарулăхĕ такама та савăнтарать.

Çав вăхăтрах хĕрлĕ хуплашкаллă кĕнеке хÿтлĕхĕпе тытăнса тăракан мăранрах комсомолецсем те пур-ха. Вĕсем комсомол ятне вараласçĕ. А.Плешков, В.Васильев, Л.Шашков, Г.Александров, Н.Тимофеев юлташсем культурăллă-масăллă ĕçе вуçех хутшăнмаççĕ, комсомол пухăвĕсене çÿремеççĕ. Вĕсем кăçалхи çулшăн пĕртте взнос укçи тÿлемен.

– Сирĕн комсомолла совеç çук! – питлерĕç вĕсене çамрăксем.

Çамрăксем хушшинчи культмассăллă ĕçе те япăхтарнă. Ялта хор кружокĕ ĕçлемест, кружоксем хут çинче кăна. Спорт пирки те аса илмелли те çук. Пурне те асăнчĕç çамрăксем. Юлашкинчен комитет пĕр шухăш-кăмăлпа мана хăйсен вожакĕ пулма суйласа лартрĕ.

– Совеç хушнă пек ĕçле, - терĕç вĕсем.

## Çĕнĕ çул касĕ

Çĕнĕ çул – çĕнĕ шухăш, плансем, ĕмĕтсем. Калама çăмăл. Анчах çак ĕçсене ăçтан пуçламалла-ха? – канăçсăрлантарать çак ыйту. Ун пирки çамрăксемпе канашламалла. Пуху ирттерес шутпа, икĕ-виçĕ хутчен те пĕлтерÿ çырса çапрăм. Çук, çамрăксем пухăнмаççĕ. 5-6-ăн клуба «качакалла» çапма килеççĕ те тухса каяççĕ.

– Коллективсăр çитĕнÿ пулмасть – терĕ пĕррехинче ял Совет ĕçтăвкомĕн председателĕ А.Ластухин юлташ. – Спортпа интересленни кирлĕ.

Çĕнĕ çул касĕнче ВЛКСМ комитечĕн черетлĕ пухăвне ирттертĕмĕр. Протокол çине 10-12 мăшăр йĕлтĕр, спорт костюмĕсем, штангă илес тесе йышăнса хăвартăмăр. Пухура каллех спорт комитечĕн председателĕ пулма мана уйăрчĕç.

– Штангă тенĕрен, Уравăшра пур, – интересленчĕ Иван Константинович, парторганизаци секретарĕ. – Кунта çеç илсе килмелле. Кĕçех штангистсен секцийĕн кружокне йĕркелерĕмĕр. Ăмăрту хыççăн ăмăрту. Уйрăмах, Г.Горбунов, Г.Дубанов, Р.Сергеев çамрăк спортсменсен çитĕнĕвĕсем савăнтараççĕ. Вĕсене хаклă парнесем те парса хĕпĕртеттертĕмĕр. Секцине çӳрекенсен йышĕ ӳссех пырать. Çамрăксенчен Н.Никандров ватă та юласшăн мар. Спортпа интересленет. Акă вăл пĕрремĕш çитĕнӳ – çирĕп коллектива пĕрлештерсе тăракан çăл куç.

**Совет Çарĕн кунĕ**

Паян Совет Çарĕн кунĕ. Юлашки вăхăтра дневнике эпĕ паллă кунсенче кăна çырма пуçларăм-ха. Кахаллантăм пулас. Паян Уравăша кайса килтĕмĕр. Клубра халăх лăк туллиехчĕ. Икĕ колхоз çамрăкĕсем штангăпа тупăшрĕç.

– Помост çинче «Янгорчино» колхозри Г.Дубанов штангист, – пĕлтерет аслă судья. Вăтам виçеллĕ спортсмен виçĕ енлĕ упражненипе çĕнĕ рекорд тăвать. 220 килограм! Командăсем хушшинче те çĕрпелсемпе хурăнсурсем çĕнтерчĕç.

– Маттур, тусăмсем! – чунтанах ырлас килет ман.

**Çу уйăхĕ – ăмăрту уйăхĕ**

Стадиона кашни каçах кӳршĕсем волейболла, футболла выляма килеççĕ. Сăмах майăн каласан, çĕрпелсен лайăх стадион пур. Çамрăксен вăйĕпе тунă ăна. Анчах мухтанмалли сахалтарах-ха. Нумаях пулмасть «Звезда» колхоз футболисчĕсем пирĕннисене 1:0 шутпа çĕнтерсе кайрĕç. Уравăшсем те лайăх выляççĕ. Мĕн тăвăн, халлĕхе пирĕн начар команда-ха, опыт çук. Вĕсенчен вĕренмелли нумай. Çапах çамрăксем ытти мероприятисене ытларах хутшăнма пуçлани савăнтарать. Ялсенче халĕ час-часах çамрăксен каçĕсем пулаççĕ,

ыйтусемпе ответсен вечерĕсене ирттереççĕ. Тĕрĕссипе илсен, çамрăксен хавхаланăвĕ ўсет.

Хыçра – кĕрешў çулĕн çулталăкĕ. Мĕн чухлĕ йыварлăх, кўренў, савăнăç. Çапах çамрăксем ялан çĕнтерў çулĕпе утма тăрăшаççĕ. Ара, вĕсен чĕрисем çулăмлă.

1962 ç.

*Анатолий Кузнецов хăй те район хаçатне çырма хăнăхнăччĕ. Пĕрле трактористра ĕçлекен кўрши çинчен питĕ хăпартланса шăрçаларĕ вăл çак хайлавра. Ун чухне, 1960 çулта, пирĕн ял «Янгорчино» колхоза кĕретчĕ.*

**<u>Хурçă ут синчи каччă</u>**

Гена Волков ДТ – 54 тракторпа ĕçлет. Маттур, пултарать, теççĕ ун çинчен колхозниксем. Чăнах та, Гена аллинчи хурçă ут ывăнма пĕлмесĕр малалла чупать. Ун хыçĕнче çулла плуг, сеялкă, хĕлле вутă çуни... Мĕнле ĕç кăна пурнăçламасть паянхи трактор.

Халĕ Генăн пархатарлă ĕçĕсем çинчен калаçмалли нумай. Анчах темиçе çул каялла кăна-ха Генăна трактор шанса пама та шикленнĕ.

- Ача çеç пек те вăл, пăхăр-ха, аллисем те унăн купăс каламалли çемçешке алăсем пек кăна. Пултараять-ши? Тен, тепĕр ик çул тăхтаса пăхмалла, – тенĕ колхоза ертсе пыракансем.

Трактор бригадин бригадирĕ Н.Владимиров Генăна хăй хўттине илнĕ. «Çамрăксене шанмасан, кама шанмалла-ха пирĕн, вĕсенчен лайăххине кĕтме пулатех», - хирĕçленĕ вăл ыттисене.

Гена куçĕсенче савăнăç хĕлхемĕ çиçсе илнĕ. «Тавтапуç, шанăçа тўрре кăларма тăрăшăп», – хумханса сăмах хушнă каччă.

Вăхăт иртнĕ. Çемçе алăсем те ўссе тĕрекленнĕ, хурçă ут та каччăна лайăх итлекен пулса çитнĕ. Çулла та, хĕлле те Гена канăçа çухатсах ĕçленĕ. Механизаторăн ĕçĕ мĕнлине пĕлетпĕр ĕнтĕ. Пайтах нуша курать: шăрăхне те, сиввине те, тасамарлăхне те тўссе ирттерет. Иртнĕ хĕлле пулнă-ха вăл. Гена Волкова Йĕпреç енне вăрман турттарма янă. Каялла таврăннă чухне топливă аппарачĕ ĕçлеме

пăрахнă. Тулта – 30 градуслă сивĕ. Пĕр сехет иртнĕ, иккĕ... каç та пулнă, Гена çаплах мотор патĕнче чаваланнă. Алăсем кӳтнĕ, запас апат-çимĕç те пĕтсе çитнĕ, çил вăйланнă май, пит-куçа юр пĕтĕрттернĕ. Ир енне акă трактор тăрпинчен çăра тĕтĕм мăкăрланса тухнă.

- Ура! – кăшкăрса янă пурте.

Гена Волков 10 фестметр йывăçа икĕ талăк çитнĕ çĕре колхоза илсе çитернĕ-çитернех. Килне таврăнсан апат çимесĕрех вăл вырăн çине тĕшĕрĕлсе аннă.

Çулла та Гена хастар ĕçлерĕ. 400 гектар суха турĕ, 160 гектар ыраш акрĕ.

Пысăк тĕллевпе, çунатлă ĕмĕтпе пурăнать Гена Волков.

– Эпĕ хам ĕçе юрататăп, механизаци шкулĕнче те çавăнпах тăрăшса вĕрентĕм. Мана унта грамотă пачĕç, – тет вăл калаçнă май.

Халĕ Гена каçхи шкула çӳрет, вăтам пĕлӳ илнĕ хыççăн ял хуçалăх техникумне кĕме шутлать.

Обществăлла ĕçе те юратать Гена Волков. Иртнĕ отчетпа суйлав пухăвĕнче ăна комсомолецсем колхозри ВЛКСМ комитечĕн членне суйларĕç.

А.Кузнецов.

## ĔÇ КĔВВИ

– Итлĕр-ха, хĕрсем! Атьăр Шупашкара, Чăвашрадиона çыру çыратпăр. Хамăр юратакан юрăсене юрласа пама ыйтса ярар, – терĕ Анисия Фомина кăвак тутăрне майланă май.

- Чăнах та. Хамăр çитĕнӳсем çинчен те пĕлтерĕпĕр, вара тата лайăхрах пулать, çырас, - пĕр-пĕрин куçĕсенчен пăха-пăха илчĕç хĕрсем.

Пӳлĕм самантлăха шăпланчĕ. Çунакан чăрăш вутти çеç кăмакара сапăнчăклăн шатăртатрĕ тата тĕпелти стена çумĕнчи сехет пĕр саслăн тиклетрĕ. Кĕç акă çак сасăсен çеммине хурçă перо чĕриклетни те хутшăнса кайрĕ.

«Эпир, Ленин ячĕпе хисепленекен колхозри Хурăнсурти сысна ферминче ĕçлекенсем, – çырма пуçларĕ чăп-чăмăр питçăмартиллĕ Александра Федорова,

– çичĕ çуллăхăн пĕрремĕш çулĕнче, хамăр йышăннине чыслăн пурнăçларăмăр, аш-какай туса илмелли çулталăкри плана 178 процент тултартăмăр. Государствăна 550 центнер сысна ашĕ сутнă. Усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне куçарсан ку 22-шер центнер пулать. Пĕлтĕр колхоз сысна ашĕнчен 387 пин тенкĕ тупăш илчĕ, ку вăл 1958 çулхинчен 168 пин ытларах. Кашни амаран 17-шер çура илсе ӳстертĕмĕр.

– Малта пыракан фермăсемпе танлаштарсан, пирĕн цифрăсем ытла пысăках мар та ĕнтĕ... – çырма чарсах калаçса кайрĕ Анисия Фомина.

– Тĕрĕс мар шутлатăн, Анюççа, – сасартăк пӳлчĕ ăна Мария Антонова. – Халлĕхе сахалтарах пулсан та, ӳсĕм çулĕ çинчех пыратпăр-çке, пĕлтĕрхи çитĕнӳсем шутра мар-им тата? Малашлăх хамăр алăра вĕт!

Мария аллисене кăкăрĕ çумне тытса, хăвăрт-хăвăрт калаçрĕ. Йăнăш персе янă сăмахшăн Анюççа хăй тарăхса илчĕ. Хĕрсенче шанчăк - малашлăх шанчăкĕ пурри Мария сăмахĕсенчен унăн куçĕ умне тухса тăчĕ.

... Кăçал фермăра 1366 сысна самăртатпăр, – çырчĕ малалла Саня. – Кашни 100 гектар çĕр пуçне 42 центнер сысна ашĕ илессишĕн кĕрешетпĕр, укçа-тенкĕ тупăшне хамăрах 900 пин тенке çитеретпĕр...

Нумай çырчĕç вĕсем малашнехи ĕççем çинчен. Кăмакари вутă та çунса пĕтрĕ ĕнтĕ. Кăвакăн-симĕсĕн хĕмленекен кăвар çути çеç савăнăçпа тулнă хĕрсен пичĕсем çинче илемлĕн йăлкăшрĕ.

– «Юрламасăр халĕ мĕнле чăттăр чун» юрă кăмăла каять мана, - ыттисем çине ыйтуллăн пăхса сăмах хушрĕ Анюççа. – Пире те...

Çав вăхăтра алăк чĕриклетсе уçăлчĕ те, пӳлĕме ферма заведующийĕ Трофим Васильевич Васильев кĕчĕ. Унпа пĕрлех пӳрте капланса кĕрсе тулнă сивĕ пăс урай тăрăх тĕпелелле йăванчĕ. Çийĕнчи хура тĕслĕ кĕске кĕрĕкĕ унăн тăлпан кĕлеткине çăт тытать. Уксакласа утнă май уринчи протезĕ йывăррăн чĕриклетсе илет.

– Трахвин пичче... – шавласа илчĕç пурте. - Эпир Чăвашрадиона сирĕнсĕрех юрă ыйтса çыратпăр-ха.

– Аван, аван, – пуçлăх хĕрсемпе юнашар сак çине пырса ларчĕ. Хăйне Трахвин пичче тесе чĕннĕшĕн вăл кӳренмест, ан тив, калаччăр-и, хисеплесе чĕнеççĕ-çке.

Урамра çутă-ха. Анчах пӳртре каç тĕксĕмĕ палăра пуçларĕ. Краççин лампи çутса ячĕç. Çырăва çырса пĕтерчĕç ĕнтĕ. Малалла калаçу каллех фермăри ĕçсем çинчен тăсăлчĕ.

– Трахвин пичче, халĕ эпир çирĕп кун йĕркипе ĕçлетпĕр, çапла-и? – калаçнă май заведующи куçĕнчен чăр пăхрĕ Саня Федорова. – Ирхи апат панă вăхăтра – тĕттĕм. Пӳлĕме апат йăтса кĕретĕн те, сыснасем пурте çывраççĕ. Тутлă ыйхăран вăратма та шел, анчах вăхăтпа - апатлантармаллах. Кăшт тăхтарах çитермелле тусан, мĕнле-ши?

– Чăнах та çаплах, – пĕр харăс каласа ячĕç хĕрсем те.

– Эпĕ хам та шухăшланăччĕ-ха ун çинчен, юрĕ эппин, - килĕшрĕ Трофим Васильевич хĕрсемпе.

Сыснасене каçхи апат çитермелли вăхăт çитрĕ. Çамрăксем пӳртрен тухса самантрах витесене саланчĕç.

Трофим Васильевич кантăк умне уксакласа пычĕ. Урамра çап-çутă. Тӳпери тулли уйăх шурă юрпа витĕннĕ çĕр çине хăйĕн сенкертерех шупка çутине сапалать. Ферма картишĕнче сивĕ çил ашкăнать, витесем çывăхĕнчи кĕртсем хушшинче çил-тăман кăларса вĕçтерет. Вăл ĕнер районти канашлура пулнăччĕ. Парти обкомĕпе Совмин хытăрах та хытă ыйтаççĕ, хăрата-хăратах, партбилет пушшипех хăвалаççĕ. Паян – ĕнерхинчен, ыран - паянхинчен ытларах, тăрăшарах ĕçлеме хушать партийĕ. Юрать вĕсен паян сехĕрленмелли те, макăрмалли те çуккă. Чи пысăк йывăрлăхран тухнă темелле ĕнтĕ. Çавна май ăна иртнĕ вăхăтсем аса килчĕç.

... 1950 çул. Колхозри коммунистсен пухăвĕ. Сысна ферминчи ĕçсене лайăхлатасси çинчен лартнă ыйтăва сӳтсе яваççĕ.

«Фермăна ура çине тăратас пулсан, коммунистсене ямалла унта. Трофим Васильевич, акă, хамăр çумрах

ларать, ветеринари фельдшерӗ, фронтран аманса таврӑннӑранпа мӗн чухлӗ усӑ памарӗ пуль колхоза, мӗнтен япӑх заведующи пулӗ, самай лайӑх кандидатура», – умлӑхыҫлӑ темиҫен сӗнчӗҫ ӑна.

Акӑ, фермӑна ӗҫлеме пынӑ пӗрремӗш кун... Кивелсе кайнӑ хӑлтӑркка витесенчи ырханкка сыснасем хӑлхана йӗрӗнтермелле ҫухӑрнӑ. Апат ҫителӗксӗр. Ӗҫлекен ҫынсем нумай, выльӑхсене пӗчӗк ушкӑнсемпе, 35-40-шерӗн анчах пӑхнӑ. Вӗсем пӗтӗмпех вырӑнти йӑхран пулнӑ – чӗрӗ виҫи 50-60 килограмран иртеймен. Колхоз усӑ куракан 100 гектар пуҫне пурӗ те 6-шар центнер сысна ашӗ туса илнӗ. Кашни утас ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ ҫитменлӗх кӑларса тӑратнӑ. «Ҫӑмӑл мар пулать ӗҫлеме», – ассӑн сывласа илнӗ вӑл. Анчах ҫӗнӗ шухӑш иккӗленӗве тӗппипех пӗтерсе хунӑ. «Йывӑрлӑхсенчен хӑраса тӑракансем мар эпир, ҫутӑ малашлӑха утакансем, коммунизмшӑн кӗрешекенсем - каялла пӗр утӑм та!» – фронтри командир сӑмахӗсем аса килнӗ. «Ӗҫе, хӗрӳ ӗҫе тытӑнмалла, эсӗ коммунист вӗт!» – хистенӗ ӑна чӗрери хӑватлӑ туйӑмсем.

Трофим Васильевич куҫӗ умӗнчен халӗ ун хыҫҫӑнхи хӗрӳ ӗҫсем пӗрин хыҫҫӑн тепри вӗлтлетсе иртрӗҫ.

... Акӑ вӑл кадрсене ҫирӗплетессишӗн парти, комсомол пухӑвӗсенче сӑмах тухса калать. Комсомол путевкипе фермӑна пынӑ аттестатлӑ хӗрсем сыснасене пӑхма хӑнӑхаҫҫӗ, малта пыракансен опытне вӗренеҫҫӗ.

Строительствӑри кӑлтӑксем: саманран тунӑ вите ҫунса каять, акӑ, теприн тата купаласа пӗтерicченех стенисем ишӗрӗлсе анаҫҫӗ. Саман ӗҫне пӑрахмалла пулать. Улӑмпа тӑм пӑтранчӑкӗ пирӗн патра каймасть. Кӗҫех акӑ икӗ ҫулта йывӑҫран тунӑ икӗ вите ҫӗнӗрен ӳссе ларать. Ун хыҫҫӑн 30 сысна ами валли кирпӗчрен типовой вите шӑрантарса лартнӑ. Свинаркӑсем валли те пысӑк, аслӑ общежити тунӑ.

Ҫӗрулмине унччен чӗрӗллех ҫитернӗ. Вӑрнартан запарник илсе килнӗ хыҫҫӑн сыснасем пӗрремӗш хут

пĕçернĕ çĕрулми çиме тытăнаççĕ. Рациона концентратлă апатсем хутшăнса пынă. Кĕçех фермăна çĕнĕ апат - кукуруза силосĕ килнĕ. Вырăнти йăха та майĕпен пĕтерсе шултра шурă йăхпа улăштарнă. Аш-какай тухăçлăхĕ те çапла ӳссе, ӳссе пынă.

«Çичĕ çуллăх... Пĕрремĕш çулне ăнăçлă вĕçлерĕмĕрха, – хăйпе хăй калаçса илчĕ вăл. – Умра татах та пысăк плансем. 1965 çул тĕлне колхозăн кашни 100 гектар çĕр пуçне 104,8 центнер аш-какай туса илмелле, вăл шутран 65,1 центнерне пирĕн памалла. 1900 сысна самăртмалла ăна пурнăçлас пулсан...»

Алăк шалтлатнă сасă Васильев шухăшĕсене татрĕ. Хĕрсем витесенчен таврăнма пуçларĕç иккен.

* * *

Кану вăхăчĕ. Вăрăм сĕтел тавра ларса тухнă хĕрсем хăшĕ тĕрĕ тĕрлеççĕ, хăшĕ чĕнтĕр çыхаççĕ. Теприсем хаçат-журнал вулаççĕ. Анисия Фомина аллинче, авă, «Свиноводство» журналăн çĕнĕ номерĕ.



Трофим Васильевич Васильев 1950-75 çулсенче сысна фермин заведующийĕ пулнă.

– Ай, пит лайăх статья пур-çке кунта, – айăкран кăт тĕкрĕ вăл юнашар ларакан Саня Федорована. – Ярославль облаçĕнчи «Знамя Ильича» колхозри Шаронина свинарка анчах çăвăрланă сысна амисене икшерĕн пĕрле хупса усрать. Лайăх пулмалла ун пек. Мĕнле чухламан ăна эпир? Астăватăн-и, пĕлтĕр манăн икĕ ама харăсах çăвăрланăччĕ. Пĕрин 11 çура, теприн - 6.

Шаронина пек пăхнă пулсан, çурасем хутăшса каятчĕç, амăшĕсем те çурисене паллаймасăрах пĕрле ĕмĕртетчĕç. Уйрăм хупнă пирки пĕрин çурисем начартарах çитĕнчĕç, теприн çав вăхăтрах питĕ патвар ӳсрĕç.

– Малашне çапла тăвăпăр-ха, – килĕшрĕ Саня.

Самăртакан ушкăна пăхакан Маруся Тимофеева сăмах майĕн Ярослав Чиж çинчен аса илчĕ.

– Украинăри паллă сысна пăхаканăн ĕç опытне эпир майĕпен вĕренсе пыратпăр-ха, анчах халлĕхе сыснасене ун меслечĕпе самăртма пултараймастпăр. Фермăра пирĕн паянхи куна пĕр ĕçе те механизацилемен, йăлт алăпа тăватпăр. Çакнă çул та çук-ха. Витесем запарникрен 150-200 утасра, апат йăтсах ывăнатăн. 150 пуçран ытла харăс самăртма услови те çук. Хахулсем вĕсем механизаципе мала тухнă çав.

– Çăмăл теççĕ пуль-и правленинчисем... Начар колхоз та мар ĕнтĕ, фермăна механизацилеме тахçанах вăхăт. Пĕр трактор-универсал уйăрса парсан, ай-яй лайăх пулмалла, – кӳренчĕклĕн хушса хучĕ кăвак тутăр çыхнă Агапия Мулла, кунта чи ватти. - Çав Ваçкă Романова, председателе, мотоциклпа тепре çĕмĕрттерсе килсен, сысна кухнинчен витене хам вырăна апат йăттарап-ха.

Пӳлĕмрен тухнă Трофим Васильевич та калаçăва хутшăнчĕ.

- Куншăн хама та ярса илеççĕ пуль тесех итлесе ларатăп-ха, – терĕ вăл ĕнсине хыçса. – Правленире те, пухура та каласа ывăнтăм ĕнтĕ механизаци пирки. Темшĕн вĕсем чи малтан Çĕрпелти ĕне-выльăх ферминчи ĕçсене кăна çăмăллатасшăн, пире ют ялсем тесе-ши, хыçала хăварасшăн. Укахви эс хуçасем пирки тĕрĕсех каларăн, тепре хамăрăн эртелпе çулса илмелле пуль вĕсене. Шантараççĕ-ха, ну унччен... чăтас пулать. Пĕр кунта тумалли ĕç мар. Ĕçĕсем вара...

Кăçал пирĕн уйрăмах тăрăшса ĕçлемелле пулать вĕт-ха. Мĕн чухлĕ вăй хумалла! Унсăрăн ăçтан сысна ашĕ туса илессине икĕ хут ӳстерĕпĕр? Ăна пурнăçлас пулать. Пурнăçламалла та. Акă, пăхăр-ха, фермăра халĕ пирĕн

1100 сысна, – шут шăрçисене шаклаттарса илчĕ заведующи. – Вĕсенчен уйрăм амасем 100 пуç, пĕр хут çăвăрлаттармаллисем – 150. Ыттисенчен 441 пуç самăртма хупнă, вĕсене 80-90 килограма çитерсе пĕрремĕш е иккĕмĕш квартал пуçламăшĕнче патшалăха паратпăр. 37 ама çăвăрланă та ĕнтĕ, 400 çура илтĕмĕр вĕсенчен. Анюççа, эсĕ 7 амаран 78 çура илтĕн-и çак?

- Аха, – пуçне сĕлтсе çирĕплетрĕ Фомина.

- Саняпа Маня та 8-шар амаран 79-шар çура илнĕ. Тăрăшатăр-ха эсир, маттур. Акă, пĕрремĕш кварталта амасенчен пин çура илсе, вĕсене пурне те самăртма хупатпăр, – Трофим Васильевич тетрадь листи çинчи цифрăсене пӳрнипе тӳллесе кăтартрĕ.

- Трахвин пичче, акă паянхи хаçатра пирĕн çинчен çырни пур. Пĕркун хамăр ялти корреспондент, Пракахви мучи ачи, Вулути, килсе кайрĕ-çке. Анюççан ĕç опытне çырса кăтартнă.Итлĕр, вуласа паратăп, – алăкран кĕнĕкĕмен уçă сассипе пӳлĕме тултарчĕ Ира Шашкова.

«... Çăвăрланă хыççăн пĕрремĕш кунтанах эпир сысна амăшĕн чĕччисене микроэлементпа сĕрме тытăнатпăр. Çавна тума пĕр литр шыв çине пĕр грамм пăхăр купоросĕ, 2,5 грамм тимĕр купоросĕ ярса хутăштаратпăр. Амăшĕсемпе çурисене те апата пĕрле 15 кун хушши 80-шар миллиграмм пăхăр купоросĕ, 160-шар миллиграмм тимĕр купоросĕ парса тăратпăр. Темиçе кун тăхтанă хыççăн çакна каллех çĕнĕрен пуçласа яратпăр. Çапла пăхни çамрăк çурасене тĕреклĕрех ӳсме, амасене хăвăртрах чупса юлма май парать. Иодлă кали пани те амасене хăвăртрах чупса юлма пулăшать.

Амасене пĕр вăхăтра чуптарса хăварма тăрăшатпăр, вара çамрăк çурасене пĕрле пăхма лайăхрах. Хăш-пĕр çурасем ыттисенчен начартарах çуралаççĕ, эпĕ вĕсене амăшĕн малти чĕччисене ĕмме вĕрентетĕп. Малти чĕчĕсенче сĕт нумайрах тата çуллăрах. Тепĕр 2-3 эрнерен çав çурасем те вăйланса çитеççĕ. 10-12 кунхи сысна çурисене ĕне сĕчĕ хушса пама пуçлатăп, таса сывлăшра

уҫăлтарса ҫӳретĕп, тырăллă апат ҫиме хăнăхтарса пыратăп. Амăшĕн сĕчĕ шĕвек е сахал пулсан, кашни кун витаминлă апатсем паратăп. Ҫакăн пек пăхнипе икĕ уйăх тултарнă ҫурасем 15-18 килограмран кая мар таяççĕ...»

Пĕр сывламасăр вуласа тухрĕ хĕр хăйĕнчен аслăрах свинарка ҫинчен ҫырнă статьяна. Хăй те вăл тăрăшатьха, малтисемпе танлашасшăн, вĕсенчен иртсе те каясшăн.

- Сула препарачĕпе усă курни те питĕ аван. Унтанпа ман та сыснасем талăкра 600-650-шар грамм хушăнса пыма пуçларĕç, – савăккăн тăрăлтатса калаçать Маруся Тимофеева.

– Люцерна ути ҫăнăхĕ ҫитерни япăх-и тата? - лăх-лăх кулса илчĕ ăна хирĕç заведующи. – Унччен сыснасем ку апата тутанса та курман вĕт. Малашне ăна ак ҫак нормăпа ҫитерĕпĕр, – каллех тетрадьне уçрĕ вăл. – Уйрăм амасене талăкра 2-2,5-шер килограмм, самăртма хупнисемпе пĕр хут ҫăвăрлаттармалли амасене 500-900-шер грамм, икĕ уйăха ҫитмен ҫурасене 30-40-шер грамм памалла. Икĕ уйăхран малалла, тăватă уйăх таран 200-300-шер грамм хушас пулать. Ама ҫăвăрласси пĕр уйăх юлсан утă ҫăнăхне ҫурри таран чакаратпăр та, ун вырăнне концентрат хушса паратпăр. Утă ҫăнăхĕпе эпир кăçал 30 процент ытла тырă перекетлесе хăваратпăр. Юлнă тырă пире тата миçе сысна самăртма ҫитет? – каллех шаклаттарса илчĕç шут шăрçисем.

Пӳрте сасартăк Мария Антонова чупса кĕчĕ.

– Саня, эс пăхакан «Шурка» ҫăвăрлама пуçларĕ, – алăк урати урлă каçнă-каçман васкавлăн пĕлтерчĕ каçхи дежурнăй.

Калаçу ҫакăнпа вĕçленчĕ. Ферма заведующийĕ – выльăх тухтăрĕ Федоровапа пĕрле витене тухса кайрĕ. Йыш ӳсет. 1100 сысна ҫумне каллех темиçе ҫура хутшăнать.

Общежитире юлнисем ĕнер курнă фильма хĕрсех сӳтсе яврĕç. Куçса ҫӳрекен библиотека йĕркелеменшĕн клуб хуçи Иосиф Шашков ҫине ӳпкелешсе илчĕç. Каччисем ҫинчен те манмарĕç. Сахал-и мĕн ҫинчен калаçмалли?

* * *

Вăлашкари апата ҫисе янă хыççăн шап-шурă сысна ами куçĕсемпе хуçи ҫине ыйтуллăн тинкерчĕ. «Ах,

тепĕртак пулсанччĕ, мĕн тери кăмăлласа çимелле», – тенĕнех туйăнчĕç Анюççана вĕсем. «Ытлашши юрамасть-çке, мĕн тăвăн - норма».

– Епле юратса çиеççĕ сыснасем утă çăнăхĕпе пăтратса панă çĕрулмине. Питĕ лайăх-ха ку, – пушă витрисене шăнкăртаттарса тухрĕ Фомина ăшă витерен.

Çапла, ферма кулленхи пурнăç юхăмĕпе пĕр тан пынă. Кăнтăрла та, каç та çĕнĕрен те çĕнĕ улшăнусем пулса иртнĕ. Сысна амисем хĕрсене куллен çĕнĕ çурасем парнеленĕ. Ӳсерех панисене самăртма ушкăнсене уйăрса пынă, пĕр центнера яхăн çитернĕ те патшалăха ăсатнă. Хĕрсем каççерен общежитине пухăнса ларнă е клуба çӳренĕ. Кашни уйăхрах социализмла ăмăрту кăтартăвĕсене пăхса тухнă, кашни эрнере ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опытне вĕренмелли кружок занятийĕсем иртгернĕ. Аш-какай фабрики конвейер пек пĕр тикĕссĕн ĕçленĕ.

Инкек куçа курăнса килмест теççĕ. Чăнах та, шутламан-кĕтмен çĕртен, çĕрĕк тунката айĕнчен йăшăлтатса тухса вăрттăн пырса сăхнă хура çĕлен пек çитсе сăналанă ящур сыснасене. Хăрушă чире хирĕç фермăра васкавлă кĕрешӳ пуçланă. Мĕнпур территорине, витесене дезинфекцилесе тухнă, сыснасене укол панă. Çийĕнчех кирлĕ мерăсем йышăннине пула чир ытлашши сарăлсах каяйман. Анчах та кашни чир хăй хыççăн йĕр хăварать-çке. Ящур фермăна чылай пысăк пăтăрмах тунă. Амасем вилĕ çурасем çуратма пуçланă, начарланса юлнă.

Çапла çуркунне те персе çитнĕ. Юртан тасалнă çĕр симĕс кавирпе витĕннĕ. Тавралăха çурхи илем çавăрса илнĕ.

Трофим Васильевич хĕвелпе тĕссĕрленнĕ карттусне хывса аллине тытрĕ те пĕр хушă айлăма сăнарĕ. Умра сарлака çырма Киремет сарăлса выртать. Çерем çителĕклĕ кунта, çырма хĕррипе люцерна уйĕсем, шыв çывăхрах. Мĕн тери меллĕ вырăн лагерь валли. «Ыранах карта тытма ярас», – шухăшларĕ вăл.

Çу уйăхĕн варринче сыснасене уя илсе тухнă. Çумăртан тата шăрăхран сыхланма лупассем туса лартнă,



Елизавета Афанасьева (сулахайри) тата Галина Шашкова.

Петр Ковский сăн ӳкерчĕкĕ.

çăл чавнă. Сыснасене тăрантарса усрама 4 гектар лайăх çерем, 7 гектар люцерна уйăрса панă.

* * *

Май каçĕсем... Епле илемлĕ вăхăт. Тухăç çилĕ вăхăтăн-вăхăтăн ял хушшине хăватлă тракторсен шавне вĕçтерсе килет. Анат енче хуткупăс макăрать, унăн чĕрене тыткăнлакан сасси хĕрсемпе каччăсене хăй патнелле илĕртет. Чĕресенче хаваслăх, хĕпĕртӳ, юрату туйăмĕсем çуралаççĕ.

Анюççапа Саня вăйă картинчен уйрăлса лагере çитнĕ çĕре тухăç шупкахĕрлĕ сăнпа эрешленчĕ те. Кăштах тĕлĕрсе илме шутларĕç.

– Анюçça, Саня, – хуллен вăратрĕ дежурнăй. – Тăма вăхăт.

Тул та лайăххăн çутăлса çитмен-ха. Çырмара çӳхе тĕтре йăсăрланать. Сывлăш уçă. Сывлăмпа йĕпеннĕ курăка мĕнешкел ăмсанса, тутлăхлăн çиеççĕ сыснасем. Кĕç, Туçи ращи çийĕн çĕкленнĕ хĕвел тавралăха çутă шевлесем сапса салатрĕ.

Шăрăхлатма пуçласанах хĕрсем кĕтĕве шыв хĕррине илсе анчĕç.

– Саня, астăватăн-и хĕлле Шаронина çинчен калаçнине?..

– Ан мăшкăлласа тăр-ха, Анюçça, – кулса ячĕ Федорова. – Иксĕмĕр те тĕрĕслесе пăхрăмăр-çке вăл меслете...

– Ун пирки каламастăп эпĕ, хамăр хыççăн ыттисене те Шаронина пек тутарасшăн, – хуравларĕ Фомина. – Ман ыран райкома, пленума каймалла. Каласа кăтартасшăн эпĕ çавăн çинчен унта, иксĕмĕр мĕнле ăмăртса ĕçленине те аса илесшĕн.

– Мухтанни темле, те аван... Эс тулĕк калаçнă чух ан хумхан, – шӳтлесе илчĕ Саня.

Вун иккĕре сыснасене картана хупрĕç. Выртчĕр ĕнтĕ сулхăнра канса. Виççĕсем иртсен каллех шыв хĕррине хуса тухрĕç, кайран мĕн тĕттĕмлениччен симĕс курăк çинче çӳретрĕç. Çакăн пек вĕсен кун йĕрки.

Пĕтĕ амасене, çерем утисĕр тата люцернăсăр пуçне, талăкра 300-шер грамм пусыпка хушса параççĕ. Çăвăрлас умĕн пĕтĕ амасене пĕр-ик кун малтан фермăна илсе каяççĕ.

– Сыснасене çуллахи лагерьте усрани пире нумай енчен усăллă, – каласа пачĕ пĕррехинче районти выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсен канашлăвĕнче Трофим Васильевич. – Пĕр енчен, витесене усă курас вăхăта тăсма пулăшать тата вĕсене хĕле хатĕрлесе çитерме лайăхрах. Тепĕр енчен, сысна пăхакансен ĕçĕ нумай çăмăлланать.

Ытти çулсенче свинаркăсем сыснасене ирхине çырмана илсе тухатчĕç те, кăнтăрла каллех витесене хăваласа каятчĕç. Выльăхсем инçене çӳресе асапланнă. Халĕ сыснасем кăнтăрла та, каç та уçă сывлăшра, çителĕклĕ таран симĕс апат çиеççĕ, вăхăтра шыв ĕçеççĕ. Çавăнпа та лагере куçнăранпа вĕсем мăнтăрланчĕç, чĕрĕ виçи хăвăрт ӳссе пырать, талăкра 600 грамм ытла хушăнаççĕ. Витери пек чирлемеççĕ те тата. Амасем те çăвăрланă хыççăн хăвăртрах чупса юлаççĕ. Сыснасене лагерьте пăхма тытăнни фермăри ĕçе лайăхрах йĕркелеме май парать.

* * *

Сарă хĕвел кармашать, Хурăнсур Çармăс вăрманĕн уçланкинче мăнаçлăн вĕлкĕшекен хĕрлĕ ялава сывлăх сунасшăн туртăнать. Ем-ешĕл вăрманти кайăксем çепĕççĕн чĕвĕлтетни çумрах илтĕнет. Вĕсен савăк кĕввине антăхса кайсах тăнлас килет.

Вăрман ĕшни хĕрлĕн-симĕссĕн çиçсе тăрать. Яштака йывăççем хушшинче çакса тухнă лозунгсемпе плакатсем

шевле сапнӑн курӑнаҫҫӗ. Музыка вылять. Ытарайми илемлӗх таврара. Ушкӑнӑн-ушкӑнӑн утакан колхозниксен сӑн-питӗнче хӗпӗртӳ, савӑнӑҫ. Сӑлтавӗ пур-ҫке савӑнмашкӑн – колхозри акатуй вӗт паян!

Уяв ячӗпе пуҫтарӑннӑ чаплӑ пуху уҫӑлать. Уй-хир ӗҫченӗсем умӗнче колхоз председателӗ Василий Романов, ял Совет председателӗ Александр Ластухин сӑмах тухса калаҫҫӗ. Черет Анюҫҫана ҫитет.

– Пилӗк уйӑхра эпӗ хам пӑхакан сысна амисенчен 15-шер ҫура илсе ӳстертӗм. Александра Федоровапа Мария Антонова та манран юлмаҫҫӗ. Хамӑр йышӑннине пурнӑҫлатпӑрах. Ҫичӗҫуллӑх хыҫӗнче чаплӑ та ҫутӑ малашлӑх курӑнать. Пирӗн чӗресенче – коммунизм! – вӗҫлерӗ те вӑл хӑйӗн сӑмахне, председатель панӑ парнене кӑкӑрӗ ҫумне хӗстерсе, ҫерем ҫине сиксе анчӗ.

***

Уйӑх хыҫҫӑн уйӑх иртрӗ. Ҫу кунӗсем хыҫала тӑрса юлчӗҫ ӗнтӗ, хӗвел те вӑтанчӑклӑн йӑлкӑшакан пулчӗ. Кавсӑк ҫил килсе ҫапӑнать те, сывлӑшра йывӑҫ ҫулҫисем кӗр тӗсӗпе йӑмӑхса вӗлтӗртетеҫҫӗ. Кӗр ытамӗ тавралӑха пӗтӗмпех тыткӑнларӗ. 3 гектар ҫӗрулмине сыснасене хӑйсенех кӑларттарса ҫитерсе янӑ хыҫҫӑн хӗрсем ҫуллахи лагерьтен фермӑна куҫрӗҫ.

– Саня, пӑх-ха, пӑх, куратӑн-и, корреспондент килет, – кӑлт тӗкрӗ Мария Антонова юнашар утакан тантӑшне.

– Э-э, Анюҫҫа ҫинчен ҫыраканни ку, хамӑр ял писателӗ Владимир Кузьмин, – ҫывхаракан ҫамрӑка палласа илчӗ Саня. – Иртнинче вӑл пире хӑйӗн сӑввине парнеленӗччӗ. Атьӑр ӑна Шашук Йӑвӑҫҫи юрра хывнӑ сӑввипе кӗтсе илер?

Хӗрсем хавассӑн юрласа ячӗҫ:

Ялӑм улӑхӗ - чечек улӑхӗ,
Варринче тапать ҫич ҫӑл куҫ.
Шухӑш уҫлӑхӗ – чунӑм шухлӑхӗ
Улӑхра шырать савӑк куҫ.

Яшлăх хĕрĕвĕ – хĕвел çулăмĕ
Ялкăшса çунать тӳпере.
Чĕрем хĕмлĕхĕ – чунăм туйăмĕ
Йăпату шырать хӳтлĕхре.

– Йышлăн-ха кăçал эпир, пин те икçĕр вăтăра çитрĕмĕр, – корреспондент ыйтăвĕ çине шӳтлĕн хуравларĕ ферма заведующийĕ. – Пĕлтĕр пирĕн ку вăхăтра 780 пуç анчахчĕ. Халĕ самăртма хупнисемех 811, вăл шутран 400 пуçне кĕçех патшалăха сутатпăр. Вăт пулать те пулать Аслă Октябре пиртен парне.

– Миçе çура илтĕр вара ку таранччен?

– 1101, иртнĕ çулхинчен 100 çура ытларах. Амасем çумĕнче тата 344 çура пур-ха. Тĕп амасене çурри ытла январьте çăвăрламалла чуптарса хăвартăмăр, ыттисем февральте çăвăрлаççĕ. Сĕтлĕ, нумай çура тăвакан ăратлă амасен çурисене эпир яланах усрама хăваратпăр, – хĕрӳленсех калаçрĕ Трофим Васильевич Васильев.


Полинапа Нина Ананьевасем.

Фермăра 17 свинарка, вĕсенчен нумайăшĕ – комсомолкăсем. Анисия Фомина - коммунист, КПСС Вăрнар райкомĕн членĕ, ял Совет депутачĕ. Ферма коллективĕ – ĕçчен çамрăксен туслă çемйи.

Общежитире пĕррехинче коммунизмла ĕçлекенсем çинчен калаçу пуçланса кайнăччĕ. Мария Антонова сăмахĕсене питĕ тимлесе итлерĕç.

– Эй, хĕрсем, – терĕ сасартăк Фомина, – çынсен пултарулăхĕ çинчен калаçма питĕ лайăх. Хамăр эпир мĕнтен катăк вара? Коммунизмла ĕçлекен ферма ятне илессишĕн кĕрешӳ пуçарар мар-и?

– Тахçанах çапла кирлĕ! Çитес пухурах пăхса тухатпăр. Пуçлар кĕрешĕве! – шавлама пуçларĕç хĕрсем.

Çавăнтанпа сысна пăхакансем коммунизмла ĕçлекен ферма ятне илессишĕн кĕрешме пуçларĕç.

* * *

Кĕçех репетици пуçланмалла. Художествăлла пултарулăх коллективĕн членĕсем харпăр-хăй вырăнĕсене хăвăрт йĕркеленсе тăчĕç.

– Шăпланăр, юлташсем! – паллă парать хора ертсе пыраканĕ, ялти библиотека заведующийĕ Иосиф Шашков. – Бассемпе баритонсем юларах параççĕ, ытти сасăсемпе çĕтеççĕ. Тепĕр хут уйрăмшарăн юрламалла. Пуçларăмăр...

Юрă чĕрене тивмелле шăранать.

– Тухать-çке капла. Халĕ альтсем, унтан тенорсем, дискантсем. Аван, – йăл кулать ферма хĕрĕсем çине пăхса Иосиф Иванович. Вĕсен пултарулăхĕпе вăл ăшра кăмăллă. Общежитине кĕнекесем, журналсем уйăрса пачĕ. Вĕсемпе пĕрле илемлĕ произведенисене сӳтсе яваççĕ. Фронтра аманнăранпах хуçланман, суракан-юхакан ури канăçсăрлантарнине пăхмасăр вăл ял культуришĕн çунать, таврари чаплă аккордеонист. Трофим Васильчăн тахçанхи тусĕ, ĕçчен хĕрсене юрлаттарма хаваспах килĕшрĕ.

– Уйрăммăн тухать-ха вăл, пĕрле юрланă чухне пăтрашатпăр, Йăвăç пичче, – сăмах хушрĕ малта тăракан тăванĕ Ира Шашкова.

– Ан пăлханăр, пулать. Пĕрле юрлар-ха тепре. Пуçларăмăр. – Иосиф Шашков аккордеонне уçăмлăн тăсса ярать. Халĕ ĕнтĕ хуллен пуçланнă юрă вăйланăçемĕн вăйланса пычĕ, уççăнрах та хăватлăнрах янрама пуçларĕ:

Ĕç геройĕсене саламлатпăр,
Саламлатпăр эпир чĕререн.
Вĕсен йышĕ ӳссе нумайлантăр,
Колхоз ялĕ вăйлантăр çуллен...

*1960 çулта, ноябрĕн 12-мĕшĕнче, «Коммунизм ялавĕ» валли çырнă. Редакцин ялхуçалăх пайне ертсе пыракан Павел Иванов формалист ăнланулăхĕ çитмен пирки кун кураймарĕ. Пуçласа пичетленет.*

# ТĂВАТСĂМĂРĂН ТУСЛĂХ ВĂЙĔ

**Туй, туй, туй тесе...**

Туслăх пĕр çулпа пырать пулин те пурнăç çулĕсем расна. Сахар ачи Ваня Захаров Донбасра, Олег Кошевой хулинче Краснодонра çĕр айĕнчен çĕркăмрăкĕ кăларать. Тир Йăванĕн ачи Амруç Овчинников Тури Уралта, Краснотурьинскри алюмини заводĕнче хамăр ял ачисемпе ĕçлет. Йăван Маркăч ачи Вася Марков хамăрăн Ленин ячĕпе хисепленекен колхозăн бухгалтерĕ. Эпĕ Вăрнарта, район хаçатне кăларнă çĕрте. Ялтан кашни кун вунă çухрăма унта çӳретĕп. Аякрисем отпуска килсен, пĕрле тĕл пулатпăр.

Авланас-мĕн пулсан, эпир çапла шутланăччĕ: Вася Ваньăна, Ваня Амруçа, Амруç Вулутине, Вулути Васьăна хăйматлăх тăвать.



Маркăч Кайăкки Çĕрпелне хĕр илме кайнă трехтонка.

**1959 çулхи июнĕн 12-мĕшĕ.**

Захар Александровичсен килĕнче темиçе кун уяв – ывăлĕ шахтăран курма килнĕ. Амруç та отпускра, ялтах. Вася авланма шут тытнă. Марковсем те, Сахарсем те туя хатĕрленеççĕ. Эпир те Амруçпа аякра юлмастпăр, пулăшатпăр. Захар Александрович килте карчăкне кăтартусем парать: «Натеш, намăс курар мар. Натеш, эс

унта лайăх хатĕрле...» Йăван Маркăч ывăлне тăн парать, сылтăм аллипе сывлăша хĕç пек касса ăнлантарать: «Ваттисен йăлине ан пăсăр, тур умне тăрса тухăр...»

Каç енне сулăнарахпа хĕр илме кайма хатĕрленсе çитрĕç. Ахух, эпир сиссе те юлаймарăмăр, туй йĕрки улшăнчĕ. Марковсем-ваттисем ывăлĕн хăйматлăхне хăйсемпе хирĕç пурăнакан Иххан мучи ачине Гришăна тăвасшăн. Вăл трехтонкăпа чупать. Машини килĕ умĕнчех.



Зоя Елизаровнапа Василий Иванович Марковсем.

Çитрĕмĕр Çĕрпелне, сорт урамне. Халăх пухăннă. Парти райкомĕнче ĕçлекен Толя Толмасов, Çĕпритун Шăпчăк ывăлĕ, Вăрнартан «Урал» мотоциклпа килнĕ. Юлташĕ, Кăнстантин ачи Йăван та, юнашарах.

Туй йĕрки-шавĕ вăхăтĕнче Ванька Иванов тапăнчĕ мана: «Володя, тархасшăн чĕнсе тух Зойăна, çиччас Тольăпа хамăр пата лартса каятпăр». «Юлташа сутмастăп ĕнтĕ, эс те юлташ пулсан та», – тесе кулкаласа тăратăп. Çĕрпелĕнчи Ванька макрас пек кускаласа çӳрет. Эпир хĕсĕнкелесе кĕреке çывăхнелле çывхартăмăр. Капăр тумланнă Василий Ивановичпа Зоя Елизаровна, ваттисен йăлипе сăх сăхаççĕ, чĕркуçленсех турра пуççапрĕç. Хăйматлăхĕсем, Гришăпа арăмĕ, юнашар тăраççĕ.

Туй яла кӗрлесе ҫитсен, ҫамрӑк мӑшӑра Марковсен авалхи кӗлетне хупрӑмӑр та, пуҫа усса, Ванькӑсем патне кайрӑмӑр. Апат-ҫимӗҫпе, сӑра-эрехпе пуянланса авӑнакан сӗтел хушшинче туй кӗтсе Сахарпа Натеҫ параҫҫӗ...

**1962 ҫулхи ҫимӗк.**

Редакци ӗҫӗпе колхоза кайнӑччӗ. Нурӑс енчен яла таврӑнтӑм. Пирӗн пата Пӑштрик Ваҫҫин йӑмӑкӗ Галя пашкаса чупса ҫитрӗ. «Ванькка пичче авланчӗ, туя чӗнет, килемейпе мучине те илсе пыма каларӗҫ», – тет. Пире чӗнес-тӑвас пулсан ялан ҫак хӗре чуптараҫҫӗ.



**Антонина Анатольевнапа Иван Захарович Захаровсем.**

Ванька Кӗҫӗн Кипекри вӑтам шкулта пӗр класра вӗреннӗ Анатолий Александрович учитель хӗрне Тоньӑнах качча илнӗ.

Лашапа улт ҫухрӑмри яла Пӑваяль ҫумӗпе тӳрӗрен кайнӑ: Пӑштрик Ваҫҫи, Сахарсен усрав ывӑлӗ, Ванькка́н пиччӗшӗ Минька, хӑйсен тӑванӗ Курпун Ҫерки, параппанпа, Улька акӑшӗпе Аркати йыснӑшӗ, Амруҫ, Вася Марков тата ытти хӗрарӑмсем.

Эп пынӑ чухне пӳрт шавлать. Амруҫ купӑс калать. Юрлакансем пур. Курпун Ҫерки хура куҫне чалкӑштарса Марковпа юмах ярать, вӑл парапанне мана сӗнчӗ. Эпӗ юрла-

юрла çапатăп. Çеркей Петровчăн хăй çӳллĕш параппанĕ пӳрте çурать. Гула тухрăмăр, Ваньăпа Тоньăна ташлаттартăмăр.

Курпун Çерки параппан тума маçтăррине эпĕ ачаранах астăватăп. Ялта пĕр туй та, пĕр вăйă каçĕ те ун параппанĕсĕр иртмен. Хăйĕн яланах чи пысăкки, чи янравли.

Амруç хăйматлăх пулчĕ. Эпир унпа иксĕмĕр ик хусах тăрса юлтăмăр.

**1963 çулхи майăн 2-мĕшĕ.**

Авланас шухăш пулнăччĕ-ха, малтанах. Çирĕм ултта çывхаратăп-ха та. Хĕрĕ те пур. Пĕлтĕр хамăр шкула пĕлӳ министерствин направленийĕпе акăлчан чĕлхи вĕрентме килнĕ учительница, Элĕк çумĕнчи Торпкасси хĕрĕ Римма Ильинична Ильина. Çĕрпелпе Çармăс хушшине шкул лартнă икĕ хутлă кирпĕч çуртра çамрăк учительницăсем пурăнатчĕç. Малтан Цета Васильевна Кăмашри Толя Яковлева, унтан Нина Георгиевна Çĕрпелти Иван Константиновича качча тухса тарчĕç те, ман хĕр те унта пурăнма пăрахрĕ. Хĕлле пӳрчĕ питĕ сивĕччĕ. Римма вара Аркадий Васильевичăн хăйсемпе хирĕç пурăнакан аккăшĕ патне хваттере куçрĕ.

«Çамрăк коммунистра» ĕçлетĕп. Шупашкартан кашни эрнерех яла килетĕп. Тепĕр чухне Николай Иванчсен Йăвăççипе самолет çинче иккĕнех ик енче выртса килетпĕр. Хĕлле çын сахал.

Май уявне аннесем сăра тунă. Авланас пирки те систернĕччĕ-ха аннене. Римма уяв умĕн аккăшĕ патне кайнине пĕлтĕм те Торпкассине самолетпа вĕçрĕм. Туя чĕнсе Хурăнсура таврăнтăм. Хатĕрлентĕмĕр.

Петр Иванч Плешков мана эрех пытарса хăварма шантарнăччĕ. Лавккара хăй çук, хĕрачи Аля çеç. «Пĕр ещĕк шурри пур, анчах колхоз председателĕ Романов тытса усрама хушнă», – терĕ. Вăл та авланасшăн çунатчĕ те, ват хусах, мана мар, ăнах итлеççĕ ĕнтĕ. Пулас хăйматлăх Вася Марков патне кайрăм. Вăл çиччас клуб техничкине Люттине эрех илме Тукая ячĕ. Çĕрпелĕнче те эрех çук-мĕн. Шутсăр çăрăлса кайнă пирки нимле машина

та тухаймасть. Маттур Лютти çурранах эрех йăтса килчĕ. Килте сăра виç мăн пичке. Сăмакунĕ тупăнаканччĕ-ха.

Салтака авалхи йăлапа кайрăм пулин те, чăваш туйĕ тума хăрарăм. Ытла хĕстерсе çитернĕ-çке, шалăп парса ĕçрен те кăларса ярĕç, терĕм. Комсомолла туйне ку таранччен ялта никам та йĕркелесе курман. «Эх, – шутлатăп, – хам секретарь пулас пулсан-и, йĕркелемелле çĕнĕлле туй».



Римма Ильиничнапа Владимир Прокопьевич Кузьминсем.

Хĕр илме Марковсемпе Çĕрпелне çурранах тухса утрăмăр. Упасен карчăкки хыпăнса ӳкнĕ: «Ай, турă, хĕр пама сăри те, эрехĕ те, çăкăрĕ те çук, ма малтанах калас мар, ну сана, Римма...» Кӳршĕри Дубановсем каçрĕç. «Ну, Володя, Римма, сирĕн ятпа пичке пуçларăм, телей пултăр», – тесе ăшшăн саламларĕ Ольга Петровна, черетпе тулли стакан тыттарса. Георгий Гаврилчĕ те саламларĕ. Ахванеç мучисен Нини упăшкипе, Йăванпа, пычĕç. Учительсем пухăнчĕç.

Çĕрпелсен униче алăкĕнчен лайăхах кĕрсе тухма пулать, пирĕн ял униче алăкки патне пыма май çук пылчăк. Качака пек карта урлах сикетпĕр.

Аннепе атте, тăвансем пире çăкăр-тăварпа, сăрапа кĕтсе илчĕç. Сĕтел хушшине кĕртсе лартрĕç. Тур кĕтессине тăрса



Эрика Николаевнапа Амвросий Илларионович Овчинниковсем.

е чĕркуçленсе сăхсăхас е кĕл тăвас шухăш та çук пирĕн. Аннесем те хистемеççĕ. Ял халăхĕ пухăнчĕ, чӳречесенче – ачапча пуçĕ. Йăвăç пиччепе инкене çырма урлă каçса илчĕç. Шашков аккордеонне туртать. Туйне ертсе пыраканĕ Риммăн юлташĕ, Элĕк хĕрĕ Цета Васильевна. Вăл никама та лăпкă лартмасть. Станислав Николайчсем учительсен ушкăнĕпе ял лавккинчен гитара, шахмат туянса туй парни пачĕç. Риммăн аккăшĕ Зина, кумамăшĕ тата тăванĕ Санька машинăпа Туçи Çармăс тĕлне çитнĕ те унтан тăвать çухрăм çурран килчĕç.

Тахçантанпа кĕтнĕ пысăк ĕмĕт ман та пурнăçланчĕ. Эпĕ те юратнă арăмлă пулса тăтăм. Кузьминсем кин кĕртрĕç.

**1964 çулхи июнь.**

Амруç Овчинников Петрава килчĕ. Арăмпа. Вăл Çурçĕр Уралти Краснотурьинскра, алюмини заводĕнче пĕрле ĕçлекен Эрика ятлă хĕре качча илнĕ. Вырăсланнă

нимĕçсемпе тăванланнă. Хăйматлăхне лерех тунă. Малтан калаçса татăлнă пек Шлык мучисем патĕнче ваттисен йăлине турăмăр. Туçи Çармăсран тăванĕ Валька Овчинников арăмĕпе килнĕччĕ. Кĕреке пуканĕ çине ларса хăйматлăх пекех эрех черетлерĕм.

Малтан калаçса татăлнă пекех пулса тухаймарĕ те ĕнтĕ пирĕн, çапах уншăн кулянсах каймастпăр, тăвата тус – туслах пурăнатпăр, çамрăклăха аса илсе чуна яшлантаратпăр. Чĕре таппи малашне те параппан сасси пек тӳнклеттĕрччĕ.

## ЫРĂ ЯТ ТАВРАНА САЛАНАТЬ

### Секретарь отчет хатĕрлет

Николай пĕлтĕрхи отчетпа суйлав пухăвне аса илчĕ. Хытă ятларĕç ун чухне секретарь пулнă Иван Егорова. Ăна кăна мар, пĕтĕм комитет членĕсене «тип мунча» кĕртрĕç. Калаçмалли нумай пулнă çав. Комитет çамрăксене коммунизмла воспитани парас енĕпе нимĕн те туман, комсомол вĕренĕвĕн системинче йĕрке пулман, каччăсемпе хĕрсем валли ятарласа лекцисем, докладсем, вечерсем ирттермен. Член укçи пуçтарассине япăхтарнă.

Пуху вĕçĕнче комитет ларăвĕ пулчĕ. Çак юхăннă организаци шăпах ĕнтĕ Хурăнсурти Николай Степанов аллине куçрĕ.

Малтанхи ĕçсем... Коля тепĕр куннех Вăрнара, районти ял хуçалăх производство управленийĕн



Николай Степанов.
Владимир Кузьмин сăн ӳкерчĕкĕ.

ВЛКСМ комитетне кайрĕ, пĕтĕмĕшле ĕçсен секторĕнче колхозри организацири комсомолецсене йăлтах учет карточкисем тăрăх йĕркелесе тухрĕ. Унтан чăн-чăн вырăнти ĕçе пикенчĕ.

Клуб тăрри çĕрсе кайнăччĕ, мăкланнă хăмасем витĕр шакăртатса шыв юхать. Ăна витме шифер илсе килчĕç . Анчах кам витет çавăн пек мăн калăпăшлă тăрра? «Давай воскресник ирттеретпĕр!» – комсомолецсен шухăшне клуб заведующине пĕлтерчĕ Коля. Тепĕр кунне ĕçе 10 çамрăк тухрĕ. Анатолий Романов, Валерий Шашков тата Анатолий Кузнецов пуринчен ытларах вăй хурса ĕçленĕччĕ унта. Клуб тăррине часах витсе те пĕтерчĕç. Унтан кинобудка юсарĕç, икĕ аппаратура вырнаçмалăх анлăлатрĕç. Кунта Петя Крипчаков ытларах тăрăшрĕ.

...Çурхи хаваслă кунсем. Уйра хурçă утсен шавĕ. Йывăçсен тулса çитнĕ папкисенчен тавралана тутлă шăршă сарăлнă. Кольăпа Аля Иванова, Хурăнсурти 3-мĕш бригадăри комсомол организацийĕн секретарĕ, Вăрнартан таврăнаççĕ. Çул çинче вĕсем тăршшĕпех хĕрсе калаçса пычĕç. Лайăх астăвать-ха вăл калаçăва Степанов.

– Кахал пирĕн çамрăксем, обществăра хăйсен вырăнне тупма пĕлмеççĕ, – терĕ Аля.

– Тĕрĕс мар, – пӳлчĕ Коля. – Пурне те пĕр виçепе ăçтан виçме пултаратăн-ха эсĕ. Пăх-ха, акă, Саня Емельянова фермăра епле тăрăшса ĕçлет? Пĕлтĕр те премии илчĕ, виçĕмçул та. Район Советне ăна хамăрах депутата суйларăмăр-çке, парти членĕн кандидатне кĕме тивĕçлĕ пулчĕ. Мĕнле кахал пирĕн çамрăксем? Акă тата Гена Волков, вăл тракторпа мĕнле ĕçленине пĕлместĕн-им?

Аля кайран никама каламасăрах хулана тухса кайрĕ, ун вырăнне бригада секретарьне Хурăнсур çамрăкĕсем Анатолий Кузнецова суйларĕç.

Тепĕр воскресникре клуб çумне 500 кăк çамрăк йывăç лартса хăварчĕç. Ăна «Çамрăклăх паркĕ» тесе ят пачĕç. Ун хыççăн тата воскресниксем пулнă, уя тислĕк кăларнă, ферма валли 22 тонна симĕс çулçă хатĕрленĕ.

Отчета çаксене пурне те çырмалла.

Кăçал тата комсомолецсем колхоз пурлăхне çаратакансемпе юхăнтаракансене хирĕç те нумай кĕрешрĕç, сахал мар рейд ирттернĕ.

Отчетлă тапхăр... Тата мĕн пулнă-ха çав иртнĕ вăхăтра? 15 çамрăка комсомола илнĕ. Комсомолецсенчен виççĕшĕ парти ретне куçнă. Александра Емельяновапа Галя Мефодьева халĕ парти членĕн кандидачĕсем. Виççĕмĕшĕ вăл хăй – Николай Степанов.

Хурăнсур çамрăкĕсен ертӳçи Анатолий Кузнецов хĕрӳлĕхне кăтартрĕ: çамрăксем хушшинче спорт ĕçне вăйлатрĕ, хулигансемпе кĕрешме пуçларĕ, ĕç дисциплинине çирĕплетме пулăшрĕ.

Доклад вĕçленмен-ха, пухуччен тата темиçе кун. Ăна Николай Степанов секретарь «Янгорчино» колхозри комсомолецсем тунă кашни кунхи ĕçпе пуянлатса пырать.

«Çĕнтерӳ çулĕ», 1964 çулхи сентябрь.

## Ăнăçлă ĕç хаваслăхĕ

Уя çамрăксемпе пĕрле ваттисем те тухнă. Пурте витрепе е корзинăпа, пĕрин аллинче те хусăк курайммăн. Çынсем лайăх астăваççĕ, колхоз тунăранпа та çĕрулми патне хусăксăр тухман. Эрни-эрнипе тĕрмешнĕ вара, хăшпĕр чухне кăларайман касăсем юр айне пулса юлнă. Мĕн чухлĕ вăхăт, вăй илнĕ ал ĕçĕ. Халĕ вара?..

Çырма енчен «Беларусь» кĕрлесе хăпарать.

– Э-эй!

Виктор Плеханов, бригадир кăшкăрса алă сулнине асăрхаса, тракторне самантлăха чарчĕ.

- Çеçкине çумламасăрах кăларар пуль? - ыйтуллăн сăмах хушрĕ Павел Антонович. – Силослама пурпĕрех юрăхсăр, типсе кайнă.

– Чăн та, – килĕшрĕç трактористпа колхозниксем. – Капла ĕçе те хăвăртлататпăр.

Агрегат малалла «чупрĕ». Çынсем çĕрелле пăшкĕнчĕç – çĕрулми пухма тытăнчĕç. Нумаях та вăхăт иртмест, «Беларусь» каллех çаврăнса килет. Кашни иртсе

каймассерен Виктор ҫӗрулми пухакансене хаваслӑ кулӑ парнелесе хӑварать.

Пуҫтарнӑ ҫӗрулмие ҫийӗнчех буртсене хываҫҫӗ.

- Вӑрлӑх та хывса хӑвартӑмӑр, - тет Хурӑнсур бригадирӗ Антонов. - Кӑҫал бригада сортсем тӗрӗслекен участокран ир пулакан ҫӗрулми илсе лартнӑ, ӑна пӗтӗмпех ҫитес ҫул валли вӑрлӑхлӑх уйӑрса хунӑ.

Ҫӗрулми уйне автомашинӑсем ҫитрӗҫ. Темиҫе минутран вӗсем тулли кузовсемпе Вӑрнар еннелле ҫул тытаҫҫӗ. Патшалӑха 150 центнер ҫӗрулми панӑ. Кашни машина каймассерен ҫак шут ӳссе пырать.

«Октябрӗн 1-мӗшӗччен ҫӗрулми сутмалли плана тултаратпӑр!» Кӑнтӑр канӑвӗнче Евгений Никитин агитатор ҫак темӑпа калаҫу ирттерчӗ.

«Беларусь» сасси шӑплӑха каллех хускатрӗ. Колхозниксем хӑйсен ырӑнӗсене йышӑнчӗҫ. 3-мӗш бригада уйӗнче каллех хӗрӳ ӗҫ пуҫланчӗ. Хура лаптӑксем симӗс лаптӑксене хӗссех пыраҫҫӗ. 40 гектар кӑларнӑ, тата 18 гектар юлать. Ӑна ӗҫченсем тепӗр виҫӗ кунтан вӗҫлеҫҫӗ. «Ҫӗнтерӳ ялавӗ», 1963 ҫулхи сентябрь.

**Чӑтаймасть, куҫран калать**




**Ҫӗрпел ялсовет ӗҫтӑвкомӗн секретарӗ Захар Александрович Александров ӗҫ пӳлӗмӗнче. 1950 ҫул.**

Захар Александрович хаҫат вулама ларчӗ. Унтан вăл тем аса илнӗ пек пулчӗ: – Тăхта-ха Натеш, пирӗн Ванька ҫыру янăччӗ мар-и?..

Упăшки кăвак канверта уҫса, ывăлӗн ҫырăвне вулама тытăнчӗ: «...Эпӗ каллех шахтăра ӗҫлеме пуҫларăм, хам ҫара кайиччен выртăнтах. Пурнăҫ лайăх. Атте, эсир контроль группинче лайăххрах ӗҫлӗр. Ялта пулнă чухне йӗркесӗрлӗхсене хам куҫпа куртăм та чун тăвăнса килчӗ...»

– Каллех ҫав кунтруль, – сăмах хушрӗ карчăкӗ. – Ҫынсене вăрҫтарса ҫӳретӗн ҫав. Ыттисен куҫне те курăнмасть-шим ӗнтӗ вăл тӗрӗсмарлăх...

- Чун чăтмасть, пӗлетӗн-и? Лайăх пулас тесе, курнине ăҫтан курмăш тăвас? Усал тăвасшăн мар вӗт вӗсене...

– Хăвна та сана кăштах кунтруль кирлӗ-ха! Ванька курма килет тесе мана миҫе хут сăра тутартăн? Халь те килет пуль? Вуласа пӗтер ҫырунe. Праҫниксӗр-сăлтавсăр тусусене сӗтӗрсе килнӗ пултăр сана...

Ҫакнашкал калаҫусем килте час-часах пулса иртеҫҫӗ. Ялти хăш-пӗр ҫынсем хăйсене ашкăнма чаракан Сахар ҫине тарăхаҫҫӗ, ун ҫинчен халăх хушшинче тем те каласа ҫӳреҫҫӗ. Вăл сăмахсем, паллах, карчăкӗн хăлхине те кӗреҫҫӗ ӗнтӗ. Анчах упăшкин кăмăлӗ ҫирӗп, ăна часах хавшатаймăн.

Тепӗр кун ирхине вăл правление тухса утрӗ. Ура айӗнче сивӗ юр чӗриклетет. Урамра электричество лампочкисем ҫуннине курсан, Захар Александрович хăй ăшӗнче ятлаҫса илчӗ: «Ҫап-ҫутă, вӗсем ҫаплах ялкăштараҫҫӗ. Перекетлесчӗ кун пек ҫутă чухне. Асăрхаттарнăччӗ-ҫке».

Машинăсен паркне ҫынсем пухăннă. Ӗҫсӗр ҫын килмест кунта, кашнин – хăйӗн нуши. Захар Александрович та трактор пирки ҫитрӗ. Колхозри автоматлă телефон станцийӗ валли килнӗ юпасем Вăрнарта выртаҫҫӗ. Вӗсене турттарса килессине йӗркелеме ăна хушнă-мӗн.

Вăл тула тухрĕ те йĕркипе лартса тухнă сеялкăсем, плугсем çине савăнса пăхса тăчĕ. Савăнма сăлтавĕ те пур. Кĕркунне, халăх контролерĕсем рейд ирттернĕ хыççăн, çакăн пек тунă-çке-ха. Çав рейда Захар Александрович ертсе пынă.

Юпасем турттармалли машина пирки ĕç пĕтернĕ хыççăн вăл ĕне фермине çул тытрĕ. Кунта сĕт пахалăхĕ япăххи çинчен илтнĕччĕ вăл, çавăнпа тĕрĕслесе пăхма шутларĕ. Хĕрсем шăпах ĕне сăваççĕ. Бригадир помощникĕпе Валерьян Александровпа вĕсем витесене кĕрсе пăхса тухрĕç. Дояркăсем ĕне çиллисене япăх е пачах çумаççĕ иккен, хăш-пĕрисем ĕçре тирпейсĕр. Çавăнпа сĕт çине çӳп-çап, хура лекет.

Усăсăр пулмарĕ ку. Тепĕр куннех кашни доярка сĕт сĕрнĕ ватăпа марльăна пурне те курăнмалли вырăна çакма пуçларĕç.

Акă тата фермăра улăма халĕ те вĕтетмесĕр, пăспа çемçетмесĕр параççĕ, мĕншĕн тесен кормокухньăна хута яман. Сумалли «Елочка» та ĕçлемест, шыв та çитмест. Çаксене Захар Александрович паян хăй куçĕпе курчĕ, айăплисене ответ тыттармалли çинчен шухăшларĕ.

Вăхăт нумай та иртмĕ, ĕне ферминче те ĕçсем лайăхланĕç. Захар Александрович хăй шухăшĕнчен каялла чакас çук, хăй сăмахне пурнăçламасăр лăпланас çук.

Юлашки вăхăтра лашасем çине çаврăнса пăхми пулчĕç. Икĕ-виçĕ лаша пуçне пĕр çуна-урапа çеç. Ĕçре çакă хытă чăрмантарать. Выльăхсем валли апат вăхăтра турттараймаççĕ, витесем çумĕнче тислĕк купаланса каять. Акă мĕн патне илсе çитерет малтан тăрăшманни. «Ку çитменлĕхе халех пĕтермелле, фермăсене çуна-урапа çителĕклĕ илсе памалла». Çак ыйтăва Захар Александрович правленире сӳтсе явма тăратрĕ.

Утать Захар Александрович – бригадăсем, фермăсем тăрăх çӳрет. Каç та çывăрма пĕлмест, ответлă вырăнсенче рейдсем ирттерет. Ĕçлекен çынсене хавхалантарма пĕлет вăл. Мĕн çинчен те пулин каласа паратех. Уйăх патне миçе километрне те, тĕнчере миçе тĕрлĕ халăх пурăннине те,

ёнер-паян ăçта мĕн пулса иртнине те... Калать-калать те хулăн блокночĕ çине пăхса илет. Кунта унăн тем те пур. «Кĕсьери энциклопеди», – тет вăл ăна кулкаласа. Вăрçă хыççăнхи çулсенче вăл хулпуççи урлă çакнă полевой сумкăран уйрăлмастчĕ. Ун чухне унăн пуянлăхĕ çавăнта пулнă.


Петр Владимирович Ковский, Иосиф Иванович Шашков тата Захар Александрович Александров Петрав уявĕнче.
Петр Ковский сăн ӳкерчĕкĕ.

Захар Александрович Александров ертсе пынипе «Янгорчино» колхозри партгосконтроль комитетне пулăшакан группа усăллă ĕçсем сахал мар тунă. Уншăн группа председателĕ чи малтан хăйĕн активисчĕсене Хурăнсурти Петр Шлыкова, Петр Крипчакова ытларах ырлать.

Акă тăкăрлăка вăтам пӳллĕ çын хыпăнса тухать. Вăшти-вăшти тутарса пырать вăл. Нихçан та хуллен çӳремест, никам та ăна утмăлта тесе каламасть, утти çавăн пек. Пурнăç утти те çавăн пекех пулнă унăн, васкавлăн, çиçĕмлĕн иртнĕ.

1906 çулта иккĕри Сахар ашшĕсĕр тăрса юлнă. Çăмăл пулман ашшĕсĕр çемьере ун чухне, хальхи пек патшалăх пулăшман. Çĕрпелти 4 класлă шкултан вĕренсе тухнă та малалла кайма шутламалли те пулман. Граждан вăрçинче пиччĕшĕ пуçне хунă тата. Совет влаçĕ туса хурсан, чухăнсен комитечĕ хушнипе çамрăк Сахар хресченсене çĕр валеçсе панă çĕре хутшăннă, çамрăксен ертӳçи пулнă. Вăй кĕрсен, шахтăра фосфорит кăларнă. Ялти Чапаев ячĕпе тăракан колхозра бригадирта, унтан райсовет ĕçтăвкомĕн инструкторĕнче, Вăрнарти çу завочĕн директорĕнче ĕçленĕ.

Вăрçăра Захар Александров сержант Сталинграда хӳтĕлет, хастар салтак пĕр хаяр çапăçура аманать. Сывалнă хыççăн – каллех строя. Таганрог патĕнче ăна контузи пулать, каллех госпиталь. Ун хыççăн танк училищинче вĕренет. Мелитополь çывăхĕнче ăна виççĕмĕш хут амантнă. Фашистсемпе çапăçасси унăн çакăнта вĕçленет.

Вăрçăран Сахар пичче йывăр таврăнать, икĕ çул килте сывалса пурăнать. Унтан вăл колхоз агротехникĕ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ, Ял Совет ĕçтăвкомĕн секретарĕ, осеменатор, строительсен бригадирĕ пулса ĕçлет.

Вăл пире хамăр ял вăрманĕнче шĕшкĕ кастаратчĕ, ăна турттарса эпир Туçи тăвайккинче саманпа хутăштарса чăх вити тăваттăмăр. Темиçе çул хушши унта колхозăн чăх-чĕп ферми ĕçлетчĕ. Чăххисене пирĕн кӳршĕри Хвакла Крипчакова пăхатчĕ.

Пур çĕрте те канăçсăр пулнă Захар Александровичăн чĕри.

Çапла пурăнать ялта коммунист, ыттисемпе пĕрех, анчах чунĕ уйрăмрах. *«Коммунизм ялавĕ», 1964 çулхи декабрь. 1962 çулхи августăн 24-мĕшĕнче «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатра манăн ун çинчен çырнă «Захар Александрович» ятлă статья тухнăччĕ.*

**<u>Аш-какай фабрикинче</u>**

Ферма ирех вăранать. Пуринчен малтан Захар Воробьевпа Ксенофонт Чернов ĕçе тытăнаççĕ. Сысна пăхакансем пухăниччен вĕсем темиçе бак çĕрулми пĕçерсе хатĕрлеççĕ.

Кĕçех лавсем те килсе çитеççĕ – апат турттаракансем çула тухма хатĕр...

Пĕве леш енче автомашина сасси илтĕнсе кайрĕ. Кĕçех вăл ферма картишне çитсе чарăнчĕ.

– Васкас пулать, Трофим Васильевич, – сăмах хушрĕ Николай Никифоров шофер ферма заведующине Васильева. – Шăн ирĕлсе кайма пултарать, вара машинăпа çула ан та тух. Шупашкар виçĕ градус ăшă пулать тесе пĕлтерчĕ.

Машина çине сыснасем тиеме пуçларĕç. Шухăша кайса пăхса тăчĕ вĕсем çине Тамара Андреева. Пĕчĕкçеç çурасене çакăн пек пĕрер центнера яхăн таякан пуличчен çитĕнтерме пайтах вăй хумалла пулнă вĕт. Паянхипе шутласан, кăçал 228 пуç сысна самăртса пачĕ.

Перасковья Маркова, Елизавета Козлова, Вера Кузнецова тата ыттисем те хастар. Кăçалхи вунă уйăхра фермăра 703 сысна самăртса патшалăха панă. Самăртма хупнисем тата 600 пуç, 200-не Конституци кунĕ тĕлне аша памалла.

Аш-какай нумайрах туса илесси ăратлă сысна усранинчен, çура нумайрах туса илнинчен килет. Амасем пăхма чи ăста, пултаруллă та ĕçчен çынсене шанса панă.

Агапия Мулла – вĕсенчен чи аслăраххи. 20 çул фермăра ĕçлет. Кашни тĕп амаран 20,8 çура илнĕ, фермăра пĕрремĕш вырăна тухнă. Хаклă парнесем хушшинче Агапия Мулла РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕ панă Хисеп грамотине уйрăмах пысăка хурать.

Сысна амисене çиччĕн пăхаççĕ. Елизавета Афанасьева та Укахви аккаран нумаях юлмасть, кăçал кашни амаран 20,6 çура илсе ўстернĕ. Галина Мефодьевапа Феодосия Ильина, Евгения Яковлева тата Александра Емельянова, Анна Максимова вĕсенчен кăшт çеç сахалтарах çура илнĕ.

– Вите çитменни пĕтерет-ха, сыснасем кивĕ çуртра шăнаççĕ, пăсăлаççĕ, çавăнпа çура сахалтарах пулчĕ, – пăшăрханать заведующи.

Акă, Виктор Плехановпа Василий Иванов ДКУ машинăпа сахăр кăшманĕ вĕтетеççĕ.

Кăçал фермăн колхоза 100 пине яхăн тупăш памалла.
«Ком.ялавĕ», 1964ç.

**Коммунист ертсе пыракан фермăра**

Трофим Василеьвич Васильев Вăрнарти зооветтехникумран вĕренсе тухнă хыççăн нумаях та ĕçлеймен, вăрçă пуçланнă. Ялти ытти çамрăксемпе пĕрле вăл та фронта тухса кайнă. Пĕр çапăçура вăл йывăр аманнă, киле уксак таврăннă. Суран тўрленсе çитичченех

ĕçе тытăннă. Аллăмĕш çулта ăна ферма шанса панăччĕ. Нумай тăрăшма тиврĕ вунултă çул хушшинче.

Хальхи фермăна унччкенхипе танлаштарма çук ĕнтĕ. Улшăннă, вăйланнă. Кăçал 1200 сысна вырнаçмалăх типовой вите туса пĕтермелле. Авă, Михаил Крипчаков ертсе пыракан çамрăксен ушкăнĕ вагонетка валли хывнă рельс çумне бетон сарать.

– Хĕлле те кунта сивĕ пулмасть, – ăнлантарать Михаил Федорович. – Коридор тăрăх вырнаçтарса тухнă пăрăхсенчен пĕр пек ăшă тухса тăрать. Парообразователе те кĕçех вырнаçтаратпăр. Витене кормокухньăран пăрăх тăрăх вĕтетнĕ апат пырса тăмалла...

– Хул вăйĕ те, пилĕк те юлмарĕ ĕнтĕ апат-шыв йăтса, – калаçăва хутшăнчĕ Мулла Укахвиййĕ. – Тинех механизаци уссине куратпăр.

Ферма ветеранĕ Агапия Алекссевна савăнăçĕ – пĕтĕм ферма савăнăçĕ. Акă пĕлтĕр кормокухньăна лайăх оборудовани вырнаçтарнă. Çĕр улми транспортер тăрăх çуса тасатмалли машинăна пырать, унта тасалнă хыççăн хутăштаракан машинăна çитет. Çĕрулми лайăх пиçсе ванать те, пăтратса хатĕрлекен чана куçать, унтах тураса вĕтетнĕ кăшман пырать. Ăна малтан пастоизготовитель витĕр кăлараççĕ. Ватнă çĕрулмипе вĕтетнĕ кăшмана утă çăнăхĕпе хутăштараççĕ. Насус пулăшнипе хатĕр апат пĕр пăрăх тăрăх вите коридорне пырать, теприне кантăк витĕр картишне кăларнă. Унтан лав çине тиеççĕ. Апат мĕн чухлĕ перекетленет, ал ĕçĕ чакать.

Укахвисемпе Анюççасем тĕлленмен те ку çăмăллăх килессе фермăна. Уншăн тăрăшаканĕ, çине тăраканĕ вара Трофим Васильевич Васильев пулчĕ. Хастар коммуниста нумаях пулмасть «Хисеп палли» орденпа наградăларĕç. Çав орденах Агапия Алексеевна Мулла та илме тивĕçлĕ пулчĕ. «Ком.ялавĕ», 1966 çулхи июль.

**<u>Касхи сутăсем</u>**

Тавралăха каç чаршавĕ карсанах Çĕрпел шкулне çĕр ĕçченĕсем, механизаторсем, выльăх-чĕрлĕх

пăхакансем пухăнаççĕ.

Шăнкăрав сасси вĕренекенсене класа хăвалать. Вĕсемшĕн парттисем те тăвăр, хăшĕсем аран-аран хĕсĕнкелесе лараççĕ. Дежурнăй учителе ура çине тăрса пĕлтерет:

- Класра паян Николай Никифоров çук. Рейсра.

Хурăнсурти Вырăс Кули текенскер – класри 17 çынран пĕри. Вăл – шофер. Паллă ĕнтĕ, çăмăл ĕç мар, паян та, авă, вăрмана вутта кайнă та, вăхăтра таврăнайман. Кам пĕлет, тем пулнă çулра. Унăн юлташĕсем Виктор Плехановпа Николай Иванов – трактористсем. Алексей Иванов – хурт-хăмăр ăсти. Ĕçре хастар, вĕренӳре маттур, – çакăн пек характеристика пачĕç вĕсем çинчен.

Акă камсем вĕренеççĕ каçхи шкулта! Пĕтĕмпех ĕçченсем! Пĕр вунпĕрмĕш класра анчах мар, саккăрмĕшпе тăххăрмĕшсенче те.

Хрисан Васильевич Васильев учитель журнал çине тепĕр хут пăхса илет те, çĕнĕ темăна ăнлантарма тытăнать. 11-мĕш класра обществоведени урокĕ пуçланать.

Валентин Шлыковшăн математика питĕ интереслĕ. Вăл ăна ачаранпах юратнă. Астăватăп, унпа пĕрле иккĕ çине иккĕ хума пире 1-мĕш класра Нина Николаевна Баюкова учительница вĕрентнĕччĕ.

Унсăр пуçне тата эпир Михаил Васильевич Скворцов математикăн урокĕсене те каçса кайсах итлесе тăнлаттăмăр. Хими урокĕсенче Валентина Матвеевна Матвеева каласа ăнлантарнине чунтан пуçа хывнă.

Акă ун умĕнче халĕ хăй кăмăллакан виççĕмĕш вĕрентекен Любовь Ильинична Александрова.

– Пифагор теоремине кам каласа парать? – ыйтать вăл класран. Унтан, алă тăратнă Валентин Шлыкова асăрхаса, ăна доска умне тухма сĕнет.

– Гипотенуза квадрачĕ катетсен квадрачĕн суммипе пĕр тан, – шыв пек юхтарса калать Валентин, унтан теоремăна чертеж çинчи тĕслĕхпе кăтартса парать.

Журнал çине «5» ӳкет. Иккĕшĕ те савăнаççĕ.



Геннадий Петрович Ярушин. Владимир Кузьмин сăн ӳкерчĕкĕ.

«Шкулта чи лайăх вĕренекен кам?» – тесе ыйтсассăн, пурте Валентин Шлыков механизатор ятне асăнаççĕ. Пур предметпа та унăн пĕр паллă – «5».

Иккĕмĕш специальнăç илекенсем те пур шкулта.

– Мĕн пулать халь? – ыйтрĕ Геннадий Ярушин çумра ларакан юлташĕнчен.

– Машиноведени, – пуçне çĕклемесĕрех ответлерĕ лешĕ.

Çав вăхăтрах класа Георгий Гаврилович Дубанов çитсе кĕчĕ. Техникăна ăста пĕлекенскере ăна пурте хисеплеççĕ. Вăл Çĕрпел ялĕнче пĕрремĕш шофер пулнă, пĕрремĕш хут руль умне 30 çул каялла ларнă. Халĕ – 1-мĕш класлă шофер, ăста специалист. Çавăнпа унтан вĕренесшĕн, çавăнпа ăна тăнласа итлесшĕн çунаççĕ. Паянхи тема: «ГАЗ–51» автомашина двигателĕн çунтармалли тата сивĕтмелли системисем» ятлă. Схема тăрăх пурте ун хыçăн йĕрлеме тытăнчĕç.

Гена Ярушинăн шофер пулас ĕмĕт тахçанах çуралнă. Халĕ черет çитрĕ. Тăрăш, вĕрен çеç. Çапла тăвать те Гена. 8-мĕш класран вĕренсе тухнă чухне кăçал ытти 21 çынпа пĕрле тракторист удостоверенине илнĕччĕ. Вăтам шкул пĕтернĕ тĕле иккĕмĕш специальнăç – шофер специальнăçне алла илет.

Хурăнсур каччи хăйсене вĕрентекен Любовь Ильинична çине те питĕ ăмсанса пăхать. «Эх, пулсанччĕ çак чиперкке манăн мăшăрăм...» – тесе ĕмĕтленет.

Ялти пӳрт чӳречисенче чылайччен çутă сӳнмест. Кăнтăрла ĕçлесе ĕшеннĕ, каçпа пĕлӳ тинĕсĕнче ишсе хавхаланнă çамрăксем ыранхи уроксене хатĕрленеççĕ. «Çĕнтерӳ çулĕ», 8.12.1963ç.

# ÇУНАТЛĂ ЁМĔТ

Хурăнсур Çармăс ялĕн хĕвеланăç енчи пĕр урамне ĕлĕкрех Тăхăр арăм çучĕ тенĕ. Каярахпа, çав урам тата сарăлса вăрăмланчĕ, çирĕм пилĕк киле çитрĕ. Пурнăç аталанăвĕнче унăн ячĕ те улшăнчĕ. Ятне хамăр кӳршĕри шӳте юратакансемех тупса пачĕç-ха. Пирĕнтен инçех те мар тăллпан кĕлеткеллĕ, вăрăм сухаллă, сăмах-юмах çаптарма юратакан Карачăм мучи пурăнатчĕ. Темшĕн ун ятне пачĕç урама. Мучи çумĕнче яланах ача-пăча вĕлле хурчĕ пе явăнатчĕ. Тĕрлĕрен вăйă выляттăмăр, юрă юрлаттăмăр ушкăнпа. Стеклов Эверккин янăравлă сасси уйрăмах çиеле тухатчĕ. Уçăмлăн та çăмăллăн тăсатчĕ вăл юрра:

> Улма пахчинче,
> Хĕвел ăшшинче
> Саркайăк юрлать,
> Сасси ян каять...

Пирĕн юрă ял хушшинчен уя кĕрлесе тухатчĕ. Икĕ каслă плугпа ака тăвакан, лобогрейкăпа-жнейкăпа тулă çулакан, лашапа кĕлте кӳрекен, молотилкăпа авăн çапакан, Вăрнара лавпа тырă турттаракан Эверкки ывăнма пĕлмесĕр юрлатчĕ.

Эверкки ашшĕ, Гаврил, вăрçăра пуçне хунăччĕ. Амăшĕпе, аслашшĕпе тата Кĕтерин аккапа ӳсрĕ ача. Унтри Çитăрч унран хăй пекех столяр, платник, кантăк ăстаçи тăвасшăн пулнă. Анчах Эверкки сарайĕнчен урамалла, кӳршĕсем еннелле туртăнатчĕ. Йăван мучăшĕ лашасем пăхатчĕ те, çавăнтах каяс килнĕ унăн. Аслашшĕ те вара ăна сава турпасĕпе хăй çумне явакласа кăкарас темен, чунĕ туртнă ĕçех вырнаçма ирĕк панă.

Лаша пăхса пурăнчĕ пĕр вăхăт Эверкки. Çамрăк конюх кăнтăрлапа урхамах кĕтĕвне шыва кĕртме Ваньки пĕвине илсе пыратчĕ. Эпир, пĕчĕкреххисем, лашасене çуса тасатма пулăшаттăмăр. Юланутпа çиле хирĕç ăмăртса чупма та çавăн чухнех вĕреннĕччĕ. Колхозăн аслă конюхĕ Йăван Федорч ырлатчĕ ĕçчен качча. Лашасемпе район ăмăртăвĕнче мала тухсан, Эверкки çирĕм пилĕк тенкĕ

преми илнĕччĕ. Пĕрремĕш премишĕн мĕн тери хĕпĕртенĕччĕ вăл!

Вăрçă хыççăнхи çулсем пирĕншĕн савăнăç çулĕсемех пулман-ха. Выçăллă-тутăллă хырăмпа, ăшăтайман начар тумтирпе ĕçлесе пурăннă вăхăтра Эверкки хурланса çак юрра та юрласа пăхатчĕ:

Яштак пĕвĕм, кăвак куçăм
Авкаланса, хуçкаланса вăл çитĕнчĕ,
Калама та çук.
Ял-йыша юраймарĕ, сая кайрĕ...

Çапах та ытлашши тунсăх пустарман Эверкки хăйĕн чунне. Темле йывăр вăхăтра та пуçа усман. Аслашшĕ çĕре кĕрсен, амăшĕ вăхăтсăр вилсен, пĕтĕм хуçалăх терчĕ ун çине тиенчĕ. Самаях пусрĕ, сисĕмлех хутлатрĕ-мĕн çав нуша йывăрăшĕ çамрăк кĕлеткене. Çапах амантса хутлатаймарĕ вăйлă çан-çурăма. Тӳрленсе, пуçа ухса, çивĕч куçпа витĕр пăхса утрĕ пурнăçа хирĕç Стеклов. Пĕр ĕмĕчĕ çеç унăн умрах çунса кайрĕ. Хăйсен çумĕнчи Мирун мучи ачисем пекех нумай вĕренес тесе ĕмĕтленетчĕ... шăпах çунатлă ĕмĕт уншăн пурнăç вĕçевĕ пулаймарĕ. Мĕн тăвăн ĕнтĕ, шăпи çавнашкал пулса тухнă пулсан. Юратнă ĕçре вăл пурпĕрех хастаррăн вĕçрĕ – чунне кантарчĕ.

Аллăмĕш çулта, çĕрпелсемпе тата тукайсемпе пĕрлешнĕ хыççăн, пысăклатнă хуçалăхăн сысна фермине Хурăнсурта туса хучĕç. Çирĕп чĕреллĕ коммуниста Трофим Васильевич Васильева шанса панăччĕ çĕнĕ фермăна. Выльăхшăн чунне пама хатĕр çынсенчен пухнăччĕ вăл ĕç эртелне. Агапия Мулла, Анисия Фомина ячĕсем республикипех янăратчĕç. Çавăн чухне чĕннĕ те Эверккие Трофим Василеьвич хăй патне.

Лашасенчен те уйрăлас килмен унăн, çĕнĕ ĕç те кăмăла хăпартнă. Килĕшнĕ вара вăл фермăра ĕçлеме, сыснасем самăртма тытăннă.

Механизаци тени ун чухне фермăсенче çукрахчĕ. Виççĕр-тăватçĕр сыснана тăрантарма, шăварма, витери тислĕке тасатма çăмăлах пулман ĕнтĕ. Кунĕн-çĕрĕн вăхăта

фермăра ирттеретчĕç вĕсем. Хушăран килтен пулăшу та кирлĕччĕ. Ирĕклĕ самантсенче арăмĕ, Анфиса, пайтах чупнă фермăналла.

Вăрçă хыççăн саман кирпĕчрен купаласа тунă витесем нумая чăтаймарĕç, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн ишĕлсе пычĕç. Колхоз çĕнĕ витесем тума пуçланăччĕ. Строительство материалĕ, укçи-тенки çитменни касатчĕ. Çавăнпа стройка вăраха тăсăлнăччĕ. Аш-какайне патшалăха çулсерен ытларах та ытларах сутмаллаччĕ. Правлени йывăрлăхран тухмалли майсем шыратчĕ. Çавăн чухне колхоз председателĕ Василий Игнатьевич Романов, ферма заведующийĕ Трофим Васильевич сĕннипе, самăртакан сыснасене лагере куçарма йышăннăччĕ. Яланлăха мар – вăхăтлăха. Фермăран виççĕр чалăш аяккарах, Мăн Киремет çырми пуçне, çăмăлрах витесем туса лартнăччĕ. Çавăнта хупрĕç амăшĕнчен уйăрнă çурасене. Малтан хĕрсем пăхрĕç, унтан Эверкки «хуçа» пулса тăчĕ. Пилĕк çула тăсăлчĕ вăхăтлăх лагерь. Темиçе пин сысна самăртса ăсатрĕ вăл унтан. Апат турттарса хатĕрлекенсем те маттурччĕ çав. Михаил Иванович Ивановпа Василий Иванович Иванова виличченех ырăпа асăнĕ Стеклов.

Уйсем тасалма пуçланăччĕ ĕнтĕ. Çывăхрах ял халăхĕ выльăх кăшманĕ кăларать. Эверкки, сыснасене апат панă хыççăн, Киремет çырмин юппине, сăмсаха, тухрĕ. Ывăннăскер, канма ларчĕ. Аялта çăлкуç шывĕ çуталса выртать. Пăваяль енчен лăпкă çил вĕрет. Чун уçă. Кăмăл тулли. Сисмесĕрех чĕлхе çине юрă сăмахĕсем туха-туха пычĕç:

Çитнĕ телейшĕн, аслă тивлетшĕн,
Вăй-хал ӳснишĕн чун хĕпĕртет...

Çурăм хыçĕнче ура сасси илтĕннипе вăл шартах сиксе çаврăнса пăхрĕ, хăй патнелле çывхаракан председателе асăрхаса ура çине тăчĕ. Романов ăна алă пачĕ те:

– Санпа пĕрле, Аверкий, хамăн та юрлас килсе кайрĕ капла, – терĕ кулкаласа.

– Юрлар, Василий Игнатьевич, кăмăл пур чух савăнар, – колхоз хуçи юрă юрлама юратнине аса илсе савăнăçлăн

йал кулчĕ Стеклов. – Ытарайми çĕн ырă кун-çулшăн çĕр çул та пин çул пурăнас килет.

Василий Игнатьевич унпа «Телейлĕ пурнăç юррине» пĕр çаврăм юрласа илчĕ те, ун куçĕнчен пăхса, ыйтрĕ:

– Тĕрĕссине кала, Аверкий, йăлăхмарăн-и эс сысна пăхса?

Мĕншĕн апла ыйтатăн, Василий Игнатьевич? – тĕлĕнчĕ Стеклов.

– Хăш-пĕр арçынсем, йывăрлăха тата çăрăлчăка чăтаймасăр, фермăран пăраха-пăраха тарчĕç те...

Стеклов суймарĕ, председателе чунне уçса пачĕ:

– Йăлăхма – йăлăхман. Хăнăхнă ĕç – алă çемми. Ĕçе юратмастăп пулсассăн-и, эпĕ паянхи кун та çак сăмсахра юрласа ларас çук. Йывăрри, пытармалли çук, чăнах та, йывăр ĕнтĕ. Çак хулсемпе çавăрттар-ха кашни çул çав кĕтӳ валли. Авă, епле янраттараççĕ вĕсем, шельмăсем? Пирĕнтен те чаплăрах шăрантараççĕ. Çук, пăрахма шутламан-ха эпĕ ферма ĕçне. Эпир чăтма çуралнă – чăтатпăр.

– Куратăн-и? – аллипе ферма еннелле тĕллесе кăтартрĕ председатель. – Çĕнĕ вите епле шап-шуррăн çуталса ларать? Çавăнта куçмалла пулать. Кăçалах. Унта кунти пек алă вĕççĕн нумаях ĕçлемелле пулмĕ. Механизаци вăй илĕ малашне. Çитет пуль сире кунта нушалантарса.

Çынпа ăшри туйăмпа калаçма пултарнăшăн, яланах унăн хуйхи-суйхине ăнланса пулăшнăшăн Стеклов кăна мар, ял çыннисенчен нумайăшĕ юрататчĕç председателе. Халĕ те Эверкки, ун куçĕнче çиçекен кăмăллăх вутне асăрхаса, ун аллине тăванла чăмăртарĕ:

– Тавтапуç, Василий Игнатьевич, пире хисепленĕшĕн.

Çак тĕлпулу хыççăн Киремет çырми пуçĕнчи лагере кĕçех пĕтерчĕç. Аверкий Стеклов çĕнĕ витене – шурă витене – куçрĕ. Кунта, чăнах та, «çăтмахри пекех» туйрĕç сысна пăхакансем малтанлăха. Апат трансортерпа килет. Шыв йăтас хуйхи çук. Тислĕк кăларма çăмăл. Шалта çутă, ăшă, таса.

Хавхалану татах ӳснӗччӗ Стекловӑн. Ҫав хӗле мӗнле каҫса пӗтнине те сисмерӗ вӑл. Ҫурхи кун ун валли ӑшӑ парне илсе килчӗ. Аслӑ ҫулпуҫ Владимир Ильич ҫуралнӑранпа 100 ҫул ҫитнӗ ятпа ӑна юбилей медалӗ пачӗҫ. Унччен мухтавӗ унӑн таврана саланнӑччӗ-ха, анчах ҫак награда уншӑн пурнӑҫри кӗрешӳ ҫитӗнӗвне пӗтӗмлетсе ҫирӗплетекен хаклӑран та хакӑ япала пекех туйӑнчӗ. Ҫак хӗрӳ вӑхӑта Стеклов хавасланса аса илет.

– Ӗҫлеттӗмӗрччӗ те ӗҫлеттӗмӗрччӗ, ваҫка, хамӑр та. Ултӑ уйӑхра ҫӗр аллӑшар килограма ҫитерсе сутаттӑмӑрччӗ сыснасене. Ашӗ те, укҫи те пурччӗ колхозӑн. Ҫӗршер пин тенкӗ тупӑш илеттӗмӗр. Шупашкара, выльӑх-чӗрлӗх пӑхакансен канашлӑвне кайсан, мана та парне пачӗҫ. Ку таранччченех унпа сухал хырса пурӑнатӑп. Халӗ эпир ун чухнехи пекех тухӑҫлӑ пыраймастпӑр пек. Ҫӗр вуншар – ҫӗр ҫирӗмшер килогрампах сутатпӑр. Начар сысна – начарах ҫав. Апачӗ ҫав-ҫавах тухса каять. Мӗншӗн-ши? Хамшӑн мар эп, колхозшӑн кулянатӑп. Чӗре ыратать, – калаҫнӑ май ҫамкине картлантарать Аверкий.

Каллӗ-маллӗ хӑвӑрт уткалать, янравлӑ сассипе пӳлӗме тултарать:

– Эпӗ хам халӗ амасем пӑхатӑп тесе сыснасене самӑртакансене хурламастӑп. Тен, вӗсем пирӗнтен те ытларах тӗрмешеҫҫӗ пуль. Унччченхи пуҫлӑха ырласа хальхине те ятламастӑп. Паянхи хуҫа та, Ваҫҫук, маттур, ай-яй, пурне те сиктерет, камне-мӗнне пӑхса тӑмасть. Ҫичӗ ҫул пӗрле ӗҫлесе унпа пайтах пиҫнӗ. Эпӗ ку тарана ҫитсе фермӑра



**Василий Мефодьевич Мефодьев. Колхозсем пӗрлешнӗ хыҫҫӑн хытӑ ӗҫленӗ. Хуҫалӑх заведующийӗ, коммуналлӑ хуҫалӑх начальникӗ пулнӑ.**

япăх çынпа та ĕçлесе курман, хам та япăх ĕçлемен пекха. Çитмĕлмĕш çул хыççăн тата тепĕр медаль пачĕç. Мухтав грамотисем пĕрмаях илсе тăнă... Ак çак вымпел маншăн, туслăх вымпелĕ, питĕ хаклă. Эпир ăна районта саккăрăн çĕнсе илнĕччĕ.

Пӳртĕнче, алăкран кĕрсен сылтăм енче, илемлетнĕ пурçăн татăкĕ çакăнса тăрать. Рамка ăшĕнче, кĕленче айнех майласа вырнаçтарнă ăна. Украинăри Золотоноша районĕ вăрнарсемпе тахçанах ăмăртать-çке. Аслă Октябрь аллă çул тултарнă ятпа пынă туслă кĕрешӳре çĕнтернĕшĕн панă çав вымпела Аверкий Стеклова. Иртнĕ çулхи хĕллехи тапхăрта çитĕнӳ тунăшăн КПСС обкомĕпе Чăваш АССР Министрсен Совечĕ панă Хисеп грамотине шăпах ун çумне çакма хатĕрленетчĕ вăл.


Çамрăк конюх Аверкий Стеклов.

– Хам çур ĕмĕр çитнĕ тĕле пулчĕ ку ӳсĕм, – грамотăна ачашланăн çавăркалать Аверкий Гаврилович. – Ĕçлекене, вăй хурса тăрăшакана пирĕн çĕршывра питĕ хисеплеççĕ. Ку – лайăх ĕнтĕ. Анчах эпир чапшăн, вăрăм укçашăн çеç тар тăкмастпăр. Ман хамăн тем пек фермăна маларах кăларас килет, колхоза пуянлатас килет, çĕршыва вăйлатас килет. Çав кăмăлпа ĕнтĕ хавхаланса юрла-юрлах ĕçлетĕп. Юрă мана ĕçре пулăшать.

Аверкий Стеклов фермăра пĕр-пĕччен çĕнтерӳçĕ мар. Ĕçчен эртелте унашкал паттăрсем татах пур. Хăйпе ăмăртакан Елизавета Майорова та унран юлма шутламасть, тепĕр чухне иртсе те каять. Çакă вара ăна,

арçынна, хытах шухăшлаттарать. Кăçал кашни амаран вунсакăр çураран кая мар илмелле-çке вĕсен иккĕшин те.... Сысна пăхакан, сысна самăртакан кашни çынах фермăра пысăк тĕллевшĕн - пилĕкçуллăха ăнăçлă вĕçлессишĕн çине тăрать. Хайхи Аверкий Гаврилович «маттур Ваççук» текен Василий Мефодьевич Мефодьев коммунист ертсе пыракан ферма районти ăмăртура та, республикăра та пĕрре кăна мар мала тухнă.

– Çак пилĕкçуллăха тултармасан вара пире çăкăр çитерме те юрамасть, - калать Стеклов. – Эп хам тахçанах çапла йышăннă: пилĕкçуллăх вĕçĕнче фермăра икçĕр çураллă пĕр кĕтӳ пухатăп – йышăннинчен ытларах илнĕ çурасенчен. Сăмах пурнăçа кĕнĕ пек туйăнать-ха. Аван парне пулать колхоза.

Кашниех унашкал ĕмĕтпе ĕçлесен, паллах, эртел ӳсĕмĕ татах та вăйланĕ. Ферма ĕнтĕ вĕсен ыттисенчен уйрăмрах, ăратлă ферма. Шурă тĕслĕ украин сыснисем ӳстерсе сутаççĕ – сахал мар тупăш илеççĕ. Кунта вара Стеклов тӳпи те пĕчĕк мар.



Кӳршĕ хĕрĕсем (сулахайран сылтăмалла): Пăштрик Гали тата Упа Михвачĕн Анфиси – Аверкин пулас арăмĕ. Петр Ковский сăн ӳкерчĕкĕ.

Вĕренсе çитнĕ вăл сыснасем пăхма. Хутăш силосне те, çĕрулмипе кăшманне те, авăртнă тыррине те, ытти апатне те хăш вăхăтра мĕн чухлĕ памаллине куç хупсах пĕлет. Кĕркунне, сыснасене чуптарса

хăварнă хыççăн, питĕ хуравлă тапхăр пуçланать иккен. Выльăхсене асăрханса пăхмалла, тутлăхлăрах тăрантармалла. Декабрьпе январьте уйрăмах хĕрӳ вăхăт. Витере кашни кун çĕнĕ сасă янăраса каять: вуннă, çирĕм, хĕрĕх... Талăкĕ-талăкĕпех куçран вĕçертмест пĕтĕ амасене Стеклов.

– Çĕрле ытларах çуралаççĕ-çке, шельмăсем, – пуçа пăркалать вăл. – Йĕркеллĕ чухне юрать-ха, сехет çурăсенче вун-вуник çура чиперех кун курать, теприн вара пилĕк е вунă сехете те тăсăлать. Хушăран хвельшăр вырăнне те пулса курма тивет вара.

Савăнăçĕпе хуйхи-суйхи те пĕрлех пулса пырать-мĕн пурнăçра. Аверкий Гаврилович та фермăра çавăн чухне ĕçлесе тем те курса тӳснĕ пуль. Пĕррехинче, аслатиллĕ çумăр вăхăтĕнче, аçа çапнипе ăратлă сысна ами вилнĕшĕн куççуль те кăларнăччĕ. Тепрехинче сысна аçипе çапăçса курнăччĕ, больницăрах выртма тивнĕччĕ ун хыççăн. Сыснасем чирлени те, çурасем ăнсăртран вилни те, вилĕ çура çурални те хуйхă уншăн. Çынна палăртмасăр, чăтăмлăн ирттерсе ярать вăл унашкал хуйха-суйха, умри ăнăçлăх мелĕпе хăйне хăй лăплантарать.

Туслă çемье вĕсен. Тăнăç пурнăç. Кил-çурчĕ чаплă. Юратнă арăмĕпе, Анфисăпа, виçĕ ывăл пăхса çитĕнтернĕ. Виççĕшĕ те Совет Çарĕнче. Вĕсенчен илнĕ çыру сăмахĕсемпе хăйсене хăйсем лăплантараççĕ, вĕсемпе ашшĕ-амăшле мухтанаççĕ.

Кăшт ӳпĕнерех, васкавлăн утать вăл, çынпа хирĕç пулсан, ăна хаваслăн, янравлăн сывлăх сунать. Юрăри пек авкаланса, хуçкаланса çитĕнчĕ пулин те унăн çамрăк пĕвĕ, пурпĕрех сая каймарĕ, ял-йыша юратрĕ, колхоза савăнтарчĕ, çĕршыва ырă кӳчĕ. Карачăмкассисен хастар ятне ямарĕ. Çавăнпа Аверкий Стекловăн сасси юрланă чухне те таврана ян каять. *«Ком.ялавĕ», 26.12.1984ç. Облпрофсоветпа Чăваш АССР Журналисчĕсен союзĕн тата «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕн «Ĕç çынна илем кӳрет» конкурсĕнче 1-мĕш преми илнĕ.*

# АСĂМРИ КУНСЕМ

**1964 çулхи октябрь уйăхĕ.**

Канашран Çĕмĕрленелле темиçе çул каяллах пысăк вольтлă электролини карса тухнăччĕ. Юлашки вăхăтра пирĕн ялта та юпасем лартса пралуксем карчĕç, ферма патне подстанци турĕç.

Акă ял каç пуласпа нихçан курман-пулман çутăпа ялкăшса кайрĕ. Таçун Гени, электрик, кил тăрăх камăн мĕн-мĕн кăлтăк пуррипе-çуккине тĕрĕслесе çӳрет.

Пӳрт маччинчен çакăнса тăракан çаврака кĕленче ялкăшса кайнă саманта нихçан та манас çук. Анне хĕвелтен хупланă пек аллине куçĕсем çине тытса лампăчкă енне, унтан стена çинчи Ленин портречĕ енне пăха-пăха илчĕ те, çапла каларĕ: «Çакă-и-ха вара «Ильич лампăчки?» Хăй çав вăхăтрах шывланнă куçĕсене тутăр вĕçĕпе шăлса илчĕ. Атте электроплиткăпа чей вĕретме лартрĕ.

Ăнланатăп аннене, хăйчикки, краççын лампи çутипе ĕмĕрне ирттернĕ пиншер чăваш хĕрарăмĕсенчен пĕрне, киле электричество кĕнипе савăнса куççулĕ кăларнăскерне, лайăх ăнланатăп.

Вăрнарта «Рубин-102» телевизор туянтăмăр, укçа çитмест те – кредитпа. Ялта ун чухне Иосиф Михайловпа Илья Ананьев килĕсенче кăна çуталатчĕ «кăвак экран». Каçпа пĕтĕм кӳршĕ пухăнать, урайĕнче утма çук.

**1964 çулхи ноябрь.**

Чăрăшкас Мăрата Кĕтерне аккасем патне кĕр сăрине кайса килтĕмĕр. Петравра пирĕн тăвансене Çимун пиччесем те илсе каçаççĕ те, Хветĕр Михалч йыснапа амăшĕ вĕсене те çиламах илсе пыма каланă. Вăйлă çилтăман тухрĕ те, пирĕн лаша Пăваялĕнчен Туçи Çармăс еннелле юртнă. Аран-аран çул тупса яла çитрĕмĕр.

Мăртюш Ахванеçĕсем Çĕпĕре кайсан, вĕсем выраннне Талтти Çимунĕ куçрĕ. Пăртас хĕрне Анюка туйпа илсе килчĕ. Пирĕн çемьесем туслашрĕç.

Крипчаксен урамĕнчи Мĕтри Ахванеçĕн Çимунĕ



фронтра çапăçнă, вăрçа Анăçра вĕçленĕ. Пире Австри укçисене парать, Вена хули çинчен каласа тĕлĕнтерет.

Йысна пирĕн пата пынăччĕ те, инке ăна хăйсем патне чĕнсе каçрĕ. Çавăн чухнехи сăн ӳкерчĕк сыхланса юлнă манăн альбомра.

Ку ӳкерчĕкре вĕсен тăватă ачи çеç. Йышĕ хушăнсах пычĕ. Каярахпа инкене «Ача амăшĕ-героиня» хисеплĕ ят пачĕç. Ачисем аякка саланса пĕтрĕç, инкепе Çимун пичче вăхăтсăр вилчĕç. Килĕнче халĕ Петя çемйипе пурăнать. Утарти вунă ачаллă çемьерен вунă ачаллă çемьене качча килнĕ Маруç Хурăнсур кинĕ-инки пулса тăчĕ. Вĕсен те ачисем алăра йăттармаççĕ ĕнтĕ, хăйсен пурнăç çулĕсене шырама пуçланă.

Ыр кăмăллă, шанчăклă кӳршĕсем вĕсем пирĕн, ваттисен туслăхне малалла тăсаççĕ.

**1979 çулхи мартăн 15-мĕшĕ.**

«Тымар» романа çырса пĕтертĕм. Унăн тĕп геройĕ Максим Максимович Крутов хамăн кăмăл-туйăмлах, ĕмĕт-шухăшлах пулса тухрĕ. Макçăмăн мăшăрĕ Маруç, Мария Никоалевна, – хамăн юратнă арăмăм Римма Ильинична пекех.

Çулталăк ытла çухатнă ыйхăсăр каçсем – хыçалта. Алăпа çырни 664 страница пулчĕ.

Хам çумран темле пысăк, йывăр япала илсе пăрахнă пекех туйăнчĕ. Çăмăл мар çырма. Хăш-пĕр çынсем писательсене кĕвĕçеççĕ те, анчах кĕвĕçни кăлăхах. Хăй тĕллĕн, юмахри пек пулакан япала мар. Пайтах чăтăмлăх, çирĕплĕх, пĕлӳ, ăсталăх кирлĕ çырма. Алçыруне тепĕр хут юсаса тухмалла, машинкăпа пичетлемелле тата вуламалла. Пичетлениччен...

**1979 çулхи ноябрĕн 27-30-мĕшĕ.**

Хамăрăн тусăма Ваня Захарова тахçантанпах кĕтетпĕр. Акă вăл тинех Мускав урлă самолетпа вĕçсе çитрĕ. Амруç Овчинниковпа аэропортра кĕтсе илтĕмĕр. Анăç Украинăра канса сывалнă хыççăн якалнă, чăвашла калаçма та, кулма та манман.

Тепĕр кунне Амруç ерçмерĕ, пире МВД машинине тупса пачĕ. Унпа эпир экскурсие тухрăмăр. Çĕнĕ Шупашкара ГЭС курма кайрăмăр, плотина тăрăх Атăл



**Сахар ачи яла таврăнсан. Хăйсен пӳрчĕ умĕнче (сулахайран сылтăмалла): Захар Александрович кĕрӳшĕ Аркадий Арсентьевич Михайлов, Владимир Прокопьевич Кузьмин, Ольга Захаровна Михайлова, Сахар арăмĕ Надежда Алексеевна Александрова, Римма Ильинична Кузьмина, Иван Захарович Захаров.**

**Иван Никифоров сăн ӳкерчĕкĕ («Молодой коммунист» хаçатран.)**

варринех кĕрсе куртăмăр. Шыв таса, пăр çук. Унтан хамăрăн трактор заводне кĕтĕмĕр. Пĕр сарă трактор платформа çинчеччĕ. Цех пуçлăхĕ, паллаканскер, пире кабинăна кĕртсе ăнлантарчĕ. Кун хыççăн тусăма хам ĕçлекен стройкăпа паллаштартăм.

«Шупашкар çинчен питĕ нумай шавлаççĕ те, халĕ ĕнтĕ хам куçпа хам куртăм аслă стройкăсем мĕнне, чăваш улăпĕн чĕрçийĕ çинче те ларса куртăм», – терĕ савăннă ентешĕмĕр.

30-мĕшĕнче, эрнекун, «ГАЗ–69» автомашинăпа яла тухса кайрăмăр: Ванька, Амруç, Иосиф, эпĕ. Ямшăкĕ – Николай Иванчсен Гери.

Вуннă иртсен тин яла çитрĕмĕр. Машинине Николай Иванчсен килне лартрăмăр та Ванькăсем патне васкарăмăр. Килĕнче кĕтеççĕ. Минька яланхи пекех ӳсĕр. Аркади те – самаях. Ольгăпа Аркади, шаркку çинĕ (ытла та тутлă-çке!), сăра тутанса пăхнă хыççăн, Марковсене те, Ваççипе Зойине, чĕнсе илчĕç, унтан хăйсем патне илсе кайрĕç.

Халĕ ĕнтĕ эпир тăватă тус та пĕрле, пĕр ытамра – тăван кил, тăван ял ытамĕнче.

**1980 çулхи августăн 1-3-мĕшĕ.**

«Волга» автомашинăпа яла çитрĕмĕр. Атте начар. Куç курми пулать, тет. Нимех те ĕçлеймест. Пĕлтĕр çурăлман кут сыпписене те тукмакпа çуратчĕ, шаршан хитре купалатчĕ. Кăçал хĕвелпе çеç ăшăнса ларать. Колхоз 50 çул тултарнă ятпа Хисеп грамоти панă ăна. Хĕпĕртенĕ пулас.

Хамăр ял вăрманне кăмпа татма кайрăмăр. Вăрман хĕрринче – ыраш пусси. Жаткăпа тырă вырма ĕнер çеç тухнă.

Çумăр каркаланса çитрĕ, çиçĕм çиççех, аçа çапсах тăкрĕ илем çумăрĕ, шӳтерчĕ.

Хăйматлăхсем патĕнче пултăмăр. Марковсен пӳртне, кил-çуртне пĕтĕмпех çĕнетеççĕ. Чулран никĕс янă, çĕнĕ веранда тутарнă, хапха, мунчапа лаç каплантарса лартнă. Çитес çул сарай тăватпăр, тет Василий Иванович. Платниксем хаклă илеççĕ тет, кашни куншăн 10-шар тенкĕ, апат, литр шурри.

Пире хирĕç пуранакан Çимун пичче килне çĕн арăмпа пычĕ. Вăл Ехĕм аккăшĕ патне киле кĕнĕ.

Вăрнара Курак Мĕкĕти ачи Петя грузовикпа леçсе хăварчĕ.

**1981 çулхи февралĕн 2-мĕшĕ.**

Килте аттепе анне савăнчĕç. Уçтен акка та пынăччĕ. Кăнтăрла иртсен унпа хамăр Маньăсем патне кайрăмăр. Йысна Люскăпа пирĕн валли брикет тиеме Вăрнара кайнă. Унтан кĕç Çĕньялти Чăсмак Элекçи текен йыснапа Маньăн Днепропетровскра сăрт-ту институтĕнче вĕренекен Валери персе çитрĕç, Хирпуç грузовикĕ çинче шăннă. Ăшăтмалла пулчĕ. Ăшăнсан хамăр пата антăмăр. Йыснасем Вăрнартан çиччĕ çурта тин çитрĕç, брикет тиесех.

Тăвансем пĕрле пухăнтăмăр. Евген аккапа арăм Римма çеç çитмест. Пўртре икĕ путек пур. Кушак çăвăрламан. Ялта улшăнусем пур. Нестăр Кули текен Коля Степанова бригадиртан кăларса диспетчера лартнă. Иван Федорча та бригадиртан хăтарнă.

**1981 çулхи августăн 3-мĕшĕ.**

Йăмра каски татса çуртăмăр. Ватăлнă йывăççене вутта яраççĕ аннесем, вĕсем вырăнне çамрăккисене ўстеретпĕр, çырма тулли. Валери пулăшрĕ. Йыснапа Якку кум çурса пачĕç. Анне вутă патĕнче ĕçлет-ха.

Ялта ĕçсе-çапкаланса çўрекен хĕрарăм нумай. Унччен ырă, калаçма кăмăллă çынсемпех темле калаçма йĕрĕнчĕклĕ. Кăтра Яккуна вĕсем çаклатса кайрĕç-кайрĕçех.

**1981 çулхи октябрĕн 31-мĕшĕ.**

Хамăн шкулти юлташ Петюç Яковлев патне мунча кĕме кайса килтĕм. Икĕ çул ытла та пуль курманни. Унтанпа вăл çĕнĕ хваттер илнĕ, икĕ хутлă дача туяннă (5 пин), кăçал теплица туса лартнă. Унта чечек ўстерет. Чечек вăррине Ригăран хамăр ял ачи Шлык Ванькки, тусĕ, ярса парать. Мунчи Петюçăн дача çуртĕнчех, питĕ аван. Пултарать ача. Ялти акăшне Ульянăна та нумай пулăшать.

**1982 çулхи январĕн 20-мĕшĕ.**

Çул хырнă та, «Волгăпа» хамăр умах çитрĕмĕр. Мĕкĕте мучи, Никита Филиппович Бардасов, хăйсен умĕнчен эпир

иртсе кайнине курса пулас, кăштăртатса çитрĕ, эпир япаласем хатĕрленĕ хушăра аттепе калаçса ларчĕ. Яланхи фуфайкипе, хăлхисене усса янă мăн çĕлĕкпе, шĕвĕрленнĕ сухалне пĕрмай якатать. Хĕрлĕ эрех ĕçтертĕм. «Вулути, сана урăх те кураяп, те кураймас ĕнтĕ...» – тесе куççульне шăлса илет. Кумсем иккĕшĕ те хавшарĕç. Мĕн тери вăйлă, ĕçчен арçынсемччĕ. Вăхăт хăйĕннех илет иккен.

**1982 çулхи февралĕн 28-мĕшĕ.**

Ирех телеграмма килсе пачĕç. Пумпур вилнĕ. Республикипе паллă комбайнер Петр Иванович Иванов, Мустăрсен йăх-тымарĕнчен тухнă хĕрӳ, хаяр, ĕçчен çын ял-йышран уйрăлчĕ. Пирĕн Васли Якăльч мучин хĕрĕпе Хăвакла аккапа пĕрлешсе вун пĕр ача пăхса ӳстерчĕ. Паралич çапнă тет. Чаплăн, хурлăхлăн ăсатрĕ Хурăнсур хăйĕн тепĕр ывăлне.

**1982 çулхи мартăн 25-мĕшĕ.**

Яла кайкаласа килнĕ. Атте вырăнпах выртать. Профсоюз обкомĕн пленумĕ хыççăн семинар пулчĕ. Атăл хĕрринчи кану çуртĕнчех çĕр каçрăмăр. Унтан таврăнсан Риммăна автобуспа Вăрнара лартса ятăм. Кĕçех хам та пыратăп сана илме терĕм.

Ĕçе çитрĕм кăна, Амруç Овчинников обкомран, хамăн тепĕр юлташ Миша Васильев Вăрнар райкомĕнчен хурлăхлă хыпар пĕлтерчĕç. Атте вилсе кайнă! Ал-ура хытрĕ, сасă чĕтрекен пулчĕ.

«Волгăпа» яла вĕçтертĕм, пĕрле ывăлăма Бориса илтĕм. Юр ирĕлнĕ те, çул япăхрах. Римма Вăрнарта кĕтсе ларнă. Машина кил умнех çитрĕ.

Аттене каçпа Куçкă пиччесем çунă, тумлантарса тур кĕтессине сак çине вырттарнă. Çумĕнче – тупăкĕ. Кĕтерин акка кĕнеке вулать. Аннепе аккасем кăмака çумĕнче пуçа усса лараççĕ.

Тупăк тунă çынсем: Мĕкĕте пичче – Шаптак Мĕкĕти, унăн ывăлĕ Коля, Кăтра Якку, Симĕс Ваççа тата ытти арçынсем пур. Унтан Мĕкĕте мучи, Партас кумĕ, çитрĕ, вăл 5 сехет иртсен кĕл турĕ  те аттене пурте пĕрле

майлаштарса тупăка вырттартăмăр. Ăш тулса çитет те, нимĕн те тăваймăн... Çынсем килсех тăраççĕ: Марков, Мирун Тулисем тата ыт. те.

Эпĕ пукан çине, чÿрече çумне сĕвенсе, кантăм. Хăлхара – Кĕтерин аккапа Евген акка сасси, вĕсем кĕлĕ кĕнеки вулаççĕ. Матрÿн акка та кунтах çĕр каçрĕ, Уçтен те. Атте питĕ хитре выртать, тăрса ларса калаçас пекех.

Шăмат кун ирех юр çăвать. Хăвакла аккапа Уçтене тата Евгене халăх чĕнме ятăмăр. Çынсем килме пуçларĕç: кĕреçеллисем те, чашăк-бидон йăтнисем те. Никита Трофимчпа Миххи Ваççи юманран хĕрес тума пуçларĕç. Костя пиччесем килсен (вăл инкене, Вовăна илсе килнĕ), УАЗ-грузовикпе масар çине кайрăмăр. Вырăн суйласа илтĕмĕр те, Петр Иванч Пумпур пуçне çĕр пуçласа патăм. Çĕнĕ юр айĕнче çĕр пĕртте шăнман. Эпир Костя пиччепе Вăрнара эрех илме кайрăмăр. Эрех енчен проблема-çке! 145 тенкĕлĕх 1 ещĕк шуррине (5,30), тепĕр ещĕк вермут туянтăмăр. Малтан илсе лартни пурччĕ.

Кăнтăрла тĕлне шăтăк чавса пĕтернĕччĕ. Унта кайса эрех-сăра ĕçтертĕмĕр, апат çитертĕмĕр Риммăпа. Унти çыннисем киле килчĕç. Матрÿн акка та Иртемен чиркĕвĕнчен асăнтарса таврăннăччĕ. 14 сехетре, ваттисен йăлине туса, аттене пÿртрен илсе тухрăмăр, яланлăхах. Костя пиччен машина кузовĕ çине хутăмăр тупăкне, аннене кабинăна лартрăмăр. Риммăпа Борис тата Маньăсен йĕкĕрешĕсем Бориспа Юрка тупăк çинче ларса пычĕç.

Авалхи çулпа тÿрĕрен çул çук пирки, Шахалкăсен умĕпе тухса, мăн урампа ăсатрăмăр. Халăх нумайччĕ. Хĕвел те пăхса илчĕ атте ячĕпе.

Аттене пытартăмăр.

Çак шăмат кун пĕрремĕш каç аттесĕр çывăртăмăр. Тултан кĕрессĕнех туйăнать. Маня пирĕнпе пĕрле çывăрчĕ. Евген ĕнер Костя пиччепе ларса кайнăччĕ те, Галя килнĕччĕ Уçтенсен. Вăл пытарса таврăнсан тин çитрĕ, хытă макăрчĕ.

Масар çине кайса килтӗмӗр вырсарни кун. Макçăм Манин Мишши машинăпа лартса кайрӗ.

Кăтра Якку мунча хутнă. Мунча кӗтӗмӗр. Хăвакла акка пире Петӗр йыснана асăнма илсе кайрӗ. Вун пӗр ачаран унăн килӗнче Юркки çеç тăрса юлнă.

Анне выртмаллипех выртрӗ, темиçе кун апат çимен.

Хамăрăн Бориса тата Бориспа Юрка Никитинсене çырмари йăмра тураттисене кастартăм. Сарай хыçне юр айне чавса хутăмăр. Атте ячӗпе пӳрт умне лартса хăварасшăн.

**1982 çулхи майăн 1-мӗшӗ.**

Ялта эпир яланах уяв тунă. Паян сăлтавӗ тата пысăкрах пулчӗ. Атте вилни хӗрӗх кун çитрӗ. Çавăнпа ӗнер Шупашкартан «Волгăпа» килтӗмӗр. Пульницара ракран сипленекен Çӗньялти йыснана та пӗрлех илтӗмӗр.

Шăмат кун. Хамăр Маньăпа Матрӳн акка чиркӗве кайса килчӗç. Эпир ачасемпе кил умне виçӗ йăмра лартрăмăр. Кăнтăрла иртсен Вăрнартан Костя пичче инкепе тата Упнерти Праски аккасен Валькипе арăмӗ килчӗç. Хӗрарăмсем пӳртре ӗçлерӗç, эпир, арçынсем, сад тирпейлерӗмӗр тата Çӗньялти Юкруç тăхлач парса янă çӗр çырлине лартрăмăр.

Каçпа аттене асăнтăмăр. Тăвансем, хурăнташсем, çывăх çынсем нумай пулчӗç. Хӗрарăмсем пит ӗçеççӗ. Выртса кансах, çывăрсах, киле каймасăрах. Анне темшӗн питӗ хӗрхенет çавнашкаллисене, Уншăн эпӗ хирӗçетӗп те, вăл мана вăрçать.

Çыннисем кайса та пӗтмерӗç, çӗрӗпех çывратмарӗç. Ирпе каллех килме пуçларӗç. Паян кӗтӳ тухнă та, çула май кӗме пушшех лайăх. Пурне те хапăл тусах кӗтетпӗр, хăналатпăр. Кульă йысна ӗнертенпех пахча сухаласа паратăп тет. Хăй ӗçет те, çыврать. Пӳртре ларса ывăннă арçынсем чӗлӗм туртма тула тухрӗç. Кӗç пахча çумӗнчи каскасем çине ларса картла ячӗç. Сăра-эрех ӗçтерме тухмалла пулчӗ. Çак вăйăра пуçа темле вылянчăк шухăш

пырса кĕчĕ. Пирĕн ăсла-сăра ямалли атте тунă мăн алтăр пур. Иккĕ ярсан витре тулать. Çавна лаçран йăтса килтĕм. «Кам выляса ярать, çавăн пĕр алтăр çăл шывĕ ĕçсе ямалла. Килĕшетĕр-и?» – тетĕп. Кулкаласа пурте килĕшрĕç. Шахалккă Хĕветĕрĕпе Çĕньялти Элекçи йысна Мĕкĕте пиччепе Кульă йыснаран выляса илчĕç. Эпĕ тулли алтăр тытса тăратăп. Никит Трофимч тытрĕ те алтăра, сухал тăрăх юхтара-юхтара мехлерĕ, «Кульă, юлашкине эс ĕçсе яр», – тесе алтăра йыснана тыттарчĕ. «Ухмах-им эп çăл шывĕ ĕçме хунекемĕн урпа сăри пур чухне», – терĕ те йысна алтăр тĕпĕнчи шыва чашт! тутарчĕ. Тавлашрĕç те кайрĕç пирĕн картежниксем. Анне алăкран чĕнет: «Пӳрте кĕрĕр!» Выляса янисем вырăнне теприсем ларчĕç. Арăм тухрĕ те шӳтлерех каларĕ: «Выляса яракансене çĕр чавтаратăп, выляса илекенсене икĕ кĕреçе тупса паратăп». Вăййа пăхса тăракан Йăван пичче, Ухтериков та, хушса хучĕ: «А чăнах та тĕрĕс калать кин. Картла çапса пустуй вăхăтирттериччен айтăр эртелпе пахча çĕрне чавса пăрахар? Ĕçме унта та пулать». Римма çав вăхăтрах Анани Васçине сарай çумĕнчи кĕреçене тыттарчĕ, сарайĕнчен тата виç кĕреçе илсе тухрĕ.

Вăйă сасартăк чарăнчĕ. «Мĕн алпа кутĕрленес, лашапа алатпăр, Вулути, хаяртараххине ярса пар-ха, çиччас лаша тупса килеп», – сĕнӳ парса ыйтрĕ Хĕветĕр пичче. «Эп сӳре йăтса килеп», – терĕ йысна алăк патнелле утса. «Римма Ильинична, эп хам кĕреçепе çеç ĕçлеме хăнăхнă», – тесе Анани Васçи кĕреçене карта çумне тăратрĕ. Куçкă пичче юрă ĕнĕрлекелесе пӳртелле кĕрсе кайрĕ. Ыттисем те... Черетпе ĕçсе пачĕç те, пĕрерĕн-икшерĕн тухса шурĕç. Йăван пиччепе эпир темиçен пахчаналла утрăмăр. Тарличченех чаврăмăр. Ихххан мучин хĕрне Наçук аккана качча илнĕ Çтаппанпа Виссарун Ярушинсен вырăнĕнче пурăнакан Çĕрпел ачи Володя лаша тупса плуг илсе килчĕç. Шантаракансем çеç курăнмарĕç. Хăвăртрах сухаласа, сӳрелесе, чавса

пĕтертĕмĕр пахча çĕрне пӳртри ĕçкĕ халăхĕ шавласа ларнă вăхăтра.

Ĕçкĕ пăталать, ĕç хăвалать иккен çынна. Çакăн хыççăн вара пуçра пĕр кулăш çуралчĕ:

**«ÇИВĔЧ КĔРЕÇЕ**

Пирĕн ялта ĕçкĕ-çикĕ вăхăтĕнче чĕнмен хăна ӳпре пекех хĕвĕшет. Хĕсĕккуç Куçки, Хĕл Хĕлихванĕ, Хĕв Хĕветĕрĕ, Услап Петĕрĕ, Хура Ваççа текенскерсем йăлăхтарсах çитереççĕ вара.

Çуркунне çапла атте сакăр вунă çул тултарнине уявларăмăр. Каçхине те пурччĕ кĕтмен хăнасем, ирпе каллех тута хĕррине çулласа çитрĕç.

Ларсан-ларсан уçă сывлăша тухас терĕмĕр. Арçынсем хăма купи çинче картла çапа пуçларĕç. Аттен юлташĕ, Йăван мучи, тăчĕ-тăчĕ те вĕсене пăхса: «Итлĕр-ха, ачасем, вăхăт пустуй ирттериччен айтăр пахча чавар», – терĕ. Çав вăхăтрах ман арăм ушкăн умне темиçе кĕреçе пырса тăратрĕ. Картла вылякансем шавлама пăрахрĕç те ĕнсисене кăтăрт-кăтăрт хыçса илчĕç.

– Ма алпа чавас, – тăрук тавçăрса илчĕ Хĕсĕккуç Куçки. – Икĕ каслă плуг кӳлсе килетĕп.

– Сӳре те кирлĕ пулать, – хул пуççине сиктеркелерĕ Услап Петĕрĕ. – Çиччас йăтса килеп.

– Эпĕ трактор патне чупатăп, – тăрса утрĕ Хĕв Хĕветĕрĕ.

Кусем урам хыçĕнче курăнми пулсан Хура Ваççа пĕр кĕреçине, теприне тытса пăхрĕ, вара: «Ман хам кĕреçех çивĕч, киле кайса илем-ха», – тесе вăшт çеç тухса шăвăнчĕ.

Лайăх çанталăкпа усă курсах юлас терĕмĕр. Йăван мучисемпе эртелпе çĕр пусма тытăнтăмăр. Кăнтăрла та иртрĕ, хĕвел те ана пуçларĕ, эпир те пахча чавса пĕтертĕмĕр, анчах лаши те, тракторĕ те, сӳри те, çивĕч кĕреçи те курăнмарĕ.

Кĕрекере вĕсен вырăнĕ пушах пулчĕ». «Капкăн», 4№, 1983 ç.



**Карачăмкассинчи Иван Федорович Федоровăн – ваттин ывăлĕ Василий Иванович Иванов – Совхоз Ваççи арăмĕпе, Туçи Çармăс хĕрĕпе, Татюк инкепе.
Петр Ковский ӳкерне.**

**1982 çулхи сентябрĕн 8-мĕшĕ.**

Яла çĕр улми кăларма килтĕм. Ялта электролини çĕнетеççĕ. Пӳрт умĕнчи ман тополе кастарман, сыхласа хăварнă. Питĕ хитре, сарăлса ӳсет. Юпа лартакансем касма шутланă, вара ман пата Шупашкара ял совет председателĕ Ваганин шăнкăравларĕ. Эпĕ килĕшмерĕм. Тавах Çĕрпелти Хвалькка ачине.

Халĕ Вăрнартан яла автобус ултă рейс çӳрет.

Совхоз Ваççана, пиртен икĕ кил урлă пурăнакан Йăван Федорч ваттин ачине, пытартăмăр. 55 çул çеç пурăннă. Йывăр ĕçпе хуçăлсах, шăнса чирленĕ, чире кайнă ĕнтĕ. Юлашки çулсенче сысна ферминче хытă ĕçлерĕ. Чунĕ килех туртнă пулас, Вăрнарти пульницаран тухса тарнă тет.

Вăйпитти арçынсем вăхăтсăр уйрăлса кайни чуна ыраттарать.

**1982 çулхи октябрĕн 3-мĕшĕ.**

Римма ĕнер хăй ĕçлекен 20-мĕш шкултан чечек çыххи

йӑтса килчӗ. 20 ҫул каяллахи аса килчӗ. Эпӗ те ӑна ҫав 1962 ҫулхи кӗр хамӑр палисадникрен чечек татса парнеленӗччӗ. Пурӑнать ҫапла Юрату 20 ҫул. Сахал-и вӑл вӑхӑт, нумай-и, камшӑн мӗнле ӗнтӗ. Анчах та юратӑва, ҫав таранччен пурӑннӑскерне, малашне те иксӗмӗрӗн сыхласа упрамалла. Юратусӑр пурнӑҫ – пурнӑҫ мар пуль. Ӑна укҫа та, пуянлӑх та, ӗҫкӗ-ҫикӗ те улӑштараймӗ. Ӑна иккӗн ҫеҫ упрама пулать.

Риммӑн шкулта, чи малтан хамӑр ял шкулӗнче, ӗҫлеме пуҫлани те 20 ҫул тултарчӗ.

Ҫав паллӑ кунсене палӑртма эпир Хурӑнсура кайма шутларӑмӑр.

**1982 ҫулхи декабрӗн 12-мӗшӗ.**

Анне сурӑх пустарнӑ та, шӳрпе ҫиме чӗннӗ. Вӑрнартан яла мӑн автобуспа ҫитрӗм. Ялта улӑм илеҫҫӗ.

Пӗтпӗлтӗк Аркадийӗ ашшӗне асӑнма пырса чӗнчӗ. Арсентий Михалч ырӑ ҫынччӗ, аттепе туслӑччӗ, ӗҫкӗ-ҫикӗре пӗрле пулнӑ. Ялти ятлӑ ҫын. Хӑйсем аттене пытарнӑ чухне пурччӗ.

Кӑнтӑрла иртсен ҫумӑр ҫума пуҫларӗ те ҫӗрле те чарӑнмарӗ.

**1983 ҫулхи июнӗн 3-мӗшӗ.**

Пирӗн ял, пирӗн кӳршӗ урлӑ, пӑрлӑ ҫумӑр, ҫил-тӑвӑл иртсе кайнӑ. Пас пӳрне пуҫӗ пек пӑр ҫурӗ тет. Улмуҫҫисене йӑвантарнӑ, хӑмлана, ытти ҫимӗҫсене пӗтернӗ. Ҫырма Татьянӗ ҫав каҫчен пӗр кун маларах вилнӗ тет. Вӗсен йӑмрисене ҫил-тӑвӑл кутранах тӑпӑлтарнӑ.

Эпир пахчара ӗҫлерӗмӗр, кил хушшинче сысна ҫурине выляттартӑмӑр. Анне савӑнать.

Патефон ҫӗмӗрӗлнӗ хыҫҫӑн анне миҫе ҫул ӗнтӗ пластинка итлемен. Радиола илсе килтӗмӗр. Ӑна чӑваш юррисене ярса итлеттертӗм. Хӑй те пӗрле юрлать. Эпир те.

**1984 ҫулхи сентябрӗн 15-мӗшӗ.**

Ӑшӑ кунсем тӑраҫҫӗ. Пахчара ҫӗр улми кӑларатпӑр, аннепе иксӗмӗрех. Шупашкартан Римма килчӗ. Ӑна мунча хутма хушрӑмӑр.

Пулăшма Кăтра Якку, Кульă йыснапа Маня акка çитрĕç. Якку арăмĕ Анна кумма ĕнер пенси илнĕ те, ерçмест, Хĕветĕр пичче арăмĕ Юля инке тата Стеклов Аверки арăмĕ пĕрле савăнаççĕ. Юля инке аннене кăшт пулăшрĕ, лешсене курсанах тарчĕ тет.

Милян Элексантăрĕ ăнсăртран килсе кĕчĕ. Шкулта пĕрле вĕренеттĕмĕрччĕ. Вĕсен килĕ Мирун мучисем çумĕнче. Саратов облаçĕнче пурăнать. Амăшне пытарма килнĕ. Ял тунсăхлăхĕ пирки калаçу вăрăма тăсăлчĕ.

**1985 çулхи майăн 1-мĕшĕ.**

Мĕнле ырă ялта! Ирех пахчара. Хĕвел çунтарать. Улмуççи, хурлăхан, крыжовник кучĕсене çемçетсе апатлантартăмăр, виктори йăранне тасатса кăпкалатрăмăр. Вутă хутса симĕс сухан кукли пĕçертĕмĕр. Мунча хутса кĕтĕмĕр.

Кăнтăрла иртсен Марковсем патне хăнана – уява кайрăмăр. Мăшăрăмпа. Хăйматлăх аллă тултарчĕ. Амруç Шупашкартан темшĕн килмен, Ваня Донбасра. Юлташсен ушкăнĕ ячĕпе сăмах каларăм.

Менелнике Василий Романов, Давыд Иванов, Мефодий Ягушов, Николай Иванов, Григорий Сергейч (Курпун Çерки ачи) арăмĕсемпе тата ытти юлташĕсем те, тăванĕсем, ял-йыш нумай пынă. Ĕçрĕмĕр-çирĕмĕр, юрларăмăр-ташларăмăр, шахматла-картла вылярăмăр. Пакăлтатрăмăр. Василий Игнатьевич Романов парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕнчен Турхана совхоз директорне ĕçлеме каятăп тет. Эпĕ ăна тавлаштарсах ятăм. Ĕненес килмерĕ те.

**1986 çулхи июлĕн 22-мĕшĕ.**

Аннене Вăрнартан пĕр машина вутă турттарса килсе патăм. Куçкă пичче те ялтах. Мана вăл Прокопий Падиреков тимĕрçĕ патне калаçма тесе илсе кайрĕ. Вĕсен авалхи кĕлет сыхланса юлнă. Йывăç ушшăпах питĕреççĕ. Давыд Георгине пытарма хутшăнтăмăр. Ковский йыснана хăйматлăх тунăччĕ те Давыдовсем, эпĕ ачаранах çывăхланнă Георгий пиччепе. Библиотекăри кĕнекесене

вуламанни хăварман пуль вăл. Йăлкăш пит-куçлă, кӳренме пĕлмен хăпартлануллă çынччĕ. Юлашки вăхăтра хăлхи начар илтнипе нушаланатчĕ. Иосиф Шашковпа пĕрле таврăнтăмăр. Хамăр пата илсе кĕтĕм ăна, çур литр эрех уçса ĕçрĕмĕр. Калаçмалли пит нумай. Çырма урлă килне еçсе хăвартăм.

**1988 çулхи январĕн 22-мĕшĕ.**

Пирĕн ялта Çĕрпел ачи Иван Константинович Иванов клуб заведующийĕнче ĕçлет. Вăл «Ентеш» клуб пĕрлешĕвĕ йĕркеленĕ. Литература каçĕсем, ялти паллă çынсемпе тĕл пулусем ирттерет тата ытти нумай культурăллă ĕç тăвать.

Акă мана та вулакансемпе тĕл пулма чĕнчĕ «Ентеш» клуб. Манăн «Юрату кăварĕ» повесть тăрăх вăтам шкулта ачасем сочинени çырнă. «Тăван Атăлта» пичетленнĕскерне ял çыннисем йышлăн вуланă.

Римма Ильинична та хаваспах пулчĕ килмешкĕн. Хамăр ял клубĕ тăвăр пирки Çĕрпелти культура çуртĕнче йĕркеленĕ тĕл пулăва. Кунти 400 вырăнлă залра та ларма вырăн çитмерĕ.



Праках Куçмичăн карчăкки Надежда Матвеевна тупăкĕ умĕнче (сылтăмран сулахаялла): аслă хĕрĕ Уçтен, Маня, Евген, Володя, кинĕ Римма Ильинична.

Виссарион Кожанов сăн ӳкерчĕкĕ (Мăньял Хапăс).

Хĕрӳ калаçу пуçарма пултарчĕ Иванов. 14 çын тухса калаçрĕ, тĕрлĕ çулхи çынсем. Манăн пĕрремĕш учительница Нина Николаевна Михайлова та, Федор Кузьмин агроном та аван калаçрĕç. Мухтарĕç мана, çав хушăрах ырă сĕнӳсем пачĕç.

Пуçран кăларнă шухăшлăх сăнарлăхĕ халăха килĕшни, хумхантарни, хавхалантарни, ырă та çĕнĕ ĕмĕтсем çуратма пулăшни савăнтарать.

**1988 çулхи мартăн 30-мĕшĕ.**

Куçкă пичче Вăрнартан хурлăхлă хыпар пĕлтерчĕ. Паян кăнтăрлапа анне вилсе кайнă! Кил хушшинче кайса ӳксен вырăнпа эрне ытларах кăна выртрĕ. Çут тĕнчери чи хаклă та çывăх, юратнă çын куçĕсене яланлăхах хупрĕ. Мĕн тери пысăк хуйхă.

Тепĕр кунне, хамăрăн машина пулмарĕ те, Вăрнара автобуспа, унтан редакци «Нивипе» яла çитрĕмĕр.

Аннене тупăка тирпейлесе вырттарнă.

Атте сакăр вун иккĕре вилчĕ, анне – сакăр вун саккăрта. Пĕрле вĕсем аллă тăхăр çул пурăннă. Анне çичĕ ача çуратса пиллĕкĕшне ӳстернĕ. Икĕ ывăлне чир шăлса кайнă.

Йывăç ăстаçисен мастерскойне хăпартăм. Аркади Юрки, кӳршĕри Падирек Мишшипе Исай Кули тупăк туса пĕтернĕ. Вĕсене Кăтра Яккупа хамăр Маньăн Борисĕ пулăшнă. Уравăш пульницине виле хучĕ илме Витя Корнилова янă.

Апат хыççăн хамăрăн Борис та çитрĕ. Надя Мускавра института экзаменсем парать. Аннен тăванĕсем таçтан та килчĕç. Манăн юлташсем те пур.

Тимуровецсем чăрăш лăссинчен явнă кăшăл илсе килчĕç. Аннен мăнукĕсем Çĕрпелти йышăну пунктĕнче тата икĕ кăшăл тутарчĕç.

Апрелĕн 1-мĕшĕнче, икĕ сехетре тупăка пӳртрен илсе тухрĕç. Çанталăк ăшăтса пăрахнă та юр хытă ирĕлет. Анне нимрен те мар, вилсен шыва кĕрсе выртасран хăратчĕ. Апла пулмарĕ. Унăн çĕр пӳртне – шăтăка – шыв кĕмерĕ.

Курак Мĕкĕтин Кули лашапа, аннен юлашки ямшăкĕ пулчĕ.

47 çул пурăннă çак пўртре анне, халĕ ĕнтĕ... Килти пысăк хуйха сурăхсемпе чăхсем те сисрĕç пулас, аннене илсе тухсан шăп пулчĕç.

Аннене пытарса килсен 60 çын ытла сĕтел хушшине лартса кăлартăмăр.

**Çирĕм кунран.**

Пирĕн ватă кушак анне вилнĕренпе пўрте кĕменччĕ. Унăн çури те – çаплах. Эпир килсен вăл кĕчĕ те чи малтан кухньăра пулчĕ, унтан тухса мяулатрĕ, çывăрмалли пўлĕме кĕрсе куçĕсемпе аннен вырăнне шырарĕ, вара макăрса тухрĕ те никам патне те мар, Римма чĕрçи çине сиксе хăпарчĕ, мăрлатса ачашланма пуçларĕ. Çакна пăхса ларакан аккасем, Матрўнпе Хăвакла, Шахалккă Хĕветĕрĕн амăшĕ Вера акка макăрса ячĕç. Çĕркаç вĕсем кунтах çывăрнă. Аннене асăннă чух паян пусса çимелли пирĕн чăхсене такам çĕрле вăрланă.

**1988 çулхи майăн 28-мĕшĕ.**

Колхозра Асăну кунне ирттерчĕç. Шăмăршăран çула майлă Амруç Овчинников та яла кĕчĕ. Пĕрле масар çине кайрăмăр.



**Борис Никитин куккăшĕсен, Владимир Кузьминсен килĕнче уйрăлми тăван тусĕпе Виктор Корниловпа савăнать. Борис Кузьмин сăн ўкерчĕкĕ.**

Халăх самай пухăннă. Анчах тĕлĕнмелле, никам каласа йĕркелемесĕр çĕрпелсем хăйсен масарĕ çинче, эпир хамăр çĕр çинче, чикĕ урлă тăратпăр. Петр Шлыков, Александр Ластухин, Валерий Ваганин, Мария Баюкова, Николай Ванюшин, Мария Медведева, ачасем тухса калаçрĕç. Иван Константинович граждан вăрçинче, çĕршывăн Аслă вăрçинче тата фронтовиксенчен юлашки çулсенче кам-кам вилнисен ячĕсене асăнчĕ.

Кун хыççăн пурте масарсене саланчĕç. Эпĕ Симĕс Ваççа, Миххи Ваççа, Çимун пичче ачисемпе тата Мĕкĕте мучи мăнукĕпе пĕрле асăнтăм.

**1982 çулхи сентябрĕн 26-мĕшĕ.**

Кульă йыснан йĕкĕрешĕсенчен пĕри Борисĕ авланать. Евген акка хĕрĕ Лиза упăшкипе тата эпир Риммăпа туя каятпăр. Çул тăршшипех Витя Корниловăн туйĕ пирки калаçса пытăмăр. Тĕрĕссипе ун чухне, 1983 çулхи апрелĕн 2-мĕшĕнче, Витя мар, Галя «авланчĕ» пулас. Туй хыççăнах Витя кĕрӳ Уçтенсем патĕнче пурăнма пуçларĕçке, Хурăнсур çынни пулса тăчĕ.



**Мăн Кульăн йĕкĕрешĕсем авланма пуçланă. Туй вăхăтĕнче (сулахайран сылтăмалла): Сар Якку ывăлĕ Юрий тата Борис Никитин арăмĕпе, Çĕрпелти Васька хĕрĕпе, Вальăпа.**

Ял хушши питĕ çăрăлса кайнă. Атă кунчинчен шыв е пылчăк кĕрет. Корнилов Николайăн ывăлĕ Витя хĕрне илме часах çитеймерĕ, палăртнă икĕ сехет иртсе кайрĕ. Кĕтсе ывăнтăмăр. Килсен, Гальăна лартса ятăмăр та, хамăр çуран Çĕрпел клубне пылчăк ашса хăшăлтатрăмăр. Унта клуб тулли халăх. Эпир сцена çине хăпартăмăр. Ял Совет председателĕ Ваганин, колхозăн тĕп бухгалтерĕ Марков пулчĕç. Ман та сăмах каламалла пулчĕ. Питĕ аван йĕркеленĕ савăнăçлă çырăнмаллине. Унтан эпир каллех çуран Уçтенсем патне хăпартăмăр.

Кайран хĕр илме туй çитрĕ, туй арăмĕсемпех. Гальăна парса ярсан хамăра илме килессе нумай кĕтрĕмĕр, вара каçпа 9 сехетре Çĕрпелне эртелпе çуран ял хыçĕпе кайрăмăр. Ял хушшипе тухма çук. Туй çыннисенчен, Ачча разъезчĕ урлă Вăрнара пуйăспа хăпарса Санарпуçне çуран çитнисем те пулнă. Çапла, аса илсе кулкаламалли те пулнах çав.

Хальхинче Çĕрпелти культура çуртне тӳрех кĕтĕмĕр. Çырăнмалли пĕлĕмре савăнăçлăн саламларăмăр Çĕрпелти Ваçкă хĕрне Вальăна тата Хурăнсурти Мăн Кульă ывăлне Бориса çемье çавăрнă ятпа.

Борисра амăшĕ çĕнĕ çынна çĕнĕ пӳрте кĕртрĕç. Колхоз пулăшнипе вĕсем анчахрах пысăк пӳрт туса кĕчĕç.

Кунашкал хĕрӳ те илемлĕ, янравлă туй эпĕ тахçантанпах курманччĕ-ха, тен, пуçласа куртăм. Туй ачисем хăйсем правур, хĕр çумĕсем, туй арăмĕсем вара... Хамăрăн авалхи кĕпе-тумтир тăхăннăскерсем, ушкăнпа та, пĕчченшерĕн те туй такмакĕсене шăлаççĕ кăна, ташша илĕнтереççĕ çеç. Çĕрпелсемпе çармăссем пĕр-пĕринпе ăмăртса. Урай хăми авăнать, пӳрт кисренсе тăрать.

Туй-тăк туй пулчĕ вара, чăн-чăн чăваш туйĕ! Борис Витя кĕрӳрен ирттерчĕ пек туйăнать.

**1988 çулхи ноябрĕн 12-мĕшĕ.**

Киле çитрĕм. Никам та кĕтсе илекен çук. Икĕ сурăх макрать. Хамăр Ульăсен енчен кушак чупса килчĕ, ура çумĕнче ачашланать.

Маня Йăван Федорча илсе килчĕ. Сурăхсене пусрăмăр. Урăх усрама май çук. Çапла Кузьминсен килĕнчен юлашки чĕрĕ чунсем çухалчĕç. Римма Шупашкартан килсен шӳрпе пĕçертĕмĕр. Ялта пурăнмасан çапла пĕтсе пырать вăл чĕрĕ пурнăç. Кил-çуртне йĕркеллĕ тытса тăрасчĕ хăть.

**1990 çулхи ноябрĕн 17-мĕшĕ.**

Ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсен кунне паллă тăваççĕ. Колхоз председателĕнче хамăр ялти Галки Кĕркури ачи Хĕветĕр ĕçлет. Пултарать çамрăк агроном. Хуçалăх ĕçĕсене лайăх йĕркеленипе пĕрлех вăл ял культуришĕн те нумай тăрăшать, çамрăксем хушшинче спорта аталантарассишĕн хыпса çунать.

Санарпуçĕнче районти слет. Ĕçре палăрнисене унта автобуспа Витя Корнилов илсе кайрĕ. Каçпа культура çуртĕнче савăнăçлă пуху пулчĕ. Тукайсемпе çĕрпелсем те, çармăссем те нумаййăн пухăннă. Илемлĕх пайĕнче Федор Кузьмин манăн «Юлхав ут юрттипе» камите лартса пачĕ, хăй те вылярĕ.

**1993 çулхи февралĕн 27-мĕшĕ.**

Пирĕн ялта çĕнĕлĕх. Хурăнсурсем «Янгорчино» колхозран уйрăлса «Хорнзор» ял хуçалăх юлташлăхĕ туса хунă. Федор Кузьмин ертсе пырать. Тĕп агрономĕ Михаил Максимов, тĕп зоотехникĕ Михаил Кузьмин, тĕп инженерĕ Роберт Петров, тĕп бухгалтерĕ Василий Марков, фермăсен заведующийĕ Павел Филиппов, тĕп строитель тата снабженец Николай Иванов – Лавун ачи.

Правленине сысна фермин хĕрлĕ кĕтесне вырнаçтарнă. Сĕтел-пукан, шкаф тата ыттине те турттарса тултарнă. Пӳлĕмĕсене тин çеç майлаштарма пуçланă-ха.

Эпĕ 10 килограмм сысна ашĕ çыртарса илтĕм, 860 тенкĕ тӳлерĕм. Çĕнĕ хуçалăх мана 1-мĕш номерлĕ накладной çырса пачĕ. Хамăрăн хуçалăха çапла эпĕ пуçласа укçа хыврăм.

«Сирĕн çăмăл алăпа юлташлăх малалла вăйлăн аталанса кайсассăн эпир сире хытă тав тăвăпăр», – терĕç бухгалтерире.

«Пирĕн çемье-йăх кăмăлĕ пекех ырă пурăнăр, ĕçлĕр, тăрăшăр, çĕнтерӳ тăвăр», – саламласа тав турăм эпĕ хамăр ял маттурĕсене.



**1993 çулхи июлĕн 12-17-мĕшĕ.**

Паян Петрав кунĕ. Чиркӳ уявне пирĕн ялта тата Çĕрпеленче питĕ вăйлă тăватчĕç. Таврари ял халăхĕ ĕçсе-çиетчĕ, савăнатчĕ-ашкăнатчĕ, хĕрӳ ĕççи умĕн хастарланатчĕ. Ялта хăна кĕртсе кăларман кил пулман. Хăйсем мĕнле шайра пурăннине пăхмасăр сăра тунă, хăна апачĕ хатĕрленĕ.

Атте-анне хыççăн эпир таврари тăван-пĕтене Петравра хăналаймастпăр ĕнтĕ. Хамăр та хăна вырăнĕнче пулса юлтăмăр. Килте ĕç тума тесе Шупашкартан куçма пуçларăмăр. Малтан Надьăпа кĕрӳ çитсе пӳрте тасатнă, тирпей-илем кӳнĕ. Вĕсем хыççăн Бориспа ывăлĕ Володя тухса кайрĕç. Борис ваттисен йăлине астуса юлнă, кӳршĕри Павликпа арăмне, Катьăна, чĕнсе Петрав кунне пуçланă.

Хăй вăхăтĕнче пирĕн кил-çурт пуян пулнă. Çырма хĕрринченех карта тытнăччĕ, унта сад, мунча пурччĕ. Картине шаларах тытсан мунчи çырма хĕрнех юлчĕ. Кӳршипех кĕретчĕç вăл мунчана. Вăрăм сарайра урапа-çуна «гаражĕ» пекки те пулнă. Майĕпен сарай тăрри пĕтрĕ, пахчара нумай вырăн йышăнать, çавăнпа ăна куçарса çĕнетме шутларăмăр. Правленире тимĕр-бетон юлашкийĕсем тата юпасем çыртарса илтĕм. Стройка

хыççăн тура вĕсем нумай сапăнса выртатчĕç.

Çак ĕçе тума çитнĕ Хурăнсура ман арçынсем. Тимĕр-бетон япалисене вĕсем турттарса тухнă, никĕс хывса хунă. Колхоз автокранĕпе Симĕс Ваççа Мишши тиесе пушатса панă.

Петрав пуçлансан тепĕр кунне вăйлă çумăр ячĕ. Пирĕн ĕç чарăнса ларчĕ. Хамăр тăвансемпе лаçра ĕçсе-çирĕмĕр, пӳртре пĕчĕк ачасем вылярĕç.

Пулăшма аккасен ачисем Радик Ковский, Бориспа Юрка Никитинсем пычĕç. Камантă аптрамасть. Ачисем правур, маçтăр, пурин те ал-ура çаврăнать. Пур енĕпе те пултараççĕ.

Каллех эрех енĕпе проблема. Унта та кунта уйрăм çынсем суту-илӳ тума пуçларĕç хаяр шĕвекпе. Çав хум пирĕн яла та çитрĕ. Кӳршĕри Кăтра Яккун ывăлĕ Володя, Шупашкарта пурăнаканскер, таçтан шур эрех турттарать. Кăтрасем патне çармăс-çĕрпелĕ тăрăнчĕç: çуран та, машинпа та, тракторпа та васкаççĕ. Пенси пачĕç тата çав вăхăтрах... Эпир те сарай патĕнче хыпăнатпăр, вĕсем те... Манăн строительсем те пăсăлма пуçларĕç çав. Радик-Кайăк Ковский офицер службине яланлăхах вĕçлесе гражданкăна таврăннă, эпир те ялта час-часах пулмастпăр. Калаçмалли-канашламалли пурах пуль çав çынсен, хăшĕсем пирĕн çумран йăпăр-япăрах иртсе каймаççĕ, пĕрене-каска çине ларса юмаха яраççĕ. Кĕленче пушанать те – Кăтрасем патне. Маньăсен Борисĕ шӳтле-шӳтлех кам унта миçе хутланине шутласа пынă. «Паян Никит Трофимч чемпион пулчĕ, Кăтрисем патне çиччĕ кайса килчĕ, акă, сарай пĕрени çине картсах хутăм», – тет кулкаласа. Хăйсем те манран, «прорабран», вăрттăн хăтланкаланă-ха. Ман вĕсене ӳсĕртес килмест, вĕсен – хушас килет. Эп аяккалла пăраннă хушăра Яккусем патне чуптарнă та пĕрне, эрех кĕленчисене улма касси хушшине пытарса хунă. Кӳршĕри Оля акка кайран кула-кулах каласа пачĕ.

Сарай пăснă чухне улăм айĕнчен чĕрĕп чĕппи тухрĕ. Хамăр ял вăрманĕнчен пирĕн пата çухрăм ытла пулать. Çавăнтан килсе çăвăрланă-ши? Аккасен мăнукĕсемпе

пирӗн мӑнуксем чӗрӗп чӗппипе выляса ыр курчӗҫ. Читлӗх туса пачӗҫ. Унта вӑл нумай пурӑнаймарӗ. Улӑм айӗнчен тепӗр вилӗ чӗрӗп чӗппи тухрӗ. Мунча пуҫӗнчи сарайӗнче икӗ кролик пурӑннӑ. Павликсен Алеши кролик усратчӗ те, вӗсеннех пулӗ тесе кроликсене хуҫисене патӑмӑр.

Сарая хаваслӑн туса пӗтертӗмӗр, тӑррине тутӑхман тимӗрпе витрӗмӗр, вӑрӑсем ан кӗччӗр тесе алӑкне питӗрмелле турӑмӑр.

Пракак Куҫмич кил-ҫуртне ҫӗнетмелли пӗрремӗш тапхӑрӗ вӗҫленчӗ.

## ЯЛ ПУРНӐҪӖН ТӖРЛЕНЧӖКӖСЕМ

### <u>Вӑрлӑхӗ паха, тӗшшийӗ тутӑ</u>

Ялти кашни тӗл пулу, кашни калаҫу мана хумхантарса савӑнтарать, асаплантарса шухӑшлаттарать, аса илӳ тыткӑнне кӗртсе ӳкерет. Хальхинче те ҫаплах пулчӗ.

Ыран мӑнкун тенӗ кун ҫитрӗм тӑван Хурӑнсур Ҫармӑса. Пиҫнӗ тулӑх ҫӗр, кӑмакаран тин кӑларнӑ ҫавра ҫӑкӑр, кӑчкӑланакан йӑмра шӑрши хула хыҫҫӑн хаваслӑх туйӑмӗн хӑвачӗпе ӳсӗртсе ярать. Кӑтра пӗлӗтсем айӗнче кумлакан уй юрӑҫисем хресчен ӗҫне мухтаса кӗвӗленӗ ҫӗнӗ юрри-кӗввипе чуна ҫӗклентереҫҫӗ. Тӗнчен асран тухми пӗр пӗчӗк те чи пысӑк уҫӑ лаптӑкӗн ӳкерчӗкне курса-туйса пынӑ май, куҫ умне пурнӑҫ ҫулӗпе утакан икӗ ҫын тухса тӑраҫҫӗ.

Ватӑ ҫынсем вӗсем. Иккӗшин те ҫӳҫӗсем кӑвакарнӑ-шурнӑ, пит ҫӑмартийӗсем йӗрленсе пӗркеленнӗ, куҫӗсем.;.. Куҫӗсем вара... хам вӗсене ачаран астуса юлнисемех: Киремет ҫырминчи чӗрӗ ҫӑл куҫ ҫутисем. Ял халӑхӗ хушшинче, тӗнче умӗнче хӑйсен хӑватне-вӑйне, ӗҫченлӗхне-паттӑрлӑхне чӑннипех кӑтартнӑ чӑваш ачисем.

Вун ҫиччӗмӗш ҫулта ҫуралнӑ Николай Иванович Иванов салтака кайиччен те, вӑрҫӑран таврӑнсан та Чапаев ячӗпе хисепленекен тӑван колхозра бригадирта ӗҫленӗ. Фронтри шофер кайран пенсие те шофертанах тухнӑччӗ. Аслӑ Ҫӗнтерӳ умӗнчи кунсенче халӗ вӑл вӑрҫӑра

пулнă юлташне-янташне юлашки çула ăсатнă. «Акă, Александр Семенович Ластухин та вилсе кайрĕ, ветерансен канашне ертсе пыратчĕ, – терĕ те вăл карттусне хыврĕ. – Сахаллансах пыратпăр. Çамрăк чух вилĕм çинчен шутлама та пĕлмен пуль... Вăрçа Польша çĕрĕнче пуçларăмăр та... каллĕ-маллĕ чупса Германире вĕçлерĕмĕр. Ял çумĕнчи машина-трактор паркĕ еннелле пăхса илчĕ те вăл хушса хучĕ: – Колхозăн пĕрремĕш автомашини аса килчĕ. Вăрçă чарăнсан мана хамăн юратнă генерал Мускава хăнана чĕнчĕ. Ушкăнпах кайрăмăр. «Сире, Чапаев ачисене, терĕ вăл, ялта паттăрлăх кăтартса пире çăкăр çитермешкĕн моторлă тăрантас та кирлĕ пулать. Парнелетпĕр полуторка».

Николай Иванович калавне итленĕ хушăрах куç умĕнчен симĕс тĕспе сăрланă автомашина тусан кăларса вĕçтерсе иртрĕ. Номерне те астăватăп: 29-94 ЧА. Вăрнар енчен килекен КамАЗран та хăватлăрах пек туйăнчĕ вăл мана генерал ямшăкĕн çивĕч куçĕнчен çиçсе тухакан иксĕлми вăй-хал çĕкленĕвĕнче.

Шуралса пыракан сухалне шăлса илчĕ те унăн хăйматлăх кĕрӳшĕ Хĕветĕр, шӳтлерех хушса хучĕ: «Ялта шоферсен шкулĕ çав полуторка кабининче пуçланнăччĕ».

Федор Николаевич Анисимов, лаша пăхса йăлăхнăскер, хăй те хурçă урхамахĕн рульне тытса курнă, анчах каярахпа унран шофер мар, таврари чаплă комбайнер тухнăччĕ. Районта миçе хутчен çĕнтермерĕ пуль вăл! Ывăлне комбайнпа тырă вырма, килте купăс калама вĕрентрĕ. Хăçантанпа ăмăртаççĕ ĕнтĕ иккĕшĕ: комбайнпа та, купăспа та. «Утмăл виççĕ тултарсан тин Радик çĕнтерчĕ, кăçал, тен, ĕçлейместĕп те пуль, çамрăксене парас «хурçă карапа», купăс калассипе вара... парăнмастăп-ха: ывăлран та, никамран та», – тесе Кăмаш енчен çывхаракан аслати сассиллĕн кулса ячĕ ялта вăйпа никам илеймен, халĕ те кĕреш юман пек паттăр кӳршĕм.

Епле чĕрĕ пурнăç кĕвви тапса тăрать чунĕпе ватăлма пĕлмен ĕçченсен ăшĕнче. Хамăрăн çырма тăрăх аннă



**Шахалккă Хĕветĕрĕ – Федор Николаевич Анисимов Кайăк – Радик ывăлĕпе.**
**Хĕветĕр амăшĕ Вера Федоровна Анисимова мăнукĕпе.**
**Петр Ковский сăн ӳкерчĕкĕсем.**

вăхăтра та ялта Шахалккă Хĕветĕрĕ текен ăстаçă калакан купăс çеммипе утнă пекех туйăнчĕ. Утнă май çав кĕвĕ вăйланса-вăйланса пычĕ, Анатри Макçăм мучисен Манисем патĕнче вара урăх кĕвве куçрĕ.

Пӳрте кĕтĕм те... çемье концертне лекрĕм. Маня аккан ывăлĕ Миша виçĕ ачине ик енне лартнă та купăса туртать, ашшĕпе пĕрле ачисем чăваш юрри-такмакне шăрантараççĕ. «Пирн Мишшăн паян уяв-çке, тырă акса пĕтернĕ ятпа, – тесе Маня акка мана курка тыттарчĕ. – Ĕçсе пар-ха мăнкун сăрине».

Вăрçă тухнă çул ашшĕсĕр, Ваççук пиччĕшĕсĕр, унтан тем вăхăтран амăшĕсĕр тăрса юлнă, йывăрлăхпа нушалăха парăнман çак чăваш хĕрĕ Володя шăллĕпе пĕртен-пĕр ывăлне мĕнле пăхса ӳстернине аса илнипе куççуль тухрĕ.

Миша ачаранах купăса юратрĕ. Купăс калама çеç мар, амăшĕ пекех ĕçе те юратрĕ. Хисеплĕ колхозница Мария Максимова пекех Михаил Максимов та ялти чи хисеплĕ çынсен шутне кĕчĕ: шоферта, бригадирта тата ытти хуравлă ĕçре те пултарулăхне кăтартрĕ. Халĕ вăл

пĕлтĕртенпе ял хуçалăх «Хорнзор» юлташлăхĕн тĕп агрономĕ. Хирти «Пĕрремĕш концерта» иртнĕ çулта халăх умĕнче ăнăçлă кăтартнă. «Иккĕмĕш концертăн» иккĕмĕш пайне те халĕ кăтартуллăн панă. Авă епле савăнăçлăн, амăшĕ, ачи-пăчи çине ăшшăн пăхса туртать вăл купăса. Уçă чӳречерен пӳрте çĕнĕ чĕрĕлĕх кĕвви – курак-шăнкăрч кĕвви вĕçсе кĕрет.

Çав кĕвĕ манăн хăлхаран кайма пĕлмерĕ. Уçтен аккан менелникĕнче те чуна ыраттарса та, хавхалантарса та янăрарĕ.

Çитмĕл çул тултарнă ятпа саламлакан ял-йыш, тăванхурăнташ сăмахĕсене-саламĕсене кăмăллăн йышăнакан аслă аккан сăнарĕ вăрçă вăхăтне, вăрçă хыççăнхи тертлĕхе пуçа усмасăр тӳссе ирттернĕ хĕр-хĕрарăмăн вилĕмсĕр сăнарне аса илтерчĕ. Сăр хĕрринче те çул çитмесĕрех çĕр чавма, вăрманта йывăç касма, каярахпа тракторпа тертленме, колхозра кунĕн-çĕрĕн тенĕ пек тӳлевсĕр ĕçлеме тивнĕ вĕсене. Фронтран аманса таврăннă Петр Владимирович Ковские качча тухсан та телейне нумаях кураймарĕ вăл. Йысна вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Петр Владимирович литературăна, искусствăна питĕ юратакан çынччĕ. Унашкаллисем ялта татах пурччĕ. Вĕсем хăй вăхăтĕнче кирлĕ пĕлӳ илнĕ пулсан, тен, чăваш халăхĕн паллă çыннисем пулатчĕç пуль. Чухăнлăх, çитменлĕх, вăрçă асапĕ тĕп тунă, пытарнă çав пултаруллă çынсен аталанăвне, анчах хисеплĕ ятне нимле усаллăх та хуплайман. Петр Ковский, Иосиф Шашков, Сергей Александров, Григорий Галкин «ял артисчĕсем» халĕ те куç умĕнчех.

Борис Никитин, купăсне каласа ывăнчĕ пулас та, ман çума пырса ларчĕ. «Çĕнĕ пьеса çырмарăр-и, кукки?» – ыйтрĕ вăл манран. Эпĕ ăна «Чĕркуç шывĕ – чĕрĕ шыв» ятлă пьеса çырнине пĕлтертĕм, каярахпа унăн ал çырăвне вулама парса хăвартăм. Хăй культура çуртне ертсе пынă чухне ялта манăн «Çĕр пики», «Пахус паккусĕ», «Хĕрсĕр ял та хĕсĕр мар» пьесăсене пуçласа халăх умне

кăларнăччĕ. Вĕсене лартаканĕ – Федор Григорьевич Кузьмин, Галки Кĕркури ачи.

Федор Григорьевича ирпе правленире кĕтсе илтĕм. Уйсем тăрăх çаврăннă хыççăн вăл тĕп специалистсемпе калаçма тата ĕç хучĕсем çине алă пусма васкаса çитрĕ. Чăваш ял хуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă агроном бригадирта, сортсем тĕрĕслекен участок пуçлăхĕнче, «Янгорчино» колхоз председателĕнче пултаруллă ĕçлерĕ. Пĕлтĕр хурăнсурсем çĕрпелсемпе тукайсенчен уйрăлса тухсан, «Хорнзор» юлташлăха ертсе пыма пуçларĕ. Студент чухнех спорт ăмăртăвĕсенче республикипе палăрнă Федя Кузьмин çĕнĕ ĕçĕнче те çĕнĕлĕхпе палăрчĕ. Колхоз спортсменĕсем Шупашкарти тата ытти хуласенчи спортсменсене çĕнтерме пултарни вăл хуçалăх ертӳçин çĕнтерĕвĕ те пулнă. Вăл литературăна, уйрăмах драматургине юратнине эпĕ темиçе çул каялла яла таврăнсан аван пĕлтĕм. «Тăван Атăл» журнала вулакансен конференцийĕнче вăл Николай Максимовăн «Синкер» романĕ тăрăх хăй лартнă спектакле кăтартса тĕлĕнтерчĕ. Роман «Тăван Атăлта» пичетленнĕччĕ. Унран вăл пьеса тума пултарнă. Николай Николаевич хăй те курса савăнса ларчĕ роман персонажĕсем чĕрĕлсе тăнине. Режиссури вăйлă. Артисчĕсем чăн-чăн хула артисчĕсем пекех выляреç.

Калаçу чи малтан драматургипе театр пирки пуçланчĕ. «Борис Чиндыковăн «Туй каçхине» калавĕнчен пьеса туса спектакль лартрăм-ха. Вăрнарта смотр программипе кăтартрăмăр. Аван выляреç ачасем. Писательне чĕнсе пĕр-пĕр пысăк сцена çинче тепре вылясшăн. Сирĕн «Хĕрсĕр ял та хĕсĕр мар» пьесăпа та çĕнĕрен спектакль лартасшăн. Шупашкарсене те кăтартма ĕмĕтленетпĕр. Ялта халăх театрĕ кирлех. Районтан та, тĕп хуларан та пулăшу памалла пек ку ĕçе малалла аталантармашкăн», – тесе хавхаланса кайрĕ çамрăк режиссер.

Çамрăк хуçалăхăн çав тери йывăр тапхăрĕнче те унăн хуçи те, Хурăнсур Çармăсри ватти-вĕтти те тенĕ пек, –

пурте уçă кăмăллăн, илемлĕ чун хаваллĕн пысăк ĕмĕтпе пурăнаççĕ, ĕçлеççĕ, пуçа усмаççĕ, çĕнтереççĕ. Культура ыйтăвĕ вĕсемшĕн – пурнăç ыйтăвĕ. Çавăнпа вĕсен чунчĕри илемлĕ, сăнĕ-пуçĕ хитре, тумĕ-çиййĕ капăр, ĕçĕ-хĕлĕ тутă тĕшĕллĕ. «Илем» хаçат, 12.05.1994 ç.

## Ял илемĕ – халăх илемĕ

Кашни тĕл пулмассерен Федор Григорьевич Кузьмин ял нуши-терчĕ, ял çыннисен хастар ĕçĕ-хĕлĕ çинчен сăмах пуçарать. Урăх ним çинчен те калаçмалли çук пулĕ унăн, тесе шухăшлатăн тепĕр чухне. Пур-ха унăн калаçу теми, тем пирки те, анчах паянхи пурнăç аталанăвĕнчи улшăнусем çамрăк пуçлăхăн чун-чĕрине ытла та тарăн кĕрсе ларнă иккен.

Малашсăрлăх ялсене пĕтерсе колхозсемпе совхозсен тĕп усадьбисене хулалатса яма пуçланă хум пирĕн пата та çитсе çапнăччĕ çав.

«Эх, – тет вăл тарăхарах, – çўлтен хушнине пурнăçласа пуянлатрăмăр тĕп ялсене, пирĕн ял пеккисем вара, чура ялĕсем пек, чухăна тăрса юлчĕç. Пурнăç улшăнса пынă май, пирĕн ял çыннисен те куçĕ уçăлчĕ. Ăçтан пĕлме пултарнă-ха эпир, пирĕн ялсене, пысăк колхоза пĕрлештерсен, мĕнлерех чике тăршшĕ лартнине? Çĕрпелсем хăйсен тăмлă çĕрĕсене пирĕн яла тĕкнĕ, пирĕн хура тăпраллă лаптăксене хăйсем çавăрса илнĕ. Мĕнле майпа-ха? Пысăк колхозăн пусă çаврăнăшне çĕнĕлле йĕркелесе.»

Тахçанах пуçланнă хирĕç тăру хĕрсе çитнĕ те вара «Янгорчино» колхоз çурмалла пайланнă. Пĕртте ўкĕнмеççĕ ял çыннисем. Хурăнсур халăхĕ каллех малтанхи пек паттăрла ĕç тăвать. Ирĕклĕх вăй хушать. Çамрăксемпе çанă тавăрса çĕнĕлле, хамăрьялла ĕçе тытăннă. Машинăпа трактор паркĕ тунă, пилорама лартнă, фермăсене çĕнетнĕ, техника туянса пыраççĕ. Çынсен кăмăл-туйăмĕ, психологийĕ хурăнсурла улшăнни пурне те савăнтарать. Никама та пуç çапмалла мар-çке, пур ыйтăва та хăйсеннех эртелпе татса пама тивет. Никама

та улталаса аякка тăратса хăварас темеççĕ. Хуçа пÿлĕмĕнче ялан çын. Федор Григорьевич пурне те ăшшăн йышăнать. Кам та пулин кантурта кил-çурт ыйтăвĕпе пырсан, вăл ăна пĕртте кăмăлсăр кăларса ямасть, май килнĕ таран мĕнле те пулин ырă тума май шырать. Кашни вак-тĕвек ыйтăва татса пани вăл пĕрлешÿллĕ хуçалăхăн чи пысăк ыйтăвне татса паниех-çке. Халăх кăмăлĕ – ял кăмăлĕ. Çав кăмăл уçă, хăватлă пулмалла. Çакна ăслă педагог пек ăнланать вăл. Çавна май хăйсен çемйине аса илет:

«Вĕлле хурчĕ пекех сĕрлеттĕмĕр. Пирĕн çемьере кашни çăкăр тĕпренчĕкĕ, кашни тумтир авраш<br>тавращĕ шутра пулнă. Пурнăç хакне эпир, вунă ача, сăмса шывне çанăпа шăлма вĕреннĕ чухнех хамăрăн выçăллă-тутăллă хырăмпа, çăпата-фуфайкăран уйрăлайман кĕлеткепе туйса-тÿссе курнă. Тавах аттепе аннене сывă ÿстернĕшĕн, тавах кÿршĕ-арша, тăван-пĕтене, ял-йыша пире ура сырма пулăшнăшăн.

Атте-анне ĕçченлĕхĕ пире кахал пустарман. Урам тăрăх йытă хăваласа çÿремен эпир. Ĕçлемелле, вĕренмелле, ăсталăха туптамалла, кил-çурт çавăрмалла пулнă пирĕн. Уçтен акка медицина енĕпе хăй çулне тупрĕ, манăн агроном, Миша шăллăмăн зоотехник пулма тÿр килчĕ. Ыттисем те пурнăç çулĕпе йĕркеллех утаççĕ. Анне калатчĕ, пĕр хăлхара ман эсĕр янрани, тепĕр хăлхинче – трактор кĕрлет. Анне, Евдокия Кирилловна Кузьмина, хĕрарăмсен трактор бригадинче ĕçленĕ-çке. Вăрçă вăхăтĕнче, вăрçă чарăнсан та. Мĕнле йывăр пулнă пуль вĕсене.

Атте, Григорий Кузьмич Галкин, вăрçăран аманса таврăннă хыççăн, колхозăн аслă конюхĕнче чылай хушă хăйĕн ĕçне юратса туса пынă.

Атте-аннене, вĕсемпе тантăш çынсене аса илетĕп те, хальхи вăхăтрисем çине пăхатăп та, шутлатăп: епле пуян чунлă иккен хресчен, çĕр çынни. Çĕр сĕткенĕ – çĕршыв сĕткенĕ вăй парса тăрать вĕсене».

Кашни килте тенĕ пекех мухтамалли çын пур ялта. Эпĕ шутланă пекех хуçа та йĕркипе асăнать вĕсене:

**Çил çунат урхамахĕн юланутçи Галкки Кĕркурипе хурçă ут ямшăкĕ Куçма Ултуттийĕ тата вĕсен ачисем.**





Василий Романов, Костя Артемьев, Валерий Васильев трактористсем, Валерий Павлов, Витя Корнилов шоферсем, Василий Евдокимов тимĕрçĕ, Николай Моисеев, Михаил Падиреков хăма çуракансем, Раиса Моисеева, Нина Германова, Любовь Ильина ĕне сăвакансем, Людмила Семенова, Раиса Гаврилова, Людмила Егорова, Марфа Емельянова сысна пăхакансем, Юрий Ильин, Герман Егоров, Николай Крислов, Анатолий Антонов пăру самăртакансем, Анатолий Ярушин лаша пăхакан, Зоя Шашкова строитель тата ытти нумай-нумай ĕçчен аллипе тĕрекленет хуçалăх. Тыр-пул, хăмла, çĕр улми, сухан ӳстернĕ çĕре 224 килтен 350-450 çын тухать. Килĕшӳпе ĕçленĕ май, кашнин хавхаланăвĕ, хуравлăхĕ пысăк. Мĕн чухлĕ ытларах тупăш илетĕн, çавăн чухлĕ пуянрах пулатăн-çке.



**Федор Кузьмин, Анатолий Хум поэт (Руннă), Владимир Кузьмин писатель тата Хурăнсур Çармăс клубĕн заведующийĕ Иван Иванов Чăвашсен обществăпа культура центрĕ кăларакан «Вучах» хаçат уявĕнче. Шупашкар. 1991 çул.**

**Борис Иванов сăн ӳкерчĕкĕ.**

Çакна ăнланса хăйсен тивĕçне ял туйăмĕпе пурнăçласа пыраççĕ уй-хир ĕçне ертсе пыракан Михаил Максимов, фермăсен пуçлăхĕ Павлик Филиппов, стройка

хуҫи Николай Воробьев, механизаторсен ертӳҫи Роберт Петров. Вĕсенчен питĕ нумай килет хуҫалăх аталанăвĕ.

Хурăнсурта ял халăхне тăранса пурăнмалăх ҫĕрĕ ҫитет, вăрман пулăшать, выльăх-чĕрлĕх валли ҫырмиҫатри пур. Халăх сĕнĕвне шута илсе правлени усăллă ҫĕнĕлĕхсем пурнăҫа кĕртет, Вăрнарти сĕт-ҫу завочĕ укҫа вăхăтра тӳлемест. Ҫавăнпа сунă сĕте тӳрех Шупашкарти магазинсене куллен ăсатаҫҫĕ, вĕсем тӳрех укҫине параҫҫĕ, тата – ытларах та. Макарон кăларма пуҫланă. Аш-какай, пулă тĕтĕмлесе сутаҫҫĕ. Ҫĕвĕ цехĕ ĕҫлет. Ҫĕн автобус туяннă та, киввинчен куҫса ҫӳрекен лавкка тунă. Ҫĕнĕ автобусĕ Хурăнсуртан Шупашкара эрнере тăватă кун пассажирсем турттарать тата коммерци рейсĕсем тăвать.

Ку ахăр саманаллă пурнăҫра та пуҫа усмаҫҫĕ хурăнсурсем. Ял халăхĕ чакмасть. Тăванлăх туртăмĕ ҫамрăксене тăван ял ҫумнех пăталать. Ҫĕнĕ ҫул тĕлне ҫулталăк хушшинче ҫĕнĕ урам ҫуралчĕ – Ҫамрăксен урамĕ. Ун ҫумĕнчех парк, стадион пулмалла.

Культурăна аталантараҫҫĕ. Ял илемĕ халăх илемĕ пултăр тесе май килнĕ таран тăрăшаҫҫĕ.

«Ял ҫынни ĕҫпе кăна мар, чун-хавалĕпе те пуян, ҫĕкленӳллĕ пултăр тетпĕр-ҫке, – хĕпĕртӳллĕн тăсать сăмахне Федор Григорьевич. – Ҫавăнпа манăн вĕсен пултарулăхне ăс-хакăл енчен те ҫĕклес килет. Вĕсене хорта юрлаттарса, спектакльсенче выляттарса илем тĕнчине кăларма тăрăшатăп. Эпир те ҫĕрпе пĕлĕт хушшинче пурăнатпăр пулсан, мĕншĕн-ха пирĕн те тĕнче илемĕпе киленес мар? Хамăр ялти Владимир Кузьмин писателĕн «Ҫĕр пики» пьесинчи Хĕветут мучи ҫапла калать: – Ăшă туйăмлă, ҫунатлă пулар. Культура ыйтăвĕсене пăрса хăваракансен ăшри пăрне хăвăртрах ирĕлтересчĕ. Пурнăҫ хĕвелĕ ҫине уҫҫăн тухса сӳрĕклĕхе ҫунтарасчĕ те ҫивĕчлĕхе чĕртесчĕ. Илем кунĕшĕн, тăвансем!»

Ҫапла, ял илемĕшĕн, Илем кунĕшĕн ĕҫлеҫҫĕ, кĕрешеҫҫĕ, пурăнаҫҫĕ Хурăнсур Ҫармăс ҫыннисем. «Тăван Атăл», 1995 ҫ.

## «Çăпата» – хитре эсĕ тупата

Шупашкарти оперăпа балет театрĕн сценине хурăнсурсем тултарса лартсан, зал тăвăллăн алă çупса ячĕ. «Хорнзор» юлташлăхăн фольклор ушкăнĕ Вăрнар ентешлĕхĕн уявĕнче хăйĕн пултарулăхне тивĕçлипе кăтартрĕ. Ял «артисчĕсем» фойере те сăра пички çĕклесех ташша сӳрĕç.

Чăваш патшалăхĕн кунне уявланă чухне «Çăпата» пултарулăх ушкăнĕ Чапаев скверĕнчен пуçласа Атăл хĕрне çитиччен мăн урампа юрласа-ташласа халăха тĕлĕнтерчĕ. Хамăр ялти сакăр вунă «артист» çумне эпир те мăшăрăмпа хутшăнса савăнтăмăр.

«Çăпата» ансамбль сакăр вуннăмĕш çулсен пуçламăшĕнче çуралнă. Амăшĕ унăн Филимон Иванович Шашковăн талантлă хĕрĕ Ираида пулса. Çăпата сырнă, чăваш тумĕ тăхăннă çамрăк хĕрсем ун чухне Мускавах çитнĕччĕ. Чăваш ташшине СССР халăх хуçалăх аталанăвĕн выставкинче кăтартса кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ.

Ираида Филимоновна ялтан кайсан пĕр вăхăт ансамбль ташшин хĕрĕвĕ чакнăччĕ. Федор Григорьевич ăна çĕнĕлле чĕртсе яма шут тытнă. Шăллĕне Мишăна çак



«Çăпата» ансамбль хĕрĕсем.
И.Журавлев сăн ӳкерчĕкĕ.

ĕçе йĕркелеме хушнă. Клуб ертӳçи Кузьмин пиччĕшĕн сĕнĕвĕпе хавасланнă, пултаруллă çынсене пĕр çĕре пуçтарнă, баянист, концерта ертсе пыракан шыраса тупнă. Ялта баянист пулман пирки кӳрше каймалла пулнă. Хăй вăхăтĕнче çынсем пек колхоз шучĕпе хатĕрлеймен çав Хурăнсур валли ăстаçă музыкант. Çапла ватти те, вĕтти те туртăннă клуб сцени çине. Федор шăллĕне вĕçĕмсĕрех пулăшнă, хăй те халăхпа пĕрле юрланă. Уйрăм юрăçсем, ташăçсем палăрнă. Хăшĕсем çемйипех хутшăннă. Акă пирĕн кӳршĕри Михаил Максимов хăйĕн мăшăрĕпе Людмила Николаевнăпа пĕр концерт та сиктермен. Зоя хĕрĕ, Андрейпа Володя ывăлĕсем ташлама пит ăста. Алевтина Федорова воспитательницăпа Митя ывăлĕ, Тамарăпа Елена Гавриловасем тата хĕрĕсем – ташă ăстисем.

Вăрнар поселокĕ пуçланнăранпа 100 çул çитнине халалланă ĕçпе юрă уявĕнче, республикăри халăх театрĕсен «Ахрăм» фестивалĕнче пултарулăх ăсталăхне тивĕçлипе кăтартнă чапа тухнă коллектив. Ахальтен мар пултарулăх ушкăнне халăх ансамблĕ ятне панă.

Çакăн хыççăн ансамбле кӳршĕ ялта Хирпуçĕнче çуралса ӳснĕ Анатолий Никитин композитор профессиллĕ пулăшу пачĕ. Паллă юрăç сĕннипе эпĕ ял пурнăçĕ çинчен сăвăсем çыртăм. Вĕсемпе вăл сюита çырчĕ. Сюитине Хурăнсур хĕрĕсем Шупашкарти «Салют» керменте ташласа-юрласа шăрантарчĕç – композитора аллă çулхи менелникĕ ячĕпе саламларĕç.

Иртнĕ çулла тăван Хурăнсур 320 çул тултарнине паллă тунă кун урамри сцена çинче «Çăпата» ушкăнĕ çав сюитăпа ял халăхне тата хăнасене хаваслантарчĕ. 2000 çул, январь. Пуçласа пичетленет.

**«Хурăнсур» сюитăна кĕнĕ сăвăсем:**

**<u>Çĕнĕ çула тупрăмăр</u>**

Уйрăлса мăн колхозран
Юлташлăха куçрăмăр.
Ушкăнпа мĕнпур вăйран
Ăмăртăва тухрăмăр.

Ай-яй-яй, ай-яй-яй, ăмăртăва тухрăмăр.
Тар тăкса хамăр уйра
Пуянлăха пухрăмăр.
Кĕркунне çитсен туйра
Хĕрӳ ташша ятăмăр.
Тăпăр-тăпăр-тăпăртăк, хĕрӳ ташша ятăмăр.
Уйрăлса тĕп çемьерен
Нимепе пӳрт лартрăмăр.
Çамрăксен урамĕнче
Çĕнĕ çула тупрăмăр.
Ай-яй-яй, ай-яй-яй, çĕнĕ çула тупрăмăр.

1998 çулхи кăрлачăн 18-мĕшĕ.

## Çут малашлă тăвансем

Харăс ĕçе пуçлатпăр та
Хастарланса тарлатпăр, тарлатпăр.
Хавас уяв тăватпăр та
Ытакланса юрлатпăр, юрлатпăр.
Эпир кам, эпир кам?
Хурăнсур Çармăс каччисем,
каччисем –
Никам çĕнмен паттăрсем, паттăрсем.

Харăс вăййа тухатпăр та
Акăш карти çавратпăр, çавратпăр.
Çăлтăрсемпе вылятпăр та
Шурăмпуçпе ташлатпăр, ташлатпăр.
Эпир кам, эпир кам?
Хурнсур Çармăс пикисем,
пикисем –
Никам тытман акăшсем, акăшсем.

Харăс утса каятпăр та
Пурнăç çулĕ хыватпăр, хыватпăр.
Савса ача тăватпăр та
Ял-йышăмпа хунатпăр, хунатпăр.
Эпир кам, эпир кам?
Хурнсур Çармăс çемйисем,

çемйисем –
Çут малашлă чăвашсем, чăвашсем.

17.01.1998 ç.

## Эпир пултаратпăр

Анаталла, тăвалла
Халăх утать уялла.
– Эпир мар-ши çав халăх?
– Эпир, эпир – ĕç халăх.
Ӳстеретпĕр тыррине
Кĕтсе унăн ыррине.
Шăваратпăр купăста
Ташласа хут купăспа.
Хĕрететпĕр пан улми,
Кăларатпăр çĕр улми.
Улăхатпăр уçлăха
Хăмлапа хăват хушса.
Анаталла, тăвалла
Халăх утать ялалла.
– Эпир мар-ши çав халăх?
– Эпир, эпир – вут халăх.
Таврăнатпăр килсене
Канма çĕнĕ пӳртсене.
Кил тавра ача кулли,
Выльăхĕ картиш тулли.
Йăл кулатпăр пĕр-пĕрне,
Хурăнташ, тăван пĕрле.
Вăйă пуçлатпăр каçсенче
Тулли уйăх çутинче.

1998, кăрлач, 19.

## Улми аякка ӳкмест

Нина Николаевнăпа Иосиф Михайлович икĕ ывăлпа икĕ хĕр парнеленĕ чăваш халăхне. Михайловсен ачисем, çемье чăмăртаса, Хурăнсур Çармăсри авалхи йăха малалла тăсаççĕ. Валерий Иосифовичăн Максимĕ Мускаври кооператив университечĕн Шупашкарти



**Иосиф Михайлович Михайлов Кольăпа Валерине хăйĕн мотоциклĕпе ярăнтарма хатĕрленет.**
**Петр Ковский сăн ўкерчĕкĕ.**

институтĕнче виççĕмĕш курсра вĕренет. Йăмăкĕ Елена та пиччĕшĕн çулĕпех каясшăн, иртнĕ кĕркунне çак аслă шкулăн студентки пулса тăчĕ. Ашшĕ-амăшĕшĕн ку, паллах, пысăк савăнăç. Интеллигент çемйинче ўснĕ, хăй те Хусанти авиаци институтĕнче аслă пĕлў илнĕ Валерий Иосифович вĕсен малашлăхĕшĕн чунтан савăнать. Асламăшĕ тата епле хĕпĕртет-ши?

Хурăнсурта ватлăхне пĕччен кĕтсе илнĕ Нина Николаевна ывăл-хĕрне те, мăнукĕсене те кунĕн-çĕрĕн кĕтет, вĕсен ĕмĕт-туйăмĕпе, савăнăçĕ-терчĕпе пурăнать ĕнтĕ. Мăшăрĕпе Иосиф Михайловичпа юнашар шкулта ĕçлесе тăван ял ачисене ĕмĕр тăршшипе вĕрентсе çутă çул уçса панă таврари тава тивĕçлĕ çынсем. Çав çутă çул çине утса тухмашкăн хăйсен пепкисене те çирĕп утăм вăйлатса панă. Ырă кăмăлĕпе, пуян ăс-тăнĕпе, çирĕп йĕркелĕхпе мăнукĕсене те таса чунлă, халăхра усăллă

çын пулма пĕчĕкренех хăнăхтарма çине тăрать тава тивĕçлĕ учительница-асанне. Кутамккаллă-чăматанлă студента ăсатса-кĕтсе илесси уншăн хăнăхнă йăла. Ачисем тăтăшах аслă шкулта вĕреннĕ-çке – аслинчен пуçласа кĕçĕннине çитиччен.

Ăсатса-кĕтсе илесси... Хурлăхлă та, савăнăçлă та... Çирĕм çул каялла Валерий Хусантан дипломпа çемьене тепĕр телей çути илсе килнĕччĕ. Ун чухне ашшĕ те пĕрлех савăннăччĕ. Иосиф Михайлович вăрçăра, уйрăмах Беларусь вăрманĕнче партизанра сывлăхне хавшатнă чăваш паттăрĕ, пенсие тухнă хыççăн, ачисене пама пултарнă телей савăнăçĕпе йăпанса нумаях пурăнаймарĕ çав. Нина Николаевнан халĕ çемье сывлăшне пĕччен тасатса имлеме тивет.

Ытти ачасемпе пĕрле Валерий кашни кăрлачра хăйне çуралнă кунпа саламлама çемйипе килни ватă хĕрарăм-амăшĕшĕн пурнăçне малалла тăсма пулăшнăнах туйăнать. Пуш уйăхĕнче ывăлĕн хĕрĕх пилĕк çулне мăн çемьепе, тăван-пĕтенпе, ял-йышпа лăпкăн, çывăх туйăмлăн уявласа паллă турĕç.

Институтра епле тăрăшса вĕреннине, шавлă мăн хулара мĕнле пурăннине, студентсен ĕçне-хĕлне, малашлăх ĕмĕтне ачи йĕрки-йĕркипе каласа панине аса илсе ларать амăшĕ час-часах. Вĕренсе тухсан тӳрех вăл Шупашкара кайрĕ, электроисполнительнăй механизмсем кăларакан заводра тĕп конструктор



**Нина Николаевна хăйĕн вĕренекенĕн Владимир Кузьминăн менелникĕнче Çĕрпелти культура çуртĕнче. 1997 çул.**

пайӗнче инженер-конструкторта виҫӗ ҫул ӗҫлерӗ. Урӑх ҫӗре куҫарсан вун ҫул пӗр вырӑнтан тапранмарӗ, республикӑри капиталлӑ строительство управленийӗн ятарлӑ ӗҫсем тӑвакан пая ертсе пычӗ. 1988 ҫултанпа вара «Союзлифтмонтаж» акционер обществин Чӑвашри филиал хуҫийӗ. Килӗнчи машинипе директор хӑй ҫуралса ӳснӗ яла амӑшӗ патне пӗрмаях парнепе килет, амӑшӗн юратӑвне, ӑшӑ кӑмӑлне, ӑслӑ сӑмахне пӗрле илсе каять.

Ачин ӗҫӗ-хӗлӗ ӑнса пынишӗн мӗн тери савӑнать Нина Николаевна. Вӑл халӗ Валерин ӗҫӗнче мӗн-мӗн пулса иртнине ял пурнӑҫӗ пекех пӗлет. Коллективӗсенче унӑн аллӑ пилӗк ҫын иккен. Ялти ӗҫре пиҫсе тухнӑ маттурсене ытларах хисеплет. Пӗр тӑвансен пӗрлӗхне, ҫирӗплӗхне юратать. Хӑйӗн ҫыннисене шанать, вӗсенчен яланах ыррине кӗтет вӑл.

Ҫӗнӗ ҫуртра лифт майлаштарса лартса ӗҫлеттерсе ярасси ҫӑмӑл мар иккен. Строительсем ку енӗпе маҫтӑрах пулманнипе чылай кӑлтӑк туса хӑвараҫҫӗ, мотажниксем вара вӗсен йӑнӑшне те нумай тӳрлетеҫҫӗ, ӗҫӗнче кашни миллиметрӗ шутра пулмалла тет. Тӗрлӗрен ӗҫре хӑнӑхнӑ чӑваш маҫтӑрӗсем хамӑр патра кӑна мар, Хусанта, Чулхулара, Мускавра, Питӗрте лифт лартса ҫӳреҫҫӗ. СШАпа Турци фирмисенчен ырӑ ят илтни вӗсемшӗн чи вӑйлӑ хак шутланать. Ӑсталӑхӗ, пултарулӑхӗ тӗнче шайне ларнишӗн ывӑлӗ хӑйӗн эртелӗпе пӗрле савӑнни – амӑшӗн савӑнӑҫӗ те. Ывӑлӗ йӑх ятне, ял ятне, чӑваш ятне тӗнчере яманшӑн, чапа кӑларнӑшӑн ма савӑнас мар-ха амӑшӗн! Чӑн-чӑн ҫын, ҫӗршыва юрӑхлӑ ҫын пултӑр тесе ҫуратса ӳстернӗ-ҫке вӗсем ачине! Тӑванлӑх туйӑмне, ентешлӗх тивӗҫне, этем ыр кӑмӑллӑхне ывӑлӗ ҫӳлте, чӗрере тытма пӗлнишӗн Нина Николаевна питӗ кӑмӑллӑ. Ырӑлӑх ячӗ – ҫемье чысӗ, йӑх ячӗ.

Ӗмӗрӗпех сад ӳстернӗ Хурӑнсурти Михайловсен йӑхӗнче. Авалхи сад пахчи халӗ те чечекленсе, сарӑлса ешерет, тутлӑ улма пӗҫерет, тутӑ тыттарать. Улми йывӑҫҫинчен аякка ӳкмест тени тӗп-тӗрӗсех иккен.

Михайловсен çемйин чĕрĕ улмийĕсем те хăйсен çумĕнчех, халăх тымарĕнчех. Чăваш сĕткенĕнчех – çынна тутă паракан çĕртех. «Ялав» журнал, 5 №. 1996 ç.

**Çитмĕл çул савмалăх çеç вăл...**

Яла кайсан Çĕрпел ял администрацийĕ умĕнче куртăм та ăна, Константин Васильева, тĕлĕнсех кайрăм: ĕçре иртнĕ çулсем те йăлттамлăхне пусарайман, çамрăклăх куллин çиçкĕнне тĕксĕмлетеймен. Вăй питти, хĕрарăм савмалли хĕрӳ арçын. Автобусра Вăрнара, килне, ларса кайрĕ. Çуралнă ялне, Хурăнсур Çармăса, аккăшĕсем патне пулăшма килнĕ-мĕн.

Константин Васильевич пирĕн ялăн илемлĕ вырăнĕнче, Асанхăтлă çырми виçĕ еннелле юпленнĕ çĕрте, тĕреклĕ хуçалăх тытса тăнă хресченсен йăхĕнчен çут тĕнчене тухнă. Ашшĕ, Васли Якăльч, манăн асаттепе, Куçма Яккăльчпа, пĕр тăван пулнă, Мăньял Хапăсри Йăкăнатăн Христина ятлă хĕрне кăмăлласа, авланнă. Вĕсен аслă хĕрĕ, сакăр вуннăран иртнĕ Матрӳн акка, таплаттарса çӳретха, сĕт ĕçмелĕх качака усрать, ашшĕ-амăшĕн килне тытса тăрать, кӳршĕсене те, пире те хуçалăх ĕçĕнче пулăшать. Иккĕмĕш хĕрĕ, Хăвакла



**Константин Васильевич Васильев сержант, «Т-34» танкăн оруди командирĕ. Саратовра. 1946 çул.**

акка, Петр Иванов–Пумпур ăста комбайнерпа пĕрлешсен, вунă ача çуратса ӳстерчĕ: пурте сывах пурăнаççĕ, амăшне ачи-пăчипе, ĕçĕ-хĕлĕпе савăнтараççĕ. Хăвакла акка хĕр чухне пирĕн кӳршĕри Симĕс Ваççан аслă пиччĕшне

Михалана качча тухнӑ, вӗсен Толя ятлӑ ывӑл ҫуралнӑ, ӳссен вӑл механизатор пулчӗ. Упӑшки вӑрҫӑран таврӑнайман пирки аккан тепӗр арҫын тупмалла пулса тухрӗ.

Васли Якӑльчӑн кӗҫӗн ывӑлӗн Куҫкӑн ҫӗнӗ пурнӑҫра ҫӗнӗ шухӑш ҫунатланнӑ, анчах ҫав вӗҫев ҫунатне вӑрҫӑ хӗҫӗ касса татнӑ. Анӑҫран талпӑнса килнӗ аҫтахасене тӗп тумашкӑн нумайрах та нумайрах салтак ыйтнӑ Тӑван ҫӗршыв. Акӑ вун ҫиччӗрисене те алла пӑшал тыттарнӑ. Хӗрсене тин кӑна вӑрттӑн юратма пуҫланӑ Костя Васильева та повестка параҫҫӗ.

Хаяр вӑрҫа хутшӑнать ҫамрӑк танкистсен батальонӗ. Ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн К. Васильев Саратовра, Вольскра хӗсметре тӑрать. Ҫавӑн чухне яла курма килсе каятчӗ. Пӗррехинче мана пӗрле илсе ҫӳрерӗ. Колхозри чи йӑрӑ ӑйӑрсенчен пӗрне, вырӑс рысакне, кӳлсе панӑччӗ ӑна. Тӑрантаспа эпир Упнере, Кивьял Хапӑса, Чиркӳллӗ Хапӑса тӑвансем патне кайса килтӗмӗр.

Кӗтсе илетпӗр те ӑсататпӑр салтака... Аллӑ иккӗмӗш ҫулта тин ячӗҫ ӑна ҫартан. Чӗрӗк ӗмӗрӗ вӗҫленнӗ тӗлнелле вара халӑх хуҫалӑх ӗҫне тӗплӗн пикенчӗ. Ашшӗ тахҫанах ҫук, пиччӗшӗ вилнӗ, килте аслӑ акӑшӗпе амӑшӗ кӑна, пӳрт ҫӗнӗрен тумалла. Ялта выҫӑллӑ-тутӑллӑ пурнӑҫ. Нуша ӑна Вӑрнаралла хӑвалать. Унта МТСра ӗҫе вырнаҫать, хӑйӗн юратӑвӗпе тӗл пулать. Хамӑр ялпа кӳршӗллӗ Элмен Сунарти Настя, апат-ҫимӗҫ комбинатӗнче ӗҫлекен кӑмӑллӑ, илемлӗ хӗр, сават ӑна. Кӗҫех пӗрлешеҫҫӗ. Пасара хирӗҫ пысӑках мар йывӑҫ пӳртре, халӗ те сыхланса юлнӑ-ха вӑл, пӗр ансӑр пӳлӗмре хӗсӗнсе пурӑнатчӗҫ. Унтах вӗсен малтанхи ачисем ҫуралчӗҫ. Майӗпен укҫа-тенкӗ пухса, хыткаласа пурӑнса Васильевсем Мичурин урамӗнче хӑйсем йӑва ҫавӑрчӗҫ. Вун иккӗмӗш ҫуртра ҫавӑнтанпах пурӑнаҫҫӗ. Зинӑпа Вова ҫумне Оля, Юра хушӑнчӗҫ. Халӗ кашниннех хӑйӗн ҫемье. Владимир Константиновичӗ райсовет ӗҫтӑвкомӗнче тата Вӑрнарти ытти хуравлӑ вырӑнсенче ӗҫлерӗ, халӗ «Спецмонтажгаз» акционер обществин куҫса ҫӳрекен



**Çĕрпелти автобус остановкийĕнче (сулахайран сылтăмалла): Çумкка Ваççи – Василий Петрович Петров – Пумпур кĕрӳшĕ, Фекла Васильевна Иванова, Римма Ильинична Кузьмина, Матрена Васильевна Яковлева, Нина Петровна Петрова. Матрюнпе Хăвакла аккасем вĕсене Шупашкара ăсатаççĕ. 1990 çул.**
**Владимир Кузьмин сăн ӳкерчĕкĕ.**

колоннин Вăрнарти филиалне ертсе пырать.

Салтака кайиччен эпĕ ялсем тăрăх кино кăтартса çӳренĕ вăхăтра, аллă пиллĕкмĕш çулта, Куçкă пичче Мăн Турхан уйĕнче çĕнĕ комбайнпа тулă вырса çапатчĕ, чылай каярахпа ăна Шупашкар çулĕ çинче самосвал-ЗИЛпа чупнине асăрхаттăм. Ун хыççăн çăмăл автомашина, пĕчĕк грузовик-УАЗ мĕн чухлĕ тусан çĕклемен пуль Вăрнар çулĕ çинче.

Ĕçпе «Сельхозтехника» уйрăмне пырсан эпĕ картишĕнче кашнинчех унпа тĕл пулаттăм. Чи пултаруллă та хисеплĕ ĕçченсен Мухтав ретĕнче Куçкă пичче мана сăн ӳкерчĕкрен ăшă куллипе саламлатчĕ. Поселокра, районта ăна «Костя», «Костя Васильев», «Константин Васильевич», «Дядя Костя», Хурăнсур Çармăсра «Куçкă», Элмен Сунарта «Куçкă кĕрӳ» теççĕ. Арăмĕшĕн – юратнă Костя.

Ял пурнăçне çĕнетме, çĕршыв хăватне çĕклеме питĕ нумай пулăшнă ĕçченсен йышĕнче çын пулнишĕн хĕпĕртет те, хăпартланать те Константин Васильевич. Вăтăрмĕш çулта йĕркеленнĕ çак хĕрӳ коллектив уншăн çарти йĕркеллĕ танк полкĕ пекех туйăннă. Ялта

газогенераторлă тракторпа ĕçленĕ Салакайăк Ахванеçĕ те унпа юнашарах кĕрлеттеретчĕ, пĕр урамрах пурăнатчĕ. Вăрçăри паттăрлăхшăн, ĕçри хастарлăхшăн панă наградăсем çумне Куçкă пиччен кашни çулах хисеп хучĕсем, хаклă парнесем хушăнса пыратчĕç.

Танкистсен кунĕ тĕлне эпир Куçкă пиччепе кашни çул тенĕ пекех тăван ялта çĕр улми кăларатпăр, йывăр ĕç хыççăн салтак уявне те паллă тăватпăр. Вăрçă хирĕнче, хĕсметре çуннă яшлăха аса илсе хуйхăрса та пăхать вăл, анчах шывланнă куçĕсене шăлса пуçа çĕклет те: «Малалла çеç!» – тет хăюллăн.

Пĕлтĕр Константин Васильевич Васильев çитмĕл тултарчĕ. Инке те, ман пекех, Сăпасра менелникне паллă турĕ.

Çитмĕл çул савмалăх çеç вăл
Арăм çиччĕ чуп тусан,
Çитмĕл хут ăнах ыталăн
Ватăлмасăр, юратсах.

Çапла саламларăм Куçкă пиччене ăшран шăранса тухакан сăмахсемпе. Çамрăк танкист, ăста механизатор, йăрă шофер пурнăç çулĕн тепĕр картлашки çине хăюллăн, çирĕппĕн ярса пуснă май çамрăклăх шухăшлавĕпе малаллах хăвалать хăйĕн пурнăç урапине, хут купăсне алла тытса авалхи чăваш кĕввипе юрă шăрататъ: «Алран кайми аки-сухи...» «Хыпар», 24. 01.1998 ç.

## МАНĂН ÇĔР ПИКИСЕМ

Çуралсанах ырă кăмăллă та çирĕп чунлă хĕрарăм куçĕнчен пăхса çут тĕнчене ыталанă эпĕ. Çав мухтавлă та чăтăмлă чăваш пикийĕ вăл – манăн анне. Санарпуç ялĕнчи Тимĕрç Матвин кĕçĕн ачи, кукамай аллăра чухне кун кăтартнă Натеш, Хурăнсур Çармăсри Праках Куçмич мăшăрĕ. Вăрçă вăхăтĕнче аннесен арçын ĕçне те хĕрарăм ĕçĕпе пĕр тан тума тивнĕ пирки ача пăхма та вăхăт пулман пуль çав. Çĕршыв тĕрекĕшĕн кунĕн-çĕрĕн кутĕрленнĕ анне, ытти нумай амăшĕсем пекех, хăй сисмесĕрех икĕ ывăлне масар çине ăсатнă, мана, виççĕмĕшне тата Рая йăмăкăма

(1967 çулта вилнĕ) Уçтен, Маня, Евкен аккасем ытларах пăхнă. Хăйсен те патшалăх, колхоз ĕçĕнчен юлма юраман.

Аккасем, вĕсен тантăшĕсем, çамрăк инкесем – ял пикисем – çырма тăрăх шап-шурă кĕпепе, тĕрленĕ саппунпа, çӳхе тутăрпа, çăпатапа е калушпа, вăрăм çивĕчĕсене купарча çинче сиктерсе акăш карти пек ярăнса анаталла анатчĕç, сывлăмпа çаран çулнă хыççăн, юрла-юрла яла таврăнатчĕç. Ачалăхра куçа çапăнса юлнă çак ӳкерчĕк ватлăхра та илем кӳрет.

Килти, кӳршĕри, бригадăри, ялти аккасемпе инкесем – пикесем – пирĕншĕн – сăмса шывĕсемшĕн, анне хыççăнхи ырă кăмăллă чиперккесем шутланнă. Вĕсемпе юрлама-ташлама, пурнăç чăнлăхне курма-тӳсме вĕреннĕ; вĕсемпе ака тунă, сӳре сӳренĕ, тырă вырнă, авăн çапнă; вĕсемпе вăрçă вăхăтĕнчи тата вăрçă хыççăнхи нуша кулачне куççуль тумламĕпе пуçса çинĕ.

Ахальтен мар вĕсем манăн пултарулăх хирĕнче ретĕн-ретĕн тăрса çаран çулаççĕ, тыр-пул каçалăкне çамрăк вăйпа чашлаттараççĕ. Нихçан ларса канма, ывăнма пĕлмен, шăпчăк пек ыйхăсăр анне вĕсен карти пуçĕнче тăрать, унăн сăнарĕ чи çывăххăн та чи туйăмлăн çĕнелсе пырать.

«Алăри пӳрнесем те тан мар...» кĕнекери ( 1992 ç.) «Пирн Петюка курман-и?» – тесе вăрçăра пĕтнĕ-çухалнă упăшкине ял тăрăх шыраса çӳрекен Урине инке, фашистсем тылă витĕр кăларнă пек лăсканă стариккипе терт курса пурăннă çинче ывăлĕ аякран нимĕç кинпе килсен, «Çук, ура ярса пустармастăп фриц таврашне!» тесе ӳлесе макăракан Укахви инке, вăкăр пек тĕреклĕ «вăрçă участникĕ» Хивре Кирилĕ сахăр черетĕнчен сирсе хăваракан, вăрçă вăхăтĕнче молотилка айне пулса сусăрланнă Уксах Тарья акка, Упа Упрамĕ Шипка Кирукне хăй вырăнне фронта яртарса упăшкасăр тăратса хăварнă Ирук инке, хĕрĕх пĕрремĕш çулта пуçне хунă «Курск шăпчăкĕпе», çырăнайман упăшкипе сăн ӳкерчĕк умĕнче калаçса ĕмĕтленекен Ульяна акка, вăрçăччен упăшки ларттарнă клуба пăсса вутта яракансене ылханакан Кулине кинемей, вăрçă тухнă çул юратнă каччи парнеленĕ

хӗрлӗ танкеткӑпа ҫӗнтерӳ кунӗнче хӗвеллӗн ҫиҫсе ташлакан трактористка Евруҫ акка... кашниех хӑйне евӗр кӑмӑллӑ, ӗҫчен хӗрарӑм. Вӑрҫӑ инкисем-пикисем ҫӗр кӑшласа, ҫӗре пуҫ ҫапса, ҫӗре ыталаса тӑлӑх турачӗсене ӳстерсе хӑварчӗҫ. Халӗ те асрах вӗсем, мана сӑнарлӑх геройӗсене тума пулӑшнӑ Хурӑнсур хӗрарӑмӗсем, тӑлӑх арӑмсем. Вӗсен кулӑллӑ-хуйхӑллӑ сӑн-пичӗ, калаҫӑвӗ куҫ умӗнчех, хӑлхарах.

Хӗр-хӗрарӑм сӑнарӗ малти вырӑнта тӑнине эпӗ хам ачаран ҫав иксӗлми сӑнар тӗнчинче пурӑннӑран килет пуль тетӗп. Хӗрарӑм сӑнарӗ маншӑн чи юратнӑ, илемлӗ, кӑмӑллӑ, тӗлӗнмелле сӑнар. Миҫе ҫул хушши ӗнтӗ ҫав сӑнар манӑн чун-чӗрене силлет, пуҫа канӑҫ памасть, ыйха таҫта вӗҫтерсе илсе каять.

Акӑ, хуларан ӗҫлеме яла таврӑннӑ Микулай Караваев художник пултарулӑх шыравӗнче хӑйӗн пурнӑҫ йӗрне, сӑнарлӑ чӗлхине, мелне, тӗп темине-шухӑшне тӑван ҫӗр ҫинче, тӑван халӑх хушшинче тупать. Колхоз агрономӗ Венера Шашкова уншӑн тӗнчере ҫук илемлӗ сӑнар, вилӗмсӗр юрату, Ҫӗр пики пулса тӑрать. Ялта ӳнерҫӗ тухӑҫлӑ ҫимӗҫ ӳстерет – «Ҫӗр пики» картина ӳкерет.

Сывлӑшалла ҫӳлелле ҫӗкленнӗ пек курӑнакан Венера вӑйлӑ тыр-пул ӳстерекен ҫӗрпе, тулӑ пуссипе, хӗвелпе, тавралӑхпа пӗрле чӗрӗлекен ҫут ҫанталӑкӑн уйрӑлми пайӗ пулса тӑнӑ. Ӑна Караваевӑн вӗрентекенӗ Стариков профессор Леонардо да Винчин «Джокондипе» танлаштарать. Повеҫне эпӗ «Ҫӗр пики» ят патӑм. Ҫӗр пикийӗ те хамӑр ялтанах.

Юрату тасалӑхне ҫумра, вараламасӑр упракан ҫирӗп кӑмӑллӑ тепӗр сӑнарӑм вӑл манӑн «Тымарти» Мария Николаевна учительница. Таса ҫӑлри таса шыв пек сиплӗ унӑн юратӑвӗ.Ҫак пурнӑҫ кӗнекине («Тӑван Атӑл», 1995 ҫул, 9-11№№) манӑн урӑх никама та мар, юратнӑ мӑшӑрӑма ҫеҫ халаллас килчӗ.

Аннерен, аккасенчен ӑша хывнӑ, ӑса илнӗ ырӑ енсем пурнӑҫра яланах пулӑшса пынӑ мана. Аттепе шӑкӑл-шӑкӑл калаҫса, пӗр-пӗрне юратса, хисеплесе, ҫураҫса, ывӑнма

пĕлмесĕр ĕçлесех çĕре кĕнĕ анне сăнарĕ хавхалантарма пăрахмасть. Килне пăхса кинĕ тенĕ пекех канăçсăр ĕçчен, ырă кăмăл-туйăмлă кин тупăнчĕ Надежда Матвеевнапа Прокопий Кузьмича ватлăхра савăнмашкăн. Элĕкьен пики Римма Ильинична мана çирĕп çемье çавăрма вăй хушрĕ.

Чăваш хĕрарăмне çӳле çĕклес, унăн ĕçченлĕхне, илемне, сăпайлăхпа чăтăмлăхне мухтас килет. Çавăнпа юлашки вăхăтра çырнă калавсемпе повеçсенче, романсенче, пьесăсенче вĕсем манăн çĕр пикисем – чăваш халăхĕн, Хурăнсурăн вилĕмсĕр паттăрĕсем. «Çĕнтерӳ çулĕ», 3.06.1997 ç.



## ИЛЕМ ПУЯНЛĂХĔ

Чĕнтĕрлĕ пӳрт умĕсем, чӳрече хашакĕсем, капăрлатнă хапхасем Хурăнсур сăнне епле илем кӳреççĕ? Нумайăшĕ вĕсем Кăрăпчăк Михали ăсталанăскерсем. Ят илнĕ аслă маçтăр хайне асăнса пурăнмалăх ялта пуянлăх хăварнă. Йывăç япала ун аллинче тĕлĕнмелле улшăнса чĕрĕлнине кам кăна курса ăмсанман-ши?

Çĕрпелĕнчи Спиридон Павлович Толмасов – Çĕпритун Шăпчăк хĕрĕпе Мария-Марсельезăпа пĕрлешсе çемьеллĕ пулчĕ, тĕп килтен уйрăлса тухса çĕнĕ кил-çурт çавăрчĕ Михала пичче. Ялти миçе сыпăкри ачасене вĕрентмерĕ-ши шкулта Мария Спиридоновна? Çур ял ытла пуль.

Петĕр Ковский вĕсен ҫемйине аллăмĕш ҫулсенче ӳкерсе илнĕ (сулахайран сылтăмалла): Мария Спиридоновна, Михала амăшĕ Васса Матвеевна, Михаил Федорович Крипчаков Леня ятлă ывăлĕпе.

## ПĔР ТĂВАНСЕМ

Ярушинсемпе эпир юнашар. Вĕсен асли, Михала пичче, иртнĕ вăрҫăра хыпарсăр ҫухалнă. Манпа танăш Виссарунĕ шкулта пĕрле вĕренчĕ. Амăшĕпе, Кулине инкепе, пайтах нуша курчĕҫ. Инке 1943 ҫулта Ҫимун ятлă ывăл ҫуратрĕ. Ашшĕне ялта Илюшки мучи тетчĕҫ. Хĕрарăм пуҫăн колхоз лашисене те пăхрĕ инке. Виссарун тракторпа ĕҫлерĕ. Юлашкинчен оргнаборпа Красноярск крайне, Мăн Мурта районне куҫса кайрĕҫ. Виссарун унта та тракторист пулнă, амăшĕ вилнĕ.

Петĕр Ковский ӳкерчĕкĕнче – Виссарион Ярушин каччă чухне.


Виссарион Ярушин

Михаил шăлнĕ Петĕр вăрҫăччен бригадирта ĕҫленĕ. Эпĕ Петĕр пичче салтак чупнине, пирĕн пата салтак ачисемпе кĕрсе юрланине, ҫырманалла лашапа хытă чуптарса анса кайнине астуса юлнă, тăваттăрискер. Унăн амăшне Васса кинемее те кăштах астăватăп.

Петр Степанович улма-ҫырла йывăҫҫисене питĕ юратнă, колхоз садне лартма та хутшăннă. Хăйсен вăйлă садчĕ. Карта айĕпе пирĕн енне тутлă, шултра хăмла ҫырли каҫнăччĕ те, анне ҫапла ăнлантаратчĕ: «Ку ҫырлана Петĕр пичу, сортлă тесе, таҫтан илсе килсе лартрĕ». Пирĕн пахчара миҫе ҫул хушши ӳсрĕ вăл, Виссарунсен пахчине те куҫрĕ. Ҫав ҫырла сорчĕ халĕ те чĕрĕ-ха. Кашнинчех Петĕр пиччене аса илтерет. Арăмĕн,



Нинук инкен, Генипе Ваççи ача чухне ман камантăра пулнă. Инке ватăлса вилчĕ. Аслă хĕрĕ Марья, кĕçĕнни Раиса качча тухрĕç. Ваççи Саратов енче ĕçлесе пурăнать. Гени арăмĕпе, Любовь Ильиничнапа, Элĕк районĕнчи Торпкассине куçса кайрĕ, комбайнерта тăрăшса ĕçлерĕ, çавăнтах вăхăтсăр вилнĕ. Арăмпа унта кайсан масар çинче Генăн вил тăприне пуç таятпăр.

Килне хăйсен тăванĕсемех, Филипповсем туянчĕç. Петĕр Ярушин садне Павликпе Катя упраса çĕнетеççĕ.

Ман архивра Ярушинсем кӳршĕсемпе сăн ӳкерттерни упранать. Акă вĕсем, сулахайран сылтăмалла: Ятсăр йăсна (ачисем вилсе пынăран çак ята панă) – Федор Герасимов, Карачăм мучи ывăлĕ, унăн арăмĕ Кĕтерин акка, манран пĕр çул кĕçĕн ывăлĕ Гена, Петр Степанович, унăн арăмĕ Нина Николаевна.

## СĂПАЙЛĂ, КУРĂМЛĂ

Иккĕшĕ те вĕсем – пирĕн кӳршĕсем. Пĕри, Йăван Федорч-кĕçĕннин шăлнĕ Василий Федорович Федоров. Тепри – Мăртюш Ахванеçĕн аслă ывăлĕ Улатимĕр. Пирĕн аккасемпе пĕрле выляса ӳснĕ, пĕрле колхоз ĕçне хутшăннă.

Ваççа пиччене, халăхра ăна шӳтлерех Миххи Ваççи теççĕ, салтака кайса килнине лайăх астăватăп. Ялти патвар çынсенчен пĕри вăл. Ĕçкĕ-çикĕпе ашкăнманранах пулас, хăйпе пĕр çулхисем чылайăшĕ вăхăтсăр çут тĕнчерен уйрăлчĕç ĕнтĕ, сывлăхне ватта çитичченех упраса хăварнă. Ялти, вăрманти мĕнпур йывăр ĕçсене тунă çĕре хутшăннă. Авланса арăмĕпе пĕр ывăл ӳстерчĕ. Типтерлĕ, чĕлхе-çăвара яман çынсем. Килне-çуртне

çĕнетсех тăраççĕ. Тепринпе тĕл пулсан этемле калаçма май çук, вĕсемпе ĕçкĕ-çикĕре те, ахаль чухне те кăмăллăн, ăнланулăн калаçма хаваслă. Ял тĕрекĕшĕн вăйне-халне шеллемен хресчен çемйи.


Василий Федорович Федоров

Мăртюшсем пирĕн ума, Иххан мучисем малти урама куçса кайсан, пурăнма килнĕ. Хĕветура инкен тата Ольга, Георгий, манпа танăш Коля, ашшĕ вăрçăран таврăнсан хĕрĕх тăваттăмĕш çулта çуралнă Толи пурччĕ.

Салтакран килсен Улатимĕр пичче авланчĕ те Илюшки пиччесем çумĕнчи Хăрăм Хĕлипĕсем патне киле кĕчĕ. Ульяна инкепе çемйине хунатрĕç.


Владимир Афанасьевич Афанасьев

Ĕçрен хăраса тăман вĕсем, мĕн те пулин çĕнĕреххине, усăллăраххине шыранă. Тир тума вĕренни çемье тупăшне те ӳстерме пулăшнă.

Вăтăрмĕш çулсен пуçламăшĕнче хамăр ялти Çтаппан Овчинникова тир тунăшăн, суту-илӳ тунăшăн кĕвĕçекенсем тĕрмене хуптарнă пулсан, паянхи тир маçтăрне Владимир Афанасьевич Афанасьева ял-йыш хисеплесе сума сăвать.

Кӳрше манмасть Улатимĕр пичче. Тăванĕсем Хресчен аккасем – Веньăсем патĕнчен таврăннă чухне çырма



Яков Мефодьевича салтака ăсатни. Сулахай енче тăраканĕ – Иван Федорович Федоров, тăванĕ; купăс калаканĕ – Федор Шахалов; Якку хыçĕнчи – Михаил Павлов.

Петр Ковский сăн ӳкерчĕкĕ.

хĕрринче кашнинчех чарăнса тăрать. Пирĕн умра та, вĕсен килĕ умĕнче тахçан Мăнтăркка Виктăрĕ лартнă улмуççи пурччĕ. Эпир ун çинче выляса, ун улмине çисе ӳснĕ-çке. Тăван урам йывăççи аллăмĕш çулсемччен ех çимĕçĕпе тутантарса пурăнчĕ. Ахванеç Улатимĕрĕ вара улмуççи ӳснĕ вырăна чĕркуçленсе кĕл тумасăр иртмест.

Ялăн, халăхăн аваллăх туйăмĕ чĕрĕ-ха.

Çапла вĕсем маттур та ĕçчен, сăпайлă, курăмлă юлташсем – çирĕм çиччĕмĕш-саккăрмĕш çулта çуралнă ял пăхаттирĕсем.

## САР ЯККУ

Пирĕн Тăхăр арăм çутĕнче икĕ Якку. Ульки аккан кĕçĕн ывăлне, кăтра пуçлă çуралнăскере, Кăтра Якку тенĕ. Ун хыççăн халĕ ĕнтĕ Степановсен йăхĕ кăтралансах кайрĕ. Елен аккан аслă ачине, пиçсе çитнĕ тулă пусси тĕсĕ çапнăран-ши, Сар Якку тенĕ. Çураласса та вĕсем пĕр вăхăталлах çуралнă. Сарри Кăтринчен çулталăка яхăн çеç аслăрах. Вĕсем – ашшĕсене вăрçа ăсатнă чух шкул çулне çитнĕскерсем. Иккĕшĕ те нушапа, ĕçре тарласа-пиçсе, хастар, йăрă çын пулчĕç.

1941 çулта тăлăха юлнă салтак арăмĕ хамăр ялти Курмышсен Унтри хĕрĕ Елен ывăлне тата вăрçă тухнă çул çуралнă Галине мĕн тери нушапа пăхса ӳстернине эпĕ хам куçпа курнă. Хресчен хуçалăхĕ арçынсăр юхăнать, çемье те имшер аталанать. Çапах та Елен акка килне-çуртне типтерлĕ тытма тăрăшатчĕ, ачисене ĕçе кӳлĕнтерсе йĕркеллĕ пулма вĕрентетчĕ.

Сар Якку ача чухнех пуçа усма, йĕрме, мăннисен хӳттине пытанма юратмастчĕ, хăюллăскер, çивĕчскер, пур çĕрте те малтаччĕ. Çав кăмăл-туйăм унăн ӳсерехпе те çухалмарĕ, çирĕпленсе кăна пычĕ. Вăйĕ пурччĕ. Çапах хăшĕсем пек чăрсăрланман, унпа



килĕнче, ял-колхоз ĕçĕнче, хăйне хӳтĕлеме усă куратчĕ.

Нумай вĕренесси çинчен мар, амăшĕпе пĕрле те, уйрăммăн та колхоз ĕçне куллен хутшăнасси, патшалăх умĕнчи парăма вăхăтра татасси, мĕнле те пулин хырăма тăрантарса вăй илесси пулнă ытти çамрăксем пекех Михвати Яккăвĕн те. Кӳршĕсем: пĕр енче Петр Иванович Пумпур, тепĕр енче Шахалккă Хĕветĕрĕ. Тем тесен те çав ăста та хĕрӳ механизаторсенченех ерчĕ пулас ăна тимĕр-тăмăр «чирĕ». Тракторпа комбайн çумĕнчен уйрăлмастчĕ. Салтака кайса килнĕ хыççăн вăл Канаша çул тытрĕ, механизаци училищинче специальность илчĕ. Якку ДТ-54 тракторпа ĕçленине астăватăп. Каярахпа «Нива» комбайнпа тырă вырса çапрĕ – 5 çул.

Ял хуçалăх механизацийĕ çĕнелсе пынă май пирĕн пата та хăватлăрах та тухăçлăрах техника килме пуçларĕ. Çĕрпелти сортучастока финсен «Сампо» комбайнне панăччĕ. Унпа ĕçлеме чи шанчăклă та ăста механизатора Яков Мефодьевич Федорова шанчĕç. Ученăй-агрономсем ăна, хăйсене сăнав тума пулăшнăшăн, ырлатчĕç. Тырă

типĕтмелли агрегатсене те ĕçлеттерме ĕлкĕретчĕ. Хăйсен кăткăс ĕçне вĕçленĕ хыççăн вăл комбайнне ытти бригадăсен уйĕнче кĕрлеттеретчĕ-ухлаттаратчĕ.

Тем тĕрлĕ техника та çирĕп парăнатчĕ ăна. Урапаллă МТЗ-5 трактор, утă çăнăхĕ авăртмалли агрегат тата ытти те уншăн ĕçлеме йывăр пулман. «Волга» агрегатпа фермăра ĕнесем те сутарчĕ.

Тăрăшса ĕçлекене – пысăк чыс. Ăмăртура ялан мала тухнăшăн панă наградăсем мазутпа, тусанпа, сивĕпе, шăрăхпа ирттернĕ йывăр çулсене, çитĕнӳсен савăнăç вăхăтне аса илтереççĕ. Чăваш Республикин Аслă Канашĕн Хисеп грамотине виçĕ хутчен илме пултарнă паттăр ялта ку таранччен курман. «Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ятпа хисепленĕ механизатор та Хурăнсурта пĕрремĕш пулчĕ.

Вăхăтпа ĕнтĕ Якку та амăшĕсĕр тăрса юлчĕ, йăмăкĕ качча кайрĕ, хăй те авланса çемье çавăрчĕ. Мăшăрĕ, Зоя, виçĕ ывăл, пилĕк хĕр çуратса пачĕ. Яккупа иккĕшĕ вĕсене сывă, чипер пăхса ӳстерчĕç. Пӳртре, кил хушшинче мăнукĕсем кăлтăртатса чупаççĕ. Вĕсемпе, тен, мăн аслашшĕпе мăн асламăшĕ те пире курăнман ытамлăхра выляççĕ пуль... Çапла, Федоровсен килĕ çĕнелчĕ, вăйланчĕ. Ашшĕн улăм витнĕ лупас пек пӳрчĕ вырăнне ывăлĕ çирĕм çул каяллах кирпĕчрен капмар çурт лартрĕ. Пӳрт умĕнче хурăнсем ӳстерчĕ. Ашшĕпе амăшĕ ячĕпе ӳсеккеннисем те пур илем ретĕнче.

Сар Якку сарă кун ытамĕнчех.

1999 ç.

## ĂШĂ КĂМĂЛ КУЛЛИ

Хурăнсурăн ĕçчен те тараватлă çыннисем хушшинче пурăннă вăхăт маншăн питĕ хаклă. Вĕсемпе пĕрле ĕçлеме те тӳр килнĕ, канура та, ĕçкĕ-çикĕре те сăмах-юмах çаптарнă.

Ку хутĕнче эпĕ вĕсемпе Вăрнартан таврăннă чухне колхоз кĕлечĕсем çывăхĕнче тĕл пулнăччĕ. Çĕр улми кăларас умĕнхи хĕрӳ вăхăт. Пĕрисем алăпа пуртти

чаватчӗҫ, теприсем тракторӗсене хатӗрлетчӗҫ. Кану вӑхӑтне ҫитрӗм. Шӳт самантӗнче вӗсене ӳкерсе илтӗм (сулахайран сылтӑмалла): Кӑнавал Левенти кӗрӳшӗ Павӑл Баюков, Хӗлимун Шашковсен Гена-Вали (йӗкӗреш ывӑлсене ялӗпех ачаран ҫапла чӗннӗ те, хӑшӗ кам пулнине те тӳрех пӗлме йывӑрччӗ), Купӑс Ҫинахванӗ, Пӗтпӗлтӗк Аркатийӗ, Симун Ваҫҫи, Кушак Вени.

Вӗсен кашнин пурнӑҫ шӑпи расна, анчах ял туйӑмӗ – пӗрешкел. Сӑн-питӗнче пурин те – ӑшӑ кӑмӑл кулли.

1999 ҫ.



## АЛ ТЕХӖМӖ

Вӑрнар енчен яла таврӑннӑ чухне манӑн темшӗн Санар ҫырминче анса юлас килет. Санарпуҫ ҫырми улӑхланнӑ тӗлтен ҫеремпе тӑвалла нумаях та каймастӑн, тӑпӑлкка вӑрман хӳттине лекетӗн. Вӑрман сывлӑшӗпе-техӗмӗпе вӑй илсе Хурӑнсура сисмесӗрех ҫитетӗн.

Иртнӗ кӗр пуҫламӑшӗнче те ҫапла тӑван илем кӗтесӗ хӑй патнеллех туртрӗ. Уравӑш енчен вӗрекен вичкӗнрех ҫил ҫӑкасемпе ӑвӑссене хывӑнтарма пуҫланӑччӗ. Ҫу каҫипе шӑпӑлтатнӑ ҫулҫӑсем, туратсенчен хурланчӑклӑн уйрӑлса, хӗвел шевлипе чӳхене-чӳхене хуллен вӗҫе-вӗҫе ярӑнаҫҫӗ. Ланкашкаллӑ ҫул хӗррипе уплюнкка карталанать, ҫерем ҫийӗн юлнӑ урапа йӗрри шалалла илсе кӗрет.

Вĕлтрен кайăкĕсен юррипе киленсе пынă май, хăлхана юрă сасси кĕме пуçларĕ:

Вĕлле хурчĕ ылтăн хурт, ылтăн хурт!
Мĕншĕн эсĕ нăрлатан, нăрлатан?
... Ах, шухăшăм, шухăшăм, шухăшăм!
Мĕншĕн эсĕ пăтранан, пăтранан?..

Сар караслă рама тытнă Элекçипе Фока, çулçă чăштăртатнипе-ши, тăруках юрлама чарăнчĕç. Элекçийĕ кулса ячĕ те, çинçе, кĕвĕллĕ сассипе юрра вĕçлерĕ:

Сарă хитре хĕрĕшĕн, хĕрĕшĕн
Мĕншĕн ăша çунтаран, çунтаран?

Çума çыпçăннă вĕлле хурчĕсене хăваламасăр, эпĕ те кулкаласа алă патăм:

– Аван-и, хамăр ялсем-туссем? Хĕр шухăшĕ пуçран кайман-ха...

– Аванни-мĕнĕ, хамăр майлах, – тулли рамăна ытти рамăсем çумне таянтарчĕ Элекçи. – Хĕрĕсене те манмастпăр, çамрăклăх аса килет. Утарĕнче те хурт пекех чакаланатпăр, хĕле хатĕрленетпĕр-çке. Хĕвел питтинче типĕтсе юлас тетпĕр çаксене. Карас çумне пылĕ те çыпçăнса юлнă кăштах. Сая ярас килмест. Авă сĕрлеме пуçларĕç, пĕчĕккĕн пуçтараççĕ. Юлашки вĕçев вĕсемшĕн. Тулли рамисене, чи лайăххисене, уйăрса, вĕллесене вырнаçтарнă-ха. Атьăр, иртĕр малалла, тĕпелелле.

– Çав хушăрах концерта та хатĕрленетпĕр, хăйсем мĕншĕн савăннин сăлтавне уçса пачĕ Фока. – Хăвăрах пĕлетĕр ялта халăх хорĕ-ансамблĕ пуррине, ял хуçалăх уявĕнче эпир те тухасшăн сцена çине. Мĕн, çынсенчен катăк-им? Хĕр-хĕрарăм çинчен асăнса юрламасан та час ватăлатпăр. Элекçин лаши çĕркаç кӳршĕри Элмен ялне тарнă та... Улахран таврăнаймарĕ-ха...

Утар хуçи, ялта Плешков Элекçи текенни, хăйĕн пулăшаканне пӳрнипе юнаса карттусне хыврĕ, шаклаланса пыракан пуçне çанă вĕçĕпе шăлса типĕтрĕ:

– Çанталăкĕ пирĕн майлах-ха, çил Кăмаш енне çаврăнмасан касчен типĕтсе сарайне кĕртетпĕр. Кӳлхĕрри

çумăрĕ мăшкăллать пиртен час-часах. Ах, çанталăка ĕнтĕ ăна... Турри пулăшрĕ-ха çапах кăçал. Аптрамарăмăр. Пылĕ пулчĕ. Тонна ытла. Сутмалăх та, ял çыннисене валеçмелĕх те тухрĕ.

Утара çул икĕ пая уйăрать.

– Ак çакăнта пирĕн, – аллисене ик еннелле сарса хушса хучĕ Элекçи, – çитмĕл пилĕк çемье. Ытлашши çĕрме пуянах темелле мар та вĕсене, çапах мухтама пулать. Пĕрер пăт ытларах туса пачĕç таса пыл. Пĕтĕмĕшле пылне илес тĕк – çирĕм пилĕкшер кило пулать. Ăннă çулсенче хĕрĕх кило илни те пулкаланă. Кутран тапкă лекменччĕ те Фокăпа иксĕмĕре ку таранччен...

Шӳтлерех юмахлама юратакан Элекçи хăйĕн ĕçри юлташне, Хĕритун Ваçли ывăлне, хисепленине тахçантанпах пĕлетĕп-ха. Вунă çул хушшинче Фока кунта утарçă ăсталăхне чăннипех вĕренсе çитнĕ-çке. Иккĕшĕн ĕç-пуç ăнать.

Пыл-шерпет ялĕнче лăпкăлăха пăсма юраманнине аса илтерсе чăрсăр хуртсем сăмса умĕнчех нăйлатса вĕçеççĕ. Çапкаланма çеç ан пуçла.

Çăкалăхпа юманлăхри çак пысăках мар уçланкă мĕн чухлĕ пуянлăх, тупăш паман-ши çур ĕмĕр хушшинче, пыл хурчĕсем çĕнĕ çĕре куçнăранпа? Пĕрлешӳллĕ хуçалăх йĕркеленсен хурăнсурсем та ялта утар тунă. Авруй уйне, çирĕм пилĕк çухрăмри вăрман уçланкинче çĕр парсан, вĕллесене унта куçарнă. Эпĕ те, пĕчĕкскер, аттене унта хурт пăхма, тĕтĕрме пулăшаттăм. Аякри çĕртен ял вăрманне куçса килнĕ утарта Йăван Шусь ĕçлерĕ. Иван Яковлевич хăйĕн ырă ятне Çармăс вăрманĕн уçланкинче ĕмĕрлĕхех хăварчĕ.

Пӳрт умĕнче кăвайтă чĕртнĕ. Фока çапă хуçкаласа хуран айне пăрахрĕ.

– Хуртсен те хырăм тутă, хуçисен те... – хĕвел шевлипе йăлкăшса илчĕç Элекçин шап-шурă шăлĕсем. – Пирĕн те хырăм пур... Чей вĕретесшĕн-çке. Чей куракĕ

нумай кашлать пирĕн кунта. Хуртсем валли тесе акрăмăр та... Хамăра та юрать.

– Çут çанталăкра ĕнтĕ пĕрне-пĕри тăрантарса усрамалли тĕнче тытăмĕн йĕрки пур-çке, мĕнпур чĕрчун пĕрне-пĕри çисе-хыпса тăранса, пĕрне-пĕри аталанма-çĕнелме-чĕрĕлме пулăшса, шайлашăнса пырать, – текелсе вĕсен калаçăвне шалалла кĕтĕм.

– Турăсем те ухмах пулман çав, нектар ĕçсе çамрăкланса, илемленсе пынă тет, – пуçне пăркаласа илчĕ Фока. – Ай тутлă та пылĕ.

– Тутлă пулмасăр, – чĕлхипе тути хĕррисене çулласа илчĕ Элекçи. – Çĕр сĕткенĕн чи имлине, чи техĕмлине пухать те çав пĕр пĕчĕк «фабрика» этем валли – упа-утаман валли, чĕрĕлĕх апачĕ хупса хурать хăйĕн тĕлĕнмелле пӳлĕмне. Этем геометри эрешĕ текен куçлă-пуçлă пӳлмесен вăрттăнлăхĕ мĕнле-ха çак пĕчĕк чĕрĕ чун ăслайĕпе капăрланать?

Фока куркасене чей тултарчĕ.

– Пыл яратпăр-и?

– Хăна валли пыл хатĕрле. Эпир хамăр çăвĕпех пыл шăршипе-тутипе пурăнатпăр. Ху каланă пек, авалхи грексен халапĕнчи турăсем майлах.

Утарçăсен калаçăвне малалла тăсса эпĕ çапла каларăм:

– Эпир хамăр та анлă Уçлăхри тĕлĕнтермĕшсем. Çак тĕнче тытăмĕнче мĕн пур – пурте пĕр пĕтĕм çыхăнура. Çав çыхăнăвăн пĕр пĕчĕк пайĕ пуль вăл пыл хурчĕ маçтăрлакан карас эрешĕ – пĕр танлăх та пĕр виçелĕх пӳлме карти.

– Тĕрĕс, – терĕ Фока. – Пыл та пирĕн çăвара пĕлĕтрен тăкăнмасть. Эпир те хамăр чечек, çулçă чăмласах пылланаймастпăр. Турă панă çак хаяр вĕçенсем пирĕншĕн ĕçлеççĕ. Вĕсемсĕр эпир... Çыхăну пурах пуль çав...

– Çав çыхăран саланаймастпăр, тылланса хурт-хăмăр çĕршывĕнче ĕмĕре ирттеретпĕр ĕнтĕ, – тесе Элекçи аса илӳ сулăмĕпе калаçса кайрĕ. – Ача чух хурт сăхни аса

килчӗ. Пӗлетӗр, пирӗн хамăрăн, эп астăвасса, хурт-хăмăр таврашӗ пулман. Кӳршӗре, Хуракассен, Михала мучисен, пурччӗ садӗнче утар. Çулла çăвăр янăччӗ те пӗр ами, пирӗн умри ват йăмра çине сырăннăччӗ хурт çăмхи. Ывăлӗ, Иосиф Михалч, ăна пуçтарса илчӗ. Çăвар карса пăхса тăраканскерсене, пире, сăмса шывӗсене, темиçе хурт вӗтелесе илчӗ, пӗри кӗпе ăшнех кӗрсе кайса вӗтелентерчӗ. Çавăн чухне ăша кӗрсе юлнă-ши тӗлӗнмелле хурт асамлăхӗ. Шкултан вӗренсе тухсан малалла пӗлӳ илеймерӗм, вара Вăрнарти пчеловодсен шкулне лекрӗм. Хут çинче çулталăк пыл пухнă хыççăн мана хамăр яла, Йăван пиччене пулăшма ячӗç.

Ăна итленӗ май куç умне вăрман хӗрринчи тахçанхи пӗчӗк уçланкă тухса тăчӗ. Эпир килти ӗнесене çитерсе çӳреттӗмӗр. Хаяр йытăсенчен, хурт сăхасран хăрамасăрах утар çумне пыраттăмăр.

– Мӗнле вырнаçтарнă-ши вӗллисене тăвăр çӗрте? – аял еннелле пăхса илчӗ Элекçи ман шухăша ăнланнă пекех. – Утмăл пӗрремӗш çулта, эп ӗçлеме пынă чухне, çӗр вӗлле, кутран-кут, темелле. Юр айӗнчех хӗл каçатчӗç, хурчӗсем шăнса та вилетчӗç. Пире вара çапла вӗрентнӗ: вӗллепе вӗлле хушши ултă метртан, ретсен хушши тăхăр метртан кая мар пулмалла. Ваттине калама хăратăп, çăмарти чăххине вӗрентнӗ пек пулать-çке. Эпӗ пынă хыççăн виççӗмӗш çулне Йăван Яккăльч пенсие тухрӗ те майӗпен уçланка ак çак еннелле сартăм. Касмалла пулчӗ йывăççене.

– Унччен ма сарман-ха уçланка? Е вăл, Шусь Йăванӗ, хурт-хăмăр пăхма ятарласа вӗренейменскер, ăнкарса илеймен? Е хăйӗн пахчинчи пек тăвăрлăхрах пыл нумай туса илме пултарнă? Эп астăвасса вăл килӗнче çирӗм-вăтăр çемье тытнах. Вӗсен патӗнче сахал мар пулнă: аттепе те, пӗччен те, – терӗм эпӗ.

Элекçи чупса пынă йыттине шăмă татăкӗ пăрахса пачӗ те, ман çине шухăшлăн пăхса, сăмахне малалла тăсрӗ:

– Ун пирки эпӗ Йăван пиччепе калаçман. Çамрăк пулнă.

пуҫа ҫавăрттарма та пĕлмен пуль. Ҫывăх вĕллесенчи кӳршĕсем пĕр-пĕрне тапăннине те сахал мар курнă. Ăрачĕсем урăхлаччĕ ун чухне. Кайран, Кавказ енчисем, хаяррисем, пире вĕрентнĕ пекех аяккарах вырнаҫтарма хушатчĕҫ-ыйтатчĕҫ хăйсен килĕсене. Мĕн хушнине тунă. Ун умне сиксе тухман. Пӳлмен. Ват ҫын еккипе пынă. Хуҫасем манран мар, унран ыйтнă. Вăл мĕнле ĕҫленине ҫеҫ куҫа илеттĕм, пуҫа хываттăм. Утара хам алла йышăнсан малтанах хăраса ӳкрĕм. Юрать-ха хамăрăн асли, Петĕр пичче, лăплантаратчĕ, вĕрентсе пулăшатчĕ. Утар хуралҫи, ҫав вăхăтрах хама пулăшакан Уртем Архипч, манран кулмастчĕ, ялан ăслă сăмахпа калаҫса усăллă канаш паратчĕ. Пăхăр пуҫлă чĕлĕмне паклаттарса ларатчĕ тунката ҫинче. Пĕрле аван ĕҫлеттĕмĕр. Уртем мучи вăйсăрлансан сакăр ҫул Йăван Кăрăпчак пулăшрĕ. Ун хыҫҫăн Ваҫли Павăлч, Салакайăк Трахвинĕ пулчĕҫ ман ҫумра.

– Манран та эсĕ, Элекҫи пичи, вĕсем хыҫҫăн эсĕ те сухална ан хыр, мучи пек пулан вара, – тесе мăшкăллатăн, – ҫӳхен хушса хучĕ Фока. – Халь, сухал хырмасан, вăрҫан.

– Йĕрке пулмалла! – пуҫне каҫăртать Элекҫи. – Хамăра та ҫирĕп, таса тытмалла, утара та пуянлатса ҫирĕп сыхламалла. Хурт-хăмăр тасалăха, ҫирĕп йĕркене юратать.

Мĕншĕн кăмăллă-ха утарҫă хăйĕн ҫуммипе? Пур енĕпе те иккен. Тепĕр чухне Элекҫин унта-кунта каймалла пулать-и, е чир-чĕр пусахне чăтса irттермелле-и, – Фока Харитонов яланах чăн-чăн утарҫă вырăнĕнче. Вăл ĕнтĕ хуҫа каланине пурнăҫлама хăнăхнă, утарти мĕнпур ĕҫе вăхăтра тума ăста вĕренсе ҫитнĕ.

Вĕлле хурчĕ ачаш хурт, кĕске ĕмĕрлĕ. Вăл вăрах пурăнмасть. Сахал вăхăт ĕҫлет, анчах нумай усă парать. Чи хĕрӳ вăхăчĕ унăн пĕр уйăх ытларах кăна. Тавралăх чечеке ларсан, ҫĕртме уйăхĕн варринче улăх-ҫаран, йывăҫ-курăк пĕр кĕвве куҫать – ҫĕр пуянлăхĕн кĕввине. Сарă-шупка чечек тăрринчи ылтăн хурт симфонийĕ

кĕрлеме тытăнать. Унччен... унччен вара Элекçипе Фокăн мĕн чухлĕ хатĕрленӳ ĕçĕпе аппаланмалла. Çăвăр янă амасане уйрăм вĕллене хупасси, çемьесене чир-чĕртен хăтарасси, пĕр-пĕрин хушшинчи мире сыхласа хăварасси, пухнă пыла вăхăтра уçласси, хĕл kaçма вăйлă çемьесем хатĕрлесси, усал-тĕселрен упрасси, çуркунне вăхăтра апат парасси тата тем те пĕр тăвасси йăлтах иккĕшĕн ăсталăхĕнчен, вăй-халĕнчен, кăмăл-туйăмĕнчен килет. Кашни вĕллен, çемьен кун-çулĕ вĕсен пуçĕнче. Ах, йышĕ сахал-и ку çемьен, чирлĕ мар-и, ами икĕ çултан иртсе кайса ватăлман-и, йăхĕ пĕрешкелленмен-и, пылне сахалтарах пама пуçламан-и... Пуш уйăхĕн вĕçнелле вĕллесене кĕлетрен кăларса сивĕсем çитсе çапиччен кĕлете кĕртсе лартиччченех вун-вун ыйту, вун-вун шухăш. Этемĕн, выльăхăн пĕрремĕш пулăшу паракан ятарлă служба пур пулсан, пыл хурчĕн вăл – утарçă.

Хĕрĕх çул хушшинче Алексей Иванович Плешков хурт-хăмăр вăрттăнлăхĕ ăçта пурăннине çут çанталăк ăшĕнче чунĕпе-туйăмĕпе ăнланса-пĕлсе çитнĕ темелле пек. Çапах та çут çанталăк хушăран юсаса илет иккен пурне те. Унăн хĕрхенӳсĕр пушши тăватăм çул Хурăнсур утарне кăна мар, Чăвашри çĕршер утара йĕпе пушшипе тĕп тумаллах туртса çапрĕ. Йĕпе-сапара нишленсе юлнă çемьесем утарĕ-утарĕпе масар пулса юлчĕç. Кĕркунне вĕçсе тухса çӳреймен, амасем сапса хăварайман, хĕл kaçмалли çирĕп йыш туса çитереймен вăтăр çемье Элекçисен те вилнĕ.

– Вĕллене хупнă хыççăн кĕркуннех пĕтнĕ вĕсем, – шанчăксăррăн алă сулать Элекçи. – Малтанах пĕлтĕм, вĕсен йыш пухăнмарĕ. Нумай йышли апат сахал пĕтерет, начарри – тӳрех ĕмсе ярать. Упшурниксем-сăрăсем.

Çавăнпа хурăнсурсем çанталăка сăнасах тăраççĕ. Ĕлĕкхи каларăшĕ те, хальхи асăрхаттарăвĕ те асрах, куç умĕнчех туйăмланса тăрать вĕсен.

– Çурла уйăхĕн çурринчен пуçласа авăн уйăхĕн варриччен сапнă пыл хурчĕсем самай патвар сыхланса

юлаççĕ, – çамкине картлантарса шухăшлăн калать Элекçи. – Çур çул ытла вĕллере пурăнмалла-çке. Унтан тухсан вĕсем пыл пухса параççĕ те, вăтăр-хĕрĕх кунран, пĕтеççĕ.

Утарти кашни утăм, сас-чĕв, шăршă-маршă хуртсемшĕн пит сисĕмлĕ. Çывăха килнĕ ют йытă, тискер кайăк, ӳсĕр-какăр этем те çиллентерет вĕсене. Пĕрре вăрçтарсан виç-тăвата кунсăр лăпланмасть хурт çемйи. Хамăр та çавăнпа пит тимлĕ, асăрхануллă.

– Апла эсир – хурт-хăмăр психологĕсем...

Эп çапла каланă хыççăн Элекçи ăшра кулни палăрать, çавна май унăн куçĕ те çивĕчленет.

– Çаплах та пуль. Вĕсен чĕлхине пĕлмесĕр хамăра пăхăнтарса ĕçлеттереес çук. Кашни çемьен уйрăмлăхне туймасан эпир кунта кирлĕ те мар. Хурта ăна ĕçлеттермелле, вăхăчĕпе унран уссине курса юлмалла.

Çавна май мана радиопа тухса калаçнă пĕр утарçă пакăлтатăвĕ аса килчĕ. Эпĕ ун пирки Элекçие аса илтертĕм.

– Çапла, итленĕ эпĕ те ăна. Хурт мĕнле ĕçлет, утарçă çапла ĕçлет тесе лăпăртатрĕ вăл. Тĕрĕс мар, йăлтах урăхла: утарçă мĕнле ĕçлет – пыл хурчĕ те çапла ĕçлет. Нумай ăстаçăпа пĕрле канашламалла-тавлашмалла пулнă манăн, республикăри канашлусенче ай-яй вăйлă утарçăсем пухăнатчĕç. Шел, халь çак тĕл пулусене йĕркелеме манчĕç. Хамăрăн Вăрнар тăрăхĕнчи утарçăсене манмастăп, Пăртасри Андреев, Мăн Явăшри Самарин, Мăньял Хапăсри Пыркин сĕнĕвĕсем-канашĕсем мана та ĕçре усă панă. Халĕ хам та вĕсем пекех ватăлтăм ĕнтĕ, Фокăна парса хăвармалла пуль утар хуçалăхне.

«Хорнзор» юлташлăхĕн хуçи Федор Кузьмин хăйне вырăнтах тытса хăварасшăннине пĕлет вăл. Элекçи Плешков утартан кайсан, Фока Харитонов ăста пулин те, тем пулса тухĕ, тесе шухăшлать пуçлăх. Шанчăклă ватă – шанчăклах. Ал техĕмĕ пурах унăн. Чăвашра пĕлместĕп эпĕ утарçăра ун чухлĕ ĕçлекен çын пуррине.

– Ялпа ял хушшинче те, утарпа утар хушшинче те уйрăмлăх пур, – васкамасăр калаçать Элекçи. – Çĕр вырăнĕ-тĕлĕнчен те нумай килет. Фокăн ун авалхи турăсем пек пит сатур-хĕрӳ пулас килет. Çамрăклăх вăйĕпе уçăмлă та пархатарлă усă курмаллах, пурин те хăйĕн вăхăчĕ – пылак вăхăчĕ пур-çке. Вăхăт уйрăмлăхĕнчен те, эпир хамăр ăçта, мĕнле вырăнта тымар янинчен те килет пуль пыл хурчĕ ĕрчетесси те. Ытла тăвăрта ларатпăр-çке, Йăван Шуç утарĕ пек кутран-кут ларса тухнă ялĕсем те пирĕн. Çĕрĕ, улăх-çаранĕ хĕсĕк. Хурт вăл çут çанталăк сĕткенне шыраса вĕçет те вĕçет, нектар шыраса тăват-пилĕк çухрăма та çитет. Çапах та, инçе вĕçни караса пылпа тулăх тултараймасть, хурт сĕткене çул çинче хăех нумай пĕтерет. Икĕ çухрăмран ытла ямалла мар ăна, хурта. Пыл курăкĕ-йывăççи çывăхра кирлĕ. Виçĕ ют хуçалăх чиккинче вырнаçнă пирки пыл сĕткенĕ тулăх паракан ӳсентăрансене пирĕн хуçалăх кирлĕ чухлĕ акаймасть. Çăка нумай вăрманта, анчах çĕрĕ типĕ. Ку та чăрмав кӳрет. Йăмра пыл хурчĕсене питĕ илĕртетчĕ. Электричество, газ кĕртнĕ çулсенче урамри йăмрасене речĕпех касса пăрахрĕç.Сырмасенче те сахал юлчĕç, уйрăмах – ама йăмрасем.

Элекçи каланине итленĕ хушăра хамăр умри ама йăмра куç умне тухса тăчĕ. Эп хамах лартнăччĕ ăна. Çурăлсан, сап-сарă чăмăркка тавра пыл хурчĕ сырăнать. Пурах-ши пирĕн ялта хальхи ахрăм пурнăçĕнче сыхланса юлнă ама йăмра?

Вĕçеççĕ çулла Хурăнсур хурчĕсем таврана: вырăх апачлĕх акнă курăксенчен, аран-аран сыхланса юлнă çарансенчен, çум курăксенчен, ялти çырла йывăççисенчен пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн пуçтараççĕ сывлăх эмелне хастар та хаяр ĕçченсем. Çывăхрах илепер курăкĕ, клевер, хура тул, фацели ашкăрса ӳссен... Пыл мĕн чухлĕ тухнипе кăна мухтанмалла мар иккен, вăл мĕнле майпа, ăçтан карас пӳлмине тулма пултарни çинчен шухăшламалла пек туйăнать мана чи малтан. Утара

юлташлăх канашĕ юхăнтарсах ямасть, унти çурт-йĕре çĕнетме палăртнă. Тупăшлă уçланкăна татах та пуянлатса илемлетесшĕн.

Чăн та, хурт-хăмăр тĕнче илемлĕхĕпе тачă çыхăннă. Пурте унăн: архитектури те, сăнни те, пылĕ те, пăхĕ те этемшĕн çыпăçуллă, усăллă, сиплĕ. Ăна вун-вун çул хĕпĕртесе те хавхаланса пăхса, унпа çывăхланса пурăнакан Алексей Иванович та халăхшăн кирлĕ çын. Шăпи çут çанталăк юхăмĕнче ахальтенех çыпăçтарман пуль вĕсене. Плешковсен йăхĕнче илемлĕх йăлкăшать. Унăн пиччĕшĕ, Петр Иванович Плешков, Сталинграда хӳтĕлесе хăрах урасăр тăрса юлнă паттăр, çав тери нумай енлĕ маçтăр, ӳнерçĕ те. Аслашшĕ Кукша Петĕрĕ енĕпе пыракан тепĕр тăванĕ Борис Плеханов – чăвашсен хальхи вăхăтри паллă ӳнерçисенчен пĕри.

Йывăрлăх пусăмне сирсе пăрахнă ĕнтĕ Элекçи Плешков та. 1942 çулта тăваттăра ашшĕсĕр, каярахпа амăшĕсĕр тăрса юлнă ĕçчен хресчен ачи хăй çуралнă хура пӳрт вырăнне ялта курăмлă чул çурт лартрĕ. Çамрăксен урамĕнче халĕ Олег ятлă ывăлне çĕнĕ кил çавăрма пулăшать.

Сăмах-юмах хушшинче Фока унран кулкаласа та илет:

– Пыл шăршипе авалхи турăсем пек канлĕхе путнă вăхăтра пыл хурчĕ кăвапаран аяларах сăхса сăнă лартнă хыççăн авланас шухăш пырса кĕчĕ теттĕнччĕ-и-ха эс?..

– Çапла, çапла, – аяккалла тĕртрĕ ăна Элекçи. – Эс ху çăвăр янă çамрăк çемьене амасăр хупнине ан манса кай. Мĕн тăвăн, амасăр çемье çавăраймастăн. Кирлĕ хăй вăхăтĕнче. Пурте. Кунтан ик çухрăмри Утара вĕлле хурчĕсемех вĕçтерсе кайрĕç пулмалла. Раща çумĕнчи пĕчĕк ялта, хăнана вĕçсе килнĕ ют хĕр пĕрчине тĕл пултăм. Ытла аякранах мар, Красноармейскипе Çĕрпӳ районĕсем чикĕленнĕ çĕрти Тӳрер Пĕрремĕш Çĕньял чиперкки аккăшĕ патне килнĕ пулнă та... Нектар патне сăнă туртăнчĕ çав... Çемье çавăртăмăр. Виçĕ ывăл, икĕ хĕр парнелерĕ вăл мана – Римма Порфирьевна. Анчах шел,

сасартăк чирлесе, виçĕм çул çут тĕнчерен уйрăлчĕ. Этемлĕхе хăйĕн сиплĕ вăрлăхне парнелесе хăварчĕ.

Эпĕ, Элекçин арăмĕ мĕнле типтерлĕ те чипер хĕрарăм пулнине аса илсе, ăшра кулянтăм, юратнă арăмĕ упăшкине мĕн тери кирли, виличченех çав тери çитменни çинчен шухăшларăм.

– Ачасем хам çулпа кайнишĕн хĕпĕртетĕп, ывăлсем хурт-хăмăр ĕçне кăмăлларĕç. Хĕрĕсем те хăйсене кăмăллă вырăн тупрĕç. Анчах шел, амăшĕ вĕсен ырлăхне сахал курса юлчĕ, – кулянăвне те, хăпартланăвне те пытараймасть Элекçи. – Мускав облаçне кайса килетĕп те шухăша каятăп. Кĕмĕл Пĕве районĕ текен вырăн пур унта. «Подхоженский» совхозра Владик ĕçлет. Ой, вĕсемпе калаçма йывăр. Утар çуртне кирпĕчрен вăйлă лартнă, электричество, газ, шыв кĕртнĕ. Ман ывăлăн унта ик çĕр вĕлле. Манран нумайрах пыл илет. Хамăр районта та, Чăваш Республикинче те унашкалли çук. Вупше халь пирĕн Чăвашра хурт-хăмăра тивĕçлипе хисеплеми пулчĕç. Кăлăхах. Сиплĕ пуянлăхран пăрăнатпăр. Ывăлсене ĕнтĕ...



**Алексей Плешков (сулахайра тăрать) çемйипе тата тăванĕсемпе. Петр Ковский ўкерне;**

пурнăç мана çак вăрмана, утара хупрĕ те... Тымар ятăм. Хамăн пурнăç тымарне тыттартăм пуль вĕсене. Аталанччĕр, ӳстерччĕр кирлĕ сиплĕх сĕткенне. Чăваш халăхне кăна мар, ытти çынна та усă паччăр.

Алексей Плешков утар хуçи те, вăрман çынни те. Ялăн аллă гектарлă вăрманне те, çул хĕрринчи йывăç катисене те вăлах хуралласа, йĕркелесе тăрать.

Виçĕм çул та вăл ял çыннисемпе пĕрле Шупашкара вăрнарсен ентешлĕхĕн уявне килнĕччĕ. Чăваш операпа балет театрĕн сцени çине ăна та, районти палăрнă ĕçченсемпе пĕрле, чĕнчĕç. Ăста утарçа Чăваш Республикин ял хуçалăх тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ятне панă сăлтавпа чыслăн саламларăмăр, ентешлĕх енчен хаклă парне патăмăр. Ăна мана партарчĕç.

– Куратăр-и? – хĕрринчи вĕлле çинелле пӳрнипе тĕллесе кăтартрĕ Элекçи. – Хуртсем епле сĕрлеме, йăшăлтатма пуçларĕç? Паçăр лартнă рамăсем патĕнчен вĕçсе килнĕ хуртсем туй тăваççĕ унта. Пурне те систернĕ. Астару ташши тетпĕр эпир ăна.

Чăн та, астару ташшипе хĕмленнĕ хуртсем юлашки пыл пĕрчисене пухма васкаççĕ. Çĕнĕ çемьесем татах та тĕрекленеççĕ. Сисмен те, Элмен Сунар енчи çулпа Элекçи лаши тулхăрса çитрĕ. Ун çинче, çилхерен çулса илнĕ чиперкке лара парать. Хăйĕн савнă хĕрарăмне курнипе Элекçи юнашар ӳсекен юман вулли пек тӳрленсе тăчĕ. Фока чеен кулса илчĕ. Утар пурăнать. Плешков Элекçипе Хĕритун Васлин Фокийĕ пурнăç вĕçевне чун-чĕрипе хутшăнаççĕ. Ăшĕнче вĕсен те, пике юланутçăн та юрă янăрать пуль:

Вĕлле хурчĕ ылтăн хурт, ылтăн хурт...

**2000 çул, нарăс. «Хыпар» тата Вăрнарти «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатсенче пичетленнĕ.**

## ВĔÇЛЕНМЕН ÇУЛ

### Вун саккăрăн – пĕр кунта

Пушă пÿртре ыйхă та хуйхăллă. Ачисене кил йăвинчен тахçанах вĕçтернĕ. Алла-аллăн тытăнса, пĕрле пурнăç тунă мăшăр çумран яланлăхах леш тĕнчене ăсаннăранпа вун виçĕ çул çитет. Çывăрма выртсан та Йăван Тимахвич Микулайĕ куç хупаймасăр хăшкăлать. Умра вĕçĕмсĕр пурнăç юххи юхать. Пĕчĕкран астуса юлнăранпа паянхи кунччченхи таранах йăлтах чĕррĕн курăнать. Акă йăмраллă урамсем, мунча пек пÿртсем тăрринчи улăм калпака чус шлепкепе улăштарăççĕ, çеремлĕ-пылчăклă çулсем асфальтпа çуталаççĕ, вĕсем тăрăх машина кĕр-кĕр чупать. Çăпатапа сăхман, фуфайка çинчен тахçанах маннă ял халăхĕ капăр, ăшă тумпа саркаланса утать. Апат сĕтелĕ хула çыннин сĕтелĕпе танлашнă ĕнтĕ. Карчăксемпе стариксем те урампа пынă хушăрах тĕнче тăрăх саланнă ачи-пăчипе, хурăнташĕ-тавраш ĕпе умра калаçнă пек калаçаççĕ, мăйран хĕрес çумне çакна телефон-мобильник хресченшĕн те тĕлĕнтермĕш мар. Николай Иванчăн та пур вăл, кĕсйинчех. Фронтовике Аслă çĕнтерÿ утмăл çул тултарнă ятпа парнеленĕскер. Килĕнчи телефонĕ те ĕçлет. Тăхăр вунналла çывхарать пулин те, пуçĕ те тăнлах, тĕрĕс-тĕкелех ĕçлет-ха.

Çав пурнăç юххине Микулай Иванов иртнĕ ĕмĕр пуçламăшĕнче Раççей çийĕн аслатиллĕ, çил-тăвăллă пăрлă çумăр кĕрленĕ вăхăтра кун çути курса лекнĕ. Етĕрне уесĕнчи Хурăнсур Çармăс ялне те урăхлатса çĕнетнĕ çав хăрушă çанталăк. Пурнăçĕ ытла та майĕпен сывалса пынă. Хĕрлĕ тум тăхăнтартнă хыççăн та ял çыннин питне-куçне хĕрлĕ тĕс çапайман, выçлăх, чир-чĕр чухăн хресчене мăйкăчран кăларман. Микулай Иванов та ял харсăрĕсемпе пĕрле çĕнĕ йăла-йĕркешĕн ваттисене пайтах вăрçтарать, «хĕрлĕ улахра» хăй те çĕнелсе ăс пухать, пĕрлешÿллĕ хуçалăх йĕркелеме аслисене пулăшать. Ашшĕ, Йăван Тимахвич, вĕлер те килĕшмест ывăлĕпе, колхоз тенине ăша хывмасть, йышăнмасть, влаççем хĕстерсе лартасса

кĕтмест, пӳртне-çуртне сутать те, арăмĕпе тата тăватă ачипе телей шырама Çĕпĕре тухса каять. Ашшĕнчен аран-аран сыхласа хăварнă витере вун пиллĕкри Микулай тăр пĕччен тăрса юлать. Юрать-ха çамрăка ял совет председателĕ Михаил Стапенович Шлыков пулăшать. Микулай майлаштаркаласа витерен пĕчĕк пӳрт тăвать. Пултарулăхне кура ăна бригадира лартаççĕ.

Çӳрен каска якалнă тенĕ майлах, Йăван Тимахвич та Çĕпĕртен ура тупанне якатса кăна, пуш кĕсьепе таврăнать тăван ялне. Ăçта пурăнас? Чупкăнăн ирĕксĕрех ывăлĕн куçĕнчен пăхма тивет. Ĕнтĕ, вăл вăхăталла вулăссем вырăнне районсем тунă. Хурăнсурсем Вăрнара пăхăнаççĕ. Салана-салана чăмăртаннă Чапаев ячĕпе тăракан пĕрлешӳллĕ хуçалăх пĕтĕм Чăвашра палăрма ĕлкĕрнĕ. Ял варрине икĕ хутлă правлени çурчĕ туса лартнă. Унран инçех мар, пĕрремĕшпе иккĕмĕш бригадăсем валли лаша вити купаланă, унта ыран вăтăр лаша хупма хатĕрленнĕ каç, колхоз тăшманĕсем ăна çунтарса яраççĕ. Колхозниксем пуçа усмаççĕ, мăн клуб, ферма çурчĕсем тума пуçлаççĕ, уйра вăйлă тыр-пул çитĕнтереççĕ. Сантăркки Тимахви агротехник тăрăшнипе ял хĕрне улмаçырла сачĕ сараççĕ. Çĕнĕ пĕвесем ял куçĕ пек çуталаççĕ.

Ял активисчĕ, Ворошилов стрелокĕ, малта пыракан бригадир Микулай Иванов йĕрĕ, ĕçчен, чипер хĕрпе çӳрет, ăна, Кавăрле Мархвин Машукне, 1936 çулта качча илет. Çамрăк мăшăр çĕнĕ пӳрт лартать. Çимĕкре вĕсен хĕр çуралать. Пĕчĕк Анфиса ашшĕн салтак ячĕ тухать.

1938 çулхи кĕр кунĕсенчи пек салтак юрри янăранине авалхи Хурăнсур нихçан та илтмен пуль. Ял халăхĕ вун сакăр вăй питти çамрăк ара Тăван çĕршыва сыхлама пĕр кунта пĕр харăс Тури уничерен хурлăхлăн ăсатать.

Николай Ивановичшăн акă халĕ те вĕсемпе пĕрле тутăр çыххи сулласа салтак юрри юрланăн, лав çине ларса вăрнаралла кайнăн туйăнать. Вĕсем, унăн тантăшĕсем, çаксемччĕ: Трахвин Васильч, Галки Кĕркурийĕ, Ухтер Йăванĕ, Шашук Йăвăçĕ, Кăнавал

Васлийĕ, Мулкач Никăнĕ, Кашкăр Мишши, Йăвăçпа Виссарун Михайловсем, Укашка Ахванеçĕ, Талтти Çимунĕпе Ванькки, Шĕкĕ Микулайĕ, Кутсăр Хĕветĕрĕ, хăйсен тăванĕ Никăн...

Урапа кустăрми тăнкăртатнă сасă вырăнне хăлхара пуйăс урапи хăлтлатнă сасă кĕрлет. Чукун çул ял ачисене Вăрнартан Канаша, унтан Мускав еннелле илсе каять. Владимир облаçĕнчи Муром хулинче вĕсене мунча кĕртеççĕ те шлемлă çар тумĕ тăхăнтартса тĕрлĕ çар чаçĕсене салатаççĕ. Микулай Иванов, Укашка Ахванеçĕпе (Афанасий Гавриловпа), Украинăна, Житомир облаçĕнчи Бердичев хулине çитет. Стрелоксен 512-мĕш полкĕнче çамрăк боец курсĕнче пиçнĕ хыççăн, Николай Иванова мотострелоксен 1-мĕш бригадине шофера вĕренме яраççĕ. Ялта юланутпа чупнă, урапа-çуна çинче тилхепе тытса çӳренĕ хресчен ачишĕн ку пурнăçри тĕлĕнмелле çĕнĕлĕх пулать. Ара, ялта нихçан автомашина таврашĕ курман-çке, трактор-комбайн-молотилки те районти машинăпа трактор станцийĕнчеччĕ. Хĕрĕх пилĕк кун хушшинче Иванов боец Горькире кăларакан тонна çурăллă грузовике итлеттерме вĕренкелерĕ.

Анăçра вăрçă вучĕ хыпса тухнине пула çарта çапăçу-тытăçу мелĕсене çине тăрсах вăйлатни сисĕнет. Çĕршыв вăрçа хатĕрленни салтакра уйрăмах паллă. Хаяр вăхăт çывхарсах, çывхарсах пырать. Совет Союзĕ, чикке сарса çирĕплетес тĕллевпе, украинецсемпе белоруссене анăç çĕрĕсене пĕрлештерме çар ярса пулăшать. 1939 çулта Хĕрлĕ Çара яппунсем Халхин-Гол таврашĕнче сисĕмлех чĕпĕтсе илеççĕ. Финляндипе СССР хушшинче вăрçă тухать, çапла анăç енчен те пирĕн вăя тĕрĕслеççĕ. Фашистла Германи Польшăна çавăрса илет... Ивановсен çар чаçне те Ленинград çывăхне вырнаçтараççĕ, анчах вăл шурă финсемпе хирĕç çапăçăва кĕме ĕлкĕреймест. Хирĕç тăрăва чарса лартаççĕ. Çăматă, кĕске кĕрĕк, çĕлĕк тăхăннă хĕрлĕ армеецсене кĕçех Киева куçараççĕ, эрнерен тин Волынь облаçĕн тĕп хулине Луцка çитерсе

казармăсене вырнаçтараççĕ. Стирь юхан шывĕ çумне чăмăртаннă пин çулхи пысăках мар хула анăç-тухăç çулĕсен паллă тĕвви шутланать. Хăй вăхăтĕнче вăл Литвапа Польша тата Раççей аллинче пулнă, граждан вăрçи нушинче ăна каллех Польшăна тавăрса панă. Акă, хальтерех кăна СССР çумне çыпăçтарнă ют хула Хĕрлĕ Çар чаçĕсене сивĕ куçпа пăхать. Çĕнетнĕ чикке пирĕннисем те, поляксем те кунĕн-çĕрĕн хĕрсех çирĕплетеççĕ. Тăршшипех çар аэродромĕсем вырнаçтарса тухнă. Аэродром ĕçне тума пулăшакан 299-мĕш батальон (БАО) боецĕ Николай Иванов полуторкипе ăстах чупать ĕнтĕ. Авиадивизи командирне Курск вырăсне Иван Тимофеевич Сюганов комдива чăваш ачи пит кăмăла кайнă-ши, е хăйне пăхăнакан офицерсем сăннипе-ши, Иванова вăл штаба чĕнтерет. Хурăнсур ачи полуторка çинчен çăмăл автомашина çине куçса ларать, дивизи командирне турттарма, кирлĕ çĕре илсе çӳреме пуçлать.

Ивановăн 1941 çулхи кĕркунне, служба вăхăтне вĕçлесе, киле таврăнмаллаччĕ. Хĕвел анăç Украина çĕрĕнче çĕртме уйăхĕн шăрăх кунĕсем тăраççĕ. Тăватă çухрăмри икĕ çĕршыв чикки чĕрĕм куç хупмасть. Çарсем хăйсен вăрттăн, уçă ваййипе йăшăлтатаççĕ. Аслă пуçлăхсем хушшинче пулнă май, Микулайăн хăлхине чуна çӳçентерекен хăрушă хыпарсем кĕтмен-туман çĕртенех кĕре-кĕре каяççĕ. Хаяр вăрçă кĕç-вĕç пуçланасса вăл та салтак ăсĕн шайĕпе чунтан туять, хушăран сехĕрленсе ӳкет. «Çапăçма – çапăçăпăр-ха,



Николай Иванов (сылтăмри) Хурăнсур ачипе Афанасий Гавриловпа (сулахайри) Луцкра. 1940 çул.

ахальтен мар эпир кунта сыхă тăратпăр, тăшмана парăнма шутламастпăр, çĕнтерме ĕмĕтленетпĕр, анчах енчен те, тăрук вилес-тăвас тăк, вăрçăра камăн та пулин пĕтмеллехçке, вара урăх Чăваш енне те, Хурăнсура та, кил-йыша та кураймасăрах пăчланатăн вĕт çакăнти, таçти çăва шăтăкĕнчи вут-кăварлăн хĕмленсе тăракан такам мурĕн çĕрĕ çинче», – тесе шухăшла-шухăшла ыйхăсăр та аптăрать вăл хушăран.

Вут-çулăмĕ Гитлер палăртнă вăхăтпах хыпса тухса Çĕр тӳпине çутатса ярать. Луцк çывăхĕнчи аэродромсенче çĕр çирĕм çар самолетĕнчен икĕ сехет хушшинче вунă «ăмăрт кайăк» тăрса юлать. Çар округĕнчен хушнине пурнăçласа, Сюганов дивизи штабне тата аслă офицерсене илсе самолетпа Житомир еннелле вĕçет. Новоград-Волынск хулинчен çичĕ çухрăмри Федоровкăра çĕр айĕнчи запас аэродром пур. Çавăнта авиадивизи çĕнелме пуçламалла. Ивановăн грузовикпе унта комдивăн çемйине тата япалисене илсе çитермелле. Фашистсен авиацийĕ сывлăшран вут-хĕмлĕ вилĕм кучченеçĕ тăкнă вăхăтра Иван Тимофеевичăн çемйи пĕтнĕ. Иванов сывă юлнă çар çыннисемпе çемйисене, ыраш ăшĕнчен поляксем персе тăнине пăхмасăр, хăрушă вырăнтан грузовикпе илсе тухать, Федоровкăна чиперех çитерет, командирне çемйи пирки хурлăхлă хыпар пĕлтерет. Генерал ĕненесшĕн те мар, хаярланса ĕçлет, çĕнĕ самолетсем, летчиксем йышăнать. Ăна-кăна пăхмасăр тăшманпа çапăçмалла!

Йывăр çухатусем пулин те, çĕнтерӳллĕ кунсемсĕр иртмест вăрçă. Сюганов «ăмăрт кайăкĕсем» те фашистсен çăханĕсене çĕршыв тӳпинче ытлашши ирĕклĕн хуçаланма памаççĕ, вĕсен çулне пӳлеççĕ. Çапах та пирĕн сывлăшçар вăйĕсем те ытти çарсемпе пĕр майлăн каяллах чакса пыраççĕ-ха. Николай Иванов та хăйĕн авиачаçĕпе Федоровкăран – Киева куçать, Днепр, Дон урлă каçса Атăл хĕррине çитсе чарăнать. Кунтан сулахай çырана каçма çул çук. Кунтан – машинăна каялла çавăрмалла, килнĕ

çулпа анăçалла чупмалла... Çĕнтерӳ çулĕ хывмалла! Сталинградшăн пыракан çапăçу пĕтĕм тĕнчене вăратса кисретет.

Вăрçă çилĕ йывăррăн çаврăнать-çаврăнатех анăçалла. Мĕн чухлĕ çапăçура пулман-ши, мĕн чухлĕ нуша курман-ши, миçе автомашинăпа сыв пуллашман-ши тусанлă-юнлă, вилĕмлĕ çулсем тăрăх тухăçалла-анăçалла чупнă май. Дон çинче хăйсене нимĕçсем епле персе хĕстернине аса илнипе ватă салтакăн çан-çурăмĕ халĕ те çӳçенсе каять. Сталинград хыççăнхи пурнăçпа вилĕм саманчĕсем, Днепропетровска, Днепродзержинска ирĕке кăларни, Курск пĕкки, юнлă юхан шывсем... Çар техникине ытларах нимĕн те мар, юхан шыв тытса чарать. Ун урлă ăнăçлă каçасса никам та малтанах тĕплĕн пĕлмест. Пĕр çырантан уйрăлса тепĕр çырана машина урапипе перĕнсен тин хăвна ху чĕрĕ тесе шутлатăн. Каллех вара малалла, тарса пыракан тăшман хӳрине таптаса, çĕнтерӳ ялавне вĕлкĕштеретĕн. Днепр урлă хывнă кĕпер ĕçлет. Чукун çул çине автомашинăсем валли ятарласа хăма сарнă. Иванов американецсен вăйлă «студебеккерĕпе» анăçалла хăюллăн кĕрлеттерсе каçать, авиаторсенчен юлмасăр малалла та малаллах ыткăнать. Авиаторсен ăнăçлăхĕ унран та нумай килет. Вĕсемсĕр, «баосемсĕр», авиачасть сывлаймасть, пурăнаймасть, кĕрешеймест, çĕнтереймест. III Украина фрончĕ нимĕç çарĕсене вирлĕн хĕстерет, аркатать. Сюганов «ăмăрт кайăкĕсем» халĕ ĕнтĕ сывлăшра хăйсем ытларах хуçаланаççĕ. Хĕрĕх пĕрремĕш çулта чакма пуçланă çапăçу вырăнĕсем хыçала тăрса юлаççĕ.

1945 çулхи нарăсра Николай Иванова Саратов облаçĕнчи Вольск хулине самолетсем юсакан специалиста вĕрентме ăсатаççĕ. Çапла унăн вăрçă çулĕсем чикĕ леш енче вĕçленеççĕ. Çĕнĕ «студебеккерĕпе» вăл çывăх юлташĕпе-фронтовикĕпе сыв пуллашнă пекех йывăррăн уйрăлать. Умра – çĕнĕ служба, çĕнĕлле пурнăç.

Техникăна вĕреннĕ, хăнăхнă салтакшăн баранка çавăрттарасси çăмăлрахчĕ те, мĕн тăвăн, хушнине итлес пулать. Вăрçăра кашни кун мĕн чухлĕ самолет арканать. Аманнă «ăмăрт кайăксене» сиплекен те кирлĕ-çке. Çавăнпа вăл ку ĕçе те çине тăрсах хăнăхса пыма, вĕренме шутларĕ. Çарта ăнсăртлăх час-часах сиксе тухать. Чипер вĕреннĕ çĕртех... Ака уйăхĕн 27-мĕшĕнче Мускавран самолетпа пĕр капитан ятарласа вĕçсе килет. Пулас авиамеханиксене строя тăратаççĕ. Офицер вун çичĕ шофер, вăл шутра Иванова та, суйласа илет те, вĕсене самолетпа Чкаловск аэродромне çитерет. Питĕ маçтăр, вăрçă çулĕсенче чупса пиçнĕ. шанчăклă шоферсем кирлĕ пулнă иккен. Сывлăш-Çар Вăйĕсен институтне ертсе пыракан С.А.Данилин генерал-лейтенант Николай Иванова хăйĕн шоферĕ туса хурать.1937 çулта Громов,Юмашев тата Данилин «АНТ-15-1» самолетпа Мускавран Çурçĕр полюсĕ урлă США-на çити вĕçсе тĕнче рекорчĕ тунине астăватчĕ-ха чăваш ачи те. Американецсем Сергей Алексеевича ун чухне «кадиллак-80» çăмăл автомобиль парнеленĕ пулнă. Çирĕпскер,аванах сыхланса юлнă. Арăслан вăйлĕ çав лимузинпа Хурăнсур ачи СССР Аслă Канашĕн дупутатне Кремĕле, института, Чкаловск аэродромне тата ытти çĕре те сыхланнулăн илсе çӳрет. Иккĕмĕш генерал ĕнтĕ шанса ларса пырать ун çумĕнче.

Генерал шоферĕ вăрçă чарăннине Чкаловск аэродромĕнче пĕлет. Мĕн тери пысăк савăнăç! Çĕнтерӳшĕн вăл та вăй хунă. Генерал паттăр салтака отпуск парать, «Çемйӳна илсе кил, пурăнма хваттер тупатпăр», тесе ăсатса ярать. Ялта виçĕ эрне каннă,арăмне пулăшнă, ял-йышпа савăннă хыççăн, Микулай Иванов Мускава пĕчченех таврăнать. Машук инке ялтан тухма хăрать çав, генерал сĕнĕвĕпе килĕшмест. Пулаймасть вара Хурăнсур хĕрарăмĕнчен Мускав майри.

## Генерал парни

Йăван Тимахвич ывăлĕ сакăр çултан тин салтак тумне хывать. 1946 çула вăл Хурăнсурта çемйипе, тăванĕсемпе



Çурçĕр полюсĕ урлă США-на вĕçнĕ «АНТ - 25-1» самолет экипажĕн штурманĕ С.А.Данилин, 1937 çул; Н.И.Иванов шофер, 1946 çул; Данилин генерал парни – автомобиль.

кĕтсе илет. Ял-йыш умĕнче намăс мар – çарти, вăрçăри паттăрлăха «Сталинграда хӳтĕленешĕн», «Киева хӳтĕленĕшĕн», «Паттăрлăхшăн» медальсем, «Отечественнăй вăрçă» орденĕ çирĕплетеççĕ.

Вăрçăн вут-çулăмлă алли хыпашланă нумай ял-хулан ишĕлчĕк, хура сăнне курса тĕлĕннĕ хыççăн, тылри Хурăнсур Çармăс хĕне кайни те ăна, фронтовике, хытах кулянтарнă. Икĕ вăрçă инваличĕ, уксак-чăлах Шлыков халĕ колхоза ертсе пырать. Николай Иванович унпа канашлать те, Мускава çыру ярать. Данилин генерал хăйĕн шоферне пулăшма шантарать, ăна тĕп хулана чĕнет.

Унашкал çĕре парнесĕр ан та тух. Хурăнсурсем шăрттан пĕçереççĕ, кăрчама тăваççĕ, çăка каткапа пыл хатĕрлеççĕ. Йăван Микулайĕпе ялти ятлă тепĕр çын Упа Михвачĕ çапла Вăрнартан пуйăспа Мускава пысăк ĕç тума тухса каяççĕ. Вĕсене, хаклă хăнасене кĕтсе илнĕ пек, Данилин генерал Хусан чукун çул вокзалне адъютанчĕпе пĕрле машина янă. Çитсен, ятарлă уйрăм пӳлĕме вырнаçтарнă. Саша Волгин аслă лейтенанта, Чĕмпĕр чăвашне, Иванов унчченех çывăх пĕлнĕскер, пуçлăхпа калаçма вĕсен чĕлхе-çăвар яп-яках уçăлать. Данилин чăвашсене парнешĕн тав тăвать, Хурăнсур элчисене чаплă ресторанта хăналать. Унта вăл хăйĕн авалхи тусĕсене те чĕннĕ пулнă. Авиаци генералĕсем, Совет Союзĕн Геройĕсем Михаил Громов, Андрей Юмашев, Сергей

Данилин хăйсемпе пĕр сĕтел хушшинче ларса янравлă черкке çĕклессе хурăнсурсем тĕлленмен те иккен. Упа Михвачĕ кунта та хăйĕн чеелĕхне кăтартать. Сурăх тирĕнчен çĕленĕ сумкăна вăл шăрттан, пыл уйрăммăн хурса пынă иккен. Вĕсене шакăрт кăларса хурать пуян сĕтел çине. Пурте тутанса ырлаççĕ чăваш апатне. Хăнасене чăвашла юрлама ыйтаççĕ. Йăван Тимахвич Микулайĕпе Упа Михвачĕ вара, Мускав майрисемпе ташласа илнĕ хыççăн, «вун ик кăшăллă пичкине» те уçса ĕçеççĕ», «вĕç-вĕç куккукĕпе» те Хурăнсур вăрманĕ таран вĕçсе, генералсене пултарулăхĕпе тĕлĕнтереççĕ, Тăвата кун хăналаннă хыççăн вĕсем Мускавран укçасăр-мĕнсĕр полуторка илсе тухаççĕ, йывăр та вăрăм çулпа виçĕ талăкран ял унечинчен сиренăпа кăшкăртса кĕрсе каяççĕ. Ялти пĕрремĕш шофер Иванов çапла яла пĕрремĕш автомашинăллă тăвать.

Генерал парни колхоза мĕн чухлĕ усă панине шутлас пулсан-и? Уншăн Николай Ивановича епле тав тумалла!

***

1990 çулччен, хĕрĕх пĕр çул кусать Ивановăн çул урапи - пурнăç урапи. Баранка шушкă та мар, паранкă та мар. Ăна çăвара хыпаймастăн. Вăл – вăйлă алăпа çавăрттарса, ăслайлăн тытса пырсан, умри çула çивĕч куçпа тинкерсе, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесен кăна тутлă, хырăм тăрантармăшĕ. Хĕрĕх пĕр çул хушши автомашина кабини уншăн ĕç кабинечĕ, пурнăç нуши-савăкĕн ларкăч вырăнĕ пулнă. Кустăрмаллă çĕмренпе ĕрĕхсе çӳренĕ çулсенче унăн çĕр çине пусман вăхăт мĕн чухлĕ пулнă-ши? Ура утнă чух утса-чупса юлас, чĕркуççи хуçланнă чух ура хуçса ташласа савăнас тенĕнех, Николай Иванович ватăлма пĕлмен хыт шăнăрлă кĕлеткине тӳрлетет, алăкăн-тĕпелĕн уткалать те, хут купăсне алла илет, чăваш çеммипе ашшĕсен авалхи юррине хуллен юрласа ярать: «Алран кайми аки-сухи...» Шăнкăрав сасси илтĕннипе вăл телефон патне пырать. Ăна Шашук Йăвăçĕ хăнана чĕнет. Пĕрле салтака кайнă, фронтран йывăр аманса таврăннăранпах ял халăхĕн культурине

пуянлатасишшĕн пурăнакан Иосиф Иванович Шашков, çуралнă кунне паллă тăвать. Николай Ивановичăн пушă пӳрчĕ ăшă кăмăлĕпе тулчĕ. Вăл Шашук Йăвăçĕпе «фронтовой сто грама» сывламасăр ĕçсе ярса, тантăшĕ калакан аккордеон çеммипе ура хуçсах ташласшăн. Вĕçленмен-ха çул. Пурнăç çулĕ çинчи симĕс çутă куçран çухалмасть-ха.

**«Хыпарăн» 2006 çулхи 13-мĕш номерĕнче пичетленнĕ.**

# ТĂВАН ЯЛ ТУЙĂМĔ

## («АННЕПЕ КАЛАÇНИ» РОМАНРАН)

### Ура пуссан – çул пулать

Урине тăлла чĕркесе çăпата сырнă, карчăкки çĕлесе панă пĕветнĕ пир йĕмпе катан пир кĕпе тăхăннă, пуçне карттус лартса янă вăтăрти Куçма Пракахвийĕ Чарпуçĕнчен таврăнать. Хĕвелпе пĕрлех тунти пасарне çитсе вунă мăшăр çăпата сутнă хыççăн вăл лавккара шушкă, пĕремĕк, сахăр, типĕтнĕ пулă туяннăччĕ те, пир хутаçне хул пуççи урлă ярса, вăрăм утаспа яртлаттарса пырать. Тусан мăкăрлантарса иртсе кайнă тăрантаса çул çынни ăмсанса пăхса ăсатрĕ. «Эх, ку Ларивансене - арман хуçисене... вырăн та пурччĕ вĕт, лартмарĕç... – ăшра тулхăрса илчĕ Пракахви. – Кулхус текен эртеле ухмахланса чи малтан чупса кĕрсе кайса килти виç лашана та пĕр харăс парса яман пулсанах... Никам куçĕнчен пăхас çукчĕ».

Вăй питтине ĕнтĕ вунă çухрăм пĕрре сурмаллăх çеç те... Çапах, каллĕ - маллĕ вăхăчĕ те ытлашши иртет, шăм - шакĕ те самаях лаштăр каять.

Туçи Çармăсран тухакан урапа çулĕ айлăма анать. Юман ращи кĕтессинчен пуçланакан чикĕ çеремĕ çĕр лаптăкне икке пайлать. Хыçалти - туçисен, умри - хурăнсурсен. Масар тăвайкки чăнкă. Хуйса каякан е йывăр лавне тытса чарайман янаварсем кунта çынсене пайтах

нуша - асап кӑтартнӑ.Тӑван уйсемпе ҫырма - ҫатра, авалхи вӑрмантан ларса юлнӑ хыр, хурама, юман тата Хурӑнсур ывӑҫ тупанӗ ҫинчи пек курӑнаҫҫӗ. Миҫе пин ҫын утнӑ - ши, миҫе пин лаша чупнӑ - ши ку ҫулпа? Выльӑхӗ кӗпӗрленсе тусан ҫӗкленӗ.

Карлӑклӑ йывӑҫ кӗперпе Сунар ҫырми урлӑ каҫсан, Пракахви хутаҫне типӗ кӑткӑ тӗми ҫине сӗвентерчӗ те шыв хӗрне анчӗ, чӑшӑлтатса ларакан хӑмӑш тӑррисене хуҫа - хуҫа илчӗ. Тин ҫеҫрех чупма пуҫланӑ ывӑлне, Микулая, парнелесе савӑнтарма шутларӗ.

Ҫул, Тур амӑш ҫырми урлӑ каҫса, Турхай ҫырми хӗррипе ялалла хӑпарать. Ӑна хирӗҫ темиҫе лав иртсе кайрӗ.

– Ытла нумай туртаттӑр ыйха! – кӑшкӑрчӗ Пракахви. - Хальччен Упи витӗр тухмалла!

– Куна пӑвӑр ҫимӗ - ха, ӗлкӗретпӗр, – лӑпкӑн хуравларӗ чӗлӗм чӗртме хӑтланса пыракан Кавӗрле Еххӗмч. – Шупашкара эпӗр ҫӗр выртмаллах тухнӑ.

– Эс тата ху мӗн яркаланса ҫӳрен? – илтӗнчӗ Путек Карачӑмӗн сасси. – Тӑвара пӗрлех ҫӳреттӗмӗрччӗ-ҫке!

– Ыран Пакун Мирунӗсемпе эрехе каймалла... – алӑ сулса ӑсатрӗ вӗсене кӳршийӗ Пракахви.

Ку ҫулпа Шупашкара утмӑл ҫухрӑм пулать. Ун тӑрӑх пайтах ҫӳренӗ хурӑнсурсем. Пӗррехинче Куҫма Яккӑльч пӗчӗк Пракаха инҫе ҫула илнӗччӗ. Ача пуҫласа мӑн юхан шыва – Атӑла, аналла - тӑвалла ҫӑра тӗтӗм мӑкӑрлантарса хуллен ҫӳрекен пӑрахутсене, чана пек шур кайӑксене – чайкӑсене, хула текен чуллӑ мӑн яла курчӗ. Тӗлӗнмелли пурччӗ ҫав. Карттинкӑри пек хитре тумланнӑ майрасемпе шукӑль арҫынсем, ҫӑмӑл автомашинӑсем, ҫап - ҫутӑ тӑрӑллӑ тем чухлӗ чиркӳ енчен таврана кисретсе янӑракан чан сасси... Вырӑсла калаҫу ... Праках ашшӗ килти лашапа час - часах тӑвар, тимӗр - тӑмӑр, пичкепе шур эрех турттарнӑ. Ҫулӗ, Чарпуҫ - Ямашран, Атӑл еннелле те, шӑхасаналла та илсе ҫитерет. Пракахӑн кӳрши Путек Карачӑмӗ тата хӑйматлӑхӗ Кавӑрле Еххӗмч

çав çулпа, тусан мăкăрлантарса, Шупашкар шухăшĕпе чуптарчĕç.

Хурăнсурсемшĕн Çĕрпĕве тĕрлĕрен ĕç хучĕпе тата земство судне çӳремелли çул ку. Уес хулинчен яла патшалăх çыннисем йĕрке тума киле-киле кайнă. Земство исправникĕ ялта çĕр харкашăвне пусарма пуху ирттернине, унта староста мĕнле çухăрнине халĕ те манмсасть - ха вăл.

Пракахви Çĕрпелти земство шкулĕнче мĕн вĕреннине асра тытма тăрăшать. Кĕпĕрнесем, уессем, вулăссем çинчен чи малтан унта илтнĕ. Хурăнсур Çармăс, Хусан кĕпĕрнине туса хурсан, 1708 çултанпа Çĕрпӳ уесĕнчи Кĕçĕн Кипек вулăсне кĕрет. Пĕр кĕске хушă вĕсене Чулхула кĕпĕрни те тытса тăнă. 1781 çултанпа яла Етĕрне уесне куçарнă. Виçĕм çул Чăваш çĕр - шывне каллех тепĕр майлă каскаласа тухрĕç. Уессемпе вулăссем вырăнне, ялсене районларĕç. Тĕп хуçасем, ыйту - хурав кантурĕсем халĕ - Вăрнарта.

Пракахви шăхăркаласа юрласа та илет çула кĕскетнĕ май. Шăркана ларнă ыраш пуссипе те киленет. Хăйсен ани пулнă - çке. Тислĕк чылай тăкнăччĕ кунта. Авă епле çăра,çӳллĕ ӳснĕ тырă - хул пуççи таранах. Турхай çырми юплевĕнчи часавай çумне вăл пĕремĕксем хурса хăварчĕ. Ваттисем валли. Хĕвеле хирĕç тăрса, сăх сăхрĕ.

Çул шухăшпа пуян. Аслашшĕ юптарнисем утас çумне утас хушаççĕ, аваллăха куç умне кăларса пыраççĕ. Темиçе çĕр çул каяллах, вун çиччĕмĕш ĕмĕртех, утнă пулас çак еннелле чăвашсем телей шыраса. Аякран мар, Пракахви халь кăна ытлашши пысăках мар тăваткал ялтан тухнă Туçи Çармăсранах - ун чухне Янсарина Çармăс текен çĕртенех. Куçма Яккăльч ывăлĕ хăйне май шутланă тăрăх, мĕн çитмен - ши Сементей, Кашкăр, Шеврик, Юман, Ярата ятлă хресченсене? Ирĕклĕх? Çĕр? Пуянлăх? Кам пĕлет, анчах вĕсем, Асанхăтлă çырми пуçĕнче вăрман уçлăхĕ тупса, пӳрт - çурт лартнă, Хĕвелпи, Илемпи, Салампи, Нарпи, Элпи пикесене качча илсе килсе,

Хурӑнлӑхра ял пуҫласа янӑ. Ҫавӑнпа патвар яшсемпе чипер хӗрсем Хурӑнсур илемӗн ҫӑл куҫне вӑйлатнӑ. Куҫма Яккӑльч Пракахвийӗ те ҫав хастар ӗҫченсен пӗр йӑхӗнченех. Акӑ вӑл, ял ҫумне ҫитрӗ те Шеврик унечинчен кӗрсе хулӑн хӑмапа сарнӑ кӗпер урлӑ каҫрӗ, хӑйсен Тӑхӑр арӑм ҫутне ҫитрӗ. Вӑрҫӑра вилнӗ тӑхӑр салтак арӑмӗ ячӗпе панӑ вӗсен урамне.

Хул пуҫҫи урлӑ шушкӑ ҫыххи ҫакнӑ ашшӗне хирӗҫ пӗчӗк Микулай вӗлтӗртеттерсе чупса пычӗ.

* * *

Асанхӑтлӑ ҫырми Куҫма Яккӑльчсен умӗнче сарӑлса выртать. Вӗсен пахчи хыҫӗнче икӗ юпӑ: ҫурҫӗр - хӗвел анӑҫ енчине, вӑрӑммине, Мӑн Киремет теҫҫӗ, ун ҫумӗнчине - Пӗчӗк Киремет. Куҫмасемпе Яратасен умӗнче тата виҫӗ юппи пӗрлешет: пӗри тухӑҫалла шӗвӗрӗлет, тепри ял витӗрех тухса каять, варринчи тата икӗ юппа пайлать. Ҫыранӗсем хӗррипе – ял-йыш кил-ҫурчӗ.

Туҫи Ҫармӑсран килекен тӗп ҫул ӗлӗк-авал ҫакӑнтан тӑвалла хӑпарнӑ, Кашкӑрсен пахчи хыҫӗпе Уравӑш ялӗ еннелле тухса кайнӑ, теҫҫӗ. Кашкӑрсенчен кӑшт аяларах, икӗ юпӑ пӗрлешнӗ тӗлте – икӗ кӗпер. Кашкӑрсен умӗнчи юпӑ урлӑ тӑварах тата тепӗр кӗпер хывнӑ, Кӑрӑпчак Хӗветӗрӗсен ҫуммипе иртекен юпӑ пуҫӗнче те кӗпер пур. Куҫма Яккӑльчсен тӗлӗнче, вӗсенчен кӑшт тӑварахра, тата икӗ кӗпер тунӑ. Ӑна маҫтӑрланӑ ҫӗре вӑл хӑй те хутшӑннӑ-ҫке. Ашшӗн верстакӗ ҫинче мӗн кӑна ӑсталама пӗлмен пуль ачаллах. Хатӗр-хӗтӗрӗ кирлӗ чухлех. Санарпуҫӗнчи хуннӗ Тимӗрҫӗ Матвийӗ ӑна тем те туса панӑччӗ. Хӑшне-пӗрне пасарта туяннӑ.

Кӗпер ҫумӗнчи анлӑ ҫерем лаптӑкӗнче ашшӗпе пӗр тӑваннисен, Ваҫли Яккӑльчсен, вӑрӑм кӗлечӗ ларать. Ун умне Пракахви йӑмра лартнӑ. Каҫпа кӗлет умне яш-кӗрӗм пуҫтарӑнать. Натешпе Пракахви, ҫамрӑклӑха аса илсе, чӳречерен пӑхса лараҫҫӗ.

Натеш кӑмака ыйтӑвне ҫуркуннех хускатнӑччӗ те, ерҫӳ ҫуккине пула, стариккин унта алӑ ҫитмерӗ.

Коллективизаци мыскари лартакан шарне те курмалла пулчӗ. Пӗрре пӗрлешнӗ хресченсем пӑтранса кайрӗҫ. «Хурӑнсур» ушкӑн чутах саланатчӗ. Колхоза ҫырӑнман чеесем хӑйсен хуҫалӑхӗпех пурӑнаҫҫӗ. Вӗсен кумӗ Партас Мӗкӗтиех ҫӗнӗлле пурӑнма васкамасть, авӑ.

Паян Пракахви кирпӗче кайма шутларӗ, урапине тикӗт сӗрчӗ, кирпӗчпе улӑштарма тырӑ тултарса хучӗ. Витере ӑна хӑйсен лашинех пачӗҫ. Хуҫине паллана Турхай вӑрӑммӑн кӗҫенсе ячӗ. Пракахви лашана ҫилхинчен, ҫамкинчен ачашларӗ, унтан утланса киле анчӗ.

Турхай ҫырми ҫумӗнчи анана сухалана чухне хӑмланӑччӗ те вӗсен кӗсри, тихине Турхай ятлӑ хучӗҫ. Ӳссе вӑл лаша пулчӗ.

Турхайӑн икӗ юппи пӗрлешнӗ ҫӗрте ватӑ юмансем, хурамасем, ҫӑкасем ҫилпе, хӗвелпе, уйӑхпа, ҫӑлтӑрсемпе калаҫса кашлаҫҫӗ. Хырӗ тем ҫылӑха кӗнӗ Турӑ умӗнче, унӑн тӑррине аҫа ҫапса ҫунтарнӑ. Вулли ҫирӗпех-ха. Ҫырминче вӑйлӑ ҫӑл куҫ тапать.

Турӑ пӳрнӗ вырӑн, Турӑ панӑ иккӗмӗш пурнӑҫ теҫҫӗ те ял ҫыннисем ҫак асамлӑ сӑмсаха, – ҫаплах пуль ҫав. Вӗсен тихи те патвар ҫитӗнчӗ, амӑшӗ те чире каймарӗ, халӗ ӗнтӗ – ял ҫыннисен пӗр витине хупнӑ лашисемпе туслашать. Вӑй пачӗ Турхай лаптӑкӗ Куҫмасене.

Ватӑсем унта ҫӳлти курӑнман Турра пуҫҫапма авалтанах пухӑннӑ. Чӑваш Туррин сӑнне ӗмӗрте пӗр чӑваш курман та, ҫапах, ӑслӑ пуҫӗпе тавҫӑрса-шухӑшласа, ҫӳл тӳпери Хӑвата пуҫпа-пуҫах тӗкӗнме-ҫапӑнма тӑрӑшнӑ Чӑваш. Тӗнче ҫаврӑмӗн хӑвачӗпе Ҫӗр ҫинче йӑшӑлтатакан тӑнлӑ чӗрӗ чун кутӑнла майлӑ, пуҫпа ҫывӑхланнӑ. Этемӗ, вӑл шутра чӑваш текенни те, пуҫҫапса хӑйне хӑй лӑплантарнӑ. Тур пехилне, тӗнчери курӑнман вӑйсене илме тем тӗрлӗ парне те панӑ, тет. Пракахви те, ун ҫумӗнчен кашни иртмессерен, часавай кутне е ҫимелли, е вак укҫа хӑварать, «Эй Турӑҫӑм, пулӑш пире», – тесе кӗлтӑвать.

Хурӑнсурсене ҫакӑнти Турӑ хай-пӳрен парать-парнелет, тулӑх пурнӑҫ пиллет имӗш.

Пулăх, тырă турри çакăнта пирĕн, тесе амăшĕ çур акине е тырă вырма тухсан, çак сăвап кĕтесне пуççапмасăр ĕçе пуçăнмастчĕ. «Çырлах турă, çырлах тур амăшĕ, пӳлĕхçĕ, пӳлĕхçĕ амăшĕ, çырлах, çулталăкран çулталăка сывă усра, пире мĕн памаллине пар, пĕлĕчĕ çумăр, хĕвелĕ ăшă, уйăхĕ лăпкăлăх, çăлтăрĕсем çутă паччăр, эй, турăçăм, усал çанталăкран сыхла, пире тутă ту», – çак кĕлле астуса юлнă амăшĕ çумĕнче тăнласа тăракан пĕчĕк Пракахви.

Юрать-ха урапа-çуна, ытти хатĕр-хĕтĕр кил валли те сыхланса юлнă, пурне те пуçтарса каймарĕç пĕрлешӳллĕ хуçалăха. Вăл, лашана хăмăт тăхăнтартса, çурăмĕ çине йĕнерчĕк хучĕ, хырăм айĕнчен çыхрĕ, чĕнтен тунă кутлăх уртрĕ, унăн пуçĕсене хăмăтран кăкарчĕ, вĕçне хӳри айне çаклатрĕ. Хăвăрт кӳлчĕ лашана.

Турхай самай туртăннă, кайри пĕç купташкисем тухса тăраççĕ. Килти пек кам пăхать ĕнтĕ ăна, эртелте? Такама та парса яраççĕ черетпе. Ют çын вăл пурте хĕрхенсех каймасть: хытă хăвалать, ĕшентерет, хăйшĕн вăхăтлăха усă курать те, лаша пăхакана çитсе парать. Турхай хуçашăн савăнчĕ пулас, хăртлата-хăртлата тем калаçасшăн, хăй тикĕс юртать.

Ача чухне вĕсен урамĕ кĕскеччĕ. Партассен тĕлĕнчех уничеччĕ, каярахпа уя, çырма хĕррипе, Симунсен Якуркки, Хуньтăк Мирунĕ, Михвать ашшĕ Хĕветĕр,Шахалккă Унеçĕмĕ, Люксантăрсем, Унтри Çитăрчсем, Пакун Мирунĕсем килсе ларчĕç.

Вăрман çулĕ Пакун Мирунĕсен умĕпе çырма тăрăх тӳрех тухатчĕ. Унта картларĕç те, Шахалккăсем çумне униче турĕç. Çав уничерен тухса Пракахви анкартисем хыçĕпе лашине вăрман еннелле юрттарчĕ. Çул тӳрех вăрман кĕтессине, мăн хурама патне тухать. Лаша малаллах ăнтăлать. Хуçа тилхепене сылтăмалла туртрĕ те Турхай Элмен Сунар çулĕ çине пăрăнчĕ.

Хурăнсурсем кăна мар, юнашарти çĕрпелсем те тахçанах такăрланă ку çула. Çармăс вăрманĕ çумĕпе

Элмен Сунар витĕр Кăмаша, унтан Кăкшăма, Çавал урлă каçса Нурăса, пасарлă çак пысăк ялтан Элĕк урлă Етĕрненех, Кăрмăшах çитет, унтан Чулхула еннелле пăрăнать вăл.

Кĕçнерни пасарĕнче Пракахвисем Чăрăш Хирлеп çыннинчен ĕне туяннăччĕ. Нурăса тырă сутма тухнăччĕ те вĕсем, арăмĕпе иккĕшĕ луччĕ ĕне илес терĕç. Килти вуннă пăрулана Ачашкăна улăштарма вăхăт çитнĕччĕ. Ачча пасарĕнче туяннăскерне аслă хĕрĕ Уçтен Ачашкă ят панăччĕ те... Хирлеп Кавăрлинчен вĕсем ун чухне çур лав тырăпа ĕне улăштарчĕç, ыттине сутрĕç. Кавăрле Пракахвие чаплă кирпĕч сутма пулнăччĕ. Нурăс хыçĕнчи Чăрăшаваскать халĕ Куçма ывăлĕ. Хирлеп шывĕ урлă халтăртатакан йывăç кĕперпе каçса хăпарсанах ялĕ пуçланать.

Лайăх калитленĕ кирпĕч тиесе таврăнчĕ Пракахви Етĕрне çулĕпе. Тата тепĕр иккĕ хутламаллах пулать-ха.

***

Кипек пасарĕнче тунти кунсем çăпата аван каять тенине илтнĕ Пракахви ирех Шеврик кĕперĕ урлă хăмасене юрлаттарса каçрĕ те уй хĕрринчи униче алăкне хăйăклаттарса уçса Асанхăтлăпа анаталла таплаттарчĕ. Элмен енчен юхакан Сунар çыранĕпе кăшт ансан вăрăм кĕпер урлă каçрĕ, тăвалла улăхма пуçларĕ. Çулĕ тусанлах мар. Халĕ кунтан ытлах çӳремеççĕ, ялпа ял çеç хутшăнать мăн çулпа. Унччен вара çĕр хăпартса тунă çак çул уессене, вулăссене çыхăнтарнă, пучтă çулĕ пулнă. Пăваран Кăрмăша, унтан Чулхулана, тата малалла та кайнă теççĕ. Кĕперсене çирĕп тытса тăнă. Вăйлă шыв юхтарса каясран тунă çӳллĕ, вăрăм кĕпер çирĕпех-ха. Хурăнсурти Павăл Ехремч ку çулпа ямшăкра чупнă. Ывăлĕ, Лавренти, Пракахви утакан çак çулпа Кĕçĕн Кипек шкулне ачасене вĕрентме çӳрет. Ку çулпах Кĕçĕн Кипек витĕр Етĕрнене кăна мар, сылтăмалла пăрăнса каякан юппипе, Шупашкара та çитме пулать. Ĕлĕк кунтанах Раççейĕн тĕп çулĕ çине – Хурăнлă хурлăх çулĕ çине тухнă.

Пракахвишĕн Кипек пасарĕ чăнах та ăнăçлă пулчĕ – тавар хăвăрт кайрĕ. Унта ăна Пăваяль çынни Ваçĕли тĕл пулчĕ те хайсем патне ирĕксĕрлесех туртса кайрĕ. Кӳршĕри Йăван Хĕветĕрчсем патне Петрава каçатчĕç те вĕсем Сунар урлă, кӳршĕ ял хăнисене Куçма Яккăльчсем те пĕрре кăна мар хайсем патне чĕннĕ. Тĕл пулнă ятпа Ваçĕли ăна самаях хăналарĕ.

Ялалла Пракахви çулпа тавра мар, тӳрĕрен каçрĕ. Пăваяль çырми тăрăх анса Сунар çыранне çитрĕ, шыв урлă сиксе каçрĕ те, выртса çăл куçран шăла тивекен шыва мехлерĕ. Тăварланă хаяр ăша хыптарчĕ пули?

Тӳркаç сукмакĕ Пăваяль хыçĕпе мăраталлах тăсăлать, тухăç-кăнтăр еннелле, Хурăнсур анкартийĕсем çумĕпе, масар патне тухать. Мăратсемпе кĕмĕлямашсем-пăваяльсем сукмакпа Ачча пасарне çӳреççĕ кунтан. Хĕлле çеç канать сукмак. Унпа Пракахви каллех Шеврик уничине çитрĕ.

Масар патĕнчен Çĕрпелле Çармăс чикки тăрăх Хурамала каякан сукмака та такăрлатсах тăраççĕ.

* * *

Партас Мĕкĕтисем Куçма Яккăльчсенчен инçех мар. Шаптак Мĕкĕтисенчен пăрăнсанах, урам тепĕр енче. Мĕкĕте Пракахвирен икĕ çул аслă. Куçма ачи хушăран унран кулать: «Эс, кум, иртнĕ ĕмĕр çынни, эп – çĕн ĕмĕр çынни». Мĕкĕти 1899 çулта, Пракахвийĕ 1901 çулта кун çути курнă.

Колхоз туни çулталăк иртрĕ. Партассем çаплах унталла туртăнмаççĕ-ха. Улькийĕ çуралсан, вĕсем Куçмичсене кум тунăччĕ. Акă пĕррехинче Мĕкĕте Пракахви кумĕпе Шăхрана кайма калаçса татăлчĕ. Унччен Лариван арманĕнче çăнăх авăртрĕç. Турхая халĕ ӳт кĕнĕ, унпа инçе çула тухма пулать. Мĕкĕте килти кĕсрине кӳлчĕ.

Пăштрик унечинчен тухса вĕсем Çĕрпел арманĕсем патнелле пыраççĕ, акă, анлăрах çулпа, анкартисем хыçĕпе, Хирпуç еннелле пăрăнчĕç. Хирпуçпе Ачча юнашарах, пĕр кана чупмалăх çеç. Шăхран та çирĕм пилĕк çухрăм анчах Хурăнсуртан. Чукун çул çине те ялан çак çулпа тухнă.

Станцире вĕсем çăнăхне вырăссене самай лайăх хакпах сутрĕç. Каялла таврăннă чухне Партас Пракахвие çапла каларĕ:

– Кум, атя пĕрре хамăр тăван-пĕтен патне кĕрсе тухар?

– Сирн Аччара хурăнташ-пĕлĕш пуррине астумас эп, – тĕлĕнчĕ малтанах Куçма ачи. – Кам патне?

– Тавçăраймарăн-и? – терĕ Мĕкĕте. – Пирн те, сирн те, пĕтĕм ял Ачча масарĕнче...

– Тин ăнлантăм, – ĕнсине хыçрĕ Пракахви. – Тахçанах килсе курасшăн та çав, вăхăт аври кĕске-çке. Кунталла çитнĕ пек чух атя апла, пулштух пур, премĕк-канихвет туяннă...

Мĕкĕте çураличчен тăватă çул маларах Çĕрпелпе Хурăнсур хăйсем чиркӳ лартнăччĕ. Ăна та, Пракахвие те Çĕрпел чиркĕвĕнче шыва кĕртнĕ. Петĕрпе Павăл апостолсем ячĕпе светить тунă чиркӳ уçăличчен несĕлсене тăхăр вун çула яхăн хушши Ачча чиркĕвĕн масар лаптăкĕнче пытарнă. Хăйсен чиркĕвне çӳреме тытăнсан çармăссемшĕн Чиркӳллĕ Ачча çулĕ вăрăмланса пынă, асăмĕ майĕпен манăçнă. Вилĕ чунсене килти турă кĕтессинче асăннипе тата Çĕрпел чиркĕвĕнче асăнтарнипех çырлахнă. Акă вĕсем паян, тăван несĕлĕсен вил тăприйĕсем çинче, кĕленче пуçласа эрех сыпрĕç, вĕсене те аствитерчĕç, – камăн тăванĕ-хурăнташĕ ăçтарах канленсе выртнине пĕлсе тупаймасăрах. Вăл вăхăтри ик çĕр киллĕ Хурăнсурăн ултă çухрăмри ялĕ – автансăр ялĕ... Унашкал ялсем кунта речĕпех, тата вун çиччĕ. Пурте вĕсем Ачча чиркĕвĕн прихутне кĕнĕ ялсен сăваплă вырăнĕсем. Вилĕ чунсен хули пекех. Мăн çул çинче. Кунтан Шăхран чукун çул станцийĕ витĕр пуйăспа тĕнче хĕрнех, Хĕвел тухăçне, Яппун çĕршывĕ çывăхнех çитме пулать.

Кунтанах хурăнсурсен чунĕсем те Тĕнче Анлăшне хăйсен çулĕпе Ирĕклĕхе вĕçнĕ пуль, енчен те вĕсем Христоса хăйсен чăн-чăн çĕнĕ турри тесе йышăннă пулсан... хуптĕрленипе ирĕксĕрлесе улталанине йышăнман пулсан.... хăйсен çулне каялла – хурăнсуралла

кĕскетсе, Турхай çырми пуçне, Мăн Киремет хĕррине ял халăхне пухса пĕрле пĕр картара юлма килĕшнĕ пуль... Таçтан аякран такам-мурĕ илсе килнĕ темле тĕне чĕре тĕнчине кĕртмесĕрех хĕрес айне кĕрсе выртнă пуль. Чăваш хресченĕ, пуçĕ ĕçленĕ пулин те, вĕренсе нумай пĕлеймен пирки, хăйĕн тăнлăхĕпе пурпĕрех Христоса мар, Киремет çырми пуçĕнчи, Турхай сăмсахĕнчи чи сăпайлă та, чи тараватлă та, чи пулăхлă та, чи Телей паракан Турра аса илет. Вăл Турă – унăн пурăнакан, ĕçлесе пуякан çĕр вырăнĕ – Çĕр Турри.

* * *

Вак хуçалăхсене пĕр чăмăра аран-аран хĕстерсе пуçтарма пуçланă ахăр саманара Йăрарпа Уравăш тăвайккисем йăшăлтатса кайрĕç. Вăрнарта чукун çул леш енчи вăрман çумне лартнă çĕнĕ завода фосфорит турттарма таврари ялсенчен çĕршер лашапа урапа-çуна, çын хутшăнать. Хурăнсурсене те тĕпĕртеттереççĕ. Куçма Пракахвийĕ те алла тилхепе тытрĕ.

Ялтан инçех те мар, Уравăш тăвайккинче, вăтăр-хĕрĕх метр тарăнăш шахтăсенче, фосфорит текен минерал кăлараççĕ. Çумкка Петĕрĕ, Апиçан Сахарĕ тата нумай арçын çĕр айĕнче кирккапа ĕçлеме килĕшнĕ. Сахарсем тачкаса вĕтетнĕ çĕр ылтăнне Çумккасем тĕртсе хăпартаççĕ. Пракахсем мăн алтăртан юхса тăракан сар хăйăра савккапа кăрмана тиеççĕ. Кунне Вăрнара пиллĕк-улттă хутлаççĕ. Пракахви те чăваш хăватне çĕклеме хăй çĕклемне хушать.

Унччен вăл çак çулпа Санарпуçĕнчен малалла, вăрманалла, ытлах çӳремен. Санарпуçĕнчен пĕр чиперккене, Натеше, качча илсе пынă та Хурăнсура, хуннĕсем патне хăнана е пулăшма, курма кайкаласа килнĕ. Вун çиччĕмĕш çулта хăйсенчен вунă çухрăмра чукун çул станцийĕ уçăлсан, çул ытларах, Арзамас таранах, Мускав урлă Анăçа çитиччĕнех вăрăмланчĕ çармăссемшĕн те. Халĕ вĕсем Вăрнар çулне татах та ытларах такăрлатаççĕ. Çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсене лекес пулсан е Шăхран-

Канаш, е Йĕпреç станцийĕсене çирĕм пилĕк-вăтăр çухрăма каймалла пулнă пулсан, тинех ĕнтĕ, Вăрнар алăкĕ умне çитиччен лашана пĕрре ĕшентермелĕх кăна. Çуран та икĕ сехетре çитетĕн.

* * *

Куçма Пракахвийĕпе Натеç Сухăр уничинчен пĕр харăсаллах темелле, тăвата виле ăсатрĕç. Ашшĕ, амăшĕ вилчĕç. Çирĕм тăваттăмĕш çулхи Уçтен хыççăнхи Микулай, вăтăр пиллĕкмĕш çулта çуралнă Анатули сасартăк чирлесе хурлантарса хăварчĕç. Натеç упăшкине çирĕм тăххăрмĕшĕнче Маня ятлă хĕр, вăтăр виççĕмĕшĕнче Евкене, хĕрĕхĕмĕшĕнче Раисăна çуратса пачĕ. Ывăлсемсĕр тăрса юлнăскерсен, кĕтнĕ телейĕ вăтăр çиччĕмĕш çулта çитрĕ. Улатимĕр кил-йăх тымарне аталантармалли шанчăклă вăй шутланнă вĕсемшĕн.

Вăрçă чарăннă ĕнтĕ. Прокопий Кузьмич та яла таврăннă, çемье пуçне, тилхепине карчăккинчен хăй аллине çирĕппĕн çавăрса илнĕ. Ĕмĕрсем тăршшипе пыракан хресчен ĕçĕ пĕр татăлмасăр тăсăлнă. Пŭрт тунă чухне кăна, хĕрĕх пĕрремĕш çулхи çу кунĕсенче платниксем тытнă вăл, кил-çуртра усă курмалли ытти хатĕр-хĕтĕре йăлтах хăйĕн маçтăр аллипе тунă. Ывăлĕ те хăйне пулăшакан пулнă, ашшĕн верстакĕ çумĕнчен уйрăлмасть. Ашшĕ пушăтпа, шĕшлĕпе тăрмашса ларнине пăхса çăпата тума вĕренчĕ.Чарпуç, Кипек, Нурăс, Вăрнар, Ачча пасарĕсене çăпата сутма пĕрле çŭрет, пĕччен те кайкаласа килет.

Куçма Яккăльчсен ĕлĕк-авалтанах çурт-йĕр куç-пуç тавраллах капланнă. Вĕсем ăна йăлтах хăйсен вăйĕпе тунă. Кил вырăнне уйăрса панă пысăках мар çĕр лаптăкĕнче улма-çырла сачĕ ешернĕ, хурт-хăмăр найланă. Юман, çăка хăвăлĕсенчен майлаштарнă каска вĕллесенчен касса кăларнă пыллă караса пит ĕмме юрататчĕ Вулути.

Кŭршĕри Йăван кумĕ, Иван Федорович Федоров, ял хуçи, ахальтен мар колхоз утарне шанса пачĕ пулас

Пракаххуçмича. Вăрман варринчи Авруй хыçĕнче утарĕ. Хуралçи хамăр ялти Ăтăр Терентийĕ.

Хурăнсуртан Авруй ялне сахалтан та çирĕм çухрăм ытла. Пĕччен чух Пракахви унта çурранах çӳрет. Ывăлĕ вăрмана пырса курма тесе йăлăнтарса çитернĕ хыççăн вăл, тăва хăпарса, лаша илсе килчĕ. Хăйсен Турхайĕ тахçанах аша кайнă ĕнтĕ, Савраска текен турă кĕсрене парса ячĕç, тихипе пĕрлех. Лариван уничинчен тухса вĕсем арман çуммипе Уравăш çулĕ çине каçрĕç, Тăмпуç çырми пуçĕпе Санар çырмине анчĕç. Тăвайкки çăпан тухса тулнă çын çурăмĕ пек. Фосфорит кăларнă хыççăн юлнă тăпра купи шăкăри. Уравăшран Мĕлĕше, Мĕлĕшрен Кӳстӳмĕре, Кӳстӳмĕр пуçĕпе, Ершепуçне çырма енне хăварса, вăрмана, лесник картунĕ патне, унтан, вăрман çулĕпе, Авруйне тухаççĕ.

– Ку çулĕ ăçта каять? – кăсăкланчĕ Вулути Кӳстӳмĕре çитсен.

– Ершепуç витĕр Мăн Упакассине, унтан Шепекече, вара вăрман витĕр – Йĕпреç станцине, – ăнлантарчĕ ашшĕ. – Кунтан тепĕр вун пилĕк çухрăм çеç. Ĕлĕк пирĕн ялсене салтака та çак çулпа ăсатнă. Йĕпреç станцине аллă çул каялла уçнăранпа эпир те çак çул çине ӳкнĕ. Салтак çеç мар, япали-мĕнĕ ăсатнă, турттарнă. Çулĕ ирçесем патĕнчен кăнтăралла, Рязань хулинчен Мускав еннелле, Канаш витĕр – Лăпкă укиян таранах тăсăлать.

– Ой, çитсе курасчĕ унта-кунта...

– Таçта та çитĕн-ха, ывлăм, кăштах ӳс, тĕреклен, вĕрен, – тесе тилхепе тыттарчĕ ывăлне ашшĕ. – Хăвала малалла.

* * *

Чĕре тапать – ял пурăнать. Тĕрĕк халăхĕн чĕпписем – чăвашсем – темиçе çĕр çул каялла шыраса тупнă çырма пуçĕнчи çăл куç кутĕнче Хурăнсур халăхĕ йăшăлтатать. Чĕре тымарĕсем пек çĕр тăрăх сарăлнă çулĕсем. Ял тавраллах.

Ура пуссан – йĕр юлать, йĕр çумне йĕр хутшăнсан –

сукмак пулать, сукмак ҫине урапа-ҫуна тухсан – ҫул такӑрланать. Сукмак ялпа яла ҫывӑхлатать, ҫул – анлӑ твралӑха кӑларать, тӗнчепе ҫыхӑнтарать.

Куҫма Яккӑльч ывӑлӗ Пракахви те ялӑн кашни сукмакне, кашни ҫулне такӑрлать, пӗччен мар, ялти ҫӗр-ҫӗр ҫынпа пурнӑҫ йӗрне тӑвать.

**Алтӑр ҫӑлтӑр ташши**

Вӑрҫӑ хыҫҫӑн темшӗн сухал ӳстерес килсе кайрӗ Партас Мӗкӗтийӗн. Карчӑкки: «Мӗн йӗрлен эс ман тута-ҫӑвар тврашне хӑвӑн ӗмӗр манайми шашки-чӑввӑшки пек сӑннусемпе. Эс халь ялта, краштӑн Чапайӗ панче мар, унта эсӗр хӗҫ-шашкӑпа пуҫ туранӑ тесе мухтаннӑ вӑхӑт мар, халь кунта шашкӑпа яла чаплӑлантараймастӑн, халь пирн пурнӑҫа шушкӑпа илентермелле», – тесе кашни ӗҫкӗ-ҫикӗре стариккин аяк пӗрчисене якатса ларать.

Пулнӑ ҫав вӗсем граждан вӑрҫинче – пӗлсе-ӑнланса илеймен харкашу-ҫапӑҫура. Нумайӑйӑн ҫапӑҫнӑ унта чӑваш арӗсем, вӑл шутра – Праках кумӗпе унӑн пиччӗшӗ Влас та. Куҫма Власӗ шуррисемпе ҫапӑҫса пуҫне хунӑ, килне тӑлӑх арӑм хӑварнӑ.

Чапай дивизийӗнче лаша чуптарнӑ Никита Филиппович Бардасов хӑйсен ҫав вӑхӑтӗнчи хаяр та хуяр саманчӗсене манаймасть. Пӗррехинче Ваҫлей Чапай юланутҫӑсен ушкӑнӗпе ҫӗр ҫӗмӗрсе ҫитрӗ тет те, салтаксене шуррисем майлӑ ҫавӑрма пуҫланӑ унтерӑн пуҫне купӑста пуҫне каснӑ пек шӑлса ывӑтрӗ тет. Ҫӑвар карса ут ҫинче сиккелекен тӑшманӑн пуҫӗ тусан ӑшне путнине пурте сиссе те юлаймарӗҫ ахӑр. Командир лаши кӗҫеннипе кар ҫӗкленнӗ хӗрлӗ армеецсем «ур-ра!» кӑшкӑрса вӑрман кати ҫумӗнчи тӑваллӑха ыткӑнчӗҫ тет. Вӗсемпе пӗрле – Бардасов та.

Ҫав тӑпӑртӑк сассипе халӗ Партас Мӗкӗти колхозӑн вӑтӑр лашине Масар тӑвайккинелле хӑвалать. Виҫӗ ушкӑна кӑкарнӑ лашасем Чапай ҫарӗн юххи пек сиктерсе пыраҫҫӗ, хӗҫпе сывлӑша касса кӑшкӑракан юлан утҫисем ҫеҫ ҫуккӑ вӗсен тарлӑ кӗлеткисем ҫинче. Партас ҫар пуҫӗ

пек малта, каçăрăлса, хăйĕн «çарне» чуптарса пырать.

Çур шывĕ илсе кайнă Сунар кĕперне çĕнетнĕччĕ-ха хурăнсурсем. Пурпĕрех кашни çул юхтаракан йывăç хăмасене перекетлес тесе кĕперне икĕ мăн çыранран мар, аяларах анса, пĕчĕк шыв çийĕн хывреç. Хăма вырăнне кăшт чутланă пуленкесем хунă та, лаша ури пырса лекмессерен кашниййĕ хăйне евĕр кĕвĕ шăрататать. Вăрçă кĕвви кĕрленĕ майлах. Хăнăхнă çĕрелле лашисем те хăвăртлăхне ÿстерсе ăмăртмалла чупаççĕ.

Сухалĕ кăвалери хĕçĕн вĕçĕ пек шĕвĕрĕлсе ÿссе çитнĕ тĕлелле Партасăн ял çырмисенче лаша тапăрĕ туманни юлман. Элмен Сунартан пуçласа Хурамал ялĕ таранах ертсе çÿренĕ янавар ушкăнĕсене. Вĕсем çинче хăй те сывлăшри – юмахри паттăр пекех вĕçнĕ.

Халĕ, акă, Элмен çырминчен утă турттарса пĕтереймен. Йăмраллă çырмара тата тепре çулма палăртнă. Унччен вăл яланах унти пĕве пуçне куçлатчĕ. Лашисене тăлласа янă хыççăн кăштах çăлтăрсемпе пуплекелесе илетчĕ. Хĕрлĕхен çырми ăна савăш хĕнĕ кăтартнă та, турă тытать тесе, унта çĕр каçас темест. Карчăк мухмăр чĕрттермен чухне пĕве пуçĕнче тута-çăвара чăтăмлăн типĕтетчĕ вăл. Юрать-ха çав вăхăталла пĕр хусах хĕрарăмăн чĕнтĕрлĕ кĕпе аркиййĕ унăн сухалне вăркăштарса ячĕ, асамлă тутлă шăршă сăмсана кăтăклантарчĕ. Маркка Таçунĕ текенскер вара унăн иккĕмĕш пуçне те киле кĕртрĕ. Вите çутĕнчен, туран, лаша пăхса таврăннă чухне, çула май юнри вăй Таçунсен алăк хăлăпнех пырса тыттаратчĕ-тыттаратчех алла. Сухал вĕçне йĕпетсе тухатчĕ вара вăл ыр кăмăлтан.

«Ах, Таçун та çук халĕ... çук пулсан та, çапах çут кăвар çав эс, шĕл кăвар çав эс – Таçун-Таçук... Та-çун, та-çук... – лаша ури сассипе хутăшса илтĕнет хуçа сасси. – Ма çук, çук мар... пур эс. Та-çук... çук мар... пур эс, Таçук-Таçун. Чупатăн, хам айрах, кут айĕнчех, çамрăк кĕсреçĕм, мана, хĕрÿ хĕрарăма аса илтерсе, вăй парса, сиктерсе пыратăн...»

Турхай ҫырмипе, ҫул тӑрӑх, анаталла тусан мӑкӑрлантарса куҫать Партас Мӗкӗтин «ҫарӗ». Хӑш чухне кунта вӑл, авалхи йӑмра ҫумӗнчи ҫӑл куҫран, лашисене шыв та тутантарса пӑхтараканччӗ, халӗ темшӗн пӗр хӑртлатнӑ-кӗҫеннӗ сасса та пуҫа хывмарӗ, чуптарчӗ те чуптарчӗ пурне те пӗр кӗвӗпе, тӑпӑрттик-тӑпӑрттик! тӑпӑрттик-тӑпӑрттик!..

Асанхӑтлӑра, ҫырман ытти юпписенче те, Ваҫка ҫырминче те, Киреметре те Партас валли паян ҫаран ҫук. Масар тӑвайккинех каймалла, тенӗ ӑна ял хуҫи. Эртел пуҫлӑхӗнчен иртеймӗн. Хӑвалас пулать кут айӗнчи Таҫуна-Таҫука, унпа пӗрле – пурне те.

Мӗкӗтен вара вӗлер те каяс килмест ялтан виҫ ҫухрӑмри ҫерем лаптӑкне. Карчӑкки кӑна мар, Таҫун-Таҫук савниййӗ те уйӑрасшӑн мар пулас ӑна. Кунта тем кӑмӑллантармасть. Турамӑш ҫырми урлӑ каҫсанах чун йӑшӑркама пуҫлать. Салтакри чухнехи пек, темле, чикӗ леш енне каҫса кайнӑнах туйӑнать.

Сунар кӗперӗ сывах. Тӑвалла хӑпарса вӑл лашисене ирӗке кӑларчӗ, ҫапах, сых ятне тесе, кашнинех тӑлларӗ, Таҫунне ҫеҫ тӑлӑпа кансӗрлентермерӗ курӑк ҫиме. Ясмӑк ани ҫумӗнче анлӑ ҫырма пуҫӗ чӗп-чӗрӗ. Унта ҫӑл куҫ шывӗ хӗрарӑм ясарлӑхӗн кӑмӑлӗ пекех чарӑнмасӑр тапать.

Алтӑр Ҫӑлтӑр ҫӑлтӑрӗсене Партас хӑйӗн ҫамрӑклӑхри хӗр упраҫӗсемпе тата хальхи шӑл йӗрен чупкӑнӗсемпе танлаштарса ҫывӑрсах кайнӑ. Тӗлӗкре ӑна хӗр-хӗрарӑм картана хупнӑ пек. Пӗринчен тепри хитререх йӑпӑрка вӑрӑм йӗм тӑхӑннӑ пикесем ҫавӑрса илнӗ те ӑна ушкӑнварринче ташлаттарса вӑй виҫеҫҫӗ: кама лекет? Мӗкӗте ура-алла хӗрхенмесӗр шӑлать кӑна ташша вак чуллӑ ҫӗр ҫинче. Тутар ҫемми пурпӗрех унӑн тути хӗррине ҫыпҫӑнмасть, таҫта аяккалла, аяккалла саланса илтӗнми пулать.

– Партас, Эс пирӗн ӑш вырӑн ҫинче выртан! Тасал кунтан! – илтӗнет ҫӗр айӗнчен сиксе тухнӑ тутар малайӗн хуҫӑкрах сасси. – Ку таврара эпир хуҫа!

Хурăнсур арĕ пĕтĕм кĕлеткипе туртăнать те тутармалайккăна Сунар çырмине йăвантарса ярать, «Юх, кай хăвăн çĕрна-шывна!» – тесе хыçран лач сурать.

Тем вăхăтран унăн хăлхине юрă кĕрсе каять: «Вир-вир акрăм, вир акрăм, вир акрăм, пирĕн уйсем кавир пек, кавир пек...» Ни чăвашла, ни çармăсла мар пек юрри. Мари çĕрĕ-шывĕнчи Моркка вулăсĕн ялĕсенчен Чапай çарне лекнĕ ик хĕрарăм шăрантаратчĕç вĕт-ха çак юрра? Юрри Туçи тăвайккипе Мари çĕрĕ хушшинче хăй тĕллĕн çуралманах ĕнтĕ. Ку таврара тахçан авал тутар-çармăс несĕлĕсем пурăнса çĕре кĕнĕ тенине те илтнĕччĕ Партас ял ăсчахĕсенчен, акă тата Таçун-Таçук тутар майрисемпе мари-çармăс хĕрарăмĕсене раща юманĕн хуллипе кутран çапа-çапа хăвалать: «Эсир мар кунта хуçа, эпĕ. Эпĕ – чăваш пики!Пурăннă тăк сĕм авал çак çĕр çинче, шăршу-маршу та юлман халĕ сирĕн кунта. Пăххалĕ вĕсене, эсрел явкаланчăкĕсене, ман Мĕкĕте-йĕкĕте тапăннă, юратнă еркĕн пуçне çавăрасшăн! Çук, памастăп! Ĕлĕк-авал сире кунтан Тухăç енчен килнĕ Кашкăр йăхĕсем кутран тапса кăшласа кăларса янă пекех вашкăртатăп. Маршнă пултăр! Вĕсем, тĕрĕссипе, пирĕн несĕлсем, çакăнта çĕр лаптăкĕсене хăйсем çут çанталăкран çĕнсе илнĕ, вăрман касса, тунката тăпăлтарса-хăртса çăкăр пĕçермелĕх уй хатĕрленĕ, уçнă çĕре çĕнетсе пулăхлантарнă, пурнăç тунă. Тутар ташшине те ташламасть, мари-çармăс юррине те юрламасть ман Мĕкĕтеçĕм. Часрах тасалăр!»

Сăмси çине ларнă виса лапшака ывăç тупанĕпе шаплаттарса ӳкерет те Мĕкĕте çиччĕмĕш тĕлĕке кĕрет. Тӳпере çăлтăр çути, вăййи, асамлăхĕ. Таçун-Таçук вĕсен хушшинче, чи варринче, Тӳпе пичкинчен мăн алтăрпа сăра ăсса тăрать, савнийĕн çăварĕнчен хуллен-хуллен ярса ăна майĕпен ӳсĕртсех пырать. Мĕкĕте çăварне тăварлăрах шĕвек юхать те юхать... Куçа яриех уçса ярать те вăл акă... Таçун çамрăк кĕсре хуçи çине канлĕн шăрса тăрать. Тарăхнипе конюх унран пăрăнса хăяккăн выртать, тем лекнипе ыратса кайнă айăк пĕрчине хыпашлать, унтан

шăмă татăккине алла илет.

«Камăн шăмми-ши ку? Пирĕн – партассен, яратасен, сементисен, шевриксен, кашкăрсен, юмансен?.. Епле сыхланса юлма пĕлнĕ? Кам астăвать ĕнтĕ ăна, çакăнта, ялăн авалхи масарĕнче тăван-пĕтен кĕлетки, шăм-шакĕ икĕ ĕмĕр ытла упранса пурăннине? Чунĕ çеç вĕсен çӳлте, тен, янкăр тӳперен пăхакан Алтăр çăлтăрсенче? Çавсем ташлаççĕ пуль пуç тăрринче? Юрĕ-çке, Хăйсем пурри çинчен шăмми-шаккипе, Тĕнче уçлăхĕнчи ташшипе аса илтерсен те, – çавă лайăх. Юрать-ха ман Таçун-Таçука, епле хӳтерет вăл тутар-мари якăлтийĕсене? Вăл çĕрĕпе те, арçыннипе те хуçа пуласшăн – Масар тăвайккинче, Хурăнсур халăхне патшалăх панă çĕр çинче те... Манпа хуçа пуласшăн, карчăка мантарсах. Ах, канальă. Мăшкăл мар-и? Тепри, ав, лӳшкесе тăрать хуçи çине...»

Шакла пуçĕ халĕ те Таçун кĕпи арки еннелле сулăнасшăн пулсан та, тăрмаланчăк çӳçлĕ пуçĕ пурнăç ăс-хакăлĕ, тĕнче курăмлăхĕ, çемье тĕреклĕхĕ çинченех тăнлăн шухăшлать Партасăн. Хăйĕн çывăх кумĕпе, Праках Куçмичпа, вĕсем Алтăр Çăлтăр шерпетнех ĕçесшĕн. Алтăр Çăлтăр вĕсене, Шурăмпуç çăлтăрĕ пекех, хăйĕн çутине, имлĕхне парать. Вĕсем Алтăр Çăлтăр ташшипе тĕнче ташшине ташлаççĕ.

**<u>Ял уничийĕ – пурнăç алăкĕ</u>**

Хурăнсурăн та пур вĕсем – уничесем. Нумай. Чи малтанхи, паллах, вăрăм çырма пуçĕнче. Асанхăтлăра пуç тĕпленĕ чăвашсем выльăх-чĕрлĕхе тыр-пул ани çине ямăтлантарса ярас темен пирки картланă, уçса кĕмелли-тухмалли алăк пулнă. Майĕпен çав алăк ял уççи вырăнне, ял хапхи вырăнне, ял уничи вырăнне пулса кайнă. Çав хапхана уçса кĕнĕ çын ял ытамне, хӳтлĕхне лекнĕ. Çав хапхаран тухса кайнă çын, ял çынни, çĕнĕ пурнăç тĕнчине, вăрçă-харçă вутне лекнĕ. Çав укăлча пĕрне ăшă кăмăлпа вăрăм та канлĕ çула ăсатнă, паттăрлăх паллине илме пилленĕ, теприне хуçăлнă кăмăлпа таçти тĕнчене хăваланă. Этем ятне яман çын яланах Хурăнсур хапхи

мĕнле уçăлса-хупăннине манман. Япăххи, никама ним вырăнне хуманни, ял хапхин алăкĕ умĕнче ĕмĕр-ĕмĕр сăнсăррăн пăхса, çапах та çав алăка уçса кĕнĕ. Хăйне ял халăхĕ мĕнле чун мулĕпе кĕтсе илнине пĕлмесĕр-туймасăрах.

Пурнăç алăкĕ çăраççипе питĕрĕнсе тăмасть. Хурăнсур Çармăсăн ял тавра лартса тухнă укăлчисемпе алăкĕсем те яр уçă. Çуллахи хăйсен Мăн уявĕнче – пушшех.

Кутран тапса, шывра шампăртаттарса сехĕрлентернипе Христоса пуç çаптарнă ахăр саманара, вун саккăрмĕш ĕмĕрте, чăваш та, ытти халăхсем пекех, йӳçĕ кулач çиет. Армути тутине хăнăхнă халăх çав ултавлă тутта та чăтма хăнăхать. Раççей çĕршывне капланса килнĕ вăй, кĕмесĕр пĕр кĕтес те хăвармасть, кĕртменнисене патшалăх çыннисен аллипе пăчăртать, хăватланса çавăрттарса, чăваша ирĕксĕрлесе алла хĕрес тыттарать, хăй пĕлмен, ăнланман, чунĕпе йышăнман асамлă пĕр ушкăна пĕрлештерсе чиркӳ ларттарать. Маларахах кăнаха Хĕвеле, Уйăха, Çăлтăра, Çиле, Çĕре, Вутта, Шыва тата ытти ырă туртăмлă хăвата пуç çапакан чăваш тăнне таçтан аякран çавăрттарса килнĕ иккĕленӳллĕ таса Шухăша варăнтарать. Турхай, Киремет кĕлĕвĕсем çăл куç шывĕпе анаталла юхса вăйсăрланаççĕ, халăхра майĕпен-майĕпен асран тухса пыраççĕ. Турă – хай вăй-хăвачĕ – чăвашăн вăй-хăвачĕ, вăй-хăват шухăшлавĕ – христианство юмахне тĕплесе çырнă Павăлпа Петĕр апостолсен шухăшлавĕ-вĕрентĕвĕ айне пулать. Христос тĕнне вăл хăй хушнипе çынсене вĕрентекене апостол тенĕ авалхи еврейсем. Çĕрпел чиркĕвĕ, Ачча чиркĕвĕ хыççăн, хурăнсурсемпе çĕрпелсене каллех этем нихçан курман-пĕлмен сăнлăха – Христоса пуç çаптарса, хăйĕн чанĕсемпе чанкăлтатать.

Пачăшкă та, авă, ирех вăраннă. Арăмне, матушкăна, хĕресе чуп тăвиччен малтан чуп туса илчĕ. Этем ĕретне тунишĕн ун шучĕпе Турă умĕнче çылăх мар. Паян икĕ ял – прихут уявĕ. Чан çапмалли кун. Петрав кашни уничине, алăка яри уçса ярать. Шеврик уничи – ялăн тĕп укăлчи –

хăйĕн аслă тăванĕсене, туçиçармăссене, юнашарти виçĕ çăл куç хăвачĕпе кĕтсе илет. Туçи Çармăсран хунанă-çке Хурăнсур Çармăс халăхĕ. Сухăр уничинчен, Пăштрик уничинчен аччасемпе хирпуççем, катексем саркаланса кĕреççĕ. Уртем Çитăрч уничи, Шахалккăсем çумĕнче, Мăрат–Иртеменкасси-Элмен Сунар-Кăкшăм-Нурăс хăнине йышăнать. Этюкка мучи уничи те тăвран анакансемшĕн хапăлах. Лариван уничи ĕнтĕ вăл уравăшсене, санарпуççене, çĕньял-кивьялсене, хапăссене тата ыттисене, Йĕпреç енчисене те, кĕтсе илет.

Ялта сăра туман кил юлмасть Петрав уявĕнче. Таврари мĕнпур тăванĕ, хурăнташĕ, пĕлĕшĕ çитсе савăнма васкать. Хурăнсур чĕри мĕнле тапать, тăванлăх, хурăнташлăх таппи те пĕрешкелех чĕтретет çĕре. Çакă çĕр лаптăкне юрласа-ташласа савăнтарас текен ырă çын Петрава, утă уйăхĕн вун иккĕмĕш кунне, хаваспах, чаплă тумланса, парнепе пырать.

Пурнăç аталанăвĕ пĕр çынран анчах килмест те, ăна улăштараканĕсем тĕнче юххин хăватĕнче халăхшăн усăллă та, усăсăр та, тем майлă та çавăрттараççĕ. Çавă пăтранчăкра, аталанура чăвашшăн та Христос сăмса умĕнче хĕрес тытса тăрать. Унăн çынни, чиркӳ хуçи-пачăшкă, уяв ячĕпе чансен илемлĕ кĕввине тăнлать.

Турă текен авалхи Хăват ыр пиллĕх панă Хурăнсур лаптăкĕ-лапамĕ – Турхай та – хайлах, этемлех, тĕнче Хăвачĕн вăйĕпех тапать. Çăл куçĕ чĕрĕ. Сывлăшĕ таса.

* * *

Ялăн тĕп çырмин, Асанхăтлăн, кашни юппи çăл куçлă. Шывĕ те техĕмлĕ. Çăл куç шывĕ пĕвене пухăнать. Çап-çутă тĕкĕрлĕ вăл Хурăнсур. Мăн Киреметре Шашуксен пĕви сарăлса выртать. Пĕчĕк Киреметре – Партас Хĕлипĕсен, унтан тăварах – Ванька пĕви, Йăвануш пĕви, Торф пĕви. Тепĕр юппине шыв арманĕ çавăрттарма картланă. Кăрăпчак Хĕветĕрĕсен пĕви, Çеркей пĕви. Унсăр пуçне тата Симун пĕви, Çĕн пĕве, Ямукка Ваçлисен, Патта пĕвисем тулсах тăраççĕ. Праках Куçмичсен умĕпе

иртекен юпăра та тăршшипех пĕве: арман пĕви, Марккасемпе Шахалккăсен, Яккупа Раман Сахарчсен, Пакун Мирунĕсем çуммипе тăварах хăпарсан – Ванне Çитăрчсен, Лариван, Микке, Максăм, Çитăр пĕвисем. Уйри Йăмраллă çырмара, Хĕрлĕхен çырминче, Çĕньял çырминче – вă-ăрăм пĕвесем.

Ял шывсăр чĕрлеймест. Çавăнпа çăл куçсене тасатса, типтерлĕ тытнă. Типĕ килнĕ хĕлсенче çăл шывĕ аяла тарни те сахал мар пулнă. Çавăн чухне халăх витрепе, катка-пичкепе черете вăйлă тапакан çăл куçсем патнех кĕпĕрленнĕ. Çав çăл куçсем хурăнсурсене çăлнă, яла пĕтме паман. Çавăнпа çăл куç вăл – пурнăç куçĕ, пурнăç вăйĕ. Ĕлĕкхи Хăвата ĕненсе пурăннă чăвашшăн, çав шутра хурăнсурсемшĕн те, Çăл куç Турă вырăнне шутланнă.

**Сăваплăх алăкĕнчен**

Партас Мĕкĕти ял лашисемпе – уйрăлми шухă тусĕсемпе – майĕпен сыв пуллашса пычĕ. Январсем вырăнне тĕтĕм-тусан хыт мăкăрлантаракан реçин урапаллă чупансем йышланса кайрĕç. Лаша вăйне, илемне шута хуми пулчĕç. Питĕ кулянса ӳкрĕ вăл хăйĕн чунпа çывăхланнă кĕсри хӳрине çĕклейми пулнăшăн та. Таçун çытармарах куçне хупрĕ. Мур картинче кăна тупма пулать пуль халĕ унăн никама юрăхсăр шăм-шакне. Çамрăкрах чух мухмăр чĕрттерекен, вăрттăн кукăль çитерекен Таçун-Таçук та юмахри леш тĕнчене кайса çухалчĕ. Карчăкки те ăна çĕр çине вăхăтсăр пăрахса хăварчĕ. Юратнă арăмсăр, чун савнисĕр, кашни çул хăмлакан кĕсресĕр, ĕççĕр тăлăха тăрса юлнă Партас Праках кумне те юлашки çула ăсатать.

Куçма Яккăльч ывăлĕ, Хурăнсур Çармăс çынни, чăваш хресченĕ, çут тĕнчере сакăр вун икĕ çул тапаçланнă çĕр хурчĕ Сухăр уничипе хăйĕн канлĕ вырăнне васкамасăр пырать. Çак униче вăл ялăн сăваплă алăкĕ. Ăна Ачча, Çĕрпел чиркĕвĕсене ача шыва кĕртме, венчете тăма, килте çуса тасатнă вилесене юлашки çула ăсатма каймашкăн уçнă. Акă, Праках Куçмичăн та çак укăлчаран иккĕмĕш

хут ҫветтуй сывлăшĕпе сывламашкăн Тĕнче Анлăшне тухмалла пулчĕ. Вăхăчĕ ҫитрĕ пулас. Тĕнчен сехечĕ ҫук та, ҫапах вăл хăйĕн картне кашни ҫыншăн шаклаттарса тăрать.

Куҫма Яккăльч ачи тин ĕнтĕ таврари пасарсене ҫăпата сутма каяймĕ, ăна халĕ илекен те пулас ҫук. Хăйĕн сырса ҫĕтеймен ҫирĕп ҫăпати пӳртум кашти ҫинче ҫакăнса тăрса юлчĕ. Унăн кумĕ, турă кĕтессинче кĕлĕ каласах, ăна юлашки ҫула куҫҫульпех ăсатать, шухăшлавлăн хăйĕн юлашки ҫулĕ пирки те хăрамасăрах ĕмĕтленет, мĕншĕн тесессĕн вăл ҫулпа пурин те каймалла-ҫке. Униче алăкĕ кашниншĕнех хăй вăхăчĕпе уҫăлса тăрать.

Ура пуссан – ҫул пулать, ура утми пулсан – ҫул пĕтет. Хурăнсур ҫулĕ вара ҫут тĕнчере яланах чĕрĕ.

2000 ҫулхи раштавăн 10-15 кунĕсем.

**Ман пур атте-анне**

Атте-анне ялан ҫумра,
Вĕсен сăнарĕ ман умра.
Ҫемье, кил-ҫурт пулсан –
Ман пур атте-анне.





Атте-анне йăха татман,
Вĕсен тымарĕ ман юнра.
Хурăнташ, ял-йыш пулсан –
Ман пур атте-анне.
Атте-анне пуçа усман,
Вĕсен хăвачĕ ман вăйра.
Ч ă в а ш , çĕршыв пулсан –
Ман пур атте-анне.
Атте-анне турра сутман,
Вĕсен ыр пилĕ ман ăсра.
Тĕнче, хĕвел пулсан –
Ман пур атте-анне.

Сăн ўкерчĕксенче: Прокопий Кузьмич Кузьмин. Надежда Матвеевна Кузьмина. 1954 çул.

Петр Ковский ўкернĕ.

## ХУРĂНСУРСЕН ЧУН ТУПРИЙĔ

Тĕнче тытăмĕн улшăнăвĕнче пирĕн Хурăнсур ялĕ те çĕнелсех пырать. Эпĕ астунă вăхăтри çеремлĕ аслă урамсене халĕ асфальт сарнă çулсем якатса çутатрĕç, хура е çĕр пўртсем, улăм витнĕ ытти çурт-йĕр вырăнне капмар кирпĕч çуртсем ўсе-ўсе ларчĕç, чăвашăн аваллăхран çĕнелсе пыракан тумтирĕ вырăнне ял çынни те ўт-тирĕ çине ют патшалăхсен çаптаркăллă тумне çакса-уртса ячĕ, чĕлхийĕ те унăн сисĕмлех вырăсланса пырать, йăли-йĕрки те çĕнелет...

Совет саманинче шухăшласа кăларнă йăла-йĕркепе ўснĕскерсем эпир, паллах, авалхи тĕн-тĕшмĕшлĕхе сивлесе, хамăрăн чун çывăхне яма пĕлменскерсем, ăна-кăна ăнлансах çитерейменем. Пире чиркўре шыва кĕртнĕ пулин те пачăшкă тутантарса пăхтарнă «турă юнĕ» пирĕн юн çумне хутшăнайман, чун-чĕрери асамлăха вăратайман. Пирĕншĕн вăл кулă вырăнне çеç пулса юлнă.

Виçĕ ĕмĕр ытларах каялла пирĕн хурăнсурсемпе çĕрпелсем те, хăйсене пусахласа Христос тĕнне кĕртсен çĕнĕ Чиркĕве пăхăнма, çĕнĕ Турра пуç çапма пуçланă, 1895 çулта Петĕрпе Павăл апостолсен ячĕпе икĕ ял чиркĕвне уçсан тăван вырăнтах венчете тăнă, ача шыва кĕртнĕ, асăнса виле ăсатнă.

Иртнĕ хаяр вăрçă тухиччен виçĕ çул малтан Антихрист Аслатийĕ пирĕн чиркĕвĕн хĕресĕпе чанне те çапса аркатнă, унăн Хăватлăхне çунтарнă. Пире, шкул ачисене, пушă чиркĕве пĕчĕк калибрлă винтовкăран тĕл пеме вĕренмешкĕн илсе каятчĕç. Чунсăрсем тустарнă кĕлĕ çуртĕнче темле, пăшалтан та хăраман вăй явăннăн туйăнатчĕ, çан-çурăма силлесе илетчĕ. Вăрçă хыççăн чиркĕвĕн икĕ шĕвĕр тăррине те пăсса ахаль çурт майлă турĕç те, унта вара нумай çул хушши ача сасси янăрарĕ – вăтам шкулăн чул çуртне лартиччненех. Чиркўрен тунă икĕ хутлă йывăç çурчĕ сыхланса юлнă-ха, вĕренме килекен ют ял ачисем те пĕр хушă пурăнчĕç унта. Вăл ĕлĕк мĕнле сăваплă çурт пулнине çамрăксенчен пурте пĕлмеççĕ те пуль, «кивĕ шкул» тесе иртсе каяççĕ ун çумĕнчен.

Çĕрпелле Хурăнсур вара çав чиркĕве тунăранпах кăваписене пĕр çума çыпăçтарнă, пурнăçне пĕр шухăш-туйăмпа çыхăнтарнă. Вĕсем, хуçалăхсене пĕрлештерсе, вун-вун çул пĕрле вăй хучĕç, «Янгорчино» колхоз ячĕпе пĕтĕм çĕршывĕпе чапа тухрĕç.



Икĕ ялăн халăхĕ тăванланса, хурăнташланса кайнă ĕнтĕ. Ялĕсем те çĕнĕ урампа çыхăннă. Хуçалăхсем çеç уйрăммăн, çирĕп утăмсемпе малаллах утаççĕ, республикăра çулсерен малти вырăнсене йышăнаççĕ.

Чăваш халăхĕн ĕçченлĕхĕпе культура кĕтесĕсенчен пĕри ĕнтĕ вăл – Çĕрпелпе Хурăнсур çĕрĕ. Тахçан Иван Яковлевич Яковлев уçнă шкул ачисем – наци пуласлăхĕн чечекĕсем – паянхи ăслăлăх, ĕçлĕлĕх шкулне çĕнетсе сарма пулăшнă. Çав чечек вăрринчен шăтса ӳснĕ çеçкесем çирĕм пĕрремĕш ĕмĕре хăйсен вăйлă тымарне сарса, чи чаплă илемĕпе, чи техĕмлĕ хăвачĕпе шавлăн, хастаррăн кĕчĕç, кӳршĕсене те, хăнасене те ыр кăмăллăх çĕкленĕвĕпе тĕлĕнтерчĕç.

Вĕсен паттăрлăх курăмлăхне, Чăвашра чи малтан уçнă, халĕ те ĕçлекен «Ял Третьяковкине», Асăну-Савăну паркне республика пуçлăхĕсем çитсе пысăк хак пачĕç. Администраци вырнаçнă Çĕрпелте каллех тухтăр çурчĕ – сиплев çурчĕ уçăлчĕ, унăн хăйĕн «васкавлă пулăшу» урхамахĕ те вăранчĕ. Вăтам шкула çĕнĕ автобус пачĕç. Хурăнсурта çĕнĕ клуб тăваççĕ, музей комплексне сараççĕ, чиркӳ лартма хатĕрленеççĕ.

Çав кун, утă уйăхĕн варринче, Шупашкартан çавра çилле кĕрлеттерсе килнĕ пуçлăхсен чупу марафонĕ Çĕрпел витĕр Хурăнсур таранах тăсăлчĕ.

Ялăн Тури лапаменчи çĕнĕ стадионта пуçлăхсем çитиччен спорт вăййисем пуçланнăччĕ-ха. Ĕлĕкрех таврари ял Хурăнсура та, Çĕрпеле те тăванлăх кĕрекине кашни киле пухăннă пулсан утă уйăхĕн вун иккĕмĕшĕнче район халăхĕ Хурăнсурăн Çĕнĕ урам лапамне вăй виçме, туслăн калаçма, çĕнтерме килнĕ. «Хорнзор» эртел пуçлăхĕ Федор Григорьевич Кузьмин Петрав уявне пуçласа çĕнĕлле ирттерчĕ. Ыр кăмăллăх хĕрӳлĕхĕ, юратăвĕ тĕнче Хĕвелĕ айĕнче пурне те курăнмалла иртрĕ. Кунĕпе вăйă, юрă-ташă, вăй-хал, ĕç-пуç ăмăртăвĕ тыткăнларĕ хавхаланса, хастарланса ыр кăмăлпа килнĕ мĕнпур çынна уяв хĕрĕвĕпе, илемĕпе ытамласа.

Чăваш Енĕн Вăрнар тăрăхĕнчи Хурăнсурăн та тĕнчене тĕлĕнтерсе асра хăвармаллах хăйĕн Ĕçлĕх, Илем Тупри пурах.

Вăл тупра аваллăх йĕрне-çулне çĕнетсе, хамăр халăхăн ăшаăса кĕнĕ йăли-йĕркине çĕклентерсе пынипе хаклă.

«Хыпар», 2002, çурла, 17.

## ПЕТРАВ ПАРНИ

Курман эп Христоса та, нимĕнле турра
Çуралнă Çĕр çинчи этемлĕхĕн çури.
Асамлăх шухăшĕ тухмарĕ ман пуçран,
Пулмарăм нихăçан ют шухăшăн чури.
Çапах та шухăшлав вĕçевĕнчи туя
Çапать те çамкаран, куçа чалтах уçать.
Пăхатăп та умри тăван, пуян уя –
Ун çийĕн халăхсен историйĕ куçать.
Чăваш та, тĕрĕкле, чунтан, тĕлĕкре мар
Пуç çапнă сыхлакан, ыр паракан Вăя,
Хĕвел питтийĕнче ширанă Пихампар,
Çӳл тӳпене пăхса шав каçăртнă мăя.
Телейĕ пурпĕрех анман çӳл тӳперен
Ĕç халăхĕн хура ĕнси çине ятран,
Киремете сăйланă вырăнта пиçен
Кашланă çын хăпсассăнах, кайран.
Упранă-ха сăваплăх сыхлавне чăваш
Шута илмесĕр хăйĕн ĕмĕрне ялан,
Ют сывлăш хумĕ капланса килсен йăваш
Пулнине çеç кăтартнă-çке кашни ялах.
Христос сăнарĕ çакăнсан çӳл тӳпене,
Хуплана Хĕвеле, пат татнă шухăша.
Таçти мурти юмахлă, ютă çĕн тĕне
Кĕртсе хĕрес тыттарнă мĕскĕн чăваша.
Хунать чиркӳ, янрать йĕс чанĕ таврара
Ăша варăнтарса çĕн тĕнĕн кĕввине.
Çĕрпел те, Çармăс та юлмасть-ха аякра,
Сăваплă çурт лартсах манать ак киввине.
Мухтавлă пулнă ăс çумĕсем Христосăн,
Çитекенни пулман-мĕн Петĕр-Павăла,
Вĕсем Вĕрентекенĕн, чи хăватлă Туррăн
Вĕрентĕвне сарса хăпарнă тăвалла.

Чап илнĕ ик апостол ячĕпе вара
Светить тăваççĕ ик ял халăхĕн храмне.
Çавăнтанпах кĕрлет уявĕ таврара
Çĕр çул ытла чĕнсе Петравăн урамне.
Кам-кам килмен-ши вăрăм ĕмĕрте кунта
Кашни пÿрте кĕрсе хăна-вĕрле пулма,
Кĕрекене ларсан, тухман ик-виç кунран,
Хуçи хăваламан, мыскараран кулман.
Эрне кĕрленĕ шавлăн икĕ ял хушши,
Сăрийĕ юхнă пыр çулпе çурхи шывлах,
Çич кун çухатнă хыççăн, хĕрÿ ĕç пушши
Урлтарнă та пуçа – каллех хресчен сывах.
Манса хăварнă ÿсĕрсен «парни» кăна:
Çĕн тутăр е пиншак, карттус е çут пушмак
Упраннă килсенче асилтерсе ăна
Çитес çул утăра татах така пусма.
Ун пек пулнишĕн ĕнтĕ кама мĕн тăван.
Унашкалли вăл пулнă пирĕн те çуллен,
Пÿрте те шăнăçман хăна-вĕрле, тăван...
Йрттернĕ Куçмичсем те Петрава хуллен.
Тăрать-ха çакăнса мăнă пăта çинче
Петĕр куккин карттусĕ хуçине кĕтсе.
Анчах учитель ĕнтĕ Санарпуç енчен
Тек килеймест Улатăр майрипе вĕçсе.
Пăтийĕ кукаçин, ав, халь те тутăхман,
Тимĕрç Матвин ăсталăх паллине упрать.
Матвийĕ – Куççасен ятне нихçан яман,
Хĕрÿ лаççийĕнче пиççех такан туптать.
Грексен халапĕнчи Чул-Петĕр ячĕпе
Чиркÿ çĕкленĕ те Римра Иисус Христос,
Халапĕ пурнăçа кĕрсе ларсан тĕпе,
Пурнать-ха Чăвашра та çĕнелсе пырса.
Ытла та хăватлă-çке Сăмахĕ Петĕрсен,
Этемĕн чунĕнче вăйпах чĕртет вучах,
Хăйне антихристсем сивлевлĕн пĕтерсен
Те, чунран хăпмашкăн пăрахмасть пачах.

Чиркӳ хупса, пупа тапса, тӗне хирсе
Анмарӗ ҫӗнӗ пурнӑҫ райӗ ҫӗр ҫине.
Хӑвачӗ Аслӑ туррӑн ҫӗкленсе килсен,
Манмарӗҫ халӑхсем Сыхлавҫӑ ӑшшине.
Хӗрес ҫӗкленчӗ ҫӗнӗлле, Ҫӳл тӳпене ҫурса,
Чӑн пурнӑҫӑн хӑватлӑхне тӗнпе ҫыхса,
Вӑратрӗ чан сассийӗ анлӑ тӗнчене,
Чӗнсе Ҫутӑ Ҫурта кӗлле пыма савса.
Петӗрпе Павӑлӑн пуҫ каснӑ чиркӗвне
Чӗртесшӗн ял ертӳҫӗ Кузьмин Хӗветӗр,
Ун сӑмахне Хурнсур ҫынни чикет хӗве,
Шанса, ӑна вӑл пулӑшмашкӑн хатӗр.
Коммунистсен пушши хӑмсарнӑ ҫулсенче
Петрав уявӗ те хупланчӗ тӗтрепе.
Ак чаплӑн уҫрӗҫ халь Петравӑн чаршавне
Халӑх сӑнне йӑлкӑштарса ҫӗн тӗкӗрпе.
Хӑна-вӗрле мӗн чухлӗ килнӗ Петрава,
Хӗвел ташлать ҫиҫсе тӗнче утравӗнче,
Мӑн йышпала пичке пӑкки уҫма аван
Ҫӗнелнӗ ялӑн Кӗреке лапамӗнче.



Турӑшсӑр хӑварнӑ Турӑ кӗтессинче. Вячеслав Мешков 2002 ҫулхи утӑ уйӑхӗн 12-мӗшӗнче Праках Куҫмичсен пӳртӗнче ӳкернӗ.

Сӑнар тӗнчи питех ытарлӑран-ши
Куратӑп уҫҫӑн турӑш сӑнлӑ ҫынсене.
Ҫавра сухаллӑ, кӑтра пуҫлӑ лаптак Пит
Кӗл тӑвакан пупран уйрӑлаймасть пӗр шит.
Ҫӗр ҫине аннӑ Петӗр апостол вӗт ку?
Юнашарри, хыткан питли, сухалӗ вӑрӑмми –
Павӑл апостол-ҫке. Епле телейлӗ кун!
Чӗр турӑш юнашар, пуҫҫап: тавах, аминь!
Ял Павӑльсем хушша хупсассӑн Павӑла,
Хӑнана эп чӗнтӗм те Петӗр ҫыравҫа.
Хирӗҫле пулмарӗ вӑл манӑн кӑмӑла,
Ҫитрӗмӗр киле Сӑмахпа чуна уҫса.
Эп хӑналасшӑн, мухтанасшӑн чӑвашла!
Анчах мӗн ку? Мӗн инкекӗ килсе ҫапнӑ?
Алӑк, нӳхреп яри уҫӑ. Пӳртре – ҫил кашлать...
Хӑварман ним вӑрӑ, тӗппипех ҫаратнӑ:
Сӑра, така, яшка хуранӗсене те,
Газ баллонне, ҫатмийӗ-чукунне те,



Çутă пралукĕпе «Ильичăн лампине» те,
Йăх шанчăкĕн сăваплă Турăшне те...
Хăна та ун-кун пăхрĕ, пычĕ кĕтессе,
Сăхсăхасшăн пулчĕ те, усрĕ аллине.
Пуш кĕтес курсассăн, эпĕ те йĕресле
Аса илтĕм турăшăн Турă паллине.
Пин-пин çын та тăнă пуль çак кĕтессе,
Кĕл тунă несĕлсем, асăннă вилнисене...
Хăйĕн Вĕрентекенĕ умĕнче тесех
Петĕр апостол та чĕртесшĕн вĕсене:
«Çӳлти Аттемĕр, усалтан хăтар пире.
Турра та, çынна та кӳрентерес марччĕ.
Çынна çука хăваракан усал чире –
Вăрă чирне – сирĕн ялтан хăваласчĕ.
Чăваш авалтанпах кĕрешнĕ вăрăпа
Хăй пĕлнĕ пек те, саккуна та пăхăнса.
Чиркӳ прихучĕ палăратчĕ ырăпа,
Ялсем çумне нихçан лартман хура юпа.
Чысне яман-ха халăх, ĕçĕпе пуян,
Пырать мăн çул çинче вăл Турăпа пĕрле,
Усаллăха сирсе хастар утать паян,
Юрлать, ташлать Петрав уявĕнче хĕрсе.
Ăнлан, турă чури, эс пĕртте ан кулян
Çара пӳртре тăрса юлтăн пулсан та,
Çыравçăсем, эпир, ăс пурлăхпе пуян,
Ăна вăрлаймĕç тем пек хапсăнсан та.
Турăш лартатăп сирĕн Тур кĕтессине,
Ан тĕкĕнтĕр ăна Иуда пек усал.
Кĕçех чан çапнă çĕнĕ Чиркĕвĕн сассине
Ак итлĕпĕр халăхпала пуçа ухса».
Пӳртре çуталчĕ Турă кĕтесси йăл-ял!
Йăлтăр çухалчĕ турă çыравçи çумран.
Петрав юрри янратрĕ манăн мăнă ял,
Христос сăнарĕ явăнчĕ каллех умра.
Ак кайрĕ кĕрлесе Праках Куçмичăн пӳрчĕ,
Кĕрекере лараççĕ, курăр, виçĕ Петĕр:

Кукки, Ковскипеле Пумпур йысна кулса,
Тепӗр йысни те – Чăрăшкасри Хӗветӗр
Пыл сăрине ӗçсе параççӗ тав туса.

* * *

Курман эп Христоса та, нимӗнле турра
Хурнсур йăхне тăсма çуралнă ар çури.
Курсан Христосăн икӗ элчине, пурах
Пуль терӗм кашни çыннăнах хăйӗн Турри.

2002 çулхи утă уйăхӗ. Шупашкар.
«Çӗнтерӳ çулӗнче» пичетленнӗ.

Владимир Кузьминпа Федор Кузьмин Петрав уявне ял стадионӗнче ирттернӗ хыççăн пӗрлешӳллӗ хуçалăх кантурӗ умӗнче. 2002 çулхи утă уйăхӗ. (246 стр.)



**Хурăнсурăн Шупашкар хăнисем – хурăнсурсем – 1999 çулхи çуллахи хӗвел ăшшинче ялăн 320 çулхи менелникне уявланă хыççăн Филипповсен садӗнче: Римма Ильинична Кузьмина, Эрика Николаевна Овчинникова, (Екатерина Николаевнапа Павел Ксенофонтович Филипповсем), Амвросий Илларионович Овчинников, Владимир Прокопьевич Кузьмин, Василий Иванович Марков.**

Вячеслав Мешков сăн ӳкерчӗкӗсем.

# КАСУРА

I

Хӗветӗр Кузьмин каллех Илле мучӑшӗпе калаҫса ӑаранса кайрӗ. Вилес умӗн хӑрнӑ тал пиҫен пек тӑрса юлнӑ Йӗплӗ Илле, типшӗм пит ҫӑмартисене хыткан пӳрнисемпе сӑтӑрса, качака сухалне каҫӑртса, тухӑҫалла пӑхать-пӑхать те, шӗшкӗ туйипе ӑна тӑк-тӑк тутарать:

– Хӗвел урине тытмалла!

– Пӗлӗте шӑтарса тухнӑ-и вара хӗвел ури, Илле мучи? Ай вай-вай, уй тӑрӑх тырӑ пӑхса ҫӳренӗ чух каҫалапа Кӑмаш вӑрманӗ хыҫне чип-чиперех вырӑн сарса ҫывратса хӑвартӑм-ҫке ӑна, хӗвеле, хӑш вӑхӑтра Ҫӗр утиялне тапса сирме ӗлкӗрнӗ-ха вӑл, канӑҫсӑр, пӑх халӗ ӑна, тӗнче тӗлӗнтермӗшне, кӑтра пӗлӗте кӑна мар, пирӗн чӳречесене те шӑтарса кӗнӗ вӗт, хамӑр ытамрах унӑн ӑшӑ ури, акӑ, тытрӑм, Илле мучи, – тесе урайне чалт! сиксе тӑчӗ те вӑл вӑйлӑ аллисене ҫӳлелле-аялалла хуҫлатрӗ, хуллен сиккелесе тулалла тухрӗ.

Урамри йӑмра тураттисене сирсе Хӗвел Хӗветӗре хирӗҫ йӑл кулчӗ:

– Ална пар, Ҫӗр ачийӗм.

Ҫӗр ачи Хӗвел хӗрӗвне ытамласа хӗвне чикрӗ:

– Ҫӗнӗ кун илсе килнӗшӗн мухтав сана, Хӗвелӗмҫӗм. Хурӑнсур ячӗпе мухтав. Тавах сана, Илле мучи, хӗвелпе пӗрле ҫӗр ҫине аннӑшӑн, атте вырӑнне пулнӑшӑн. Ман халь хӗвел ури пулӑшнипе тӑва чупмалла, ял халӑхне ӗҫ парса хӑварса каллех киле вӗҫмелле...

Ҫу ирӗпе ҫӑвӑннӑ Хӗветӗр пӳрте кӗриччен ҫӑл кутӗнче пӗр хушӑ шухӑшласа тӑчӗ:

«Ҫын кил-ҫуртне туянса ют пӳртре пурӑнма пуҫлани вӑл арҫын ют киле кӗнӗ пекех. Ютчӗ-ҫке пурте: хапхийӗ те, сукмакӗ те, пӳрт ӑш-чиккийӗ те, кӑмаки-мӑрийи те, мӗнпур хуралтийӗ те, кушакӗ-шӑшийӗ те... Хальхи пек ирӗклӗх пулсан-и, уя, ял пуҫне, хам пуҫласа панӑ Ҫамрӑклӑх урамне уйрӑлса тухаттӑм, ҫӗнӗ вырӑнта пӳрт лартаттӑм... Илле мучин сӑмах-юмахне те илтместӗм.

Япăх каламасть-ха вăл, хисеплет пулас мана, тен, тăван аттерен те ытларах канаш парать, çав хушăрах, кĕвĕçет те... ачисем пирки. «Эс, Хĕветĕр, аçу-аннÿ ятне ямарăн, тăнлă пултăн, аçу-аннÿ килне çĕклеймерĕн пулин те, хамăр яла çĕклерĕн, ял халăхне çăкăр çитертĕн, ура сыртартăн, хĕвел ăшшине патăн, хура чунлă этемле янттине хапсăнмарăн, ман пĕтнĕ хуçалăх никĕсне керменлĕ турăн. Ялти пирĕн никĕсе пĕтерменшĕн тав сана, ывлăм, аçу ячĕпе тав. Манран хамран пĕлĕтелле çурт-йĕрпе, кил таврашĕпе çĕкленесси пулмарĕ, ача-пăчаран та хевти тухмарĕ. Эпир сире карчăкпа иксĕмĕр те çакăнта, пирĕн несĕлсен вырăнĕнче пурăнма кансĕрлеместпĕр, хамăр килте çавнашкал капмар çурт-йĕр туса урам сăнне илемлетнĕшĕн савăнатпăр çеç. Аçу-аннÿпе япăх пулман, сирĕнпе те çаплах пуласчĕ, Хĕветĕр ывлăм...» – вăраниччен чип-чиперех илтсе выртрăм ват çыннăн çак сăмахĕсене. Хă, тĕлĕк хамăртах, хамăрах, хамăр пурнăçах иккен. Çапах та... ют çын килне килсе йăва çавăрмалла пулчĕ вĕт. Атте те, анне те ун пирки шухăшламанах пуль. Халĕ леш тĕнчерен кураççĕ пулсан çеç... Кураççех пуль, Илле мучи килет-çке килне хушăран. Çимĕк мунчи кĕме анчĕ-ши халь? Аттепе анне, анăр-ха эсир те? Паян касу пăхса таврăнсан мунча хутса кĕрĕпĕр. Çĕнĕ мунчара çĕнĕ милĕкпе çапăнăпăр...»

Каçхине арăмĕ çăлран мăн савăта тултарнă шывпа чун каниччен çăвăннă хыççăн Хĕветĕр пÿрте асăрханса кĕчĕ. Хăй пекех шăпчăк ыйхиллĕ Шăпчăкĕ ăна валли кайăк апачĕ хатĕрлеме те ĕлкĕрнĕ. Канăççăр упăшки килтен тухса кайсассăн апат çинчен мансах кун кунланине пĕлсехăнăхса çитнĕ ĕнтĕ вăл çак асаплă çулсем хушшинче. «Пуçлăх арăмĕ пуличчен пуçлă сухан пулăттăм» тесе те куçне шăла-шăла пайтах типĕтнĕ. Темле çумăр та çума пултарать тата. Çемье çанталăкне пĕлейместĕн.

Шăпчăк тесе ачашласа Хĕветĕр пулас арăмне хĕр чухнех савăнтарнăччĕ. Шăпчăкĕ унăн юратăвĕ – Зина. Зина ăшĕнчен тапса тухакан кĕвĕ хумĕсем клуб çумĕнче

пурӑнакан каччӑ чӗрине пырса ҫапатчӗҫ те, хирӗҫ сирпӗнсе тухнӑ хӗмпе пӗрлешсе лӑпланатчӗҫ. Хӗветӗр хӗр куҫӗнчи кӑвак тинӗсе чӑматчӗ, хупӑ айӗнче ҫӑлтӑрла вылятчӗ. Зина ӑшран илем хумӗ кӑлара-кӑлара ял шӑплӑхне вӑрататчӗ:

Ман куҫра ма ишетӗн ялан,
Киммӳне чараймасӑр васкан.
Сан куҫна ман чӑмасчӗ паян,
Кӗсменпе авӑсачӗ вӑйран.
Кӗсменпе авӑсса кимӗре
Ярӑнасчӗ ик куҫ кӳллинче.

Сад пахчинчи шӑпчӑк хӗре вӗҫевлӗ кӗвӗпе пулӑшса пырать те, этем юррине итлеме шӑпланса ларать. Этем ҫут ҫанталӑк юррине малалла тӑсать:

Ман пуҫран ма тухмастӑн нихҫан,
Мимене пӑтратса астаран.
Сан пуҫна ҫавӑрма пултарсан,
Савӑнса юр-юрласчӗ ятран.
Юрласа, чӗрене сиктерсе
Савӑнасчӗ ик чун ӑшшинче.

Юратнӑ хӗрӗн юратнӑ юррине итленӗ май Хӗветӗр хӑйӗн чун-чӗринче те кӗвӗ тапма пуҫланипе чӑтаймасӑр, ҫерем ҫинче ҫаврӑнса илет те... пӗтӗм тавралӑха ӑшӑтса, ҫунтарса тӑракан вӗри кӗлеткене ҫума ҫывхартать. Хӗр, тутапа тута перӗннӗшӗн вӑтаннипе, ытамран уйрӑлса аран сывлӑш ҫавӑрса ярать, уйӑхпа ҫӑлтӑрсене ывӑҫ тупанӗ ҫине илсе ӑшри туйӑмне юрӑра вӑйлатать:

Ман ӑшра ма чупатӑн утпа
Шухлӑха вӑратса, сиккипе.
Сан чунна ӑшӑтасчӗ вутпа,
Вӗртерсе вучахна вӗркӗчпе.
Кӑварла пӗр-пӗрне ӑшӑтса
Пурӑнасчӗ тӗнче пӗтиччен.

Каҫри кӑвак тинӗсре ише-ишех Чана Кӗркурийӗпе Хурҫӑ ут Ултуттийӗн Хӗветӗрӗ хӗр чӗрин авӑрне лекрӗ, пурнӑҫ ҫыранне ишсе тухрӗ. Шупашкарти ял хуҫалӑх

институтěнче агронома вěренсен вăл Шăпчăкěпе мăшăр кěвви шăрантарма пуçларě. Çемье юрăрах хунарě, акă вěсем, шěвěрккесем, тутисене чăплаттарса ирхи тутлă ыйхăпа айкашаççě. Тăратма та шалккă, анчах кěçех вăратать вěсене амăшě, – паян вěсен ашшěне пулăшмалла. Пушшисене ěнерех хатěрлесе хучěç-ха, карта çинчех çакăнса тăраççě.

– Ерçместěн пулсан, тен, хамăннах каяс касуне? – ăшран тухакан çемçе сасăпа калаçрě мăшăрě. – Вуттине килсен те хутăп.

– Малтан мěнле калаçса татăлнă – çаплах пултăр, Зина, – хăрах аллипе пилěкěнчен ыталаса хавхалантарчě вăл мăшăрне. – Ман ерçӳ нихçан та пулас çук. Пăхрăм, чусти хăпарать унта. Пěçер, хатěрле çимěк апачě. Унтан мунча хутса яр. Каçпа масар çине кайăпăр. Эпě чуптартăм. Авă Чапай мучи таçта тăклаттарчě. Ăçта каять-ши ирех? Çывăрса юлтăн тесе манран каллех кулать ак вăл.

Аш татăкки çăварне персе хыпрě те Хěветěр алăк хыçěнче курăнми пулчě.

– Ырă ир пултăр, Петěр Çтаппанч! – саламласа алă тытрě вăл кӳршине. – Сывлăху мěнлерех?

Чапай мучи кăвапа таран ӳстернě çăра сухалне шăлса илчě те:

– Ях! Пурăнатпăр-ха, хăвалатпăр кăвалерине, – тесе лаша юрттилле сиккелесе кăтартрě. – Эх! – алă сулчě çавăнтах. – Ăçта-ши вăл çамрăклăх? Хěрӳлěх? Аçа-çиçěмлěх? Пěр вырăнта тапăртатни çеç. Пěлтěрсемех кунне икě кěленче шурри ним мар çавăрса хураттăм, халь пěррене чакса лартăм. Запас пěтрě те, хăйматлăх кěрӳ Николай Иванч патне калаçса ларма каятăп-ха. Эх, ěлěкрех... Килти тытса чарма çук ăйăрсемпе çул тăрăх вут-хěмлěн ăмăртаттăмăр. Эртеле пěрлешрěмěр те, вěсене те хамăрпа пěрлех илтěмěр. Лаши те нумайччě, хастар арçынě те йышлăччě. Колхозне те хамах Чапаев ятне партартăм. Чулхулана, ударниксен слетне, йěлтěрпе кайса килтěмěр. Салтакра та кавалерине лекрěм. Çěр

юланутҫӑна камантлаттӑм. Халӗ ӗнтӗ арьергардра. Кӗҫех обоза куҫасси ҫеҫ юлать. Эсир, ҫамрӑксем, малта, ударлӑ ушкӑнра. Маттур пултӑн эс, Хӗветӗр ачамккӑ, ял кавалерине ҫӑварлӑхларӑн, ҫирӗп тытатӑн. Хурӑнсурӑн ҫӗр чиккине сыхласа хӑвартӑн. Ҫавӑншӑн тепре ална чӑмӑртам. Васкатӑн пулас. Мана ан пӑх. Хӑв ҫулупа чуптар. Тавтапуҫ сывлӑх суннӑшӑн. Хальхи ҫамрӑксем ӑна-кӑна та пӗлмеҫҫӗ. Яра пар.

Ватӑ ҫынран уйрӑлса Хӗветӗр хӑвӑрт-хӑвӑрт уттарчӗ, хӑйсенчен тӑварах пурӑнакан Кури Павӑлне турӑ пулӑшӑвӗ сунчӗ.

– Ҫылӑх пулмасть-и паян ӗҫленӗшӗн? – ыйтрӗ вӑл хыҫҫӑн.

Лутакарах, лапчӑкрах питлӗ Павӑл йӑлл кулса хуравларӗ:

– Ҫылӑххи-мӗнӗ. Сӑвап-ҫылӑхпа хырӑм тӑранмасть-ҫке. Ӑна-кӑна уясан, ял выҫӑ, йӗмсӗр юлать. Пӗркун ӳсӗрпе Куҫкӑ кумпа тавлашнӑ. Атте вилнӗренпе паянхи ҫимӗкчен хам явнӑ вӗренпе Ҫӗре ҫавӑрса ҫыхап тесе мухтаннӑ-ҫке. Ах, чӗлхене ӑна, картран вӗҫерӗнсен... Мӑнук компьютерпа шутласа пачӗ те, шӑпах ҫур ҫухрӑм ҫитмест экватор тӑршшӗне. Ҫав нормӑна тултармалла-ха масар ҫине кайиччен. Турри вӑл ӗҫленӗшӗн хутлатса лартмӗ тетӗп. Ҫимӗк сӑри ӗҫме кӗместӗн-и?

Хӗветӗр аллине тути умне тытса кӑтартрӗ. Паллӑ, ахаль те сӑра-эрехпе ашкӑнма юратманскер, хирӗҫлет.

Пӗр минутлӑх калаҫнӑ хушӑра Кури Павӑлӗ эхлеткелесе «агрегатне» майларӗ. Велосипед урапин кӑшӑлне хӗреслетсе ҫапнӑ патаксене тӗккелесе пӑхрӗ, ручкине ҫавӑркаларӗ, йывӑҫ уратаксемпе «крючокӗсене» хыпашлакаларӗ. Пӳрт умӗнче вӗрен явма Павӑл ашшӗнчен ачаранах вӗренсе юлнӑччӗ, халӗ, ҫитмӗлелле хӑвалана май, мӑнукӗсене хӑнӑхтарасшӑн авалхи ӑсталӑха.

– Эп те халӑха кӑнтӑрлаччен уйра ӗҫлеттерсе юласшӑн-ха, касӑва кайиччен наряд пама васкап...

– Кирлĕ, кирлĕ, кăшманĕ те çумланнă терĕç-ха, хăмлийĕ те... Ял çыннин çулла кану кунĕ çук.

Правление çитсе радиопа наряд пама, ял çыннисене çимĕк ячĕпе ăшă сăмахпа хавхалантарма нумай вăхăт кирлĕ пулмарĕ, таврăннă тĕле униче патне ĕнесем пухăнма пуçланăччĕ те ĕнтĕ. Этем, выльăх-чĕрлĕх, хур-кăвакал, вĕçен кайăк, техника сассипе Чăвашстанри Хурăнсур çĕнĕ куна кĕчĕ.

Зина ывăлĕсене тăратнă, тин çеç сунă кăпăклă сĕт ĕçтерет, сумкăна апат хатĕрлесе хунă. Хĕветĕр сĕте витре хĕрринченех ăш каниччен ĕçрĕ.

– Перетпĕр халь кăнтăрлаччен, – тесе вăл умри кĕсьерен çыру кĕнеки кăларса уçкаларĕ, кирлĕ страницăна тупса сасăпах вуларĕ: «Ыран Шупашкара саккăрта çитмелле, газ пăрăхĕ хăпăтса илмелле».

Юлашки вăхăтра çак ыйту пуçран тухма пĕлмест. Нурăс енчи ялсем миçе çул ĕнтĕ кăвак çулăм ăшшинче ырă кураççĕ. Хурăнсурсемпе юнашар ялсене темшĕн хӳрене хăварчĕç. Ах, çав Шупашкарти аслă пуçлăхсене тем туса хурĕччĕ вăл пĕрне ума, теприне кут хыçне хăварма хăтланнăшăн. Ĕмĕртенпе тăсăлакан сиплевсĕр чир вăл – алла алă çуни. Чи малтан юттишĕн çунакан пуçлăх курман-ха ку таранччен. Пур-ши вăл ăçта та пулин? Хăйĕн ăшĕнче те пурăннине туять Хĕветĕр Кузьмин тепĕр чухне çав сиплевсĕр чире. Сисмесĕрех чун чиккинчен куçса каясшăн. Намăс-симĕс çинчен те шухăшламастăн. Хăвшăн мар, паллах, халăхшăн, ялшăн тумалли ĕçшĕн вăтанмасăрах йĕркене пăсатăн. Унччен пысăк колхоза, халĕ ял юлташлăхне ертсе пынă чухне мĕн тери ӳкĕнмен пуль совĕç ирĕклĕхĕшĕн. Утма-тăма, çаврăнма-ярăнма паман инструкцисене пулах таса чуна варалатăн вĕт. Именчĕклĕ пулса çӳлтен чăкăт татăкки пăрахса парасса кĕтсе ларнă пулсан-и... Хурăнсур тахçанах хăрса мăянпа вĕлтрен айне пулмалла. Халĕ мĕнле? Урам тулли пура, пĕрене, хăма, кирпĕч, хăйăр, вак чул... Ял пуять, ял çĕнелет, ял юрлать. Çапла, совĕç чиккине пĕрлехи ĕçшĕн,

çынсен ырлăхĕшĕн пăснăшăн Кĕркури ачи турă умĕнче хăйне çылăхлă тесе шутламасть. Аталанăва чĕрмантаракансене Турă айăплатăр. Ялан хăйĕнчен килмен çав хистевлĕ туйăм, ун шучĕпе, çумрах, çут çанталăкрах явăнать пулас, куçа курăнман вăй вара, çын пуçлăха ларсанах, çав туйăма унра вăратать, хăй хурăнташĕшĕн, ялĕшĕн, таврашĕшĕн усăллă ĕç тума хистет. Хăшĕн-пĕрин чирĕ шаларах каять те, чĕрине урăхла таптарса, хăйшĕн ытларах хыпăнтарать. Унашкал пуçлăх вара урăхла чикĕ урлă каçса каять, халăха тăлăха хăварса хăйĕн суя керменне купалать. Кашни çынрах пур пулас çав усаллăх. Сăпайлăхпа тӳрĕ кăмăл хуралçисем хальлĕхе Кузьмин чун-чĕринче сыхă тăраççĕ-ха. Вăрнарпа çыхăнтарсан кăçал газ çулне, çитес çул яла та явакласа илет вăл сарă тĕслĕ пăрăхсемпе... Çак пысăк ĕçшĕн чун чиккине пăсмалли ĕмĕт-шухăш та çуралсах тăрать. Юрĕ, ялшăн пăсма та, çылăха кĕме те юрĕ. Турă каçартăр.

– Эс, Хĕветĕр, мĕн сăх сăхса тăран унта ирех? Ваттисене асăннă чух сăх сăхăпăр, васкарах-ха, – тесе арăмĕ ачисемпе айкашăнса тухса кайрĕ, алăкра вăл упăшкине чарса тăратрĕ те, кĕскен ăс пачĕ:

– Эс ял халăхне çеç лайăх пĕлетĕн, ял халăхĕн ĕнисене пĕлместĕн, пĕри унта мала чупать, тепри тарать, кӳпĕнесси те пулма пултарать. Эс халь, хуçа пулнăранпа алла пушă тытманскер, ытлашши ан тăс ăна, сăлтавсăрах ан шартлаттар. Асăрхан.

Тăрăшса ăнлантаракан арăмĕ çине пăхса йăлл кулчĕ Хĕветĕр:

– Ман вĕсене мĕнле уйăрса илсе паллас-ха? Пурте хура-шурă та, хамăр Красулькăна та пăтраштарса ярăп.

– Эс ан кул. Эпир паллатпăр-çке. Сан та палламалла. Çынсене пĕлнипех çитмест. Юрать-и? Лайăх, пăнкă-пăнкă тăрантарса кил. Çынсем усал ан калаччăр.

Чуп тусах ăсатса ямастăн пуль те тата, чунăмçăм? – çаплах куллине пусараймасть Хĕветĕр.

Кӳренмен Зина аллинчи витрине çĕре лартрĕ те

упăшкине хăлхисенчен çатăрласа тытса ту-утлăн чуп турĕ, машина сассине илтсе лаç еннелле чупса кайрĕ. Хуçана бухгалтерпа инженер темле хут çине алă пустарма килнĕ.

Спорт тумĕ, çăмăл пушмак тăхăннă, пуçĕ çине карттус чалăштарса лартнă, сулухай хул пуççи урлă вăрăм пушă янă Хĕветĕр Кузьмин черетпе касу пăхма тухрĕ. Ачисем ăна кĕтсе ывăннă та пулас, ашшĕне курсанах униче алăкне ярлаттарса уçса ячĕç.

Ачалăха, çамрăклăха аса илнĕ Хĕветĕр вăрăм пушша умалла туртса ячĕ те пĕтĕм вăйран шартлаттарчĕ: «Касуçăн та çирĕп алăллă пулмалла!»

Тĕлĕкре Илле мучи калани хăлхаран каймасть:

«Эс, ывлăм, ĕнисем хыççăн ытлашши ан чуп, яр вĕсене ирĕке. Хуптĕрлесен выльăх тăранаймасть. Ĕне вăл качака мар, умри апат урлă чупмасть, пуçа çĕклемесĕрех курăка чашлаттарать. Тырă ани çине вара пĕрне те ура ан пустар. Пĕрре пуç чиксен выльăхăн ун чикки-мĕнĕ çук».

«Эх, ку Йĕплĕ Иллепе ăçтан-муртан çыхлантармалла пулчĕ пурнăça... Атте-анне килĕнче тĕпленнĕ пулсан... Май килместчĕ çав. Вунă ачаран камăн юлмаллаччĕ-ши тăван килте? Шăпа ярайmастăн. Кивĕ пĕчĕк пӳрт, сарай, мунча, шăпчăк юрриллĕ сад...»

Садри шăпчăк парнеленĕ кĕвĕпе çунатланнă Шăпчăк - Юрату ăна «пурăнасчĕ тĕнче пĕтиччен» тесе ытакласа илчĕ те килтен илсе тухса кайрĕ. Ялта пушă кил шыраса ĕнтĕ Чана Кĕркурин ачи, сакăр ывăлтан пĕри, Йĕплĕ Иллен кивĕ хапха алăкне чĕриклеттерсе уçрĕ, мунчаран пысăках мар пӳртре пурăнма пуçларĕ.

Çав вăхăтрах... Унпа пĕр шайлă председательсем килĕ-çуртне кайăк вĕçсе кĕмелле мар каплантарса, аякра запас çурт-йĕр лартса, Шупашкар-Мускавра хваттер туянса, тăван-пĕтенне чаплантарса-астарса ашкăннă саманара вăл, хăйне пуйтарма май килнĕ çĕртенех, ирхи хĕвелтен хăранă пек ватăлнă, çĕрĕк пӳртре пуçлăх ĕмĕрне малалла тăсрĕ. Аякран килнĕ юлташĕсемпе тусĕсене, хăнасемпе пуçлăхсене сăра курки тыттарса сăйлама та

намăсчĕ. Юрать-ха пилĕк çул хушшинче аран-аран çĕнĕ пӳрт туса кĕчĕç. Канмасăр ĕçленĕскер, вăл юлашки çулсенче, пĕлтĕр, аран-аран мунча тума отпуск тенине илчĕ. Арăмĕ епле савăннăччĕ!

Илле мучăшĕ ăна йĕплесех тăрать: «Эй, ывлăм, каялла ан чак!»

«Ахальтен паман пуль çак Илле мучине «Йĕплĕ» хушамат, – шухăшласа пырать ĕнесем хыççăн Хĕветĕр. – Пурне те вĕрентме юратнă, пур çĕре те сăмсине чикнĕ, таçта та чĕрре кĕнĕ, хăй çав вăхăтрах пилĕк авсах ĕçлемен тет. Çак Малти урамра мĕнешкел капмар пӳрт-çурт лартнă хресченсем пурăннă – вăрçăчченех. Чапай мучин те, авă, кил-çурчĕ станлă. Сăмах çапни параппан сасси пек салансах çухалать пуль çав. Пирĕнпе хирĕç Михала пиччен аллинче пуртă-сава юмахри пек вылять те, епле чаплă вĕсен пӳрчĕ, хапхийĕ. Чăваш арĕн ăсталăх, маçтăрлăх сăнĕ йăлкăшать унта. Кăрăпчак Михалин ăста алли пĕтĕм ял урамĕсене илем кĕртрĕ, вилĕмсĕр кĕвĕ пек янăрать халĕ çав капăрлăх.

Вĕсем хыççăн тепĕр касу урам тулли тусан çĕклесе çывхарать. Малти уничерен икĕ касу уя тухать, анатри уничерен – пиллĕк, Кăмаш енчинчен – иккĕ. Ялти ик çĕр аллă кил пилĕк çĕр ытла ĕне усрать. Колхозăн виçĕ мăн ялпа фермăра çавăн чухлĕччĕ. Çĕр пайлани, çĕр хушса пани выльăхлă турĕ хресчене. Унччен вăтăр соткăпа нушаланнă вăхăта аса та илес килмест. Халĕ кашни кил епле çӳллĕ, вăрăм сарай лартать, унта уттине, улăмне чыхать, кĕменнине капана хывать. Колхозăн улмурийĕсене кăшлама тухмасть халĕ хресчен, ытлашшине сутать те. Ĕнесĕр пуçне сысни, сурăххи, чăххи-чĕппи мĕн чухлĕ! «Вăтăрмĕш çулсенче пулсан-и, – тет Чапай мучи шӳтлесе, – яла пĕтĕмпех раскулачить туса Çĕпĕре хăваласа ямалла». Ĕлĕкхине вĕсем, Кузьминсем, курман та, астумаççĕ, анчах халĕ те хресчене мĕнле пусахланине, ăна ура сырма чăрмантарнине вăл шутсăр лайăх пĕлет.

Турхай çырминче ĕнесем васкасах пуçĕсене симĕс курăк çине пĕкрĕç. Ачисем хураллана хушăра Хĕветĕр çерем çине тăсăлса выртрĕ. Юнашарах, çырма хĕрринче, ыраш уйĕ. Иртнĕ кĕркунне юр çума васкамарĕ пулин те, калча хĕл ыйхине симĕссĕн сирсе ячĕ, çумăр хыççăн кăшăл çĕкленчĕ. Уй лишайĕ курăнмарĕ. Парка ӳсрĕ тырă. Пуç кăларнă. Тунаран аталаннă кашни çамрăк пучах ăна, ял хуçине, уй тухтăрне, пуç таять. Хĕветĕр çĕрпе, тырăпа хăй ăшĕнче калаçать. Вĕсем те, вăл та пĕр-пĕрне туйăмлă ăнланаççĕ.

2

Янкăр тӳпере кăтра-шурă пĕлĕтсем ярăнаççĕ. Тинкеререх пăхсан вĕсем çине, улшăнса çĕнелсе пыракан анлă ӳкерчĕк, тематикăллă-сюжетлă ӳкерчĕк çакăнса тăнăнах туйăнать. Колхоз театрĕн артисчĕсемпе «Çĕр пики» спектакль лартни аса килчĕ. Ун чухне вăл Караваев художника сăнарланăччĕ. Режиссер кăна мар, артист та пулчĕ. Çĕрĕ-çĕрĕпе пьеса пурнăçĕпе аташса-шутласа ӳнер ăсталăхĕпе вăрттăнлăхне ăнланма тăрăшрĕ. Хăйĕн чуннеюнне ӳнерçĕ чунĕ-юнĕпе улăштарма тăрăшса пăхрĕ. Спектакльте унăн колхоз агрономне юратмаллаччĕ, ытаклашса халăх умĕнче иккĕшĕн чуп тумаллаччĕ. Хĕрĕ – артистки, Хурăнсуртанах, Кăвас Павăлĕн чиперкки, куçран пăхма та вăтанать. Чуп тумасăрах, пĕрне-пĕри кăшт тĕккеленипех пулса иртрĕ вара савнисен тĕл пулу ӳкерчĕкĕ. Кĕвĕçӳ хумĕ пит-куçран пырса çапасран хăрарĕши спектакльти Венера агроном? Çав самант халĕ тӳпере курăнать! Çут çанталăк сцени çине авă каччăпа хĕр ишсе тухрĕç те, пĕр-пĕрин патне çывхарса, çывхарса пычĕç, сисмесĕрех пĕрлешсе кайрĕç. Спектакльти курăмлăхпа тӳпери чĕррĕн курăнакан ӳкерчĕк ăна ура çине чалтах тăратрĕ, тепре пăхрĕ те тӳпенелле, пĕрлешнĕ пĕлĕт çумне тепĕр кăтра пĕлĕт çывхарнине асăрхарĕ. Шăпчăк вĕт ку! Унăн юратăвĕ – Зина! Спектакль умĕнхи каç арăмĕ пăшăлтатса выртрĕ-çке: «Эп сана, Хĕветĕр, пьесăри Венера агрономна чуп тусан, урăх куçунтан та пăхмастăп».

Çавна сиснĕ пуль çамрăк артистка. Акă вăл, Венера-агроном, уйрăлчĕ те пĕрлешнĕ пĕлĕтрен, аяккалла ишсе кайрĕ Хĕветĕр Кузьмин-Караваевран, урăх пĕлĕт татăкĕсен ушкăнне хутшăнса, тӳпене çĕнĕ илем сапрĕ. Зина вара упăшка-артиста çавăрса илчĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсем ниçта уйрăлмасăр пуç тăрринче ярăнаççĕ.

«Манра та художник чунĕ пур-ши вара?» – тĕлĕнсе тăчĕ Хĕветĕр Турхай лаптăкĕнче. – Чăн-чăн картина пек курăнать вĕт? Ыттисем курманнине те курма пултартăм ваçка. Халь лартас пулсассăн-и вăл пьесăна, урăхларах тумалла спектакльне, хам та туйăмларах вылямалла. Агрономне те...»

Тырă ани еннелле сулăннă ĕнесене пушăпа шартлаттарса хăваласа ячĕ те касуçă тавралăха сăнарĕ. Вăл ача чухне ку анлă лаптăк Хурăнсурăн пысăк йĕтемĕччĕ. Тырă типĕтмелли аслăксем пурччĕ, йывăççем ӳсетчĕç. Çăл чавнăччĕ. Çăл куçсем...

Çăл куç енчен текерлĕк сассипе хутăш сĕрме купăс сасси юхса килет. Тăрисем курăнман юхăма хăйсен кĕвĕ çеммине тăкаççĕ те тăкаççĕ çӳлтен. Çав юхха ăша илет те Хĕветĕр, юрласа ярать:



Купăс Çинахванĕ

Çĕр-аннемĕн тăрă куçĕсем –
Çăлтăртан та сутă çăл куçсем.
Çăл куçсем, çăл куçсем, çăл куçсем,
Çĕр-аннемĕн сутă куçĕсем.

Тăван ялăн чĕрĕ куçĕсем –
Атăлтан та тулăх çăл куçсем.
Çăл куçсем,

Çăл куçсем, çăл куçсем
Тăван ялăн тулăх куçĕсем.

Чун-савнийĕн ăшă куçĕсем –
Сим пылран та тутлă çăл куçсем.
Çăл куçсем, çăл куçсем, çăл куçсем,
Чун-савнийĕн тутлă куçĕсем.

Купăс Çинахванĕ сĕрме купăсне касăва та илсе тухнă-çке. Уй кĕввине пуянлатса, сĕркĕчне ташлаттарать те ташлаттарать сĕрсе вăйлатнă хĕлĕхсем çинче. Çăл куç патĕнчи юпăра тăрать вăл – çӳллĕскер, тахçан мăнаçлăн çав вырăнта ларнă юман пек хăватлăскер. Касури мусăкçă. Ялти Паганини. Авалхи тĕрĕксен кобысĕ пек янравлă купăс Хурăнсура чи малтан хăçан килнине пĕлмест Хĕветĕр, анчах чăвашсем çак асамлă инструмент вăрттăнлăхне ют патшалăхсенчен темиçе ĕмĕр каяллах, ытти халăхсемпе танрахах, пуçа хывни çинчен илтнĕ. Италири пек Аматисемпе Гварнерисем тата Страдиварисем чăвашăн та пулнах пуль çав. Ахальтен ăсталама вĕреннĕ-ши ялти Трахвин мучи çав илем япалине? Кӳршĕре ӳснĕ Çинахван асамлă мучăшĕнчен кĕвĕ калама вĕреннĕ. Асăнмалăх ăна вĕрентекенĕ сĕрме купăс парнеленĕ. Вăйă-ташăра, туйра-ĕçкĕре, клубра Çинахван юрлаттарнă та сиктернĕ ял халăхне çак чуна тыткăнлакан, кăмăла уçса яракан текерлĕк сассиллĕ купăспа. Этем сасси пек туйăмлă, ăнлануллă Çинахван сĕрме купăсĕн сасси. Купăсне вăл хăйĕн куçне сыхланă пекех сыхлать. Шоферта чухне хуçи сĕрме купăс хĕр вырăнне кабинăра йышăннă, пушарникре «каннă вăхăтра» чун уççи пулнă.

Купăс Çинахванĕ касу пăхма ачипе тата кинĕпе тухнă. Ешĕл курăк çинче ĕнисем ытлах нушалантармаççĕ, çапах та вĕсене куç та куç кирлĕ, выльăх – выльăхах çав. Ывăлне тем каласа Çинахван кунталла утрĕ, купăсне тунката çине хурса хăварчĕ.

– Мĕнле пек кăçал, Федор Григорьевич, иртсе каятпăр-и кӳршĕсенчен? – алă тытнă май тавралла пăхса илчĕ вата çын.

– Ырă кун пултăр сире, Çинахван пичи, – терĕ Хĕветĕр. – Чи малтанах сĕрме купăс каланăшăн пысăк тав.

– Тавĕ качки... Лачакари шапасене те вăратаймарăм.

– Эсир ун пек ан калăр-ха. Пĕтĕм тĕнчене вăратрăр паян. Илтетĕр-и, кайăксем епле илемлĕрех шăратма пуçларĕç юррисене? Ăмăртатпăр çут çанталăкпа. Çапла пулмалла та.

– Хурăнсурсем вĕт эпир, ма ăмăртмалла-тапăçмалла мар. Эпĕ кӳршĕсем пирки хамăр уй пуянлăхне пăхса каларăм.

– Э-э-э... – урăх шухăшран тинех уйрăлчĕ хуçалăх хуçи. – Тырăпа та, пахча çимĕçпе те, хăмлапа та таврари ялсенчен ирттерме кирлĕ. Çĕрпелсемпе вара... Финишра иртсе те кайма пултараççĕ.

– Эсир хăвăр Шупашкарта вĕреннĕ чухнех вăйлă спортсмен пулнă та, ялан «старт-финиш» сăмахсемпе калаçатăр: ялта та кĕрлеттеретĕр-ха. Физкультурăпа спортне ăна аталантармаллах. Пысăк колхоз чухне тата вăйлăрахчĕ: хоккейĕ те, футболĕ те пурччĕ.

«Тăхтăр-ха кăштах» тесе Хĕветĕр чарусăр ĕнесене касу варринелле хуса кĕртсе янă хыççăн Çинахван патне пычĕ.

– Ах вăл çав пысăк хуçалăха... – ĕнсине хыçса илчĕ Хĕветĕр. – Тума тунă та хăй вăхăтĕнче, анчах мĕн палăртнине пурнăçлайман. Пурнăç чиккине çĕмĕрсе, йăнăш çул çине кĕрсе кайнă. Асфальт министрĕсемпе хут тусанĕн генсекĕсем «ялтан хула» тума пуçларĕç вĕт. Мĕльюн-мĕльюнĕпе хресчен, çурлана пăрахса, мăлатук тытрĕ, ĕмĕр-ĕмĕр чечекленнĕ тăван ялне-çĕрне пушатса хăварчĕ, мĕльюн-мĕльюн гектар çĕре çум курăк мурĕн аллине пачĕ. Аслă улшăнусем хушшинче паркаланнă Çум курăк пĕтĕм культурăллă ӳсен-тăрана хупласа хучĕ, халĕ те çутта кăлармасть. Хупах çулçи айĕнче пăчлантарса усрать хресчене. Çапла, Çинахван пичи, юрать пирĕн ялсем сыхланса юлчĕç. Ман умĕн ĕçленĕ пуçлăхсем пуçлах пулнă иккен. Хамăр таврари ытти кӳршĕсемех хыр хăйии кăшласа юлчĕç. Çапах та...

Яланхи йӑлипе питне сӑтӑрса илчӗ те Купӑс Ҫинахванӗ, кӑххӑмлатса, тутине пӑркалантарчӗ:

– Пире ҫӗрпелсем пурпӗрех хӑйсенчен каярах шутланӑ пек туйӑнать мана, Федор Григорьевич.

Хӑй ҫӗрпелсем пирки мӗн шутланине пытарас темерӗ вара Кузьмин, уҫҫӑнах каларӗ:

– Пулнӑ пуль унашкал шухӑш та хӑшӗн-пӗрин. Ҫапах та кунта урӑхларах тӑрать ӗҫӗ. Акӑ, илӗпӗр Хурӑнсурпа Ҫӗрпеле. Ывӑҫ тупанӗ ҫинче вӗсем – икҫӗр аллӑшар киллӗ ялсем. Юнашар. Ҫухрӑм та ҫуккӑччӗ хушши. Халӗ ҫӗнӗ урампа пӗрлешсе кайрӗҫ. Ывӑлу та унта куҫса кил-ҫурт ҫавӑрчӗ. Тахӑш ялӗн урамӗ темелле ӑна халь. Хамӑр ялсем те, ҫӗрпелсем те пурӑнаҫҫӗ те. Икӗ яла пӗрлештермелли генплан пурччӗ. Ҫавна май Хурӑнсуртан тепӗр урам Ҫӗрпел еннелле утма пуҫларӗ...

Купӑс Ҫинахванӗ, ачи кӑшкӑрашнине илтсе, касӑва чупса кайса килчӗ, вара хӑйӗнчен чылай ҫамрӑк хуҫана тӑнласах малалла итлерӗ.

– Вӑт, Ҫинахван пичи, тем тӗрлӗ те авӑрттарнӑ эп ҫак пуҫ арманне, йӑнӑш тӑватӑп-ши, тӗрӗс-ши тесе тем тӗрлӗ майсем лартса танлаштарнӑ: ҫав ҫӗрпелсенчен уйрӑлса тухасси пирки те, тем ҫинчен те...

– Мӗн, тӗрӗс тумарӑмӑр-и? Ӗмӗрех ҫын куҫӗнчен пӑхса пурӑнмаллаччӗ-им пирӗн? Ҫынна пуҫ ҫапса? Ҫын куҫӗнчен пӑхса?.. Эпир вӑрҫӑччен пӗтӗм Чӑвашра чи вӑйлисен ретӗнче пулнӑ.

– Тӑхтӑр, тӑхтӑр, ан васкӑр, – сылтӑм аллине ҫӗклесе лӑпланма ыйтать Хӗветӗр. – Халӑх шутланӑ уйрӑлма – халӑх уйрӑлнӑ. Тавах сире ҫав ӗҫе пуҫарса ертсе пынӑшӑн. Ял халӑхӗ сире манмӗ. Ӗмӗрте те.

– Ҫыпӑҫтарнӑ ҫилӗм те майӗпен хытса вакланать ҫав, халӑх вара... тем пулӗйӗ, шӑллӑм. Сӑмахран, кӳршӳпе пӗрлешсе пӗр хуҫалӑх туса пӑхӑр-ха. Икӗ ҫемьере уписательнӑ пӗрне пӑхӑнтараканни пулатех. Кӳршӳ, Улатимӗр, ватӑ, сахал вӗреннӗ, эсир – аслӑ пӗлӳллӗ, пуҫлӑхра нумай пулса курнӑ. Хуть те мӗн каласан та,

пурпĕрех эсир çиеле, çӳлерех тухса пыратăрах. Мĕншĕн тесен сирĕн алăра – влаç тилхепи. Улатимĕрĕн сирех пăхăнма, пуç çапма тивет.

Федор Григорьевич кунпа килĕшет, кулкаласа та илет кăтăклă тĕслĕххшĕн, анчах та унăн хăйĕн шухăшне вĕçнех çитерес килет.

– Итлĕр мана, – тет вăл хĕрсех. – Чапай мучи каланă тăрăх, пирĕн ялсене чи малтан чиркӳ çывăхлатса пĕрлештернĕ. Унччен ял несĕлĕсене хамăртан ултă çухрăмри Татмăш–Ачча чиркĕвĕн лапамĕн çĕрĕнче пытарнă-çке. Эпир çав чиркӳ прихутне, Аслă чиркӳн пĕчĕк туршалăхне кĕнĕ.

– Пĕлетĕп.

– Чиркӳ лартсан...

– Темме ик ял хушшине лартман çав чиркĕве. Çĕрпел çĕрĕ çине лартнă пирки ĕнтĕ вĕсем, авалхи янкурчасем, çав туршалăх тĕп ялĕн хутлăхĕпе ытларах усă курнă. Чиркӳпе чиркӳ шкулĕ тавра вĕреннĕ ăслă çынсем пухăннă. Пирĕн вара... Çавна май хурăнсурсем пĕлӳ илессипе сулнăка çапăнса юлнă.

– Ку тĕрĕсех те. тĕрĕсех те мар пуль, – хăйне Купăс Çинахванĕ ăнланма пуçланине туйрĕ Кузьмин. – Чиркӳ ĕçлеме тытăнсан, прихут туршалăх шкулне хамăр ялтах уçнă пулнă, ЦПШ – церковно-приходская школа текеннине. Пупĕ, тиекĕ, вĕрентекенĕ... Малтан ăслăлăх çăл куçĕ çапла Хурăнсуртах тапма тытăнать. Анчах... çирĕммĕш ĕмĕр пуçланиччен икĕ çул маларах прихут шкулне пĕтерсе земствă шкулĕ тăваççĕ те... Çĕрпелте пĕлӳ çăл куçĕ çĕнĕ вăйпа тапма пуçлать. Каярахпа, совет влаçĕнче, ял совечĕ пушшех вăйланса каять. Пирĕн ял шкулне те, ял советне те пĕтерсен, хурăнсурсен çăл куçĕ майĕпенех типсе ама хупахĕ айне пулать. Çĕрпелте вĕреннĕ çын йышланать, пирĕн... хура ĕç тăвакан хунать. Эсир «вăрçăччен» терĕр. Чапай мучи мана пĕрмай тăн парать: «Эсĕ, ачам, ялта эпир вăрçăччен тунă пек икĕ хутлă правлени çурчĕ ларт, вара тин пире, аçу-аннӳне те, хуса çитетĕн. Çĕрпелсен

колхоз тунăранпа та пĕрле пухăнса калаçмалли-савăнмалли эртел çурчĕ пулман. Халĕ вĕсен виç ял халăхĕн хăвачĕпе тунă кермен епле йăлкăшса ларать».

– Тĕрĕс калать Шлык, – савăнсах кайрĕ Купăс Çинахванĕ. – Çĕрпелсем вăрçăччен ыйткалакана тухнă. Хăйсен правленийĕ валли те станлă çурт лартайман, библиотека çуртĕнчи пӳлĕмсенче тăварланса пăчланчĕç. Çав вăхăтрах пирĕн «чапаевецсем» икĕ хутлă çурт каплантарнă. Çĕрпелсен ĕмĕрне клуб таврашĕ пулман, кирлĕ ыйтусемпе мăн шкулта пухăнса калаçнă-тавлашнă. Пирĕн ялсем мĕн пек пысăк клуб тума пуçланă, вăрçă тухнине пула кăна хута ярайманччĕ ăна, вăрçă чарăнсан йĕркеллех туса кĕтĕмĕр. Пĕтĕм артист ыр сунатчĕ пире уншăн. Мăн клубăн хулари пек залне татса пăстараканĕсем камсем пулчĕç? Çĕрпел хуçисем. Ялти фельдшер пунктне пĕтерекенсем камсем пулчĕç? Каллех çĕрпелсем. Пире, ик çĕр аллă киллĕ пысăк яла, малашсăрлăх ял списокне кĕрттерчĕç-ха та. Ял кулли мар-и? Хăйсемпе пĕрлешнĕ хыççăн пирĕн ял халăхĕн тарĕ çеç кирлĕ пулнă вĕсене. Халь пирĕн кино-спектакль курма – Çĕрпеле. Культура çурчĕ унта-çке. Пире юрать, ухмахсене... Алла кастартăн – çыхтарма çухрăм утмалла Çĕрпеле. Вутта каймалла – машин-трактор ыйтма – Çĕрпеле ланккамалла. Справка кирлĕ – Çĕрпеле. Колхозăн «тĕп хулине» хамăр нушашăн утса çăматă-пушмак çĕтнине шутласан-и, уйри ĕçе те туса ĕлкĕреес çук. Тьфу!

– Пуриншĕн те çĕрпелсене айăплар мар-ха, – хĕрсе кайнă Çинахвана лăплантарма тăрăшрĕ Кузьмин. – Самана урапи çаплалла куснă. Çӳлтен, Мускав туррисем, вĕсен Шупашкар чурисем çапла хушнă-çке пирĕнни пек «малашлăхсăр» хурăнсурсене пĕтерме, пире, малашлăхсăр хресченсене, тăван çĕр хуйхипе хĕне яма.

– Çапах та, – пуçне пăркаларĕ Купăс, – вăрçă вăхăтĕнче çĕрпелсем масар çинче пĕр йăмра, пĕр йывăç хĕрес хăвармарĕç, йăлт кăмакара çунтарса яшка пĕçерчĕç, ăшăнса юлчĕç. Пирĕн хурăнсурсем пĕр йăмра касмарĕç.

Вăрçă хыççăн юнашар масарсем çурмалла çӳç кастарнă арçын пуçĕ пек курăнатчĕç. Пире çапах та вĕсем, аллăмĕш çулта пĕрлешнĕ хыççăн, самаях чуралла ĕçлеттерчĕç, пирĕн вăйпа пуйса юлчĕç.

– Мĕн тăвăн, пĕтернĕ вăя каялла тавăраймастăн.

– Латнă хамăр маттур пултăмăр, авалхи спартаксем пек хĕрӳ...

– Çут çанталăк явлăмĕнчи пурнăç аталанăвĕ вăл ĕмĕр-ĕмĕр тăршшипе киввине аркатнă. Пирĕн çĕршыв историйĕнче те пулса иртрĕ пулас вăл çавнашкал пулмалли. Ăна никамах та чараймастчĕ пуль. Такама темле айăпласан та. Çут çанталăк саккунĕ. Философи тетпĕр-и эпир ăна, çĕр çыннисем. Ман парнене, Рафаэлло Джованьолин «Спартак» кĕнекине, эс мĕнле тĕплĕн вулани сисĕнет. Чуралăха хирĕç кам кăна хирĕç тăман пуль. Христос çураличченхи çулсенчех, авă, Италире Спартак текен вăйлă çын, восстани пуçласа, ирĕклĕхшĕн çапăçнă, хăйĕн çарĕпе пусмăрçăсен сехрине хăпартнă. Çапăçса ирĕке тухнă, чун хăвачĕпе пурпĕрех вĕсене çĕнтернĕ. Спартак кăмăл-туйăмĕ, çирĕплĕхĕ вăл ĕнтĕ пирĕнте те, хамăртах, хамăра Турă панинчех, тесшĕн пултăн эсĕ халь. Алла хĕç-пăшал тытасси, ăс-тăн вăйĕпе усă курса çапăçасси, ăслăлăх фронтĕнче çĕнтересси пиртен анчах килекен пулăм мар çав. Вăл аталану, чун хăвачĕн куçа курăнман вăйĕ.

Турхайран çывăх курăнакан масарпа Çĕрпел енне тепĕр хут питĕ çивчĕ куçпа пăхса илчĕ те Купăс Çинахванĕ, йăл кулса, хĕвеле вăй пачĕ:

– Çĕнтертĕмĕр вĕт?!

Иккĕшĕн те каллех касу ĕçне тумалла пулчĕ. Пушă касура кирлех иккен.

– Çук, çĕнтермен эпир, – терĕ вара лăпкăн Чана Кĕркурийĕн ывăлĕ иккĕшĕ каллех тĕл пулсан. – Мĕншĕн тесен эпир, хăй вăхăтĕнче çĕрпелсен умĕнче чураланнă пулин те, вĕсемпе тытăçса вăрçман. Вăрçăра унта камăн та пулин çĕнтермеллех, унсăрăн ăна ан та пуçла. Уйрăлнă

çеç эпир. Официальнă. Юридици енĕпе-йĕркипе. Тĕрĕссипе вара халĕ те пĕрлех пурăнатпăр – патшалăхăн пĕр администраци картинче. Малтан пире кĕлĕ çурчĕ, тĕн теорийĕн ăсчахĕсен Петĕрпе Павăл апостолсен ячĕпе лартнă чиркÿ, ытамра тытнă. Ăна 1938 çулта хупса аркатнă хыççăн, совет влаçĕ марксизм-ленинизм тилхепипе явакласа лартнă. Пурăна киле... Вăрçăччен Çĕрпелрен Хурăнсура никам хăйĕн хĕрне качча паман пулсан, халĕ ялти кашни виççĕмĕш килте тенĕ пек Çĕрпел кинĕ. Хурăнсурсем Çĕрпеле сырса илнĕ.

– Çапла, хĕр паман вĕсем пире, – аса илсе ăс кунтăкне хыпашларĕ Купăс Çинахванĕ. – Тухăç енчен анăçалла качча кайнă хĕр хăйсен йăхне малалла тăсайман тени чăвашăн мĕн авалтанах халăх чĕлхинче тăварланса юлнă çав. Çĕрпелсем те çав йăлана çирĕп тытнă.

– Униче те, чикĕ те çуккă халь ик ял хушшинче, йăлтах пĕрлешсе-арпашса пĕтнĕ халăхĕ. Тĕрĕссипе – çынсен хутшăнăвĕнче çуккă унашкал чикĕ тени. Пĕр уйрăмлăх пур вара. Çав шкул çăл куçĕн сипечĕ çĕрпелсене пирĕн ялсенчен çÿлерех çĕкленĕ – интеллект, ăс-хакăл, ăс-тăн енĕпе. Курăр-ха вĕсен çу кунĕсенче мĕн чухлĕ утать ял тăрăх интеллигент? Пĕтĕм çĕршыв интеллигенчĕ тейĕн: яла курма-канма килни те, ялта ĕçлекенни те. А пирĕн?

– Пирĕн-и? – кулса ячĕ Çинахван. – Пирĕн – ÿсĕр çын.

– Хамăр ялсене хурлас килмест те, анчах тĕп-тĕрĕс каларăр кăна, Çинахван пичи. Нумай вĕреннĕ çын пурпĕрех тăн тытать. Шутласан, эпир çапах та вĕсенчен вĕренÿ енĕпе хальлĕхе каярах-ха. Çавăнпа кăçалхи финишра та, пурнăç финишĕнче, тем те пулса тухма пултарать. Çапах та... пуçа усмастпăр. Пирĕншĕн те пур уçă сывлăш. Кÿршĕпе кÿршĕ алă тытсах пурăнăпăр-ха. Вĕренесси вара... Юлашки вăхăтра пирĕн ял та самай туртăнчĕ пĕлÿ енне. Юнашар нумай çул хушши çак Çĕр çинче ÿсекен икĕ ял халăхĕ, пĕтĕмĕшле илсен, пĕр-пĕринчен нихçан та нимпех те уйрăм пулман. Çĕрпелте те, Хурăнсурта та мĕн тери ăслă-тăнлă çынсем пурăннă.

Ĕлĕкех. Хамăр астăваканнисемех. Саманан чухăнлăхĕ, танмарлăх политики ӳссе аталанма паман çак çĕр çине шăтнă ăс-хакăл калчине. Çĕрпелти пек çăл куç тапса тăнă пулсан-и хăй вăхăтĕнче, эпир те вĕсенчен тăрса юлмастăмăрччĕ ку енĕпе. Çапах та... çитмеллех пирĕн вĕсене, иртсе каймалла вĕсенчен. Çавăншăн тăрăшасчĕ, вăй хурасчĕ.

– Мана çапах та такама пуç çапассинчен хамăр несĕлсен пуçĕсене пуç çапни аванрах пек туйăнать, – тесе уйрăлчĕ унран Купăс Çинахванĕ. – Чуралăхран хăтăлни эпир Спартак пек кĕрешниех тесе шутлатăп.

Ĕне пăхасси йышпа ĕçлени майлах иккен. Касура та питĕ тимлĕ пулмалла. Те ачисем асăрхаймарĕç, те хăй юмах çапса тăчĕ, пĕр ĕни клевер анине тапăннă, кӳпĕнсе кайрĕ. Хĕветĕр аптрасах ӳкмерĕ, чухлакан арăмĕ сумкăна хурса панă аптăрипе ĕнен хырăмне чиксе шалти усал сывлăша кăларчĕ, пĕр ачине ветеринар патне чуптарчĕ. Çăлса хăварчĕç ĕнене.

Ĕçленĕ хушăрах çын эртелĕнче те вăрттăн тем хыпсаçăтма май тупаканни пур, выльăхра та ушкăнран уйрăлса савăнас текенни тупăнать. Сăнасах тăмалла иккен.

Ĕнесем тапăра выртрĕç, хырăма тултарнă курăка канлĕн кавлесе киленеççĕ. Хĕветĕрĕн ывăлĕсем пĕвере шампăлтатаççĕ. Çимĕкчен çиччĕ шыва кĕмелле тенине Хĕветĕр те пĕчĕккĕ чухнех хăлхана чикнĕччĕ. Кӳршĕ ачисемпе шыв ăшăнса çитнĕ-çитмен хăйсен хыçĕнчи Çĕн пĕвере кăвакал пек ишнĕ. Шутламан миçе кĕнине. Кунне те çиччĕ кĕнĕ пуль.

Тапăрта сĕрме купăс калакан Купăс Çинахванĕ хăйĕн юратнă юрă кĕввине çут çанталăк анлăшне салатать. Хĕветĕр месерле выртрĕ те каллех тӳпене сăнарĕ, анчах халĕ унта Караваев художник чун-чĕрипе те, куçĕпе те хăйне ыталакан Венера-агронома, хăйсем патне васкаса çывхаракан Шăпчăк-Юратăвне курмарĕ. Пурнăçăн пĕр савăк саманчĕ иртнĕ, сăнарлăх тӳпи тасалнă. Янкăр уçă. Çĕрле сахал çывăрнипех пуль, куç хупăнсах ларать,

кӗлеткене ыйхӑ ҫавӑрса илет. Хӑлхана темле сасӑ кӗрсе каять, вӑл вӑйланса, хӑвватланса пырать. Хура пусӑпа урапаллӑ пӗчӗк трактор ҫывхарать пек. Ҫаврака рульне амӑшӗ тытнӑ-ҫке!

– Тӑр! Мӗн ҫывӑрса выртан, тыт пушшуна! – мотор сассине ҫӗнтересле илтӗнет паллантӑ сасӑ. – Сире... кахаллантарам!..

Хӗветӗр чалтах сиксе тӑрать те амӑшне сывлӑх сунать, амӑшӗ хушнипе плуг ҫине хӑпарса ларать. «Фордзон-путиловец», пӗлӗте хура тӗтӗмпе хупласа, хуллен ҫӗр тӑрӑх мӗшӗлтетет.

– Касса ан пӑс, тарӑнрах яр! – пуҫне ҫавӑрса асӑрхаттарать трактористка.

Амӑшӗн сӑмахне тӗплӗ итлеме хӑнӑхнӑ ывӑлӗ рычака пӗтӗм вӑйпа ҫатӑрласа тытать, шухӑшласа илет: «Мӗнле ӗҫлеҫҫӗ ӑсталаса ҫитерейме йывӑр техникӑпа ку хӗрсем-хӗрарӑмсем! Хӗрарӑм ӗҫӗ тӑвас чухне арҫын ӗҫӗпе кутӗрленеҫҫӗ». Амӑшӗн тракторӗ ҫинчи хӗрлӗ хӑмача асӑрхать те вӑл тинех ӑнланать. Унта «Йӑлтах – фронт валли!» тесе ҫырнӑ шурӑ сӑрӑпа. Амӑшӗн ачипе калаҫма та вӑхӑт ҫук, кунӗпе, ҫӗрӗпе кӗрлеттерет трактора, ир енне тин ӑна хирӗҫ Ҫӗрпел хӗрарӑмӗ Шлюпка Антуни тухать.

– Ултутти, Хурҫӑ ут Ултутти, – йӑлӑнсах ыйтать вӑл. – Тархасшӑн пулӑш. Ҫунап. Ҫулӑмсӑрах. Паян-ыран акса хӑвармасан ҫак тулла... Ҫакаҫ мана.

– Чикӗ урлӑ каҫма юрамасть-ҫке, – кулянса калаҫать Куҫма Ултуттийӗ. – Мана бригадир хамӑр ял уйне ҫеҫ акалама хушнӑ. Кӗҫех сирӗн колхоз ҫӗрӗ ҫине те куҫатпӑр. Пӗтӗм трактор бригадипех.

Шлюпка Антунийӗ, вӑрҫа кайнӑ упӑшки вырӑнне Ҫӗрпел колхозӗн пуҫлӑхне юлнӑскер, хӗрсех тархаслать:

– Эс кан, талӑк куҫ хупманскер, руль умӗнчех ҫывӑрса кайӑн. Пулнӑ ман хамӑн та ун пекки, пар мана тракторна. Ҫӗньял майрине Юкруҫ Харитоновна ӑна, хамӑр бригадир пулнӑскерне, ҫураҫтарап. Пӗрле мазутланнӑскерсем, пӗрле сутлашмӑпӑр-ха. Хӗрарӑмсен трактор бригадипе

эпир пётём Чăваш çĕршывне янратрăмăр вĕт. Ултутти – Хурçă ут Ултутти. Мантăн-им? Хамăр бригадира Аслă Канаш депутатне суйларăмăр. Чиккў-качку. Мĕн чикки пулмалла пирĕн Хурăнсурпа Çĕрпел хушшинче? Ывлăм, плугне ан та хăпарт! Кастар çеремне!

Хĕветĕрĕн итлемеллех пулчĕ. Амăшĕ ырăнне ларнă Шлюпка Антунийĕ трактора кĕрлеттерсе хăйсен ял çĕрĕ çинеллех тытрĕ, икĕ ял чиккине алса хăварчĕ.

Анаймарĕ Чана Кĕркурийĕпе Хурçă ут Ултуттийĕн ывăлĕ плуг çинчен, Антуни инкĕшĕпе Çĕрпел çĕрне сухаларĕ. Чана йăх-несĕлĕпе тулли Çĕрпел ăна темшĕн хăй ытамĕнчен ярасшăн мар. Хуçа та тăвать, илĕртет те... Анчах Хĕветĕр ют ялти хăйсен Чана йăвине йышăнмасть, Хурăнсурти Чана Кĕркурийĕн килнеллех туртăнать. Ана пуçĕнче ашшĕ тур ăйăрпа кĕтсе тăрать. Ака туса пĕтернĕ хыççăн Хĕветĕр ашшĕ умне утланса ларать те хурăнсуралла çил пек ĕрĕхет. Акă вăл... пĕрре плуг çинче пек, тепре ăйăр çинче пек... Амăшĕ те, ашшĕ те куç умĕнчен çухалаççĕ... Хĕвел ури пуснипе вăл ăрансa каять. Умĕнче ывăлĕ ăна кăкăрĕнчен пушă аврипе пусса тăрать:

– Тăр, атте? Аслати авăтать.

Сиксе тăрать те ашшĕ ăна ыталать:

– Ан хăра. Çапмасть вăл. Хам пур чухне хăюллă пул. Атя, чуп çырма леш енне, леш, каскăнни, каллех тырра тапăнать. Çаптар пушшупа.

Чăваш çĕрĕн кăвапи пулнăран-ши, вĕсен ялĕнче çумăр йăпăр-япăрах шапăртатмасть. Тавралла çуса иртсен тин ырлăх парса хăварать. Ытларах Кăмаш енчен, Кўлхĕрри кўлли сывлăшĕпе килни, усăллă. Туçи е Ачча енчен капланни Хурăнсур çĕрне шўтермест. Акă халĕ те çăра-хура пĕлĕт явлăмĕ Çĕрпел çийĕн ташлать.

Ачисем çине пăхать те Хĕветĕр, тĕлĕнет. Урăх пурнăçра халĕ вĕсем. Çимĕк те, Петрав та чунне систермеççĕ вĕсенне. Вĕсемшĕн кĕнеке, телевизор, магнитофон, килти ĕç пултăр. Ăçталла пăрса яма пулать вĕсен ăс-хакăл урапине – çавăнталла ярăнаççĕ. Ăçталла

ярăпăр-ши тулĕк? Эпир ӳснĕ вăхăтра урăхларах, йĕркеллĕрех тытăм, компартипе патшалăх идеологийĕ пулнă, сулнăка çаптарса хăварман. Çирĕплĕх кăшăлланă. Ытлашшипех те. Пур енĕпе те чикĕрен ирттермен. Хăйне май çимĕкне те хутшăнтарнă, Петравра та юрлаттарнă-ташлаттарнă, çапах юнасах тăнă: йĕркеллĕ пул!

Паян Çимĕк тума куккăш-аккăш патне ют яла пĕр çын та тухса утакан пулмарĕ. Ют ялтан качча килнисен ашшĕ-амăшĕн тăпри çине асăнма каймалла-çке. Ĕлĕк-авал Çимĕк сăрине хурăнташпа пухăнса ĕçнĕ. Ача чухне вĕсене тăванĕсем патне хăнана илсе çӳретчĕç. Халĕ хăна-тăван, пĕлĕш-арăш пĕр-пĕринпе хутшăнмасть, ял çулĕсем сысна курăкĕпе хупланчĕç е вĕсене пуçĕпех сухаласа пăрахнă. Хурăнташлăх хурăн хуппи пек мăкăрланса çунса пĕтет. Ĕлĕкхи çывăхлану вырăнне хальхи çăханлану пулма тытăнчĕ. Укçа та, пуянлăх та, хапсăнулăх та чи мала тухса тăчĕ этем умне. Патшалăхра аркану, патша хутлăхĕнче пăтрану пынă вăхăтра кашни пуçлăх пуйса юлма тăрăшать. Патшалăх идеологийĕ çуккă чухне пирĕн ăстăна ют идеологипе улăштарса чикĕ леш еннелле пăхтараççĕ, сулăнтараççĕ.  Хамăрăн Чăваш ăслăлăхĕн çирĕпленнĕ йĕрки те çуккă-çке. Тем тĕрлĕ юхăмсем, партисем туса пĕтерсе пурте пуç пуласшăн сĕмпĕлтетеççĕ. Çав вăхăтрах чăваш халăхне чăннипе тĕрĕс çулпа шанчăклăн ертсе пымалли наци идеологийĕ çук. Çавăнпа çамрăксем темле çул та суйласа илме пултараççĕ.

3

Çимĕкре çывăрсан çылăх пулать тенине аса илнĕ Хĕветĕр Кузьмин  ачисенчен вăтанса кайрĕ. Çинахван пиччĕшĕ те, асăрхарĕ пулсан, тĕлĕнчĕ ĕнтĕ. Купăс сасси хăлхаран каймасть-ха. Кĕвĕ унăн çамрăклăх уйĕнче чĕрине ытамласа чунне вĕрилентерет, чĕлхене  кăтăклантарса юрра хывăнать:

Улăхри чечексем хушшинче
Савнине эп шырарăм каçчен.
Пин тĕспе алчăрарĕ те куç,
Минресе аптăрарĕ ман пуç.

Ирпеле тин хӑмла пахчинче
Хӗвел кулчӗ савни куҫӗнче.
Инҫетри ҫӑлтӑрсем хушшинче
Савнине эп шырарӑм ирччен.
Йӑлтӑркка тӳпере пурпӗрех
Паллаймарӑм ҫухалнӑ хӗре.
Урамра вӑл вӑййа тухсанах
Ташша чӗнчӗ мана, курсанах.
Ют ҫӗрти пикесем хушшинче
Савнине эп шырарӑм ҫурччен.
Чечекленчӗ, вӑранчӗ тӗнче,
Ҫав-ҫавах эп унта тӑр пӗччен.
Ял хӗрне ытамра чуп тусан,
Тӑна кӗтӗм тинех, авлансан.

Купӑс Ҫинахванӗ те яшлӑха аса илет пулас, купӑсӗ тунсӑх ҫеммипе текерлӗксене хӑй ҫумнерех туртать. Уйҫырма кайӑкӗсем мӑшӑррӑн пӗр вӗҫеҫҫӗ те пӗр макӑраҫҫӗ ун таврашӗнче. Хӗветӗрпе Зинӑнни пекех Ҫинахвансен те, ашшӗпе амӑшӗн те, асаттесемпе асаннесен те тата маларахри несӗлсен те, пурин те пулнах ӗнтӗ юрату. Ҫав асамлӑх ҫимӗҫӗ шӑтнӑ, ӳснӗ, хӑрнӑ, пӗтнӗ, ҫав хушӑрах ҫӗнӗ хунав ҫӗкленнӗ. Авӑ, Хӗветӗрсен ывӑлӗсем те куҫ умӗнчех тӗрекленеҫҫӗ. Асли, акӑ, каскӑн ӗнене клевер ҫинчен хӳтерсе ячӗ, ашшӗ патне пычӗ.

– Аннепе касӑва кайсан та Яка Якурсен ӗнине хӑваласах тӑн тухать. Кур-ха Иххан мучисен ӗнине, вырӑнтан тапранмасть. Мӗшӗрттерет кӑна курӑка, – терӗ.

Астуса юлчӗ халь Хӗветӗр те ҫак каскӑна. Уничерен тухсанах анкарти картинчен мӑйракине ҫаклатса лартнӑччӗ ирпе, кутран пушӑ вӗҫӗ те лекнӗччӗ ӑна касу уттине пӑснӑшӑн. Ҫерем лаптӑкӗнче те ун хыҫҫӑн лӗпӗстетрӗҫ виҫҫӗшӗ те. «Пӗр тӗслӗ пулсан та уйра паллаштараҫҫӗ вӗсем», – тесе арӑмӗ вӑлтса калани тӗрӗсех пулчӗ.

«Килне кура кин, тенӗ пек хуҫине кура выльӑхӗ теме те юрать», – тесе шухӑшларӗ аслӑ касуҫӑ икӗ ӗнене

танлаштарса пăхнă май. Иххан мучипе Яка Якур ашшĕне ăшĕнче юнашар тăратса пăхрĕ вăл. Тимĕрçĕ лаççинче ĕмĕрне кăххăмлатса ирттернĕ Иххан мучине астумасть пулин те Хĕветĕр, халăхра юлнă ырă сăмах тăрăх унăн сăнне чĕрĕ çын пекех курать. Акă вăл пĕве хĕрринчи вĕри лаççинче сунтал умĕнче вăшталанать. Хĕскĕчпе хĕстернĕ шап-шуррăн курăнакан тимĕр татăккине ывăлĕ, Кĕркури, мăн мăлатукпа кӳпкет. Тимĕр, сивĕннĕ май, тĕсне улăштарса пырать. Ашшĕ пĕчĕк мăлатукпа чăнк-чăнк, чăн-чăн тутарса кĕвĕ кăларать, ăçта çапмаллине кăтартать, тимĕрне çавăрса тăрать, унтан, тĕксĕмленерех панăскерне, вăлашкари шыва чăшлаттарса шăварать, каллех вучаха, кăмрăк ăшне чикет. Кĕркури вĕркĕчне хашлаттарать. Урапа хатĕр-хĕтĕрĕ, плуг-сӳре, лаша таканĕ, пăта таран Иххан мучин ылтăн алли витĕр тухнă. Тимĕр-тăмăр япали лавккаран питĕ сахал, сайра-хутра çеç туянкаланă вăл нуша вăхăтсенче. Ачи-пăчи те тимĕрç лаççи хĕрĕвĕнче-тĕтĕмĕнче пиçсе ӳснĕ унăн, çавăнпа хурçă пек çирĕп пулнă. Шоферта ĕçленĕ Кĕркурине лайăх пĕлет. Сив кабинăра шăнса çӳресе чирлесе кайни пĕтерчĕ ăна.

Кĕркурин ашшĕ Иххан мучи Хурăнсурăн хĕрлĕ кĕнекинче пулсан, Якур ашшĕ Яка – хура кĕнекере. Таркăнра та вăрă-хурахра çӳренĕскерне халĕ ялта ваттисем çеç пĕлеççĕ.

Хăй ертсе пыракан колхоз театрĕнче Кузьмин Николай Максимовăн «Синкер» романĕ тăрăх пьеса çырса спектакль лартнăччĕ. Класс кĕрешĕвĕ çивĕчленнĕ тапхăрта ку таврара ашкăннă кӳршĕ Утар ялĕнчи Калюк вăрă-хурахĕсен сăнарĕнче уççăн курать вăл Якур ашшĕне. Яка Хурăнсурти чылай çынна йĕртнине пĕлет. Ваттисем калатчĕç вăл ертсе килсе кама-кама çараттарнине, камăн-камăн кил-çуртне хыптарса çунтарттарнине, Çавăнпах ятне те асăнасшăн мар пулас унăнне. Яка тенĕ те, халĕ те Яка теççĕ. Ачине те Яка Якурĕ теççĕ. Ятсăр пулман-ха вăл – Якийĕ. Этем вĕт, тискер кайăк мар. Парамун тесе çырнă ăна чиркӳре шыва кĕртнĕ хыççăн. Унăн ывăлĕ Егор

Парамонов пурӑнать халӗ хурах ашшӗ килӗнче. Яка Якурӗ мар, Хурах Якурӗ тесен ӑна йӑнӑш пулас ҫук. Тӗрӗссипе, ик хушаматне те тивӗҫлӗ. Парамунӗ йыт пулли пек алла кӗмен, ывӑлӗ те чисти йыт пуллиех. Парамунӗ вӑрӑпа палӑрнӑ, ачи те унран юлман. Хурахран хурахах ӳссе ҫитӗннӗ. Ял кашкӑрӗ. Мӗн кӑна туман пулӗ вӑл, анчах пур ҫӗртен те типӗ тухнӑ, пӗрре те тӗрмене ларса курман. Хӑй вырӑнне ытти ҫумҫаккине ларттарнине лайӑх пӗлеҫҫӗ ҫынсем.

Акӑ вӑл тимӗрҫӗпе хурах сӑнарӗ, Тимӗрҫ Кӗркурисен ӗнипе Хурах Якурӗсен ӗнийӗн хӑтланӑвӗ. Ҫисе тӑранчӗ пулас та Кӗркурисен ӗни, тайкаланса илсе меллӗн выртрӗ, кавлеме пуҫларӗ. Якурсен каскӑнӗ каллех ҫырма хӗррине чупса хӑпарчӗ, калчана ҫӑвар тулли ҫавӑрса хыпрӗ-хыпрех. Хӗветӗр ӑна тарӑхсах пушшипе чашлаттарчӗ, анчах пушӑ вӗҫӗ сывлӑшра ҫеҫ хуҫланса шартлатрӗ, выльӑха лекеймерӗ. Йӗрӗ ӗне сиккипе анаталла анса кайрӗ.

Ҫак каскӑн ӗне вара ӑна хӑйсен хурлӑхне аса илтерчӗ.

Усравра ӳснӗ Чана Кӗркурийӗ те утнӑ ҫӗртех тӗлӗрсе ҫӳрекен ҫын пулман. Нуша ҫатми ҫинче пӑрҫа пек сиккелесе ташлама та, пӗр татӑк ҫӑкӑршӑн юратӑвне ӑшӗнче ҫунтарма та, колхоз лашисене пӑхса чунне кантарма та тивнӗ йӗрӗ йӗкӗтӗн. Вӑрҫа кайса аманса килнӗ хыҫҫӑн, кӑмӑл-туйӑмне хытарса ҫирӗплетнӗ каччӑ чиперкке те хӗрӳ чунлӑ Хурҫӑ ут Ултуттипе пурнӑҫ ҫулӗ ҫине ытакланса тухнӑ. Ултутти хурҫӑ утне пӑрахмасӑрах йӗрӗ утне юратса пӑрахнӑ. Ҫапла вӗсен ача хыҫҫӑн ача ҫуралнӑ. Пӗррехинче пӳрне хуҫлатса пӑхаҫҫӗ те, иккӗшӗн хул хушшинче шӑпах икӗ алӑри пӳрне чухлӗ чӗпӗ. Мӗнле пӑхмалла, мӗнле тӑрантармалла, ҫын тумалла вӗсене? Ҫемье пуҫӗсен шухӑшӗ те ҫакӑ ҫеҫ. Пӗчӗк пӳрт пыл хурт вӗлли пек сӗрлет.

Хӑй мӗнле тамӑк хуранӗнче вӗренине аса илчӗ те Хӗветӗр ҫак анлӑ Турхай улӑхӗнче, куҫӗнчен унӑн вӗри куҫҫуль пӑчӑртанса тухрӗ.

– Атте, ма макран эс? – ашшӗн куҫӗнчен тӗлӗнсе пăхрӗ кӗҫӗн шӗвӗркки. – Аслати ҫапмасть терӗн-ҫке. Хăрамастпăр, виҫҫӗн вӗт эпӗр. Ҫумăр тарчӗ. Ха, асамат кӗперӗ! Сӗрме купăс калакан мучи ҫумӗнченех шыв ӗҫет. Ах, тутлă-ҫке унти ҫăл куҫ шывӗ. Шăла тивет. Купăсне шывпа ӗҫсе ярсан, атте? Юмахра Асамат шапасене те ҫăтать те... Итлеме лайăхчӗ. Музыкăпа ӗнесем те курăк лайăх ҫиеҫҫӗ... Ах, ҫав усал ӗнене... Хас!

Кӳтӗхнӗ чун-чӗрине хытарнă май Хӗветӗр ачине нимӗн те калаймарӗ. Ачи каллех ҫав каскăна ҫырма тӗпнелле хӳтерет.

Тутлă апат ҫисе кураймасăрах, этемле путлӗ тумланса ҫӳреймесӗрех пурăнчӗ йышлă ҫемье. Ашшӗпе амăшӗ ачисем ҫине пăхса савăнатчӗҫ, ачисем ашшӗ-амăшне юратса ыталатчӗҫ. Аслăраххисем пӗлӳ илме хулана тухса кайрӗҫ. Хӗветӗр те яла агроном пулса таврăнчӗ. Пит хӗрӳллӗн ӗҫе пикенчӗ. Вăй-хал ҫителӗклӗ, пӗлӳ пур, ăсталăх ҫеҫ ҫук. Бригадиртан колхоз председательне ҫитрӗ.

Пӗр хӗл ашшӗ хăнана кайнăччӗ. Ялах. Хăйсенчен инҫех те мар. Ирпе унăн виллине юр ăшӗнче тупаҫҫӗ. Ăна-кăна пӗлмен ҫав Кузьмин. Пӗлнӗ пулсан-и? Тӗплӗнрех тӗрӗслеттеретчӗ пуль вилӗм сăлтавне.

Пытарма Яка Якурӗ те пынăччӗ: те ахальтен ырă пулам пекки туса, те ӗҫкӗшӗн.

– Аҫу пустуйранах чӗрре кӗме юрататчӗ ҫав, ытла кăраччӗ, – тесе Хӗветӗртен куҫне тартрӗ Парамун ывăлӗ. – Ҫамрăксем ытла усалланса кайрӗҫ. Тем те курасси пулӗ, турă ҫырлахтăрах.

Ӗҫкӗре Яка Якурӗ те пӗрлех пулнă, ӗҫкӗрен ҫамрăксемпе пӗрле Чана Кӗркурипе ытаклансах тухса кайнă тени Хӗветӗр хăлхине те пырса кӗчӗ. Анчах, сăмах – юмах ҫеҫ.

Кузьмин мăн колхоз председателӗнче ӗҫленӗ чухне Якур правление пычӗ. Пӳлӗм хуҫи Парамонова хăйпе хирӗҫ лартрӗ те мӗн сăлтавпа килтӗр, сывлăху мӗнлерех

тесе ыйтрĕ. Якур хальхинче те ăна куçран пăхаймасть. Федор Григорьевич тем чул унăн куçĕпе тĕл пуласшăн, анчах лешĕ е аялалла тинкерет, е чӳречерен сăнанă пек туса пуçне аяккалла пăрать. Çавăнтанах сисрĕ Кузьмин хăй умĕнче кам ларнине, Çын шухăш-туйăмне ăнланма, унăн ăшри вăрттăнлăхне туйма пултарать-ха Хĕветĕр. Вăйлă психолог пулмасан – вăйлă пуçлăх та пулаймастăн. Ашшĕне аса илнипе унăн çак çын çине арăсланла сиксе ӳксе ăна тăрмаласа тăкас, тăнран кайиччен çапа-çапа ӳкерес, юлашкинчен таптаса вĕлерес килсе кайрĕ. Юн вĕриленнипе пит пĕçерме пуçларĕ, чĕре таппи вăйланчĕ, мускулсем хытрĕç, шăлсем пĕрлешсе ларчĕç...

Яка Якур пит сисĕмлĕ иккен, йăх-йăх кулкаласа ура çине тăчĕ, хăяккăн çаврăнса майлашăнчĕ те, а ну-ка, çапса пăх-ха, кайран мĕн курăн, тенĕ пекех тепре йăхлатрĕ, унтан чее куçне майĕпен куçарса ыйтрĕ:

– Пӳрт тумалла та, Федор Григорьевич... мĕнле, йывăç тупма пулмасть-ши?

Çиллине шăнарса хаш! сывласа янă хыççăн колхоз хуçи лăпкăн хуравларĕ:

– Тупма пулать пуль, Якур пичче.

– Хăвăнне хăçан тăвас тен тата? – кăсăкланчĕ Парамонов.

– Илле мучи пӳрчĕ йăтăнса аниччен пурнăпăр-ха. Маншăн ма кулянатăр?

Парамонов пукана куçарса хыçĕ çине аллисемпе сĕвенчĕ:

– Хуçана мунчара пурăнни килĕшмест. Хуçан – хуçаллах пурăнмалла. Мĕн пирĕн, Йĕплĕ Иллесемпе иксĕмĕрĕн, пурăнни-качки. Мунчаран тухаймарăмăр. Илле пичче те ĕмĕрне юмах çапса ирттерчĕ. Тавай, тавай, савăнтарăр-ха ăна пĕрре хăй пӳрчĕ вырăнне ялта çук кермен каплантарса. Леш тĕнчерен курма килсен, каяс та килмĕ вара. Эсир хăвăр та килте ку таранччен чаплă çурт лартаймарăр çав. Кĕркури пиччен хал çитеймерĕ. Йышлăн пултăр та...

– Йыш вăл – вăй! Вуннăн авăн çапма та çăмăл.

Пĕччен юлсан Хĕветĕр Кузьмин тарласа кайрĕ. Пĕтĕм шăрт çиеле тухрĕ. «Юрать чăтрăм. Чикĕрен иртмерĕм», – çапах чăтаймасăр сĕтеле чышкипе вăйлах çапса илчĕ те вăл кĕçех Шупашкара тухса кайрĕ. Хресченсен Канашĕ пухăнмаллаччĕ. Унта вĕсен кашнинчех – питĕ çивĕч ыйту. Тавлашаççĕ, йышăнусем кăлараççĕ, сăнӳсем... анчах ял хуçалăхĕ пĕр утăм та малалла каяймасть. Мускав, Шупашкар хушнă тăрăх пĕрмай пуш арман чуль çавăрттараççĕ. Çăнăхĕ юхмасть. Ял вара мĕнле чухăн пулнă – çаплах юлнă. Хресченшĕн, ял çыннин паянхи, ыранхи пурнăçĕшĕн çунакан сахал. Мĕншĕн тесен вĕсем, кăтарту паракансем, хресчен чунне ăнланмаççĕ. Уншăн кĕрешмеллине пĕлмеççĕ. Ял çынни хăй мĕн туса илнине аран-аран вырнаçтарни тата тислĕкрен йӳнĕрех хакпа кăна сутма пултарнин сăлтавĕ питĕ тарăхтарнă. Промышленность таварĕ, техника хакĕ пин хут ӳснĕ çĕртех тырă, çĕр улми, аш-какай, сĕт хакĕ çĕр хут та ӳсмест. Хресчен çулталăк кутĕрленни Шупашкар хупахĕнче пĕр хут йĕркеллĕ апатланмалăх çеç. Раççей правительстви çĕр çинче нимĕн шăтмасан та хăнк та тумасть пулас. Тĕрĕсех. Тинĕс леш енче пур-çке. Хамăр çĕршывра хăмла, çĕр улми пур çинчех ăна ют патшалăхран питĕ хаклă хакпа - ылтăнпа туянса тултарнă. Чикĕ леш енчен илнĕ тавара йӳнетсе сутма тавар хуçисене патшалăх ятарласа укçа парать. Мăшкăл мар-и çакă? Ку вара хăйсен кĕсйисене хулăнлатмалли, пуймалли йĕрке. Вăхăтра пуйса юлаççĕ те, халăхăн тирне виçĕ хут сӳсе, хăйсем ылтăн купи тăрне хăпарса лараççĕ.

Никамран та нимле пулăшу кĕтсе илме май çуккине пула Хĕветĕр Кузьмин ялта хăй пĕлнĕ пек ĕçлеттерме пуçлать хресчене. Кашнине мĕн чухлĕ, мĕн ĕç тумаллине палăртать, çавна пурнăçлама правлени кашнинпе килĕшӳ тăвать. Сухан, хăмла, кăшман, çĕр улми, купăста, кишĕр ытларах акать-лартать, çав лаптăксенче ял çемйи-çемйипе уйрăммăн ĕçлет. Мĕн чухлĕ туса илнĕ – çавăн

чухлĕ укçа илнĕ.

Ял çынни ĕлĕк-авалтан мĕнле ăсталăхпа тăранса пурăннă-ха? Çав ăсталăх халĕ те пĕтмен-çке, ăруран-ăрăва куçса пырать. Алă ăстине аталантармалла! Хăйсен кÿршисемех мĕн тери пултаруллă çынсем унăн. Улатимĕр пиччĕшĕ тир тăвать, Миллян Куçки – катка-пичке, Кури Павăлĕ вĕрен явать, Михала пиччĕшĕ – никам çитейми столяр, Эверкки Стеклов çăм атă йăвалать, ытти ăсталăхпа тĕлĕнтерекенсем мĕн чухлĕн... Вĕсен ĕçне пĕрлештерсе йĕркелени, вĕсен продукцине сутса укçа туни хуçалăха усă памалла-çке. Çак кăткăс ыйту ун ĕнси çине тиенчĕ.

Хăй ăçта улăхса çитнине ăнланса çитеймен курпун патша, çÿлтен аялалла пăхнипе сехĕрленсе ÿкнĕскер, пĕррехинче пĕтĕм çĕршыва телевизорпа çапла пĕлтерчĕ: малашне кам мĕнле пурăнма пултарать – çапла пурăнать. Хăйне вара, арăмĕпе, Райка упăтипе пĕрлех, хура ют çăхансем çунат çине лартса кайрĕç. Пуççăр юлнă çĕршыв арканчĕ. Чăрăш лăсси айĕнче тинĕс леш енчен вĕççе килнĕ Сэм мучисем ташлама пуçларĕç, сысна пуçĕсемпе хура мордăсене Санта Клаус ылтăнланă хутаç тыттарса Раççей пурлăхне çаратса кайрĕ. Куç умĕнчех. Ухмах халăха вырăс патшипе пĕрле утюкка сиктерсех.

Вуншар çул çирĕпленсе хăватланнă йĕрке, тĕпĕ çĕрнĕ тырă миххи пек, йăшăлл юхса анчĕ. Пуçĕнче пушă çыхă çеç тăрса юлчĕ. Аркану пĕрчи Хĕветĕр Кузьмин ертсе пыракан çич çĕр киллĕ колхоз виткĕçне та килсе çапăнчĕ, халăх пуçне минретсе ячĕ. Ирĕклĕхе тухнă Купăс Çинахванĕсем те куçа чалтăрах уçрĕç. малтанах колхозăн «тĕп хулипе» йăлăхса çитнĕ Хурăнсур хăй тĕллĕн ĕçлесе пурăнма карах тăчĕ. Халăха хирĕç каяймастăн. Халăх пăтраннă вăхăтра пуçлăхăн чи ăслă та чи усăллă йĕр çине ÿкмелле. Хĕветĕр нумай шухăшларĕ, çĕр çывăрмасăр нушаланчĕ, такампа та канашларĕ, вара ăшри чи юрăхлă та чи малашлăхлă ут çине улăхрĕ, хăй хыççăн ял халăхне ертсе кайрĕ – тăван яла, ĕлĕкхи Чапаев ячĕллĕ

хуçалăха. Халăх ăна ĕненчĕ, шанчĕ – хăйĕн тилхепине алла тыттарчĕ.

Уйрăласси çăмăл та, уйрăлнине хутпа-пичетпе çирĕплетесси çав тери йывăр.

Малтан çемьеллĕ пулнă арçынпа хĕрарăм пĕрлешсе пурăннă хыççăн уйрăлма тытăнсан мĕн тĕрлĕ ыйту сиксе тухмасть пуль. Икĕ мăн хуçалăх хĕрĕх пилĕк çултан уйрăлнă чухне тата мĕн кăна пулса иртмерĕ-ши? Хуçалăхсем пĕрлешнĕ çул Хĕветĕр çуралман та вĕт. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхра ӳссе çитĕннĕ, ĕçленĕ, çавнах юлашкинчен хăй ертсе пынă. Çĕрпелсенчен те аван мар пек. Ăна вĕсем та шаннă-çке хăйсен пуçлăхĕ пулма. Уйрăлас умĕнхи çул кăна Хĕветĕр Кузьмин Çĕрпел витĕр çухрăм ытла асфальт сарнă çул туса пĕтерчĕ. Ун хыççăн тин Хурăнсур витĕр сармаллаччĕ асфальт. Тăванлăх-хурăнташлăх чирĕ ерменччĕ çав ăна. Халĕ хăйсен ялĕсем Хĕветĕре уншăн «ухмах пулнă эс, хамăршăн чи малтан тăрăшман» тесе ӳпкелешеççĕ те, мĕн тăвăн, чăтма тивет. Чĕре, совеç чиккинчен иртмен вăл. Ĕçе йĕркипе туса пыма тăрăшнă.

Ял чиккине вара... юсамаллах пулчĕ. Куншăн вăл çинех тăчĕ. Аллăмĕш çулта Çĕрпелпе Хурăнсур пĕрлешнĕ хыççăн пусă çаврăнăшне çĕнетнĕ, пысăклатнă. Ял чиккисем пĕтнĕ, уй чиккисем çуралнă. Тĕрлĕрен çурт-йĕр лартнă. Çур ĕмĕр енне ним хуйхăсăр ĕçлесе çĕнелсе пынă-çке виçĕ ял халăхĕ – пĕр колхоз çыннисем. Харпăрлăха, пуянлăха, техникăна пайлакаларĕç. Ялсен çĕр чикки патне çитсен вара... Айкашу та, тытăçу та, тем те пулса иртрĕ. Çапла вăл çĕр, ĕмĕр-ĕмĕр этеме хирĕçтернĕ, çапăçтарнă. Чи малтан эп пуснă пушмакпа çак çĕр çине тесе ĕнентерме хăтланни тĕнчере сахал пулнă-и? Чышкăпа мар, хĕç-пăшалпа, вăрçăпа. Ĕлĕкхи карттăсене, хут-хĕтĕре пăтратма тиврĕ. Çапах та тĕрĕсех пайланса уйрăлса кайрĕç пулмалла вĕсем. Çĕр пирки халь калаçу çук, темелле. Çĕрĕ кашни хресчен хуçалăхнех çитет. Пĕр гектар унчченхи вăтăр сотка мар. Ĕçлеме, тар тăкма çеç

ан ӳркен. Çуррине, килĕшнĕ май, пĕрлешӳллĕ хуçалăх пурне те хăй вăйĕпе ĕçлесе парать. Кĕркунне тыррипуллине килна турттарса таврăнма çеç ан ман.

Икĕ ял çĕрĕн чикки вара Хĕветĕр Кузьминăн çамкинче те, пит çăмартисенче те темиçе йĕр хăварчĕ, тăнлавсене иртерех кĕмĕллетрĕ.

Чапай мучи калани аса килчĕ: «Ял унечинчен Санар кĕперĕ таран лав куçать Туçинелле. Кашни урапи çинче виçĕ-тăватă вăй питти арçын. Пуш алăпа мар. Туçи тăвайккине паман çапла эпир ют яла. Мишавай ăна хамăртах хăварнă. Хамăр ял пĕрлĕхĕнчех сыхласа хăварнă. Эсир те çавнашкал вăйлă тăрăр. Эпир Чапай гвардийĕ пулнине ан манăр».

Турхайран чылай тухăçарах сарăлса выртакан Туçи тăвайккишĕн, ялăн Вăрнар енчи Хурăнсур вăрманĕшĕн ытларах хирĕçӳ пычĕ çĕрпелсемпе. Вăрманĕ те, тăвайккийĕ те авалтанпах хамăр ял çинче тăнăскер, ниепле те илеймерĕç вĕсене. Ĕлĕкхи пек хĕç-пăшалланса Чапай гвардине çĕклемесĕрех, мирлĕ майпах татса пачĕç ку кăткăс ыйтăва.

Пуçа пăталакан шухăшпа пăтранса утса-чупса çӳренĕ вăхăтра Хĕветĕр улăх леш енне çитрĕ, Купăс Çинахванĕпе юнашар пулчĕ.

– Эсир, Федор Григорьевич, пачăрхи калаçура пирĕн финишра шухăшламалла пулать-ха терĕр. Чăнах та, шухăшламаллах. Ма шухăшламалла мар...

– Тем каласшăнччĕ ĕнтĕ, Çинахван пичи.

– Çав калаçăва малалла тăсасшăн.

– Атя, яра парăр.

Ватă çын кăшт шухăша çавăрса ячĕ пулас та, васкамасăр калама пуçларĕ:

– Пиртен начартарах ĕçлеççĕ вĕсем пурпĕрех. Вĕсен интеллигенцийĕ пире пайтах нушалантарнă. Ялĕнче хура ĕç тăвакан сахаллансах пыратчĕ. Мантăр-и эпир вĕсене мĕн чухлĕ пулăшнине? Мантăр-и вĕсем хуçалăх расчечĕпе ĕçленĕ чухне тырă мĕнле валеçнине? Кашни бригада

мĕнле тухăç илет – кашни колхозник çавăн пек пуять. Меслечĕ тĕрĕсехчĕ. Анчах... Вĕсем пĕр вăхăтра, тислĕке хăйсен уйне кăна турттарса, тыр-пул тухăçне ӳстерсе ячĕç те пире чике тăршшĕ лартса хăварчĕç. Вĕсен ĕне ферми, чăх ферми. Чи тулăхлă тислĕк. Пирĕн – сысна ферми. Хăвăрах пĕлетĕр уйрăмлăхне. Эсир – агроном. – Ӳсĕркелсе илнĕ хыççăн сывлăш çавăрса ячĕ те вăл малалла калаçрĕ: – Ахальтен революци пуçларĕç-и утмăлмĕш çултах пирĕн ялсем? Çавăн пиркиех. Уйрăлас патнех çитнĕччĕ. Кăшăлларĕç пире районтан – юнаса-хăратсах пусарчĕç халăх ирĕклĕхне, ялти «революционерсене».

– Спартаксен шухăшне вăл вăхăтра пусарма çăмăл пулнă çав, – хушса хучĕ ĕнесене урлă-пирлĕ сăнакан Кузьмин. – Хальхи мар.

– Çавăн чухнех уйрăлнă пулсан-и эпир... Халĕ пире çитекенни районта пулас çукчĕ. Эпир çапах та... уйрăлакан ывăл пек халь. Аякка каяр мар, хăвăрах илĕпĕр. Мĕнпе уйрăлса тухрăр аçу килĕнчен?

– Арăма çавăтса, пĕр чăматанпа.

– Тоттă çав. Йăлтах хăвăрăн аллупа тумалла-çавăрмалла пулчĕ хуçалăха, куçран пăхса каларĕ Купăс Çинахванĕ. – Эпир те хамăр эртелпе сирнешкелех уйрăлса тухрăмăр вĕт. Çĕрпелсене районти сельхозтехникăри пек мастерской, гараж, çĕнĕ витесем, чаплă культура керменĕ, администраци çурчĕ, тырă типĕтмелли йĕтем, складсем, çĕр улми упрамаллисем тата тем те пĕр парса хăвартăмăр. Пирĕн вăй, пирĕн тупăш кайман-и унта? Пĕрле тунă-çке вĕсене! Хамăрăн мĕн тумалла пулчĕ?

– Чи малтан – мастерской, гараж, хăма çурмалли.

– Правлени çурчĕ те çук вĕт халĕ пирĕн – фермăри хĕрлĕ кĕтесре хĕртĕнетпĕр. Клубне те ял халăхĕ шăнăçаймасть. Мăн клуба пăсса хăварчĕç.

– Тăватпăр, пурне те тăватпăр. Хамăр алпа. хамăр вăйпа, – аллинчи пушшине шарт! тутарчĕ Хĕветĕр

Кузьмин. – Çын куçĕнчен пăхмастпăр тек...

– Вăт çапла. Çав пуянлăхпа вĕсен пирĕн хыçа юлма та намăс. Вĕреннĕ çынсем пирки вара... пирĕн ялсем те аптрасах каймаççĕ. Ĕлĕкхи пек пĕр çăл куç çеç мар халь ăс-тăна аталантармашкăн. Таçта та пуçа чикеççĕ ачасем. Ăс-хакăл шерпетне ĕçсе ӳсеççĕ.

– Çапла пулмалла та. Малтанах колхоз шучĕпе çĕрпелсем институтсенче хăйсем кăна нумаййăн вĕренсе юлчĕç пулсан, халĕ пирĕн ачасем хамăр шутранах нумаййăн вĕренеççĕ. Тĕкки çеç хамăрăн çирĕп пултăрччĕ.

4

Кахал апачĕ тĕлнелле Ачча енчен каллех çумăр пĕлĕчĕсем явăнса килме пуçларĕç.

– Атте! – илтĕнет çырма хĕрринчен кĕçĕннин сасси. – Аслати çывăрса юлнă пулмалла. Пĕлĕт çине ларса килмест-çке. Пăх-ха, пĕлĕчĕсем йăтăнса анаççĕ... масар йăмринчен çакланчĕç... Атте, хăрамас халь эп Аслати çуккă чухне. Эс те хăрамасни? Эс те макăрмасни урăх?

– Юрать, юрать, хăрамастпăр, ывлăм, – тесе алă сулать Хĕветĕр, хăй çав хушăрах пуçри шухăшне сирсе яраймасăр нушаланать.

Шухăшĕ Чана Кĕркури ачийĕн çакă: «Мĕншĕн паян, Çимĕк кунĕнче, çумăр Кӳлхĕрринчен килмест-ха? Çилĕ ирпе Кăмаш вăрманĕ урлах вĕретчĕ-çке? Кăнтăрлаччен Ачча енчен Аслати килсе ташласа кайрĕ, кахал çынна палăртнă пек пуç тӳпекинче виç пĕрчĕ сапрĕ те, йăлтăрт туса пĕлĕт аркине пуçтарса хĕвеле уçса хăварчĕ. Акă, халĕ те çавăнтанах Канаш енчен канашласа тухрĕç пĕтĕрнекен хура пĕлĕтсем, васкаса çывхарчĕç, Çĕрпел урлă каçса масар тĕлне çитрĕç те... пĕр ырăнта хытса тăчĕç. Пакурпа та туртса илеес çук вĕсене Турхай уйне.

Ял хыçнелле сулăннă хĕвел çуттинче пĕлĕтрен çĕрелле усăннă çумăр ярăмĕсем пир ярăмĕсем пек хитрен курăнаççĕ. Çав ярăмсем тăрăх этем ĕмĕлкисем утса аннă пекех туйăнать пĕлĕт явлăкне тинкернĕ май. Нивушлĕ Ачча масарĕнче пурăнакан несĕл пуçĕсем Çимĕке

килеççĕ? Художник куçĕпе курăнать-ши ку ӳкерчĕк е ăнланма çук ултавлăх пăтраштарать куçа-пуçа? Хупса та пăхать вăл куçне, кăшт вăхăтран уçать те... ĕмĕлкесем пĕрин хыççăн тепри, самантрах сарăннă пир ярăмĕ тăрăх çĕреллех анаççĕ.

Çумăр Тӳрхая анмарĕ. Питĕ кирлĕччĕ. Хура пĕлĕт аркинчен вĕçерĕннĕ Хĕвел çатăрр! пĕçертсе илчĕ те хăй çинелле пăхтарчĕ:

– Ман кут хыçне пăх каçпа, Этем!

Этем, ăна хирĕç пăхса сăх сăхрĕ те, ыйтрĕ:

– Хăçанччен ĕнтетĕн пире?

– Ыранччен-виçминеччен. Кӳлĕ шывне кĕçех пырса силлетĕп.

– Тавтапуçах, Хĕвелĕм, пӳлĕхçĕм. Ял халăхĕ ячĕпе пуç çапатăп.

Хĕвел хура ушкăнран уйрăлса кайнă пĕлĕт катăкĕ хыçне кĕрсе пытанчĕ. Кĕлетке тавра уçă çил вĕçсе çаврăнчĕ. Туçи çулĕпе Чапай мучи тăклаттарса килни курăнчĕ.

– Тем утап паян, пурне те курса çӳрес килет. Ах, вăхăчĕ çитет пулас лерелле каймалли. Çут тĕнчепе сыв пуллашса, çак çĕр сывлăшĕпе сывласа, çынсемпе калаçса юлас теп-ши... – сулахай аллипе сухалĕнчен тытса, сылтăммипе пĕççине тĕренлерĕ ватă çын. – Каллех эп. Йăлăхтармасп-и?

Яваклана вăрăм пушшине аларан-алла куçарса тăракан Хветĕр Кузьмин ăна çурăмĕнчен лăпкарĕ:

– Мĕн калаçатăр çак эсир, Петĕр Çтаппанч. Каккуй йăлăхтарма. Мана хама каçарăр паçăр ирпе сире пĕччен пăрахса хăварнăшăн. Васкаттăмччĕ те...

– Юрĕ-ха. Ĕçлĕ çынсем эсир. Сирĕн васкамалла. Çут çанталăк пана ырлăхпа, сывлăхпа усă курса юлмалла. Яланах пулмасть вăл паянхи кун. Сисместĕн те алла туя тытнине. Çамрăк чух хĕвел анасса кĕтсе ывăнаттăмăр, çитĕнерехпе хĕвел аннине сиссе юлаймастăмăр. Вăхăта малтан сехетпе, кунпа шутлаттăмăр – никак малалла

шумасть. Каярахпа эрнепе, уйăхпа, çулталăкпа шутлама тытăнтăмăр – вĕлтлетсе çеç иртет. Чакса, чакса пырать. Хăйматлăх кĕрӳ патĕнчен таврăнсан кăшт канма тесе тӳнтĕм те шутлама пуçларăм: ара ман умра çутă кун сувсем сахал, шутлă кăна тăрса юлнă иккен. – Темрен хăранă пек вăл Хĕвел çине пăхса илчĕ. – Турă çыннисем этем вăл çут тĕнчене вăхăтлăх хăнана килсе çеç пурăнать, малашлăх пурнăçĕ унăн леш тĕнчере тесе йăпатаççĕ те çав пире, ухмахсене, çапах та тĕп пурнăçĕ этемĕн çакăнтах, çĕрпе пĕлĕт хушшинчех, Хĕвелпе Уйăх айĕнчех, çăлтăрлă калпак айĕнчех, çĕр çинчех. Никамăн та, çĕр хурчĕн, вилес килмест. Эсир ăна, çамрăксем, хальлĕхе ăнлансах пĕтместĕр-ха. Иртерех. Эпир, йӳтенисем, çан-çурăм кашни чикмессерен хăраса ӳкетпĕр: нивушлĕ юлашки хут куратăп çут тĕнчене?!

Кӳршине тăнласа итлекен Хĕветĕре ачисем чăрмантармарĕç, пĕр-пĕринчен ăмăртсах чупрĕç итлемен ĕнесем хыççăн. Хушăран Купăс Çинахванĕ те пушшипе шартлаттарса илкелет. Чапай мучин шухăшĕ каплансах килнĕ пулас, çавăнпа вăл чунне уçмашкăн уя ятарласах тухнă пек туйăнать. Сурчăкне итлекен çине сирпĕтес мар тесе вăл аяккарах пăхса калаçать:

– Вăт тăм пуç, пакăлтатса кайрăм вилĕм çинчен.

– Пурнăçпа вилĕм калаçăвĕ вăл никамшăн та ют пулас çук-ха, Петĕр Çтаппанч. Эп те анчахрах атте-аннене асăнса тăраттăм.

Чапай мучи урисене кантарчĕ пулас, аллисене ирĕклетрĕ, çăмлă харшă айĕнчен çутă çăл куçсем йăлкăшрĕç. Вăл мăйăхне шăлса типĕтрĕ, сухалне якатрĕ, вара тин каларĕ:

– Шел аçуна. Пĕр вăхăталла ӳсрĕмĕр, нушине пĕрле тӳсрĕмĕр. Вăхăтсăр пĕтрĕ. Çавсемех...

– Камсем? Камсем?.. – хыпăнса ӳкрĕ Хĕветĕр.

Хашш! сывларĕ те вăраммăн ватă çын, сылтăм аллине Хĕветĕр хул пуççийĕ çине хучĕ: – Çавсемех. Эс ху та лайăх пĕлетĕн вĕсене. Анчах... Ял

куçлă, вăрман хăлхаллă. Çапах ял та суккăр, вăрман та клуххуй. Хăраççĕ, шарламаççĕ. Никамăн та никам умĕнче усал пулас килмест. Никамăн та милици-суд тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳрес килмест чипер пурăннă çĕртех. Усал ĕçĕн сăлтавне ĕненмелле кăтартса паман пулсан, йăнăш сăмахшăн хăвна айăплаççĕ. Пĕлеп эп. Хам судьяра ĕçлесе курнă. Сирн аçупа пулса иртнĕ пек пĕр усал ĕçшĕн Уравăш çыннине чутах хупаттăмăрччĕ вĕт. Саккун йĕркипех. Ним айăпсăрах.

– Çапла çав пирĕн саккунĕсем те вăрă-хурах майлă.

– Мĕн тăвăн, эпир çырмастпăр, эпир кăлармастпăр вĕсене. Правă, юрисăм вăл таканари шыв пек чӳхенет. Авă хальхи тимукратсем хăйсем валли патшалăха çаратмалли, халăха йĕмсĕр, выçă тăратса хăвармалли саккунсем кăларчĕç. Лавĕпех. Патшалăх Думинче ĕлĕкхи думăри пек думăть тăвакан çук. Мĕн чухлĕ вăрă, ултавçă, палтун пухăннă унта. Йăлтах халăха суйса, улталаса депутат пулнăскерсем. Хăйсем пуяççĕ, йĕке хӳре пек тустараççĕ. Хăйсене майлă саккун йышăнсах. Ĕлĕк вăрă-хурах вăрттăн çаратнă. Хальхисем, сысна пуçлă кайтарккăсем, кашкăр пек чупайккăсем куç умĕнчех, шăла йĕрсех çап-çутă тасатса хăварчĕç пирĕн кĕсьесене, алла ыйткалакан хутаççи тыттарчĕç. Хăйĕн халăхне çаратакан пуçлăх вăл – çĕлен. Çĕлен хăйĕн чĕпписене çиет, кусем те çавнашкалах. Ах, ывлăм, калаçас та килмест кун çинчен. Аçу пирки вара... Эп те хам курман çав. Çын сăмаххи хыççăн çеç шутлап çапла пуль тесе. Курнă çынни вăхăтра каланă пулсан... Усал пурпĕрех ял тĕкĕрĕ çинче курăнать. Ял тĕкĕрĕнчен никам та пытанаймасть. Тулькkăш... кая юлать. Вăхăт сукмакĕ çине каю пусать. Вилессе ăна пурте, эп те, аçуна вĕлернĕ ханттар та вилетпĕр, пурпĕрех вĕçĕ пур. Çапах та... вăрçăра мар-çке эпир, унта айта, тăшмана announceaticsельнă вĕлермеллех, унсăрăн вăл сана хăвна тĕп тăвать. Хамăр та кăвалеринче купăста пуçĕ туранă пекех туранă усал фашистне. Уншăн виçĕ орден, пилĕк медаль панă мана. Çынна вĕлернĕшĕн.

Тăван çĕршыва çăлнăшăн. Ялта пĕрле ĕçсе-çисе пурăнакан çын çывăх çынна ятарласа вĕлернине ниепле те ăнланма пултараймастăп. Çав хурахăн награди вара – хура ят.

– Вилĕмĕ ун та çитĕ-ха, – шăл витĕр сăрхăнса тухрĕç сăмахĕсем Чана Кĕркурийĕн ачин. – Ылханса мар, сăмах май çеç калатăп.

– Çитĕ те, ун чухне вара аса илĕ çыннăн çак çут тĕнчерен мĕн тери уйрăлас килменнине. Уравăшра судьяра ĕçленĕ чухне пачăшкăпа çывăхчĕ. Мĕн ĕнтĕ, пĕрле пакăлтатса лараттăмăр тĕнче ыйтăвĕсем çинчен тур юнĕ сыпнă май. «Эсир те тыттаратăр, эпир те суятпăр халăха. Куç кĕретех улталатпăр. Сирĕнтен те нимле çĕнĕ пурнăç – кăмунисăм тени пулмасть, пирĕнтен те леш тĕнчери патшалăха тăвасси пулмасть. Суя шухăшлав вăл сирĕн марксисăм-ленинисăму-сталинисăму. Никамран ирĕклĕ опчествă нихçан та пулма пултараймасть. Çынсен ăс-тăнĕ ĕмĕрте те пĕр пек пулма пултараймасть. Пурпĕрех чи ăсли, ăслăраххи тата ухмаххи çуралать. Пурпĕрех этем кĕтĕвне ăна кĕтӳç, пушă кирлĕ. Пăхăнтармалла ăна. Пĕр чăмăрта тытмалла. Унсăрăн... саланса каять. Хаус пулать. Эсир вара пурне те пĕр пек ĕçлеттерсе, пурне те пĕр пек тумлантарса, пĕр пек тăрантарса усрасшăн. Пурнăçланма-пурнăçлама май çук ĕмĕт-шухăш явăнать сирĕн пуçра, кăмунистсен. Таçтан вĕçсе килнĕ сĕрĕмпе минрететĕр халăха. Каларĕ тейĕн мана эс манран каярах вилес пулсан. Арканать вăл сирĕн хутран çыпăçтарса тунă çĕнĕ пурнăç керменĕ. Вилес килмест, çак сывлăшпах сывласа, çак хĕвелпех ăшăнса пурăнас килет. Анчах патне çитрĕ ман. Темле кĕл тусан та, Турă та пулăшаймĕ ĕнтĕ. Чир пĕтерет. Сывалаймастăп. Хамах туятăп-пĕлетĕп. Пирĕн те леш тĕнче вĕрентĕвĕ суя, юмах çеç вăл. Унта кайнисенчен каялла таврăнни этем историйĕнче пулман. Халăха лăплантарма, хăратса çирĕп алăра тытма шухăшласа кăларнă ăна. Пирĕн хăть – ăс-пуç теорийĕ, сирĕн – пушă, саламат теорийĕ. Пирĕн вĕрентӳ çапах та

халăх ăс-тăнĕнчен нихçан та тухмĕ, сирĕн теори – майĕпен сӳнсе, халăха ăшăтми пулĕ», – тетчĕ пачăшкă.

– Вилессе пĕлнĕ апла вăл?

– Пĕлнĕ. Рак чирĕ пулнă унăн. Çур çултан пытарчĕç. Ăслă çынччĕ. Малашлăха курма пултарнă вăл. Пирнешкел çӳлтен мĕн вĕрентнипе çеç çырлахса пурăнман. Шухăшне уçса пама та хăраман. Мĕн эпир, хутла пĕлмен тăмпайсем... Шухăшлавĕ анлă пулнă унăн.

Хĕветĕр ăна чарсах каларĕ:

– Тăмпайсем пулман-ха эсир, Петĕр Çтаппанч, пире çак пурнăçа туса панă ăслă-тăнлă çынсем пулнă.

– Ăсли-качки ĕнтĕ, – хăйне мухтанишĕн лайăхмарланчĕ Чапай мучи. – Мĕн хушнине тунă. Камăн та пулин çĕмĕрмелле пулнă киввине, ун вырăнне çĕннине тумалла пулнă. – Вăл майĕпен хавхаланса пычĕ. – Ыттисем пек чĕмсĕр те, мăка пăчкă та пулман, паллах, хастаррăн, çивĕч кастарнă. Комсомол ячейкине ертсе пыраттăм, çамрăксен мĕнпур ĕçĕ хĕрлĕ улахсенче иртетчĕ. Аслăрах пӳртсенчи клубсем вырăнĕнче пулнă вĕсем, хĕрлĕ улахсем. Вăтăрмĕшĕнче эпир те ялти хуçалăхсене пĕрлештерес терĕмĕр. Вун тăваттăнччĕ – комсомолсем. Пичче, Михала, ялти пĕртен-пĕр коммунисчĕ. Çав çулхине ялĕпех çырăнчĕç колхоза. Çĕнĕ пĕрлешĕве Чапаев паттăр ятне пама килĕшрĕç. Пиччене председателе суйларăмăр. Сталин коллективизаци йăнăшĕсене тӳрлетмелли çинчен статья пичетленĕччĕ. Хамăр та эртелпе вуласа сӳтсе явнăччĕ ăна. Хĕлле тахăшĕ пăтратса ячĕ пире колхоза ирĕксĕрлесе кĕртнĕ тесе, пĕрин хыççăн тепри тухма пуçларĕç. Çуркуннене вун çичĕ хуçалăхпа кĕтсе илтĕмĕр. Вунă лаша, икĕ каслă çичĕ плуг, темиçе пăт тырă – пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн мĕнпур техникипе пурлăхĕ. Икĕ çул çапла нушаланнă хыççăн тин каялла таврăнма пуçларĕç хресченсем пирĕн пата – колхоза. Унтан кайрĕ вара малалла, хамăн та председатель пулса курма тӳр килчĕ. Йывăр ĕç вăл халăхпа ĕçлесси. Ял кĕтӳне пăхасси. Темле чăтан эс, ывлăм. Паян касура кăштах кантăн пуль-

ха. Эп тем лӗпӗртетсе ҫӳреп тата, кансӗрлесе...

– Кӗлетке кӑшт канчӗ те, пуҫ канмарӗ-ха. Ҫыварасчӗ те пӗрре канлӗн, пурин ҫинчен те манса... Ыйхӑ вӗҫет.

– Ҫапла ҫав унӑн – пуҫлӑхӑн. Этемми те, экономики те, техники те, пурте пуҫра явӑнать. Халь ҫапах та ял ҫыннине ҫӗр ҫумне кӑкарма пултартӑр-ха эсир, ҫамрӑксем. Майне тупрӑр. Эп ӑна эс ҫав мӑн колхозпа камантланӑ чухнех асӑрхаттӑмччӗ сан пуҫарулӑхна.

– Килӗшӳпе ӗҫлеттерме ҫавӑн чухне пуҫларӑмӑр-ҫке. Халӗ вара, кашни кил хуҫалӑхӗпе килӗшӳ туни, тата ытларах усӑ парать.

– Хама та илсе тухкаларӗҫ-ха ҫум ҫумлама. Юлас килмест вӗт ыттисенчен, ҫимӗҫӗ те тулӑхрах пултӑр тетпӗр-ҫке. Хамӑра та, хуҫалӑха та усӑллӑрах. Пирӗн вӑхӑтра пушӑ ытларах ӗҫлеттернӗ. Ӗҫӗшӗн те тӳлемен пекехчӗ. Пасара ыйтмасӑр никам та кайман. Пасарне те хӗвел йӑмра ҫӳллӗш хӑпариччен кайса килнӗ. Ӗҫ кунӗн нормине ан тултар-ха эс... Пӗтрӗн вара. Каярахпа кашнине пӗр пек тӳлемелли йӗрке хӑшне-пӗрне ярункана ячӗ.

Ку сӑмаха кӗтнӗ пекех, хуҫалӑх пуҫлӑхӗ пуҫне ялт! ҫӗклерӗ:

– Халь те пӗтмен-ха вӑл путсӗр йӑла, – терӗ тарӑхуллӑн. – Кам мӗн вӑхӑт, мӗн чухлӗ, мӗнле пахалӑхпа ӗҫленине кура тӳлеме тытӑнасшӑн. Атту пӗри виҫӗ сехет ӗҫлет те, тепри – вун виҫҫӗ. Укҫи – пӗр танах. Ҫав укҫана ҫын хӑй чӑннипех мӗншӗн ӗҫлесе илнине вӑйӗпе-ӑсӗпе туйтӑр.

– Тӗрӗс палӑртнӑ эс кӑна. Анчах ҫамку ҫине тепӗр карт хушмасӑр, ачам, пурнӑҫлаймӑн-ха. Ытла хытӑ пирӗн чунсем, – тесе кулса илчӗ Чапай мучи.

– Хам ҫакӑнта ӗҫленӗ чухне пурпӗр туса ҫирӗплетсе хӑваратӑп ҫав йӗркене, – ват ҫыннӑн куҫӗнчен ӑшшӑн пӑхса шанчӑклӑн каларӗ Хӗветӗр Кузьмин. – Ман ку таранччен хам шутланинчен пурнӑҫланманни пулманччӗ-ха.

– Ачи эс маттур-ха. Аҫу-аннӳ ятне ямастӑн, ҫӳле ҫӗклетӗн пире, хурӑнсурсене. Таса сывлӑш вӑй парса

пытăр. Килелле уттарам-ха. Карчăкпа масар çине кайса килес. Ачасем çитмеллеччĕ, – Шупашкар еннелле пăхса илчĕ те ял çулĕ çине тухрĕ вăл. – Эсир те каятăр пуль-ха?

– Касу кĕртсен... – Хĕветĕр ачисем патнелле чупрĕ.

Ĕнесем ял еннелле çаврăнасшăн пулас, итлесшĕнех мар. Кăшкăркаласа, пушăпа шартлаттарнă хыççăн, касу йĕркеленчĕ.

«Выльăхĕ те, этемĕ те хавшаклăха пит хăвăрт сисет, – шухăшларĕ Кузьмин, чупса ывăннă хыççăн. – Ача çемçешкине наччас туйнă, итлеми пулнă та. Пĕрре тавралла чупса çаврăнтăм та... Хă... – кăмăллăн кулса илчĕ вăл. – Итлерĕç. Этем ушкăнĕ те кĕтӳ майлах пуль çав. Пурнăç курнă ватă Чапай мучи ахальтен каламарĕ ун пирки. Ăс-хакăлĕпе çеç уйрăлса тăрать этем выльăхран. Çавна май выльăх кĕтĕвĕнчен темиçе сыпăк çӳлерех. Ку – хăрушăрах та. Пушăпах илеймĕн. Ăс-тăн сулмакĕ кирлĕ ăна. Питĕ ăслă, тавçăруллă, çирĕп кăмăллă, курăмлă кĕтӳç кирлĕ этем кĕтĕвне. Вăйсăр кĕтӳçсем çĕршыври этем кĕтĕвне те тăрантараймарĕç, кĕтӳ картине те кашкăрсене аркаттарчĕç. Эп хам мĕнле кĕтӳç-ши? Ял халăхне çирĕп картарах усрап-ши? Ял халăхне тăраничченех çитереетĕп-ши? Итлеççĕ-ши çав çынсем мана? Е хырăм тăрантарассишĕн, çара ӳте хуплассишĕн çеç кутĕрленеççĕ уй ĕçĕнче? Пушă вĕçĕ лекнисем тарăхмаççĕ-ши? Хĕрсе кайнă вăхăтра чикĕрен иртместĕп-ши? Ытлашши ирĕке ямастăп-ши эп вĕсене тепĕр чухне? Кăмăллаççĕ-ши вĕсем мана е кут хыçĕнче чышкă-муклашкă кăтартаççĕ? Хăлха чикки парас текен çук-ши? Çĕнĕ трактор, çĕнĕ автобус илнĕ вăхăтра кӳтĕхсе çӳрекенсем пурччĕ-ха. Бартер текен меслетпе таварпа тавар улăштартăмăр-çке. Унсăр майĕ çукчĕ. Халĕ тата автобусĕшĕн савăнаççĕ. Районта камăн хуçалăхĕнче икĕ автобус пур? Пирĕн çеç. Ай, мухтанас мар-ха. Правленипе клуб туса лартсан мухтанăп. Çĕн урамшăн вара мухтанма та юрать. Ял çамрăкĕ ялах тымар ярать. Малашлăх пур. Чапай мучи Хурăнсурăн утлă çарĕ пĕтменшĕн хавас. Ял

тулли çамрăк ар. Пурнатпăр-ха».

Уçлăхра пуç та уçă. Уй кĕввинче сĕрме купăс кĕввине уйăрать Хĕветĕр. Купăс Çинахванĕ темле çĕнĕ кĕвĕ шăрататать. Кĕвви марш пек янравлă. Аха, тинех ăнкарса илчĕ ăна вăл. Ял ансамблĕн артисчĕсем пуçланăччĕ-çке çак юрра? Аха, аха, сăмаххисене аса илчĕ те, юрă чĕлхене çакланчĕ:

Пилĕк юплĕ çырма пуçĕ варринче
Эп çуралнă çăл куç шывĕ сассипе.
Пиллĕх илнĕ тăван халăх хушшинче,
Ӳснĕ ялăн пыллă-çуллă тутипе.
Хурăнсур, Хурăнсур, Хурăнсур,
Эсĕ – манăн çуралнă çĕршыв...

Агроном пулман пулсан кам пулаттăмччĕ-ши эпĕ, тесе пĕрре кăна мар шухăшланă Хĕветĕр Кузьмин. Артист, режиссер, писатель-драматург?.. Илемлĕх вăрттăнлăхĕ ăна ачаранах нушалантарнă. Çав сĕмленӳ те шкулта, те клубра, те институтра çуралчĕ унăн, халĕ хăй те астумасть пуçламăшне. Илемлĕ литература тыткăнлăхĕнчен çеç хăтăлаймасть. Кĕнекери ĕç-пуça унăн халăха çынсен ваййи урлă кăтартас килетчĕ тахçанах. Пьесăсем вуласа тăнран кайрĕ: анчах хăйне çывăххине, хăйĕн кăмăлне уçаканнине тĕл пулмарĕ. Аптранă енне вара Николай Максимовăн «Синкер» романне шĕкĕлчесе тухрĕ. Унти ĕçсем хамăр таврарах пулса иртеççĕ, сăнарĕсем те çывăх. Виçĕ каçра шăранса та тухрĕ пьеса. Авторĕпе канашламасăрах тытăнчĕ асаплă ĕçе. Драма кружокне пухрĕ те пĕлтерчĕ: «Çак пьесăна халăх умне кăларнă хыççăн пирĕн театр çуралать!» Питĕ хавхаланса хатĕрленчĕç премьерăна. Спектакль пиçсе тухрĕ, ăнăçрĕ! Пулчĕ! Театр та çуралчĕ!

Ун хыççăн Владимир Кузьминăн «Çĕр пики», «Пахус паккусĕ», «Хĕрсĕр ял та хĕсĕр мар» пьесисем тăрăх лартнă спектакльсемпе тĕлĕнтерчĕç вĕсем таврари ялсемпе районсене.

Çакăн хыççăн тинех ăнланчĕ Хĕветĕр Кузьмин хăй кам пулма çуралнине. Унăн çĕре ачашласа-лăпкаса тырă

çитĕнтерекен илемлĕ чунлă, кăвар чĕреллĕ, çирĕп алăллă хресчен пăхса ӳстермелле, çав çынна çĕре, яла чунтан юратма вĕрентмелле, тăванлăхшăн, хурăнташлăхшăн кĕрешме яланах хатĕр паттăр, тĕнчере никамран та кая мар, илемлĕ чăваш туптамалла иккен. Ял çыннин чунчĕринче художник туйăмне вăратмалла, ăна уççа кăлармалла. Халăхăн пултарулăхне халăхах кăтартмалла.

Хĕветĕр ача чухне ял яш-кĕрĕмĕ каçсерен вăйăра выляса-кулса, юрласа-ташласа хавхаланатчĕ, туйра параппан сасси урам тăрăх аната çити ян каятчĕ, сĕрме купăсăн çемçе сасси шухăша выляттаратчĕ. Юнашарти клубра Шупашкар юрăçисем час-часах халăх кăмăлне çĕклетчĕç. Ĕçкĕ-çикĕре, туйра уйрăмах палăратчĕ ял çыннисенчен кам ытларах пултарулли. Çавсене пĕрле пухса сцена çине тăратма тахçанах шутланăччĕ Хĕветĕр Кузьмин. Хăй лартнă спектакльсенче вăл кашнинчех юрăташă-такмак сценисем кĕртсе яма тăрăшрĕ. Кун пек халăх пурнăçне çывăх пулса тухать. Пăхса-итлесе ларма та савăнăçлăрах. Колхоз театрĕ вăхăтлăха канăва кайсан, чăн-чăн ансамбль йĕркелерĕ. Ялти пĕр талант та тăрса юлмарĕ аякра. Хуçалăхăн икĕ автобусне аран шăнăçаççĕ тулли ушкăн чухне.

Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан район çыннисен «Туслăх» ентешлĕхĕн уявне кайма питĕ тĕплĕн хатĕрленчĕç. Оперăпа балет театрĕнче юрласа ташламалла-çке. Шӳт мар. Пысăк кăлтăк сиксе тухрĕ. Баянист çук! Купăсçă ял туллиех – баян калакан тупăнмасть. Акă çитсе çапрĕ малашлăха пăхма пĕлменни. Кутранах. Хытах. Агроном, тракторист, газовик анчах кирлĕ мар иккен яла. Илем саракан та алăри пилĕк пӳрне пекех кирлĕ. Мĕн тăвăн, кӳршĕрен кивçен илмелле пулчĕ. Намăс вĕт.

Хурăнсурсем халăх умне тухсан, сцена сарăлчĕ пуль – вырнаçмаççĕ. Юрри-ташшине пуçласан, зал пĕлĕтелле çĕкленчĕ пуль – ял сасси-кĕвви Шупашкара сарăлчĕ. Кану вăхăтĕнче фойере сăра пички çĕклесе ташларĕç, концерта

малалла тăсрĕç.

Каярахпа хăйсене халăх ансамблĕ ят парсан, чăн-чăн уявах пулчĕ хурăнсурсемшĕн.

Çынсем ĕçе те типтерлĕрех, тăрăшарах, чунтан хавхаланса туни сисĕне пуçларĕ юлашки вăхăтра. Çак пархатарлă ĕçĕн çимĕçĕ те тутлăрах ĕнтĕ. Ял халăхĕ искусство енне те ăнланулăн туртăнать. Ĕçри, пултарулăхри ырă туйăм хăйсенех илем кӳрет. Чунĕ юрлать çынсен.

Кахал апатĕнче пĕçертсе илнĕ Хĕвел Кăмаш вăрманĕ çинех сулăннă, анăç хĕрелсе пырать. Ырансем Кӳлхĕрри кӳллин пăсĕ Хурăнсур çĕрĕ çине те шывланса анĕ, уйсене шăварĕ. Хĕвел хăй каларĕç-ке Этеме ун пирки. Этемĕ ĕне касуне ялалла уттарать. Малта ачисем пыраççĕ. Аслă касуçă – хыçалта. Яка Якурĕн каскăн ĕни анкартисем патне çитсен каллех вĕрлĕк карта урлă сиксе каçрĕ. кунĕпе симĕс курăкпа та тăранманскер, çĕр улми аврине татса илчĕ-илчех. Кутран пушă лексен, касу варрине кĕрсе тарчĕ.

«Хуçи пекех яка, – шухăшларĕ Хĕветĕр. – Мĕнле кăна курăнман пулăм явăнмасть-ши çут çанталăк тытăмĕнче. Ăна никам та тĕпчесе пĕлеес çук. Иххан мучисен ĕни умне тухрĕ те каскăн, айккинелле пăха-пăха ним пулман пекех мăшлаттарса утать. Тепре тиверес пулсан та хăйне, хыçра хӳтлĕх пур. Çапла вăл каскăн ĕне лăпкă ĕнене пушă тĕлне тума пĕлет».

Тăраннă ĕнесем васкамасăр хăйсен кил йĕрĕпе уттарчĕç. Авă, Кури Павăлĕ вырăсла хапхи алăкне яриех уçса хунă: ĕнине кĕтет. Вĕренне явса пĕтерсе Çĕр чăмăрне пĕтĕмпех явакласа илчĕ-ши вăл паян? Экваторăн тăршшĕ ытла та вăрăм: хĕрĕх миллион метр ытла. Çын хăй çапла ĕмĕтпе ĕçлесе пурăнать тĕк – çитернех пуль çавăн тăршшĕне. Кашнин пуçĕнче, ăсĕнче хăй тĕрлĕ тĕлĕнтермĕш ĕмĕт.

Унăн Юратăвĕ те хапха алăкне уçса ячĕ, ĕнин хырăмне пăхса илнĕ хыççăн, упăшкине мухтарĕ:

– Ай-яй маттур, лайăх тăрантарнă, пăнкă-пăнкă, тепринче те санах ярас пуль.

– Темле çав, Зина, ку ăнсăртран татăлса аннă телей пулчĕ пуль пирĕншĕн, – çумра тăракан арăмне хăрах аллипе çупăрларĕ Хĕветĕр. – Умра курăнмасть-ха ирĕклĕх. Тăллансах ларатăп. Кашни кунĕ пин ĕçпе тăптулли.

– Малтан апатне çийĕпĕр-и е... Ай-уй, ку тата мĕн курăкĕ? Кăвак чечеклĕскер. Мана парнелеме çавăн чухлĕ татрăн-и? Кӳр?

Хĕветĕр кулса ячĕ те курăк çыххине мăшăрне тыттарчĕ:

– Сан валли. Çурăм-хырăм çапма. Пĕлеймерĕн-и, çимĕк курăкĕ вăл. Чӳлмеке лартмалли мар. Турхай лаптăкĕнче кăн-кăвак ешерет. Сан валли урăххи пур, – сумкăран вăл пĕчĕк çыхă кăларчĕ. – Улăх чечекĕ. Чӳлмеке ларт. Халь тӳрех мунчана каяс. Ачисене хатĕрлентерсе яр эс.

«Юрать сан хăвна кĕме икĕ кĕмĕркке пур, ман хăçанччен пĕччен кĕрсе пурăнмалла-ши, тепĕр хĕр пĕрчи кирлех те амăшне пулăшма...» – çак шухăшпа Зина пӳртелле васкарĕ.

Килĕ-çурчĕ Хĕветĕр Кузьминăн халĕ ĕнтĕ яла намăс кăтартмалли мар. Çынсенчен юлас мар тесех çине тăчĕ. Тарăн путвалпă, гаражлă, икĕ-виçĕ хутлă пӳрт лартакан та пур ялта. Патшалăха çаратса, халăха улталаса мар, хăйсем хуçалăхра ĕçлесе илнĕ укçа-тенкĕпех тăваççĕ. Урам тăрăх утма та кăмăллă. Якур Парамоновсем тĕлне çитсен çеç чĕре урăхла тапма тытăнать, чун канăçсăрланать, чалăшарах панă кивĕ пĕчĕк пӳрт умĕнчен куçа хупса чупса иртсе каяс килет. Çук, лартаймарĕ Яка Якур çĕнĕ пӳрт. Тума йывăç çырса панă пулин те. Сутса ĕçрĕ ăна. Çук, кĕреймерĕ шеремет Парамоновĕ Хурăнсурăн паянхи тулăх пурнăç картине.

5

Хальхи çамрăк ваттисен йăлине уясах каймасть. Аваллăх йĕркине вуншар çул хушши патшалăх

мăлатукĕпе тӳнккесе аркатса пычĕç те, ăçтан-ха ăша кĕрсе ăс-тăнра тымар ятăр вăл. Ĕмĕртен-ĕмĕре куçса этемре çирĕпленнĕ йăла-йĕрке çак çирĕммĕш ĕмĕрте хĕн курса пĕтмех пуçларĕ. Совет саманинче çуралса ӳснĕ чăваш ачисемпе вĕсен ачисене мăнкун-çимĕкрен, вĕсем сиенлĕ тесе, пистернĕ, революциллĕ çĕнĕ йăла-йĕркене хăнăхтарнă. Ăрусен пурнăç юхăмĕнче татăлнă питĕ пысăк тапхăр чăваш нацине аталантарма çав тери хытă чăрмантарчĕ: культура, мораль, ăслăлăх енĕпе. Чăваш туррисене мантăмăр. Ваттисене асăнма пăрахрăмăр. Яш-кĕрĕмĕн урамри вăйă карти арканчĕ, татăлчĕ. Хамăр ăратнисене шута хума пĕлместпĕр. Хурăнташлăх туйăмĕ мăкалчĕ. Тăванлăх хăвачĕ хавшарĕ. Ача пуçне таçти, аякри, такамăн ют йăли-йĕркине, шухăшне чыхса тултаратпăр. Хамăрăнне, юн тымарĕпе юхса пыраканнине, сиксех сивлетпĕр.

Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн, майĕпен-майĕпен пуçтарăнса халăхра вăй илнĕ, пĕрлĕх тытăмĕнче çирĕпленнĕ, тĕн вĕрентĕвĕпе çывăх йăла çапах та ватăраххисен ăшĕнче, йĕркинче сыхланса юлнă. Ăна нимле хăрушлăх та пуçĕпех пĕтереймен. Пусса тăракан хура пĕлĕт пуç тăрринчен сирĕлсен, чăваш та хăйсен Туррине пуç çапрĕ. Çимĕк Çĕрпелпе Хурăнсур масарне те анчĕ. Маларах çулсенче çимĕкре масар çине каякан ытлах курăнмастчĕ. Ваттисене ваттисем асăннă та, ачасене тутлă апат пĕçерсе çитернĕ те, çулталăкра пĕрре килекен уяв кулленхи ĕç-пуçра курăнми пулнă. Халĕ çанталăк улшăнчĕ. Çимĕк кашни килех кĕчĕ, кашни çемьене ытамларĕ.

Ваттисен йăли-йĕркине Кузьминсем те çапла хисепе хума пуçларĕç. Кил хуçи, хăй вăхăтĕнче компарти идеологийĕпе çывăхланса хăйне пăхăнакансене те унпа пурăнма вĕрентсе пынă пулин те, аваллăх пуянлăхĕ халăхра çухалса сĕвĕрĕлнине чунпа туйса хурланнă. Май килнĕ таран, идеологи чиккинчен иртсе каясран сехĕрленсех, халăх пултарулăхне ӳссе чечекленме ăшшине те, сиплĕхне те тупса пама тăрăшнă. Халăхпа

пӗрле юрланӑ-ташланӑ. Ҫыннӑн кашни йывӑр самантне сиссе ӑна пулӑшма васканӑ. Мӗн те пулин ыйтма пынӑ ял ҫынни унӑн ӗҫ пӳлӗмӗнчен хуйхӑллӑ та тарӑхуллӑ тухмасть, ахаль те мар, тарӑн шухӑшласа тухать. «Хуҫалӑх, эртел сана ырӑ тӑвать пулсан, манӑн та хамӑн хуҫалӑха, эртеле ҫавӑн пекех усӑ кӳмелле», – тет. Эртел хӑвачӗ, туслӑхӗ пӗр-пӗрин ҫирӗп те кӑмӑллӑ ҫыхӑнӑвӗнче пулмалла-ҫке. Ҫакӑ кашнин чун-чӗринче чи малти вырӑнта пултӑр тесе ӗнтӗ Хӗветӗр Кузьмин хамӑр несӗлсен, хурӑнташсен йӑли-йӗркине халӑхра сарса ҫӗнетсе пырать. Халӑх сӑмахлӑхӗ, ваййи-кулли, юрри-сӑвви пӗтӗмпех ҫав йӑла-йӗркере. Унта – халӑх пурнӑҫӗ, малашлӑхӗ.

Петрав кунӗнче ют ялсене яла кӗртес мар тесе униче алӑкӗсене питӗрсе илсе хурал тӑратнипе те ҫӗнӗ йӑла-йӗрке халӑхра тымарланаймарӗ, сӑмсаланнӑ-сӑмсаланман типсе, хӑрса ларчӗ. Тӑвана тӑванран пистерни, ялпа ял хушшинчи ҫыхӑнӑва татни чӑвашӑн аталану ҫиппине касса татниех пулать-ҫке.

Ӗлӗк кашни яла тӳрӗрен тухмалли сукмак, лашапа ҫӳремелли ҫул пурччӗ. Вӗсем ҫухалчӗҫ, кӗперӗсем йӑтӑнса анчӗҫ. Виҫ ҫухрӑм вырӑнне тавраран асфальт ҫулпа вун виҫӗ ҫухрӑм тӑватпӑр.

Аваллӑх йӑлин чиккине пӑснӑшӑн Хӗветӗр Кузьмин халӗ те кулянать. Мӗншӗн тытса чараймарӗ вӑл хӑйне хӑй – халӗ паллӑ ӗнтӗ. Колхозсем уйрӑлнӑ чухне тарӑху хуранӗ вӗресе тӑкӑнсах кайнӑччӗ. Пусӑ ҫаврӑнӑшне ҫӗнӗрен йӗркеленӗ хыҫҫӑн Ҫӗрпелтен Шӑхасан ҫулӗ ҫине тухакан урапа ҫулӗ хурӑнсурсен пусӑ варрине тӑрса юлчӗ. Тырӑ анине таптаттарса пӗтерес мар тесе вӑл ҫӗре ҫулӗ-качкипех сухалаттарчӗ, урӑх, таврарах ҫулпа ҫӳреме сӗнчӗ. Ҫук ҫав, авалхи ҫул вырӑнӗ тырӑпа кашламарӗ, каллех такӑрланчӗ, хӑй вырӑнӗнчех тӑрса юлчӗ. Ҫӗрпел, Туҫи Ҫармӑс халӑхне ҫеҫ калаҫтарчӗ. Усаллӑхпа. Акӑ мӗн патне илсе пырать вӑл тарӑн шухӑшламасӑр чикӗрен иртсе кайни.

Питӗ асӑрханулла, тавҫӑруллӑ, ӑслӑ пулас пать иккен халӑхра авалтан юлнӑ кашни йӑла-йӗркепе, пулӑмпа.

Халăх йĕрĕ, халăх сукмакĕ, халăх çулĕ – унăн ăсĕ-тăнĕ, унăн пурнăçĕ, унăн малашлăхĕ. Тĕкĕнме, пăсма юрамасть ăна. Вылямалла мар унпа. Ăна пăсма та май çук. Халăхăн ăслăлăхĕ – хăйĕн аваллăхĕнче.

Çĕнĕ пӳртре Кузьминсен турă кĕтесси Зина тĕрленĕ ал шăллипе илемленни те вĕсем ваттисен йăлине хисеплени пулать. Çурта çутса, сăх сăхса, вилнисене асăнса хисеп турĕç вĕсем çемйипех. Паян масар çине тулли сумкăпа кайрĕç. Хирĕç таврăнакансем пит хаваслă. Карта çуммипе утнă май пуш кĕленче те кĕленче ванчăкĕ сапăнса выртни куçа çиет.

– Çак сăваплă кĕтесе те çӳп-çап вырăнĕ туса хуратпăр, этем пулатпăр-ши эпир çакăн хыççăн? – тарăхса кайрĕ Хĕветĕр.

– Кам айăплă? – упăшки еннелле пуçне пăрчĕ Зина.

– Каллех мана айăпласшăн пуль-ха, – килĕшмерĕ ăна мăшăрĕн ыйтăвĕ. – Эп юлташлăх хуçи тесе кашнине алăран тытса çӳреес çук. Масар вăл тата – ял администрацийĕн. Вĕсен те хуравлăхĕ пулмалла. Пирĕн çине çеç ямалла мар.

– Ытлашши ан кăралан, – сăмсинчен пӳрнипе пусрĕ часах хĕрсе каякан упăшкине Зина. – Ĕçĕ кунта ял юлташлăхĕпе ял администрацийĕ çинче те мар. Халăха, уйрăмах çамрăксене, ирĕке янинче. Астăватăн-и, парти хуçаланнă чухне, çакăнта та мĕнле тап-тасаччĕ, çаруран чупаттăмăр, халĕ атăпа утма хăрататать. Йĕрке пурччĕ коммунистсен. Таçта та. Халь мĕн пур демократ текен халтурщиксен? Арпашу та харкашу. Пăтранчăк кӳлĕре, халăх кӳллинче, ылтăн пулă тытаççĕ. Тустару та астару. Йĕмсĕрлĕхпе намăссăрлăх. Нимле çирĕп идеологи тени çук. Халăха йăлтах тĕн çыннисем çавăрса илеççĕ. Америкăран яла çитрĕç те ваçка тĕн ячĕпе хăйсем майлă çавăракансем... Эй, Турă. Никам чаракан çук вĕт вĕсене. Чăваша та, пĕтĕм Раççее те саранча пек сырса илнĕ. Каллех пĕр енлĕ суялăх пуç пулса тăма тытăнать. Эсир пурпĕрех хуçалăх çыннисем анчах. Идеологсем кирлĕ

сирĕн çумра, хăвăр малтан ĕçленĕ чухнехиллех, тен, урăхларах, çапах ăс парса тăракан кирлех патшалăх енчен. Çынна ĕçре тарлаттарса лăскани çеç кирлĕ мар. Эс ху çине туртса илсе пустуй çилленсе лартрăн. Ăнлан малтан, кайран тин кала.

– Ăнлантăм. Ытла политик пулса кайнă тем, эс. Пире комиссар та кирлĕ апла. Пур вăл. Акă, юнашарах, – тесе аяккалла хуллен тĕртсе ячĕ мăшăрне Хĕветĕр, унтан сылтăм алипе хăй патнелле туртрĕ. – Çитрĕмĕр.

– Кирлех пулсан эпĕр прокурор та пулма пултаратпăр, тем, ансамбльте унта хам çумрах хитре чĕпĕсем чĕвĕлтетме пуçларĕç-ха...

Вĕсем масар хапхи умĕнче чарăнса тăчĕç. Алăкĕ яриех уçă. Хапхине чикке лартнă. Ку таранччен мĕнле асăрхаман-ха çакна? Тĕлĕнмелле. Алăкăн пĕр енĕ Хурăнсур масарĕ еннелле, тепри çĕрпелсен еннелле уçăлать. Пуç çитнĕ Чапай мучисен. Вĕсем çавăрнăччĕ масарсем тавралла ракаткаллă карта. Шел, вырăнăн-вырăнăн хăмисене хăпăтнă. Алăкпа çаврăнса кĕме те ӳркенеççĕ. Йывăççисене те çав вăхăталлах лартнăччĕ. Çĕрпел масарĕ те халĕ çӳç ӳстернĕ, сип-симĕс кавир айĕнче, кану вырăнĕпе – паркри ешĕл йывăçсемпе вăрман пек пĕрлешсе каять. Вăрçă çурмалла çӳç каснă пуç якалнă, аякран пĕр масар пекех курăнать – пĕр симĕс чăмăркка.

Çав чăмăрккара – икĕ ял аваллăхĕ, икĕ ял несĕлĕсем, икĕ ял вил тăприйĕсем. Тĕне кĕни те, кĕменни те, алла хĕрес тытайманни те – пурте пĕрле, юнашар. Икĕ масара çĕрĕн çул чиккийĕ çеç уйăрса тăрать. Ĕлĕк Çĕрпелпе Хурăнсура уйăрса панă мишавай йĕрĕ – пĕр чалăш сарлакăш çерем.

Кăшт тăхтаса тăнă вăхăтра Хĕветĕре пĕр ĕç аса килех кайрĕ. Мăнкун эрни вĕçленсе пынă вăхăталла вăрçăра вилнисене чысламалли кун çитнĕччĕ. Парткомпа ял совечĕ Çĕнтерӳ кунне çĕнĕллерех ирттерме йышăнчĕç. Правлени те аякра юлмарĕ. Масар çине çынсем нумайăн пычĕç. Анчах... çĕрпелсем хăйсен çĕрĕ çинче,

хурӑнсурсем хӑйсен ҫӗрӗ ҫинче тӑраҫҫӗ. Варринче – чикӗ. Никама та каламан вӗсене ҫапла тӑма, никам та ятарласа пайламан, вырнаҫтарман ик ушкӑна. Колхоз председателӗнче ӗҫлекен Кузьмин ҫеҫ малтан Ҫӗрпел енче, пуҫлӑхсемпе пӗрлеччӗ. Халӑх ушкӑнланнине, пайланнине асӑрхасан, вӑл тӳрех хӑйсен ялӗсен ҫумне каҫса тӑчӗ.

Иртнӗ вӑрҫӑсенче вилнӗ кашни ҫынна ятран асӑнчӗҫ. Пытарма илсе килнӗ ҫын ӳчӗпе сыв пуллашмалли ятарлӑ сӑвап вырӑнӗ тума йышӑнса хӑварчӗҫ. Ӑна каярахпа Кузьминсем ял совет ӗҫтӑвкомӗпе пӗрле капӑрлатса туса лартрӗҫ. Масар пӳрчӗ ҫумӗнче. Унта халӗ, тем, пӗр этем кӗлетки курӑнать. Кузьминсем ӑна аякранах палласа илчӗҫ, кунӗн-ҫӗрӗн, хӗлӗн-ҫӑвӗн хывма пӗлмен сӑранланса ларнӑ тӑваткал куҫлӑ курткинчен. Яка Якурӗ месерле выртнӑ та, хуп турттарать. Чее мур. Ҫерем ҫинче мар, яка хӑма ҫинче. Нихҫан та пилӗкне-мӗнне шӑнтса пӑсас ҫук. Авӑ, Виҫкурка Ваҫҫи амӑшӗн вил тӑприне ыталанӑ та, пуҫне хӗрес патакки ҫине хурса тем ӗнӗрлесе выртать. Кам тавҫӑруллӑрах пулни ҫак ӳкерчӗкренех аван курӑнать.

Масар пӳртне те, виле тупӑкӗ хумалли хӳтлӗхне те Ҫӗрпел ҫӗрӗ ҫине лартни халь тин Петӗрӗн чунне касса кайрӗ. Купӑс Ҫинахванӗ калани аса килчӗ: «Ҫӗрпелсем ҫапах та вӗсем хӑйсене ытларах ырлӑх тума тӑрӑшатчӗҫ». «Масар пӳрчӗпе хӳтлӗх яла ырлӑх кӳмелли ҫурт-йӗр пулас ҫук та, ҫапах вӗсем те ют ҫӗр ҫинче ларни куҫранах чикет, – шухӑшларӗ Кузьмин. – Колхоз пӗрле чухне ӑна-кӑна шутламан, вӑл-ку куҫа та витӗр курӑнман. Пӗрле ӗҫленӗ, пӗрле ӗҫсе-ҫисе савӑннӑ, пурӑннӑ, хуйхи-суйхине пӗрле тӳссе ирттернӗ. Ҫӗнӗрен мишавай юпи ҫапсан, чун вӑранчӗ-ши е урӑхланчӗ-ши, – шалти туйӑма ӑна яланах ӑнланса пӗлсех пӗтереес ҫук. Турӑ панӑ сывлӑш хуҫаланать-ши чунра? Пӗлме хӗн. Чун вӑл – хамӑр, чун вӑл – ҫут ҫанталӑк пулӑмӗ, чун вӑл – тӗнче курӑм, ҫут тӗнче ҫаврӑмӗн уйрӑлми пайӗ. Чун вӑл куҫа та

курӑнмасть, алла та тыттармасть. Ҫав хӑйне евӗр хӑвата курма пултаракан ҫын тӗнчере пур тенине те илтнӗччӗ. Ку те тӗрӗс, те суя, пурпӗрех хам куҫпа курмасӑр ӗненместӗп. Пӗр ҫулхине американецсем чуна виҫсе пӑхнӑ тесе хаҫатсем шавларӗҫ. Ҫветтуйсемпе патшалӑха тытса пыракансен вун пилӗк грамм таран, ыттисен виҫӗ грамм ҫеҫ таять иккен. Тем, суя пек туйӑнать. Пуҫлӑха ларман ҫынсен те чунӗ тем пекех пысӑк пулма пултарать. Ку влаҫпа, пӑхӑнтарупа ҫыхӑннӑ. Этемри чун текен вӑй-хӑват вилӗ ӳтрен уйрӑлса кайма та, космос ҫаврӑмӗнче хӑй вырӑнне тупма та пултарнӑ. Кӑна ӗненме пулать. Турӑ ҫыннисем леш тӗнче тесе ӗнентерекен уҫлӑхран таврӑнаять-ши чун? Ҫумӑр пӗлӗчӗсенчен ҫакнӑ пир тӑрӑхӗпе масар ҫине анакансем Ҫимӗке килекен хамӑр несӗлсен чунӗсем пулчӗҫ-ши? Питӗ уҫҫӑн курӑнса йӑлтӑрт ҫухалчӗҫ вӗсем хӗвел пӑхса янипе. Ҫӗрпелсем е хамӑр ялсем пулчӗҫ-ши вӗсем? Пирӗн атте-аннесен, вилнӗ пиччен, пичи ачин чунӗсем те ҫакӑнтах-ши паян? Илле мучи ҫӑркаҫах ҫумра явӑнать-ха. Пичче ачине, Ваҫҫа ачине, вӑрҫӑра ҫапӑҫса паттӑррӑн пуҫне хунӑ ҫамрӑка, Ҫӗпӗр ҫӗрне пытартӑмӑр. Раҫҫей Геройӗ ялта пӗр ҫын. Пичче аякка тухса кайрӗ пулин те, пурпӗрех вӑл хамӑрӑн, ачи те Хурӑнсурӑнах, чӑвашах. Мирлӗ пурнӑҫ вӑрҫинче ылтӑн ҫӑлтӑр илнӗ хамӑр паттӑр. Пирӗн йӑх ҫынни, вилсен те чӗрӗ паттӑр, ятлӑ паттӑр. Яка Якур мар. Егор Парамонов – чӗрӗ виле. Халех виле хумалли яка хӑма ҫинче вилнӗ пек харлаттарать. Ют ял ҫӗрӗ ҫинче. Пуҫӗ тӑрринче ҫӑхан явӑнать. Масар ҫӑханӗ».

Колхозсем пӗрлешрӗҫ – масарсем пӗрлешмерӗҫ. Чикӗпех юлчӗҫ. Ик ял ҫыннисем ҫут тӗнчере пӗр-пӗринпе пӗрлешсе ҫемье тӑваҫҫӗ – чунсем пурпӗрех пӗрлешмеҫҫӗ. Кашнин хушшинче чикӗ юлатех. Пӗрне пӗри темле хытӑ юратсан та – чун ҫывӑхланать ҫеҫ, пӗрлешмест. Чунӑн хӑйӗн чикки пурах.

Масар ҫинче те Яка Якурӗ пек пурте месерле выртмасть. Ӑратнепе пухӑнса ларакансем те пур.

Кузьминсен йышлӑ ӑратни те, пӗр тӑвансем те пухӑннӑ. Хӑйсен вилнӗ ҫыннисене пытарнӑ тӑпра патне пырса апатҫимӗҫ, сӑра-эрех-пылак шыв хывса: «сана, атте, сана, анне, сана... асӑнатпӑр, сан умӑнта пултӑр» тесе хурланчӗҫ.

Тахҫан Чапай мучи чиркӳ прихучӗн масарӗн пуҫӗ хамӑр ялсемех пулнӑ тетчӗ. Ятне халь маннӑ. Унтанпа, ӗмӗр хушшинче, икӗ ялта миҫе пуҫлӑх улшӑннӑ пуль. Халӗ авалхи чиркӳ прихучӗн масарӗнче кам пуҫ пулнине ӑҫтан пӗлен? Тен, масар ҫинче те темиҫе революци, тытӑҫу, ҫураҫу кӗрлесе иртнӗ? Ҫӗрпелсем пуҫ пулса тӑраҫҫӗ-ши кунта е хурӑнсурсем?Ачча енчи ҫумӑрсем паян чикӗрен иртмен, авӑ. Пит тӗлӗнмелле. Чикке ҫӳллӗ хӳме тытнӑ пек. Ҫӗрпелсен ҫӗрӗ йӗп-йӗпе, шыв кӳлленчӗкӗллӗ, хурӑнсурсен енче тусан ҫине пӑрҫа сапнӑ пек йӗр ҫеҫ. Турӑ чикки-ши ку е ҫут ҫанталӑк пулӑмӗн чикки? Е масар пуҫӗн хӑтланӑвӗ? Ӑнлан вара, туп пуҫ ватмӑша.

Масартан тухсан Зина упӑшкине айӑкран сисӗмлех тӗкрӗ:

– Куратӑн-и?

– Куратӑп. Ӗне. Хӑмла пахчине кӗрсе кайнӑ. Ха, мӑйракипе ҫаклатнӑ та, чиперех туртса антарать ҫӑра сапакаллӑ пултранкӑна. Иххан мучисен лаптӑкӗччӗ пулас вӑл. Хас!

Арӑмӗ кулса ячӗ:

Вӑт касуҫ тесе кала вара сана. Ӗнӳсене ҫӗттерсе янӑскер. Сан касури ӗне вӑл.

– Пулма пултараймасть. Эпир пурне те уничерен яла кӗртсе янӑ. Кашни киле хуҫине ҫавӑтса пырса тыттараяс ҫук ӗнтӗ. Ҫиччас хӑваласа тухатпӑр. Куншӑн айӑпламаллах. Камӑн? Паллатӑн-и?

– Камӑн пултӑр – Парамунсен. Каларӑм-ҫке сана. Илтмерӗн-им?

– А-а-а, ҫав Яка Якурӗн каскӑнӗ-ҫке. Шуйттан пуҫӗ. Кунӗпе чуптарчӗ. Ҫиччас ӑна...

Масар ҫумӗнчи хӑмла пахчинчен хуса кӑларнӑ йӑрӑ ӗне вӗсене самаях тарлаттарчӗ. Каскӑн выльӑх ниепле

те яла кӗресшӗн мар. Парамоновсен килӗ тӗлне аран-аран ҫитерчӗҫ. Каскӑна кил картине кӗртсе ярсан тин лаштах сывласа ячӗҫ. Чӳречерен тӑрмаланчӑк пуҫ курӑнса кайрӗ.

– Ӗнене касура ҫухатнӑ пулсан сана, Чана чӗппине, ыранах суда параттӑмӑр, – илтӗнчӗ ҫурӑм хыҫӗнче ӳсӗр хӗрарӑмӑн урмӑш сасси.

Арӑмӗ Хӗветӗре шӳтлемесӗрех каларӗ:

– Вӑт сана касу. Юлашки ӗнене хуҫи аллине парса хӑварсан тин ял касуҫи пулма пӑрахрӑн. Халь эсӗ – манӑн касуҫӑ. Хӑвала!

Урампа ҫамрӑк тиха пек чупса кайнӑ Юратӑвӗ хыҫҫӑн Хӗветӗр Кузьмин ҫамка ҫине тар кӑларсах чупрӗ, хуса ҫитрӗ те, мӑшӑрне хулран ҫавӑтса, килнелле савӑнса утрӗ. Икӗ чун, чикӗ урлӑ каҫса, пӗр-пӗринпе пурнӑҫ вӑййине малалла тӑсрӗҫ.

**«Тӑван Атӑл» журналӑн 1997 ҫулхи 9-мӗш номерӗ.**




# СЕМЕЙНЫЙ ГЕКТАР ГАЛКИНЫХ

– ИОСИФ ФОМИЧ, - обратился к бригадиру 6-й полеводческой бригады Григорий Кузьмич Галкин, по привычке надвинув кепку на лоб, – дай-ка ты мне гектар сахарной свеклы. Выращу, соберу – все честь по чести.

Удивился бригадир, но гектар дал. На следующий день колхозники видят такую картину, впереди идет сам глава семьи, рядом с ним жена Евдокия Кирилловна, а сзади шествуют дети: Вася, Петя, Ваня и семилетний Гера.

– Куда это вы?

– В поле, – объясняет, – веду свое звено на свеклу.

А что такое для колхоза свекла, скажет каждый. Понравилась она хорнзорцам, даже очень. В прошлом году ее собрали в колхозе по 200—250 центнеров с гектара.

И появился в колхозе имени Ленина Вурнарского района семейный гектар инвалида Отечественной войны Галкина.

В работу включилась вся семья Галкина.

Полмесяца отнял гектар свеклы для первой обработки. Однажды, когда семья, как обычно, трудилась на поле, пришел агитатор Захар Александров.

– Ну-ка, – улыбнулся он, — давайте поближе ко мне. Тут про вас написано. «С гектара получить 350 центнеров – обязательство Галкиных», – дважды прочитал агитатор строчки из межрайонной газеты.

Разгорелась борьба за данное слово.

Переживал хозяин гектара, даже во сне его видел.

Наступила осень. Под деревьями – ворох желтых листьев. Пришла пора уборки. Звено Галкиных опять вышло в поле, опять принялось за работу. Прикинул Григорий Кузьмич, богатый гектар — 500 центнеров корма.

Вечером вся семья была в сборе. Дети сели за урок, Григорий Кузьмич подсел к ним. Вытащив из нагрудного кармана блокнот, написал на нем:

«На свекле израсходовано 200 человеко-дней, заработано 400 трудодней». А еще ниже – распределение: Евдокии – 200 трудодней, Василию – 100, Петру – 50 трудодней, Ване – 40, и маленькому Георгию — 10. Сам себе не взял ни одного трудодня.

...Зал колхозного клуба был переполнен. Шел разговор о чести хлебороба. Тогда-то и сказал заместитель секретаря партбюро Иосиф Иванович Шашков:

– Взять, к примеру, Галкиных. Действительно, поработали на совесть. Посмотрите-ка, товарищи! – Он поднял над головой огромную свеклу, – Это лишь крупица из 500 центнеров, которые они получили.

**В. Кузьмин.**

## ТУНСĂХЛАВ ХӲХЛЕВĔ

Çуралнă вырăнĕшĕн такам та тунсăхлать. Тăван çĕр, тăван ял-хула, тăван çĕршыв пуриншĕн те хаклă, пурин ăшĕнче те пытанса пурăнать. Хурăнсурсемшĕн те çавах ĕнтĕ, хăйсем ялтан уйрăлса кайнă хыççăн каялла нумай çул хушши таврăнаймасăр аякра пурăнаканскерсемшĕн çав тунсăх вăл, паллах, чĕр нушах. Тăван çĕршывшăн тунсăхлаттаракан нимле тухтăр тавраш сыватайми чир – ностальги текен этемлĕх чирĕ – Хурăнсурти Ултуттипе Кĕркури Кузьминсен, Галкинсен кăткă тĕми пек йăшăлтатакан çемйине те асаплантарма пуçланă. Вунă ача ӳстернĕскерсем вĕсем çулăн-çулăн чĕпписене анлă çĕршыва вĕçтернĕ. Асли, Уçтен ятли, Çĕрпелти вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн унтах пионер вожатăйĕнче ĕçлесе кăштах укçа та илме пуçланăччĕ. Малалла вĕренес туйăм ăна çывăрма памасть, вара вăл хăйĕн ĕмĕтне пурнăçламашкăн Çĕпĕрелле çул тытать, этеме сыватса савăнтармалли специальноçа тăрăшсах алла илет.

Çапла Иустиния Григорьевнан пурнăç çулĕ, хăйĕн чунчĕре ăнтăлăвне, ăсталăхне, пултарулăхне пула, хĕвеллĕ



**Ӳкерчĕкре (сулахайран): пĕрремĕш ретре – Клавдия Владимирова, Петр Иванов-Пумпур, Иван Федоров, Петр Ковский; иккĕмĕш ретре – Иван Крипчаков, Мартын Юханов.**

çутăпа йăлкăшма тытăнать. Çамрăк офицерпа, украин каччипе пĕрлешнĕ хыççăн унăн малашлăхĕ пĕтĕмпех Совет Çарĕн çăмăл мар службипе çыхăнать. Пĕр гарнизонран теприне куçа-куçа çӳресе Борис Ведеев полковник çемйи яланлăхах Хусанта тин йăва çавăрать.

Ытти вырăсланнă хăш-пĕр чăваш хĕрĕсем пекех Уçтен те хăй сисмесĕрех Ирина пулса тăрать. Ют ятпа-хушаматпа пурăнса каять чăваш хĕрĕ. Çемье чĕлхи те ĕнтĕ вĕсен – вырăс чĕлхи. Чун-чĕринче çеç иккĕшĕн те – ностальги чирĕ. Упăшкин – Украина çĕршывĕ, арăмĕн – Чăвашстан.

Пĕр-пĕрин хушшинче вĕçĕмсĕрлĕх çыру çӳретнине пула эпĕ Уçтен хăйĕн çуралнă кĕтесне пăрахаймасăр, ял çыннисене, хăйне вĕрентнĕ ăслайсене манма пултараймасăр ялан ырăпа асăннине туйса тăнă. Чăвашсен обществăпа культура центрĕн "Вучах" хаçатне ярса парса вулаттараттăм ăна. Унта эпир, чăваш халăхĕн ăсчахĕ Юхма Мишши ертсе пынипе, тулай чăвашĕсене тĕп вырăнти чăвашсен шухăш-туйăмĕпе пĕрлештерме хамăрăн чăваш тĕнчинче пуç çĕклеттерессишĕн, çĕршывра, тĕнчере хамăр ята пĕрлешсе



**Вăрçă чарăннă ĕнтĕ... Фронтра çапăçнă Федор Герасимов Карачăмкассинчен Федор Шахалова Совет Çарне ăсатать.**

кĕрлеттерессишĕн ҫĕкленӳллĕ, тарăхуллă, тарăн шухăшлавлă материалсем пичетлеттĕмĕр. Вĕсем нумай пуҫлăхăн куҫне уҫатчĕҫ. Тĕнче чăвашĕн калаҫăвĕ – уҫă калаҫăвĕ янăратчĕ Камчаткăран пуҫласа Балти тинĕсĕ таранах. Ҫав калаҫу хумне, ытти нумай-нумай чăваш хĕрĕсемпе яшĕсем хушшинче пирĕн ялти Галкки Уҫтенĕ те лекнĕ. Ашшĕ унăн кӳршĕри Ҫĕрпелти Галкинсен йăхĕнчен пулнăран ăна ҫапла каланă, калатчĕҫ те ялта. Чун ыратăвĕпе ҫырнă хайлавне унăнне эпĕ хаваспах "Вучахра" пичетлерĕм. Чăвашла йĕркеллĕ ҫырма "маннăскерсене" ĕнтĕ вĕсене эпир каҫараттăмăр. Иустиния Григорьевнана та хăй шухăшлавлă вырăс чĕлхипех халăх умне кăлартăмăр. Хамăр ял ачисен аякри тунсăх юрри халĕ те, Уҫтен хӳхлевĕ пекех, хăлхара.

**<u>Дорогие мои земляки!</u>**

На страницах газеты «Вучах» я прочитала несколько интересных и злободневных статей, затрагивающих душу. Да, действительно горько и плачевно, когда мы, дочери и сыны чувашского народа, разбросанные по всему свету, постепенно теряем и свой родной материнский язык, и свою самобытную богатую культуру. Виноваты в этом, конечно, мы и сами, но и повседневная кипучая жизнь, в водовороте которой нам пришлось оказаться ослепленными и стянутыми в другое течение и надолго (может быть навсегда!) оторванными от любимых родных мест, дорогих родичей, а самое главное, от своего единственного родного языка.

Детство мое прошло в Хорнэорах, что в Вурнарском районе Чувашии. По воле судьбы и я, как многие юноши и девушки наших чувашских деревень, пошла, как говорится, в люди, – так страшно хотелось учиться. Мечту я свою осуществила, получила медицинское образование. Попав в воинскую часть, там подружилась с одним офицером, сыном председателя Кирсановского горисполкома Тамбовской области Борисом Ведеевым, который родом из Украины. Так чувашка с украинцем мы создали семью,



Семья Иустинии–Ирины и Бориса Ведеевых



вырастили дочь. С этим полковником живем мы сейчас в Казани. Семейным языком стал русский.

Как бы я не старалась сохранить свое национальное, но в повседневной жизни, в гарнизонах, в отрыве от чувашской диаспоры, я постепенно отвыкала от своего языка. Разговаривать могу, но писать и читать мне уже трудно на чувашском. Поэтому иногда пишу белые стихи на русском. Я много читала и сейчас читаю каждое свободное время. Очень люблю русскую и мировую классику, не пропускаю и современную литературу. Много произведений татарских писателей в переводе на русский язык прочитала. Но в Казани не могла найти

переводной чувашской литературы. Хочется читать о просветителе чувашского народа (говорят, что о нем есть несколько романов) Иване Яковлеве. Если они переведены на русский язык, сообщите, пожалуйста.

Мне могут сказать: а почему вы не стараетесь восстановить свой язык в памяти своей? Да, правильно. Надо бы. Но только поздно уже, в нашем возрасте, когда в душе и уме закрепилось годами то прекрасное, – то и самое прекрасное чувашское в мире, не сможет его вытеснить. Мою мысль могут подтвердить многие чуваши, оказавшиеся в цивилизованном водовороте человеческих судеб.

Как бы все это не было, но душа моя все равно останется родной – чувашской, потому что во мне бурлит чувашская кровь. И я горжусь успехами и достижениями своего народа. Чтобы быть поближе к своей нации, буду посещать Чувашию, буду читать о чувашской земле, о народе, истории, культуре.

Всем землякам желаю больших благ, успехов.

**ЭТОТ СТРАННЫЙ МИР**

Не стоит искать того, чего нет на свете,
Не стоит выражать то, от чего нет толка.
И без этого приторный и тошный нынешний свет.

Захламлено все, даже наш будущий шаг.
Лень и безнравственность стуманили ясность,
Отупело чувство благородства.
Плачет любовь!

Растворилась стойкость, утонула совесть.
Запуталась душа, разум помрачнел,
Взгляд потупел...

Гарцует воровство! Барствует уголовщина!
Танцует низость, вытесняет хамство!
Выпячивается наркомания, убивает садизм!

Кипит зло людское...
Теряются идеи... Стонет мудрость!

Добротность и тонкость
Зовут нас к себе,
А трудоспособность обещает жизнь и свет.
Земля родная! Дай терпенье и сознание,
Чуточку покоя и удовлетворения.

Ирина Ведеева.
Казань.

* * *

Пурӑна киле кашниех эпир ачалӑха аса илме тытӑнатпӑр, мӗншӗн тесессӗн вӑл вӑхӑтра пурте тӗнче илемне тарӑнраххӑн куҫпа курса аталанать-ҫке. Пурте – тӗлӗнмелле! Ҫав тӗлӗнтерӳ ачалӑхран ватлӑха ҫитсе те чуна ҫӗклентерме пӑрахмасть. Галкки Уҫтенӗн – Ирина Ведееван та – ҫав вӑхӑт ӗмӗр ҫуркуннийӗ пек. Ачалӑх туйӑмне манаймасӑр ҫырать вӑл:

«Как у многих малышей, детство мое протекало в беззаботном пространстве. Было много солнца, чистого воздуха. У каждого из нас детство – всегда незабываемое время. Оно очень яркое, красочное, интересное, шумное, веселое, радостное и огромное, как небо.

Совершая свой первый естественный шаг мы параллельно совершаем такое же действие в нашем духовном мире. Тогда клокотало мое детское сердечко любознательностью. Каждое утро приносило мне что-то новое. И сейчас так четко представляю свои детские годы.

В то время сельская библиотека, расположенная в клубе, служила и мне, где так мало было дошкольной литературы. Но зато на стенах висели различные картины. Впоследствии я узнала в них русских классиков Льва Толстого, Ивана Тургенева, Николая Некрасова, Александра Пушкина, Михаила Лермонтова и других. Эти разные лица по-разному поражали меня. От ихнего молчаливого взгляда я иногда терялась и застенчиво пряталась, отводив глаза в сторону. По утрам, когда клуб

открывался, приходя в библиотеку, я снова жадно глядела на них, будто мысленно присутствовала их. Уходя, бросала тревожный взгляд то на портреты писателей, то на заведующего клубом и библиотекой Иосифа Ивановича Шашкова, трепеща как бы в моем отсутствии он не заменил эти портреты другими картинами.

Прошли годы и тогда я поняла библиотекаря, который страстно любил читать и был ценителем художественной литературы. Разве он мог бы жить без этих портретов тогда и сейчас? Эти портреты мыслителей притягивали сельских читателей к себе образами своих произведений. Такие волнения тревожили мой детский ум.

Да, было у меня все интересное в деревне. Вместо городской детской площадки с песочником была целая однорядная улица с травкой-муравкой и с широкими столообразными пнями старых ветел, расположенных цепочками возле мелких водоемов. Тогдашняя пышная, сочная, ярко-зеленая, ароматная травка – так же являлась ковром для прыжков и кувырканий. Спортивные сооружения заменяли уличные лавочки у каждых ворот.

Были и своеобразные экскурсии, т.е. короткие путешествия из одной деревни в другую с целью проведать родственников, куда с радостью отправлялась со своей мамой-няней – нашей бабушкой. Такие случаи переполняли счастьем мое беспокойное сердечко, собираясь, я уже чувствовала вот-вот по пути окажусь в сказочном мире, вот они, живые сказочные сцены, где много-много полевых цветов: васильки, ромашки, одуванчики, кашки. Разноцветные лужайки так и манили к себе всех, радовали пестротой красок, ароматным запахом. Здесь прыгали с места на другое место стрекозочки, торопились куда-то жучки-паучки, лакомились пчелки, осы, пестрые бабочки только и мелькали перед глазами, ползали по траве незнакомые мне червяки. Это чудо происходило под исполнением

великолепной музыки – птичьим оркестром, воспринять все это – какое наслаждение!

По дороге кого только не встретишь. Пастуха с самодельной свирелью из липовой ветки около большого овечьего стада, на той стороне дороги недалеко от оврага пасущихся коров, а еще дальше в низине расположившихся домашних гусей для отдыха. В неглубоком овраге рядом с дорогой с полным удовольствием и визжанием обливались мутной водой толстые свиньи с поросятами. Рядом с лесом паслись лошади. Такие «походы» помогали мне оказаться в сказочном мире животных.

Иногда славная няня-бабушка брала меня с собой в церковь, которая находилась в шести километрах от нас. Удивляло меня там одно – настроение людей, хотя всюду покой и не было никаких причин для переживания. У них лица были чем-то озабочены. Звучали печальные песни сверху. Поникшие старушки боялись поднимать головы. А меня удивляло то, как можно не восхищаться такими яркими картинами. Например, вот совсем рядом и не высоко поместили картину, где нарисован такой боевой, смелый, человек с копьем, сражающийся с многоглавым змием. Как же с опущенной головой пройдешь мимо такого чуда.

Вот только беда заключалась в том, что моя мама-няня долго оглядываться по сторонам не давала волю, страшила исходом, дескать ослепнешь, если долго будешь смотреть на иконы. А ослепнуть я очень боялась, потому что моя мама-няня сама была почти слепая. Тогда я умоляла ее, чтобы она меня отпустила отсюда на улицу – на свежий воздух. Ради нежной любви ко мне, хотя и не с большим удовольствием, она выполняла мою просьбу.

Оказавшись во дворе, я продолжала наблюдение. Высота церквушки всегда пленила меня, ее купол и своеобразная постройка с колоколом, забор с

многочисленными воротами. Окружающие клумбы красовались, захватывая дух от высоких хризантем и георгинов. Затем я отправлялась к дяде Василию. Он был высоким с богатырским станом и имел богатую бороду, выполнял самую незначительную работу: кипятил воду и всем желающим разливал по железной кружке кипятка. По тротуару часто взад и вперед похаживала тетя Елена. Она была монахиней и носила черную одежду и огромные сапоги. При встрече всегда гладила мне по головке. Я с удивлением хотела понять то, что откуда она меня знает.

Мама-няня была жизнерадостная. На обратном пути из Артеменькина домой, она забывала все свои печали, куда-то девались недавние слезы. Между нами разговор получался полудетский, похожий на взрослый с некоторыми причудами.

Все это мне казалось счастьем, и до сих пор я с нежностью вспоминаю о них, как о самых мирных днях моей жизни, которые протекали где-то в конце сороковых и начале пятидесятых годов.

С тех пор много изменилось. Конечно же давно сгнили широкие старые пеньки, на их месте шумят молодые деревья, обмелели и сравнялись с землей некоторые сельские пруды, да и давненько сгорела под ударом молнии Артеменькасинская сельская церковь... Но память жива.

Как знать, может дети-ровесники мои хорнзорские, как же еще намного лучше воспринимали свой начинающий мир, что они вынесли из своего детства. А что еще могли бы?..

Вот пожалуйста, в то время запечатлилось во мне мое скромное детство в такой форме. Я вспоминаю этот отрезок моей жизни с нежностью, хотя ничего тут необычного-смешного нет. Это - мое восприятие, т.е. обычному деревенскому ребенку воспринималось чудо его сладкого мира сорок с лишним лет тому назад.

В сельской суете я и не заметила как стала школьницей. За партой уже в голове начали кружиться иные миры – миры образовательных познаний.

Незабываемый выпускной вечер в саду Янгорчинской средней школы. Нам все казалось таинственно, что наша жизнь станет цветущей так же как наш цветущий яблоневый сад, но пути-дороги расстилались у каждого по-разному. Каким тернистым будет наш жизненный путь – мало кто мог глубоко задуматься в тот таинственный, бурлящий воспоминаниями и крылатыми мечтами прощальный школьный день.

Благодарна я Свету божьему за то, что были в моей жизни такие благородные люди, мои учителя и наставники как Аверкий Осипович, Никифор Кириллович, Валентина Матвеевна, Вениамин Михайлович Дерягин, Василий Сергеевич, Петр Константинович, Семен Гаврилович, Нина Ивановна и Семен Данилович, Мария Спиридоновна, Цета Васильевна, Римма Ильинична, Иосиф Иванович, соседка наша Ольга Захаровна.

А благодарность родителям – это особая оценка. Мать после меня родила еще девятерых и она вместе с мужем фронтовиком-инвалидом нашла силы вырастить и воспитать их достойно. Патриотический дух нашей славной деревенской общины всегда во мне".

Акă мĕнле вăл хурлăхлă та, савăнăçлă та, хăпартлануллă та тĕнче касса çӳрекен Хурăнсур Çармăс ачисенчен пĕрийĕн тăван ял тунсăхĕн хӳхлевĕ. Хамăра курăнман вăй çапах та пире тăван килпех çыхăнтарать. Тăван кил вăл – пирĕн ĕмĕрлĕх тăван çĕршыв.

## Мухтанмашкăн тивĕçĕ пур

Иртнĕ ĕмĕр варринелле, çирĕм çул хушшинче, Чăваш çĕршывĕ те колхозлă-кооперативлă харпăрлăх йĕркине общество пурнăçĕнче палăрмаллах çирĕплетнĕ. Çапах та ăна малалла аталантармашкăн ял хуçалăх производствинче курăмлă çитменлĕхсем пурри палăра пуçланă. Вĕсенчен пĕрин сăлтавĕ вăл – пĕрлешӳллĕ вак хуçалăхсем. Чăваш АССРĕнче 1500, Вăрнар районĕнче 100 колхоз шутланнă. Тĕлĕнтермĕшле, Уравăш икĕ колхоза пĕрлештерсе

тăратчĕ. Вунă-çирĕм, вăтăр-хĕрĕх киллĕ ялсем те хăйсем чăмăртанса ĕçленĕ.

Çĕршывăн аслă органĕсенче аталану чăрмавне сирсе ямалли майсене шыранă, майĕпен тупнă вĕсене: вак хуçалăхсене пĕрлештерсе пысăклатмалла! Ку çĕнĕ юхăм Атăл тăрăхне те кĕтӳç пушшине çаксах çитнĕ. 1950 çулхи çу кунĕсенче Хурăнсур Çармăсра колхозниксен пухăвĕ çурхи пĕве татса кайнă хыççăнхи шыв пек шавласа иртет. Эртел калаçăвне Иван Маркович Марков йĕркелесе ертсе пынă. Çӳлтен хушнине пĕр сăмахсăр пурнăçлама хăнăхнă хресченсем юнашарти Ленин ячĕпе тăракан колхозпа пĕрлешме хирĕç марри çинчен, пурте пĕр шухăшлах мар пулин те, пĕр харăссăн алă çĕкленĕ.

Астăватăп, эпир те, вун виççĕри ачасем, Турхай уйĕнче сĕлĕ выраканскерсем, аслисемпе пĕрле çĕрпелнелле васкарăмăр. Пирĕн, çĕршыв тытăмĕн йĕркине ăнлансах çитереймен "çăпата паттăрĕсен", нимĕнле тарăн шухăшсăрах халăх йышлă пухăнакан çĕрте мĕнле те пулин интерес курас ĕмĕт пулнă. Чăнах та, ĕлĕкхи Çĕрпел чиркĕвĕн лапамне, сип-симĕс курăк ӳсекен мăн çырма пуçне, тукайсем, çĕрпелсем, хурăнсурсем йышлăн пухăннă. Пысăк грузовик кузовĕн айккисене уснă та калаçмалли çӳллĕ вырăн тунă. Партипе правительство йышăнăвне ырлакансем хушшинче эпĕ хамăр ялти уксак, хăрах алăллă Шлык Михалине, фронтран таврăнсан пĕр хушă çĕрпелсен председателĕ пулнăскерне кăна лайăх астуса юлтăм. Вăрнартан килнисем çӳлтен халăх çине мăн кăмăллăн та хаяррăн куç пайăркисене салатнине халиччен те манмастăп. Тухса калаçакансенчен чылайăшĕ: "Аслă çул пуçăмăра мухтав!"; "Сталин юлташ пире телей кӳрет!" тенисем пуçра тӳнклетсе тăраççĕ.

Çапла вара Çӳлти турă тата Мускаври турă мехелĕпе вăрçăччен пачăшкă çурчĕ пулнă капăр çурт умĕнче, çӳллĕ йывăçсем айĕнче, Вăрнар районĕнчи Ленин тата Чапаев ячĕпе, Шăхасан районĕнчен хăпăтса илнĕ "Первое Мая" тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсем пĕр чăмăра

пĕрлешрĕç.Чăмăрĕ, паллах, самай сулмакланчĕ: кил хуçалăхĕсем улт çĕре, ĕçлекен çыннисем тăхăр çĕре яхăн, çĕрĕ икĕ пин çурă гектара çитрĕ, выльăх-чĕрлĕхĕ, чăххи-чĕппи йышланчĕ, техника нумайланчĕ. Çĕнĕ уставлă пĕрлешӳллĕ хуçалăха Ленин ячĕпех хăварчĕç. Пирĕн "Чапаевпа" тукайсен "Калининĕ", "Первое Мая" ялавне усса, истори хапхи патнелле лĕпĕстетрĕç.

Çĕнĕ хуçалăха ертсе пыракансен шутне "Хурăнсур" хуçалăхăн малтанхи ертӳçисенчен пĕри пулнă М.С. Шлыкова, В.А. Воробьева агротехника, Н.И. Ивановпа Ф.И. Шашков бригадирсене кĕртнĕ. Пĕрлешнĕ хыççăн Çĕрпелте тăвата, Хурăнсурта виçĕ, Кайри тата Хирти Тукайра пĕрер бригада тунă. Çармăссен пĕрремĕш бригадин бригадирне И.Ф. Федорова, иккĕмĕшĕнне Ф.И. Шашкова, виççĕмĕшĕнне Ф.А. Шахалова, унсăр пуçне махорка, хăмла, коксагыз бригадине ертсе пыма А.М. Михайлова суйланă.

Мăн лав йывăррăн малалла, тăвалла улăхма пуçларĕ. Çĕршыв аталанăвĕн юрттинче вăл хăйне майлă ӳсĕмсем туса пычĕ. Пирĕн ял бригадисем çĕрпелсемпе тукайсеннинчен начар ĕçлемен. Хурăнсурта сысна ферми вăйланчĕ. Механизаци, цех системи, шалти хуçалăх расчечĕ, специализаци, наука çитĕнĕвĕсемпе усă курни, кадрсене вĕрентсе ăс пани колхоза мала тухма пулăшрĕç. Пĕрлешнĕ вăхăталла тăвата колхозĕ те гектартан вунă центнертан ытларах тырă туса илеймен пулсан, тĕш тырă тупăшĕ çирĕм çул хушшинче Ленин ячĕллĕ колхозăн виçĕ хута яхăн ӳсрĕ. Гектартан 200-250 центнер çĕр улми çитĕнтерме вĕренчĕç. Выльăх-чĕрлĕх тупăшĕ ӳсрĕ. 1971-1975 çулсенче, тăххăрмĕш пилĕк çуллăхра тухăçлă ĕçленĕшĕн, колхоза Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăларĕç. Кун хыççăн хуçалăхăн чапĕ татах та хытăрах янăрарĕ. Пĕрлешӳллĕ вак хуçалăхсене мăнлатнин уссине халăх куçпа курса савăнчĕ. Икĕ аслă турă кăтартнă çул тĕрĕссине ăнланнă çĕртех...

Патшалӑх тытӑмӗнче хирӗҫ тӑру сиксе тухнӑ хыҫҫӑн ҫӗршыври тарӑн улшӑнусем чӑваш ҫӗрне те чӗтретсе илчӗҫ. Уҫҫӑнлӑх самани ҫынсен чунӗнче ҫӗнӗлле вӑйхал чӗртрӗ, пуҫне урӑхларах шухӑшлаттарчӗ, яланхи хушу йӗркине салатрӗ. Мӑн ҫемьере вуншар ҫул хушши тамалса пынӑ хирӗҫле шухӑш уҫҫа сиксе тухрӗ, хуҫалӑх тытӑмӗн ҫыххине патах татрӗ. Ҫыхнӑ шӑпӑр та майӗпен саланать тенешкелех пулса тухрӗ. 1993 ҫул пуҫламӑшӗнче вара Хурӑнсур Ҫармӑс халӑхӗ ҫӗрпелсемпе тукайсенчен мирлӗн уйрӑлса хӑй тӗллӗн пуҫласа ячӗ ҫӗнетӳ пурнӑҫне.

“Хорнзор” ял хуҫалӑх эртелне-пӗрлешӗвне хамӑр ял ачи Федор Григорьевич Кузьмин ертсе пыма пуҫларӗ. Унччен вӑл, Чӑваш ял хуҫалӑх институтӗнчен агронома вӗренсе килнӗ хыҫҫӑн, Хурӑнсур ялӗн бригадирӗ, Вӑрнарти сортсем тӗрӗслекен участок начальникӗ, “Янгорчино” колхоз председателӗ пулнӑччӗ. Хӑй тавра шанчӑклӑ та пултаруллӑ ҫамрӑк камантӑ пухни ӑна ӗҫлеме вӑй пачӗ. Алла-аллӑн тытӑнса, пӗрне-пӗри ӑнланса вӗсем ял ҫыннисене патриотла туйӑмлӑн хавхалантарса ҫӗклентерчӗҫ. Ҫавна пула “Хорнзор” кӗске вӑхӑтрах йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе, республикӑри чи вӑйлӑ хуҫалӑхсен ретне тӑчӗ, Чӑваш Республики президенчӗн аллинчен Шупашкарта кашни кӗр сӑринче е хӑватлӑ трактор, е укҫан пысӑк преми иле-иле пычӗ.

Федор Григорьевич чӑннипех хӑй ҫивӗч, ӑслӑ, ҫаврӑнӑҫуллӑ, мал курӑмлӑ ертӳҫӗ-йӗркелӳҫӗ, интеллигентлӑ хресчен пулнине ӗҫӗ-хӗлӗпе республика шайӗнче кӑтартса пачӗ. Институтра чухнех Союз, Раҫҫей шайӗнче палӑрнӑ спортсмен ял ҫамрӑкӗсене физкультурӑпа спорт ҫумне ҫывӑхлатрӗ. Колхозӑн тӗп усадьби ҫумӗнче хоккей корчӗ тутарчӗ (хӑй “Хорнзора” ӗҫлеме куҫсанах ӑна куҫ умӗнчех шелсӗр тӗп турӗҫ), футбол камантине ҫӗнетрӗ. Ҫамрӑкранах илеме юратма хӑнӑхнӑскер, “Янгорчино” колхоз театрне йӗркелерӗ, чылай спектакль лартса таврари халӑха савӑнтарчӗ.

Хурӑнсурта ҫӗр ҫынлӑ ансамбль ӗҫлеттерсе ячӗ. Ӑна хӑй ҫине тӑрса ертсе пынипе 1997 ҫулта ансамбль халӑх коллективӗн ятне ҫӗнсе илчӗ. Артистсене халӗ шӑллӗ Михаил Кузьмин ӑнӑҫлӑ ертсе пырать. Этнографи музейӗ уҫассишӗн миҫе ҫул чупса ҫӳрет ӗнтӗ ял халӑхӗн пуҫлӑхӗ, ӑҫта кӑна ҫитсе мӗн-мӗн тӗрлӗ авалхи экспонат, документ шыраса, тӗпчесе тупмарӗ пуль. Ял халӑхӗн пултарулӑхне пур енлӗн, сӑнарлӑн, тӗп-тӗрӗс кӑтартма тӑрӑшать. Ял ҫумӗнче ҫӗнӗ урам – Ҫамрӑксен урамӗ – турӗ. Ун ҫумӗнчех – ҫӗнӗ стадион. Урамсене йывӑҫ, уйрӑмах хурӑн ларттарса симӗслетрӗ. Ял хушшине асфальт сартарчӗ. Яла ыттисенчен маларах газ кӗртес тесе мӗн чухлӗ сывлӑхне хавшатмарӗ-ши Вӑрнар, Шупашкар тата ытти хуласене ҫитсе ҫӳресе. Хурӑнсур Ҫармӑс пуҫланса кайнӑранпа 320 ҫул тултарнине 1999 ҫулта тӗлӗнмелле ӑста йӗркелеме пултарчӗ – мехел ҫитерчӗ вӑл. Чӗннӗ хӑнасем валли уйрӑм килсенче ятарласа шӳрпе пӗҫерттернӗ. Уҫӑ сцена ҫинче ирттернӗ савӑк калаҫу, Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн председателӗн пӗрремӗш ҫумӗ П. Ивантаев Чӑваш Ен президенчӗ ячӗпе хуҫалӑха 50 пин тенкӗ преми панӑ, "Чувашгаз" предприяти ертӳҫипе А. Поликарповпа пӗрле иккӗшӗ газ факелӗ чӗртнӗ, ял пуҫланса кайнӑ ҫырма пуҫӗнчи ҫӑлран техӗмлӗ шыв ӗҫнӗ, ялти "Ҫӑпата" ансамбль концертне пӑхса киленнӗ хыҫҫӑн аякри хӑнасем ял ҫыннисемпе, хурӑнсурсем вӗсемпе кӗреке хушшинче туслӑн калаҫса ӗҫсе ҫирӗҫ. Сцена ҫӗрӗпе ӗҫлерӗ, ун умӗнчи лапамра ватти-вӗтти хӗпӗртесе ташларӗ. Плешков Элекҫисен кил кӗтессине вырнаҫтарнӑ круҫҫель ҫинче хамӑр ял купӑсҫисен кӗввипе ярӑнса килентӗмӗр.

Федор Кузьминӑн яланах ҫӗнни, ҫынсен ку таранччен ҫукки сиксе тухать сисмесӗрех. Вӑл ытти хӑш-пӗр пуҫлӑхсем пек вӗҫкӗнленсе шавлӑ ӗҫкӗ-ҫикӗре юрласа-ташласа кӑтартмасть хӑйӗн пултарулӑхне. Унӑн пултарулӑхӗ – халӑх – тӑван ял ҫыннин – тулӑх пурнӑҫӗпе тулли кӑмӑл-туйӑмӗшӗн вӑхӑтне шеллемесӗр

тăрăшнинче. Çĕн клуб та пулать унăн, çĕнни, татах çĕнни çуралса тăрать тăнлă пуçĕнче.

Чыс-хисепне Ф.Г. Кузьмин чăннипех тивĕçнĕ ĕнтĕ. Ăна Чăваш Республики ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ята пачĕç. Чăваш Республики Аслă Канашĕн виççĕмĕш суйлаври депутачĕ пулнă май, вăл районшăн та, ялшăн та, нумай-нумай суйлавçăшăн та вĕçĕмсĕр ырă ĕç турĕ. Нимле йывăрлăх умĕнче те алла усса ларман кĕрешӳçĕ-çĕнтерӳçĕ яланах ăслă шыравра.

Хурăнсурта вăрçăччен те, ун хыççăн та çирĕп кăмăллă, хастар çынсем пулман мар, пулнă. Михаил Шлыков, Петр Шлыков, Иван Федоров, Федор Ананьев, Иосиф Михайлов, Иосиф Шашков, Иванпа Денис Марковсем... Анчах Федор Кузьмин шайне çитекенни ку таранччен çуралман-ха.

Ĕçчен те паттăр хресченсем вĕсем – хурăнсурсем. Вĕсен – хăйне евĕр кăмăл-туйăмĕ, мухтавĕ. Çĕрпелсемпе-тукайсемпе алла-аллăн тытăнса пĕрле, пĕр шухăшлăн çĕн пурнăç çуртне купаланă 43 çул хушшинче уйрăмах палăрнисем сахалăн мар. Акă, Николай Степанович Степанов бригадира, Анна Ивановна Максимовапа Людмила Андреевна Падирекова сысна пăхакансене 3-мĕш степеньлĕ Ĕç Мухтавĕн орденĕпе; Виктор Иванович Плеханов тракториста Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе; Агапия Алексеевна Мулла, Нина Ивановна Иванова, Раиса Фокинична Тарасова сысна пăхакансене, таварлă сысна фермин заведующийĕсене Трофим Васильевич Васильева, Георгий Арсентьевич Михайлова, колхозăн тĕп бухгалтерне Василий Иванович Маркова "Хисеп палли" орденпа; Ольга Арсентьевна Михайлова ĕне сăвакана, Григорий Феофанович Феофанов шофера, Надежда Андреевна Сергеева сысна пăхакана "Ĕçре палăрнăшăн" медальпе; Василий Иванович Марков тĕп бухгалтера, Çĕрпел ял Совечĕн секретарьне Нина Яковлевна Антонована, Елизавета Константиновна Антонова сысна пăхакана Чăваш АССР Верховнăй Совет



Чăваш Автономлă Советлă
Социализмлă Республикин
Верховнăй Совет
Президиумĕ

ХИСЕПЛĔ ГРАМОТА
парса наградăлать

Президиум
Верховного Совета
Чувашской Автономной Советской
Социалистической Республики
награждает тов.

ПОЧЕТНОЙ ГРАМОТОЙ

президиумĕн Хисеп грамотипе; Мария Георгиевна Алексеева сысна пăхакана, стройка бригадирне Зоя Ивановна Шашкована, Василий Иванович Марков тĕп бухгалтера КПСС Чăваш обкомĕпе Министрсен Совечĕн Хисеп грамотипе наградăланă; Яков Мефодьевич Федоров тракториста Чăваш АССР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Зоя Елизаровна Маркована Чăваш АССР тава

тивĕçлĕ агрономĕ, Василий Иванович Маркова Чăваш АССР тава тивĕçлĕ экономисчĕ, Станислав Николаевич Николаева Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ хисеплĕ ятсем панă.

Хурăнсурти çĕре яхăн пенсионер "Ĕç ветеранĕ" медаль илнĕ.

"Янгорчино" колхозăн "Хисеплĕ колхозникĕ" ятне панисем хушшинче хурăнсурсенчен çаксем: Михаил Степанович Шлыков, Никита Филиппович Бардасов, Василий Харитонович Харитонов, Анна Владимировна Шашкова, Екатерина Терентьевна Терентьева, Василий Иванович Иванов, Арсентий Михайлович Михайлов, Агапия Алексеевна Мулла, Филимон Иванович Шашков, Анна Ивановна Иванова, Мария Максимовна Максимова, Иван Федорович Ухтериков колхозниксем.

Сергей Степанович Степанов, Иван Федорович Ананьев, Василий Павлович Павлов, Вениамин Тихонович Тихонов, Иван Георгиевич Бардасов, Василий Романович Романов, Константин Васильевич Васильев, Петр Семенович Афанасьев трактористсем; Николай Никитич Никифоров, Павел Антонович Антонов, Александр Иванович Плешков, Анатолий Филимонович Шашков, Павел Васильевич Квасов шоферсем; Петр Иванович Иванов, Федор Николаевичпа Радик Федорович Анисимов-Шахалов, Ксенофонт Филиппович Филиппов комбайнерсем; Прокопий Павлович Падиреков тимĕрçĕ, ытти вуншар ĕçчен сывлăха хĕрхенмесĕр кунĕн-çĕрĕн колхозшăн, çĕршывшăн вăйне-халне шеллемен.

Вĕсен паттăрла ĕçне те шута илсе, 1970 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче "Янгорчино" колхоза РСФСР Верховнăй Совечĕн Хисеп грамотипе, 1975 çулта КПСС Тĕп комитечĕн, СССР Министрсен Совечĕн, ВЦСПСăн тата ВЛКСМ Тĕп комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕпе, 1985 çулта РСФСР Министрсен Совечĕн тата ВЦСПСăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕпе чысланă.

Пур наградинчен те чи хаклăраххи те сумлăраххи вара – Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ.

Пурте пĕрле тăрăшнă, ĕçре çĕнтернĕ, колхозăн хула евĕр усадьбине савăнса тунă. Çĕршыв кисренĕвĕнче колхоз икĕ пая пайланчĕ. Арканнă Совет Союзĕн награди çеç никам тĕкĕнмесĕр ĕмĕрлĕх сыхланса юлнă. Мĕнех, çĕрпелсемпе-тукайсемпе танах эпир те, хурăнсурсем, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăх коллективĕ тесе мухтанма пултаратпăр. Мухтанмашкăн тивĕçĕ пур.

***

Уйрăлса тĕрекленнĕ "Хорнзор" ял хуçалăх производство кооперативĕн ĕçченĕсем яланхиллех çулсерен паттăрлăх кăтартаççĕ. Чи пултаруллисем ялта кăна мар, республикăра та мухтавĕпе палăрчĕç. Фермăра вăтăр çул хушши выльăх пăхнă Анатолий Петрович Антонова, пыл хурт-хăмăрĕн ăстине Алексей Иванович Иванова, Нина Степановна Петрова ĕне сăвакана, Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Михаил Яковлевич Максимова Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ агрономĕ, Василий Романович Романова Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ механизаторĕ, ялти стройкăра чĕрĕк ĕмĕр тăрăшнă Зоя Ивановна Шашкована Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ хисеплĕ ятсем панă.



**Зоя Ивановна Шашкова – строительство бригадин бригадирĕ. Юлашки çулсенче нумай çурт-йĕре унăн бригади тунă.**

***

Хĕритун Ваçлин хĕр ачи Анюта Çĕрпелти вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Вăрнарти ял хуçалăх техникумне, Чăваш ял хуçалăх институтне пĕтернĕ, "Янгорчино" колхозра вунă çул агрономра ĕçленĕ, 1982 çултанпа – патшалăх тырă вăрлăх инспекцийĕн Вăрнарти филиалĕнче. 2001 çулта ăна

Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ агрономĕ ята панă.

Вăрнар хыçĕнчех вăрман питомникĕ пур. Хамăр ялта ĕçленĕ хыççăн, нумай çул хушши çавăнта тăрăшать Хурăнсурăн тепĕр чаплă хĕрĕ Нина Федотовна Давыдова. Вăрман ўстерес çĕрте уйрăмах палăрнăшăн ăна 1987 çулта СССР патшалăх премийĕн лауреачĕ ятне панă.

Анатолий Иосифович Шашков Канашри медицина училищинчен вĕренсе тухнă хыççăн, хăйне Хурăнсурти фельдшер пункчĕн заведующине лартсан, халăх сывлăхне сыхлас ĕçе юратса пуçăннă. Чăваш патшалăх университетĕнче аслă пĕлў илнĕ тухтăр Канаш районĕн тĕп пульницинче ĕçлет, çичĕ çул районăн тĕп врачĕ пулать. Ăста невропатолога "Раççей Федерацийĕн сывлăха сыхлас ĕç отличникĕ" паллăпа наградăланă, 2000 çулта Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ хисеплĕ ят панă.

Çĕр ĕçне тăван ял уйĕнче, ферминче пуçланă тава тивĕçлĕ ентешсем пирĕн аякри хуласемпе облаçсенче, крайсенче татах та нумай. Вĕсен пултарулăхĕпе хурăнсурсем мухтанаççĕ.

## XXI ĔМĔРТЕ ХУРĂНСУР ТАТАХ ТА ИЛЕМЛЕНĔ, ТĔРЕКЛЕНĔ

*Çĕнĕ ĕмĕре кĕрес умĕн "Хорнзор" юлташлăхăн ертўçи, Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ*



*Федор Григорьевич Кузьмин Хурăнсурăн пурнăçĕ-хĕлĕпе, малашлăхĕпе паллаштарчĕ.*

*Ку мухтав калаçăвĕ мар. Вăрнар районĕнчи хуçалăхсенчен тăватăшĕ кăна 1999 çула тупăшлă вĕçлет. Вĕсен шутĕнче – "Хорнзор" юлташлăх та.*

*Пĕтĕм ĕç кăтартăвĕсемпе районта 2-мĕш вырăна тухнă.*

2000 çула кĕрес умĕнхи çулталăк вĕçленсе килет. Пĕтĕмлетме те вăхăт. Мĕнпе савăнтарчĕ вăл пире, мĕнпе пăшăрхантарчĕ?

Тӳрех калам, пĕлтĕрхи те, кăçалхи çул та хресченшĕн пайта курмаллисем пулмарĕç. Çапах та иртсе пыракан çулăмăрта мĕнле ĕçлесе пыма палăртнă, тĕллев пулнă – çавсем пĕтĕмпе тенĕ пекех пурнăçланчĕç. Тепĕр саманта та палăртса хăварассăм килет. Иртнĕ çулсенчипе танлаштарсан, çынсен ĕçлес кăмăлĕ ӳссе пыни чуна хĕпĕртететтерет. Пĕррехинче çакна асăрхарăм: хĕрарăмсем ĕçе вĕçленĕ хыççăн прицеп çине ларнă, сенĕк аври çине ялав çакнă, пĕтĕм таврана илтĕнмелле юрă шăрантарса уйран таврăнаççĕ. Çакăн пек кăмăлпа ĕçлесе пурăнни вăл нихăçан та пуçа устармасть, апла кăна та мар, ырă ĕçсем патне малалла тата та ăнтăлтарать.

Ялав ырăнне хĕрарăмсем хăйсен тутăрне çакса янăччĕ. Кусем савăнтармалли пулăмсем тейĕпĕр. Пăшăрхантармаллисем те пулчĕç паллах. "Голубизна" текен çĕр улмирен нихçанхинчен те пысăк тухăç илесшĕнччĕ. Çапла пултăр тесе хамăртан мĕн килнине пĕтĕмпех, ирттерсех турăмăр: çĕр улми пулмалли лаптăка иртнĕ кĕркунне тонни-тоннипе тислĕк кăлартăмăр. Çуркунне Петрпа Юрий Михайловсем, Юрий Васильев механизаторсем çĕр улмине агротехника ыйтнă пек вăхăтра, тĕплĕ лартрĕç. Йăрансем çип çапнă пек тӳп-тӳрĕ. Çум курăксене иртсе, нăрăсене пĕтерсех тăтăмăр. Çурла уйăхнелле вара пăшăрханма тытăнтăм. Мĕншĕн тесен çанталăк питĕ шăрăх тăрать, çумăр çук. Кашни кун, кăнтăрла та, каçхине те ана çине кĕрсе тухма тытăнтăм. Пĕр кăкран 15-25 çĕр улми кĕтни пурнăçа кĕрсе пыманни чуна арман чулĕ пек пусарма тытăнчĕ. Уйăх вĕçнелле çумăр пулсан çĕр улми ани тепĕр хут чечекленсе кайрĕ, анчах йышĕ сахал пулчĕ, унсăр пуçне çамрăк çĕр улмин çĕреслĕхĕ пысăк пуласси те куç умĕнчехчĕ. Кашни гектартан 290 центнер илтĕмĕр. Сахал мар ĕнтĕ, çапах та ытлараха кĕтнĕччĕ. Мĕн тăвăн, çут çанталăк саккунне

тытса чараймастӑн, унран иртейместӗн. Тӗш тырӑ енӗпе те савӑнмаллиех ҫук, гектартан 35 центнер илме мехел ҫитерееймерӗмӗр. Пахча ҫимӗҫ вара аван ҫитӗнчӗ. Купӑста пӗчӗк лаптӑкранах 500 тонна тухрӗ. Ӑна вырнаҫтарса пӗтертӗмӗр.

Ҫак цифрӑсем хыҫӗнче вун-вун ҫын, вун-вун механизатор. Вӗсене аса илни, ырӑ сӑмах калани паян кун вырӑнлӑ пек туйӑнать.

Акара Василий Романов, суха ӗҫӗнче, ҫӗр хатӗрленӗ ҫӗрте Николайпа Алексей Шашковсем, Борис Иванов, кустӑрмаллӑ тракторсемпе Леонид Кондратьев, Юрий Васильев сатур пулчӗҫ. Юсав бригадинче яланах сыхӑ тӑракан Амвросий Павлов, Антон Крислов, Роберт Петров, Вениамин Тихонов маттур. Вӗсем агрегат хиртен кӗмесӗр те килӗсене каймарӗҫ. Комбайнерсенчен Юрий Захаров, Юрий Игнатьев ырӑ сӑмаха тивӗҫ. Вӗсем тата ыттисем те тӑрӑшса ӗҫленине пула ӗнтӗ пире ял хуҫалӑх ӗҫӗсене ҫӳллӗ шайра йӗркелесе пынӑшӑн районта иккӗмӗш вырӑн парса чыс турӗҫ, 2 пин ҫурӑ тенкӗ парса хавхалантарчӗҫ.

Юлашки ҫулсенче тӗш тырӑ тухӑҫне ӳстерсе кӑтартас енӗпе хуҫалӑхсем хушшинче чӑн-чӑн ӑмӑрту пуҫланчӗ. Эпӗ ӑна тӳнтерле ӑмӑрту тесшӗн. Пирӗн ҫӗр ҫинче гектартан 60, 70 центнер тырӑ туса илме нихӑҫан та пулмасть. Институтра вӗреннӗ чухне микроделянкӑсенче рекордсем тунӑччӗ. 80, 90 центнер илнӗччӗ. Пысӑк лаптӑксенче ун чухлӗ ниепле те тухаймасть. Хамӑн ӗмӗрте пӗтӗм хуҫалӑхӗпе кашни гектартан 47 центнер тырӑ тӗшӗлесе илсе курнӑ.

Ҫулталӑк тӑршшӗпе лӑш курмасӑр выльӑх пӑхакансем те хуҫалӑх экономикине тӗреклетме пысӑк витӗм кӳреҫҫӗ... Вӑл яланах ҫапла пулнӑ та. Ферма ӗҫне Владимир Николаев йӗркелесе пырать. Дояркӑсенчен Нина Петрова, пӑру пӑхакансенчен Галина Иванова тата ыттисем те хӑйсен тивӗҫне чунтан пурнӑҫлаҫҫӗ.

Паянхи ял ҫынни чылай мала кайрӗ. Унӑн выльӑх-чӗрлӗх пӑхнисӗр, ҫӗр улми, тӗш тырӑ ҫитӗнтернисӗр пуҫне

лайӑхрах пурӑнас та, канас та килет. Ку енӗпе эпир Хурӑнсурта калама ҫук пысӑк улшӑнусем турӑмӑр. Чарӑнса тӑрар-ха эппин вӗсем ҫинче.

Ял халӑхӗ паянхинчен чылай лайӑхрах пурнӑҫа тивӗҫлӗ. Анчах хуҫалӑхсене пӗрлештерес юхӑм ҫакна нумай чӑрмантарчӗ. Хӑй вӑхӑтӗнче пирӗн клуб та пулнӑ. Республика шайӗнче семинарсем те ирттернӗ. Амбулатори те пулнӑ кунта... Эпӗ хамӑн ума тӗллев лартрӑм: ҫынсен пурнӑҫ условийӗсене лайӑхлатмалла. Ял хушшине тухакан "эпӗ Хурӑнсурта пурӑннишӗн савӑнатӑп" теме пултартӑр. Ҫавӑнпах газ кӗртес енӗпе хытӑ ӗҫлерӗмӗр. Паян кун 93 килте ҫут ҫанталӑк газӗ ҫунать. Ҫӗнӗ ҫул тӗлне 100 киле ҫитересшӗн. Халӗ вӗсен газ ӑшшипе вӑранмалла та пурнӑҫӑма лайӑхлатмалли тата ытти ырӑ ӗҫсем пирки шутламалла. Калӑпӑр, кил-ҫуртра ваннӑй та, душ та пултӑр. Хулари пек. Ҫакӑ хулари пурнӑҫа ӑмсанас туртӑма тӑнчах пӗтерме май патӑр. Кӑҫал 1 километр та 300 метр асфальт сартӑмӑр, ӑна тума миллион тенкӗ ытла тӑкакларӑмӑр. Унсӑр пуҫне ҫухрӑм ытла дамба хӑпартрӑмӑр. Ку каллех ҫынсен пурӑнас кӑмӑлне, культура шайне ҫӗклеме май паракан пулӑм. Кӑҫал урам ячӗсене хитре ҫырса ҫапрӑмӑр. Ҫакӑн хыҫҫӑн ҫынсем кил умӗсене таса тытма тытӑнни тӳрех курӑнчӗ. Халӗ вӗт кирек мӗнле ҫанталӑкра та клуба пушмакпа чип-чиперех ҫитме пулать. Канма та, ансамбльте юрлама-ташлама та пӗтӗм условисем пур унта. Ваттисене те манмастпӑр. Тырӑ, пыл валеҫнӗ чухне те сиктерсе хӑвармастпӑр. Сиктерсе хӑварма тивӗҫӗмӗр ҫук. Мӗншӗн тесен вӗсем хӑй вӑхӑтӗнче тӑрӑшса ӗҫленӗ, Хурӑнсур хӑватне ҫирӗплетнӗ.

Ҫамрӑксене ялта хӑварас, ӗҫ патне хӑнӑхтарас тесе нумай тӑрӑшатпӑр. Яшсемпе хӗрсене пурнӑҫ ҫулӗ ҫине ҫирӗпрех тӑма вӗрентес тӗллевпе килсенче воспитани шайне хӑпартмалли пирки тӑтӑшах калатпӑр. Пулӑшать. Ӑнланаҫҫӗ. Ара, вӗсем пире улӑштаракансем пулмалла-ҫке. Кил-ҫурт, хуралтӑ ҫавӑрма техникӑпа, строительство

материалĕсемпе тивĕçтеретпĕр. Паян кун тĕлне Хурăнсурта 30 яхăн çемье çурт тăвать.

Хурăнсур кăçал 320 çул тултарчĕ. Юбилей уявĕ çав тери хăватлă иртрĕ. Ку ĕнтĕ, ман шутпа, ялта пурăнакансен мăнаçлăхне çĕклемелли тепĕр ырă пулăм.

Уяв умĕн яла тирпей-илем кĕртрĕмĕр. Тĕрĕсрех каласан, вун-вун çулăн тасамарлăхне пуçтартăмăр, урамсенче йывăçсем лартрăмăр. Ял пулса кайнă вырăнта музей уçрăмăр. Ял историне сăнлакан "Хурăнсур утăмĕсем" кĕнеке кăлартăмăр. Уяв тĕлне И. Арбузов ертсе пыракан "Вăрнаргаз" предприяти питĕ пысăк пулăшу пачĕ. Газ кĕртес енĕпе ир пуçласа каçчен ĕçлерĕç. Çул-йĕр тăвакансен пуçлăхĕ И. Куликов, пурăнмалли çурт-йĕр хуçалăхĕн ертӳçи А. Платонов та тав сăмахне тивĕç.

Патшалăхăн ĕçлекенсене ытларах пулăшмалла.

Килес çулсенче колхозсем, юлташлăхсем халăха тивĕçтерĕç-ши, вĕсен малашлăхĕ тĕтреллĕ мар-и, тен, цивилизациллĕ çĕршывсем хыççăнах кайса çĕре салатса памалла?

Тĕррĕссипе каласан, çĕр халăха парăнчĕ ĕнтĕ вăл. Халĕ кирек кам та хăйĕн пайĕпе уйрăлса тухма пултарать. Сăмахран, çемйипе, тăванĕсемпе, Эпĕ çапла шутлатăп: цивилизациллĕ çĕршывсенче ял хуçалăхне йĕркелесе çитернĕ, пирĕн вара тин çеç пуçланать тесен те йăнăш пулмасть. Çавăнпа вĕсемпе танлашасси тепĕр 100 çулсăр та пулаяс çук. Ял хуçалăх техники, бензин-топливо эрнесерен хакланса пынă чух уйрăм çын нимĕн те тăваймасть, çитес вăхăтсенчех ура çине çирĕп тăраймасть. Кремльтисен ял хуçалăхĕ пирки тытса пыракан политикăна улăштармалла, унсăрăн малашлăх уçăмсăр.

Ял хуçалăхĕ пирки. Пуриншĕн те усăллă, – ахаль çыншăн та, патшалăхшăн та, – ĕç вырăнĕсене пăхмалла, çăмăллăх кредитсем парса пулăшмалла. Налук политикине тĕпрен улăштармалла. Пирĕнни пек халăха çаратакан налуксем нихăш çĕршывра та çук-тăр.

Партисемпе юхăмсем енĕпе йĕрке тумалла. 30-40 парти кама кирлĕ вăл, кама усă пачĕ?!

Кахалсене мар, ăнтарса ĕçлекенсене патшалăх енчен ытларах пулăшмалли шухăш патне хăçан çитетпĕр-ши?

90-мĕш çулсенче дотаци паратчĕç. Эпĕ ун чухне "Янгорчино" хуçалăха ертсе пыраттăм. Пире туса илнĕ 1 тенкĕ продукци (аш-какай, сĕт-çу) пуçне 5 пус хушса паратчĕç, юхăнчăк хуçалăхсене – 3 тенкĕ. Вĕсем халĕ те çав шайра, паян кун та ырă кукка килсе пулăшасса кĕтсе лараççĕ. Тав Турра, юлашки çулсенче çак пулăма ăнланакансем хушăнсах пыраççĕ. Халĕ акă япăх ĕçлекенсен çĕрĕсене пултаруллисене касса пама тытăнчĕç.

Паянхи кунпа мар, ыранхипе, малашлăхпа пурăнас килет. 5 çултан, 10 çултан, 20 çултан XXI ĕмĕрте Хурăнсур тĕпрен çĕнелсе хитреленĕ. Музейре çăл куç тапса тăрĕ, яла кĕрекен çулăн икĕ енĕпе йывăçсем кашласа ӳсĕç, клуб çумĕнчи кӳлĕре фонтан хăйĕн илемлĕхĕпе савăнтарĕ. Хурăнсур историне сăнлакан панорама, геройсен кĕтесĕ пулĕ. Шкул, чиркӳ, искусство шкулĕ, спортзал, бассейн, стадион çĕкленĕ. Кашни килтех – газ, ваннăй, душ, урамсенче пур çĕрте те асфальт, хуçалăхăн лавккисем ялта, Вăрнарта, Шупашкарта уçăлĕç. Хурăнсурăн хăйĕн арманĕ, вун-вун цех тĕрлĕ продукци кăларĕ. Пĕр-пĕр ют çĕршыв фирмипе килĕшӳ туса çĕр улмирен 50 тĕрлĕ апатçимĕç хатĕрлекен пĕрлехи предприяти хута кайĕ. Çăл куçри шывран хатĕрленĕ сывлăха сиплекен шывсене районта çеç мар, республикăра та туянĕç. Туристсем валли хăна çурчĕ тăвăпăр. Пирĕн патăмăрта хăварнă долларсемпе ялти маçтăрсем турбаза, санатори туса лартĕç. Хурăнсурсем хăйсем те тĕнчене тухĕç, аталаннă çĕршывсене кайса курĕç. Унти ырă енсемпе хăйсен пурнăçĕнче усă курĕç. Музыка шкулĕ, халăх театрĕпе халăх хорĕ республикăра чи сумлисен йышĕнче пулĕç. Культура шайĕпе Хурăнсур хулапа танлашĕ. Çапла пуласса эпĕ ĕненетĕп те, шанатăп та.

**Ял халăхĕн куçĕпе**



*Иван Федорович Ухтериков, Хурăнсурăн хисеплĕ колхозникĕ, 90 çулта:*

– Ĕлĕкхипе хальхи Хурăнсура танлаштарас тесен пысăк тараса кирлĕ. Çав тери капаш улшăнусем пулса иртрĕç вĕт. Куç умĕнчех ял çĕнелсе пычĕ. Ĕлĕк пĕтĕм ĕçе алăпа, лашапа, вăкăрпа тунă пулсан, халĕ тракторсен, машинăсен вăйĕпе пурнăçлаççĕ. Ял урамĕсене асфальт çул сарасса, килсене газ кĕртессе тĕлĕкре те тĕлленмен. Çакна та палăртассăм килет: ĕçлекен çын ĕлĕк те, халĕ те ытларах пурăнать. Кăмака çинче выртаканни паянхи саманара та пурнăçне майлаштараймасть. Эпĕ тракторпа ĕçленĕ те, 21-мĕш çулхине, çынсем выçлăхпа шăкăрин тăкăннă вăхăтра, аптраман, самаях сыпăнтарса пурăннă. 30-мĕш çулсенче лайăх ĕçлекенсене, арман хуçисене, икĕ лаша тытакансене ссылкăсемпе тĕрмесене ăсатса пĕтермен пулсан, Хурăнсур тата тĕреклĕ пулатчĕ.

Пире, ваттисене, манманшăн, пулăшсах тăнăшăн хуçалăх ертӳçисене тавтапуçах. Ваттисемпе çамрăксем хушшинчи çыхăну нихăçан та ан татăлтăр.

**<u>Аякри куçпа</u>**

*Петр Васильевич Ивантаев, ЧР Министрсен Кабинечĕн председателĕн пĕрремĕш çумĕ:*

– “Хорнзор” юлташлăх ĕç-хĕлне темиçе çул ĕнтĕ сăнаса тăратăп. “Янгорчино” хуçалăхран уйрăлса тухсан Хурăнсурсем çăмăл мар лару-тăрăва кĕрсе ӳкесрен пăшăрханнăччĕ те эпĕ. Тав Турра, апла пулмарĕ. Федор Григорьевич ăнăçлă ертсе пынипе юлташлăх рынок экономикинче хăйĕн çул-йĕрне тупрĕ. Курăр-ха, 1998

çулта кашни гектартан 47,3 центнер тырă, 387 центнер çĕр улми, 612 центнер пахча çимĕç туса илсе республикăра пĕрремĕш вырăна тухрĕ, Чăваш Республикин Президенчĕн парнине – трактор – тивĕçрĕ. Ку çеç те мар-ха, çак çулсенчех ял çыннисен килĕсене газ кĕртес енĕпе тĕлĕнмелле вăйлă ĕçлерĕç. Хăш-пĕр хуçалăхсем



пек патшалăх туса парасса кĕтсе лармарĕç. Хурăнсур 320 çул тултарнă тĕле ял хушшине çухрăм ытла асфальт сарчĕç. Ял халăхне уяв тĕлне хăйне евĕрлĕ парне кӳниех пулчĕ ĕнтĕ ку. Ертӳçĕсем тĕрĕс çул-йĕрпе пыраççĕ. Вĕсем ялта пурăнакансен условийĕсене лайăхлатса, çынсен пурăнас кăмăлне çĕклесе, малашлăх валли, çитĕнӳ валли никĕс хываççĕ.

2000 çул.

## ÇĔНЕЛНĔ АВАЛЛĂХ УЯВĔНЧЕ

2009 çулхи утă уйăхĕн вун пĕрмĕш кунĕ ăшă хĕвелпе çиçсе пуçланчĕ. Вăрнар тăрăхĕнчи Хурăнсур Çармăс ялĕ уяв хапхине уçса ячĕ. Тури униче çывăхĕнчи вăрманлă симĕс лапама халăх пухăнма пуçларĕ. Капăрлатнă типтерлĕ стадионта хаваслă юрă-кĕвĕ янăрать. “Хорнзор” ял хуçалăх кооперативĕн пуçлăхĕ Федор Григорьевич Кузьмин ĕмĕртен ĕмĕре пыракан чиркӳ праçникне Петрава темиçе çул хушши ĕнтĕ çĕнĕлле – пĕтĕм ял халăхне пĕрле пухса çакăнта хаваспа ирттерет. Хăнана аякра пурăнаканентешсем тата таврари ялсенчи тăвансемпе хăнасем йышлăн пухăнаççĕ. Кăçал та вăл шăлнĕпе Михаил Григорьевичпа пĕрле массăллă мероприятисем нумай хатĕрленĕ. Спорт ăмăртăвĕсем яланхиллех район шайĕнче пулса иртрĕç.

Петрав уявĕнче хурăнсурсем ĕçри çитĕнӳсене палăртаççĕ, мала тухнă хастарсене парнесемпе чысласççĕ. Вăрнар районĕн администраци пуçлăхĕ Анатолий Иванович Кузьмин та Хурăнсура пуш алăпа килмен. Иртнĕ çулхи хĕрӳ кĕрешӳре уйрăмах палăрнă ял хуçалăх предприятийĕсене çĕрĕшне мала тухнисем тесе палăртнăччĕ. Вĕсен хушшинче "Хорнзор" хуçалăх та пур. Ăмăртура çĕнтернĕшĕн тивĕçнĕ Диплома район пуçлăхĕ Ф.Г.Кузьмина халăх умĕнче савăнăçлăн пачĕ. Сăн ӳкерчĕкре çав чаплă самаята палăртнă. Вăрнар хула тăрăхĕн администраци ертӳçи В.Я.Львов та саламлă сăмахпа пĕрле ял çыннисене хаклă япала парнелерĕ (ӳкерчĕкре сулахайран тăваттăмĕшĕ).



Владимир Кузьмин писатель ял çыннисене мухтаса 1950 çултанпах хайлавсем çырать. Унăн очеркĕсен, калавĕсен, повеçĕсен, пьесисен, романĕсен геройĕсем паян та уявра савăнаççĕ. Акă çыравçă "Вĕçленмен çул" очерк геройĕпе, ĕçпе вăрçă ветеранĕпе, 92 çулхи Николай Иванович Ивановпа тĕл пулнă.

Владимир Прокопьевич хăйĕн пичетленнĕ кĕнекисене ял халăхĕ хушшине тӳлевсĕрех салатать. Тăван ял библиотекийĕ валли вăл хальхинче хăйĕн библиотекийĕнчен виççĕр ытла кĕнеке илсе килнĕ.

Туслăхпа юлташлăх уявра та пĕр ушкăна пухать çынсене. Акă, Владимир Прокопьевич Кузьмин писатель,



Хурăнсур ачи, КПСС Чăваш обкомĕн административлă органĕсен пайĕн заведующийĕ пулнă тата Чăваш Республики прокурорĕн заместителĕнче нумай çул хушши ĕçлесе лайăх енĕпе палăрнă, Раççей Федерацийĕн "Хисеплĕ юрисчĕ" Амвросий Илларионович Овчинников, "Хорнзор" хуçалăхăн тава тивĕçлĕ механизаторĕ Иван Федорович Ананьев, "Янгорчино" колхоз (хурăнсур






çармăссем 1950-1993 çулсенче унăн пĕр пайĕ пулнă) председателĕнче ăнăçлă ĕçленĕ Георгий Ильич Андреев, Вăрнар район администрацийĕн пуçлăхĕнче тăрăшса вăй хунă Валерий Петрович Наумов тĕл пулнă. Вĕсен калаçмалли, аса илмелли, шӳтлемелли вĕçĕмсĕрех.

Мĕн тĕрлĕ спорт ваййи пулмарĕ стадионта: футболла вылярĕç, чупса, сиксе ăмăртрĕç... Ваттисем хушшинче ăмăртса, авă, уяв ăмăртăвĕн медальне Владимир Кузьмин та çĕнсе илнĕ.

Сăн ӳкерчĕкĕсем запасри подполковникăн Радик Петрович Ковскин. Халĕ те вăл Шупашкарта патшалăх службинче тăрать.

Уяв талăка яхăнах кĕрлерĕ. Хĕвел анса тĕттĕмленерех парсан вăл ял варрине, клуб патне куçрĕ. Кунта Шупашкартан чĕнсе илнĕ эстрада çăлтăрĕсем хăйсен пултарулăхĕпе хурăнсурсене хавхалантарчĕç. Çамрăксем ташларĕç, юрларĕç. Çĕнелнĕ Петрав халăх чун-чĕрине çĕнĕ хăватпа çĕклентерчĕ.

## ÇИРĔП НИКĔС ÇИНЧЕ

Çĕнĕ çĕре, çĕнĕ вырăна çĕнсе илсе хăйсене пăхăнтаракансем этемлĕх историйĕнченех палăрса тăраççĕ. Туçи Çармăс ялĕнчен уйрăлса хăйсем уйрăм ял – Хурăнсур Çармăс ялĕ – пуçласа темиçе ĕмĕр хушши çав никĕсе çирĕплетсе пурнăçа çĕнетсе пыракан хастар чăваш эртелĕ те хăйĕн историне малалла çырать, авалхи йăх тымарĕсене Асан паттăр çырмин сиплĕ çăл куç



**Сăн ӳкерчĕкре (сулахайран сылтăмалла): Куçмич Вулути-Кузьмин, Галкки Кĕркурин Хĕветĕрĕ-Кузьмин, Мирун Тулин ачи Йăван-Миронов (Çĕрпел ял тăрăхĕн пуçлăхĕ), Усламçă Яккăвĕн мăнукĕ Ваçça-Яковлев, Упа Михвачĕн Ваççукĕ-Мефодьев Петрав уявĕнче.**



Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, 30 çула яхăн фермăра ĕне сăвакан Нина Степановна Петрова тата ЧР Патшалăх Канашĕн виççĕмĕш созыври депутачĕ Федор Григорьевич Кузьмин Республика Президенчĕ Николай Федоров Правительство çуртĕнче ял ĕçченĕсемпе - паттăрĕсемпе ирттернĕ тĕл пулу вăхăтĕнче.

шывӗпе шӑварса вӑй кӗртет, симӗслентерсе чечеклентерет. Тӑванлӑх ҫӑл куҫӗ вӗҫӗмсӗр юхать, ҫӗр вӑйӗпе тапса тӑрать. Вӑл хӑй патне туҫи ҫармӑссене те, аякри хурӑнсурсене те, ырӑ кӑмӑллӑ таҫти этеме те ял кӗрекине чӗнет.

**2011 ҫул.**

## ТУПМАЛЛИ


| | |
|---|---|
| Çĕршывăн туртăмлă кăшăлĕнче | 4 |
| Кашкăрсен йăхĕнчен | 13 |
| Шуçăм тĕрри | 14 |
| Тăванлăх çăл куçĕ | 16 |
| Хурăнсурăм – çуралнă çĕршывăм | 19 |
| Аса илӳрен | |
| Ял вĕсемпе тытăнса тăнă, вĕсемпе аталаннă | 20 |
| Петр Ковский – Хурăнсур юрăçи | 25 |
| Ял летопиçĕнчен | 37 |
| Туслăхпа юлташлăх чуна çывăх | 51 |
| Ĕмĕрлĕх вут-çулăм | 62 |
| Эпĕ те – корреспондент | 70 |
| Кун кĕнеки малалла çырăнать | 88 |
| Хаçатсенче кун курнисем | 91 |
| Ĕç кĕвви. Очерк. | 107 |
| Тăватсăмăрăн туслăх вăйĕ | 121 |
| Ырă ят таврана саланать | 127 |
| Çунатлă ĕмĕт. Очерк | 139 |
| Асăмри кунсем | 147 |
| Ял пурнăçĕн тĕрленчĕкĕсем | 168 |
| Ал техĕмĕ. Очерк | 198 |
| Вĕçленмен çул. Очерк | 210 |
| Тăван ял туйăмĕ. Роман сыпăкĕсем | 219 |
| Хурăнсурсен чун туприйĕ | 240 |
| Петрав парни. Сăвă | 243 |
| Касура. Повесть | 249 |
| Тунсăхлав хӳхлевĕ | 302 |
| Мухтанмашкăн тивĕçĕ пур | 311 |
| XXI ĕмĕрте Хурăнсур тата та илемленĕ, тĕрекленĕ | 320 |
| Çĕнелнĕ аваллăх уявĕнче | 327 |

**Владимир Прокопьевич КУЗЬМИН**

**ИСТОКИ РОДСТВА**

Подписано в печать 26.05.2011. Формат 60x84/16.
Бумага офсетная. Печать офсетная.
Физ. печ. л. 20,87. Тираж 200 экз. Заказ № К-115.

Отпечатано с готового оригинал-макета
в типографии ИП Сорокина А.В. "Новое Время".
428034, Чувашская Республика, г. Чебоксары,
ул. Мичмана Павлова, 50/1. Тел.: (8352) 41-27-98, 41-17-87.
E-mail: newtime1@mail.ru.

60.00



Хурӑнсур Ҫармӑс пуҫланнӑранпа 320 ҫул тултарнӑ кун

